3-53
34343-чув

Валентина Эльби

# МАЛТАНХИ САВНИ



МАЛТАНХИ САВНИ

Валентина Эльби

34343-чув

Национальная библиотека ЧР
4-034343

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

## *ХАКЛӐ ВУЛАКАНӐМ!*

*Кам-ши эсӗ — эпӗ ӑна пӗлместӗп. Тен, пике.*
*Тен, пурнӑç тути-масине курма ӗлкӗрнӗ хӗрарӑм.*
*Тен, йӗкӗт. Сана çак кӗнекене парнеленӗ май эпӗ*
*шутсӑр пӑлханатӑп: килӗшӗ-ши вӑл?*
*Кӑмӑлларӑн тӑк — хӗпӗртетӗп; ятларӑн тӑк —*
*кулянӑп та тӳсӗп.*
*Халалӑм ман çапла: вӑрӑм кун-çул,*
*ырлӑхлӑ пурнӑç пултӑр санӑн.*
*Мӗн тӑвӑн, пурӑнан пурнӑçра йӑнӑшасси*
*ытла çывӑх. Ӳксе хуçӑлас марччӗ.*
*Кирек мӗнле лару-тӑруран та ӑнӑçлӑн тухма*
*чунри хавал, вӑй-хӑват пулӑшӗ.*
*Çынлӑха нихӑçан та çухатас марччӗ.*

***Тусу, çак кӗнеке авторӗ —***
***Валентина Эльби***



Валентина Эльби

# МАЛТАНХИ САВНИ

ПОВЕҪСЕМПЕ
ҪАЛӐВСЕМ

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
1993

ББК 84 Чув 7-4
Э 53
К 84.09(=чув)6-444/445
84(2Рос=Чув)6-444/445

ПРОВЕРЕНО
2010 13 СЕН 2017

**Эльби В. А.**
Э 53 Малтанхи савни: Повеçсемпе калавсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1993.— 255 с.

Кĕнекене автор юлашки вăхăтра çырнă произведенисем кĕнĕ. Унти геройсем — паянхи çынсем. Писательница вĕсен хуйхи-суйхине, шухăш-кăмăлне ĕненмелле çырса кăтартать, асра юлакан сăнарсем калăплать.

ББК 84 Чув 7-4

Э $\frac{4702710201-80}{М\ 136(03)-93}$ 53—93
34343-чув

ISBN 5-7670-0651-2
© Чăваш кĕнеке издательстви, 1993

Р... БИБЛ... им. ... Горького

# АМАНТНĂ ЧУН

## 1

Суд залĕнче халăх лăках. Ытларах çамрăксем. Ваттиçулланни те пур. Пухăннисенчен хăшĕсем çак суд ĕçĕпе пачах та çыхăнман. Кăсăкĕшĕн килнĕ, паллах, вăхăт иртттерме. «Тет» сăмах хĕтĕртнипе кĕçĕтекен чĕлхисене кантарса кайран-ыран элек сарса çӳреме...

— ... Паян пĕр питĕ мереккеллĕ ĕç пăхса тухмалла тет. Пĕлетĕн-и?

— Мĕнле ĕç-ши вăл апласкер? Леш вăрăпа тытăннă дерехтăрпа еркĕнĕ çинчен каламастăн-и эс, тăхлач?

— Ма-ар. Çамрăксем кусем. Каччи хĕрне çĕçĕпе чикнĕ тет.

— Ай тур анчах! Илтмен эп куна, илтмен.

— Хĕрне вилсе каясран аран çăлса хăварнă тет...

Хăйне свидетеле чĕнтернĕ Анна Ивановна çак йăс-йăс пăшăлтатăва илтсе хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. Икĕ кăптăрмăш кинеми иккен. Пĕри тутăрĕ çине капашсăр çăмламас çĕлĕк тăхăнса лартнă, пичĕ-куçĕ курăнмасть те темелле, шĕп-шĕвĕр сăмси çеç кăнтарса тăрать. Тепри тутăрне хăлхи хыçнелле сирнĕ, шăшинни пек чăр-чăр куçлă. Арнольд ĕçĕ пирки чĕлхе хыçаççĕ ĕнтĕ кусем. «Мĕн тăвăн, вĕсемшĕн сăмах пултăр...»— хаш сывласа ячĕ Анна Ивановна.

Кĕçех зала икĕ милиционер Арнольда ертсе кĕчĕç. Лутра кăна хӳмепе уйăрнă пысăках мар читлĕхе кĕртсе лартрĕç йĕкĕте.

— Ай турах, кур-ха, тăхлач, çап-çамрăк хăй!

— Ара, ара. Кĕрнеклĕ, хӳхĕм тата.

— Кĕрнеклĕхĕ, кӳлепи пулĕ те — ăсран катăкрах-тăр, унсăрăн çĕçĕпе ма хурахлантăр?

— Те хăй айăплă-ха, те хĕрĕ ытларах: хальхи хĕрупраç вăл... тепри çĕçĕ мар, тем мурĕ тыттарĕ.

Арнольд Анна Ивановнăна асăрхамарĕ. Пĕр тесен, залри халăх çине вăл пуçне çĕклесе те пăхмарĕ-ха. Кĕрнеклĕ

терĕç йĕкĕте кинемисем. Çук, хухнă кĕрнеклĕхĕ унăн. Кăтра кăна сарă çӳçлĕччĕ. Шап-шакла пуçлă Арнольда пăхатăн та халь — хăй пек те туйăнмасть. Вут сапакан чакăр куçĕ сӳннĕ. Çăра куç харшисенчен сулхăн ӳкет куç лакăмĕсене.

«Арнольд, мĕн хăтлантăн?»— чĕнесси килчĕ Анна Ивановнăн йĕкĕте, анчах шарламарĕ: калаçма юрамасть кунта айăпланакан çынпа. Ыйтнă тăк мĕн калама пĕлнĕ пулĕччĕ-ши вăл? Ун, çамрăкскерĕн, Анна Ивановнăна свидетеле чĕнтерме пултарасси асĕнче те çук-тăр.

Акă Арнольд ерипен йывăр ыйхăран вăраннăн залалла пăхма тытăнчĕ. Никама та мар, Наташăна шырать ĕнтĕ. Аçтарах-ши лешĕ чăнах та? Чӳрече умĕнче иккен, пĕр çап-çамрăк хĕрпе тăрать. Йывăр хуйхă çапса антарнă çын теме çук хăйне. Уява килнĕ пек шукăль тумланнă. Ача кăна-ха, тĕрĕссипе, кулинари училищинче вĕренет,— ашшĕамăшĕ мĕншĕн çав териех капăр çӳретет-ши? Çийĕнче ав вĕр çĕнĕ пальто, тĕттĕм симĕс тĕслĕ хаклă йышши пуставран çĕлетнĕскер. Çухи кăпăшка, хăмăр тилĕ тирĕнчен пулас. Вăл хĕрĕн пĕтĕм кăкăрне витсе тăрать, мăйĕ тĕлĕнче çеç кĕрен сăн-питне çутăлтарса чăлт шурă свитер хĕрри курăнать. Наташа çара пуçăн, кĕрен çипрен çыхнă калпакне аллине тытнă. Сăмала пек йĕпкĕн хура, вăрăм, авăнчăк вĕçлĕ çӳç пайăркисем çурăмĕ çийĕн тутăр шерепи евĕр сапаланнă. Тĕм хура куçĕ хĕрĕн таçтан курăнмалла йăлкăшать. Пит çăмартисем паха писев сĕрнĕ пек йăмăх хĕрлĕ. Нимĕн те калаймăн, пăхма Наташа питĕ илемлĕ, йăрăс пӳллĕ, такам та ăмсанмалла. Тен, ăна халĕ пуçне пĕксе тăни килĕшерех памаллаччĕ — вăл, пур, каçăрăлкаласа кăна тăрать, чăрсăррăн пăхать.

— Суд килет, пурте ура çине тăрăр!— пĕлтерчĕ суд секретарĕ.

Çынсем кĕшĕлех çĕкленчĕç. Шăп.

Зала виççĕн килсе кĕчĕç, васкамасăр сĕтел хушшине вырнаçса ларчĕç. Варринчи, паллах, судья. Хĕрлĕрех мăйăхлă вăтам çулсенчи арçын иккен ку. Заседателĕсем— хĕрарăмсем.

Çынсем ларса шăплансан судья хăйпе тата заседательсемпе паллаштарчĕ. Вара паян пуринчен малтан Арнольд ĕçне пăхса тухасси çинчен хыпарларĕ. Айăпланаканран суд составĕпе килĕшни е килĕшменни çинчен ыйтрĕ. Свидетельсем пуррипе çуккине тĕрĕслерĕ. Чĕнтернисем пурте килнĕ-мĕн. «Суда тĕрĕссине çеç калатăп» тесе алă пустарсан вĕсене залран тухма хушрĕç.

Свидетельсем ниçта та саланса пĕтмерĕç, хăйсене чĕ-

нессе кĕтсе коридортах унта-кунта вырăн тупса хĕсĕнкелерĕç.

Анна Ивановна тĕршĕннĕ те тăрать ав пĕр кĕтесре пĕчченех. Наташа çывăхрах. Унпа юмахласа илме пулатчĕ ĕнтĕ, анчах кăмăлĕ туртмасть. Чунĕ кӳренӳпе тулнă.

Арнольдпа савниллĕ чухне Наташа Анна Ивановна патне час-часах пырса çӳретчĕ. Хайхи çав синкерлĕ каç хыççăн вара пĕрре те кĕрсе тухман. Қаччи патне те, изолятора, кайса курăнман вăл.

Қĕтеççĕ-ха свидетельсем. Акă Наташăна чĕнчĕç. Анна Ивановна питĕ пăлханса юлчĕ. Мĕн калĕ-ши хĕр суда? Çăварĕнчен ырă сăмах тухсан Арнольда, тен, хытах айăпламĕç. Савнисем хушшинче унта темĕн те сиксе тухĕ ара. Пĕр-пĕрне каçарма та пĕлмелле.

Анна Ивановна ăшĕнче Арнольда ятласа та пăхрĕ, çавăнтах тӳрре кăларса шеллерĕ те. Тертлĕ-хурлă пурăнса çитĕннине, юлашки вăхăтра кăна çулĕ уçăлса кайнине мĕн мантарчĕ-ши йĕкĕте? Çынсен ачи-пăчи пек вăтам шкул пĕтерме май килмерĕ ун. Хăвăртрах хăй ĕçлесе илнĕ çăкăрпа пурăнма тытăнас хаваспа вăл профтехучилищĕне кайса кĕчĕ. Аванччĕ-ха унта. Çитеретчĕç, тумлантаратчĕç. Çапла малалла та ăнăçса пынă пулсан тепĕр çултан платник ятне илетчĕ амитке. Платник вăл — халăх хуçалăхĕнче шутсăр кирлĕ ăста. Вĕренсе тухсан Арнольд Байкалпа Амур магистральне хывнă çĕре кайма ĕмĕтленетчĕ. Йăлтах пăсса хучĕ хăй пурнăçне, айван. Халĕ ĕнтĕ уншăн пĕр çул çеç уçă, тĕрме çулĕ...

Самантлăха та манмасть Анна Ивановна çав синкерлĕ каça. Тин кăна çывăрса кайнăччĕ вăл, алăк шăнкăравĕ çине-çинех шăнкăртатрĕ, канăçсăррăн, хушуллăн. Хăпăлхапăл сиксе тăчĕ те Анна Ивановна хыпăнса ӳксе алăк патнелле танкăшрĕ:

— Қам унта?

— Эпĕ-ха, эпĕ! Часрах!— тăвăнса илтĕнчĕ Арнольд сасси.

— Мĕн пулнă? Мĕн?— чĕтреве ернĕ аллипе çăра пăркăçне ниепле те çавăрса яраймасть кил хуçи. Юлашкинчен алăка аран-аран уçкаларĕ те тĕлĕнсе те сехĕрленсе шаках хытса тăчĕ. Алăкран Арнольд, тин çуралнă пăрăва йăтнă пек, икĕ аллине те тан тытса Наташăна çĕклесе кĕчĕ.

Хашкаса сывлаканскер:

— Çĕçĕпе...— терĕ те вăл пӳлĕнчĕ, унтан аран хушса хучĕ: — чикрĕм пулас...— Қуçĕ ухмаха тухнă çыннăнни пек çапаланчăк.

— Ах, çырлахах!— аллисемпе таçта тěлсěррěн кармашрě Анна Ивановна.

Арнольд пӳлěме кěрсе Наташăна диван çине майласа вырттарчě те тек калаçса-ăнлантарса тăмасăр пуçран çапнă пек тухса кайрě. Урамра вăл автомат-телефонпа васкавлă медпулăшăва шăнкăравланă та тӳрех милиције чупнă-мěн. Қаялла таврăнаймарě вара: хупса лартрěç... Кěçех васкавлă пулăшу машини вěçтерсе çитрě. Наташăна пăхрě, тěрěслерě те врач:

— Хăрушши нимěн те çук,— терě укол тунă хыççăн хěр суранне темěнле мазь сěрсе.— Çěçě хул калакě çумěпе çеç сěртěнсе иртнě.

Наташăна хăвармарěç, хăйсемпе пěрлех пульницăна илсе кайрěç.

Чăлкăм куç хупмарě Анна Ивановна çав çěр. Çеçке пек таса та черчен икě çамрăк чун хушшинче мěн пăтăрмахě сиксе тухнă-ши, мěнле хура кушак чупса иртнě? Пуçне шăнăçмарě ку ыйту. Мěн çак самантчен те пěлмест çавна Анна Ивановна. Çакна каласа памалла пулě ěнтě суд умěнче. Тата малтан вěсем, Арнольдпа Наташа, пěр-пěрне шутсăрах юратса пурăнни çинчен хушса хумалла-тăр.

Анна Ивановнăна сасартăк хăйěн çамрăклăхě аса килчě. Ялта пурăнатчě-ха вăл ун чух. Пулас упăшкипе, Микулайпа, Атăл хěррине ěçлеме ансан паллашрě хěр. Парум çине хăма тиеттерчěç вěсене, çамрăксене. Микулай кӳршě ял каччиччě. Қалама çук тӳлек йěкěтчě. «Ашшě-амăшне хывнă, вěсем пекех сăпайлă»,— тетчěç ун пирки ваттисем. Çапла хăма тиенě çěрте паллашнă хыççăн тěл пулкалама тытăнчěç хăйхисем. Микулай шутсăр вăтанатчě, куçран та пăхаймастчě. Анюкăн хăйěн те именчěклěхě çитетчě ěнтě. Юнашар пынă чух ăнсăртран ун аллисем перěнесрен тем пек сехěрленсе утнă. Халě çамрăксем апла мар, каччи тӳрех хăйěн сулмаклă аллине хěр хул пуççи çине лаплаттарса хурать те, пырать вара лешě, мěскěнскер, вут тукмакки çěкленě пек...

Сасартăк суд залěнче халăх кěр-р! кěрлесе кайни, хěрарăмсем шăри-шари! çухăрни илтěнчě. Анна Ивановна, тарăн ыйхăран шарт сиксе вăраннă евěр, нимěн ăнланмасăр чăл-чал пăхкаларě. Зал ěнтě хурт вěлли пек сěрлет. Мěн амакě ку? Мěне пěлтерет? Унччен те пулмарě — сарлака алăк янк уçăлса кайрě те, унтан пěри сирпěнсе тухрě.

— Аçта кунта телефон?— кăшкăрчě вăл, куçне-пуçне чарса пăрахнăскер. Хирěç никам нимěн чěнме пěлменнине кура аллине лашт сулчě те коридорпа малалла ыткăнчě.

— Мĕн пулнă?!— талкăшрĕ Анна Ивановна уçă алăк еннелле.

— Ќаччи никам сисиччен ал туничи юн тымарне татнă!— илтĕнчĕ тахăшĕн çухрашка сасси.

— Хĕрĕ те çав... кастарать кăна. Чĕлхи чăн-чăн вичкĕн пуртă. Хĕр мар, çĕлен!

«Эй, ырра марах ку!»— пушшех хыпăнса ӳкрĕ Анна Ивановна çак сăмахсене илтсен. Çынсене сире-сире вăл шалалла тапаçланчĕ. Арнольд патнелле туртăнать, анчах ниепле те çывăхне пырса тухма çук: халăх стена пек.

Тем тери кĕрмешсен те йĕкĕт патне çитеймерĕ, курайманрĕ ăна Анна Ивановна, хавшак куçне кăвак йăлхах карса илчĕ. Мĕн пуррийĕ йăлтах тĕтре ăшне путрĕ. Юпа пек хытса тăнăскере ваттине пăхмасăр енчен енне тĕрткелеççĕ. Халăх куçать, пăтрашăнать.

Пушансах юлчĕ зал. Анна Ивановна хыпашлакаласа пукан тупрĕ, ларчĕ. Куçне хупрĕ. Умра ĕнтĕ талккишĕпе çутă кăвак чаршав. Çав чаршав варринче хура пăнчă курăнма тытăнасса кĕтет Анна Ивановна. Ќу пăнчă — çăлăнăç, ун витĕр, тĕнĕ шăтăкĕ витĕр сăрхăннă пек, куç çути таврăнать.

Хăраса-шикленсе ӳкмерĕ Анна Ивановна. Унччен те пулкаланă кунашкалли, унччен те: ара, хытă пăлханнă хыççăн çапла суккăрланнă вăл. Хыпса тухасла ăша çунтарнă синкерлĕ самантсем пурнăçра ахаллĕн иртмеççĕ вĕсем... Тӳсĕмлĕн кĕтет вată хĕрарăм кăвак чаршав çиййĕн хура пăнчă палăрса тухасса. Çав пăнчă шăтсанах куç çути килет вара.

Анна Ивановна куçне аллипе хупларĕ. «Хăвăртрах!»— такама, теме васкатать вăл. Леш ăнланнăнах ӳкерчĕ хăварчĕ ак пăч хура мăкăнь вăрри. «Турра шĕкĕр, пурăнатпăр...» Пăнчă ерипен-ерипен сарăлса пырать ĕнтĕ, ӳсет. Ясмăк пысăкăш пулчĕ ав. Чăх çăмарти капашне çитрĕ. Юсман çавракăшĕпе танлашрĕ. Ĕнтĕ...

— Мĕн туса ларатăр эсир кунта? Пушатăр зала. Ман урай шăлмалла,— илтрĕ сасартăк Анна Ивановна.

Вăл куçне яриех уçрĕ. Умĕнче ĕнтĕ юсман мар, тĕнĕ шăтăкĕ. Пăхрĕ те Анна Ивановна хăйне хӳтерекен хĕрарăма асăрхарĕ. Чăкăт кăшăлĕ витĕр курăннăн туйăнать вăл. Ќăкăрĕ таран çеç курăнать, пĕвĕ çук. Пĕвне хура чаршав хупланă.

Ќăшăл хĕрарăм пичĕ çинчен куçса айккинелле шуса кайрĕ. Авă Арнольда лартнă кĕтес. Пуш-пушах вăл. Эппин, илсе кайнă апăрша ачине. Судьясен сĕтелĕ хушшинче те никам та çук.

— Суд пулмасть-им вара?— сас пачĕ Анна Ивановна.

— Аптрашки хальхи çамрăксемпе!— ятлаçрĕ пукан речĕсем хушшипе урай шăлакан хĕрарăм.— Хăйсен ĕçĕсене те йĕркеллĕн пăхса тухма памаççĕ.

— Шел, питĕ шел. Мĕн кĕтет ĕнтĕ ăна?

— Вăл сирĕн ывăлăр-и?

— Ывăллине ывăл мар та...

— Эппин, мĕн питĕ кулянатăр? Ашшĕпе амăшĕ хыпса çунччăр. Çавнашкал путсĕре çуратса яма пĕлнĕскерсем, ан тив, хуйхăрма та пĕлччĕр! Мĕнле ача вăл, ейпух, хĕре çĕçĕпе чикет, хăйне пусать!.. Ашшĕ-амăшĕ ăнăçлă çынсемех мар пуль.

— Ашшĕ-амăшĕ...— хĕрхӳн кулса илчĕ Анна Ивановна.— Ача-пăча çапла ӳснĕшĕн эпир пурсăмăр та айăплă, эп те, эс те...

— Ак тата! Тем илтсе ларăн ку пурнăçра...— аллинчи шăпăрне шапах урайне ӳкерчĕ хĕрарăм.

— Ăçта илсе кайрĕç-ши ĕнтĕ ăна? Каллех тĕрмене-ши?..

— Мĕнле тĕрме? Пульницана леçрĕç, сыватма. Пирĕн йĕрки çапла, айăплă пулсан та сыватмалла.

Анна Ивановна суд залĕнчен пуçне чиксе тухса утрĕ.

## 2

Чарăна пĕлми тăман алхасать. Çил ачисем выçă кашкăрла ӳлеççĕ. Чӳрече кантăкĕсем, такам тимĕр пăрça вăрăнтарса тăнăн, чуна çӳçентерсе чăн-чанк! чанклатаççĕ. Анна Ивановнăн çакнашкал çанталăкра яланах шăмшакĕ сурать. Йĕркеллĕн çывăраймарĕ вăл кĕçĕр.

Акă пӳлĕме аранах кун çути çапрĕ. Тăманĕ те самаях лăпланчĕ пек.

— Тăрса тумланас та Арнольд патне кайса килес,— терĕ Анна Ивановна сасăпах, пӳлĕмĕнче тепĕр çын пур пек. Тăр пĕччен пурăнаканскер, хăйпе хăй çапла сасăпа калаçма хăнăхнă вăл.

Çăвăнicченех плита çине чей лартса ячĕ, вара алăкăнтĕпелĕн кумма тытăнчĕ: пĕр япалине тытать, тепĕрне... Пӳлĕмне тирпейлет.

Чейник хупăлчи тăнкăртатса ташлама тытăнчĕ.

Кăшт-кашт çырткаласа чей ĕçсен Анна Ивановна йăрхахран пальто илсе тăхăнчĕ. Пальтовĕ шалпарланса юлнă, ним мар хăй пекки тепĕр çын вырнаçĕ. Хуйхă-суйхăпа шухăш, иртсе пыракан ĕмĕр çапла типĕтеççĕ çынна...

Алăкран тухаспа аллине сумка илчĕ. Чылаях йывăр вăл — Анна Ивановна çĕр каçах апат-çимĕç тултарса лартнăччĕ те. Тăваттăмĕш хутран пусма тăрăх хыпалансах анчĕ.

Урама талккишĕпе кĕрт хÿсе кайнă. Тасатма ĕлкĕреймен-ха — хули пысăк. Ирех ĕçе васкакансем юр ашааша упа утса иртнĕн тем тарăнăш йĕр хăварнă.

Хастарланать-ха Анна Ивановна. Паян та туясăрах тухнă ав. Ахальтен-им ĕнтĕ кÿршисем умĕнче: «Вăй пур-ха ман!» — тесе мухтанать хăйне хăй хавхалантарса. «Ăçташи вăйĕ?» — теççĕ-тĕр лешсем, ахăртнех, ăшĕнче. Вăйĕ мар, чунĕ епле тытăнса тăрать-ши?

Анна Ивановна çынсен ури йĕрĕпе яра-яра пусса малалла талпăнчĕ. Тамалсах çитеймен-ха çанталăкĕ. Кĕрт çийĕн юпа пек çĕкленсе çавра çил пĕтĕрĕне-пĕтĕрĕне иртет, пит-куçран элес-мелес тухатмăш карчăкла вĕрсе-сурса хăварать.

Магазин умĕнче Анна Ивановна кÿршĕре пурăнакан уксах Яккăва тĕл пулчĕ.

— Тайма пуçăм та хисепĕм, хаклă Анна Ивановна! — япшаррăн пуç тайрĕ вăл. — Ăçта васкатăн капла ирех?

— Пульницана çитсе килес терĕм ара.

— Арнольд патне ĕнтĕ?..

— Кам патне пултăр тата! Ун патне. Шеллетĕп ăнăçсăрскерне.

— Ашшĕ-амăшĕ пур ун, вĕсем шеллеччĕр, — темле юриех тÿрккессĕн те чеен пăхса илчĕ Якку. — Тĕрмене те пайтах хутларăн, халĕ — пульницана...

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ, мĕн тăвăн, — кулянчĕ Анна Ивановна. — Ашшĕ-амăшĕ тетĕн-ха ак эс. Тепри, Якку, ашшĕамăшĕ пур çинчех хăр тăлăх.

— Ан калаç-ха кирлĕ мара! — каллех тÿрккессĕн тавăрчĕ Якку. — Ашшĕ-амăшĕнчен Арнольд никамран пуян: ашшĕ те, амăшĕ те икшер. Тĕнчере пулман япала.

— Çав пĕтерчĕ те ăна. Ача тенин ашшĕпе амăшĕ пĕрер пулччăр.

— Юрĕ, çитĕ сăмах перкелешсе, — лăпкăн каларĕ те Якку çапла ыйтрĕ: — Сывлăхĕ мĕнле халь ун, юсанать пек-и?

— Çамрăкăн пурте час юсанать, — хаш-ш сывларĕ Анна Ивановна. — Хăрушши ăна малта кĕтет...

Якку та Арнольда Анна Ивановнăран кая мар шеллет, чĕлхипе çеç вăл усал пек кастарать, юри. Кăмăлĕ çемçине кăтартасшăн мар.

— Юрĕ, — каллех пÿлчĕ вăл хĕрарăма. — Манран са-

лам кала. Қала, мĕнле пулсан та пуçне ан устăр,— вара çаврăнчĕ те уттарчĕ хăй сукмакĕпе.

Анна Ивановна та хускалчĕ. Умĕнче юр, юр... Çĕр касиччен хӳсе лартнă çак нăкă та тикĕс юр куçа шăнăçмасть, чуна тăвăнать. Пуçĕнче сирсе сирĕлми шухăш. Мĕн кĕтет-ши ĕнтĕ Арнольда малашне? Эх, мĕн суккăрлатнă-ши ун чунне-ăсне çав каçхине? Хăвăрт хыпса илекен йышшиччĕ çав хăй. Хăвăрт хĕрсе каятчĕ. Мĕн калăн, шăртлăччĕ, ытлашшипех шăртлăччĕ кăмăлĕ — ыратупа аталаннă кăмăл... Амăш варĕнчен усал ача çуралмасть. Усалли кайран килет, кайран сийĕн-сийĕн ларса тулать чуна, ăша хывма ырриĕ çук пулсан...

Àслă çынсем анчăк çурине те ятлама хушмаççĕ. Арнольд ачалăхĕ вара ачашлăхпа ăшăлăха пĕлмен. Тăванлăх артакĕ пытаннă пулнă унран. Хаярлăхпа шанăçсăрлăх çеç ытла ир амаланчĕ-тĕр ун чĕринче...

* * *

Арнольд пĕртен-пĕр Анна Ивановнăна кăна хисеплет. Унран çывăххи уншăн урăх никам та çук. Çакна Арнольд суд умĕнхи кунсенче те, халĕ те, пульницăра выртнă хушăра, пушшех тарăннăн туйса, ăнланса илчĕ.

Қам-ха уншăн Анна Ивановна? Арнольдăн вăл амăшĕ те, аппăшĕ те, инкĕшĕ те, нимĕнле тăванĕ те мар. Пачах ют çын.

Мĕн пурĕ те кӳршĕ хĕрарăмĕ кăна. Арнольдпа пĕр çуртра, хваттер урлă пурăнать. Тăлăх хĕрарăм. Упăшки иртнĕ вăрçăра пуç хунă. Пĕртен-пĕр ывăлĕ пулнă вĕсен, вăрçă тухнă çул вун тăваттă тултарнăскер. Қайран вăл та ашшĕ хыççăн амăшĕнчен вăрттăн фронта таптарнă. Хăюллă та харсăр пулнă-мĕн çав çамрăк. Ун паттăрлăхĕ çинчен çар хаçачĕсенче те çырнă. Çав хаçатсене Анна Ивановна халĕ те арча тĕпĕнче усрать. Анчах çак йĕкĕт, ашшĕ пекех, килне таврăнайман. Белорусси вăрманĕнче ĕмĕрлĕхе ураран ӳкнĕ вăл.

Анна Ивановна пенсие тухиччен заводра ĕçленĕ. Халĕ те унта вăл час-часах кайса çӳрет. Çынсем ун пирки çирĕп чунлă тенине пĕрре мар илтнĕ Арнольд. Анчах хавшанă ĕнтĕ чĕри, хавшанă. Упăшкипе ывăлĕшĕн тăкнă вĕри куç çулĕ, иртсе иртми хуйхăпа тунсăх Анна Ивановнăна вăхăтсăр чалăхтарнă, вăхăтсăр сăнран ӳкернĕ. Кăмăлне çеç унăнне ватайман, хуçайман хура-шур. Ахах пек янкăр таса чĕреллĕ Анна Ивановна, çавăнта-тăр ĕнтĕ унăн вăйĕ,

мĕн пур çирĕплĕхĕ... Унашкал ватăсене ача-пăча хăвăрт сисет, вĕсен еннелле ăшша туртăннăн туртăнать.

### 3

Арнольд пульницана лекнĕренпе эрне иртсе пырать ĕнтĕ. «Чĕмсĕрри» тесе ят пачĕç ăна чирлисем. Пĕр никампа та хутшăнмасть йĕкĕт, кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек пуç тӳпинчен çи виттипе витĕнсе выртма хатĕр. Суранĕ сурса ыратнăран тата çынсен куçне куранас килменрен çапла чĕмсĕр, ютшăнчăк вăл.

Те ятласа ĕнтĕ, те хĕрхенсе:

— Ытла айван эсĕ, йĕкĕт,— терĕ ăна пĕррехинче тухтăр.

— Мĕншĕн?— сӳрĕккĕн сăмах хушрĕ ку.

— Çыннăн хăй мĕн тунине пуринчен малтан хăйĕн пĕлмелле. Лайăххăн, уççăн. Эсĕ вара — чухламастăн та.

Арнольд чĕнмест. Тутине чăпăрт пуçтарса тытнă та — шăпăртах. Куçĕ çеç вутла çунать.

— Ĕненместĕн-и?— малалла каласрĕ тухтăр.— Тĕрĕс калатăп. Юн тымарне татасси ача вăййи мар вăл. Аллу типсен мĕн тăвăн? Чăлах каччă кама кирлĕ? Унашкаллисене хĕрсем юратмаççĕ,— шӳтлерех кулă палăрчĕ хирург сăнĕнче.

— Алă чипер чухне те юратнине курсах пулмарĕ,— пат татса хучĕ çакна хирĕç Арнольд.— Тепĕр тесен, юрату çук тĕнчере.

— Ытлашшиваскатăн,— сассине хăпартрĕ тухтăр,— туту çинчен аннӳ сĕчĕ те кайса пĕтмен — юрату çуккине ĕнентересшĕн. Ир-ха сан апла пророкланма.

— Ман тутана ан тĕкĕнĕр эсир. Анне сĕтне пĕлмен вăл,— кастарать йĕкĕт.

— Эккей санпа, çамрăк çыннăм,— йăвашланчĕ сасартăк леш.— Ытла та вĕри вара эс. Юрĕ-çке, юрĕ, лăплан. Кӳр-ха ĕнтĕ, пăхар аллуна...

Суранне эмеллесе çĕнĕрен бинтпа çыхнă хыççăн, уйрăлса утаспа, тухтăр çапла сăмах хушрĕ:

— Чăн-чăн юрату, йĕкĕт, малта-ха санăн. Халĕ эсĕ пурнăçăн йывăр хапхине уçма çеç тăнăччĕ-ха, анчах, шел, йăнăш хăлăп лекнĕ ав. Шанатăп, ӳлĕм ăсларах пулăн.

Тухтăр сăмахĕ чуна пушшех хускатса хăварчĕ. Тăнлаври юн тымарĕ çурăлса тухасла панлатса тапать Арнольдăн. Йĕкĕт текех чăн-чăн юрату тĕл пуласса та шанмасть, пурнăç хапхи тени те хупăнчĕ-тĕр ĕнтĕ ун тĕллĕн. Умĕнче сĕм вăрман...

Коридора тухнăскер, Арнольд чӳрече умĕнче чарăнса тăчĕ. Кунтан урам аван курăнать. Таçта хĕвĕшет унта халăх — кашнин, паллах, хăйĕн савăнăçĕпе нуши, хăйĕнваскавлă ĕçĕ.

Акă тахăшĕ пульница хапхин калинккине пырса тĕрт-рĕ. Арнольд чĕри кăрт-кăрт тапать. Калинкке уçăлчĕ. Картишне чипер кăна хĕр кĕрсе тăчĕ. Тем тесен те кунта вырттакан савнийĕ патне килчĕ-тĕр ку... Телейлĕ ун савнийĕ. Тен, кам пĕлсе пĕтертĕр?.. Тем пур-ха пăхма чипер курăнакан çак хĕр чĕринче? Тем кӳрĕ вăл паян-ыран е ӳлĕмрен тепĕр чĕрене?..

Суд умĕн тĕрмере ларнă чухне те Арнольд Анна Ивановнăсăр пуçне урăх никама та йышăнман. Халĕ те çаплах. Пĕр Анна Ивановна çеç ирĕклĕн килсе çӳрет кунта. Пулман мар, ыттисем те килкелерĕç ĕнтĕ, анчах кĕтнисем мар... Кĕтни мар... Кама кĕтет йĕкĕт чĕри? Паллах, Наташăна. Çав хушăрах — Наташăна та мар. Çук, çук, Наташа марах вăл! Такам, темĕн. Ĕмĕт çути тенĕччĕ пĕр сăвăра. Çав çунтарать-ши чĕрене? Анчах «çунтарать» тесен чĕлхи вĕçне Наташа ячĕ килет, куç умĕнче те вăлах. Вут тивертесле ялкăшаççĕ хура куçĕсем...

Судри пекех, Арнольдăн çан-çурăмне витĕрех сăркăлтату тыллать. Хăлхинче Наташа сасси: «Эпĕ ăна юратман та, юратмастăп та!» Мĕн тери хăрушă, ют сăмах...

Савăл çапнăн, судья каллех тĕпчет:

— Çапах та çӳренĕ-çке эсĕ унпа...

— Киносене кĕрсе ларкалани — çӳрени мар.

— Арнольд хăй сана юратать-и?

— Хăйĕнчен ыйтăр.

— Ху юрататăн-и?

— Каларăм-çке: юратман та, юратмастăп та терĕм. Эпĕ урăх каччă тупрăм. Урăх качча юратрăм.

Çакна илтсен ăшĕнче чăн-чăн тăвăл çĕкленнĕччĕ судра Арнольдăн. Йалт чĕтреве ерчĕ. Шăлне шăлĕ шаккать. Тепĕрне?! Тепĕрне юратнă, урăххине?!. Ах, апла! Ах, чăнахах апла иккен! Самантрах аса илчĕ йĕкĕт, кĕпи арки çĕввине лезви катăкĕ пытарнăччĕ вăл. Хыпашласа пăхрĕ — пур, тухса ӳкмен. Тулса çитнĕ çилĕ, кӳренӳ, кӳлешӳ унăн куçне хура чаршав карать, кун çутипе пурнăç хавасне хăвалать... Таçта тĕпсĕр шăтăка куç хупса сикнĕ пек, чаш-ш кăна сĕрчĕ йĕкĕт ал тунинчи юн тымарĕнчен...

Лăнк сулăнса чӳрече умĕнчен пăрăнчĕ те Арнольд палатăна таврăнса кравать çине лаплатрĕ. Пуçĕ кашлать... Куç çулĕ кăларсах хĕссе хупнă куçĕсенчен унăн чĕрине çапах та пăчăр-пăчăр çутă ӳкет...

## 4

Çапла, çак ăнăçсăр, йĕркеллĕн пуçланма та ĕлкĕреймен суд хыççăн Арнольдăн айăпĕ татах та ӳсрĕ ĕнтĕ. Вăл сынна çĕçĕпе амантнă çеç мар, хăйĕн пурнăçне те татма тăнă... Хӳтĕлеме йывăр. Анчах — хӳтĕлемелле. Унăн телейсĕр те ăнăçсăр ачалăхне, пĕтĕм ăнăçсăр çап-çамрăк пурнăçне витĕр курса ăнланса пулăшма тăрăшмалла. Суда мĕн май килнĕ таран çăмăллăх кӳме ӳкĕтлемелле. Ара, çамрăк-çке, ытла та çамрăк этемĕ, ача кăна. Вун ултта çеç çитнĕ — паспортне те кăçал малтанхи юр ӳксен тин илнĕччĕ...

Анна Ивановна хăй укçипе адвокат тытма шут турĕ. Ана вăл йалт, тĕпĕ-йĕрĕпе каласа ăнлантарĕ Арнольд пирки. Çак ĕмĕтпе тухса утрĕ те тепĕр ир хĕрарăм халăх сучĕн çуртне.

— Кам пулатăр эсир Арнольд Ясмыковшăн?— хăй мĕн çăмăлпа килнине пĕлтерсен асăрхануллăн ыйтрĕ адвокатсен пӳлĕменче ларакан пĕр хĕрĕхелле çитнĕ арçын. Çак сын, çӳçне çӳлелле типтерлĕн тураса якатнăскер, ахаль те вылянчăк мар куçне пушшех тимлĕх кӳрекен çутă харшаллă куçлăхлă, сăмахне васкамасăр илтерсе калаçаканскер, килĕшрĕ Анна Ивановнăна. Кунашкаллишĕн, ваттисем калашле, «сын çинче — йывăç çинчи» пулмалла марах, пĕррс пăхсах курăнать.

— Мĕнле калас... Никам та мар темелле... Кӳршĕ хĕрарăмĕ,— тӳрех нимĕн калама та аптрарĕ Анна Ивановна.

— Каçарăр та, мĕншĕн эсир çӳретĕр уншăн? Мĕншĕн ашшĕ-амăшĕ тăрăшмасть ывăлĕшĕн?

— Çавă çав, ашшĕ-амăшĕ...— хаш-ш сывларĕ Анна Ивановна.— Ашшĕ-амăшĕ тенинчен килчĕ те ĕнтĕ ачан мăкăлтануллă пурнăçĕ,— сасартăк кăшкăрса ярасси килчĕ унăн. Куçне хупрĕ, каллех хашлатса сывларĕ. Çук, лăпкăлăх кирлĕ кун пек чух, лăпкă пулма тăрăшмалла. Чунне пусарса лăпкăн, васкамасăр калама тытăнчĕ хĕрарăм:— Ашшĕ... çухалчĕ. Амăшĕ... мĕнле калас... эрех ăшне путнă... Тĕрĕссипе, вĕсем Арнольдшăн пачах та ашшĕпе амăш мар.

Адвокат ăнланмарĕ:

— Чимĕр-ха, мĕнле... тăван ашшĕпе тăван амăшĕ мар-и?

— Тĕрĕс. Тăван мар...

— Ашшĕпе амăшĕ, мĕн, вилнĕ-им?

— Пурăнаççĕ...— сасси пӳлĕнчĕ Анна Ивановнăн.— Ача кăна пулин те, арканса чăлханнă çип çăмхиех çав Ар-

нольд пурнăçĕ. Хăш енчен тытăнса хăш тĕлте шырамаллатăр ĕнтĕ вĕçне-тĕввине?..

Аптраса ÿкнĕ хĕрарăма адвокат ыйтăвĕ пулăшрĕ:

— Анна Ивановна, калăр-ха, Арнольд çитĕннĕ кил-йыша хăçантанпа пĕлетĕр эсир? Унпа хăçан, ăçта паллашнă? Арнольда хăйне хăçантанпа пĕлетĕр?

Ах, ытла та кукăр-макăр çав ку кил-йыш тымарĕсем... Ытла та. Анчах çапах та... Чăнах та, хăçантанпа пĕлет-ха Анна Ивановна вĕсене, пуçласа хăçан паллашнă?

— Хăçантанпа пĕлниййĕ, ара...

Пĕр хускалмасăр тенĕ пек итлет адвокат Анна Ивановнăна, хăйне кирлĕ пек туйăннине хушăран тетрачĕ çине çыра-çыра хурать.

... Атăл хĕрринче, пĕр вăрăмах мар урамра, пăрахут пек шурă çурт ÿссе ларчĕ. Çуртăн хуçисем аллисене ордер илсе ярмăнккăна пухăннăн килсе тулчĕç — шавлăн, савăнăçлăн, чăн-чăн уяв туйăмĕпе. Анна Ивановна та çавсен йышĕнче. Хваттерĕ ун тăваттăмĕш хута лекнĕ. Мĕн калăн, паха хваттер, хăраххăн çынна мăй таран çитмелле аслă кăна пĕр пÿлĕмлĕскер. Хĕвел енче. Ватăлмалăх кунра хăвăн уйрăм хваттер пурри вăл пурнăç тепĕр ĕмĕре тăсăлнипе пĕрех-тĕр. Ырлăх, савăнса пĕтереймĕн!

Эрнене яхăн иртрĕ çапла. Кĕреççĕ, тухаççĕ çĕнĕ çурта хуçисем — кÿршĕре кам-кам пурăннине çаплах пĕлместха Анна Ивановна.

Пĕррехинче вăл лавккаран çăкăр туянса таврăнатчĕ. Хăпарса çитрĕ те хăйсен хутне хваттерне уçма кĕсйинчен уçă кăларнăччĕ кăна, юнашарти алăксенчен пĕри сассăршавсăр уçăлчĕ те, çап-çамрăк хĕрарăм курăнса кайрĕ.

— Сывлăх сунатăп!— саламларĕ çакскер кăмăллă та йăваш сасăпа.— Кĕрсе тухсамăр пирĕн пата. Кÿршĕсем вĕт-ха ĕнтĕ...

Анна Ивановна туртăнса тăмарĕ. Чăнах та, тахçанах паллашма вăхăт. Ырă кÿршĕ кил-йышпа пĕрех теççĕ.

— Мана Поля тесе чĕнеççĕ,— паллаштарчĕ кил хуçи хăй хыçĕнчен алăк хупса.— Заводра ĕçлетĕп. Лабораторире.

— Эпĕ — Анна Ивановна. Заводрах ĕçленĕ. Пĕччен пурăнатăп.

— Сирĕнпе паллашма питĕ хавас.— Поля йăл-йăл кулкаласа кухньăналла утрĕ, хăй хыçĕнчен пыма хăнине те кăчăк туртрĕ.

— Сăрапа аппалантăм мар-и ара. Тин çеç йÿссе анчĕ. Паллашнă ятпа тутанса парсамăрччĕ, Анна Ивановна,—

шăкăл-шăкăл калаçса куркине кăпăкланса тăракан сăра тултарчĕ Поля.

— Упăшку пур-и сан, хĕрĕм?— кăсăкланчĕ Анна Ивановна.

— Пур. Çыхăну уйрăмĕнче техникра ĕçлет.

— Ача-пăчаллă-и-ха?

— Пĕрлешнĕренпе пилĕк çул иртрĕ ĕнтĕ, анчах çав хаклă япалана, тем, çаплах туянаймастпăр-ха,— сасартăках нар пек хĕрелсе кайрĕ Поля.

— И-и ара, ма васкас? Пулĕ-ха, пулĕ, кĕтсе илĕр-ха çав ырă куна та.

Поля хваттерне кăтартса çӳреме тытăнчĕ. Хваттер икĕ пӳлĕмлĕ. Аслă, таса. Чӳречисене черчен ӳкерчĕклĕ чĕнтĕр карнă. Çывăрмалли вырăн та паха — икĕ лутра йывăç кравать юнашар ларать. Пĕри темшĕн çи виттисĕр-ха тата, матрасĕ майсăррăн кăнтарса тăрать.

— Ара, паян туянса килтĕм-ха вĕсене. Пĕччен ниепле те картне лартаймастăп,— ăнлантарчĕ Поля.— Лука, ман упăшка, унашкал ăпăр-тапăр ĕçпе аппаланма юратмасть...

— Атя хам пулăшам,— сĕнчĕ Анна Ивановна.

Иккĕн-иккĕнех. Аванах вырнаçтарса кĕртрĕç кравать матрасне.

Кăштахран Поля упăшки те таврăнчĕ. Сывлăх сунасси, паллашасси асĕнче те пулмарĕ çак çыннăн. «Юмахлама юратманскер пулас...»— аптраса шухăшларĕ Анна Ивановна. Хăй пăхмалăх пур вара. Пĕвĕпе çӳллĕ. Çӳçĕ кăтра. Кусне ешĕл сенкер тейĕн. Çăмăл костюмĕ те çавнах аса илтерет, хуçине çутă сăн кӳртсе тăрать.

Икĕ хĕрарăмшăн çак кун туслăх пуçламăшĕ пулчĕ темелле. Ватти çамрăккине хăй хĕрне юратнă пек килĕштерсе пăрахрĕ. Пĕр-пĕрин патне каçман кун иртмерĕ тек. Польăн, халăхра каларăш, алли ылтăн. Тем ĕçе те пултарать вăл, типтерлĕ. Тата упăшкине кам ун пек савма, хисеплеме пĕлет-ши?! Пăхатăн та, унăнне ирĕн-каçăн урине ăшă шывпа çуса тăманни кăна вĕт! Лукан пĕр кĕпинех икĕ хут тăхăнни нихçан та пулман. Вăл вăраннă çĕре пукан хыçĕнче çунă, якатса хатĕрленĕ чăлт таса кĕпе çакăнса тăрать. Апачĕ хатĕр. Çи те, якаскер, ĕçе тухса ут.

Çĕнĕ çуртри çĕнĕ хваттерсенче çулталăк сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Поля çаплах хĕр пек яштака çӳрет. Мĕн пур йăпанăвĕ унăн — упăшки: пăхать ăна, тасатать, çитерет... Çапла хăй йăнăш çулпа пынине малтанах чухласа та илеймерĕ пулас-ха вăл. Лука питĕ янкăсланса çӳре пуçларĕ, унтан хайхи пач çухалакан пулчĕ, килне тепĕр чух икĕвиçĕ каç таврăнмасть.



Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького
34343-чув

Япшар арçынна шухă хĕрарăмсем час кÿç хываççĕ. Çакна сисмест, туймасть мар ĕнтĕ Поля. Анчах вăл хăйне çирĕп тытма тăрăшать. Ырă мар еннелле сулăннă пурнăçĕ пирки упăшкипе те, çынпа та калаçса мĕскĕнленмест. Анна Ивановна çеç куркалать ун куç çульне хушăран.

Писрĕ Лука килĕнчен, Польăпа пач тенĕ пек калаçми пулчĕ. Кĕрет, тухать, çÿрет хваттерĕнче мĕлке пек. Хăй кунта, чунĕпе — таçта. Çын вăл çапах та хăйĕнчен хăй ниçта та тарса хăтăлаймĕ. Пĕр çăвартан сурса пурăнмалли упăшка пулмарĕ Лука. Ыррине кĕтмест Поля текех унран.

— Поля, эсĕ ирĕклĕ,— тенĕ хайхи пĕррехинче арăмне.
— Мĕн?— нимĕн калама пĕлмен лешĕ.— Ăнланмарăм.
— Пире çыхса тăраканни нимĕн те çук. Тытар та — иксĕмĕр ик еннелле...
— Эсĕ уйрăласшăн-и, Лука?
— Тĕп-тĕрĕс ăнлантăн.

Поля çакна хирĕç шăл шурри те кăтартман. Йĕрсе ярасран шăлне çыртса айккинелле пăрăннă. Ăра, ытлашши сăмах мĕн парĕ кун пек чух? Ăшĕ пĕр вĕçнĕ çынна ÿкĕте кĕртеймĕн, чунне каялла тавăраймăн. Тата пулнă-и-ха ун, Лукан, çав чун, пысăк чун?

Кĕçех Польăна суда чĕнтерчĕç.

— Уйăрăр пире,— тет Лука, пĕтĕм сăлтавне çемье тĕввине тытса пыракан ача çукки çине йăвантарать.

Киревсĕр ăнлантару ку. Ача çуккишĕн Поля мар, Лука хăй айăплă. Çакна иккĕшĕ те аван пĕлеççĕ. Анчах упăшки ав нĕрсĕррĕн суйса мăшăрне варалать.

Лешĕ вара çак тĕрĕсмарлăха илтнипе чĕлхине çухатнă тейĕн. Нимĕн те чĕнмест вăл, нимĕн те ăнлантармасть. Пĕтĕм чунĕ тăвăлса çĕкленет унăн. Çак тăвăлура хĕрарăм мăн кăмăллăхĕпе вăтанчăклăхĕ, тарăхупа ÿкĕнÿ пăтрашăнса каяççĕ.

Сасартăк Польăна темле пăнтăх пÿлĕм чÿречи янк уçălса кайнăн туйăнать. Чÿречерен уçă-уçă çилваркăшса кĕрет, ку таранччена пĕтĕм тертпе асапа, хуйха-суйха аяккалла сирет, хăвалать. Самант — чунра ирĕклĕ, çĕнĕ, уçă вăй-хăват çĕкленет. Куççем урăхла çутăпа çуталса каяççĕ. Пăхать хĕрарăм: тăрать ав юнашарах çын — ячĕ çын та, анчах чунĕпе çын та мар иккен. Шел, ниме тăман çав çыншăн çамрăклăхне пĕтернĕ Поля. Чавса çывăх та... Çук, çук, пуçа усма юрать-и?! Путсĕр чуна вăйлă чунпа çĕнтермелле. Пурнăçа çĕнĕрен тытăнмалла.

Пуçне вашт çĕклет те Поля суда çапла евитлет:

— Ҫак ҫынпа пӗрле пуранса ирттернӗ ҫулсене ылханатӑп. Кирлӗ мар ун пек пурӑнӑҫ. Уйӑрӑр.

Уйӑрӑлсан нумаях та вӑхӑт иртмерӗ, Лука арӑм ҫине арӑм илсе пычӗ. Ҫӗнни Лида ятлӑскер пулчӗ. Кӳршиарши хапӑл тумарӗ ӑна — чӗрӗ арӑм ҫине пырса кӗрекене кам кӑмӑллатӑр? Хӑй вара, ҫав Лида тенӗскер, питӗ курнӑҫланса ҫӳрерӗ малтанах. Ара, вӑл саккун йӗркине пӑсман: арӑмӗнчен уйӑрӑлнӑ ҫынна качча тухнӑ. Еркӗн ячӗ те сыпӑҫас ҫук: Лукапа сырӑнма та ӗлкӗрнӗ.

Хӗр халлӗн пыман вӑл Лукана, качча кайса курнӑскер пулнӑ. Пӗр арҫыннине ҫухатсан теприне тупас ӑсталӑх вӑрттӑнлӑхӗсене те аванах вӗренсе ҫитнӗскер пулас вӑл. Пӗррехинче ӑна Анна Ивановна магазин умӗнче питнекуҫне сӑрласа пӗтернӗ темӗнле хӗрарӑмпа тӑнине курнӑччӗ. Қалаҫӑвне те илтсе юлчӗ. Хӑй япшар Лукана мӗнле «ҫаклатни» ҫинчен мухтанса кӑтартатчӗ.

Атӑл леш енче пулнӑ-мӗн ку. Самрӑк, ирӗклӗ хӗрарӑм сыран хӗррипе хӑйӑр ашса пынӑ. Курах каять хайхи: пӗри хӗвелпе хӗртӗнсе выртать. Ӑмсанмалла хул-ҫурӑмлӑ арҫын. Чӗлхипе чӑк-чӑк тутарса илет Лида. Ӑнсӑртран ун уринчен такӑннӑ пек туса лап! тӑвать ун умне. Леш пуҫне каҫӑртса чӑр пӑхать ҫаксккер еннелле: те ятламалла, те каҫару ыйтмалла?.. Сӑмах чӗнме те ӗлкӗреймест. Кунашкал чухне мӗнлерех пулмаллине лайӑх чухлакан хӗрарӑм ихӗлтетме, курнӑҫланма тытӑнать. Лешӗ пӗчченех канса выртнине туйса юнашар тӑсӑлса выртать. Ҫакланнӑ вара Лука капкӑна.

Ҫапла пӗр алӑкран Лукапа икӗ хӗрарӑм тухса кӗре пуҫларӗ — арӑм пулни тата ҫӗнӗ арӑм...

## 5

Анна Ивановна сӑмахӗнчен адвокат Арнольд ӳссе ҫитӗннӗ кил-йыш пирки самаях пӗлме ӗлкӗрчӗ ӗнтӗ. Анчах ку ҫителӗксӗр-ха, пуҫламӑшӗ кӑна темелле. Унӑн тӗшшине тупса тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлсе ҫитмелле. Ҫавӑнпа адвокат Ясмыков Лукан хальхи, иккӗмӗш, арӑмӗпе курнӑҫма шут тытрӗ. Мӗншӗн тесен ку хӗрарӑм Арнольдӑн усрава илнӗ амӑшӗ шутланать-ҫке-ха.

Телее, Лида килӗнчех ларатчӗ. Яланхи йӑлипе хӑвӑрт та витӗр сӑнаса илчӗ адвокат ӑна. Пӗвӗ-сийӗнчен те, сӑнӗпитӗнчен те чылай чипер хӗрарӑмах пулнӑ пулас Ясмыков арӑмӗ. Анчах халӗ вӑл питӗ япӑхса юлни сисӗнет. Пичӗкуҫӗ шыҫӑнса, саралса кайнӑ, сывӑ маррӑн курӑнать.

— Йӑмшӑхса ҫитрӗм-ха, — тӑнк-танк пускаласа утрӗ

пӳлёмре Лида.— Урара пĕр вăй çук! Ара, хуйхă-суйхă пĕтерет мар-и çынна... Упăшка кӳршĕ хĕрарăмĕпе явăçса кайрĕ те Çурçĕре тухса шăвăнчĕ. Арнольд та хисеплемест. Пăхса ӳстернĕшĕн тав тăвас вырăнне тип шар кăтартса «савăнтарчĕ». Вăл ĕçлеме тытăнасса шутсăрах кĕтеттĕм, вара алимент шыраса илме пулатчĕ хуть. Атту халь мана палласшăн та мар...

— Арнольд кам ачи вăл? Аçтан, камран усрава илнĕ эсир ăна?— ыйтрĕ адвокат сĕннĕ пукан çине вырнасса ларсан.

Лида тӳрех чĕнмерĕ. Шкап алăкне уçса темĕн ухтарчĕ. Черкке чăнклатни илтĕнчĕ унтан. Сĕтел хушшине хĕрарăм самантрах çуталса кайнă куçпа таврăнчĕ. Чĕлхи те çăмăллăнах салтăнчĕ ĕнтĕ унăн.

... Сентябрь пуçланнăччĕ кăна-ха. Çанталăк калама çук селĕм тăрать. Лука отпуска тухрĕ.

— Пуçтарăн, тăванăм, сана хам çуралнă яла илсе кайса кăтартам,— пĕлтерчĕ вăл Лидăна канăвăн пĕрремĕш кунĕнчех.

Лида ун чухне заводăн Культура керменĕнче ташă кружокне ертсе пыратчĕ. Кермен директорĕ кĕр умĕнхи кунсенче кружока пуçлăхсăр хăварасшăн мар. Çĕнĕрен те çĕнĕ номерсем хатĕрлес чухне ташă ăстисем саланса пĕтесрен шикленет.

— Уншăнах пуçна ан ус. Ку вăл пысăк сăлтав мар,— хавхалантарчĕ Лука арăмне.— Хам кайса майлаштаратăп. Кирлĕ пулсан — çур литр, кирлĕ мар тăк — мур тыттăр.

Тем тыттарса тем тунă вара Лука керменте, ăна Лида пĕлмерĕ, анчах директор чип-чиперех отпуск пачĕ.

Икĕ кунтан Ясмыков çĕнĕ арăмĕпе çула пуçтарăнса тухрĕ. Атăл тăрăх пăрахутпа анчĕç. Вырăнĕсем иккĕмĕш класра. Палуба тăрăх васкамасăр уткаласа çӳреççĕ те карлăк çумне пырса таянаççĕ. Сывлăшĕ уçă, хĕвелĕ ачашлать. Атăл шывĕ пăрахут хыççăн хĕр çивĕчĕ пек явăнса юлать.

— Ялта аçу-аннӳ пурăнать-и вара сан?— упăшки куçĕнчен йăвашшăн пăхать Лида.

— Вĕсем çĕре кĕни тахçанах ĕнтĕ.

— Эппин, кам патне каятпăр эпир? Ялта ăçта чарăнасшăн эс?

— Унта ман Кĕтерук аппа пурăнать. Вăл мана питĕ юрататъ: пырса тухсан шăллăм та шăллăм тесе кăна тăрать вара. Упăшки те ырă çын. Эпĕ çыру çырса янă. Вĕсем пире кĕтеççĕ. Ан пăшăрхан, питĕ чаплă йышăнĕç.

— Тупнă мĕншĕн пăшăрханмалли! — тутине пăрса илчĕ Лида. — Яланлăха каймастпăр-иç, урлă пăхнине сиссен тухнă та шăваннă.

Пĕр кана вĕсем шăпăртах пычĕç. Самайран тин Лида куçне хĕскелесе йĕкĕлтесерех ыйтрĕ:

— Аппу патĕнче эс Польăпа та хăналаннă-и?

Лука çирĕплетсе пуçне сулчĕ. Сивĕ çил килсе çапнăн, Лида кăмăлĕ самантрах пăсăлчĕ. Килĕнчи хирĕçÿ-харкашу асне килсе вĕрилентерчĕ. Польăна вăл çав тери кураймасть. Ăна хваттертен хÿтерсе ярассишĕн темĕн тума хатĕр. Кухьăра та янăрашать, унăн пÿлĕмĕ патĕнчен иртсе пынă чух алăкĕнчен те тăрăслаттарса тапса хăварать. Поля чăтать, чĕнмест. «Ухмах хĕрарăм эсĕ! — тулхăрать татах Лида. — Эпир ыталанса, чуп туса выртнине итлесе ларатăн! Мĕн, вĕчĕрхенет-и чуну?!»

Çапла, Польăна çÿçĕнчен ярса илсе лăскаманни кăна Лидăн. Лăскĕççĕ те — шикленни чарать. Лука килне таврăнсан ÿлесе макăрса та кăтартать вăл, Поля çинчен элек парать: «Мана паçăр чутах хĕнесе тăкмарĕ! Алăк патнелле тулкăштарса ячĕ. Хăваласа кăлар ăна, куç ан куртăр». — «Хăваласа кăларасчĕ те — саккун чарать. Судра пĕр пÿлĕмне ăна памалла турĕç-çке. Сана тивнĕшĕн вара, лăплан, ăна лайăхах тавăрăп», — йăпатать арăмне Лука. «Тавăр çав, тавăр, çупса яр!» — упăшкине мăйĕнчен çĕленле явса илет çамрăк арăм тени.

... Кăнтăрла умĕн çитрĕç хăнасем яла. Кил хуçисене Лидăпа паллаштарнă хыççăн Лука урай варрине пĕшкĕнсе чăматанне уçма пикенчĕ. Ун тавра сакăр-тăхăр ача пуçтарăнса тăнă ĕнтĕ. Куккăшĕ мĕнле парнепе савăнтарасса кĕтеççĕ. Акă хăна чăматанран пĕр тăрăх катан пир, икĕ тутăр кăларса аппăш хул пуççийĕнчен урта-урта ячĕ, йыснăшне тĕрĕллĕ кĕпе тыттарчĕ. Вĕтĕр-шакăр валли урлă сак çине канфет-премĕк тухса выртрĕ.

— Ку парнесемпе кучченессене манăн арăм туяннă, — мăнаçланса калаçрĕ Лука. — Юратăр, савăр ăна, тăван тесе йышăнăр.

Тĕрĕссипе, Лидăн парне-кучченеçпе айланасси асĕнче те пулман. Халĕ курăр-ха, чапа кăларчĕ ăна упăшки тăванĕсем умĕнче, ырă ятлă турĕ. Ай, Лука! Çуталса, ихĕлтетсе кăна тăрать Лида.

— Поля кин ăçта кайса кĕнĕ вара? — Кĕтерук хăлхинчен пăшăлтатрĕ çав самантра Лука йыснăшĕ. Лешĕ ăнлантарса тăмарĕ, упăшкин урине хыттăн пусса ыраттарчĕ те тĕпелелле талпăнчĕ: çырт шăлна, сан ĕç çук, çамрăксем хăйсенне хăйсем пĕлеççĕ тени пулчĕ ĕнтĕ ку.

Ĕçме-çиме çĕклесе тĕпелтен сĕтел патне, сĕтел патĕнчен тĕпеле кумакан аппăшĕ пуçне тая-тая тав тăвать, пĕрпĕчченçи çерçи кĕтĕвĕ пек чĕвĕлтетет.

Кĕçех пурте сĕтел хушшине кăшăртатса кĕрсе ларчĕç.

— Тăванпа тăван хушшинче çул ан татăлтăр! Çав ятпа пултăр,— черкке çĕклерĕ йыснăшĕ.— Тĕппипе ĕçер!

Ӳпĕнчĕç вара черккесем. Çĕнĕ çын та турткалашса лармарĕ.

Кĕçех вăл хăйне кунта тăван килĕнчи пекех туя пуçларĕ.

Çурăм хыçĕнче çуйхашни илтĕнчĕ. Лука çаврăнса пăхрĕ. Аппăш ачисем канфет-премĕк пайласа çитерейме́ççĕ иккен — пĕри те тепри ытларах сăптăрса илесшĕн. Çавă ĕнтĕ вăл пӳрт тулли ача-пăчан. Аппăшĕпе йыснăшĕн вĕсем вуннăшĕ утаççĕ-чупаççĕ-ха. Сăпкара тата ав вун пĕрĕмĕшĕ выртать. Ячĕ Илюк терĕç пулас-ха унăнне. Çапла, Илюк.

Эрех-сăрапа хĕрнĕ аппăшĕ хăнасем умĕнче хăйсен ача нумаййипе мухтанма тытăнчĕ:

— Çире татах пур. Çирĕме çитеретпĕрех! Икĕ хутчен героиня ятне илес тетĕп-ха. Илетĕп!

— Çирĕм ачана ним мар çитерет у!— хăлаçланчĕ йыснăшĕ те.— Ара, снай йĕкĕреш парнелет. Илюк кăна, юлашки, тепле хăраххăн çуралчĕ.

Каллех черккесем чанклатаççĕ, каллех юхать эрех. Эрехпе пĕрле Лука пуçне харсăр шухăш пырса кĕчĕ: «Чим-ха, Илюкне пире пама ыйтас кусенчен!»

Унран хăйĕнчен ача çураттарасси пулмасть, куна тухтăрсем тахçанах каланă. Поля чиперех чăтса пурăнчĕ-ха Лукан çак пысăк кăлтăкне, унтан та ытларах ача çуккишĕн хăйне ӳпкеленине тӳсме тиветчĕ ун. Лида вара апла пулмĕ. Упăшкин тӳрлетме çук инкекĕ çинчен пĕлсен самантрах асар-писер кăларĕ.

Ăнсăртран хыпса илнĕ, анчах çăлăнăç кӳрес çак шухăш Лукан пуçĕ хĕрнĕçемĕн амаланмаллипех амаланать-ха. Аппăшĕ патĕнчен ачапа таврăнсан лере, хулара, кӳршĕ-аршăри вăрăм чĕлхесем хăвăртах кĕскелсе лăпланĕç. Хăртма, сиввĕн пăхма пăрахĕç. Ара, ача чунĕ кил-йыша илемпе сум кӳрет.

Лука вăрттăн каласса пăхма арăмне пăлтăра чĕнсе тухрĕ.

— Лида, ман сана каламалли пур...

— Мĕн-ши ĕнтĕ?

— Каламаллинчен ытларах ыйтмалли пулĕ-ха вăл. Ара, мĕн, эсĕ мана чăнахах юрататăн-и?..

— Ак тата!— тӗлӗнчӗ Лида.— Ман юратӑвӑма паян кунччен те ӗненмесӗр пурӑнатӑн-и? Ӗнен, чунӑм, ӗнен: шутсӑр, шутсӑр юрататӑп!

— Апла пулсан кӑтартса пар...

Лида чуп тума кармашрӗ.

— Чим-ха, апла мар, ӗҫпе кӑтарт эсӗ.

— Мӗнле ӗҫпе тата?— кӳренсе тутине пӑрчӗ Лида.

— Эпӗ... ача усрава илесшӗн. Вӑт мӗн.

— Мӗн?!— Лида сасси самантрах тытӑнчӗ.— Мӗн, эпӗ ача... Эсӗ пӗлетӗн-им вара? Эсӗ ӑнланса, мӗн...

Тӑрлавлӑн нимӗн те сыпӑнтарса калаймарӗ вӑл. Эрехпе хӗп-хӗрлӗ хӗрелнӗскер пӗрре шуралса, тепре пушшех хӗрелсе кайрӗ. Куҫне тартрӗ, куҫне шӑлчӗ...

Хӗр чухнех икӗ хутчен ҫие юлнӑччӗ Лидӑн. Анчах икӗ хутӗнче те вӑл ҫут тӗнчене килес айӑпсӑр чунсенчен хӑтӑлма тӑрӑшрӗ, хӑтӑлчӗ те. Ҫавӑн хыҫҫӑн хӗсӗр хӗрарӑм пулса юлчӗ. Малтанхи упӑшки те унран ҫавӑншӑнах сивӗнчӗ. Ку та, Лука, ача ыйтма тытӑнасран питӗ шикленсе пурӑнатчӗ-ха Лида...

Лука ҫак самантра арӑмӗн чӗринче мӗн вӗресе хӑпарнине нимӗн чухлӗ те тӗшмӗртмерӗ, унӑн ҫыхӑнусӑр калаҫӑвне ӑнланмарӗ. Ӑна хӗрарӑмӑн сасартӑках йӑвашланса килнӗ, чӗтревлӗн илтӗнме пуҫланӑ сасси йӑпатрӗ. Вӑл Лида хӑйпе килӗшессе ҫийӗнчех ӑнкарса илчӗ.

— Юратсан килӗш манпа. Ҫилӗш!..— тилмӗрчӗ ӳсӗр упӑшки хӗсӗр арӑмне.— Сӑпкари Илюка илетпӗр те каятпӑр. Итле, илетпӗр те каятпӑр. Усрава илетпӗр ӑна. Ача... Ача пулать пирӗн...

Тинех йӑлт тӑна илсе лӑпланчӗ ӗнтӗ Лида. Савӑннипе унӑн ахӑлтатса кулас килчӗ. Ара, шӑпа хӑй аллипе хӑй телей тыттарать-иҫ! Кун пек ҫӑмӑл, ырӑ ҫӑлӑнӑҫран кам алӑ сулса пӑрӑнтӑр! Ача пулманран Лука сивӗнес хӑрушлӑх сирӗлет. Сивӗтес килмест Лидӑн ӑна хӑйӗнчен. Тек ун пек упӑшка тупаймӑн. Хваттерлӗ, укҫа-тенкӗллӗ. Тухса кӗме пӗвӗ-сийӗ, ҫын умне тӑма сӑнӗ-пичӗ пур. Тата ача усрава илсен Поля та хваттертен часах тасалӗ.

— Мӗнле, килӗшетӗн-и?— хӗрӳн, ӳсӗррӗн пӑшӑлтатать Ясмыков.

— Илетпӗр! Илсе каятпӑр! Сана юратса эпӗ вутра ҫунма та, шывра путма та хатӗр,— ихӗлтетет Лида.

— Маттур арӑм эсӗ манӑн!— ыталать, ҫупӑрлать Лука ӑна. Ӗнтӗ вӑл ҫиччӗмӗш пӗлӗт ҫине виҫсе хӑпарнӑн хӗпӗртенӗ.

— Анчах парӗҫ-и-ха ачине?— пӳлет ун савӑнӑҫне арӑмӗ.

— Параççĕ! Аппа манăн! Пĕр варта выртнă тăван! Аттепе аннен эпир иксĕмĕр çеç!..
Арăмне пӳрте ăсатса аппăшне чĕнсе кăларчĕ Лука.
— Пĕлетĕн-и, аппа, эпĕ питĕ, питĕ телейсĕр. Эпĕ санăн телейсĕр шăллу!..— ӳсĕр йĕрмĕшӳпе сасартăк хăратрĕ пăрахрĕ хайхискер хĕрарăма.
— Апайтурах! Мĕн пулчĕ?— хыпăнса ӳкрĕ лешĕ.
— Санăн ача нумай, аппа, татах тăватăн. Эсĕ телейлĕ. Эпĕ вара нихăçан та ача чунĕ кураяс çук. Манран ача çуралмасть...
Çапла тĕпĕ-йĕрĕпе каласа ăнлантарчĕ, шалт тĕлĕнтерчĕ аппăшне хĕрсе çитнĕ, хăйне çав самантра чăннипех те телейсĕр тесе шутлакан Лука.
Ҫĕтерук ахлата-ахлата пĕççине çапрĕ.
— Пар мана сăпкарине. Парса яр,— тĕп йĕр çине ӳкрĕ юлашкинчен ун шăллĕ.— Усрава илетпĕр ăна Лидăпа, хамăр çине çыртаратпăр. Ҫилĕш, пар, ĕмĕр манмăпăр сана, ĕмĕр тав туса пурăнăпăр...
Хĕрарăм чĕри хĕрхенӳллĕ. Тата ку хĕрарăмĕ халь ӳсĕр-ха. Ӳсĕрĕн вара шухăшĕ çăмăл. «Тăван тĕпренчĕкĕм тăван аллинче пулĕ. Таçта ютра мар. Ма ан пурăнтăр, ма ан çитĕнтĕр ачам тăван шăллăм патĕнче?— тет Ҫĕтерук.— Ма усрава парас мар? Пирĕн татах пур. Пирĕн татах пулать. Лука та ыр куртăр». Хăйĕн кăмăлне шăллĕне пĕлтерет.
— Йысна чармĕ-ши?— сасартăк уралнă пек пулать лешĕ.
— Ан пăшăрхан уншăн. Йысну ман сăмахран тухмасть вăл.
Таврăнаççĕ çапла сăмах татса пӳрте. Лука сĕтел çине «Экстра» кăларса лартать. Лида ав сăпкари Илюкпа выляса тăрать иккен-ха.
— Йысна, сирĕн ку миçе уйăха çитнĕ ĕнтĕ? Ытла та лăпкă ача. Пĕрре пăхсах килĕштерсе пăрахрăм...
—Ултă уйăх тултарчĕ. Ӳсет йĕкĕт!
Тăвансем каллех сĕтел хушшине пуçтарăнчĕç. Тин çеç-ха чи кĕçĕн ывăлĕпе мухтанса ларнă ашшĕ сиссе те ĕлкĕреймерĕ, кĕрекерисем пурте Илюк пирки калаçма тытăнчĕç. Усрава илесшĕн-мĕн ăна хуларан килнĕ хăнасем. Ачана ылтăн сăпкара сиктерсе çитĕнтерме сăмах параççĕ.
— Эпир ăна вĕрентсе пысăк çын тăвăпăр,— тет Лука.— Хулара пирĕн унта темиçе институт!
— Сирĕн пата, яла, вăл тухтăр е инженер пулса килсе кĕрĕ. Ял-йыша тĕлĕнтерĕ,— сăмахран юлмасть çĕнĕ çын та.
Йыснăшĕ шухăша путрĕ. Апла иккен-ха. Чăнласах ус-

рава илесшĕн. Эккей. Килте халĕ Илюксăрах вунă ача. Арăмĕ каллех йывăр çын. Çавăн чухлĕ ачана, паллах, вĕсем пурне те аслă шкулсенчен вĕрентсе кăларайmĕç — вăй çитмĕ. Пурнăçĕ вăл çак сĕтел хушшинчи ĕçкĕ çеç мар-ха. Илюк телейĕ, тен, вĕсен аллинче...

— Усраччăр ара,— упăшки еннелле çаврăнать Кĕтерук.— Ют çын аллине памастпăр-иç ачана. Лука тăван шăллăм, вăл хамăн аслă ача пекех. Пĕрне çеç мар, килĕшеççĕ пулсан икĕ ачине те хаваспах парса ямалла эпĕ...

Амăшĕн çак сăмахне итлесе тăнă аслăрах ачисем шикленнипе кăпăр-капăр кăмака хыçне кĕрсе пытанчĕç. Вĕсен нихăшĕн те çак килтен, ашшĕ-амăшĕнчен хăпса каяс килмест. Илюк та халĕ пĕр ик-виç çулхи ача пулсан çакăнта аппăш-пиччĕшĕ хушшинче тăпăртатса тăмалла. Анчах сăпкари ача вăйсăр, вăл нимĕн те пĕлмест, хирĕçлеме ун чĕлхи те уçălман.

Халĕ вăл амăшне кăна паллать, ăна çĕр хĕрарăм хушшинчен уйăрса илсе ун патнелле алă тăсать. Ют çынсем килĕшмеççĕ ăна, вĕсене пĕрре те йăл кулса кăтартмасть. Пӳртре хăй тавра тĕпĕртетекен пĕчĕк тăванĕсен шавне шутсăр килĕштерет. Вĕсен сассине илтсен урисемпе тапăлтатать, аллисемпе хăлаçланать. Хăшĕ те пулин алла тытсан вара пĕтĕм хевтипе ыткăнса чуппа пама пĕлет...

Хăнаран Лидăпа Лука ачаллă пулса тухрĕç.

Çул çинчех Лида амăшĕн вăйне, амăшĕн ирĕкне кăтартма пултарчĕ. Тата пĕр хутчен çеç те мар-ха.

Акă пристаньре Лукан билет туянмалла. Халăх лăках, черет темĕн тăршшĕ. Лида упăшки аллинчен ачана çăтăр-çатăр илчĕ те çынсене тĕрткелесе касса патнелле талпăнчĕ.

— Пăрăнăр!— кăшкăрать хăй.

— Ăçта сĕкĕнен?

— Черетсĕр ăçта кĕрен?!— шавласа кайрĕç çынсем.

— Эсир суккăр-им? Ман алăра акă ача!— ятласа тăкрĕ Лида.— Ачаллă хĕрарăмсене билет таçта та черетсĕр сутаççĕ. Мĕн, пĕлместĕр-им?!

Сирĕлчĕç вара черетрисем, çул пачĕç.

Лида касса умĕнчен билетпа таврăнчĕ.

— Маттур,— мухтарĕ ăна Лука.

— Маттур мар, ача амăшĕ!— пулчĕ лешĕн сăмахĕ.

Пăрахут çине кĕрсе ларсан ача темшĕн кансĕрленме тытăнчĕ: йĕрмĕшет, тапкаланать.

— Илюк, Илюк, ан йĕр, тетте парап. Илюк...— йăпатма пикенчĕ Лука.

— Мĕнле Илюк тата?— куçне чарсах пăрахрĕ Лида

çакна илтсен.— Тек ял ачи мар вăл, хула ачи. Хула ачин культурăллă ят пулмалла.

— Ан аташ-ха. Илюш, Илья мĕншĕн культурăсăр ят тет?

— Эпĕ паçăрах шухăшласа хунă кун пирки,— ăнлантарчĕ ачан çĕнĕ амăшĕ.— Ача Арнольд ятлă пулать.

— Ку чăвашла ят мар.

— Чăвашла ан пултăр. Эпир ăна вырăсла кăна вĕрентĕпĕр.

— Арнольд. Вырăссен те унашкал ят çук.

— Пулин,— парăнмарĕ Лида.— Тен, вăл ют çĕр-шывсенче пурăнас çын-ха.

— Юрĕ. Ĕç ятра мар,— килĕшрĕ вара Лука.

Хулара ача ячĕпе хушаматне, çĕнĕ çĕрте çĕнĕрен çуралнăн, урăхла çыртарчĕç: «Ясмыков Арнольд Лукич». Амăшĕ те Екатерина мар — Лидия.

## 6

Çын тени, паллах, хăйне сахал хурлать. Каласура-мĕнре вăл хăйне ытларах ырăпа кăтартма тăрăшать. Лидăн та калавĕ çапларах пулса тухрĕ. Анчах тимлесе итлекенрен чăнлăха пытараймăн. Адвокат та Арнольдăн ама çури амăшĕ калаçнă чухне сăмах хыçĕнчине витĕр курса ларчĕ. Ăна Анна Ивановна каласа пани те, хăй чухласа, тĕшмĕртсе илни те Илюк-Арнольд пурнăçĕн тĕрĕс ӳкерчĕкне курма пулăшрĕç.

... Ача мĕн илсе килнĕренпе те кулса кăтартмасть. Тăтăш йĕрет, пит çăмарти тăрăх вĕри куç çулĕ юхать. Илюк паллать, пĕлнĕ сăн-пите шырать, ăна курасшăн. Пуçĕнче шурă явлăк пурччĕ ун, каялла çыхнăскер... Куçĕ кăвак... Ăçта-ши çав çын? Мĕншĕн çаплах килмест? Ыттисем, урайĕнче чупса çӳрекен пиччĕш-аппăшсем, ăна «анне» тесе чĕнетчĕç. Илюк та хырăмĕ выçсан «анне!» тесе кăшкăратчĕ. Анчах унăн çапла чĕнни урăхларах илтĕнетчĕ-ха — пур пĕрех ăнланатчĕç. Хайхи кăвак куç пырать те ăна сăпкаран çĕклесе илет. Илюк хĕпĕртенипе сиксе тăрасла тăпăлтатать. Амăшĕ сак çине майлашăнса ларать, кĕпи тӳмисене вĕçертет. Ĕмет хайхи ача! Мĕн тери пылак та тутлă сĕт!..

— Тек ан шуйăх,— ăс парать амăшĕ Илюка çисе тăрансан.— Çывăр ĕнтĕ. Паппа ту, пы-ысăк пул.

Ача каллех сăпкара. Анчах унăн выртасси килмест, йĕрмĕшме пăхать. Сасартăк чĕвĕлти сасă илтĕнсе каять çывăхрах. Ку вăл Илюк аппăшĕ, Маюк теççĕ ăна.

— Чим-ха, санăнне кипкӳне улăштармалла пулĕ-ха,— калаçать вăл пĕчĕк шăллĕпе.— Пĕлетĕп, хăвна кура мар тасине, типпине çеç юратан...

Ентĕ кипкине улăштарнă. Хырăмĕ тутă. Сăпкана сиктерме тытăннине Илюк сиссе те юлаймасть, куçĕ хупăнать.

Ют çĕрте ак ачашăн çак ырлăх çук. Унăн хăнăхнă сăнсене курас килет, хăнăхнă сасăсене илтес килет. Анчах çук вĕсем. Пӳрт ăш-чикки пуш-пушах. Темĕнле икĕ мĕлке çеç явăнса çӳрет. Куç хăрпăкĕнчен çакланнă куç çуль тумламĕ витĕр вĕсен пичĕсем пысăк, çап-çаврака курăнаççĕ тата симĕссĕн-кĕреннĕн йăлтăртатаççĕ. Илюк сехĕрленнипе тата хытăрах шуйланать, çухăрса та ярать.

Акă Лука ачана арăмĕ умне çĕклесе пычĕ.

— Илюк, Арнольд, ку санăн — мама. Аннӳ эппин. Анне — мама! Мама тесе чĕн ăна. Ма-ма...

Лука Лидăна кăкăрĕнчен пӳрнипе тĕртсе кăтартать. Ачана та ун çумне тытать.

Илюк шартах сикет. Ăçтан-ха анне пултăр ку? Ун амăшĕ пуçне шурă тутăр çыхнă, куçĕ кăвак. Ку — пĕртте ун пек мар, сăмси вăрăм... Чунтан хурланать ача.

— Арнольд, акă ку — па-па. Папа те,— тăк-тăк тĕкет Лида упăшкин кăкăрĕнчен.— Ку санăн — аçу...

Пăтрашăнса кайрĕ ача. Каçăхсах йĕрет.

— Арнольд, чарăн!

— Арнольд! Арнольд!

— Ача мар ку!— тарăхать Лида.— Нервăсене силлесе кăларать ку капла пĕтĕмпех!

Илюк тимлемест вĕсен сăмахне. Кам вăл Арнольд? Арнольд тесе чĕнеççĕ те — Илюка куçран пăхаççĕ...

— Чарăннă пул, сысна ачи!— куçне-пуçне чарсах пăрахать хăшкăлса çитнĕ Лука.— Пиçиххипе пи-пи тăватăп ак!

Чăнахах та, вăл ачана пиçихха вĕçĕпе çара вырăнтан тивертсе илчĕ. Лешĕ ыратнипе, хăранипе çариех çухăрса ячĕ. Çăвара темĕн сивĕскер хыптарчĕç. Ĕмкĕч иккен. Ĕмме пулать, ĕмнĕçемĕн ăшăнса пырать. Нăчлаттарсах ĕмме тытăнчĕ Илюк-Арнольд, лăпланса, лăпланса пычĕ, янахĕ ывăннă май ыйха та путрĕ. Анчах тĕлĕкре те йĕчĕ вăл, йĕрмĕшет те хăштик-хăштик сывласа ярать.

— Ну-и шăрчăк. Ача мар, чăн ăншăрт!— ятлаçать Лука.

— Эсĕ мĕн, унпа пуканелле выляма ĕмĕтленнĕччĕ-и? Ха-ха-ха!— ахăлтатать Лида.— Малашне çĕр çывăрмасăр ташласа тăрăн-ха ун умĕнче. Çĕр çывăрмасăр пурăнсан-пурăнсан хăшĕ-пĕрисем ухмаха та тухаççĕ.

— Мĕншĕн ман ташламалла?
— Сан тăвану,— касса татрĕ Лида, çавăнтах тата акă мĕнле лăплантарчĕ:— Ан кулян. Эпир ăна спартанла ӳстерĕпĕр. Ачашлама юрамасть. Ачашласа ӳстерсен пуç тăрне хăпарса ларакан пулĕ кайран. Ытларах пиçиххипе вĕрентĕпĕр.

## 7

Ачаллă пулнăранпа Лида килте ларать ĕнтĕ. Упăшки ĕçлеме пăрахтарчĕ ăна. Савăнсах килĕшрĕ лешĕ. Ара, тахçанах çапла канăçлă пурнăçпа пурăнасшăнччĕ-ха, ĕмĕтленни çитрĕ ак. Ҫăнтăрлаччен ыйха туртать, ĕçрен таврăннă упăшкине вара пачах урăхла юрласа кăтартать.
— Ачапа кун каçиччен питĕ ывăнса çитетĕп. Тен, ăна яслие вырнаçтарăпăр, э?
— Юрамасть,— тавăрать Лука.— Иртерех-ха.
— Мĕншĕн?
— Малтан ăна хамăра хăнăхтарса çитермелле. Унсăрăн яслие илме пырсан та, палламанскер, алла пырас темĕ. Намăса ăçта хурар!
Лукан çак канашĕпе пурăнма тытăнчĕç. Хăй вăл ирех ĕçе тухса каять. Арăмĕпе ывăлĕ çывăрса юлаççĕ. Тепĕртакран ача văранать. Айра йĕпе. Тӳссе вырттас килмест ун. Хăй чĕлхипе сас парать: «Ҫам пур?» Хирĕç никам та чĕнмест...
Ҫĕр каç ăна малтан клеенка çине вырттарнăччĕ. Унран, шапа тирĕ пек сивĕскертен, ӳте сулхăн çапать, çӳçентерсе ярать. Ҫăшт тăхтасан ая хаçат пырса чикрĕç. Ҫапла ăшăрах. Тем тĕлте çывăрса кайнă вара ача. Тĕлĕкĕнче амăшне курнă. Ҫăкăр ĕмтерчĕ пек. Сĕчĕ пылак та тутлă. Унтан ăна такамсем шыв янă такана çине лартрĕç. Шывĕ шыв та мар, темĕнле лапра... Питĕ кансĕрленсе văранса кайрĕ Илюк — ы-ых, айра лайăх мар-çке! Тахăшĕ ун патне пычĕ, хыпашласа пăхрĕ.
— Лӳшкентернĕ те вара!— кăмăлсăррăн калаçрĕ хăйхискер. Унтан йĕпе хаçата туртса кăларчĕ те типпине хучĕ.
Хаçатпа усă курассине Лида шухăшласа кăларнă-ха ăна. Лука çакăншăн арăмне мухтарĕ кăна: капла, ара, вăл кипке, супăнь туянса укçа тăккаламасть. Лидăн хăйĕн савăнăçĕ: кипке çуса-ухса ĕшенмест, аллисем çуркаланмаççĕ. Ҫуртри ачаллă хĕрарăмсем авă ача кипки çуса хăшкăлмаллипех хăшкăлаççĕ. «Эх, айвансем,— кар-

тишěнче урлă та пирлě карнă кантрасем çинче çилпе вěлкěшекен шап-шурă кипкесене курса лěх-лěх кулать Лида хăй тěллěн,— кăлăхах ытлашши тар юхтараççě».

Хăй çуратнă ачашăн амăшě тар юхтарма мар, чунне пама, пуçне хума хатěр. Лидăшăн çак туйăм — ют...

Тул тахçанах çутăлса çитнě. Вăраннă ача шăппăн выртать.

— Арнольд, эсě вăрантăн-и?— илтет вăл хайхи.

Илюк ěнтě хăйěн ятне манчě, Арнольд тесе чěннине хăнăхрě.

— Кў-лў-лў,— тавăрчě ача сасса хирěç. Ку ěнтě: «Эпě тахçанах вăраннă, пaçăртанпах чăрлаттарса пăхса выртатăп»,— тенине пěлтерчě пулас. Унпа халě яланах сарă çўçлě, шěвěр янахлă, шăлавар тăхăннă хěрарăм пěрле.

— Арнольд, эпě санăн мама,— ăнлантарать çаплах çак хěрарăм.— Мама тесе чěн мана — печени парăп.

Пěррехинче Арнольд чăнахах та: «Ма!— терě,— маа...» Хěрарăм вара çуйхашкаласа ун аллине печени пырса тыттарчě.

«Ма» темшěн лăпкă мар, хăлт-халт тутарса ун-кун утать, тухать, кěрет. Ачан хырăмě выçса çитнě. Акă тинех хěрарăм ăна пырса йăтрě, кухньăна илсе тухрě:

— Маннă пăтти пěçерсе çитерем сана...

Кунта Арнольд тепěр çынна асăрхарě, чăр пăхрě ун çинелле палласа илес пек. Çук, курманскер. Куçě ăшă хăйěн. Ача ăна кулса та кăтартрě, анчах лешě «кил, кил» тесе кăчăк туртмарě.

«Ма» темшěн тарăхать. Ăшă куçлă хěрарăм еннелле мěл-мěл пăхса илет. Унтан, тўсěмě пěтсе çитнě пек, сиввěн сăмах хушрě:

— Эсě, Поля, манашкал çапла ача тытса лараяс çук!..

— Вăхăт çитсен тытăп-ха. Анчах ача манăн хам çуратни пулě.

Лида хăйне вěри шывпа сапнăнах туйса илчě, урсах кайрě:

— Ах, кураймастăн апла пире эс ача усрава илнěшěн?!

— Кураймании мěн вăл!— хěрхўн кулса илчě Поля.— Сире Лукапа иксěре те персе пăрахмалла.

— Ырă ěç тунăшăн-и?

— Ырă ěç мар ку. Эсир хурахсем. Ачана чěрě-сывă ашшěпе амăшěнчен уйăртăр. Вăл сире ўссен çакăншăн каçармě.

— Вěчěхетěн! Эпир ачаран çын тăватпăр. Эпě уншăн ěçлеме пăрахрăм ав!— кăшкăрать Лида.

— Сурăх тирě пěркеннě кашкăрсем эсир,— тет Поля.—

Амăш сĕтне ĕмесскере шывпа пĕçернĕ пăтă çитеретĕр.

— Сĕтне паян çеç туянаймарăмăр-ха...

Поля тек сăмахласа тăмарĕ, аллине сулчĕ те кухньăран тухса кайрĕ.

Ятлаçа-ятлаçа Лида ачана зала илсе кĕрсе урайне лартрĕ, аллине тетте тыттарчĕ. Теттесĕр те юншăхлас çукчĕ-ха ачи, мĕншĕн тесен вăл урайĕнче выляма питĕ юрататъ. Кунта ирĕклĕ, упален те упален!

Малтанах вăл кучĕпе шуса пăхрĕ — чарăнчĕ: темшĕн меллех мар пек. Хырăмĕ çине тăсăлса выртрĕ ак, капла та кăмăл туртмастъ. Чĕркуççи çине тăрса тăват уран упаленсе кайрĕ. Инçете çитрĕ капла, сĕтел айнех. Пукан ларать тата унта. Ун патне упаленсе пычĕ ача, урлă патакĕнчен ярса тытрĕ. Çĕкленесшĕнччĕ — лак кайса ларчĕ каялла. Тепĕр хут тапаçланса çĕкленчĕ. Урисем яртах тăсăлчĕç. Тăчĕ хайхискер. Ĕнтĕ ярса пусма та пулать, тӳрех мар, кăшт тăхтасан. Пукан ларкăчне сăран сăрнă. Ал лаппипе çат-çат! çапса пăхрĕ ача. «Ля-ля!» — терĕ. «Мĕнле илемлĕ янăрать!» — тени пулчĕ ĕнтĕ ку. Сасартăк кăмăлĕ хуçăлчĕ ачан. Ун паçăртанпах хырăмĕ выçă, халĕ вара тӳсмелле мар çиес килсе кайрĕ. Макăрас мар тенĕ çĕртенех йĕрсе ячĕ.

— Мĕн пулнă? — кăшкăрать Ма кухньăран.

Кăштахран вăл турилккепе пăтă çĕклесе кĕчĕ. Пăтти кăн-кăвак.

— Тӳ-тӳ! — тесе кармашать Арнольд.

— Эй, хурт-кăпшанкă, ме, кӳп! — кăп-кап хыптарать Ма ачана нимĕн уямасăр.

Пĕчĕккин усал сăмахшăн кӳренес шухăш мар-ха, ун мĕн панă пеккине хыпса пултăр халь. Хырăмĕ пит выçса çитнĕрен-тĕр пăтти шутсăр тутлă.

— Упшур ан пул! — терĕ те Ма çитерсе ямасăрах пăтта каялла çĕклесе кайрĕ.

Çапла кун хыççăн кун иртсе пычĕ. Сисĕнмерĕ те, хĕл ларчĕ.

Арнольд ури çине тăнках тăрать ĕнтĕ.

Картишĕнче хĕрарăмсем хăйсен пепкисене кăпăшка юр çийĕн çунашкапа туртса çӳреççĕ. Ара, уçă сывлăш ачапăчашăн калама çук сиплĕ. Лука ачи çеç урама тухса курман-ха.

Подъездра тĕл пулнă Ясмыкова Анна Ивановна сăмах чĕнмесĕр чăтаймарĕ:

— Эсир, Лука, хăвăрăн пĕчĕккине уçă сывлăша пачах илсе тухмастăр курăнать. Апла нише кайĕ ача...

— Пĕлетĕр-и, Анна Ивановна, — темшĕн куларах та-

вăрчĕ Лука,— ку тĕлĕшпе эпĕ хамăн малтанхи йĕркенех çирĕп тытса пырасшăн.

## 8

... Çĕнĕ çул умĕн Лукапа арăмĕ хăна йышăнма хатĕрленчĕç. Аппăшĕпе йыснăшĕ ачине килсе курасшăн.

— Эрехне çителĕклех туянтăмăр ĕнтĕ, апат-çимĕçрен те намăс курмăпăр. Арнольдăн кĕписем вăт кивĕ, йăлтах кĕскелсе юлнă. Мĕнле-ха, кĕтĕк тумпа аван мар пулĕ вĕсен умĕнче?..— шухăша ӳкрĕ Лида.

— Çĕннисене туянас. Намăс курар мар.

— Ара, туянар çав, Лука!

Упăшки укçа кăларса тыттарнă-тыттарман магазина тухса чупрĕ Лида. Ача валли пушмак, кĕпе-трусси чи йӳннисене суйласа туянчĕ вăл. Пĕчĕк пайĕ çеç пĕтрĕ панă укçан. Ыттине хĕрарăм хăй валли пуçтарса чикрĕ.

Хăнасем çитнĕ çĕре ачана вĕр çĕнĕ çи-пуç тăхăнтартса тăратрĕç Ясмыковсем. Çуталса кайрĕ вĕт пĕчĕк каччă! Мĕн çĕннине, мĕн лайăххине вăл та ăнланать: «Ах, ах!»— текелет кăна хăй тăрăх пăхса.

Хайхи кĕтсе илсе салтăнтарсан хăнасене пӳлĕме тӳрех ача патне чĕнчĕç.

— Кĕтерук аппа, кур-ха пирĕн йĕкĕте! Мĕнлерех вăл!

— Илюк,— ача патнелле ăвăнчĕ Кĕтерук.

— Арнольд ятлă вăл, аппа,— пӳлчĕ хайхискерĕн çулне Лида.— Çырса пĕлтернĕччĕ-çке сире. Арнольд тесе чĕн.

— Эх, тăм пуç! Çаплаччĕ-çке ара...— ни унталла, ни кунталла пулса тăчĕ хăна, айăпа кĕнĕн ӳсĕркелесе илчĕ.

Кăштахран, Лида кухньăра хатĕрленсе çитиччен тесе Лука йыснăшне пирус туртма коридора чĕнсе тухсан, пӳлĕмре тăван амăшĕпе ачи иккĕшех тăрса юлчĕç. Кĕтерук тутрине юсакаласа, кĕпине кăрт-карт турткаласа, асăрханса-именсе ача умнелле тепре çывхарчĕ. Кăчăк туртса чĕнчĕ:

— Арнольд, килсем ĕнтĕ ман пата, килсем...

Ача тинкерсе, тинкерсе пăхрĕ хĕрарăма, тем аса илме тăрăшнăн, питне-куçне пĕркелентерчĕ. Çук, палланăскер мар. Шурă тутăрне каялла çавăрса çыхакан хĕрарăм ун асĕнчен ĕмĕрлĕхех çухалнă ĕнтĕ, ун чĕрçийĕ çинче янахĕ ывăниччен кăкăр ĕмни те тахçанах манăçа юлнă. Арнольд пуçне айккинелле пăрчĕ.

— Ывăлăм! Илюкăм, мана паллаймарăн-и? Эпĕ сана

çуратнă аннӳ-çке, аннӳ! Ҫил ман пата, юратам,— тилмĕрсе чĕнет Кĕтерук, ачан кăмăлне уямасăр ăна тытма кармашать.

Ҫăлăхах. Пĕчĕк этем ун аллине тĕрте-тĕрте ярать, ăхх! ăхх! тесе шăмарать.

Пĕтĕм чунĕ кӳтсе килчĕ Кĕтерукăн, куçĕ самантрах куç çулĕпе тулчĕ. Курăр-ха ара, хăй çуратнă ывăлĕ палламасть-çке ăна! Ҫак хушăра алăкра упăшки курăнчĕ. «Ача пирĕнтен сивĕннĕ!»— кăшкăрса ярасси килчĕ телейсĕр амăшĕн, анчах пĕр сăмах та шарламарĕ: чĕлхи-çăварĕ тăм илнĕн хытса ларнă.

Кĕçех пӳлĕме ĕçме-çиме çĕкленĕ шăллĕпе кинĕ те килсе кĕчĕç.

— Ларăр сĕтел хушшине!— чĕнеççĕ хуçисем хăнисене.

Ача йывăç кравать çинче карлăкран тытса тăрать. Сĕтел хушшинчи çынсене вăл асăрхамасть те тейĕн, чӳрече витĕр таçта урамалла пăхать...

Сĕтел хушшинче сăйлав пуçланчĕ ĕнтĕ. Кĕтерук аллинче черкке, шăллĕ ăна тĕппипе çавăрса хума пусахлать. Анчах ĕçес шухăш-и-ха Кĕтерукăн: вăл хăйне халĕ тĕлкĕшекен шĕл кăвар çинчи пек туять. Ăна ывăлĕ йышăнмарĕ — акă мĕн!

Ĕнтĕ нимĕн тăва пĕлмен енне черккене шалт çеç ӳпĕнтерчĕ хĕрарăм, çиййĕнчех тенĕ пек теприне те. Йăн-йăн-йăн! йăнласа килчĕ пуçра, умри сĕтел тайăлса илчĕ те каллех тӳрленсе ларчĕ. Ӳсĕрĕлчĕ Кĕтерук самантрах. Халĕ ăшĕ çуннине тӳсме çăмăлтарах пек.

Пуçĕнче тĕрлĕрен шухăш явăнать. Усаллине хӳтерет, ыррине тытса чарма тăрăшать Кĕтерук. Ырри ун хăлхинчен ырринех пăшăлтатать: «Ҫин ĕç пăрахсах ачапа ларать. Пĕр çын пĕр ача пăхать. Ҫунтан ытла епле тăрăшăн тата? Пĕрре пăхса паллă: лайăх пăхаççĕ ачана. Тумĕ таса ав. Хырăмĕ тутă. Хваттерĕ ăшă, типтерлĕ шăллăмсен. Тупата, çăтмахра пурăнать ман ача. Пустуях шуйланса ларатăп. Ытти ачасемпе танлаштарсан, ку ман чи телейли. Ҫилтисене тепĕр чухне апат та путлĕн пĕçерсе çитерейместĕп — ирхине ирех колхоз ĕçне тухса каятăн та каçхине тин таврăнатăн. Ҫун каçа ачи-пăчи темĕн хăтланать, пĕлместĕн те. Халĕ вăл мана палламаншăн мĕншĕн çав териех хуçăлас? Ӳссен хăйне кам çуратнине пурпĕрех пĕлет-иç! Ун чух чип-чиперех анне тейĕ мана...»

## 9

Лидӑн ӳпкелешӳ юрри пуҫланчӗ:

— Ҫулталӑк ытла асапланатӑп ӗнтӗ капла,— тет вӑл упӑшкине тӑтӑшах.— Ҫынсем калаҫҫӗ пуль... Лидӑн пурнӑҫӗ ырлӑх кӑна теҫҫӗ пуль, ларать килӗнче сарӑлса теҫҫӗ пуль... Анчах пӗлесчӗ вӗсен, мӑй таран тӑрантарчӗ мана ку пурнӑҫ! Ача пӑхиччен, тупата, вӑрман касма килӗшмелле...

— Тӳс ӗнтӗ, чунӑм, тӳс тата кӑштах,— лӑплантарать Лука.— Пӗлетӗн-ҫке-ха, ҫӳретӗп эп, тӑрӑшатӑп, таҫта та ҫитсе пӑхрӑм ӗнтӗ ку ясли пирки. Ӗнтӗ ӗҫӗ кӗҫех татӑлас пек туйӑнать-ха.

Тӗрӗс, ача-пӑчана яслие вырнаҫтарасси чылаях кӑткӑс ӗҫ ҫав. Лука юлашки вӑхӑтра чӑнах та самай чупкаларӗ. Тӑрӑшни сая каймарӗ: яслире вырӑн пур тесе пӗлтерчӗҫ.

Пурнӑҫ тени ҫапла-ҫке-ха вӑл: пӗр тӗлте ӑнать те, тепӗр тӗлте, улталама ан пӑх мана тенӗн, хирӗҫле ҫапать. Тухтӑрсенчен ясли валли сывлӑх хучӗсем пуҫтарнӑ самантра ачана вӗрилентерсе пӑрахрӗ. Паш-паш пашкаса сывлать Арнольд, кӑкӑрӗнче темӗн хӑйӑлтатать, пит ҫӑмартисем хӗп-хӗрлӗ.

— Арнольд, пипи ӑҫта сан? Мӗн ыратать?— аптра тӑрать Лука ун умӗнче.

Ача хускалаймасть те, хӑрах куҫне аран-аран уҫса пӑхать те ҫавӑнтах хупать.

— Тухтӑра киле чӗнтерес. Вилсе кайӗ атту капла!..

Лида нимӗн те шарламасть. Упӑшкине куҫӗнчен пӑхма хӑюю ҫитерейместь вӑл, пуҫне айккинелле пӑрать. Ара, пӗлет-ҫке, ача чирлесе ӳкнӗшӗн никам та мар, вӑл хӑй айӑплӑ. Тӑхӑнтарма ӳркенсе ӑна ҫарран ҫӳреттерчӗ. Сӑрлӑ урай пӑр пек сивӗ. Ури шӑннӑран чирленӗ Арнольд.

— Пӗр тӑхтаса тӑмасӑр ачана пульницана хумалла,— пӗлтерчӗ тухтӑр.

— Мӗн чирӗ ун?— ыйтать шикленсе ӳкнӗ Лука.

— Ӳпки шыҫнӑ.

— Ай-яй-яй! Мӗн хӑяматшӑн-ши ӗнтӗ ку?

— Шӑнтнӑ эсир ӑна,— ӑнлантарать тухтӑр хут ҫине тем ҫырнӑ май. Ҫырса пӗтерсен ӑна Лукана тыттарчӗ.— Ҫак хутпа пульницана йышӑнӗҫ. Анчах та сирӗн ачӑр питӗ йывӑр чирлесе ӳкнӗ, ҫавӑнпа унпа пӗрле амӑшӗн те выртма тивет.

— Мӗншӗн вара шӑпах амӑшӗн выртмалла тет? Эп мӗн пӗлеп!— куҫне чарса пӑрахрӗ Лида.— Ман шутпа, ачапа ашшӗ пӗрле пулни усӑллӑрах.

Тухтăр питĕ тĕлĕнчĕ.

— Ķаçарăр та,— терĕ вăл,— эпĕ ку тарана çитсе те амăшĕ пур çинчех чирлĕ ачапа пульницара ашшĕ выртнине ас тумастăп...

Тухтăр хыççăн алăк хупăнсанах Лида ĕрлеме тытăнчĕ:

— Чее çын эсĕ, Лука! Мана пульницана кайса хупатăн та ху кунта улпутла пурăнатăн. Çитменнине, хĕрсем патне, хусах маткасем патне чупма тытăнăн-ха! Апла мар пулсан çумрах Поля пур. У-у, хăçан тухса тасалĕ-ши çакăнтан Поля!..

— Чарăн, айван!— хăтăрса тăкрĕ ăна Лука.— Пĕчĕк ачашăн чи çывăххи хĕрарăм алли пуль! Е эсĕ ячĕшĕн кăна амăшĕ пулса пурăнасшăн? Апла пулсан!..

Çакна илтсен Лида шартах сикрĕ. Ķапла ачана мар, мăшăра çухатма пулать-иç. Пĕр хирĕлтерсе ярсан Лука нумай шухăшласа тăмĕ, Польăна пăрахнă пек тытĕ те çавăрĕ пурнăçа тепĕр май... Тек хирĕç чĕнмерĕ Лида, кăштăртатса пульницана пуçтарăнма пуçларĕ.

Пульницара ачана уйрăм кравать çине вырттарчĕç те ун тавра тӳрех шурă халатлă çынсем хĕвĕшме тытăнчĕç.

— Ķĕмĕл кашăка ак çак стаканри шыва чике-чике кăларăр та ача тутине йĕпетсех тăрăр,— ĕç хушрĕ Лидăна тухтăр.

Палатăра сывлăш йывăр. Йĕпеннĕ кипке тавращĕпе эмел шăрши кăкăра пӳлет, ăша пăтрататать. Шавлă тата, чирлĕ ачасем вĕçĕмсĕр йĕрмĕшни, йăслани хăлхана йӳçĕхтерсе çитерет. Кунашкал лару-тăрăва хăнăхман Лида кăштах ларкаласанах сӳлтен кайрĕ. Сасартăк вăл хăй шутсăр ывăннине туйса илчĕ, тӳсмелле мар ыйхă пусса килчĕ. Хайхи пуçне Арнольд минтерĕ çине перĕнтерме ĕлкĕрчĕ çеç — харлаттарма та тытăнчĕ. Çакă палатăри ача амăшĕсене шалт тĕлĕнтерсе пăрахрĕ.

— Мĕнле чунсăрскер пулчĕ вара ку? Ачи вилесле чирлĕ, вăл пур — ыйха туртать...

— Эй, амăшĕ,— хул пуççинчен пырса лăкарĕ Лидăна тухтăр,— çывăрма тăхтăр-ха, тӳсĕр кăшт.

Лидăн куçĕ çĕленсех ларнă, ниепле те уçăласшăн мар.

— Тăрăр та сивĕ шывпа кайса çăвăнăр...

Хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ Лида, уçă форточка патне пырса тăчĕ, урамра хĕвĕшекен çынсене ăмсанса пăхма тытăнчĕ, хăйне читлĕхе лекнĕ кайăкăн туйрĕ вăл.

Палатăра сисĕнмесĕрех тĕттĕмленсе пычĕ. Ķĕçех маччари лампочкăсем пĕр харăс ялтăр çуталса кайрĕç. Кун вĕçленчĕ иккен. Лука арăмĕшĕн вăл пĕр ĕмĕр тăсăлнăн туйăнчĕ.

Çĕрле Арнольда пушшех йывăрлантарса пăрахрĕ. Ниçта кайса кĕреймесĕр тулашать ача, аллисемпе çапкаланать, пÿлĕне-пÿлĕне пашкать. Ӳчĕ-пĕвĕ çунтарса ярасла вĕри. Ыйхипе сÿптĕркенĕ Лида йĕпетнĕ кашăка ун тути тĕлне тытаймасть, унпа ачан çамкине, хăлхине перĕнет.

— Амăшĕ, амăшĕ, ан сывăрăр, ачана пулăшăр!— ятлать Арнольда укол тăвакан тухтăр.

Тарăхать Лука арăмĕ. Çак шăршлă пульницаран таçта тĕнче хĕррине тухса тарĕччĕ вăл халĕ. «Мĕншĕн эпĕ кунта-ха? Қам асапланма хушать мана çапла?!»— кăшкăрать хăй ăшĕнче. Хĕсĕнсе ларнă, путса кĕнĕ куçĕпе вăл Арнольд çине çилленсе пăхрĕ. Кравать çинче ача мар, тискер кайăк чĕппи выртнăн туйăнчĕ ăна. Чунĕ курайманлăхпа тулчĕ, шăлĕсем качăртатаççĕ.

Уйăх ытла выртрĕ Лида ачапа пульницара. Вĕсене илме пынă Лукана тухтăр çапла канаш пачĕ:

— Тек ывăлăра ан шăнтăр, ăшă тумлантарса çÿретме тăрăшăр. Тата тутлă çитерĕр, вăй кĕтĕр хăвăртрах.

— Уйрăмах мĕнле-мĕнле апат лайăх-ши?— тĕплĕнрех ыйтса пĕлесшĕн Лука.

— Витаминлă апат ытларах пултăр. Улма-çырла сĕткенĕ питĕ аван. Паллах, çу, сĕт, çăмарта...

Çитерчĕç хайхи килте Арнольда «витаминлă апат», малтанхи каçах... Ăна пульницаран сыввăн-чĕррĕн илсе таврăннине паллă тума шут тытрĕç Лукапа Лида. Қаç пулнă-пулманах ĕçме-çиме лартса тултарнă сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç вĕсем. Лука кĕленче уçса икĕ чÿнкĕр черккене лăнкăр-лăнкăр тултарчĕ.

— Сывă та телейлĕ çемьешĕн!— çĕклерĕ вăл черккине. Лида та унран юлмарĕ:

— Пĕр-пĕринпе ĕмĕр килĕштерсе пурăнассишĕн!

Пушанаççĕ те тулаççĕ, пушанаççĕ те тулаççĕ черккесем...

— Ма!— аллине тăсать кравать карлăкĕнчен тытса тăракан ача. Унăн хырăмĕ выçнă. Анчах пысăккисем, ĕнтĕ ӳсĕрĕлсе çитнĕскерсем, илтмеççĕ те ăна. Лида, нимĕн те пĕлми пулнăскер, Лука мăйĕнчен уртăнать.

— Юрататăп сана, шуйттан çăпатине!— çине-çинех чуп тăвать ăна.

— Эпĕ те сана юрататăп,— кулкалать Лука.

— Халĕ ĕнтĕ ĕненетĕп. Чăнах юратан.

Куна Лида Лукан малтанхи арăмĕ Поля хваттертен кайнăшăн савăнса çапла калать-ха. Лида ачапа пульницара выртнă хушăра Поля качча тухса хваттертен кайнă иккен. Анчах çĕнĕ упăшки патĕнче пурăнать пулин те,

кунти пӳлӗмне пушатман, алӑкне ҫӑрапах питӗрсе хӑварнӑ ав. Лида ӑна ҫӗмӗрсе кӗме те хатӗр-ха, анчах саккунран шикленет.

— Тӳс ӗнтӗ кӑштах,— лӑплантарать ӑна Лука.— Поля япалисене илсе кайсанах ик пӳлӗмлӗ хваттер хуҫисем пулса юлатпӑр.

Лида куҫӗсем ҫӑлтӑрла ҫунаҫҫӗ.

Ӳсӗрскер самантлӑха ача ҫинчен те аса илчӗ-ха вӑл:

— Арнольд, сана халех ҫитереп!

Ури ҫине ҫӗкленсе вӑл сулӑнса кайрӗ. Сӗтел ҫинче ҫӑкӑр чӗллисем сапаланса выртаҫҫӗ. Урӑх нимӗн те курмарӗ ӳсӗрскер. Пӗр чӗллине илчӗ те Лида ӑна ачана кайса тыттарчӗ:

— Ҫи!

Вара тайкалана-тайкалана Лука паҫӑрах тӑсӑлса выртнӑ кравать еннелле сулланчӗ.

Пыр тӗпне вӗтелени иртсе кайсан Арнольд лӑпланчӗ, йӗри-тавралла кӑн-кӑн пӑхкаларӗ. Мӑннисем иккӗшӗ те харлаттарсах ҫывӑраҫҫӗ. Ӗнтӗ тин темӗн чул юнтарсан та хӑй патне никам та пырас ҫуккине ӑнланчӗ ача. Вара аллинчи йӗпенчӗк чӗлле ҫавӑркала-ҫавӑркала пӑхрӗ, ҫавна кӑшламалла...

## 10

Ирхине пуринчен малтан Лука вӑранчӗ. Ача та, арӑмӗ те ҫывӑраҫҫӗ-ха. Сехет ҫине пӑхса илчӗ те шартах сикрӗ: ӗҫрен юлать-иҫ вӑл! Чей ӗҫсе тӑма та вӑхӑт ҫук, часрах, часрах тумланмалла...

— Лида!— хул пуҫҫинчен лӑкарӗ Лука ҫывӑрса выртакан арӑмне.— Ача валли ҫимӗҫсем туянма ан ман.

— Укҫа хӑвар,— терӗ лешӗ куҫне уҫмасӑрах.

Лука васкасах тухса кайрӗ, Лида халех тӑма шутламанччӗ, анчах темшӗн ыйхи вӗҫрӗ ӗнтӗ ун. Ҫӑвар тути ҫук, чӗлхи вӗҫне армути хунӑ пек, йӳҫенкӗ тӑрать. Пуҫӗ кашлать. «Мухмӑр...— тутине пӑркаларӗ хӗрарӑм.— Вирлех лекнӗ мана ҫӗр каҫ. Мухмӑр чӗртмелле, унсӑр хӑтӑлаймӑн ку асапран».

Тӑрса пушӑ кӗленчесене тӗрӗслерӗ Лука арӑмӗ — пӗр тумлам та юлман! Ӑҫтан тупмалла? Хӑть пыр шӑтӑкне йӗпетмелӗх те пулин...

— Ӗҫлеме пӑрахнӑранпа путлӗн укҫа тытса кураймарӑм!— сасӑпах ятлаҫса илчӗ тарӑхнӑскер.

Шкап çӳлӗкӗсене, упăшкин тумтир кӗсйисене тустарсă тухрӗ — кăлăхах, ниçта пӗр пус та алла лекмест.

Пӳлӗм тăрăх танкăшса çӳренӗ май Лида ăнсăртран сӗтел çинче укçа выртнине курах кайрӗ. Ылтăн тупăннă пек хӗпӗртесе ӳкрӗ хайхискер. Хут укçана ывçине пӗтӗрсе тытрӗ те хăпăл-хапăл тăхăнкаласа тухса та талкăшрӗ.

Магазин çывăхрах, часах эрех туянса таврăнчӗ мухмăрлă пуç. Тӳсӗмӗ вӗçне çитнӗскер салтăнса та тăмарӗ, тӳрех кухньăна васкарӗ. Аллинчи ырлăхпа самантлăха та пулин киленсе юлас килчӗ-ши çакăн, кӗленчене çутта хирӗç тытса пăхрӗ — асамлă, йăпатмăш шӗвек симӗссӗн çуталса курăнать...

* * *

Хулана тухнă Анна Ивановна килне таврăнатчӗ. Алăк умне çитсен кӳршисен ачи татăлса макăрнине илтрӗ. Самайччен итлесе тăчӗ çакна вăл. Ача çаплах чарăнмасть.

— Ай-уй, пӗччен хупса хăварман пулӗ те куна?— тӗлӗнчӗ вăл.— Пӗртте хӗрхенмеççӗ çаксем пӗчӗккине... Чим-ха, пысăккисене тем инкек пулман-и тата?

Шак-шак! шаккарӗ хайхискер алăка. Шалтан ача кăшкăрнисӗр пуçне урăх сас-хура илтӗнмерӗ. Алăка тӗртсе пăхрӗ Анна Ивановна. Ăна темшӗн питӗрмен те. Кӗчӗ. Хайӗн кравачӗ çинчи ача кӗнӗ çынна курсан ун еннелле кармашса, кăшкăрса чыхăнсах кайрӗ.

— Ан йӗр, ан йӗр, ăмăрт кайăкăм,— тесе Анна Ивановна ача патнелле васкарӗ, ăна хăвăртрах ярса тытрӗ. Вара тин вăл урайӗнче месерле сарăлса выртакан Лида еннелле çаврăнчӗ. Пӗшкӗнсе мӗнле сывланине итлесе пăхрӗ, алă тымарне тытса тӗрӗслерӗ. Чӗрех.

— Мӗн пулнă сана капла, эй?

Урăлас енне кайнă пулас, кăшт тӗкӗнсенех вăранчӗ Лида. Анна Ивановнăна палласа илсе суйма хăтланчӗ:

— Аяк чикнипе вилеслех аптраса ӳкрӗм-ха...

Сӗтел çинче эрех кӗленчи ларнине Анна Ивановна кӗрсенех асăрханăччӗ-ха. Ăнăççăр амăшне урараи мӗн ӳкернине лайăхах тавçăрса илчӗ ӗнтӗ вăл. Çавăнпа ачана кунта хăварма шутламарӗ, хайпе пӗрле илсе тухрӗ. Хайӗн хваттерне каçса ăна диван çине ăшă йăвана лартнă пек типтерлесе лартрӗ.

— Эсӗ ан макăр, ачам. Арçын тенин маттур пулмалла. Халех иксӗмӗр ак мемме çийӗпӗр, куç çуле типӗтӗпӗр...

Çапла ваттипе пӗчӗкки яра куна пӗрле ирттерчӗç вара. Апатланчӗç, çывăрса та илчӗç, урама та тухса çӳрерӗç.

Каç кӳлĕм Лука сирпĕнсе кĕчĕ:

— Анна Ивановна, пирĕн йĕкĕт кунта мар-и? Таврăнтăм та, Лида вил ӳсĕр выртать — ача çук. Сехре хăпсах тухрĕ! — шуранка кĕрен пысăк хăлхисем темле хускалса илчĕç çакăн.

— Ман патăмра сирĕн йĕкĕтĕр. ман патăмра. Ан пăшăрханăр. Эпир ĕнтĕ пĕр-пĕринпе туслашрăмăр, ăнланакан пултăмăр.

— Куратăп-ха, — Анна Ивановна диванĕ çинче кулкаласа ларакан Арнольда пӳрнисене вылятса астарчĕ Лука. — Ватăрах хĕрарăм кирлĕ те пире ачапа ларма — ăçтан тупăн?

Килнс таврăнсан хăйĕн хваттерĕ пачах та килĕшмерĕ паян Лукана. Хăтсăр, тирпейсĕр, темĕнле усал шăршă сăмсана чыхăнать. Сĕтел çинчен пуçтарман, урай çуман. Лиди хăй çаплах-ха ав çав таса мар урайĕнче сарăлса выртать. Мĕнле тӳсмелле куна, хĕрарăмăн çапла япăхса выртмалла-и?! Çилли тăвăлса килнĕ енне Лука арăмне пĕррех пырса тапрĕ.

## 11

Арнольд мĕнле кил-йыша лекни, мĕнле çитĕнни самаях паллă ĕнтĕ. Çапах та çителĕксĕр-ха ку. Тата мĕнмĕн тӳснĕ-ши вăл ача чух? Хăй мĕн ас тăвать? Адвокат унпа хăйĕнпе тĕл пулса калаçма шутларĕ. Çавăнпа ĕнтĕ вăл пульницана тухса утрĕ. Çул çинче татах та татах Анна Ивановна каласа кăтартнисем аса килчĕç...

... Стена сехечĕн кĕске йĕппи тăваллах, тăваллах шăвать. Акă саккăр тĕлне çитрĕ вăл. Анна Ивановна çаплах ăшă вырăн çинче-ха. Тăма васкамасть, паян пит ниçтах та васкамалли çук. Ир çинче çапла шухăшласа выртма пит кăмăллă. Ĕнерхи асран тухмасть-ха ак ватă хĕрарăмăн. Çĕр каç вăл Поля патĕнче хăналанчĕ. Ача çуралнă ятпа çывăх тусĕсене пухнăччĕ вĕсем. Телейне тупрĕ вĕт-ха çав ылтăн чунлă хĕрарăм. Ырă çынна качча тухнă, ырă çынна. Ĕçчен те сăпайлă, тарават кăмăллă Польăн хальхи упăшки. Ĕмĕр килĕштерсе пурăнччăр ĕнтĕ, ăнса пытăрччĕ вĕсен пурте.

Лука пурнăçĕ ав Польăна пăрахнăранпа юхăнса та юхăнса пырать. Ясмыковсен ăштахланса ĕмĕтленни çитмерĕ: Поля пӳлĕмĕ вĕсене пулмарĕ. Польăпа çĕнĕ упăшки хăйсен пӳлĕмĕсене парса икĕ пӳлĕмлĕ хваттер турĕç. Лу-

касем патне, Поля пӳлӗмне, Елен ятлӑ пӗр ҫамрӑк хӗрарӑм пурӑнма куҫрӗ. Темӗн пек кӗрешсен те Лука хӑйӗн хваттерӗнчи пӳлӗме ҫӗнсе илеймерӗ.

Лида та путлӗ арӑм, ырӑ амӑш пулаймарӗ. Сывӑ, вӑйхаллӑ хӗрарӑм ӗҫсӗр пурӑннипе чун йӑпанӑвне эрехре тупрӗ, ҫав сухӑртан халӗ те хӑпаймасть ав. Тата, ҫитменнине, ӗҫме ун ҫӗнӗрен сӑлтав тупӑннӑ-мӗн: упӑшки хайхи Еленпа ҫыхланса кайнӑ имӗш...

Анна Ивановна шухӑшне алӑка тӳнлеттернӗ сасӑ татрӗ. Ку — Арнольд. Вӑл, алли шӑнкӑрав тӳми патне ҫитейменнипе, пӗчӗк чышкисемпе алӑка ҫапла параппан ҫапать.

Анна Ивановна йӑпӑр-япӑрах тӑрса алӑк патне васкарӗ. Тулта кам тӑнине пӗле тӑркачах ыйтанҫи турӗ:

— Кам унта?

— Эпӗ, эпӗ! — тет ача.

— Эсӗ пулсан уҫас эппин.

Питӗ паттӑррӑн кӗрсе тӑчӗ хайхискер. Хӗп-хӗрлӗ свитер тӑхӑннӑскер, пӗрре пӑхсан мӑкӑнь чечекӗ евӗрех туйӑнса каять. Питӗ килӗштерсе тӑхӑнать ҫак тума вӑл. Ултӑ ҫул тултарнӑ ятпа парнеленӗччӗ свитера Анна Ивановна.

— Анна аппа, эсӗ чей ӗҫмен-и-ха? — пӳлӗмелле таплаттарса иртрӗ Арнольд.

— Паҫӑрах ӗҫесшӗнччӗ — эсӗ килейменнипе тӑхтаса тӑтӑм-ха, — кулкалать Анна Ивановна.

— Халӗ эпӗ килтӗм. Халӗ ӗнтӗ ӗҫӗпӗр-и? Ҫырлине те парӑн-и? — тӑлтти-талтти сиккелет ача.

— Памасӑр! Ҫырлине те паратӑп. Ӳссен эсӗ те мана ҫырла ҫитерӗн вара.

— Эпӗ сана питӗ-питӗ нумай ҫитеретӗп ҫырла!

— Мӗнле уҫӑ кӑмӑллӑ ача эсӗ! — Анна Ивановна Арнольда ытала-ытала чуп тӑвать. Лешӗ чиксӗр савӑнса сикет.

— Атя ӗнтӗ кайса ҫӑвӑнар, атту аллусем сан ав хупхура...

Малтанах Лукапа арӑмӗ Арнольд Анна Ивановна патне ҫӳренӗшӗн кӳренме пӑхатчӗҫ. Ачан ҫакӑншӑн ятланине те, патакне те тӳсме тивнӗ. Арнольд кӳршӗ хӗрарӑмне, ют ҫынна, ытларах килӗштерни кӗвӗҫтернӗ-тӗр вӗсене. Ача чунӗ питӗ сисӗмлӗ, ырӑпа ӑшша час туять, ун патне туртӑнать. Халӗ Ясмыковсем алӑ сулнӑ. Ачасӑр хӑйсене ирӗклӗ туяҫҫӗ, унта-кунта тухса ҫӳреме алла ҫыхса тӑраканӗ ҫук. Час-часах пӗри те тепри Анна Ивановнӑна Арнольда илсе юлма ыйтать. Таҫта чупаҫҫӗ хӑйсем. Ачана ирччен те илмеҫҫӗ тепӗр чухне. Ҫӗр выртнӑ хыҫҫӑн Арнольда

килне ăсатма хěн вара. «Кунтах юлатăп, кунтах пурăнатăп!»— тесе кăшкăрать, тара-тара пытанать.

Ĕнтĕ акă ваттипе вĕтти сĕтел хушшине кĕрсе ларнă.

— Ачам, çинĕ чухне курпунна кăларса ан лар, çурăмна тӳрĕ тыт,— асăрхаттарать Арнольда Анна Ивановна ун умне калакла пĕçернĕ çăмарта хурса.— Çăкăрпа çи.

— Çырлине памастăн-им?

— Пурне те пĕр харăс мар. Малтан çăмартине çи. Ас ту, ан васка.

Анна Ивановнăн чечеклĕ-чечеклĕ йывăç савăт пур. Ачапăча питĕ юратмалласкер. Çавăнта хурса пачĕ ак сахăрпа хутăштарнă хăмла çырлине.

— Аппа, сĕчĕ ăçта паян? Çырла сĕтпе тутлă.

— Ай-яй, яка пыр та çак Арнольд!— пӳрнипе юнам пекки тăвать ватти.

Ача савăнать, ахăлтатсах кулать.

Сĕтел хушшинчен тухсан тав тума та пĕлет вăл.

— Ĕнтĕ урама тухатăп,— тет Арнольд.

— Тух та, анчах асăрханса çӳре эс унта. Хĕр ачасемпе ан çапăç,— вĕрентет Анна Ивановна.

— Хĕр ачасем вĕсем Маа пек усал, хăйсем çапаççĕ...

Çурт умĕнченех асфальт çул иртет. Тăтăшах машинăсем чупаççĕ унпа, çынсем çакăншăн питĕ кăмăлсăр: ачасем машина айне пулас хăрушлăх пур.

Çул леш енче лапам вырăн. Хĕлĕн-çăвĕн ача-пăча айкашать унта. Ирĕк, ара. Декабрьте ак аслăрах ачасем темле пĕр анчăк валли юртан пӳрт купаланăччĕ. Шала хăма сарсах айланчĕç, урайне тăлавар пăрахрĕç. Йытă чип-чиперех хĕл каçрĕ.

Çуркунне юр ирĕлнĕ май анчăкĕ йăваран писрĕ. Ишĕлнĕ пӳртĕн ăпăр-тапăрне ачасем хăйсемех тасатрĕç. Çулла лапама талккишĕпех сип-симĕс курăк тапса тухрĕ.

Арнольд çул урлă каçрĕ те пуканелле вылякан хĕр ачасен ушкăнне пырса кĕчĕ. Чиперех пăхкаласа тăратчĕ, сасартăк тем пулчĕ, пĕрне, тепĕрне пуçĕсенчен пара-пара илчĕ. Ку çитмерĕ-ха, вăрăм çӳçлĕ хĕр ачин пуканине илсе вăркăнтарчĕ. Ах, пуçтах! Тухса ăс памалла-и куна? Аптра тăрать Анна Ивановна чӳрече умĕнче.

Çук-ха, хĕр ачисем хăйсемех маттур, ушкăнпа хуса ячĕç ашкăнчăка.

Хăй пек арçын ачасем патнелле уттарчĕ ĕнтĕ. Кусемпе йĕркеллĕ выляма пĕлтĕрех. Çук, пулмарĕ. Яхăнне те çывхартмарĕç лешсем Арнольда, хӳтереççĕ кăна. Шел, пĕр чĕлхе тупаймарĕ ача кусемпе. Хăй кăрăсрах пулас çав...

Çак вăхăтра тепĕр ушкăн ача, аслăраххисем, тăкăр-

лӑкран инвалидсем ҫӳрекен ванчӑк машинӑна тӗртсе тухрӗҫ. Иккӗшӗ кабинӑна кӗрсе ларнӑ.

Курах кайрӗ ҫакна Арнольд. Унӑн та ӗнтӗ катаччи чупас килсе кайрӗ пулас: «Мана та ярӑнтарӑр-ха!»— тесе аякранах ӗрлешсе ыткӑнчӗ машина патнелле. Лешсем ку шӗпӗн ҫине ҫаврӑнса та пӑхмаҫҫӗ. Арнольчӗ чӗнессе кӗтмерӗ, ҫитнӗ-ҫитменех кабинӑналла тапаҫланма пикенчӗ.

— Ан ҫулӑх, шӑпӑрлан!— хӑваларӗ ӑна машинӑна тӗксе пыракансенчен пӗри, хӗрлӗ ҫӳҫлӗ тӑсланкӑ ача. Мӗн каланине Арнольд хӑлхине те чикесшӗн мар, машина патнеллех тапаҫланать. Хӗрлӗ ҫӳҫ тек калаҫса чӑрманмарӗ, пычӗ те ӑна айккинелле талкӑштарса тӗксе ячӗ, хыҫӗнчен тапрӗ тата. Ҫук, ыратнӑран мар, хурланнипе йӗрсе ячӗ Арнольд.

Ӳлесех кил еннелле ҫаврӑнчӗ вӑл. Подъезда кӗчӗ, хӑйсен хутнелле макӑрса улӑхрӗ, сасси ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхарса килчӗ ун. Килне мар, кӳршӗ алӑкне пырса шаккарӗ.

— Анна аппа, атя-ха, ҫав хӗрлӗ пуҫлӑ Лешкӑна тухса ятла,— Анна Ивановнӑна аллинчен урамалла туртрӗ Арнольд.

— Кӗр-ха, ачам, калаҫар санпа,—мӑн ҫынна каланӑ пек чунне ыраттарса чӗнчӗ ӑна ватӑ хӗрарӑм.

Эх, калаҫмалла та ҫав ку ачапа! Кашни кун, кашни лайӑхпа усал хыҫҫӑн калаҫмалла, пӗр сӳтлӗхсӗр, ӑнланса, ӑнлантарса, юратса... Ашшӗ тенӗ ҫыннӑн, амӑшӗ тенӗ ҫыннӑн калаҫмалла.

## 12

— Арнольд Ясмыков, судра ӗнтӗ сана хӳтӗлекенни эпӗ пулатӑп,— сӑмах пуҫларӗ пульницара адвокат.

— Мӗнле хӳтӗлейӗр мана! Эпӗ усаллисӗр пуҫне ырри нимӗн те туса курман-тӑр...— пуҫне ҫӗрелле пӗкрӗ Арнольд.

— Малтанлӑха акӑ мӗнле ыйту пур-ха манӑн...— йӗкӗт шӑртланма пӑхнине асӑрхамӑш пулчӗ адвокат.— Халиччен суд умне тӑрса курнӑ-и эсӗ?

— Мӗнле калас... Судра икӗ хутчен пулнӑ эпӗ, анчах хальхи пек айӑпланакансен шутӗнче мар.

Шухӑша кайрӗ Арнольд. Чылайччен чӗнмесӗр ларчӗ вӑл. Унтан, умӗнчи темӗнле тӗтрелӗхе, темӗнле пӗлӗте сирсе пынӑ пек, ерипен те йывӑррӑн калаҫма пуҫларӗ.

— Хӑҫантанпа ас тӑватӑп-ха хама? Мӗн ҫуралнӑранпах мар-ши? Тен, ҫавӑнпах-тӑр хушӑран эпӗ хама питӗ

ватӑлса ҫитнӗ ҫын пек туятӑп. Ачалӑх кунӗсем мана нимӗн чухлӗ те савӑнӑҫ кӳмен. Ҫапӑҫу, ӗрлешӳ, чӗн пиҫиххи вӑшлатни, эрех черкки чӑнклатни, «укҫа! укҫа!» тесе кӑшкӑрашни мӗн паян кунччен хӑлхара сиввӗн янӑраса тӑраҫҫӗ. Сӗтел ҫинче ҫӑкӑр ҫукки, хырӑм выҫнипе кӑмӑл пӑтранни... Аса илсен халӗ те чуна ыраттарать.

Лукана эпӗ «папа» теме хӑнӑхаймарӑм. Пирӗн пата ялтан пӗр арҫын ача килкелесе каятчӗ, Лукана вӑл кукка тесе чӗнетчӗ. Ҫавӑнтан «кукка» теме вӗренсе юлтӑм. Ӳсерехпе хайхи Лукана «кукка-папа» тесе чӗнкелеттӗм. Арӑмне вара, Лидия Лаврентьевнӑна, мӗн пӗчӗкренех Маа теме хӑнӑхрӑм.

Маапа кукка ялан тӳпелешетчӗҫ. Ҫапла тӗркешсе пурӑнсан-пурӑнсан юлашкинчен кукка пач ҫухалчӗ. Хамӑрпа пӗр хваттерте кӳршӗ пӳлӗмре пурӑнакан Еленпа тухса кайнӑ вӑл, яланлӑхах.

Пурӑнатпӑр хайхи Маапа иккӗн — унран ҫыру персе ҫитрӗ. Кукка-папа мана килсе илсе каясшӑн иккен, хӑй патне, таҫта Ҫурҫӗре.

Маа йӑлт пӑшӑрханса ӳкрӗ, унтан тулхӑрса кайрӗ. «Памастӑп ачана!» — тесе кӑшкӑрать. «Ах, тилӗ, ах, чее! — тет сӗтеле чыша-чыша. — Арнольда илсе каясшӑн та мана хваттертен хӳтерсе ярасшӑн! Пӗлетӗп ӑна, хура юнлӑскерне! Эпӗ укҫасӑр епле пурӑнӑп тата! Алимент шыраттаратӑп, суда паратӑп!..»

Ҫакӑн хыҫҫӑн сасартӑк Маа манпа питӗ йӑвашланса кайрӗ. Ачашлать, ҫитерет, ятламасть, ҫӗнӗ кӗпе туянса тӑхӑнтартрӗ.

— Кукку-паппу илсе каятӑп сана, Арнольд, тесен, нимпе те ан килӗш, — ӑс парать хайхи. — Вӑл сана юратмасть. Манман-и-ха вӑл чӗн пиҫиххипе ватнине? Аллу-уру мӗнле хӑпалана-хӑпалана тухатчӗ!..

Эпӗ ҫӳҫенсе илетӗп.

— Кукка-папа патне каймастӑп эпӗ, — тетӗп хӑранипе. Чӗн пиҫиххи асрахчӗ-ха ҫав ман.

Тепӗр темиҫе кунтан Маа мана таса тумлантарчӗ те ҫапла калать:

— Арнольд, суда каятпӑр. Эс ас ту вара, — тет.

Мӗн вӑл суд, эпӗ ӑнланмастӑп-ха. Маа хушать, манӑн ӑна итлемелле, унсӑрӑн вӑл ҫапса та хуҫӗ, ун чаракӗ ҫук.

Судра эпӗ Маа ҫумне ҫыпҫӑнсах лартӑм. Вӑл мана хушӑран-хушӑ ыталаса илет, пуҫран чуп тӑвать. Чунра темле хавас, хавас хамӑн.

Кукка та кунтах. Вӑл тӑчӗ те калаҫма тытӑнчӗ:

— Лидия Лаврентьевна ача пӑхма пултараймасть. Вӑл

ача пăхмалли çын мар, лапа, эрех ĕçекен хĕрарăм. Арнольд ывăлăма хама пама ыйтатăп.

Татах калаçрĕ вăл, нумай калаçрĕ — эпĕ пурне те ăнланса юлаймарăм.

Унтан **Маа калаçрĕ.**

— Ан ĕненĕр эсир ăна, путсĕре, суеçе! — кăшкăрчĕ, ӳлерĕ вăл. — Лука Ясмыков, вунă арăма çитнĕскер, ачана тĕрĕс пăхса ӳстерейместех. Эпĕ ĕçке ернĕ çын мар. Эпĕ ĕçлетĕп. Ачана ăна памастăп. Ясмыков алимент тӳлетĕр пире!

Судра манран çапла ыйтрĕç:

— Арнольд, эсĕ папа патне пурăнма куçасшăн-и? — теççĕ.

— Çу-ук! — килĕшмерĕм эпĕ. — Çу-ук!..

Çапла Лидия Лаврентьевна патĕнчех юлтăм эпĕ. Ун пирки Лука судра тĕрĕсех каларĕ-ха: эрехне питĕ ĕçет ĕнтĕ Маа. Ӳсĕрпе чĕлхи латсăрланса каять, темĕн те каласа хăртать мана, чышса илме те манмасть. Ĕçре те пĕр вырăнта нумай тытăнса тăраймасть Маа: кăлара-кăлара яраççĕ.

Çав çул кĕркунне эпĕ вĕренме кайрăм.

Паллă ĕнтĕ, кашни çын асĕнче шкул çулĕсем тарăн çырăнса юлаççĕ. Лайăххипе пĕрлех мыскаралли те, кӳренӳлли те пур. Маншăн вара шкул тапхăрĕ выçăллă-тутăллă иртнĕ кунсемпе паллă. Шкулта столовăй пурччĕ. Кăнтăрла ачасем талонсемпе пурте унта апатланатчĕç. Пĕр маншăн çеç çул çукчĕ унта.

— Апат талонĕ илме укçа пар-ха, Маа, — теттĕм ăна.

— Укçа чул айĕнче! Тем мар, тӳскелесе иртterĕн кăнтăрлахине, киле таврăнсан çиен вĕт! — хуравлатчĕ вăл.

Анчах килте те час-часах сĕтел пуш-пушахчĕ маншăн. Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ ман? Пăхкаларăм, сăнакаларăм та... хырăм тăрантмалли пĕр мел тупрăм. Уроксем пĕтсен ачасем шкултан ĕрĕхтерсе тенĕ пекех тухса каяççĕ. Класс пĕр самантра пушанса юлать. Эпĕ васкамастăп. Пурте кайса пĕтсен парта сунтăхĕсене тĕрĕслеме тытăнатăп. Темĕн те тупăнать унта: çăкăр чĕлли, кукăль татки, булка, премĕк тĕпренчĕкĕсем... Йăлт пуçтаратăп. Çиетĕп çавсене. Тăранмалăхах çитет, шыв та ĕçтерет кайран.

Çак «ырлăх» маншăн инкекпе вĕçленчĕ.

Хыçалти парта хушшинче ларакан пĕр хĕр ача столовăй талонĕсем туянма шкула тенкĕ те çирĕм пус илсе пынă пулнă. Пăхать те хайхи çакă пысăк тăхтав вăхăтĕнче, çирĕм пусĕ пур, анчах пĕр тенки, хут укçа, ниçта та çук. Йĕрет хĕр ача.

Уроксем хыççăн пире класĕпех хăварчĕç. Вăрра тупасшăн.

— Ҫам илнĕ, çав ача ура çине тăтăр,— хушать учительница.

Класс шăп-шăпăрт, ура çине никам та тăмасть.

— Эппин, айăпа хамăр ирĕкпе йышăнас теместпĕрха? Хăюлăх çитмест. Япăх йăла ку,— вĕрентет учительница.— Ҫам илме пултарнă укçана?

— Арнольд!— кăшкăрса ячĕ пĕри, Олег ятлă тăсланкă.

Шартах сикрĕм, мĕншĕн тесен эпĕ çын укçине илме мар, халиччен ниçта пĕр пус тупса курман. Тарăхнипе пĕтĕм класс илтмелле:

— Суять вăл! Эп илмен!— тетĕп.

— Вăл! Вăл! Арнольд!— виççĕн-тăваттăн харах кăшкăрса тăкрĕç мана.

— Мĕншĕн вăл илнĕ тесе шутлатăр?— ыйтать учительница.

— Арнольд кашни кунах уроксем хыççăн парта сунтăхĕсене тустарса çӳрет,— ăнлантарчĕ Олег.

Ҫуна хирĕç нимĕн те калаймăн. Тунма çук, эпĕ çăкăр татăкĕсем шыранине ачасем курнă пулĕ çав. Ҫавăнпах-тăр халĕ ак нихăшĕ те ман хута кĕмест. Эпех вăрланă теççĕ пулас. Учительница хушнипе ман сумкăна уçса пăхрĕç, кĕсьесене тавăрттарчĕç. Ҫук, нимĕнле укçа та тупăнмарĕ ман çумра. Шанманнишĕн питĕ кӳрентĕм, çурăлса тухасла тарăхрăм.

Тек тытса тăмарĕç мана класра. Пĕр чĕнмесĕр класран, шкултан тухрăм. Чун тулашать. Тăсланкă Олега кӳпкемесĕр лăпланас çук эпĕ капла, чĕр намăс кăтартрĕ вăл!

Асăрхаса юлнă-ха эп: шкултан тухсан Олег ялан сылтăмри урамалла кĕрсе çухалать, çавăнта ĕнтĕ вĕсен килĕ. Эпĕ ун çулĕпе утрăм. Пĕр çурт кĕтессине пытанса кĕçех хайхискере кĕтсе те илтĕм. Пĕччен мар хăй, кăтра пуç Мишшапа, яланхи тусĕпе. Вĕсем иккĕн тесе шикленсе ӳкесси асра та пулмарĕ манăн. Ҫулне картласа пĕррех кăшкăрса ятăм:

— Аха-а, лекрĕр-и?! Кăтартам сире тасаран вăрă тума!

Олега ура хурса тăсса ӳкертĕм. Мишши хăравçă-мĕн. Тара пачĕ çаврăнса. Вăйăм пур таран чиперех кӳпкерĕм пулас тăшманăма. Хăй хирĕç тăраймарĕ. Темле вĕçерĕнсе ĕлкĕрчĕ те килнелле вĕçтерчĕ.

Пĕлетĕп, куншăн мана ырриех пулас çук. Тек шкула каймастăп терĕм хама хам. Ҫаплах турăм та. Ирхине килтен шкула васканă пек тухса каятăп та чăннипе шкул

еннелле çавранса та пăхмастăп. Кунĕпех хула урамĕсенче çĕтсе çӳретĕп.

Эпĕ шкула çӳременнине чи малтан Анна Ивановна сиснĕ. Маашăн пулсан хăть кутăн тăр!

— Мана пачах мантăн-çке эсĕ, Арнольд, кĕрсе те тухмастăн, тунсăхласа çитрĕм,— тет хайхи Анна аппа.

Эпĕ хирĕç нимĕн тупса калаймасăр айваннăн кулкаласа тăратăп.

— Ĕçсем мĕнле?

— Чиперех,— тетĕп.

— Чиперех?— пӳрнепе юнарĕ вăл.— Сана вара, Арнольд, çакнашкал пурнăç килĕшет-и? Қапла эсĕ чăнахах та вăрă-хураха тухса кайма пултаратăн.

Питĕм вирлĕн кăна çупса янă хыççăнхи пек тĕлкĕшме пуçларĕ. Қапла калать пулсан, эппин, Анна Ивановна шкулта пулнă, унта манпа мĕн пулса иртнине пĕлет.

— Çук, эпĕ вăрă мар!— татса хутăм хайхи хирĕç.

— Тĕрĕс, халлĕхе вăрă мар,— килĕшрĕ Анна аппа.— Анчах малашне мĕн пулĕ?..

— Эпĕ нихăçан та çын япалине тĕкĕнессĕм çук,— кăмăлсăрлантăм эп.

— Мухтамалла çеç сана куншăн. Юрĕ, ачам, ыран шкула кайăн.

— Қаймастăп! Унта мана кӳрентерчĕç...

— Санран каçару ыйтĕç вĕсем,— пуçран шăлса ăпплантарать Анна Ивановна.

Қаç кӳлĕм киле учительница пычĕ.

— Арнольд, пулса иртнĕ йăнăша манар,— çумăма ларсах калаçрĕ вăл.— Эпĕ те айăплă. Класс санран каçару ыйтасшăн. Ленăн укçи çухалман та иккен. Хут укçине вăл кĕнеке хушшине хунă та маннă. Эпĕ ăна ятларăм. Пыр, сана кĕтетпĕр, Арнольд.

Лидия Лаврентьевнăпа та темĕн калаçса ларчĕ учительница кухньăра. Анчах вăл калаçу мана эрленӳ кăна кӳчĕ.

— Ха, яка пыр!— кăшкăрса пăрахрĕ Маа хваттерте иксĕмĕр кăна ларса юлсан.— Пăх-ха ăна, столовăйсенче кӳпсе пурăнмалла тет ун! Мана, ухмаха, чĕррĕн ĕмсе пурăнасшăн. Укçа, каланă сана, чул айĕнче! Қай та кăлар, манран ан ыйт. Хăвна усранăшăн тав ту, харам пыр!

Ирхине, шкула кайма тухсан, Анна Ивановнăн алăкĕ уçăлчĕ. Кăчăк туртса кĕртрĕ вăл мана хăй хваттерне.

— Шкул столовăйĕнче апатланма сан валли пĕр эрнелĕх талон туянтăм. Ас ту, ан çухат,— хытарчĕ вăл мана

пир енчĕк тыттарса. Кашни кун пĕрер талон кăларса ил çакăнтан.

Анна Ивановна мĕнешкел ырă çын иккенни çинчен калама сăмахăм та çитмест манăн. Мĕн вĕренсе тухичченех вăл ман валли талон туянса пурăнчĕ. Кунсăр пуçне ирсерен сумкăна мĕн те пулин чике-чике хуратчĕ: кукăль, пӳремеч... Пуç таятăп Анна Ивановна умĕнче. Ӳлĕмрен, хам ĕçлекен пулсан, пурăнма ăна хам пата илме ĕмĕтленеттĕм...

* * *

Хайхи пиллĕкмĕш класа вĕренсе çитрĕм. Пуçласа ман чăн-чăн юлташ тупăнчĕ. Коля ятлăччĕ вăл. Амăшĕпе иккĕшех пурăнаççĕ. Вĕсенни пек туслă çемье эпĕ ниçта та курман.

Пĕрререн-пĕрре ятларĕ Кольăна амăшĕ. Куншăн эпĕ айăплă.

Канмалли кун пирĕн колхоза шкулĕпех çĕр улми кăларма каймаллаччĕ.

— Арнольд, кутамкка илсе кай,— хушрĕ Маа.

— Кутамкка? Мĕн чиксе каяс унпа?— нимĕн те ăнланмарăм эпĕ.

— Кайма мар, килме! Чиксе, тултарса килмелле!— кăшкăрса пăрахрĕ хайхискер.

Çаплах нимĕн те ăнланмастăп.

— Ухмах, тăм писмен!— ятлать Маа.— Çĕр улми тултар кутамккуна! Пушăлла таврăнсан ас ту!

Кутамккапа тухрăм вара килтен. Мана кура Коля та кутамкка илчĕ.

Пĕр ыйăннине туймасăр яра кун ĕçлерĕмĕр уйра. Каç кӳлĕм тин киле таврăнтăмăр. Машина пире хула хĕрринчи остановкăра антарса хăварчĕ. Кольăсем çавăнтан инçех те мар пурăнаççĕ. Шыв ĕçмелле Кольăпа пĕрле эпĕ те вĕсем патне кĕтĕм.

— Кунта мĕн вара сирĕн?— ури пуçĕпе пирĕн кутамккасене кăт-кат тĕккелесе пăхрĕ Коля амăшĕ.

— Çĕр улми илсе килтĕмĕр, анне. Питĕ кĕрпеклĕ пиçет. Пире уйра пĕçерсе çитерчĕç,— ăнлантарать Коля.

— Кашнине çакăн чухлĕ çĕр улми парса ячĕç-и?— тĕлĕнет амăшĕ.

— Кам парса ятăр! Эпир Арнольдпа иксĕмĕр хамăр тултартăмăр!

— Апла колхоз çĕр улмине вăрласа килтĕр пулать?—

çilленсе кайрĕ Коля амăшĕ. Эпир нимĕн кала пĕлместпĕр.— Хăвăр пĕчĕккĕ кăна — патшалăх пурлăхне çарататăр... Намăс та мар-и?

— Эпир вăрламан, çынсем умĕнчех тултартăмăр,— тӳрре тухасшăн ман юлташ.

— Унта çĕр улми питĕ нумай, темиçе пысăк купа,— ун хутне кĕресшĕн эпĕ.

— Акă мĕн: кутамккăрсене çĕклĕр те ăçтан илсе килнĕ, çавăнта кайса пушатăр улмана. Халех!

Тек сăмах та чĕнтермерĕ пире Коля амăшĕ. Мĕн тăвăн, таврăнтăмăр çĕр улми уйне. Юрать-ха уйĕ хула çывăхĕнчех.

Мана вара килте пачах урăхла кĕтсе илчĕç:

— Мĕншĕн кутамкку пушă?

Нимĕн те шарламастăп-ха.

— Харам пыр! Услап!— янрама тытăнчĕ Маа.— Хăвна усранăшăн тав тума пĕлместĕн.

Сăмахпа ятлани çеç çитмерĕ-ха, пит çăмартинчен çутăлтара-çутăлтара ячĕ мана.

Калама çук чун кӳтсе çитрĕ. Йĕрсе ярасран аран-аран тытăнса тăтăм. Хăлхара вĕçĕмсĕр «усранăшăн тав тума пĕлместĕн» тени янăрать. Мĕншĕн ялан çапла каласа питлет-ха Маа? Ара эпĕ унăн ачи мар-им? Вăл çуратман-и мана? Куç умне Коля амăшĕ тухса тăчĕ. Мĕн тери ăшă чунлă вăл! Ывăлне нихăçан та çапмасть, тем те пĕр каласа та хăртмасть. Чим-ха, чим-ха, манăн Маа ама çури марши? Ама çурисем ачисене шăп та шай çапла пусмăрлаççĕ юмахсенче... Чăнах та, кам эпĕ уншăн? Кам вăл маншăн?

— Кольăна амăшĕ нихăçан та хĕнемест, ятламасть те. Санăн вара аллу ялан çӳлте...— терĕм эпĕ тулхăракан Маана кĕç-вĕç йĕрсе ярасла.

— Ха-ха-ха!— ахăрчĕ çакна илтсен Маа.— Вăл Кольăн тăван амăшĕ пуль! Эпĕ саншăн кам? Пĕлессӳ килсен калам: эпĕ саншăн пачах ют хĕрарăм, эпĕ сана усрава илнĕ. Тав ту çавăншăн!

Мĕн илтни мана пăр пек шăнтса пăрахрĕ. Вырăнтан та тапранаймастăп.

— Кăмăлу пулсан эсĕ те тăван аннӳ патне таврăнса пурăнма пултаратăн,— калаçать хайхи хĕрарăм.— Тен, халĕ ăна тăн кĕнĕ, ӳлĕмрен ачашласах пурăнĕ вăл сана. Çыру çырчĕç-ха ав, сана таварса пама ыйтаççĕ. Йĕксĕксем!

Ку кĕтмен хыпар мана мăйран мăка çĕçĕпе сĕрнĕ пек асаплантарчĕ. Чĕлхем маччине çыпçăнсах ларчĕ, сассăм та тухмасть.

Ерĕхсе кайнă Маа çаплах чарăнаймасть-ха. Ăна мĕнле сăлтав ахăрттарнине те чухлаймастăп эпĕ. Савăнать-ши вăл е тарăхать? Сĕлекине сирпĕте-сирпĕте кăшкăрать ав:

— Çапла çав, килсе тухсан килĕре тĕвĕнĕн! Инкек вăл пурне те пĕр турапа турать. Ав хăçан аса илчĕç вĕсем сана, аслă ывăлĕ пушарта çунса вилсен кирлĕ пултăн. «Илюкшăн турă пирĕн пата çакнашкал хурлăх ячĕ пуль!»— тесе лĕпĕртетсе çырать сана çуратнă хĕрарăм Кĕтерук. Малтан мĕн шухăшланă вĕсем?

— Кам вăл Илюк?— тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ тухнă-тухман сасăпа.

Маа каçса кайса кулать. Хăрушшăн кулать:

— Эсĕ, ара, тăмана! Санăн чăн-чăн яту — Илюк. Хамăр пата илсе килсен куккупа иксĕмĕр ятна улăштарса çыртартăмăр.

Пĕр авăк шăпăрт пулса тăнă çын такам чĕпĕтсе те кăтăкласа тăнăн, каллех кулса ячĕ, унтан ÿлеме тытăнчĕ. Хăй сиксех чĕтрет.

— Кĕтсех тăрăр, тыттарса яратăп сире ача! Мана Лука пăрахнă чух ăçта пултăр эсир? Пулăшрăр-и пире? Пĕр кĕрепенкĕ услам çу ярса патăр-и хуть?!— икĕ чышкине кăтартса алăк еннелле юнарĕ хайхискер.— Вун ик çула çити ÿстерсе асаплантăм пулать те, ме! Çу-ук, килсе ан çыпçăнăр пушă алăпа! Малтан ман ума пĕр касмăк эрех лартăр, сĕтел ури тайăличчен укçа кăларса хурăр!..

Эпĕ Маа мĕн каланине ĕненместĕп. Ĕçсе супсан вăл темĕн те пĕр авăртса кăтартать.

Анна Ивановна патне чупса каçрăм. Ун сăмахне илтесшĕн эп, вăл суймастех. Унран пĕлтĕм: Лидия Лаврентьевна чăннине каласах çуйхашнă иккен.

— Эсĕ, Арнольд, ытлашши хыпăнса ан ÿк-ха,— лăплантарать мана ăслă Анна Ивановна.— Сана куккуна парса янă чух ырă шухăш-кăмăл ытамĕнчех пулнă-тăр-ха вĕсем, телей сунсах усрава панă-тăр.

— Ашшĕ-амăшĕсĕр ачашăн телей çук!

— Çĕр çине тăпра акса тырă илесшĕн пулнă ĕнтĕ вĕсем...— манпа пĕрле хурланать Анна аппа.

Чун йăлт пушанса юлчĕ. Сасартăк эпĕ хам шутсăр ывăнса-ĕшенсе ÿкнине туйса илтĕм. Çан-çурăм сăрăлтатать. Алă сыпписем сураççĕ. Хваттере таврăнса аран-аран вырăн çине çитсе выртрăм. Хама çуратнă çынсем çинчен шухăшлатăп, тăван аттепе анне темелли çынсем çинчен... Эпĕ вĕсене, пĕлетĕр-и, чунтан кураймастăп ĕнтĕ. Ман вĕсене çав тери хур тăвас килет. Анчах мĕнле майпа тавăрмалла? Тен, ак çапла? Калăпăр, эпĕ çитĕнсе çитнĕ

тейӗпӗр. Нумай вӗреннӗ, чапа тухнӑ ҫын пулса тӑнӑ. Ман ҫинчен хаҫатсенче ҫыраҫҫӗ, сӑн ӳкерчӗк пичетлеҫҫӗ. Акӑ эпӗ, капитан тумне тӑхӑннӑскер, хамӑн тӑван ялӑма ҫитсе тухатӑп. Укӑлчаран кӗретӗп те урампа ерипен утатӑп. Хирӗҫ пулан ҫынсем пуҫ тайса сывлӑх сунаҫҫӗ. Лапсӑркка йӑмра айӗнче шур сухаллӑ ватӑсем тӗлӗнсе лараҫҫӗ.

— Ара, кам ачи пулчӗ ку? Ҫалама ҫук кӗрнеклӗ те патвар...

— Кӗтеруk ывӑлӗ вӑл. Леш, телейсӗрри, чӗчӗ ачиллех хулана парса яни.

— Кур-ха эс ӑна, амӑш сӗчӗсӗр ӳссе ҫын пулнӑ!.. Ҫӑкӑрӗ ҫинче миҫе орден, медаль!

Урам хушшипе мана хирӗҫ пӗр хӗрарӑм хыпӑнса чупать. Мана вӑл аякранах палласа илнӗ.

— Илюк!— кӑшкӑрать ҫавскер.— Ывӑлӑм! Килтӗн-и? Мӗнле чаплӑ ывӑл ман! Ҫынсем, курӑр!

Хӗрарӑм мана ыталаса илесшӗн.

— Ҫук, ҫук, эсир йӑнӑшрӑр. Эсир маншӑн ют хӗрарӑм. Пӑрӑнӑр-ха ҫул ҫинчен, ан кансӗрлӗр,— ун аллине сиретӗп те эп мӑнаҫлӑн малалла утатӑп.

— Ҫаҫар мана, ывӑлӑм!..— илтӗнет ман хыҫра.

Ӗмӗтпе-шухӑшпа анӑрашса выртсан юлашкинчен аранах ҫывӑрса кайнӑ эп. Анчах канлӗ ыйхӑ пулман. Пӗр тесен, ҫавӑн хыҫҫӑн путлӗ ыйхӑ тени ҫухалчӗ маншӑн, ялан усал тӗлӗкпе аташатӑп...

* * *

Ҫаллех мана пайлаҫҫӗ. Ҫаллех чунӑма хуран айне хурса ҫунтараҫҫӗ. Ҫиелтен пӑхсан эпӗ пуриншӗн те питӗ кирлӗ, хаклӑ ача темелле. Анчах хӑйсем вӗсем маншӑн мар, хӑйсемшӗн тӑрӑшаҫҫӗ, хӑйсемшӗн ҫунаҫҫӗ.

Маа хӑйӗн шухӑшне ялтисене ҫырса пӗлтерчӗ пулас. Лешсем килӗшмен ӑна «сӗтел ури тайӑличчен» укҫа пама. Ӗҫе суд татса парасса шанаҫҫӗ. Мана илӗртме те шут тытнӑччӗ тен вӗсем: судчен темиҫе кун малтан пирӗн алӑкран такамсем шӑнкӑртаттарчӗҫ, Маа вӗсене уҫса кӗртес вырӑнне ятласа кӑна тӑкрӗ.

— А-а, укҫӑра хӗрхенетӗр!— алӑк умӗнче янӑрашрӗ вӑл.— Апла тӑк тасалӑр кунтан! Татах кӑптӑртатса тӑрсан милицие чӗнтеретӗп. Алӑка ҫӗмӗрнӗшӗн хупса лартӗҫ сире!

Акӑ ӗнтӗ суда каятпӑр. Маа нимӗн те шарламасть, мана нимӗн те вӗрентсе каламасть. Эпӗ ялтисене курайманнине чухлать пулас, мур илесшӗ. Е хӑтӑласшӑн вӑл манран?

Хальхинче эп суд залĕнче Маа çумне тĕршĕнмерĕм.

Малти сак çинче иккĕн лараççĕ. Çавсем пулас ялтисем. Хĕрарăмĕ енчен енне пăхкалать, такама шырать. Паллах, ывăлне ĕнтĕ. Анчах мана вăл, пĕчĕк чух çеç пĕрре килсе курнăскер, палламасть. Залра мансăр пуçне урăх ача-пăча çук. Çавăнпа-тăр унăн куçĕ часах мана тăрăнчĕ. Сиксе тăчĕ хĕрарăм, ман еннелле туртăнчĕ, анчах ăна çумĕнчи арçын каялла туртса лартрĕ.

Суд пуçланчĕ. Каллех ыйтаççĕ манран:

— Пурăнма аçу-аннӳ патне каятăн-и?

— Манăн аттепе анне çук,— терĕм.— Эпĕ тăлăх ача.

— Вăл нимĕн те пĕлмест!— кăшкăрса ячĕ ялтан килнĕ хĕрарăм.— Ăна Лида суйса пурăннă. Вăл пирĕн тăван ывăл!

Ăна шавлама чарчĕç.

— Арнольд, акă санăн аçупа аннӳ,— тет судья.— Вĕсем сана илме килнĕ...

— Каймастăп!— каласа пĕтерме памарăм судьяна.— Ку çынсене эпĕ палламастăп та, юратмастăп та.

Çапла, хам çуралнă киле таврăнма килĕшмерĕм эпĕ. Кунта юлнипе пурнăçăм лайăхланасса шаннă-ши? Çук, малашне хама пушшех йывăртарах пурнăç кĕтнине сиссе, туйса тăраттăм. Çапах та хăçан та пулин умăмри пĕлĕт сирĕлессе кĕтеттĕм. Ăшăм-чунăма, сӳнми кăвайт пек, Анна Ивановна пурри ăшăтатчĕ...

* * *

Адвокат Арнольда питĕ тимлесе итлерĕ, çине-çине ыйту парса чĕрре кĕрсе арпаштармарĕ. Апла тума вăл ăна усал сунакан такам мар. Пачах урăхла, унăн çак аманнă чунлă телейсĕр çамрăка пулăшмалла, çăлса хăварма тăрăшмалла. Суд хытă айăпласран çеç мар, ӳлĕмренхи синкерлĕ йăнăшсенчен те, тепĕр тĕрлĕ каласан, чĕринчи иккĕмĕш чăртмахран çăлмалла йĕкĕте.

Тӳсеймерĕ адвокат, шеллесе юлашкинчен сасăпах çапла каласа ячĕ:

— Эх, йĕкĕт, йĕкĕт... Пурнăç пуçламăшĕнче вĕт-ха эсĕ. Çутă ĕмĕт çипписем сыпăнса каранннă чухне алла мĕншĕн тутăх хачă тытас?..

Арнольд куçĕ илемсĕррĕн кĕтесленсе чарăлчĕ. Вăл хăйне сасартăк путнă шыв аварĕнчен ишсе тухнăн туйса илчĕ. Адвокат çине, чим-ха, кам ку, кам ларать ман умра тенĕ пек, тĕлĕнсе чăр пăхрĕ. Çук, вăл мĕн каласшăн пулнине

йӗкӗт ҫийӗнчех ӑнланчӗ, куҫӗнче ҫиҫӗм ялтӑртатнӑн, чӗрине витӗр ҫунтарсах ӑнланса илчӗ. «Мӗншӗн хӗре ҫӗҫӗпе суранлатса айӑпа кӗтӗн-ха?» — тесшӗн пулчӗ адвокат. Ах, мӗншӗн, мӗншӗн?..

## 13

... Ун чухне, залра илемлӗ-илемлӗ музыка шӑранса юхнӑ чухне, Наташа, хӑйӗн ытти чылай хӗр-тантӑшӗ пекех, Арнольд ташлама чӗнессе кӗтсе тӑчӗ. Шанни харама каймарӗ. Арнольд ташша чӑнахах та ӑна чӗнчӗ.

Ясмыков Арнольд ҫав кунсенче икӗ училище, техника училищипе кулинари училищи, ҫамрӑкӗсем хушшинче чапа тухнӑ каччӑччӗ. Икӗ училище шывра ишессипе ирттернӗ ӑмӑртура мала тухрӗ вӑл. Тата Арнольд юлашки вӑхӑтра темле сасартӑках ҫитӗнсе кайрӗ. Сӑнӗнчен те улшӑнчӗ, пӗвӗпе те яштака. Кӑпӑшка кӑтра сарӑ ҫӳҫӗпе кӑн-кӑвак куҫӗ илемлӗхпе кӗрнеклӗх кӳреҫҫӗ ӑна. Такам ӑмсанса пӑхмалла, темле хӗр юратса пӑрахмалла.

— Мӗншӗн ман ята ыйтса пӗлместӗр эсир? — ыйтрӗ Наташа ташланӑ хушӑра.

— Эпӗ пӗлетӗп, — ӑшшӑн кулчӗ йӗкӗт.

— Уй, ман ята-и?

— Вара. Наташа эс.

— Уй, чӑнах!..

Арнольд Наташӑн сӑн ӳкерчӗкне кулинари училищин стена хаҫатӗнче курнӑ, унта ун ҫинчен мӗн ҫырнине вуланӑ. Наташа практикӑра чи тутлӑ ҫӗр улми нимри пӗҫернӗ иккен — акӑ мӗнлеччӗ хӗрӗн мухтавлӑ ӗҫӗ.

Ташӑ хыҫҫӑн ташӑ улшӑнса пычӗ икӗ училище ҫамрӑкӗсем ирттерекен кану каҫӗнче. Йӗкӗчӗсем те пӗрле ташлакан хӗрӗсене улӑштарсах тӑчӗҫ. Пӗр Арнольд кӑна Наташӑна аллинчен вӗҫертмерӗ.

Ҫилӗшнӗҫемӗн килӗшсе пырать хӗре кӗрнеклӗ каччӑ. Юрату пуҫланнӑ чух ҫын яланах хаваслӑ. Наташа та ав ташӑ ҫеммипе юрлать, кулать, шӳтлет, сӑвӑ калать. Уйрӑмах пӗр сӑвва пит палӑртса вуларӗ вӑл:

> Не верь цветам,
> они увянут.
> Не верь годам,
> они пройдут.
> Не верь мечтам,
> они обманут.
> Не верь мальчишкам,
> они лгут...

— Тĕрĕс калатăп-и?

— Мĕн пирки эсĕ, Наташа?

— Ара, тĕрĕс каланă-и сăвăра? Арçын ачасем чăнахах та суяççĕ-и?

— Ан ĕнен вăл сăмахсене.

Наташа каллех савăнăçлăн ихĕлтетет.

Çак каç икĕ çамрăк чĕрен юрату тĕвĕленчĕ. Юратупа пĕрле айванлăхĕ те çыпçăнса пычĕ пулас...

Наташăпа Арнольд вĕренсе тухса çулĕсем юплениччен хăпма пĕлмерĕç пĕр-пĕринчен.

Савăнăçлă вăхăт вăл, тыттарман сар кайăк пек, питĕ хăвăрт вĕçсе иртет. Хĕрпе каччăшăн та илемлĕ çу кунĕсем сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕç.

Ĕнтĕ хĕвел сӳрĕкленчĕ. Каникул вĕçленсен каллех училище алăкĕсем уçăлчĕç. Атăлпа ун çыранĕсем вара пур пĕрех çамрăксене илĕртме пăрахмаççĕ-ха. Уроксем пĕтсен Наташăпа Арнольд та Атăл хĕрринче. Кулленех тухаççĕ вĕсем унта.

Акă йĕкĕт анлă шыв кăкăрĕ урлă йăлăмалла тинкерсе тăратчĕ. Çур çĕр енчен пĕр касă варкăш çил килчĕ, тен, Атăл варринченех çĕкленчĕ-тĕр вăл,— пите-куçа, çан-çурăма уçăлтарса хăварчĕ, çӳçе вĕлкĕштерчĕ.

— Шурă акăшăн çуначĕ аманнă, ытла та ерипен ишет,— анатран хăпарса çитнĕ виçĕ хутлă шурă пăрахута тĕллесе кăтартрĕ Наташа.

Пăрахут, вată Шупашкара ĕмĕрне те çитессе сунман пек, çапах та акă çитрĕм-ха тенĕ пек, сывлăша çурса хавассăн кăшкăртса ячĕ: ту-у-у!.. Карлăк çумĕнченех ӳссе хăпарнă хурăн тăр-тăр-р чĕтренчĕ. Унăн сарăхнă йышлă çулçисем сасартăк йăрхахĕсенчен вĕçерĕнсе сывлăшра ярăнма тытăнчĕç.

Пăрахут дебаркадер çумне пырса чарăнчĕ. Халăх ярмăрккăри пек анса тулчĕ ун çинчен. Рубка хӳттинче хура тумлă, чăлт шурă карттуслă кĕрнеклĕ арçын курăнса кайрĕ.

— Ав капитанĕ!— тахăш самантра асăрхаса ĕлкĕрчĕ çавскере çивĕч куçлă Наташа.— Ăмсанатăп пăрахут капитанĕсене! Мĕнле хӳхĕм, мĕнле телейлĕ вĕсем! Мĕншĕн эпĕ арçын ача мар-ши? Арçын ача пулнă тăк капитана вĕренсе тухнă пулăттăм!— хăлаçланчĕ хĕр.

Эх, сисмерĕ, чухламарĕ-тĕр айван хĕр чĕри: арçын ачасем умĕнче нихçан та летчика, моряка, карап капитанне ан мухта. Вĕсем — арçын ачасен чун ыратăвĕ, ăмсанăвĕ, вăрттăн ĕмĕчĕ. Пĕр-пĕр морякпа хавхаланса эсĕ ачана мĕскĕнлетсе яран. Вăл сана çав самантра тем туса пăрахма хатĕр, вăл сана курайми пулма та пултарать. Çук, пĕл-

мерĕ çакна Наташа, шухăшламарĕ те кун çинчен. Хавхаланса çатăлтатрĕ те çатăлтатрĕ:

— Юлашки практикăна, çитес çуркуннехи практикăна, эпĕ «Гастелло» пăрахут çине каятăп. Ун çинче канакансене те, капитанне те тутлă-тутлă апат хатĕрлесе çитерĕп. Капитанне — уйрăмах!

— Эпĕ сана ирĕк памастăп,— касса татрĕ сасартăк Наташăна шăмарса итлесе тăракан Арнольд.

— Мĕн?— ăнланмарĕ хĕр.— Апат хатĕрлеме ирĕк памастăн-и?

— Пăрахут çине практикăна ямастăп.

— Мĕн, мĕн?— тĕлĕнчĕ Наташа.

Арнольда тĕсесе пăхрĕ вăл. Ара, кĕвĕçет вĕт ку! Юратнипе кĕвĕçет. Ахăлтатса кулса ячĕ хайхи хĕр. Савăннипе, йĕкĕте савнипе кулчĕ. Ара, çитес çуркуннийĕ тахçан-ха вăл — тин кĕркунне пуçланать. Практикине таçта ярĕç-ха ăна — мур пĕлет! Вăл пур, кĕвĕçет ав. Тĕрĕс, Арнольдăм, кĕвĕç, ниçта та ан яр. Юрататăн пулсан ниçта та ан хăпăт хăв çумăнтан!

Çапла шухăшларĕ, чĕвĕлтетрĕ ăшĕнче хĕр. Қаласса вара çамрăклăх, ачалăх вăйĕ вылянăран, хĕрсен ĕмĕртенхи курнăçланăвĕ хĕтĕртнĕрен пачах урăххине каларĕ:

— Ямастăн апла? Чаратăн?

— Чаратăп,— хирĕнчĕклĕн пăхать Арнольдăн кăвак куçĕ.

— Мана чарма пултаракан çын çуралман-ха тĕнчере! Акă тыт!— Наташа аллине Арнольд ывçинчен карт туртса кăларчĕ те пĕррех малалла ыткăнчĕ, пусма картлашкисене шакăртаттарса аялалла, çыран хĕрринелле, анса кайрĕ. Хирĕç тухакан çынсенчен пăрăна-пăрăна дебаркадер çине чупса кĕчĕ. Кĕçех хайхискер пăрахутăн виççĕмĕш хутĕнче курăнчĕ. Çыраналла çаврăнса алă сулса илчĕ — Арнольда пулчĕ ĕнтĕ ку. Унтан куç хупса иличчен тенешкел капитан умне пычĕ тăчĕ. Сывлăх сунчĕç-и вĕсем пĕрпĕрне, мĕн-и, йĕкĕт асăрхаса та, ăнланса та юлаймарĕ, анчах тепĕр самантран тинкеререх пăхрĕ те — капитанпа Наташа пĕр-пĕрне тахçантанпа пĕлекен çынсем пек кулкаласа калаçса тăра параççĕ. Тен, кам чухласа пĕтертĕр, пĕлеççĕ вĕсем пĕр-пĕрне, палласçĕ? Тен, тахçантанпах? Тен...

«Ав мĕншĕн сĕтĕрет мана Наташа кашни кунах Атăл хĕррине! Тахçантанпах çак хăйĕн капитанне кăтартма, унпа каппайма ĕмĕтленсе пурăннă пуль!.. Ултав! Ултав ку! Памастăп хамран кулма!..» Пăлханса кайнă кăкăрĕнче ĕнтĕ Арнольдăн йăлт сиксе вĕрет. Халь-халь тулса тă-

кăнать вăл. Палт çаврăнчĕ те йĕкĕт, чупа пачĕ урампа.

Пăрахутран тухса Атăл çыранне хăпарнă Наташа каччине паçăрхи вырăнта курмарĕ. Васкасах йĕри-тавралла пăхса илчĕ вара, тăвалла кайса килчĕ, анаталла анчĕ — ниçта та çук Арнольд. Қайнă. Пăрахса кайнă...

Қарлăк çумне таянчĕ те хĕр чылайччен Атăл çинелле тĕлсĕррĕн пăхса тăчĕ. Тĕлĕрсех те кайрĕ тейĕн ăна. Сасартăк вăл аслă юхан шывваррипе тăсăлса выртнă ылтăн укаллă, йăмăх хĕрлĕ хăмачлă чĕлтĕрти хĕвел çулне асăрхарĕ. Илемлĕ, илĕртӳллĕ çул... Анчах хăй куç умĕнчех кĕскелсе пырать иккен, йăлтăрти çути сӳнсе, тĕксĕмленсе килет. Хĕвел... Анчĕ ĕнтĕ вăл, пытанчĕ...

* * *

Чунтан-чĕререн юратакан çынсем хушшинче те пĕрпĕрне ăнланманни, кӳрентерни пулать вăл. Çав кӳренĕве ирттерсе яма пĕлмелле, уншăнах сивĕнме юрамасть. Арнольд килессе икĕ каç кĕтрĕ Наташа — кĕтсе илеймерĕ.

«Юрĕ, хĕре ку килĕшсех каймасть пулин те, хамах кайса килем ун патне,— шут турĕ виççĕмĕш кунне вăл. Анчах мĕнле сăлтав тупмалла-ха? Сăлтавсăр аван мар. Вара иртнĕ уйăхра Арнольда сăн ӳкерчĕк парнеленине аса илчĕ.— Ара, çав ӳкерчĕке тавăрса пама ыйтăп. Малтанхиллех сават тĕк нимĕнле ӳкерчĕк çинчен те илтесшĕн пулмĕ вăл, ыталаса илĕ те урама пĕрле вирхĕнсе тухĕ. Енчен те: «Мĕншĕн тавăрса памалла вара пĕр парнеленĕ япалана?»— тесе ыйтсан тепре çаптартăм, вăл лайăхрах, çавна парăп тейĕп».

Қаç ĕнтрĕкĕ анса çăралсан тухса утрĕ Наташа килĕнчен. Урампа енчен енне пăхкаласа васкамасăр утрĕ. Арнольда тĕл пулассăнах туйăнчĕ ăна — çук, курăнмарĕ йĕкĕт. Пĕр тухнăскер ĕнтĕ ирĕксĕрех килне кĕме тивет.

Хăюсăррăн шăнкăртаттарчĕ хĕр хваттер алăкĕнчен. Арнольд хăй уçрĕ. Тĕлĕннине те, савăнса ӳкнине те — нимĕн те палăртмарĕ вăл Наташăна курсан. Сывлăх та сунмарĕ, шала кĕме те сĕнмерĕ. Çук, Наташа мăртлатса, тута тăсса çаврăнса утмарĕ-ха.

— Тух-ха йăпăртлăха,— кăчăк туртрĕ вăл йĕкĕте.

Лешĕ самантрах çухалчĕ. Алăка шанлаттарса хупманран Арнольд тухасса шанчĕ хĕр. Тĕрĕсех, нумай кĕттермерĕ, тумланса та тухрĕ.

Урамра вĕсем çурт айккинелле пăрăнса кĕчĕç. Арнольд çаплах нимĕн те шарламасть-ха, нимĕн те ыйтмасть. Қапла, ара, Наташăн каччă хыççăн чупнă пек пулса тухать-иç.

Ахаль мар, ёçпе килтём темелле. Наташа хайхи сăн ӳкерчĕк çинчен аса илчĕ:

— Арнольд, тавăрса пар-ха леш сăн ӳкерчĕке мана.

— Мĕнле сăн ӳкерчĕк?— тинех çăвар уçрĕ йĕкĕт.

— Хамăн, ара. Сана пани...

Мĕн калĕ-ши, мĕн тейĕ-ши? Кĕтет хĕр, пач шутламан çĕртенех кăкăрне тем хĕсе-хĕсе илет.

— Мĕн, манран каялла илсе капитанна парнелес тетĕн-и?

Ытла та тӳрккессĕн, ытла та юттăн илтĕнчĕ Арнольд сасси.

— Мĕнле капитана?— тĕлĕнсе тăчĕ Наташа.

Иккĕш хушшинче ăçта, хăш тĕлте хура кушак чупса иртнине манман-ха хĕр. Анчах темĕнле капитансем-мĕнсем асĕнче те çукчĕ ун. Пулман та, çук та. Ара, çавăн чух, Атăл хĕрринче, темшĕн лĕпĕш пек çунатланса кайнă Наташа пăрахут çине кĕрсе тухнине манаймасть пуль-иç Арнольд! Эй, тамаша!..

— Мĕнле, практикăна пырасса кĕтет-и-ха капитану?— шухăш çинех ыйтрĕ ав вăл.

Йĕкĕт çапла чăнласах кĕвĕçни, вырăнсăр çĕтĕлни çав тери кулăшла пек туйăнчĕ те, кулса ямасăр, шӳтлемесĕр тӳсеймерĕ хĕр.

— Çапла, кĕтеççĕ мана пăрахут çинче. Ха-ха-ха-ха! Ĕнер ав çыру илтĕм...

Арнольда вара çакă уртарсах ячĕ.

«Пурте, пурте эсир çавнашкал!— кăшкăрчĕ ун чунĕ. Самантра йĕкĕт хăйĕн пĕтĕм телейсĕр ачалăхне, хурлă пурнăçне аса илчĕ.— Хисепсĕр, тивĕççĕр çын эпĕ сирĕншĕн! Йыт çӳппи кăна! Кулатăр, суятăр, сутатăр, мăшкăл пылчăкĕпе варалатăр! Эсĕ... Эсĕ... те пулин, Наташа, Маа хăраххи кăна-им? Мĕншĕн?! Мĕншĕн кулатăн манран?! Эсĕ... Эсĕ ман мар тăк никамăн та ан пул!»

Куçĕ хуралса мар, темле шуралса, çăралса, турăхланса килчĕ Арнольдăн. Вăл ĕнтĕ нимĕн те курмасть, нимĕн те илтмест. Мĕн пурĕ те хăй умĕнче Наташа пуррине тата кĕсйинче... тата кĕсйинче... пулăçă çĕççи выртнине пĕлет. Хыпашлать çав çĕççе йĕкĕт, тахăш самантра пăр пек шăнса кӳтнĕ, çапах та тарлă, нӳрĕ аллипе хыпашлать...

— Ак çакна курнă-и эс?!

Куна Арнольд хăй илтмен.

Куна, çак хăрушă кăшкăрăва, Наташа илтсе ĕлкĕрнĕ тата вăл сывлăшра çĕçĕ ялтлатнине курса юлнă. Тата... тата çӳхе сарă сараппанне çурса çурăмĕ тăрăх темĕн сивĕскер шуса иртнине ас тăвать.

— ... Хăрушши нимĕн те çук. Çĕçĕ хул калакĕ çумĕпе сĕртĕнсе иртнĕ...

Тăна кĕрсен илтнĕ пĕрремĕш сăмах çакă пулнăччĕ.

## 14

... Анна Ивановна Арнольд çинчен шухăшлать-шухăшлать те çак кунсенче, куçĕ умĕнчех çурхи шыв-шур шавлама тытăнать. Арнольд тĕлĕшшĕн халĕ çуркунне ӳхĕрекен çил-тăман. Тытăнса юлма пултартăрччĕ çав пăтăрмахра çамрăк, черченкĕ чун! Амантнă чун...

Анна Ивановна хăй чĕринче пăр катса шыв çулĕ турĕха. Қапланнă хаяр çурхи шыва çав çулпа юхтарса ярасшăн. Арнольдшăн çунни, Арнольдшăн тăрăшни — йăлт çав çула пулăшлăх пулинччĕ! Пулĕ, пулĕ-ха. Қавак тӳпе хура пĕлĕтрен тасалнă пекех, çурхи пăтранчăк шыв та тăрăлĕ. Тасипе çăвăнĕ Арнольд. Амантнă чун юсанĕ...

... Арнольдăн айăпĕ пысăк: çынна çĕçĕпе чикме тăнă, хăйĕн юн тымарне каснă. Анчах кам-ха, мĕн-ха хĕтĕртнĕ ăна çавнашкал тискерленме? Сăлтавĕ мĕнре? Пĕр сăмахпах калама пулать, паллах: ача йĕркесĕр кил-йышра ӳснĕ. Анчах ку питех те çăмăл, типĕ ăнлантару. Адвокат судра унпа çеç çырлахмĕ, куç умĕнчи тĕп тымарăн ытти пин тымарне асра тытса ăнлантарĕ.

... Наташа çав синкерлĕ каç хыççăн малтанах нимĕн ăнланса, ăнкарса илеймесĕр çӳрерĕ. Унтан, ăнланса илнĕ пек пулсан, унăн çан-çурăмĕ çӳçенсе илчĕ. Тарăху çуратрĕ ку çӳçенӳ, унтан — курайманлăх. Арнольда хуптарасшăнччĕ хĕр. Çавăнпа судра кирлĕ-кирлĕ мара сӳпĕлтетрĕ.

Халĕ вăл урăхла шухăшлать. Арнольд хăйне юратнăран, чунтан юратнăран тӳсме çук ыратупа суккăрланнă çав каç, халĕ те çаплах суккăрланма пултарать. Қирлĕ пулсан вăл хăйне те хĕрхенмĕ... Ăна тарăхса, çилленсе пурăнмалла мар, пачах урăхла: пулăшма, чун тĕревĕ пама тăрăшмалла. Ăçта-ши, мĕн-ши çав тĕрев? Сисет-ха хĕр чĕри: юратура çав тĕрев, икĕ чуна пĕр ĕненӳ кӳрекен юратура...

— Хĕрӳ чĕре хĕрӳ юрату ыйтать. Аманнă чĕре сывă юратупа сип илет. Анчах чĕре çине сулхăн ӳксен, ан тив, вăл ăнсăртран е самантлăх çеç пулин те шăнтма тытăнать. Çаплах килсе тухрĕ ĕнтĕ Арнольдăн та. Анчах чунĕпе тĕпренех хуçăлса ӳкнĕ-ши вăл? Апла ан пултăрччех. Юрату асамлăхĕ унăн чĕрине сывă юн хăвалать.

... Тепĕр темиçе кунтан суд пулмалла.

# МАЛТАНХИ САВНИ

## 1

Кӗркунне ҫитмен-ҫке: ҫанталӑк ав епле ӑшӑ тӑрать. Ял Совечӗн чӳречисем умӗнче ӳсекен ҫамрӑк хурӑн ҫакна ӗненмест-ши? Вӑл хӑш-пӗр ҫулҫисене сарӑ сӑрпа сӑрланӑ та вӗл-вӗл вӗҫтерсе тӑкать, таврари ҫӗр лаптӑкне чӑпарлатса илемлетет. Хӑй вара, венчет кӗпи тӑхӑннӑскер,— шӑп та шай чечек ҫыххи. Путех, вӑл ырра циссе шукӗллӗнет-тӗр.

Хурӑн айӗн иртӳҫӗн Матиҫ пӗшкӗнсе пӗр сарлака сарӑ ҫулҫӑ илчӗ те костюм ҫухави ҫумне майра йӗппипе тирсе ячӗ.

— Мӗнле пек?— хӑй тӑрӑх пӑхса ыйтрӗ вӑл ҫумри юлташӗнчен.

— Питӗ хӳхӗм,— чӑнласах каларӗ Теви.— Сана тем тӑхӑнсан та, ҫулҫӑ-чечек ҫеҫ мар, умна кикенек ҫыпӑҫтарсан та килӗшет, мӗншӗн тесен эсӗ — тӗнчере ҫук чиперкке.

— Ҫашни утӑмрах савӑнтаратӑн эсӗ мана, Теви, чи ҫывӑх тусӑм.

— Тӗрӗссинчен пӑрӑнаймӑн,— хушса хучӗ Теви питнеҫусне йӑлкӑштарса.

Унччен те пулмасть, Матиҫ чи ҫӳлти турат ҫинче пакша курнӑн ҫӳлелле кӑн-н пӑхрӗ.

— Бригадирсене васкатмалла, кӑҫал ҫур тырри юр айне юлас хӑрушлӑх пур,— терӗ вӑл Теви еннелле ҫаврӑнса.

— Мӗншӗн апла шухӑшлан?— тинкерсе пӑхрӗ ун ҫине Теви.

— Ҫурсам,— шӗвӗр пӳрнипе тӳпенелле тӗллерӗ Матиҫ,— хурӑн тӑрри сап-сарӑ, аялти туратсем ҫинчи ҫулҫӑсем вара ҫаплах ем-ешӗл.

— Ҫуртӑм. Вара мӗн?

— Ҫу вӑл кӗркунне ир килессе пӗлтерет,— мӑнаҫлӑн каларӗ Матиҫ.

Ҫавтӑнчӗҫ те кулкаласа иккӗшӗ те ял Советне кӗрсе

кайрĕç. Тепĕртакран япаласем çĕклесе тухрĕç урама. Крыльца тăррине ялав çакрĕç.

Кассăн-кассăн çил вĕрсе иртрĕ. Çил ачисем тытăнчĕç ялавпа выляма. Вĕлкĕшет ялав. Вăл çынсене хăй патне пыма кăчăк туртать: питех те ырă хыпар пĕлтересшĕн мар-и ара.

Матиçпе Теви стенасем çине плакатсем çыпăçтарчĕç. Унтан шалалла кĕрсе çухалчĕç. Çенĕкри темиçе чӳлмекре чечек ӳстернĕ. Çавсене шăвармалла. Хăнасене йышăннă кун туссем урамалла тухакан крыльца картлашки вĕçне те чечек лартасшăн.

Çак вăхăтра икĕ хĕрарăм урампа иртсе пыратчĕ. Вĕсем ĕнисене кĕтĕве кайса янă та килнелле шăкăлтатса таврăнаççĕ. Ял Совет тĕлне çитсен хайхискерсем тăпах чарăнчĕç.

— Ай-уй! Ял Советне мĕн пит капăрлатаççĕ?!— икĕ пĕççине шарт! çапрĕ хĕрарăмсенчен пĕри, лутра та мăнтăрккараххи.— Ыран-паян уяв çук пекчĕ-çке... Ах, ялавĕ, ялавĕ мĕнлерех вĕлкĕшет!

— Хăмачсем çине темскер çырнă. Атя, Чĕлпи, патнерех пырса вулар,— сĕнчĕ пуçне шерепеллĕ тутăр çыхни.

— Вулăттăм та, эпĕ сас паллисене пачах курмастăп,— пуçне сулкаларĕ Чĕлпи текенни. Вăл элчĕ куçлă.

— Хам та çавах. Эсĕ хуть çамрăк-ха, хĕрĕх пиллĕке çеç çитнĕ, эпĕ аллăран иртрĕм. Анчах эпĕ саппун кĕсйинче запас куç илсе çӳретĕп,— кĕсйине хыпашлакаларĕ çӳçеллĕ тутăрли.

— Айтурах, хăратса пăрахрăн эсĕ мана, Татти,— кăкăрне чĕтрентерсе илчĕ Чĕлпи.— Чĕрĕ куçах-и?

— Куçлăх, ара, çавна та ăнланмастăн-и?

— Эй, турран килесшĕ, çапла кала та. Атту запас куç тет.

Çывхарчĕç хайхискерсем. Татти вулама тытăнчĕ: «Телейлĕ ачалăх парнеленĕшĕн Тăван çĕр-шыва тав!», «Ырă сунса кĕтетпĕр!», «Ванихер инкене йĕкĕреш (вуннăмĕш тата вун пĕрмĕш ача) çуратнă ятпа хĕрӳллĕ салам!»

— Ан тĕлĕнтер,— хыпăнса ӳкрĕ Чĕлпи.— Йĕкĕреш ача çуратнă тенĕ-и Ванихер? Ах, чее çав хĕрарăм, ах, чее! Ия-а ара. Пăх-ха эс: пуясшăн пĕр харăс икĕ ача çуратнă. Намăс-симĕсне те чухламасть. Ватăлмалăх кунра çапла йĕкĕреш çĕклесе çӳрет пулать. Эх, питне кĕççе çĕлесшĕ.

— Чĕлпи, мĕн пакăлтататăн эсĕ? Ним те ăнланмастăп сана.

— Ку ачасемшĕн патшалăхран пĕр купа укçа илет ĕнтĕ. Ия-а ара. Эх, çырлах. Çаратмăшсем!

— Эсĕ аплах ан хурла-ха. Сан... Мĕнӳнтен таракан та тухман. Ача утьăккаласа курманскер, ним те пĕлместĕн эсĕ. Этеме пĕчĕкрен ӳстерсе çын тăвасси ай-яй йывăр. Патшалăх пĕлсе пулăшать пире. Тавтапуç ăна.

— Тăхта, Татти, хăлхана çĕртмелле ан янраш-ха.

— Эй, санпа, ял купăсĕпе, хĕсĕр хĕрарăмпа, пуплес те килмест ман,— пăрăнса кайма тăчĕ Татти.

— Тăхта-ха,— аллинчен тытса чарчĕ Чĕлпи хăй çумĕнчи хĕрарăма. Тепĕр чухне пулсан-и, Таттие тем те пĕр каласа хăртĕччĕ, халĕ шалтан хăпаракан ват пек йӳçекне путарчĕ. Ун чѐлхи вĕçне килнĕ сăмах-юмах пур. Ана çак минутра кăларса вĕçертмесен сывлăшсăр пулса ларĕ.— Итле-ха.

— Мĕн тата?

— Пĕр эрне каялла эпĕ урамра Ванихер упăшкине Йăкăнуçа тĕл пултăм. Чунтан калаçрăмăр. Мĕн тет, арăмĕ иккĕленнĕ тет. Ачана Ильяс ят пама шут тытрăмăр çемйипех тет. Йĕкĕреш çуратни пирки чĕптĕм сăмах та шарламарĕ. Нивушлĕ эрне иртсен Ванихер теприне кăларса пăрахрĕ? Ах, укçашăн мĕн кăна тумаççĕ... Эрнесерен çуратма тытăнчĕç.

— Қай, тупата, чĕлхӳпе вĕри кăвар çулласшĕ, мĕн сӳпĕлтететĕн, ухмаха ернĕскер? Ҫу тарана çитсе хам та тăхăр хырăм çĕкленĕ, йĕкĕреш хăраххине тепĕр эрнерен çуратнине курман та, илтмен те. Ҫĕвĕç чунлă эсĕ, Чĕлпи. Акă мĕн, енчен те эсĕ Ванихер пек ача çуратас тăк пĕтĕм ял халăхне чан çаптарăн. Упăшкуна вара пĕр черкке сыптармасăр, урăллах ташлаттарăн.

— Ха-ха-ха!— мăн сассипе ахăлтатса кулса ячĕ Чĕлпи. Ун умне ушкăн ача пухăнчĕ пек, упăшки вара тăлпан урисене аран-аран çĕклекелесе упа евĕр ташлать пек.

Татти юнашар тăракан хĕрарăм куллипе кăсăкланмарĕ. Ал сулчĕ те килнелле хускалчĕ. Пăрăнса утма ĕлкĕреймерĕ. Ял Совечĕн крыльца алăкĕ уçăлчĕ те унтан Матиçпа Теви тухрĕç.

— Ирхи салам сире!— пуçне сĕлтсе илчĕ Татти шерепеллĕ тутăрне юсакаласа.

— Астрасте!— хытах кăшкăрчĕ Чĕлпи те.

— Ырă кун пултăр сире, ĕçчен инкесем!— сывлăх сунчĕç лешсем те.

— Ыйтса пĕлме юрать-и?— аллине шкул ачи пек çĕклерĕ Чĕлпи.

— Тархасшăн,— сăмах хушрĕ Теви.

— Ванихер хăçан тухать вара пульницаран?

— Пĕр-ик кунтан кĕтсе илетпĕр пулĕ.

— Матиç, эсĕ ял Совет председателĕ, кала-ха: Ванихер йĕкĕреш ача çуратнă тенĕ кунта, вĕсемшĕн патшалăх миçе çĕр тенкĕ парать ăна?

— Темиçе пин тенкĕ!— терĕ Матиç. Вăл çак хĕрарăм кĕвĕç те ĕмĕтсĕр чунлине пĕлет, юри ăмсантарасшăн каларĕ çапла.

— Васпати! Эй, çырлах! Ăт ăçта вăл мул! Эх-эх-эх!— аллинчи укçа тĕркине çунакан вучаха пăрахтарнăнах асаплăн йынăшса ячĕ Чĕлпи.

— Чĕлпи инке, эс те çурат, сана та çителĕклех парăпăр укçи-тенкине,— куларах каларĕ Матиç.

— Унашкал самантсем иртрĕç ĕнтĕ ман. Ĕлĕкчĕ...

Татти сыв пуллашрĕ те тек ним шарламасăр ута пачĕ хăй сукмакĕпе.

— Тăхта, пĕрле кайăпăр,— Чĕлпи те талтлаттарчĕ ун хыççăн. Ăна хуса çитнĕ-çитмен параппан çапма та пуçларĕ:— Ыра ятлă пуласшăн мĕнле тăрăшать.

— Кам пирки йăслатăн çак эсĕ?

— Ара, Матиç пирки. Ĕлĕк те ял хĕрарăмĕ ача тунă, никама та капла чысламан. Халь Ванихере епле урра кăшкăрса, ялав вĕлкĕштерсе кĕтсе илет. Тупăннă председатель. Ахаль каламаççĕ çав çĕнĕ шăпăр хытă шăлать, çӳп-çап хăвармасть тесе.

— Тупата, Чĕлпи, тăрă шывпа çуса тасат-ха варалан-чăк чунна. Атту йăлтах тӳнтерле куран. Матиç пирки шăлна çырт. Вăл йăлттам этем. Ял Совечĕн тахçантанпах кунашкал лайăх ĕçлекен председатель пулманччĕ-ха тесе ырлаççĕ ăна çынсем. Унăн чи çывăх тусĕ, фермăра ĕçлекен Теви те, депутат. Вăл та хурланине тивĕç мар. Уй хапхи çумĕнче пурăнакан Крахха упăшкине ултă ачапа тăрса юлсан кам пулăшрĕ тетĕн? Теви! Вăл виçĕ ачине Шупашкарти интерната вырнаçтарчĕ. Çуркунне Теви йĕркеленипех урамра йăмрасем лартрăмăр. Мĕн тери селĕм халĕ.

— Йăмра, йăмра!— кăмăлсăрланчĕ Чĕлпи. Каллех тем юрамарĕ ăна.— Мана тĕрмене хуптарни çитмерĕ тата штраф тӳлеттерчĕ Теви. Ых! Кураймастăп каппайчăка. Тĕл пулсан ăшăм кăвас чĕресĕнчи чуста евĕр йӳçсе хăпарать.

— Тĕрĕс тунă. Качакуна урамри йывăççене ма кăшлаттартăн, штраф та тӳлемен пулăттăн. Эсĕ — çын сывлăхĕн мурĕ!— çапла каларĕ те Татти, шăллĕсен тĕлне çитнĕскер, сисĕнчĕксĕр пăрăнса калинккерен вĕлт! кĕрсе кайрĕ.

Чĕлпи мăкăртатса урамра пĕчченех тăрса юлчĕ.

## 2

Ёне фермин заведующийĕ вĕренме кайсан ун вырӑнне вăхăтлăха Теви юлчĕ. Ёçре ăна яланхиллех тусĕ Матиç пулăшрĕ. Матиç ял Совет председателĕ пулин те хăй унчченех ĕçленĕ фермăна пур пĕр кун сиктермесĕр тенĕ пек çӳрерĕ.

Теви каçхине ирхи сăвăмсен сĕтне завода ăсатрĕ. Васкавлă ĕç çук халь: ĕнесем те, пăрусем те вăрманта. Çавăнпа та заведующипе председатель килĕсене кайса апат çиме шутларĕç. Тевин хулара шоферта ĕçлекен упăшки, Патти, паян ир-ирех тĕрлеттерсе çитнĕччĕ.

— Вăл кĕтет-тĕр-ха, куçĕ çĕтĕлчĕ ахăр кантăк витĕр пăхса тăркач,— тути йăл-йăл сарăлчĕ Матиçĕн.

— Кĕтекен çын, сан упăшку Уçка пек, килте пурăнать,— кăмăлсăррăн каларĕ Теви.

Ферма карти çумĕнчен хăпманччĕ-ха Матиç. Пуçне тӳпенелле каçăртнăскер кăшкăрса ячĕ:

— Қайри мала пултă-ă-ăр!

— Ай-уй, кайăк хур карти! Мĕнле аялта вĕçеççĕ!

— Кĕр кĕске пулать кăçал,— темле йывăррăн сывласа илчĕ Матиç.

— Мĕншĕн апла шутлан?

— Ара, кайăк хурсем ав епле аялтан каяççĕ. Илтмен-и вара эсĕ ваттисен сăнарлă сăмахне: кайăк хурсем аялтан кайсан кĕр кĕске, çӳлтен кайсан — вăрăм пулать теççĕ.

Тунсăх мĕн иккенне пĕлмен Матиç çавăнтах юрласа ячĕ:

Қайăк хур çунатне касса илсен
Çитмĕл çичĕ име юрать тет.
Харпăр хăйĕн савнине каякан
Çитмĕл те çичĕ çул пурăнать тет.

— Сан чунунта темле юрă та пур. Сассу та çултанçул уçăлса, илемленсе пырать. Маттур эсĕ, тусăм,— мухтарĕ юлташне Теви.

— Сая кайрĕ пултарулăхăм,— ытахальтен, ним кулянмасăр-тумасăр сăмах вĕçертрĕ Матиç.— Шупашкара юрăпа ташă ансамбльне каясшăнччĕ те... Сана пулах яла юлтăм.

— Сансăр эпĕ тунсăхласа вилнĕ пулăттăм. Вара пытарма тиветчĕ,— шӳтлерĕ Теви. Матиçе вăл ыталарĕ те питĕнчен чуп турĕ. Пуриншĕн те чунтан тав туни пулчĕ ĕнтĕ ку.

Ыталашнипех утрĕç икĕ тус-тантăш.

— Куратăн-и, Теви? Ав пирĕн колхоз наянĕ килет,— аллипе тĕллесе кăтартрĕ Матиç.

Вăрман енчи сукмак çинчен аслă çул çине колхоз зоотехникĕ тухрĕ-мĕн. Аякранах унăн пит çăмарти йăлкăшса çуннăн курăнать: ара, сарлака сухалĕ ытла йăмăх хĕрлĕ.

— Матиç, мĕншĕн эсĕ ăна «наян» тесе хурлан?— тĕпчеме пикенчĕ Теви.

— Модăна пуç çапса арçынсенчен хăшĕ-пĕри ашкăрса ӳсекен сухалне хырса тăкма ӳркенет, çӳреççĕ вара çамрăклах янахне пĕветнĕ сӳс çыпăçтарнă пек.

— Салам сар пикесене!— кăшкăрчĕ инçетренех зоотехник.

Матиçпе Теви те аллисемпе сулкалашрĕç.

Зоотехник вĕсен умне çитсе тăрсан кăмăллăн ыйтрĕ:

— Мĕнле утаççĕ, чупаççĕ чиперккесем?

— Эсир ырă суннипе, мосье, сиккипе тĕпĕртеттеретпĕр,— кулкаларĕ Матиç.— Эсир, зоотехник юлташ, тем вăрттăн сукмаксемпе çӳретĕр-ха. Мĕне пĕлтерет-ши ку?

— Йăнăшатăр, Матрена Васильевна. Эсир ял Совет председателĕ пулнă май тĕрĕссинех калама тивет: эпĕ ĕнесен çуллахи лагерĕнче пултăм.

— Апат енчен мĕнле унта?— хыпаланса ыйтрĕ Теви.

— Сĕткенлĕ апат çителĕклĕ,— Теви куçĕнчен пăхма хăяймасăр хĕрелсе каларĕ зоотехник. Унăн пичĕпе хĕрлĕ сухалĕ хутăшса кайрĕ тейĕн, шăп та шай — хăмач.— Çумăр хыççăн халĕ йĕп пек вĕтĕ курăксем тухаççĕ. Тĕрĕслерĕм: ĕнесем сĕт аван антараççĕ.

— Эппин, ĕнесене фермăна часах илсе килместпĕр-ха.

— Пурăнччăр уçă вырăнта. Вĕсене те техĕмлĕ сывлăш кирлĕ.

Сăмах пине çитрĕ-ши, шăпăрт пулчĕç самантлăха виççĕшĕ те. Матиçпе Теви утма пикенчĕç.

— Ан васкăр-ха,— чарчĕ зоотехник çамрăк хĕрарăмсене. Йĕкĕтĕн çав хатер уйăрăлас килмест вĕсенчен. Вăл каччă пуçăн упăшкаллă Тевие юратать, ăна кунĕн-çĕрĕн пăхса тăма хапăл. Кун пирки чунне никама та уçса памасть. Савăнăçне те, хуйхи-суйхине те пĕччен тӳсет. (Халлĕхе çывăх юлташ та çук-ха ку ялта. Ăна, урăх район çыннине, институт пĕтернĕ хыççăн янă кунта. Çĕнĕ вырăнта ĕçлеме пуçлани те темиçе уйăх çеç.)

— Тем каласшăнччĕ?— тăпах чарăнчĕ Теви.

— Итлетпĕр,— терĕ Матиç те.

— Хыпăнса ан ӳкĕр те-ха... Ытлашши темех мар. Мана акă мĕн кăсăклантарать: мĕншĕн-ха сире нихăçан та

уйрăмшарăн курма çук? Çӳретĕр ялан пĕрле, пĕр пуслăхри чăх чĕпписем пек.

— Сире кунашкал килĕшместпĕр-и?— кулкаларĕ Матиç.

— Пите-куçа чăрмаласа тӳпелешме сунмастăр пулĕ те?— куçран чăрлаттарса пăхрĕ Теви.

— Çу-ук,— терĕ зоотехник сылтăм аллине çӳлелле çĕклесе,— тур сыхлатăр унашкал инкекрен. Туслă пурăннине ним те çитмест. Туслисен пурнăçĕ нихăçан та каснă йывăç пек тӳнмест, ĕç тени те ăнать. Хăвăр хушăри ăнтăлăва нихăçан та ан çухатăр.

— Ырă канашăршăн тавтапуç сире, Виталий Степанович,— пуçне тайрĕ Матиç.

— Туслăх пире çуралсанах хăйĕн çутă кĕрен чатăрĕ айне тăратнă,— мухтанчĕ Теви.

Зоотехник татах тем хушасшăнччĕ, çăварне те уçрĕ, анчах Матиç пӳлчĕ ăна:

— Юрĕ. Темĕн чухлĕ калаçсан та çу тухмĕ. Сывă пулăр! Пур пулăр!

Йекĕт пĕчченех тăрса юлчĕ уй варринчи юпа пек.

Матиç утнăçем юрласа ячĕ:

... Миллион, миллион, миллион алых роз
Из окна, из окна, из окна видишь ты.
Кто влюблен, кто влюблен, кто влюблен
и всерьез,
Свою жизнь для тебя превратит в цветы.

## 3

«Туслăх пире çуралсанах хăйĕн çутă кĕрен чатăрĕ айне тăратнă»,— терĕ Теви. Çапах та тĕп-тĕрĕс теме çук ку хыпара. Матиç çак ялсем-ха. Тевин çуралнă кĕтесĕ вара кунтан пăхса курăнмасть: шутсăр аякра — Çурçĕрте. Унăн ашшĕ те, амăшĕ те геологсем пулнă, çĕр айĕнчи пуянлăха ширанă. Вĕсен çулçӳрев «машини»— çуна кӳлнĕ йытăсем. Чупнă, сикнĕ юр кĕрчĕсем урлă. Темле терт те кăтартать Çурçĕр çанталăкĕ. Çыннăн тӳсмелле. Çĕр-шыв хушнине пурнăçламалла. Ăнăçлă пулса пынă-ха вĕсен ĕç-хĕлĕ. Вăхăчĕпе савăннă та, пуçлăхсен тавне те пĕр хут çеç мар илтнĕ. Пĕррехинче Тевин ашшĕпе амăшĕ, геологсем, куç уçма çук ахăракан çил-тăмана лекеççĕ. Темĕн чул кĕрешсен те çĕнтереймен вĕсем çут çанталăкăн этем ирĕкне пăхăнман вăйне. Таврăнайман вĕсем хăйсен вырăнне — вилнĕ шăнса.

Тевие, виçĕ çул тултарнăскере, кукамăшĕ яла илсе таврăнать. Ӳснĕ вара вăл унăн ăшă çуначĕ айĕнче.

Теви пиллĕке çитсен урама чупма тытăннă. Кунта пĕчĕк этемккесем шутсăр нумай. Вĕсен хушшинче темлисем те пур: паттăррисем, лăпкисем, ашкăнаканнисем, йĕресем... Вĕсем каçса кайсах пĕр-пĕринпе лапталла, пытанмалла вылянă. Чупнă, тĕпĕртетнĕ, юрланă, ташланă.

Ушкăн ача хушшинче Матиçпе Теви пĕр-пĕрне тупнă. Пуçланнă вара шыв сапса уйăрайми туслăх. Мĕншĕн? Ыйтсан хăйсем те кун пирки калама пĕлеймĕç. Тен, Матиçе Теви ăшă куçпа пăхнă?

Вылянăçемĕн ыттисемпе пĕрле ӳснĕ те ӳснĕ икĕ тантăш. Майĕпен вĕренме каяс вăхăт та çитнĕ. Пĕр-пĕринчен шит юлмасăр тенĕ пек чупнă вĕсем кашни кун шкула. Вунă çул парта хушшинче юнашар ларнă.

Туслăх гранит пек çирĕпленнĕ. Йăнăшман вĕсем пĕчĕккĕ чухнех тус суйласа. Теви те, Матиç те-пĕр-пĕрне чунтан парăннă чăн-чăн юлташсем. Миçе çул çӳреççĕ йĕкĕрешсем евĕр! Мĕн çыхса тăрать-ши вĕсене? Кăмăлĕсем пачах расна-çке. Теви чĕмсĕртерех, чылай чух хăйне хурланнă майлăрах, мĕскĕнле тыткалать. Тен, амăшĕсĕр ӳснĕрен çапла? Ун пек тесен, Матиçĕн те ашшĕ çук-ха... Анчах вăл пĕр вырăнта лара-тăра пĕлмен хаваслă çын: юрлать, ташлать, сăвă калать. Паян кун та кăмăлĕ улшăнман ун. Вĕренӳре, ĕçре вут-хĕм кăларать. Çынсене çĕклентерес тесе тем те пĕр шухăшласа кăларать. Шкулта та вăл вĕреннипе çеç çырлахман. Шав класс тулашĕнчи ĕçсемпе тăрмашнă. Кирек ăçта та часах асăрхатчĕç ăна. Ферма ĕçченĕсем сĕннипе халĕ Матиçе ял Совет депутатне суйларĕç. Иртнĕ кĕркуннеренпе вăл — ял Совет председателĕ.

Килĕштернĕ ĕçсенчен пĕри ун — вуласси. Калаçура нумай чух кĕнекери юратнă геройсен сăмахĕсемпе усă курать. Пачах кулянма, çилленме пĕлмест теме çук ăна. Пĕр-пĕр киревсĕрлĕхшĕн тепĕр чух шутсăрах тарăхать. Куç çуль тăкса та йĕрет. Çапах пăсăк кăмăлĕ вăраха пымасть унăн, кăмпа çумăрĕ хыççăн янкăр хĕвел пăхнăн, йĕпеннĕ пит çăмартийĕ часах типет. Вара каллех каçса кайсах ахăлтатать, юрлать.

Матиçĕн хитре сăнĕ такама та илĕртмелле. Хĕр чух пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла чипер пикеччĕ. Пĕвĕ-сийĕ, утти-тĕрри — акăшăнни пек. Çӳçĕ хура та кĕске.

— Çурăму хыçĕнче вăрăм çивĕтсем курасчĕ санне,— терĕ пĕррехинче Теви.

— Ӳсмест çав. Манăн çӳçе хам сăпкара выртнă чух

йывăр алăллă çын каснă ахăр,— тӳрре тухрĕ çавăнтах тусĕ. Çивĕчĕ ӳсмесен те çӳçĕ хăйне питĕ килĕшет. Ķуçĕ те илемлĕ унăн. Йăл та йăл кулса кăна тăрать.

* * *

Сăнран Теви те Матиçрен кая юлмасть. Анчах унăн илемĕ хăйне май. Вăл — кăшт мăнтăртарах. Пилĕкĕ те палăрсах каймасть. Çакăншăн вăл яланах кăмăлсăрланать. Ķу пĕтĕмпех кукамăшĕ юратнипе ăна виçесĕр, ирĕксĕр çитерниччен килет имĕш. Тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чух (хĕр шăрши кĕнĕ ĕнтĕ) хĕр ачасем каланине итлесе, начарланас шутпа, вăл çăкăр çимесĕр уйран çеç ĕçсе пурăнчĕ. Ķалăхах. Пилĕкĕ çинçелмерĕ. Вара, ваттисем типĕ тытнăн, икшер кун пачах ăша тĕпренчĕк ямарĕ. Мĕнле тӳсрĕ-тĕр пуçĕ çаврăннине? Ураран ӳкрĕ хайхискер, хĕне кайма пикенчĕ. Юрать, врачсем çийĕнчех пульницана выртарса сыватрĕç. Атту инкек курасси инçе марччĕ. Тухтăрсем ăс пачĕç: «Хăрăк туратăн илемĕ çук. Сывлăхлă, пит-куçĕнчен юн пĕрĕхекен хĕре такам та ăмсанать. Тек апат çимесĕр ан пурăн». Вара каллех хĕр сĕткенпе тулчĕ. Пичĕ-куçĕ — мăкăнь тейĕн. Вăрăм çӳçĕ пыл ăвăсĕ тĕслĕ. Ķуçĕ — йĕтĕн чечекĕ. Тачка тути писев сĕрнĕн хĕп-хĕрлĕ.

## 4

Чи малтан хăшĕ савни тупрĕ-ха? Теви, акă кам.

Вуннăмĕш класс. Юлашки уйăх шкулта. Пахчари йывăç тураттисем хушшинче шăпчăксем юрă шăрантараççĕ.

Экзамен хыççăн пĕри те киле каймасть. Ушкăнпа пĕрле ял хĕрринчи кӳлĕ хĕррине анаççĕ е вăрман уçланкине çитеççĕ. Ķирек ăçта та вăйă-кулă. Çакăн пек самантсенче Тевипе юнашар ялан — Лавруш. Вăл — пускилти нумай ачаллă Ванихер инкен аслă ывăлĕ.

Матиç пĕррехинче Лавруша вăрттăн сăмах тĕкмесĕр тӳсеймерĕ:

— Лавруш, эсĕ Тевие юратса пăрахрăн-и-мĕн?

Ķаччă ним те чĕнеймерĕ. Пичĕ вара хăмачпа витĕнчĕ. Аслă-тăнлă йĕкĕт хăй кама юратни çинчен шавласа çӳремĕ ĕнтĕ. Савнă хĕре пĕлтермеллех. Анчах мĕнле майпа? Акă ăçта чăрмав, вăтаннипе çĕр шăтăкне ним мар сикĕн, чăнах.

Çав асамлă сăмаха хĕрсем вăйăран килнелле ăсатакан каччăран хапха умĕнчи хурăн çумне тăрсан, тулли уйăх

савнисене иментересрен туратсем хушшипе йăпшăнса иртнĕ самантра, илтекенччĕ. Тевин пачах урăхла пулса тухрĕ.

Кукамăш çава тухнă ятпа йăмăкĕ патне урăх яла хăнана кайрĕ.

— Теви мăнукăм, эсĕ ĕнене су вара,— хушрĕ кукамăшĕ ăна.— Сĕтне нӳхрепе ларт.

— Хăратăп эпĕ унран.

— Мăйĕпен хăнăхмаллах ĕнтĕ сан.

Сăвасси йывăр ĕç мар-ха. Кукамăш ĕни çав тери куштанскер. Куллен ачашласа, йăпатса тутлă апат çитерекен хуçипе çеç туслă вăл, урăх никама та хăй çывăхне ямасть.

— Мĕнле сумалла?— кулянчĕ Теви каччă умĕнче.

— Ан пăшăрхан, хам пулăшăп,— терĕ Лавруш.

Йĕкĕт хăй сăмахĕн хуçи, ăна çилпе вĕçтермест.

Хĕрпе каччă куштан та юнтаракан, кутăнлансан тапма юратакан ĕнене сума хатĕрленчĕç. Картиш варрине сĕткенлĕ симĕс апат, пиçенпе йыт пырши, пĕр ытам пăрахрĕç. Кĕсйине Лавруш тата тутлăраххине чикрĕ.

Кĕтӳрен таврăнчĕ хайхискер, курăк купи патне пычĕ. Тытăнчĕ мăшлаттарса тĕрмеклеме. Тевипе Лавруш та алкумĕнчен тухрĕç. Аякранах пуçăнчĕç ĕнене илĕртме, ăшă сăмахсем калаççĕ. Лешĕ пуçне пăрса кăн-н пăхса илет çывхаракан çамрăксене. «Сутармастăп пур пĕрех!» е «Килĕрех, ырă кăмăллăскерсем, мана сусамăр»,— тет-ши? Теви акă ĕне çиллине ăшă шывпа çуса ал шăллипе типĕтрĕ. Тем килĕшмерĕ-ши? Лешĕ хĕре çурăмĕнчен хӳрипе çатлаттарса та илчĕ. Чим, тен, çилленсе мар, тав туса?

— Ан кӳрен, тусăм. Хуçу, кукамай, килте çук, сана сума мана хушса хăварчĕ,— ĕнене çурăмĕнчен лăпкарĕ Теви. Вара хăюллăнах ĕçе тытăнчĕ.

Лавруш ĕне умĕнче тăрать, ăна тăвар сапнă çăкăр чĕлли çуллаттарать.

Шăп ĕç пуçланнă вăхăтра, сасартăк çӳлтен ахах пĕрчисем ӳкнĕн, хĕр илтех кайрĕ Лавруш чунне уçса панине: «Теви, сана питĕ-питĕ юрататăп! Сансăр çутă тĕнчере пурăнаймастăп!»

Пыл хыптаракан çак сăмахсем сĕт çиппи шуç витре тĕпне кĕмĕл тенкĕсем пек чăнкăр-р-чăнкăр-р! чăнкăртаттнипе пĕрле чуна çупăрларĕç. Мĕн тумалла? Сунă чух тĕк тăман ĕне мăйракинчен тытса лăплантаракан Лавруша пырса чуп тумалла-и халĕ?

— Ах, Лавруш! Тупрăн ăша вут хыптаракан япала çинчен хăçан каламаллине!— сиксе тăчĕ Теви. Анчах ĕни витрене тӳнтересрен шикленсе каллех кукленчĕ.

— Ытти чух хам сана юратнине пĕлтерме хăяйрас çукчĕ,— терĕ Лавруш.— Хыпăнса ан ӳк: ман юрату, эс сăвакан сĕт пекех, тап-таса. Çакна нихăçан та ан ман.

Теви ĕненчĕ Лавруша. Унăн хăйĕн те чунне уçса памалла — каччă çакна кĕтет. Мĕнех, пĕлтерĕ-ха. Çав самант ĕмĕр асра юлмалла. Юлĕ те. Тинĕс хĕрринчи хăйăрта ылтăн тĕпренчĕкĕ шыранă евĕр, чуна çĕклентерекен, шанчăк паракан сăмахсене пĕрчĕн-пĕрчĕн суйламалла.

Акă савнисем уйăрăлайми çӳреççĕ.

Экзаменсем ăнăçлăн вĕçленчĕç. Аттестат — алăра. Ĕнтĕ института вĕренме каймаллаччĕ, аттестатĕнче лайăх паллăсем кăна. Анчах Тевие кукамăшĕ килтен пăрахса кайма ирĕк памарĕ.

— Ах, аннӳ те сан пекех курса куç тăранми хĕрччĕ. Хамах пĕтертĕм ăна,— йĕчĕ вăл мăнукĕ умĕнче шутсăр кулянса.— Тăрлавсăрскер, эпĕ Хусан хулине аслă шкула кайма хĕтĕртрĕм. Геолога вĕренсе тухрĕ хĕрĕм. Çынсем ăмсанатчĕç мана: ара, вăл чаплă çын-çке. Ун чух геологсене çав тери хакланă. Çурçĕре ăсатрăм. Хам, çĕр çăтманĕ, çӳретĕп мăнаçланса.

— Кукамай, эпĕ врач пулăп, геолог мар,— йăпатрĕ Теви вата çынна.— Чир-чĕртен сыватса тăрăп сана.

— Ан та ӳкĕтле. Аннӳшĕн те хама виличчен каçармастăп. Ĕçле колхозра. Ĕç тени вăл пур çĕрте те пĕрех, ан ӳркен кăна. Укçине те çителĕклех илĕн. Тус-юлташсем тупăн. Чапа тухăн.

Теви кукамăш ирĕкĕнчен тухмарĕ, ялах юлчĕ. Ăна кура Лавруш та, Матиç те хуланалла çул тытмарĕç, кунтах ĕçе кӳлĕнчĕç.

Часах Лаврушăн ят тухрĕ: çара каймалла. Теви ун валли асăнмалăх парне хатĕрлерĕ. Тăваткал каснă шурă китайка тутăр кĕтессисене кĕрен чечексем тĕрлерĕ. Варрине симĕс çиппе çак сăмахсене çырчĕ: «Мана ан ман, савнă Лаврушăм. Теви».

Ванихер инке ывăлне çара ăсатнă кун ял çамрăкĕсене хăй килне пухрĕ. Теви те пулчĕ вĕсен хушшинче. Лавруш май килтерсе савнă хĕрĕнчен:

— Теви, мана кĕтетне?— тесе ыйтрĕ.

— Паллах. Эпĕ пĕр сана çеç юрататăп.

Хăшĕ малтан качча кайрĕ-ха? Матиç? Акă кам.

Шкултан вĕренсе тухсан Матиç тӳрех фермăна ĕне сума кĕчĕ. Кунта унчченех ĕçлекен хĕрарăмсем ăна та хапăлласа йышăнчĕç.

Часах тӳрре кăларчĕ Матиç фермăри аппа-инкесен

шанчăкне. Вăл ĕçре вăр-вар пулнинчен пурте тĕлĕнсе кăна тăчĕç: хĕр кашни ĕне валли ăшă сăмах тупма пĕлет-мĕн. Çурăмĕнчен çупăрласа лăпкать, ачашлать. Таканари улăма аллипе хускаткаласа кăпăшкалатмасăр чунĕ канмасть ун. Тата çак тĕлĕнтерет: кашни ĕне мĕнле юрă юратнине те чухлать пулĕ-и? Сума лариччен ĕне хăлхи патĕнче тем пăшăлтататать. Шăппăн кăна юрă ĕнĕрлет.

Хĕрарăмсенчен Матиçе тимлĕн сăнаканни каланă тăрăх, хĕр ĕне хăлхинчен: «Тусăм, пĕлетĕн-и, эпĕ Уçăпа вилесле юрататăп!»— тесе пăшăлтатнă пулать.

— Айтурах, хăйĕн вăрттăнлăхне ĕнесемпе сӳтсе явать. Куна мĕнле ăнланмалла?— тĕлĕннĕ хайхискер. Апла пулин те хывăх вĕçтермен.

Юрату пулăшрĕ-ши? Пĕлме çук. Матиç сĕт ытларах та ытларах суса илме тытăнчĕ.

— Мĕнле майпа ăнать-ха сан? Апатне пĕр пекех çитеретпĕр-çке. Эс киличчен çак ĕнесем улт-çич литртан ирттереймен. Вăрттăнлăхна уçса пар-ха,— пĕри те тепри тилмĕрет Матиçе.

Хĕрĕн пĕр сăмах:

— Юратмалла.

Иккĕленекенсем те тупăнаççĕ:

— Юратнипех ненай...

Пĕррехинче пĕр çап-çамрăк хĕр, кăвак куçлăскер, Матиç сăмахне шӳт вырăнне хурса çапла ӳпкелешрĕ:

— Ĕнене юрат, савнине юрат! Ăçтан ăсмалла çавăн чухлĕ юрату?

Кулчĕç вара пĕр кана.

— Ахалех ĕненместĕр,— хура куçне хĕссе илчĕ Матиç.— Савнине юратни ĕçре çав тери пулăшать. Хăвăр чунăрпа тĕрĕслесе пăхăр-ха.

Матиç çак вăхăтра чăнахах та юратăвăн пыл чĕрессине кĕрсе ӳкнĕ.

...Яла радиопа пĕлтернĕ хыпар сарăлчĕ: театр килнĕ. Район центрĕн клубĕнче кăнтăрла «Нарспи» спектакль кăтартаççĕ.

— Мĕн тери лайăх! Пуçтарăн, Теви,— ун умне пырса тăчĕ Матиç.

— Эпĕ пыраймастăп,— пат татса хучĕ лешĕ.

— Мĕншĕн?

— Кукамай чирленĕ.

— Ĕненместĕп. Пĕлетĕп, сăлтавĕ урăххинче. Çара кайнă Лавруш шанчăкĕнчен тухасшăн мар. Ăс ту, ваййа хутшăнман хĕр час ватăлать теççĕ.

— Суя сăмах вăл.

— Итле-ха, Теви, ман тӳсмелле мар чӗлхе вӗҫӗ кӗҫӗтет,— чӗлхине шӑлӗпе ҫыртрӗ Матиҫ.— Халиччен хам курман ҫынпа калаҫма тивет-ши?

— Спектакле каятӑп тетӗн. Артистпа паллашатӑн пуль. Илсе кайӗ акӑ вӑл сана таҫти мур шӑтӑкне. Эпир саншӑн кунта куҫ ҫуль юхтарӑпӑр,— йӗренҫи турӗ Теви.

— Артист пулсан эпӗ ӑна яла илсе килетӗп, ан тив, кашни кун камит кӑтарттӑр. Манӑн аллӑмсем ӗҫре вӑй вылӗҫ.

Ҫав пурнӑҫа ӗмӗтленсе юрласа ячӗ Матиҫ:

Пирӗн колхоз ферминче
Ӑмӑртуллӑ ӗҫ вӗрет,
Ой, вара, мӗн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ӑмӑртура мала тухсан
Савӑнмалла мар-и-ха?

Ӗнисене сусан Матиҫ фермӑра вӑрахчен тытӑнса тӑмарӗ.

Килне таврӑнсан хыпалансах ҫӑвӑнчӗ, шӑлӑнчӗ, вара шифоньер алӑкне уҫрӗ. Ҫакӑра — чи килӗштернӗ, пилӗкӗ тӗлӗнчен пӗрнӗ, арки вӗҫне тӗксӗм кӑвак йӗсме тытнӑ ҫутӑ кӑвак тӗслӗ пурҫӑн кӗпе. Ӑна пӗртен-пӗрре кӑна, шкултан вӗренсе тухнӑ ятпа ирттернӗ каҫра, тӑхӑннӑччӗ. Уринче ҫӳллӗ кӗлеллӗ шурӑ пушмакчӗ. Ҫынсем «эсӗ ку тумпа — чӑн-чӑн лӗпӗш» тесе ырлани халӗ те хӑлхара янӑрать.

— Паян каллех лӗпӗш пулам,— хӑйпе хӑй калаҫрӗ тӗкӗр умӗнче типтерленекен Матиҫ. Ӗҫе кайнӑ амӑшӗ валли ҫыру ҫырса хӑварчӗ те килтен тухса вӑркӑнчӗ. Самай ир ҫитрӗ вӑл район центрне. Спектакле кӗме билет туянчӗ те аслӑ урам тӑрӑх утрӗ. Чи малтан кӗнеке лавккине кӗчӗ.

— Ух, мӗн чухлӗ кӗнеке! Ҫӳлӗкӗ-ҫӳлӗкӗпе йӑтӑнса выртаҫҫӗ,— ретсем тӑрӑх чупрӗҫ хӗр куҫӗсем. Умри сӗтел ҫинче те нумай вӗсем. Вӑл хытӑ хуплашкаллӑ хулӑн кӗнекене асӑрхарӗ те ятне вуларӗ: В. Паймен. «Ҫӗпер».

Туянас шухӑша йӑпӑр-япӑр ярса тытрӗ Матиҫ. Анчах кӗнеке ҫине сасартӑк сарлака ал лаппи выртрӗ. Мӗн мурӗ? Пуҫне кӑлт ҫӗклерӗ Матиҫ. Юнашар салтак тумӗ тӑхӑннӑ йӗкӗт тӑра парать. Ун куҫӗ тӳрех хӗр куҫӗпе йӑлмакланчӗ. Йӑл кулчӗ хайхискер.

— Ҫаҫарӑр,— аллине кӗнеке ҫинчен илчӗ вӑл.

Матиҫ те «Ҫӗпере» хӑй вырӑнӗнчех хӑварчӗ.

— Эсир ку кӗнекене...

— Туянатпӑр,— пӳлчӗ салтак хӗре. Хӑй ҫавӑнтах гим-

настерка кěсйинчен укҫа кăларчě. Матиҫ кӳренме те пěлмерě. Вăл ҫиҫěмле хăвăртлăхпа йěкěте урлă та пирлě виҫсе илчě: яштака пӳ-силлěскер. Пилěкне чěн пиҫиххипе пăвса лартнă та — чăн-чăн паттăр. Мěншěн-ха вăл тин ҫеҫ ҫара каякан яш пек шакла пуҫлă? Пилотки айěнчен шăрт пек ҫырă ҫӳҫ пěрчисем курăнаҫҫě. Куҫěсем! Куҫěсем вара вěҫě-хěррисěр кăвак хěлхем сирпěтеҫҫě! Пулаҫҫě темěн тěлěнтермěш куҫсем.

Йěкěт хăй туяннă «Кěпер» кěнекене Матиҫе кап тыттарчě те:

— Малтан эсир вулăр, вара — эпě,— терě.

— Ан тěлěнтерěр-ха,— айăплăн пăхрě хěр.— Сире ăҫта тупăп эп?

— Эпир сăрт-тусем мар-тăр. Ҫынсем пěр-пěринпе тěл пулма ҫуралнă.

Иккěш те урама пěр вăхăтра тухрěҫ.

— Эсир кашни хěрпех кěнеке парса паллашатăр-и?— ыйтрě Матиҫ.

— Тепěр чух тутăр, шăрҫа... Шав шыратăп парнелěх япала.

— Тупăнкалать-и?

— Пěрмай суйлатăп.

— Эппин, инке арăмпа ҫеҫ тăрса юлатăр ак,— шӳтлерě Матиҫ.

— Эсир юмăҫ-и-мěн?

— Юмăҫ. Пěлетěп: суйла-суйла сакăр хěре ҫитрěр.

— Тавҫăртăн! Хăрпăк витěр пăхрăм та ылтăн чěкеҫ курах кайрăм!— кăшкăрсах ячě йěкěт. Вăл чăматанне ҫěре лартса хěре икě аллинчен ярса тытрě.— Эсě — тăххăрмěш! Эпě килěшетěп санпа ěмěрлěхе юлма та.

Каччă ҫăварěнче шӳтлě те тутлă сăмахсем. Ку Матиҫ чěрине ҫу сěрчě.

— Илсе кай мана хăвăр патăра. Аннӳ мана каччăран кěрӳ тутăр.

— Ытлашши чăрсăр эсир!

— Эпир, салтаксем, ҫапла!

— Хăш ялсем вара эсир: питě хăюллă калаҫатăр...

— Эпě — кивҫырмасем. Ятăм — Уҫăп.

— Ан улталăр. Эпě хам Кивҫырма ялěнчен,— кăмăлсăрланчě Матиҫ.

— Чăнах-и? Савăнтаратăн!— салтак хěр сиссе иличчен ăна пилěкěнчен ҫавăрса тытрě те пăр-пăр-р! ҫавăрчě.— Каяр. Ҫул ҫинче йăлтах ăнлантарăп.

Уҫăп хěре сулахай хулěнчен ҫавăтрě.

Матиҫ спектакль курма килни ҫинчен ним те шарла-

марӗ-ха. Акă вăл каччă аллинчен вăрт вĕҫерĕнчĕ те вĕҫтере пачĕ клуб еннелле.

— Ăҫта эсĕ капла?— шак хытса тăчĕ йĕкĕт.— Ятна та каламарăн иҫмасса!

— Ҫирлех пулсан пĕлен!..

Ҫăмăлĕсем иккĕшĕн те пĕрешкел иккен. «Ытарма ҫук хитре хĕр», «Ҫаччи хăюллăскер. Сăнĕ те пăхмалăх пур»,— йăл илчĕҫ вĕсен пуҫĕсенче ҫавнашкал ыра шухăшсем.

## 5

Спектакль вĕҫленсен клуб умĕнче паллана ҫынсене шыраса Матиҫ ун-кун пăхкаларĕ. Никама та курмарĕ. Эппин, киле пĕчченех танккамалла. Тăкăрлăкра утса хире тӳртен тухсан вăл ял ҫулĕ ҫине ӳкрĕ.

Хĕвел ĕнтĕ анаҫалла хуллен шăвать. Ун ҫулĕ таса, хуплама пикенекен пĕлĕт катрамĕсем таҫта кайса ҫухалнă. Ҫĕр пичĕ селĕм куракнсемпе витĕннĕ. Ыраш пусси ав таҫтанах сарăлса выртакан аслă тинĕс пек. Ырă кураҫҫĕ ҫил ачисем ун ҫийĕн кунĕн-ҫĕрĕн кимĕпе ярăнса.

Пĕр вăхăт Матиҫ спектакльте пулса иртнĕ ĕҫсем пирки хурланса пычĕ.

— Эх, ҫав ĕлĕкхи пилсĕр саманах пĕтернĕ чипер Нарспие,— терĕ вăл сасăпах.— Юп курман ун чухнехи хĕрсем. Эпир мĕнле телейлĕ!

Паҫăрхи салтак ак ун асне килчĕ те, вăл вара юрлаймасăр тӳсеймерĕ:

> Шур ҫип кĕпе ҫĕлетрĕм
> Ҫевте тăп-тăп тăмашкăн.
> Вăрăм пĕве ӳстертĕм
> Савни умне тăмашкăн.

Пикен ҫепĕҫ юрри йĕс шăнкăрав пек, пĕтĕм тавралăха саланать.

Ҫилне ҫитсен Матиҫ тумне хăпăл-хапăл улăштарчĕ. Часах фермăна каймалла. Халичченхи пек вăл Теви чӳречинчен пырса шаккасса кĕтмерĕ, тусĕ патне хăй часрах тухса утрĕ, ара, чĕлхи вĕҫĕ шутсăр кăтăкланать: ирхи кӳлĕм район центрĕнчи кĕнеке лавккинче мĕн пулса иртни ҫинчен тантăшне хăвăртрах шĕкĕлчесе парас килет.

Матиҫ калинккене уҫма та ĕлкĕреймерĕ, Теви хирĕҫ сиксе тухрĕ.

— Эсĕ спектакль курса таврăнтăн та-и? Мĕнле вылярĕҫ артистсем?

— Питĕ чаплă!
— Пирĕн çĕнĕ хыпар пур.
— Мĕнле хыпар?— хăлхисене чанк тăратрĕ Матиç.
— Пускил ачи çартан таврăннă,— юнашарти кантăкĕсене хăмапа урлă-пирлĕ çапнă лапчăк пӳрт еннелле пуçне сĕлтрĕ Теви.
— Чим-ха, вăл пӳрт Ухтиван пиччен марччĕ-и вара?— картишĕн тепĕр кĕтессине лартнă çурт хуçи пирки сăмах вакларĕ Матиç.
— Çук, ун мар. Паçми темиçе çул усăсăр выртнăран Ухтиван пичче ирĕк илсе вăхăтлăха йышăннă ăна.
— Қам пурăннă ку килте? Çапса пăрахсан та ас тумастăп,— тепĕр хут тимлесе пăхрĕ Матиç çав лапчăк пӳрт çине.
Вĕсем çавтăнса фермăналла утрĕç. Юмахланă май тахçан илтсе манăçа тухнисем аса килчĕç.
Теви кукамăшĕпе юнашар темиçе çул каялла (ун чух Теви Çурçĕртехчĕ-ха) Қĕрпе Иванĕн арăмĕ тăлăххăн хăйĕн Уçăп ятлă пĕчĕк ывăлĕпе кун кунланă. Хĕрарăм хĕне кайнă та сывалайман. Уçăпа амăшĕн урăх республикăра пурăнакан йăмăкĕ илсе кайнă.
— Ӳснĕ вăл аппăшĕн ачисемпе пĕрле. Çитĕнсен çара кайса килнĕ,— тĕплĕн ăнлантарать Теви.— Халĕ ĕнтĕ тăван яла таврăнчĕ.
— Çав лапчăк пӳртре пурнăç ăнтарасшăн-и?— шеллерĕ Матиç Уçăпа халĕ те пĕчĕк ача пек курса.
— Вăл — мал ĕмĕтлĕ çын. Ухтиван пиччене хăйĕн килĕ вырăнĕнчен хăваласшăн мар. «Совхозра тракторпа ĕçлесе укçа тăвăп та çĕнĕ урамра кирпĕч çурт лартăп. Сыпăнатех ăраскалăм»,— тет.
— Сирĕн патăртахчĕ-и вăл? Эх, кĕрсе курмаллаччĕ-çке ăна,— хаш сывласа илчĕ Матиç.— Қăсăклансах ӳкрĕм ку этемпе.
— Қурăн-ха. Ялтан тухса тарас шухăшлă мар вăл. Совхоз директорĕ патне тухса вĕçтерчĕ, ыранах ĕçе пуçăнасшăн.
Хĕрсем Уçăп пирки часах манчĕç. Матиç район центрĕнче кĕнеке лавккинче тĕл пулнă путишле салтак пирки юмах ячĕ.
— Теви, тĕрĕс-и? Қулса вилмелле: эпĕ хăш ял хĕрĕ пирки ăна такам персе янă.
— Мĕншĕн апла шутлан?— ыйтрĕ Теви Матиçрен.
— Ара, вăл «Эпĕ — Қивçырмасем» терĕ-çке.
— Мерекkелле япала ку сан.
— Тĕрĕссипе каласан, эпĕ ăна пĕрре курсах юратрăм.

Илет пулсан кутăнланса тăмăп, качча сикетĕп те тухатăп.

Çуллахи çанталăк çутă хĕвел айĕнче çӳрекен этеме тем те пĕр парнелесе савăнтарать. Ăшă кунĕ хăй мĕне тăрать, тата вăл — вăрăм, вăрăм! Ир пуçласа каçчен тем те пĕр тăватăн, таçта та çитетĕн, такампа та курса калаçатăн. Тепĕр чух чуна хĕпĕртеттерекен çынна ик-виç хут тĕл пулатăн. Тав тăватăн вара çутă тĕнчене, ăраскала.

Хĕвелĕ анăçа шуса çитеймест-ха.

Матиçпе Теви ав фермăри ĕçе тума çеç мар, килĕнчи пахча çимĕçне те шăварма ĕлкĕрчĕç. Кун çути çаплах сӳнмерĕ-ха.

Кĕвентепе пушă витре çакса Матиç пахча хыçĕнчи çырмана анчĕ: вăл пушаннă каткине тепĕр кун валли шыв тултарса хурасшăн.

Çырма тĕпĕнче çăл шывне пухăнма пура ярсах тарăн пусă чавнă. Тĕлĕнмелле, шывĕ нихăçан та хухмасть. Ку тарасаран пахча çимĕç валли кăна ăсаççĕ. Çавăнпа та хупăлчи те, ятарласа уйăрнă витри те çук ун. Алли пыран хăй витрипе ăсать. Вăрăм авăрлă çекĕлĕ пур вара, ялан тараса сакки çинче выртать.

Хĕр пĕр витрине çекĕллерĕ. Вăл, пушăскер, тараса пурине леккелесе шăнкăр-шанкăр! сас туса анать. Унччен те пулмарĕ, çупса янăн, витре çат! пырса çапăнчĕ шыв питне. Унтан чăмпăлт! турĕ. Эппин, витре шывпа тулчĕ. Туртса кăлармалла. Матиç çекĕл аврине çĕкленĕ май аллисене ылмаштара-ылмаштара тытать. Ĕнтĕ витре тараса саккипе шайлашнăччĕ. Сасартăк илтех кайрĕ:

— Ак ăçта эсĕ, таркăн! Тинех тупрăм.

Пуçне çĕклесе пăхрĕ те Матиç паçăр район центрĕнчи кĕнеке лавккинче тĕл пулнă салтака курах кайрĕ. Вăл шартах сикрĕ. Аллинчи çекĕлĕ вĕçерĕнчĕ те тулли витри тарасана чăмрĕ.

— Мĕн хăратса çӳретĕр эсир? — йĕрсе ярас патнех çитрĕ Матиç. — Витре путрĕ ав. Халĕ мĕнле кăлармалла ĕнтĕ ăна? Витресĕр мана анне киле кĕртмест.

— Питĕ лайăх, — кулкаларĕ салтак. — Манпа пыран. Эпĕ сана хам киле тараватпах кĕртетĕп, Матиç пикем.

— Ман ята ăçтан пĕлетĕр?

— Теви пĕрле çаптарнă сăн ӳкерчĕкĕсене кăтартрĕ. «Ку манăн чи çывăх акамăм Матиç», — терĕ. Эп палласа илтĕм те тӳрех йĕрӳ çине ӳкрĕм.

— Аха, тавçăртăм, эсир — Тевисен пускилĕ Уçăп.

— Тĕрĕс. Эпĕ — Осип Кĕрпетев. Пĕчĕккĕ чух мана анне Уçка тесе те чĕннĕ.

Каччă путнă витрене тараса тĕпĕнчен çекĕлпех туртса кăларчĕ.

Ырă мар-и ĕнтĕ çуллахи вăрăм-вăрăм кун. Телейлисем иккĕмĕш хут тĕл пулчĕç. Тур калашле — виççĕ кирлĕ. Вăл та пурнăçланчĕ касхи вăйăра. Касхи вăйăсем пĕрре мар ырă сунчĕç мăшăр кăвакарчăн пек уйăрăлаймасăр çÿрекен каччăпа хĕре.

Икĕ эрне иртсен туй кĕрлерĕ Уçăппа Матиçĕн. Пĕтĕм ял-йыш пухăнчĕ çамрăк мăшăра пил пама. Пĕр çын та юлмарĕ-тĕр ташламасăр, юрламасăр. Ахаль каламаççĕ ĕнтĕ туй, уяв тенĕ çĕрте тукмак та йăваланать, выртан каска та хускалать тесе.

Килĕштерсе пурăнаççĕ вĕсем. Арăмĕн сăмахĕнчен тухмасть Уçăп. Сухан куçа чĕпелет, ачашлăх — чуна. Арăмĕ юратса ачашланипе мĕнле упăшка киленмĕ?

Уçăп услап çын мар, совхозра тракторпа ĕçлесе часах чапа тухрĕ. Пурăнсан-пурăнсан хăйне валли чул çурт та лартрĕ.

Кăмăллă, ĕçчен Матиç ырă упăшки çумĕнче йĕс сăмавар пек çуталса, йăл-йăл кулса çеç çÿрет. Тупата, суйласа тупма пĕлмелле унашкал хĕрарăма.

## 6

Теви те каччă тухрĕ. Анчах хăйĕн савнине мар, урăххине. Вăл Лавруш çартан таврăнасса кĕтмерĕ çав.

...Питĕ ăшталаннăччĕ ун чух Теви кукамăшĕ: кăмакана çăкăр хыватчĕ.

— Сывлăх сунатăп, Няппи вăртах! Килте-и эсĕ? — кĕтмен çĕртен янăрарĕ пÿртре хĕрарăм сасси.

— Эй, çырлах! Килтех-ха, килте, — терĕ кил хуçи хĕрарăмĕ кăмака çăварне васкаса питлĕхпе хупнă май. Вара çăнăхлă аллисене саппун аркипе шăлкаласа тĕпел кукринчен тухрĕ. Урай варринче пуçне чечеклĕ шурă тутăр çыхнă хĕрарăм тăра парать. Тÿрех паллайман пирки тимлесе пăхрĕ Няппи. Хĕрарăмĕ — леш касри кÿл хĕрринчи Чĕлпи. «Мĕн çăмăлпа çÿрет-ши ку хĕрарăм?» — тĕлĕнчĕ Теви кукамăшĕ.

— Няппи вăртах, эсĕ пĕртте ан пăшăрхан эпĕ çапла сасартăк сан умна килсе тăнăшăн, — ал тытрĕ Чĕлпи кил хуçине. — Мĕн...

— Пĕрин теприн патне кĕрсе тухмаллах ĕнтĕ, çавăнпа эпир — çынсем. Э, ăшшă, — текелерĕ Няппи.

— Ия ара. Ах, чĕлхÿ-çăвару — ытла пылак сан, Няппи

вăртах, кăмăлу ылтăн,— сăмахĕпе çу юхтарма тытăнчĕ Чĕлпи. Вара элче куçĕпе ун-кун пăхкаларĕ те ыйтрĕ.— Аçта-ха сан мăнуку?

— Ĕçре. Кунĕпе фермăра тăрмашать. Э, ăшшă.

— Çамрăкăн ĕçре пулни паха, Няппи вăртах, эпĕ санпа питĕ кирлĕ ĕç çинчен пуплеме килтĕм.

— Эй, çырлах. Темле ĕç ĕнтĕ?

— Малтан кăшт çуттипе çăвара чўхер пулĕ, чĕлхе çемçелме.— Чĕлпи сĕтел çине пĕр кĕленче эрех кăларса лартрĕ сумкинчен. Кунпа çеç çырлахмарĕ, тата аш татăкĕсем, çур теçетке çăмарта, тăпăрч пўремечи туртса кăларчĕ. Черккине те манман. Черккисем пысăк, çур стаканпа шайлашаççĕ.

Кил хуçи хайхи хăнан шухăшне пĕлмен пирки сăмах хушма пĕлмесĕр урай варринче тымар янăн тăрать. Ана лешĕ эрех тултарнă черкке тыттарчĕ.

— Тав сана, Няппи вăртах,— чанк! чанклаттарчĕ вăл черккипе кил хуçи аллинчи черккене тивертсе.

— Мĕн ятпа ĕçмелле?— астивме тăхтарĕ Теви кукамăшĕ.

— Халех пĕлĕн,— янклаттарчĕ эрехне килнĕ хĕрарăм. Вара черкке тĕпне çавăрса кăтартрĕ.— Ман пек ĕçмелле.

Сĕтел хушшинче Чĕлпи ламран лама сарăлнă сăмахюмаха хускатрĕ:

— Мĕн... Няппи вăртах, сирĕн сутма ўстернĕ тына пăру пур терĕç. Ана туянас шухăшпа санăн алăк урати урлă ура ярса пусрăм.

— Эс, Чĕлпи, евчĕ-мĕн мар пулĕ те?— кулса ячĕ Теви кукамăшĕ.

— Ия ара. Эпĕ — евчĕ.

— Кам валли çураçасшăн эсĕ ман мăнукăма? Вăл, ăшшă, палламас та пулĕ йĕкĕтне.

— Каччи! Ах, чаплăскер! Хамăр ялсемех — кўл хĕрринчи Микуш ывăлĕ — Патти! Вăл мĕн, ыттисем пек колхозник мар, хулара пурăнать, машинăпа пĕр пуçлăха лартса çўрет. Ана ним енĕпе те тиркеймĕн. Уйăхсерен шалу илет, укçаран чухăн мар.

Теви кукамăшĕ куркаланă-ха Паттие. Сăнĕпе, чăнах, ăна хурлама çук. Ырă сунса килнĕ евче вăл тараваt пăхса яма шутларĕ. Сĕтел çине хăй те ĕçмелли-çимелли лартрĕ. Калаçнă май шухăшне пĕлтерчĕ.

— Çамрăксен хăйсен ирĕкĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне юратсан эпĕ хирĕçлеместĕп. Э, ăшшă.

— Няппи вăртах, эпир ĕлĕк юратăва пăхăнман. Юрату хыççăн кайсан пурăнăç хĕсĕнет. Патти пек каччă çураçнă-

шăн савăнмалла сирĕн. Ашшĕ-амăшĕ мĕнле çирĕп пурăнать. Мăнукна ăс пар. Хирĕçлесен-тусан — ӳкĕтле.

Нумай шыв юхтарчĕ Чĕлпи. Юлашкинчен хăтана килесси пирки те пĕлтерчĕ.

— Ыран виççĕн тан: Патти, ашшĕ, эпĕ — килетпĕр,— хытарса хăварчĕ евчĕ тухса каяс умĕн.

Килне Теви каç кӳлĕм таврăнчĕ. Кукамăшĕ ун умĕнче çăмарта тăвас чăх пек кускалать. Пит-куçĕнче хаваслăх палли те пур пек. Çавăнтах хашлатса сывлать. «Мĕн пулнă? Кам шуйлантарнă ăна?»— чăр пăхрĕ Теви кукамăшне ун кăмăлне тавçăрма пикенсе. Апла пулин те хăй кăсăкланнине пур пĕрех кăтартмарĕ. Нумая пымĕ, кукамăш чĕлхи кăтăкланса тăнине сисет. Тĕрĕсех. Ак карчăк Тевие çурăмĕнчен лăпка-лăпка кĕллине пуçларĕ:

— Шел, аçу-аннӳсĕр, пĕччен кĕтсе илетĕп çак куна...

— Мĕнле куна?— ыйтрĕ Теви.

— Э, ăшшă. Паян, ара, евчĕ килсе кайрĕ. Шăкăрттан Микиш ывăлĕ Патти янă. Ыран çураçма килеççĕ.

— Патти? Ай-уй, эпĕ вăл çынна виççĕ выртса пĕрре тĕлленмен! Эпĕ ăна юратмастăп. Хапхана питĕр, ан кӳрт никама та.

— Чим-ха. Аплах йĕркесĕр пулар мар. Пуплер юнашар ларса. Çыннисем начарскерсем мар. Паттийĕ чипер, йĕркеллĕ. Урам тăрăх алхасса çӳремест.

— Вăл хулара пурăнать.

— Уншăн тиркес мар, çиес çăкăрĕ унта-тăр. Шалу илет, укçаллă çын.

— Кукамай, санăн хăвăн талаю: шалу, укçа, çăкăр... Кам халь укçасăр пурăнать? Хапхана питĕрнĕ пул.

— Хапхине питĕрмĕп-ха,— терĕ кукамăшĕ.— Хăтана килни чапна ӳстерет. Э, ăшшă.

Матиç качча кайнă хыççăн Тевие тунсăх пусрĕ. Вăл ниçта та çӳремест. Çывăх туссăр кирек ăçта та кичем. Çĕр каç Теви теме сиссе вăййа тухрĕ. Чăнах, ун çывăхĕнче шав Патти явăнчĕ. Çутă уйăх кĕтессине катса илнĕ пек хаваслă хăй. Сăнĕ-пичĕ пур ун. Пĕвĕ те яштака. Халичченхиллех — яка. Илеме ăнланать ахăр: çийĕнче куçĕ тĕслех кăвак костюм. Шурă кĕпе çийĕн сарлака чакăр галстук çакнă.

— Отпускра-ха эпĕ. Авланасшăн. Аттепе анне мăнук ыйтса хăшкăлтарчĕç,— пакăлтатрĕ вăл те шӳтлесе, те чăнласа.

— Тахçанах авланмалла сан. Çара кайса килнĕ. Аçу-аннӳ çурчĕ чаплă.

— Мĕн тума кирлĕ ăна ялти çурчĕ: вăл хула хĕрне

качча илет-тĕр. Çапла-и?— çыпçăнаççĕ ăна вăйăри çамрăк хĕрсем.

— Çук, эп юратаканни ялта пурăнать,— каласа хучĕ Патти.— Çакăнта ларакан хĕрсенчен пĕрин патне ыран хăтана пыратăп.

— Ман пата евчĕ яр!

— Савăнсах сана качча тухатăп!— ахăлтатрĕç хĕрсем.

— Кĕтетĕп!— лаплаттарса хучĕ Теви те чĕнмесĕр ларасран шӳтлесе, Патти хăй патне хăтана пырасси асра та çук хăйĕн.

Кукамăш калаçăвĕ Тевие шухăша ячĕ. Мĕн тумалла? Тус-юлташĕ патне чупрĕ Теви çĕнĕ хыпарпа.

— Ăс пар, Матиç,— тилмĕрчĕ вăл ăна.

— Ку ĕçре канаш пама питĕ йывăр. Эпĕ Уçăпа никам сăмахне итлемесĕрех качча тухрăм. Мĕнле килĕштерсе пурăнатпăр! Çын ăмсанмалла!

— Патти темле çын вăл: те путсĕр кăмăллă, те йăваш? Пĕлместĕп. Эпир пĕрле вĕренмен, варлиллĕ пулса та çӳремен,— пăшăрханса калаçать Теви.

— Эпир те Уçăппа савниленме ĕлкĕрейменччĕ. Пĕрпĕрне курнă-курман туй турăмăр. Чунтан юрататпăр!— хастарланать Матиç хăй упăшкипе киленсе.— Теви, эсĕ Паттин пуç тӳпине пăх-ха.

— Мĕн тума?

— Енчен те ун çӳç çаврашки хĕвеле хирĕç пулсан вăл усал çын, хĕвеле май тăк — кунĕ çын. Ман Уçăпăн çӳç çаврашки — хĕвеле май.

— Эй санпа, сӳпĕлтипе...

— Сана ырă сĕнӳ параççĕ, эсĕ пур — мăрт-март.

Теви кӳренмерĕ тус-юлташне. Пĕлет-çке-ха: Матиç кирек хăçан та ваттисен сăмахне ăша хывать.

— Сан, мисс, савни пур. Салтака пăрахни киревсĕр япала,— Матиçĕн кăмрăк пек хура куçĕсем çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрелле тинкерчĕç. Унта Лавруш тăрать тейĕн.

— Итлемĕп кукамая,— хăйпе хăй калаçрĕ Теви çул çинче.— Эпĕ Лавруша сăмах панă, ăнах кĕтетĕп. Савнине суякан ыр курмĕ.

Килте урăх самана. Кукамăшĕ ĕçе мăнукĕнчен вăрттăн йăлтах хăй тĕллĕн татнă. Вăл Тевие качча парас куна та палăртнă, туй пулассине тăванĕ-пĕтенне те, кӳрши-аршине те систернĕ. Пĕтĕм ял Тевипе Паттин пулас туйĕ çинчен пуплет.

— Мĕншĕн намăса ятăн, мĕншĕн ята çĕртрĕн?— терĕ Теви хĕрсех эрех-сăра тăвакан кукамăшне.

— Кирлĕ мара ан калаç. Пĕтĕм хĕр ăмсанать сана.

Паттипе савӑнса пурӑнӑн. Вӑл ашшӗ-амӑшӗн пӗртен-пӗр ывӑлӗ. Лавруш сана мӑшӑр мар. Ванихерӗн кӑткӑ пек ҫемӗйинче тар юхтарса хӑшкӑлӑн,— тутине пӑркаларӗ Няппи карчӑк хӑйне мӑнукӗн пурнӑҫне витӗр пӗлекен ӑслӑ ҫын пек кӑтартса.— Тулькка мана пӑхӑн. Хӑвна кам ӳстернине пӗрехмай асра тыт, ӑна нимпе те ан кӳрентер, пил илме тӑрӑш кукамунтан.

Теви пуҫне ҫӗклеймерӗ.

Туй хыҫҫӑн пӗр-ик кунтан урампа иртсе пыракан ҫӗнӗ ҫынна Ванихер инке тытса чарчӗ.

— Мӗн ҫырас ӗнтӗ Лавруш ывӑлӑма? Вӑл сана шутсӑр юрататчӗ, шанатчӗ.

— Кукамай сӑмахӗнчен тухаймарӑм,— Лавруш амӑшӗн куҫӗнчен пӑхаймарӗ Теви.

Каларҫу ҫыхӑнмарӗ вӗсен. Вара иккӗш те салхуллӑн сыв пуллашрӗҫ.

## 7

Фермӑпа ял хушшинчи ҫул ҫинче икӗ тус-юлташ утаҫҫӗ. Кунӗ янкӑр уяр. Сывлӑш уҫӑ. Уй-хир симӗссӗн-саррӑн курӑнать. Кӑмӑла ҫӗклентерет тавралӑх. Матиҫ тӳсеймерӗ, юрласа ячӗ.

Халиччен шурӑ хурӑн кам каснӑ?
Ывӑнтарать сылтӑм хула.
Халиччен савнӑ туспа кам пурӑннӑ?
Ывӑнтарать иккен чӗлхене.

— Уҫӑп пирки юрлатӑн-и эс?— ыйтрӗ Теви тусӗ ҫине чеен пӑхса.

— Эх, Теви, эпӗ питӗ телейлӗ. Уҫӑп тӗлӗнмелле ырӑ упӑшка. Эпир унпа калаҫса тӑранаймастпӑр. Пирӗн сӑмах-юмах йӑлт килӗшсе пырать. Ахальтен умлӑ-хыҫлӑ икӗ ача тӑвӑп-и?

Укӑлча хапхи витӗр кӗчӗҫ. Теви юлташӗнчен хӑпаймарӗ. Лешӗ ун аллине ҫатӑрласа тытнӑ та вӗҫертмест, ӳкӗтлет:

— Пирӗн пата кӗмесӗр иртсе кайсан анне киле кӗртмест мана. Тата эсӗ манӑн пӗчӗккине курманни хӑҫан?

— Алеша тытса лутӑркассишӗнех иртсе каяймастӑп ӗнтӗ сирӗн тӗлтен,— ачана халех аллине илнӗ пек савӑнӑҫлӑн каларӗ Теви.

Вӗсем тӳрех сылтӑмалла пӑрӑнчӗҫ. Куҫ умӗнче ҫеремлӗ ҫӗнӗ урам. Ҫурчӗсем те вӗр ҫӗнӗ. Ашшӗ-амӑшӗ килӗнчен уйӑрӑлса тухнисем пурӑнаҫҫӗ кунта. Виҫӗ кил урлӑ ав

пысăк пӳрт йăтăнса ларать. Матиçсен вăл. Пурăнма куçни нумаях та пулмасть-ха. Çĕнĕ çурт ĕçкинче урай хăми авăниччен ташланăччĕ. Хитре çурт. Шурă кирпĕчрен купаланă. Хапха юписем, пӳрт умĕсем — эрешлĕ.

Қантăкран пăхса тăракан Матиç амăшĕ, Праççи аппа, вĕсене асăрхарĕ те алкум вĕçне чупса тухрĕ.

— Қилях, килях, Теви хĕрĕм,— сывлăх сунса алă тытрĕ ăна.— Қукаму, Няппи инке, сĕм пĕччен пурăнать, сывлăхĕ чаплах мар, мăнтарăн. Мĕнлерех пурăнать-ши ĕнтĕ? Чĕре хуйхи вăя сăхать теççĕ...

— Хăвăр мĕнле чупатăр, Праççи аппа?— ыйтрĕ Теви.— Сирĕн кăмăлăр темле хуçăк пек?

— Усăсăр кун кунлатăп. Ĕçсĕр пурăнни йывăр çĕклем вăл, хĕрĕм. Мăнукăмсемпе çеç аппаланатăп. Совхоза тухаймастăп. Питĕ кичем килте ларма. Çавăншăн хуйхăратăп куллен.

Пӳрте кĕчĕç. Ачасем амăшне сырăнса илессе кĕтнĕччĕ Теви. Қăлăхах. Ывăлĕ çывăрать. Хĕр ачи, Аля, пачах никама та асăрхамарĕ. Вăл тăрмашсах урай çăвать-мĕн.

— Ах тур, çакна!— икĕ пĕççине шарт! çапрĕ Праççи.— Урайне мĕнле кӳллентернĕ. Тупата, ластăкне тытса илĕттĕм те çупкă çитерĕттĕм, юрамасть, ами, ӳссен юлхав пулать.

— Ĕçе ерĕшнĕшĕн мухтамалла ăна,— калаçăва хутшăнчĕ Теви.— Хăвăр пек, ĕçе хавас çын ĕнтĕ вăл.

— Хавасĕ-мĕнĕ, çӳрет çапла ĕç патĕнче тĕккеленсе.

Теви çуркунне те килнĕччĕ кунта. Ун чухне пĕр мыскара илтнĕччĕ вăл. Праççи аппа каласа панăччĕ ăна.

...Алкумĕнче, кĕтесре, сарлака та лутра хуп пуракра, улăмран çавăрнă йăвара, чăх пусма ларнă. Пĕррехинче Праççи аппа мăнукĕ Аля, урамран выляса таврăннăскер, алкумĕнче илтех каять шимп-шимп-шимп! шимплетнине. Йăвара ларакан чăпаркка айĕнче чĕвĕлтетеççĕ-мĕн. Унта чĕмсĕр çăмартасем кăначчĕ-çке. Вĕсене чăххи тулă пĕрчи сăхма ансан Аля темиçе хут та курнăччĕ. Хĕр ачан çав тери пĕлес, курас килет: теттесем мар-ши чăх айĕнче? Вăл аллине тăсать, ăçта унта! Чăххи яхăнне те ямасть. Нумай шухăшласа тămасть Аля, майне часах тупать. Вăл чăлана кĕрет те михĕрен тулă ывăçласа тухать.

— Чип-чип-чип!— йыхăрать вăл туллине урайне сапнă май. Чăпаркка тӳсеймест. Йăпăшт сиксе анать урайне. Тăк-тăк-тăк! тытăнать сăхма тутлă тулă пĕрчисене.

Тĕлĕнтермĕш, йăвара кăпăшка та сарă çăмхасем! Вĕсем чĕрĕ иккен: куçĕсем те, сăмсисем те пур. Хăш-пĕрисем çурмаран çурăлнă çăмарта хуппи ăшне кĕрсе ӳкнĕ те

тухасшăн тапаçланаççĕ. Шимп-шимп! теççĕ. Ав камсем асапланаççĕ иккен кунта. Аля хĕрхенчĕ мĕскĕнсене. Чăпаркка вĕсене халех таптаса лапчăтма пултарать. Хĕр ача чĕпĕсене кашнинех тыта-тыта урайне ячĕ. Лешсем чупма хăнăхман. Вĕсен урисем тăн-тăн мар, шăрпăк пек çинçе. Чĕпсем каялла чакаççĕ-чакаççĕ те хӳри çине лак! кайса лараççĕ.

Аля пĕр чĕппине пӳрте илсе кĕчĕ.

— Кукамай, кур-ха: ман ывăçра мĕн пур? Чăх йăвинчен илтĕм,— пĕлтерчĕ хĕр ача.

— Ах тур!— хыпăнса ӳкрĕ кукамăшĕ.— Ма тиврĕн?

Аля кукамăшне илтмĕше хывса чĕппе пит çăмарти çумне чăмăртать, ачашласа чуп тăвать.

— Ан чăмăрта! Çунатне хуçăн е урине амантăн!— чупса пычĕ хĕр ача патне кукамăшĕ.— Кӳр чĕппе!

— Памастăп!— çухăрать хĕр ача.— Эпĕ ăна юратап, унпа вылятăп!

Кукамăшĕ хĕр ачана алкумне тĕлкĕштерсе илсе тухрĕ.

— Чĕпĕсем йăлтах урайĕнче тĕнкĕлтетеççĕ. Аран пуçтарса пĕтертĕм. Урайне тăклаттарса сăхкаланă пулсан сăмсисем кукăрăлаççĕ ĕнтĕ. Ненай, кăçал автан яшки çисе курайăпăр-и?— кулянать Матиç амăшĕ.

Шуйланнă чăххи вĕçĕмсĕр кăтиклет. Ахăртнех, Праççи аппана ятлать пулĕ. Чĕпписене тытнишĕн, ав пăх-ха, ăна аллинчен сăхма пикенет. Юлашкинчен ăна та çунаттинчен çĕклесе йăвана лартрĕ хуçи. Майлашăнать чăх. Вăл чĕппisene сăмсипе тĕксе çунатти айне чикет. Пур пĕрех лăпланса çитеймест, путех Аля аллинчи чĕппе курать пулĕ.

— Хĕрĕм, чĕппе кукамуна пар, йăвана хутăр. Ун çиес килет-тĕр,— ӳкĕтлет Матиç Альăна.

— Мĕн çиет унта?— кăсăкланать ача.

— Чĕпĕсем амăшĕн мамăкне çисе папкаланаççĕ.

Аля ирĕксĕрех чĕппе кукамăшне тыттарчĕ.

* * *

— Чĕпĕсем ăçта халь сан?— чăх мыскарине аса илсе ыйтрĕ Теви урай çăвакан Альăран.

— Эпĕ вĕсемпе хăшкăлатăп...

— Ак тата! Мĕншĕн?

— Вĕсем пĕрершерĕн сапаланса çӳреççĕ. Амăшне итлемеççĕ...

Праççи аппа Тевие хăналас тесе сĕтел çине тĕрлĕ çимĕç лартрĕ. Нӳхрепрен чĕреспе сăра ăсса тухрĕ.

Тав туса пĕрер стакан ĕçрĕç.

— Ман Матиç умлă-хыçлă икĕ ача çуратрĕ,— терĕ Праççи аппа. Теви тӳрех ăнланаймарĕ-ха ун шухăшне: те ырлать лешĕ хĕрне, те хурлать.— Эсĕ, Теви, мĕн...— тутине чăпăртаттарса илчĕ хайхи. Вара çын суранĕ çине тăвар пĕрчи ӳкесрен асăрханнăн çăварне тăп хупрĕ, анчах чĕлхи вĕçне килнĕ сăмахне вĕçертмесĕр тӳсеймерĕ:— Хырăм çĕклесе чăрманасшăн мар няк. Няппи инкене шутсăр кирлĕччĕ ĕнтĕ пĕрер мăнук.

— Ах, Праççи аппа, ача тăвасси алса хывасси мар теççĕ,— пуçĕнчи тутăрне юсанçи турĕ Теви.— Тата хăвăрах куратăр: ман упăшка килте мар, хулара пурăнать. Тен, вăл чун ăшшине майрасене валеçет?

Ĕçсе çисен Матиç Тевие юлашки вăхăтра туяннă япалисене кăтартрĕ. Илеме ăнланаççĕ-мĕн Матиçпе Уçăп. Қашни пӳлĕме хăйне май хăтлăх кӳнĕ. Çывăрмалли пӳлĕмре сарлака йывăç кравать, пысăк трюмо, урайĕнче — эрешлĕ палас, чӳречисене маччаран пуçласа урай таранах шурă чĕнтĕр тăрăхĕсем карнă. Пĕр енчи стена çумĕнче — диван, шифоньер. Залра чи малтан куçа курăнаканни — пысăк телевизор, тĕрлĕ тĕспе кăтартаканни. Хаçат-журнал сĕтелĕ пур, унăн икĕ енче — икĕ кресло. Қантăк умĕнче пальма ӳсет, йĕри-тавра — пукансем.

Ачасем валли пӳлĕм расна.

— Матиç, ытла пуян пурăнан,— мухтамасăр тӳсеймерĕ Теви.— Çĕлен мăйраки кĕнĕ пуль сана?

— Чим-ха, ман Уçăп мар-ши çĕлен мăйраки? Тупата, çав!— Матиç тусне ыталарĕ. Ахăлтатрĕç вара иккĕш пĕрле. Уйрăлас вăхăт çитрĕ. Туссем урама тухрĕç.

— Ыран Ванихер инкене илме каятпăр,— терĕ Матиç ытахальтен. Ара, Теви пĕлет-çке-ха кун пирки.

Çапах та Теви ыйтанçи турĕ:

— Миçе сехетре каятпăр?

— Вун иккĕре тесе калаçса татăлтăмăр-иç. Совхоз директорĕ икĕ машина парать.

## 8

Теви килне кайнă чух пĕр кана Матиç пурнăçĕ çинчен шухăшласа пычĕ: «Ман пек мар, телейлĕ вăл».

Қачча тухсан Теви упăшкипе ыррăн нумай та пурăнаймарĕ, вĕсен хушшипе хура кушак иртрĕ.

... Фермăран кăнтăр апатне килнĕ çĕнĕ кин алкум вĕçĕнче урай паласне тасатса тăратчĕ. Çавăн чух хапха

уҫӑлчӗ те, Патти амӑшӗ картишне пушмак пӑру ҫаватса кӗчӗ.

— Ҫу каҫипе шӑллӑм патӗнче вӑрманта пурӑннӑскере киле илсе килтӗм-ха,— терӗ пӑянамӑшӗ кантрине пӑру мӑйӗнчен салтса илнӗ май.

Чӑр пӑхрӗ Теви пӑру ҫине. Хӑй те сисмерӗ, ахлатса ячӗ.

— Майрапи, Майрапи!— йыхӑрмасӑр тӳсеймерӗ пӑрӑва вӑл.— Эсӗ-ҫке ку, эсӗ! Эсӗ!— Теви ӑна мӑйӗнчен ыталарӗ.

— Мӗн хӑтланатӑн эсӗ, кин?— кӑсӑкланчӗ пӑянамӑшӗ. Хӑйӗн сасси чӗтренсе тухрӗ. Вӑл шикленчӗ ахӑртнех.

Теви ним те шарламарӗ, айккинелле пӑрӑнса утрӗ. Хӑрарӗ тӳрех хӑй шухӑшне персе яма. «Тем пулас, тем килес пур, пӑрӑва каллех ӑсатӗҫ таҫта. Ҫавах, Майрапиех. Паллах, пӑрӑвӗ ӳснӗ, анчах куҫ хӑрпӑкӗ малтанхи пекех: ҫӳлтисем йӑм хура, аялтисем — шап-шурӑ. Ҫӗлеткин тӗсӗ те улшӑнман: хӗрлӗ ҫинче — шурӑ саплӑксем».

Апат ҫикелесен Теви тӳрех ялти профсоюз комитечӗн председателӗ патне тухса утрӗ.

Ҫак пӑру Теви ӗҫлеме пуҫласанах ҫухалчӗ.

... Вӑтам шкул пӗтерсен килтех юлчӗ Теви. Института вӗренме каяс ӗмӗчӗ сӳнчӗ унӑн. Яланлӑхах-и, вӑхӑтлӑха ҫеҫ-и — хӑй те уҫӑмлӑ пӗлмест. Кулянмарӗ вӑл кукамӑшӗ ҫумӗнчен хӑпайманшӑн: ара, унӑн ҫывӑх тусӗсем те ялтах. Вӗсенчен чылайӑшӗ совхозра ӗҫ тупрӗ. Матиҫ ӗне сӑвать, Лавруш — шофер (правине шкултах панӑччӗ ӑна). Анчах каччӑ нумаях ӗҫлеймерӗ, ҫара каймалла пулчӗ. Теви те тус-тантӑшӗсенчен юласшӑн марччӗ, кукамӑш карта ларт- ни чӑрмантарчӗ ӑна.

— Паян-ыран каяймӑн-ха совхоза ӗҫлеме,— мӑнукне хӑюсӑррӑн хирӗҫлерӗ карчӑк.

— Мӗншӗн?— кӑмӑлӗ хуҫӑлчӗ Тевин.

— Мунча кӑмакине ватса ҫӗнӗрен купалама шутлатӑп. Пӗччен йывӑр, пулӑшӑн мана.

Хӗр ҫатӑртатмарӗ. Ватӑ ҫынна хӗрхенмелле. Тепӗр темиҫе кунтан ӗҫе тытӑнчӗҫ. Тӑмпа сӗрсе ҫирӗплетнӗ кӑмакана пӑсасси пӗрре те ҫӑмӑл мар иккен. Ҫашни кирпӗчне мӑлатукпа шаккаса хӑйпӑтмалла, ӑна шӑлса тасатас пулать. Юрӑхсӑррисене, тӗпренсе ваннисене, витрене тултарса кӑларса тӑкмалла. Тусан тӗрлетет тата! Куҫ уҫма хӗн. Сывлӑш пӳлӗнет.

Маттур ҫын Теви кукамӑшӗ. Ҫӗнӗ кӑмакине те хӑех купаларӗ. Халӗ ӗнтӗ вӗр ҫӗнӗ кӑмака валли ҫӗнӗ чул кирлӗ. Ҫивви шӗлтӗркенӗ, ӑшши параймасть. Ҫамрӑкпа ватӑ хӑрӑк витре йӑтса утрӗҫ ҫырма тӑрӑх. Мунча валли мӗнле чул юрӑхлине кукамӑш ҫеҫ чухлать.

— Хăнăх. Çакнашкал чул катăкĕсене çеç ил,— вĕрентет ватти.— Пурăнан пурнăçра пĕлни çăкăр ыйтмĕ.

Чул катăкĕ пурте пĕрех пек туйăнать Тевие. Сăнасарах пăхсан апла мар иккен. Кукамăш аллинчи чул чăмăркка, кĕтеслĕ-кĕтеслĕ.

Чул тени ытла йывăр çав. Чул тултарнă витрене йăтса Теви шутсăрах ывăнчĕ, уйрăмах алă сыпписем тăпăлса тухасла ыратрĕç.

Тĕплĕ тунă ĕç — чун савăнтармăш. Мунча кăмаки ытла та шеп. Хутса пултарсан ăшши такама та çитмелле. Кукамăш мунча чулĕ çине шыв вырăнне сăра сапрĕ. Тутлă шăршă сăмсана кăтăклать. Мунча кĕме пынă Матиç чунтан рехетленчĕ.

Ик-виç кун иртрĕ.

— Халĕ ĕнтĕ фермăна кай,— канаш пачĕ мăнукне кукамăшĕ.

Теви вĕçтерчĕ. Ферма ял тулашĕнче, юхан шыв хĕрринче. Кантурĕ те унтах.

Заведующи патне кĕме хăяймасăр алăк умĕнче чылайччен тăпăртатса тăчĕ Теви.

Темлерен алăк уçăлчĕ те, алкумне ферма заведующийĕ Михаил Андреевич тухрĕ.

— Кукăр-макăр, эсĕ-çке ку, Теви! Ма кĕместĕн? Ха, питĕ сăлпăркка хĕр-çке эсĕ,— шутсăр шапăлтатрĕ этем.— Мĕнле ыйтупаччĕ?

— Ĕне сума кĕресшĕн,— куçран пăхаймарĕ Теви.

— Кукăр-макăр, пирĕн дояркăсем çителĕклĕ. Мĕншĕн халь тин килтĕн? Хĕрсем шкул пĕтерсенех ĕçе кӳлĕнчĕç.

Теви кайма тăчĕ.

— Пастай, кукăр-макăр!— чарчĕ хĕре Михаил Андреевич. Унтан сулахай аллине Теви хул пуççийĕ çине хучĕ те шухăша каянçи турĕ. Сылтăм алă пӳрнисемпе хăйĕн мăйăхне якаткаларĕ.— Чим-ха, халь эпир ял-йышран пăру туянатпăр. Пире пăру пăхакан питĕ кирлĕ. Эсĕ шăп та шай юрăхлă çын пулассăн туйăнан. Килĕшетне?

— Хăçан тухмалла ĕçе?

— Хуть паянах, кукăр-макăр. Атя, халех илсе каям.

— Юрĕ,— сасси аран-аран тухрĕ Тевин заведующи сăмахне ĕненсех пĕтмен пирки.

Фермăна çитрĕç. Пĕр кĕтесри картара тутисемпе унта-кунта тĕккелесе çамрăк пăрусем çӳреççĕ.

— Пăрусене мĕнле пăхмаллине зоотехник сана йăлтах ăнлантарĕ. Шел, кукăр-макăр, вăл пенсие тухать. Ах, ĕçне лайăх пĕлекен çыннччĕ. Акă вăл хăй те килчĕ.

— Ҫаҫар та-ха, эпӗ ҫамрӑксене пурне те палласах ҫитерейместӗп. Ҫам хӗрӗ пултӑн-ха эсӗ? — пӗлме тӑрӑшрӗ зоотехник.

— Мана Теви тесе чӗнеҫҫӗ, — паллаштарчӗ хайпе хӗр, кампа пурӑннине те каларӗ.

— Ун пек иккен, — пуҫне сӗлтрӗ зоотехник. Ҫукамуна питӗ лайӑх паллатӑп. Ана пӑхнӑ пулсан эсӗ те ӗҫре ӳркенмӗн-ха. Пӑрусем ачасем пекех, вӗсене юратса пӑхмалла.

Ҫарта тулашӗнче тин ҫеҫ улӑхран ҫулса килнӗ утӑ купи сарӑлса выртать.

— Вӗтет те курӑкне таканасем ҫине хурса пар. Вӑхӑт ҫитнӗ, ҫиесшӗн ав епле макӑраҫҫӗ, — терӗ зоотехник.

Сӗт ӗҫтермелли пӑрусем те пур-мӗн.

Зоотехник эрне ытла Тевипе пӗрле ӗҫлерӗ. Унтан пӗрикӗ кун мӗнле ӗҫленине сӑнарӗ, ӑна канашсем пачӗ.

— Пултаран, — мухтарӗ юлашкинчен Тевие ватӑ зоотехник. — Малашне те ҫапла правур ӗҫлессе, пӑрусемпе тӳлек пуласса шанатӑп. Ҫамрӑк пӑрусем лайӑх алла лекни — пирӗншӗн пысӑк телей.

Тевие ку ӗҫ килӗшнӗҫемӗн килӗшет. Ун тавра вӑтӑр пӑру тӗпӗртетет. Тупата, ытла юратмалла вӗсене. Мӗнле юратмӑн. Хӑрӑк тункатасем мар-ҫке — чӗрӗ чунсем. Хӑйсене тутлӑ апат паракана, тӑрӑ шыв ӗҫтерекене — шурӑ халатлӑ хӗре — сасӑ парса макӑрса кӗтсе илеҫҫӗ. Тем тесен те сывлӑх сунса саламлаҫҫӗ пулӗ. Хырӑмӗ тутӑ чух шутсӑр хаваслӑ вӗсем пурте — выляҫҫӗ тӳсме ҫук.

Ҫӗтӳре пӗр тӗлӗнтермӗш тына пур. Вӑл хӑйсене пӑхакан хӗре хӑйӗн чи ҫывӑх тусӗ вырӑнне хурать-ши? Ҫартана пырса кӗрет ҫеҫ Теви, вӑл таҫти кӗтесрен чупса пырать те ун патне, ҫӳрет вара йытӑ пек хыҫран пӗр утӑм юлмасӑр.

Вырьӑхра та пур хитри. Вӑл ыттисенчен тӗреклӗрех. Ҫӑшт ҫӳллӗрех те. Яка тирӗнче талккӑшпех саплӑк: тӗллӗн-тӗллӗн шурӑ, тӗллӗн-тӗллӗн хӗрлӗ. Урисем тӑн-тӑн. Хӑмӑр пушмаккисем лак сӗрнӗн йӑлтӑртатаҫҫӗ. Нихӑҫан та тислӗкпе варланмасть вӑл. Суйласа утать, типӗ вырӑн тупса выртать пулӗ-и? Ҫуҫӗ пысӑк та кӑн-кӑвак. Ҫуҫ тӗкӗсем вӑрӑм-вӑрӑм. Ҫӳлти куҫ тӗкӗсем йӑмӑх хура, аялтисем — чӑлт шурӑ.

— Эй, тынашка, эсӗ ҫӳлти куҫ тӗкӗсене тушьпа хурататӑн-им? Ҫамран, хула майрисенчен вӗрентӗн-и? — пуплет Теви. Пӑрӑвӗ чӗнмест. Шел, калаҫма пӗлмест вӑл. — Сана ят паратӑп. Эсӗ — Майрапи!

Мӗн тейӗн, майӗпен тынашка хӑнӑхрӗ ҫав ята. Майрапи тесе чӗнсен таҫтан чупса пыракан пулчӗ. Теви ӑна кашнинчех тӑвар сапнӑ ҫӑкӑр татӑкӗ хыптаратчӗ.

Хыҫран Майрапи ҫеҫ мар, инкекӗ те ҫӳренӗ-мӗн. Теви ӑна сисмен. Пӗр ир, яланхи пекех, пӑрусене апат пама кӗчӗ вӑл картана. Хӑнӑхнӑ йӑлапа хӑйӗн тусне чӗнчӗ.

— Майрапи! Майрапи!— Анчах хӑйӗн патне чупса пыракан пӑру курӑнмарӗ.— Ӑҫта эсӗ, Майрапи?!

Теви нимӗн чухлӗ те пӑшӑрханмарӗ: ара, тынашка ҫухалма пултарассине асра та тытмасть.

«Ҫавлесе выртать-тӗр-ха тӑма ӳркенсе»,— шухӑшларӗ Теви таса таканасене апат хунӑ май.

Пӑрусем пӗр-пӗрне тӗрткелесех вырнаҫрӗҫ такана умне. Хӗр сӑнаса пӑхса тӑчӗ вӗсем хушшинче Майрапие курасшӑн. Пурте васкавлӑн тӗреҫҫӗ кӑна апата ҫӑвар туллин, анчах та саплӑклӑ пӑрушӗ ҫук.

«Чирлемен-ши вӑл?»— хыпӑнса ӳкрӗ тин Теви. Шырама тытӑнчӗ. Карта ҫумӗпе утрӗ. Васкать. Тен, пуҫӗ икӗ хӑма хушшине хӗсӗннӗ?

Тевие самантрах вӗри хум ҫапрӗ. Вӑл малалла ыткӑнчӗ. Пӑшӑрханни кӑлӑхах пулчӗ: пӑру инкек ытамӗнче курӑнмарӗ. Ӑҫти шӑтӑка путрӗ капла?

«Вӑрланӑ!— сехӗрленсе ӳкрӗ Теви сасартӑк.— Тен, Майрапие ҫеҫ мар, тата темиҫе пӑрӑва ҫавӑтса кайнӑ?»

Теви пӑрусем хушшине чӑмрӗ:

— Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ...— сасӑпах шутларӗ вӑл. Вӑтӑрӑшӗ те пур.

— «Улӑштарнӑ! Акӑ мӗн!»— йӗппе чикнӗн ҫӗнӗ шухӑш чунне ыраттарчӗ унӑнне.— Майрапи тӗреклӗччӗ. Ун пекки, маттурри, ушкӑнра — пӗрреччӗ. Мӗнле пӑру ярса хӑварнӑ-ши ун вырӑнне?— тӗсесе пӑхрӗ Теви.— Акӑ ҫакна... Кунашкал ырхан та пӗчӗк хура пӑру пулман. Ҫаҫхи хуралҫӑ пӗлме тивӗҫ.

Ҫаҫхи хуралҫӑра Чӗлпи инке ӗҫлет. Теви ун патне килне чупрӗ.

— Эй, ҫӳлти папай, ватӑлмалӑх кунра мӗн илтмелле?— лӑппи-лаппи хӑлаҫланса сӑх сӑхрӗ Чӗлпи. Ку ӗнтӗ Теви сӑмахӗ ӑна тӳсмелле мар кӳрентернине пӗлтерчӗ.— Ҫамрӑк пуҫупа ҫынсене ҫылӑха кӗртсе ан ҫӳре. Эпӗ таса чунлӑ хӗрарӑм. Совхоз выльӑхӗсене тӗплӗн хураллатӑп, ия ара.

Чӗлпипе вӗсне-хӗрне тухма хӗн.

Ҫак ӗҫӗн тупсӑмне тупма кам пулӑшӗ-ши? Зоотехник пенсире, ялтан тухса кайнӑ. Теви кун пирки заведующие тӳрех пӗлтерме хӑрарӗ. Унччен кашни киле кӗрсе тӗрӗслеме шухӑш тытрӗ вӑл. Ҫапла майпа Майрапие ҫӑмӑллӑнах тупассӑн туйӑнчӗ. Совхоза икӗ ял кӗрет, мӗн пурӗ виҫ ҫӗр хуҫалӑх ытла-тӑр. Ку хӑратмарӗ хӗре. Ырӑ шанчӑк ӑна кашнин хапхине уҫтарса картишне кӗртрӗ. Темиҫе

пăру та курчĕ вăл, анчах ĕмĕтленни сая кайрĕ. Тупăнмарĕ тынашка. Ирĕксĕрех ферма заведующийĕ патне кĕме тиврĕ.

— Эх, кукăр-макăр, санпала. Çӳрен ĕнерхи куна шыраса. Эсĕ миçе пăру пăхан?

— Вăтăр,— пĕлтерчĕ Теви тухнă-тухман сассипе.

— Халь миçе пăру тетĕн?

— Вăтăр.

— Мĕн кирлĕ тата сана, кукăр-макăр? Пăрах пуçа минретсе çӳреме. Кирлĕ-кирлĕ мар кĕнекесем вулатăр та темле «Майраписем» шухăшласа кăларатăр.

Теви сисрĕ: ку этем патне Чĕлпи инке килсе макăрнă.

Ăссăрччĕ-ха ун чух Теви. Хăй хутне кĕрекен çын тек шырама пĕлмен. Ĕç-пуç çаплипех пăчланчĕ. Куншăн хĕр кулянман мар. Хуйхи-суйхине ĕçпе ирттерчĕ вăл. Пăрусене çав тери тăрăшса пăхрĕ: вăхăтра çитерчĕ, шăварчĕ, хырчăкласа тасатса тăчĕ, усал куçсенчен тимлĕн сыхларĕ. Қашни пăру кирлĕ пек ӳт хушрĕ вара. Çакăншăн ăна пуçлăхсем мухтатчĕç. Теви вĕçсе каясла савăнатчĕ, татах вăй хурса ĕçлетчĕ. Хĕлле ăна тата Матиçе ял Совечĕн депутатне суйларĕç.

Майрапи упăшки килĕнче пулни Тевие питĕ тĕлĕнтерчĕ, çав вăхăтрах тарăхтарчĕ те.

— Вăрă-хурах çемйинче пурăнатăп иккен эпĕ,— çул тăршшĕпех хăйне хăй ятласа пычĕ вăл.

Профком председателĕ тĕплĕн итлерĕ Теви каласа панине. Ĕç прокурор патне çитрĕ, унтан судра сӳтсе яврĕç. Чĕлпи, каçхи хуралçă, Майрапие çăкăрпа илĕртсе ферма картишĕнчен илсе тухнă та Патти амăшне тыттарнă. Лешĕ ун вырăнне хăйĕн начаркка пăрушне (йĕкĕреш хăраххине) ярса хăварнă.

Суд Майрапие совхоза тавăрса партарчĕ, улшуçсене тĕрмене хупмалла турĕ.

Çапла пулса иртнĕ хыççăн Теви упăшки килĕнче текех ыррине кĕтеймĕ. Қин тесе уяса тăмĕç, тапĕç те ыватĕç кăларса.

Ваттисĕр кил ăшши сӳрĕлет-мĕн. Пуш-пушах халь пăянамăшсăр пӳрт-çурт. Хуняшшĕ ирĕкре-ха. Вăл, эрех лаххание путнăскер, урăлса кураймасть. Унăн хăйĕн пĕртен-пĕр юрри пур:

Еçмен çын йĕкел тути пек,
Еçекен çын мăйăр тути пек...

Қинĕ умĕнче вăл юри сĕмсĕрленет: пырне хыртарса тӳсмелле мар кăшкăрашса юрлать.

Теви кукамӑшӗ патне пурӑнма куҫасшӑн. Кун пирки вӑл упӑшки хуларан таврӑнсан пӗлтерчӗ. Патти килӗшмерӗ.

— Анне тӗрмерен хӑтӑличчен хамӑр ҫурт лартӑпӑр та уйӑрӑлса тухӑпӑр,— илӗртрӗ вӑл арӑмне.

Ӗмӗтленни ҫитеймерӗ: ҫурт лартма ӗлкӗреймерӗҫ. Патти амӑшӗпе Чӗлпи амнисти йӗркипе темиҫе уйӑхранах таврӑнчӗҫ.

«Халӗ ӗнтӗ пӑянамӑшӗ Тевие ялкӑшса ҫунакан вут ҫине пӑрахать»,— пуплерӗҫ ҫынсем пӗр-пӗринпе. Ҫук, Патти амӑшӗ кинне куҫкӗрет тапӑнмарӗ-ха, пачах урӑхла, ял-йыш умӗнче вӑл ӑна юратни, хисеплени ҫинчен юмахларӗ: «Хам айӑплӑ»,— текелерӗ. Тевипе те пӗтӗм тарӑху хурлӑхне пытарса, иртнине аса илмесӗр калаҫрӗ. Анчах ывӑлӗн чунне вӑл пуринчен те вӑрттӑн пӑт-пӑт! наркӑмӑш тумлатрӗ.

Ывӑлне амӑшӗ кунӗн-ҫӗрӗн вӗрентет:

— Килте вун икӗ пуҫлӑ ҫӗлен пурӑнать. Паян мана сӑхать, ыран — сана. Ӑна ҫутӑ тӗнчерен хӑвалама туп майне, ывӑлӑм.

— Эсӗ мана ҫуратнӑ, эсӗ — ман анне. Тавӑрӑп тӑшмана,— ҫапла пулчӗ Патти сӑмахӗ.

## 9

Патти килне илӗм-тилӗмпе персе ҫитрӗ. Кайнӑранпа тӑватӑ кун ҫеҫ иртнӗччӗ-ха. Халиччен хӑйне уйӑхра пӗр хут ҫеҫ килсе кӑтартаканччӗ. Ҫитменнине тата халӗ вӑл канӑҫне ҫухатни сисӗнет. Унсӑрӑн шӑртланма хӑтланмӗччӗ. Мӗн кӑшлать-ши ун чунне? Теви питӗ тӗлӗнчӗ упӑшкинчен, анчах ыйтса-тӗпчесе тӑма вӑхӑчӗ ҫук ун, ӗҫе васкамалла.

— Мана апат ҫитермесӗрех тухса каятӑн-и?— тытса чарчӗ арӑмне Патти.

— Хӑна мар эс, хулари пек, хӑвах тыт та ӑшала ҫӑмарта,— хушрӗ Теви упӑшки аллинчен вӗҫерӗнсе.

— Арӑм те вара сана,— мӑкӑртатрӗ Патти.— Капла ӳрӗк-сӳрӗк кӗтсе илсен ас ту, пуҫӗпех хулана юлатӑп.

— Хӑвӑн ирӗкӳ,— терӗ те Теви тухса кайрӗ.

Хӑйсӗр пуҫне никам та пӗлмест Патти яла мӗнле шухӑш илсе килнине. Иртнӗ хутӗнче ӑна, урампа утса пыраканскерне, Хыҫалкасри урамра пурӑнакан Ҫемен Арҫикӗ тытса чарчӗ те:

— Сана машина туянма сӗнесшӗн,— хыпар турӗ вӑл шӗвӗ сухалне аллипе якаткаласа.

— Ķам сутать?— Патти çамкине çат çапса илчĕ.
— Эпĕ. Атя, кĕрсе кур.

Патти чунĕнче сасартăк çыврăракан арăслан вăранчĕ. «Туянмалла!»— ӳхĕрчĕ хайхискер. Çав хĕтĕртрĕ Çемен Арçикĕ хыççăн патваррăн утма.

Сарайĕнче ларать-мĕн хура «Волга» тĕкĕр евĕр йăлтăртатса. Ķăмăлĕ пĕлĕте çити çĕкленчĕ Паттин. Эх, халех руль умне ларасчĕ те картишĕнчен тухса ял-хула урамĕсем тăрăх йăрлаттарасчĕ. Пуçлăхсен куçĕнчен мĕскĕнле пăхма пăрахăттăм вара. Унăн хăйĕн машини çук, патшалăхăнне хăвалаттарать.

— Ну-с, мĕнле?— мăнаçлăн ыйтрĕ Арçик кĕпи çаннипе машина çинчи тусана шăлкаласа.

— Чаплă!— Патти куçĕнчен хĕм пĕрĕхет, ăшне çулăм хыпса илчĕ-çке. Вĕçкĕнле сăмах вĕçерĕнчĕ:— Туянатăп, анчах халĕ алăра укça çук.

— Ķĕтетĕп,— терĕ Арçик ĕненмесĕртерех.

— Пĕр эрне срок пар.

Алă тытса уйрăлчĕç. Çак самантран вара Патти чире ерчĕ. Пурнăçĕ каялла кайрĕ. Пуçĕнче унăн тахçанах икĕ шухăш явăнатчĕ-ха: арăмне тĕп тăвасси тата машина туянасси.

Машина туянма укça тупмалла. Укça! Хăш чул айĕнче выртать вăл хăямат? Енчĕкне тултарма Çемен Арçикĕ çулĕпе кайма пулать. Унăн пахчине пăхсан вăрман кашласа ларать тейĕн. Анчах йывăç вуллисем вырăнне вăрăм шалчасем кăнтарса тăраççĕ. Вĕсем тăрăх явăнса пĕлĕтелле хăмла аврисем кармашнă. Паçминчи тăприне çемçетме Арçик им-çамне совхоз уйĕнченех йăкăртать. Хурал çук-çке-ха унта, хуть те лавĕпе тиесе кай. Вăл çу каçа хăмла речĕсем хушшинчен тухмасăр ĕçлет. Çавна пулах ун хăмла курланкисем пӳрнеске евĕр шултра. Çавна сутса пуять Арçик. Вăл çĕнĕ çурт та лартрĕ, машина та туянчĕ.

Арçикĕн çак çулне Патти тӳрех пăрахăçларĕ. Хăмла пахчинчен услам курма тытăниччен миçе çул иртет! Тата ав-ха пилĕке ирĕн-каçăн, машина чуптарасси пин хут çăмăлрах.

Ĕнер Патти пуçне çавра çил евĕр шухăш кĕчĕ: ун шучĕпе, укça ансатăн тупма пулать-мĕн. Çав ĕмĕт ăна Теви кукамăшне çаратас шухăш тыттарчĕ. Çав ĕмĕт ăна хуларан килне илсе çитерчĕ портфельне эрех чиктерсе.

— Кукамай, эп килтĕм, йышăнсам,— вăштах эрех кăларчĕ вăл.— Пирĕн килте Тевие кӳрентерес йăла çук. Анне хăй йăнăшĕшĕн кинне айăпламасть. Ķил-ха, кукамай,

ĕçер хура пĕлĕтсем иртсе кайнă ятпа. Сывă пултăр çутă пуласлăх!

— Ай, çырлах! Пăх-ха эсĕ ăна — кучченеçпе килнĕ,— савăнса ӳкрĕ карчăк.— Ман хамăн та пурччĕ-ха.

— Санне ыран, ĕç тухсан, янклаттарăпăр. Çыртмалли пар,— хушрĕ Патти куçне чеен çутăлтарса.

Ӑкил хуçи кĕрӳшĕн ытарлă сăмахне хак пама пĕлмерĕ. Вăл сĕтел çине черккепе пĕрле чăкăт, çăмарта, çăкăр кăларса хучĕ. Вырнаçса ларсан Патти черккесене тултарчĕ. Шаккарĕç, ĕçрĕç. Пушаннă черккесене кĕрӳшĕ каллех эрех ячĕ.

— Сире кăçал сурăхпа путеккине парнелесшĕн-ха. Çăмĕ вĕсен мамăк пекех çемçе,— çамрăккине савăнтарма васкарĕ ватти.

— Тавтапуç, кукамай,— Патти тутине тăп тытса куçĕпе сĕтел çинчи эрех кĕленчине ыталарĕ те мăчлаттарса тĕсерĕ. Чĕлхине çăтса янăн ним те шарламарĕ. Вăл ăшĕнче карчăка самантрах хăй енне çавăрмалли илĕртӳллĕ сăмахсем суйларĕ. Ӑкăштахран тытăнчĕ шыв юхтарма:— Ӑкукамай, сана çав тери юрататпăр эпир. Хĕрхенетпĕр те. Пĕччен пурăнатăн-çке-ха. Чĕр вилĕм ку! Пуçтарăн. Хамăр пата пурăнма илсе каятăп. Çулла пахчари улмуççи айĕнче сулхăнта лар, чечексен техĕмлĕ шăршипе килен. Хĕлле сан вырăн — кăмака çийĕ. Ӑкăштăр-кăштăр çӳресе пĕтĕм пӳрт ăш-чиккине хăтлăх кӳрсе тăрăн.

Чунĕпе çийĕнчех сисрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ: çак халап темле вăрттăнлăхпа витĕннĕ. Чăнлăхĕ часах çиеле ишсе тухĕ: тӳсĕмлĕн кĕтмелле çеç. Çавăнпа та вăл тулăксăр пăтти-патти перкелешме чарчĕ хăйне. Пур пĕрех чĕнмесĕр ларни килĕшмест.

— Çăтмах пахчине çавăтса кĕрен эсĕ мана, ырă кĕрĕвĕм,— тав турĕ пуçне тайсах Няппи.— Ах, çырлах! Хамăн пӳрт чӳречисене хăмапа урлă-пирлĕ çапса хăварма тивет пулĕ-и? Ӑкапла хамăр хĕрт-сурт ылханĕ çитмĕ-ши?

Ĕç-пуç хăй тĕллĕнех çыхăнса пынă пек туйрĕ те хĕпĕртесе ӳкрĕ Патти.

— Ылханĕ çитме те пултарать,— лаплаттарса хучĕ вăл карчăка хăратас шухăшпа.— Хуйхă-суйхăран хăтăлмалла.

— Мĕнле майпа?

— Çурт-йĕрне сутатпăр, йăлтах, пĕр патак юлмиччен. Укçи мана халь шутсăр кирлĕ. Çăмăл машина туянасшăн. Сана, кукамай, эх! ярăнтарăп вара!

Халĕ ĕнтĕ Няппи карчăк çамрăк кĕрӳшĕн шухăшне ăнланчĕ. Вăл ун çуртне сутса укçине сăптăрасшăн. Ӑкайран хăй патĕнчен хăваласа кăларса ярать.

Карчăк шутсăр тарăхса ӳкрĕ. Çĕкленнĕ тăвăла ляплантарайман енне эрех кĕленчине тытрĕ те ним тăхтаса тăмасăр вăркăнтарчĕ алăк патнелле.

— Эпĕ хам килтех вилетĕп! — кăшкăрчĕ вăл.

— Кукамай, мĕн çав териех тилĕрсе кайрăн эсĕ? Тытамак тытмарĕ пулĕ те сана?

— Мана мар, сана тытамак тытнă,— тавăрчĕ Теви кукамăшĕ.— Кĕт, суттарăп çурта. Малтан хăв ларт, пĕл ун асапĕ мĕн тути каланине. Э, ăшшă!..

— Эсĕ — тăр ухмах карчăк,— çилленчĕ Патти.— Эппин, хăрса тип çакăнта.

— Тутупа каланине сăмсупа турт! Тухса кай ман килтен, ял купăсĕ! Унсăрăн халех ухватпа ислетĕп! — кăмака кукринелле пăрăнчĕ карчăк.

Патти куçĕнчен сăсăл вĕçсе тухрĕ. Хăрамаллипех хăрарĕ вăл патак çиесрен. Алăкран тухнă чух кăшкăрса хăварчĕ:

— Тек пирĕнтен пулăшу ан кĕт! Ура ярса пуснă ан пултăр пирĕн пата! Мăнукна та пире намăс кăтартнăшăн тапса сирпĕтетĕп!

* * *

Урама чупса тухрĕ тарăхнă Патти. Пичĕ-куçĕ хĕп-хĕрлĕ хăйĕн. Палламалла мар тарăхнăскер хашкаса сывлать. Қалăн ăна тымарлă тунката ваклаттарнă тесе. Тӳрех ниçталла кайма та пĕлмерĕ, пĕр вырăнта тăлланса тăчĕ. Ахлатса кулянать Теви упăшки. Ара, ĕмĕтленни пурнăçланмасть-çке. Машинăн хӳрине те курас çук ĕнтĕ. «Кĕрсе тух Арçик патне»,— хушрĕ ăшри сасă. Утрĕ вара пуçне чиксе. Çемен Арçикĕ алкум вĕçĕнче тем кĕрмешет. Йĕритавра карçинкка купи.

— Вăй патăр! — сывлăх сунчĕ Патти хăй хыçĕнчен калинккине хупса.— Лăпăсем юсатăн няк?

— Паян, кăнтăрла иртсен, çынсем хăмла татма килеççĕ. Вĕсене çирĕп карçинкка кирлĕ пулать. Хăрса хуçăлнă хулăсене туртса кăларатăп та çĕннисене чикетĕп.

— Йыш чылай пухăнать-и вара? — ыйтрĕ Патти.

—Сиксех килеççĕ, ачи-пăчисемпех,— мухтанарах пуплерĕ Арçик. Совхоз пек мар, эпĕ ĕçшĕн хаклă тӳлетĕп. Килĕр эсир те арăмупа.

Пуçне сĕлткелесе илчĕ Патти, «юрĕ» тесе сăмахпа çирĕплетме хăяймарĕ. Арăмĕ, Теви, чисти кукамăш хăраххи, ăна хăйне килĕшмен ĕçе çураçтарма хĕн.

— Укҫа кӑшт пухса ҫитереймерӗм-ха сан урхамахна туянма,— суйрӗ Патти Арҫик машинине урӑххине тыттарса ярасран хӑраса.

— Шухӑшӑма улӑштартӑм: сутмастӑп. Ӑна хам хӗре качча илекене парнелетӗп,— куҫ айӗн пӑхса илчӗ Арҫик хӑй умӗнче тӑракан Патти ҫине. Вӑрӑм уссине пӳрни вӗҫӗсемпе якаткаласа тата ҫапла хушса хучӗ:— Ҫӗрӳ хӗрӗме машинӑпа чуптарса савӑнтартӑр. Ман мӗн тӑвас машинӑпа? Хулара пурӑнмастпӑр, ялта совхоз кантурӗсӗр пуҫне ӑҫта каяс пур? Унта ҫуран та танккатпӑр.

## 10

Ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа пырса кӗчӗ килне Теви. Ун сумкинче упӑшки валли кучченеҫ пур — пӗр пӗчӗк банка пулӑ вӑлчи. Анчах алӑк урати урлӑ каҫсанах Патти куҫне мӗл-мӗл ҫавӑркаласа кӑшкӑрса та пӑрахрӗ:

— Ӑҫта ҫӳрен?! Сана паян шыра-шыра...

— Ӗҫре пулнӑ.

— Ан суй! Фермӑна ҫитсе килтӗм, эсӗ унта ҫукчӗ.

— Ҫула май Матиҫ мана хӑйсен патне чӗнсе кӗчӗ.

— Эсӗ ку яхӑнта тем вӗсем патӗнчен тухма пӗлместӗн. Вӗсен хапхи умне, ахӑртнех, мамӑк сарнӑ. Иккӗленӳ ҫуралчӗ ман: ҫӗнӗ упӑшка тупман-и вӗсем сан валли?

— Эх, айван!— кӳренчӗ Паттие арӑмӗ.— Иртнӗ ҫумӑра юпах тихапа хӑваламаҫҫӗ. Ҫиревсӗр сӑмах калама вӑтанасчӗ сан.

Теви тек хуравлашса тӑмарӗ, кухньӑна утрӗ апат хатӗрлеме. Пӳлӗме пӗччен юлсан Патти лӑркарӗ-лӑркарӗ ҫаплах. Аллисене ӗнсе хыҫне хурса диван ҫине месерле выртсан та часах лӑпланаймарӗ вӑл. Тек ҫӑмхаларӗ иртнине. Ҫӳлелле пӑхса выртнӑ май курах кайрӗ маччан сарлака хӑминчи турат куҫне. Тинкерчӗ вара ӑна пӗр мӑчлаттармасӑр. Ҫав ҫаврашкаран малалла мӗнле пурӑнма вӗрентекен ҫырулӑ хут хӑю тӑсӑлса тухас пек туйрӗ.

Тепӗртакран ӑна арӑмӗ апат ҫиме чӗнчӗ.

Сӗтел ҫинче тем тӗрлӗ ҫимӗҫ. Чей чашкинче — пулӑ вӑлчи. Вӑл хӗп-хӗрлӗ, вӗтӗ пӑрҫа пек курӑнать.

Шарламасӑр ҫирӗ те ҫирӗ Патти. Тинех кӑмӑлӗ ҫемҫелчӗ ун. Чунӗ тулашмасть пек. Ҫемҫен ҫӑвар уҫрӗ вӑл:

— Теви, укҫа тума хирӗҫ мар-и эсӗ?

— Мӗскер? Ӑнланмарӑм. Уҫӑмлӑрах кала-ха.

Патти кӑмӑлне тӑрӑлтарса пачӗ. Вӑл питӗ машинӑллӑ пуласшӑн. Анчах енчӗк тӗпӗ яка ун. Малашне ҫав тӗллев-

пе пĕчĕккĕн титти-митти пухасшăн. Çавăнпа арăмне Çемен Арçикĕ патне пыма чĕнет. Пахчинчи хăмлине татса панăшăн вăл лайăх тӳлет имĕш. Теви тем тусан та килĕшмерĕ. Арçик ял çыннисем пек мар, пурнăçра урлă пусса пырать. Ана ĕç çи вăхăтĕнче çынсене хăй патне илĕртнĕшĕн совхоз дирекцийĕ пĕрре мар чĕнсе ятланă. Ун патне çӳрекен çынсене те асăрхаттарнă.

— Эпĕ усламçă мар,— тавлашать вăл яланах пуçлăхсемпе.— Патшалăх мана хам пахчара хăмла туса илме чармасть. Чарма мар, ман хăмлана чи хаклă хакпа туянать. Қамăн мĕн ĕç пур? Хăш-пĕрисем пахчинче çырла, хăяр, сухан тата паранкă туса илсе сутаççĕ. Эпĕ те апатçимĕç программине пурнăçлассишĕн тăрăшатăп.

— Эпĕ — хула çынни,— терĕ Патти мăшăрне. Эсĕ — ман арăм. Пире никам та пӳрнепе тĕллемĕ.

— Йăнăшан,— пӳлчĕ ăна Теви.— Эпĕ сан арăму çеç мар. Эпĕ — рабочи, фермăра ĕçлетĕп. Тата эпĕ — ял Совечĕн депутачĕ. Хам ята ярса Арçикĕн тĕпсĕр хутаçне укçа тултараймастăп вара.

— Эпĕ каятăп!— чăрсăрланчĕ Патти.— Паян кăнтăрлахи апат хыççăн ун патне çынсем хăмла татма пухăнаççĕ. Ас ту, капла мана çухатан.

— Чим, эпĕ илтнĕччĕ-ха: Арçик хăйĕн катăк хĕрне качча илекене машина парнелет тет. Унăн кĕрӳшĕ пуласшăн мар пулĕ те эсĕ?— шӳтлĕн-мĕнлĕн хушса хучĕ Теви.

Патти хăй тарăхнине кăтартам пек туса арăмне сылтăм аллипе янк! çупса ячĕ. Тевин, тен, çийĕнчех тавăрмаллаччĕ пулĕ. Тапкă е çупкă парнелесен те чармĕччĕ, ӳлĕм çапла алă çĕклеме ан хăйтăр вăл. Анчах тем тытса чарчĕ ăна: тӳпелешесси хĕрарăм ĕçĕ мар. Чăнах, намăса ăçта кайса хурăн? Тискер кайăка курнăн, куçне чарса пăхрĕ вăл упăшки çине. Чунĕ шутсăр хурланать. Апла пулин те куç çуль юхтармасть, чăтать шăлне çыртсах.

Арăмне те, ун кукамăшне те çĕнтерейменрĕ Патти, нихăшĕ те ун урапи çине лармасть. Çиллине шăнăçтарайман енне, Тевие усал сăмахсем каласа хур тума тăрăшрĕ:

— Илнĕ арăм ăнмасан ĕмĕрлĕхе хуйхă тесе ахаль каламан-мĕн. Тухса кай! Эпĕ уйрăлатăп! Япалусене хăв пекех хăлăхсăр кукаму килсе илĕ.

Пӳрт алăкне яриех уçрĕ Патти.

— Кун хыççăн мĕн ыррине кĕтмелли пур? Пĕр сăмах хушмасăр чупсах тухса кайрĕ Теви.

## 11

Уçмассерен чĕриклетеççĕ калинкке тăпсисем. Ҫам пĕлет, те юрри çапла вĕсен, те çу сĕрменрен шăм-шакĕсем ыратнипе йынăшаççĕ... Халĕ те калинкке уçăлса хупăнчĕ. Тимĕрпе тимĕре хăйранă евĕр сасă илтĕнчĕ. Ку хутĕнче хайхискерсем, тупата, йĕчĕç, ара, çамрăк кин хăй хыçĕнчен калинккене юлашки хут хупса урама тухрĕ. Ҫипуçне те улăштарса тăхăнман хăй, сарă чечеклĕ кăвак кĕпипех. Симĕс саппун çакнă. Ҫаялла çавăрса çыхнă шурă тутăрĕ айĕнчен путса кĕнĕ куçĕсем пулăшу тилмĕрсе йăлкăшаççĕ. Куç хупанки, çӳллĕ ту тăрринчен пăр катрамĕ шуса аннă пек, йывăррăн хупăнчĕ те пит çăмарти тăрăх вĕри куç çуль шăпăр-шăпăр юхрĕ. Ҫам шеллĕ ĕнтĕ ăна? Тен, хапха умĕнче ӳсекен, нихçан та венчет кĕпине хывма пĕлмен маттур хурăн? Хӳтлĕх шыранăн, çамрăк кин ун вуллине пырса ыталарĕ. Ҫăра турачĕсем хускалмаççĕ. Ҫил ачисем унăн ешĕл çулçисемпе пачах вылямаççĕ.

— Чипер йăмăкăм, сывă пул! Эсĕ те пулин мана ан ятла!— çупăрларĕ Теви хурăн вуллине. Питĕ шел, хурăн калаçма пултараймасть. Тилмĕрнĕ пулĕччĕ-ха вăл: «Пăрахса ан кай. Эсĕ куллен шăварса тăнине пула ав епле кăтралантăм эпĕ. Сансăр пуçне мана никам та пĕр витре шыв килсе сапмĕ. Тымарăмсем хăрĕç, туратăмсем типĕç».

Теви çийĕнчех хăпса каяймарĕ хурăн çумĕнчен. Тек тинкерчĕ кантăк еннелле. Ҫĕтрĕ. Акă кантăк уçăлĕ те, Патти пуçне кăларса ăна чĕнĕ: «Ҫаçар мана, Теви, ухмахла сӳпĕлтетӳшĕн. Ҫĕрсем каялла. Эпĕ сана юрататăп». Ҫук, кĕтни — кăлăхах. Урама та чупса тухмарĕ вăл арăмĕ хыççăн.

— Юрĕ, уйрăлăпăр,— терĕ сасăпах Теви упăшки илтесле.— Ытлашши хыпса çунмăп, сак тулли йĕрсе ларакан ачам-пăчамах çук.

Юлашки хут мăшăрне мар, хӳхĕм хĕр пек йăрăс пӳллĕ хурăн вуллине: «Сывă пул!»— тесе ыталаса чуп турĕ те аллисене сулкаласа яртлаттарчĕ. Ана-кăна чухламасăр чупрĕ пӳрт умĕсем çумĕпе хывнă сукмак тăрăх. Хăй те пĕлмест капла ăçта çитессе. Фермăна теес çук: ку урампа каймалла мар. Ҫемен Арçикĕ тĕлĕнчен иртесси асра та çукчĕ, анчах унăн шкул пек пысăк çурчĕ тухрĕ тăчĕ куçĕ умне. Ларать вăл шалчасем тавра ашкăрнă хăмла ращи варринче. Теви чунĕ тăвăнса килчĕ, чĕри хăвăрт-хăвăрт тапать, ура вăйĕ тухсах ӳкрĕ, тăп чарăнчĕ хайхискер. Ҫăштахран тин тапранчĕ, вара тăкăрлăкалла пăрăнчĕ.

Кунта, ура айӗнче — ҫерем. Шурӑ хурсен пулккисем симӗс курӑка чӗпӗтсе ҫӳреҫҫӗ. Пӗр ушкӑнти ватӑ ами карта ҫумӗпе пыракан ҫынна асӑрхарӗ. Ах, хастар-ҫке! Чӗпписем ӳссе хӑйне хуса ҫитнӗ темелле, ҫапах та вӗсене хытӑ сыхлать, мӑйне тӑсса «тӑшманӗ» патне ҫывхарать.

Илтмерӗ Теви хур ами чашкӑрнине, утрӗ малалла. Пахча вӗҫӗнче — вӑрман. Ун хуҫи тем тесен те ҫав мӑн юман-тӑр. Ав вӑл, хӗрринче ӳснӗскер, вӑрманти пӗтӗм йывӑҫа хӑй хӳтӗленӗн, вӑйлӑ турачӗсене таҫта ҫити сарса янӑ. Юманран ирӗк ыйтнӑ пек, кирек кам та малтан ун ҫумӗпе иртет, вара тин вӑрмана кӗрет. Теви те хӑнӑхнӑ йӑлапа ҫапла турӗ. Шутсӑр юратать вӑл ҫакӑ аслӑ вӑрмана. Тӗнчере ӑна ҫитекенни нимӗн те ҫук. Вӑрман вӑл — мул тултарнӑ капашсӑр ҫӳпҫе. Туприне вӗҫӗ-хӗррисӗр этеме парнелесе тӑрать. Хӗлӗпе ҫӗр питне хупласа выртнӑ кӑпӑшка шурӑ юр кайса пӗтсенех серте татма килетӗн. Ҫӑмахпа пӗҫернӗ, хӑймапа юрнӑ серте яшки ҫав тери тутлӑ-ҫке. Чӑвашӑн юратнӑ апачӗ вӑл. Кайӑксем мӗнле йышлӑ пурӑнаҫҫӗ кунта! Ҫуркунне, чечек ҫурнӑ вӑхӑтра, вӗсен концертне итлесе киленен. Чунупа нумай ҫамрӑкланатӑн вара. Ҫулла симӗс курӑк хушшинче, ҫеҫкесем айӗнче, хӗп-хӗрлӗ ҫырласем чӗлтӗртетсе лараҫҫӗ. Ваттивӗтти килӗнчен пурак ҫакса тухать. Ан ӳркен пӗшкӗнме, тат, тултар савӑтна пыл пек пылак ҫырлана.

Халӗ Тевин чунне йӑпатаймарӗ вӑрман. Темшӗн вӑл шупкаланнӑ, пушанса юлнӑ пек туйӑнчӗ ӑна. Ҫиллессӗн каш-каш кашлать. Калӑн вӑл такама хӑратасшӑн тесе. Лутра йывӑҫ тураттисем питрен ҫапаҫҫӗ. Ӑна уямасть Патти арӑмӗ, шав утать ҫынсем такӑрлатнӑ сукмакпа. Вӑрмана икӗ еннелле тӗксе хӗстернӗ уҫланка ҫитсе тухрӗ хайхискер. Шупашкарпа Ульяновск хушшинчи аслӑ ҫул иртет кунтан.

Канав ҫывӑхӗнче, лаштра чӑрӑш айӗнче, автобус кӗтекен ҫынсене канма туса лартнӑ хӳшӗ пур. Ун ҫумӗнчех вӑрӑм тенкел. Шӑп ҫакӑнта пырса ларчӗ Теви. Тӗлӗкри пек вӑл халь. Кунта мӗншӗн килнине те пӗлмест. Ларать курак чӗппи пек унталла-кунталла пӑхкаласа. Ҫывӑхра никам та курӑнмасть. Ҫула тухнисем кайса пӗтнӗ пулӗ. Унӑн та халиччен никам ҫитсе курман ҫӗре тарас килчӗ. Чуна чӑрмалакан пӑтӑрмахсем сирӗлӗччӗҫ. Тупата, мӗнма ҫынна ҫунат паман-ши?

Грузовиксем, ҫӑмӑл машинӑсем, таксисем, автобуссем: «Курса юл мана, Теви!» — тенӗн вӗлт те вӗлт иртеҫҫӗ.

Тӗлӗнтермӗш! Акӑ пӗр автобусӗ чарӑнчӗ. Алӑкӗ уҫӑлчӗ. Пӗртен-пӗр ҫын анчӗ сиксе. Автобусӗ питӗ васкать

ёнтĕ, вăрах тытăнса тăмарĕ, шыв çинчи кимĕ пек, çатма тĕпĕ евĕр такăр çулпа йăрлаттарчĕ малалла.

Автобусран тухнă йĕкĕт çул хĕрринче йĕри-тавра пăхкаласа пĕр авăк тăчĕ. Вара çĕре лартнă чăматанне çĕклерĕ. Сулахай аллинче куртка. Çийĕнче ун (кунĕ паян çуллахи пек шăрăх) кĕске çаналлă шурă майка, спортсмен шăлаварĕ, пуçĕнче кăвак тĕслĕ берет. Йăрăс пӳллĕскер. Хĕвелпе пиçнĕрен пичĕ те, хулĕ те пăхăр тĕслĕ.

Çул айккинчи тарăн канав урлă хывнă кĕперпе каçрĕ те тӳрех капăр хӳшĕ патнелле утрĕ йĕкĕт.

Шăтарасла пăхать Теви хăй патнелле çывхаракана. Темле паллана çын пекех туйăнать. Ун умне кам килсе тухасса пĕлнĕ пулсан-и? Вăл ку сак çинчен тăрса паçăрах вăрманалла кĕрсе тарĕччĕ. Халĕ кая юлчĕ.

— Мана кĕтсе илме тухнă пирĕшти те пур-çке,— сăмах вĕçертрĕ йĕкĕт саламласа алă панă май.

— Эй, турă, эсĕ-çке ку, Лавруш!— сак çинче ларакан-скер, йăпăр-япăр сиксе тăчĕ Теви.— Ах, ача, сана паллама та хĕн.

Аякранах тĕшмĕртеймерĕ Теви ăна. Хăçантанпа курман та. Çар службин хыççăн вăл пĕр хутчен те яла килсе кайман.

— Эпĕ автобусран ансанах сак çинче эсĕ ларатăн пуль терĕм,— терĕ Лавруш ăшшăн кулкаласа.— Эх, Теви, мĕншĕн ун чух çапла кĕтсе илме тухасси пирки пĕлтереймерĕн-ши? Çартан тӳрех яла ыткăнăттăм.

— Ниме уямасăр таврăнмаллаччĕ.

— Хĕвел çине илсе тухнă çурта пекех, эпĕ сана кирлĕ маррине пĕлтĕм-çке,— ассăн сывласа илчĕ Лавруш.— Вара куçăма ырă хĕр шырама ирĕке ятăм.

— Тупрăн-и, Лавруш, хăвна пӳрнине?— Тевин куçĕ темле чарăлчĕ. Унăн куçĕн йăлтăрккинче пурте палăрчĕ: хăйне айăплани, хăй пысăк йăнăш туни, малтанхи таса юратăва тавăрма май çукки...

— Тупасса тупрăм. Анчах çухатрăм ăна ăнланманнипе. Шанчăкăм пур: пирĕн çулсем пĕрлешеççех. Çитĕ, тек ним те ан ыйт, Теви.

— Ютăхрĕ-и çав тупнă хĕр?

— Ку сăмах вырнаçусăр.

— Лавруш, тепĕр ыйту пама ирĕк парсам мана,— тилмĕрнĕн каларĕ Теви.

— Яваплайăп-ши?— чăр пăхрĕ Лавруш хăй умĕнче тăракан Теви куçĕнчен.

— Юрату сăваплă. Унăн илемĕ нихăçан та тĕксĕмленмест, пăнтăхмасть теççĕ. Килĕшетĕн-и эсĕ çак шухăшпа?

— Килĕшетĕп. Чăн-чăн юрату нихăçан та тĕксĕмленмест. Каçар, Теви, эпĕ иксĕмĕр хушăри чечек çурма ĕлкĕреймесĕрех сӳнĕ юратăвăн çутине чĕртсе хĕмлентерме килмен.

— Эпĕ ăнланмастăп тетĕн-и? Пĕлетĕп: иртнĕ куна тепĕр хут пурăнса çитеймĕн.— Хурланнипе Теви ассăн сывласа илчĕ. Çак кăмăла хуçакан йӳçĕ сăмахсене хăçан та пулин илтессе кĕтнĕ вăл. Анчах мĕншĕн шăп та шай чунра тăвăл ахăрнă самантра пуçа килсе çапмаллаччĕши? Телейсĕрскере пĕтĕм хуйхă-суйхăпа çĕленĕ кĕпине тăхăнтартрĕ ăраскал.

— Эпĕ аннене ăмăрт кайăк тытнă ятпа саламлама килтĕм,— хăй яла килнин сăлтавне пĕлтерме васкарĕ Лавруш.

— Акăшпие йышăнасшăн мар-и вара эсĕ, пиччĕшĕ? Аннӳ йĕкĕреш ача çуратнă-çке...

Лавруш патне кун пирки килтисем пачах çырман. Хыпар унăн пĕтĕм ăш-чиккине тăлларĕ, чĕлхине çăтса янăн, сăмах та хушаймарĕ. Вăл тăна пырса кĕриччен Теви каласа та хучĕ:

— Ыран Ванихер инкене ача çуратмалли çуртран кăлараççĕ. Ăна ушкăнпа илме каятпăр. Совхоз икĕ машина парать.

— Питĕ аван,— Лавруш тинех тавçăрчĕ пулас.

Иккĕшĕ те ял сукмакĕ çине тухрĕç. Тек вĕсен нимле калаçу та çыхăнмарĕ. Çак иртнĕ çулсенче Теви мĕнле пурăннипе Лавруш йĕп çăрти чухлĕ те кăсăкланмарĕ, ял тĕлне маннăн шăпăрт пычĕ Теви хыççăн.

Яла çитсен хăйсен çамрăклăхĕ иртнĕ урама тухрĕç. Кашни кил умĕнчех йăмра е тирек. Вĕсен çулçисем саламлаççĕ-ши çак мăшăра? Ав епле çатлаттарса ал çупаççĕ. Тен, хурланаççĕ? Ара, иртнине халĕ те ас тăваççĕ-тĕр: курса-туйса тăнă-çке вĕсем ун чух. Çак икĕ чун хушшинче юрату хĕмленнĕччĕ. Таçтан муртан хура пĕлĕтсем килсе капланчĕç те, тăкăнчĕ-тăкăнчĕ витри-витрипе çумăр. Юрату сӳнчĕ, хуралса кăмрăкланчĕ.

Утаççĕ урам тăрăх пĕр-пĕринчен ютшăннăскерсем. Ав Няппи карчăк пӳрчĕ, тата икĕ кил урлă — Ванихер инкесен.

— Сывă пул, Лавруш!— терĕ Теви кукамăш хапхи еннелле пăрănса.

— Тепре куриччен!— çапла çеç пулчĕ Лаврушăн сыв пуллашăвĕ. «Мĕн, эсĕ çаплах кукаму патĕнче пурăнмастăн пулĕ те?»— тесе те ыйтмарĕ иçмасса.

Теви ăнланчĕ: Лавруш чĕрине урăх хĕр йăва çавăрнă, анчах тем ăнăçсăрри пур. Ӳлĕм паллă пулĕ.

## 12

Ача çуратмалли çуртăн пысăк палатинче темиçе хĕрарăм. Маларах çăмăлланнисем пĕр-пĕринпе çывăх паллашнă, ячĕсене те пĕлеççĕ. Вĕсенчен чи асли — Ванихер инке, вăл хĕрĕх ултă çулта. Иулита акă чи çамрăкки, вун тăххăр та тултарман-ха, çуратнăранпа талăк çеç иртнĕ.

Пепкесем — юнашарти пӳлĕмре. Вĕсем пĕчченшерĕн тăпăлкка койкăсем çинче паппа тăваççĕ.

Ирхи кӳлĕм. Амăшĕсем çăвăнса тирпейленчĕç те ĕнтĕ. Пĕчĕккисем те вăраннă. Ав епле йĕрмĕшеççĕ. Вĕсен сасси çурчĕпех илтĕнет: хырăмĕсем выçрĕç-тĕр. Тата урăх сăлтавĕ те пур-тăр-ха: амăшĕсемпе часрах курнăçасшăн пулĕ.

Няня палатăна кипкепе пиеленĕ ача йăтса кĕчĕ те Иулита патне пычĕ.

— Амăшĕ, мейĕр ачăра,— терĕ вăл,— ăна кăкăр ĕмтерме вăхăт çитнĕ.

Утиялпа пуçĕ çинченех витĕнсе выртнă Иулита хăнк та тумарĕ. Çывăрать-ши?

Палатăри хĕрарăмсем пăшăрханнипе хускалкаласа илчĕç. Пĕри те тепри сăмах хушрĕ:

— Иулита, вăрансам!

— Няньăна ача йăтса тăма йывăр! Ан кĕттер!

— Унăн пирĕн ачасене те илсе килмелле.

Шăпăртах выртать Иулита, пăш-пăш сывлани кăна илтĕнет. Кĕтесри койка çинче выртаканни, Плаки ятли, тӳсеймерĕ: талт-талт утса пычĕ те Иулита çинчи утиялне сирме пикенчĕ. Лешĕ, хурчăка вăрланă чĕппе чĕрнипе хыпкăчланă пекех, аллипе утиял кĕтесĕсене çатăрласа тытнă та хăй çинчен сирме памасть. Çакна сăнаса тăракансем ырă мара туйрĕç.

Плаки хайхискере вĕрилентерсе пăрахман-ши тесе ун çамки çине ал лаппине хурса тĕрĕслерĕ.

— Температури çук, çамки сип-сивех, ахаль пăлахая персе выртать. Тăр, тăр!— лешĕн çурăмĕнчен тĕккелерĕ вăл.

Ним те тăваймăн. Иулита ирĕксĕрех ура çине яш! сиксе тăчĕ, аллисене çурăмĕ хыçне çавăрса тытрĕ.

— Амăшĕ, мĕн хăтланатăн эсĕ? Ме ачуна, ĕмтер,— сĕнет няня.— Унсăрăн сан пирки халех тухтăра пĕлтеретĕп.

Чĕнмест Иулита. Ачине аллине илме мар, ун çине пăхмасть те, куçĕсене аяккалла тартнă.

Хĕрарăмсем шалт тĕлĕнчĕç, халиччен курман-илтмен амак ку. Пĕр самант хытса тăчĕç юпа пек. Вара куçа

курăнман çил-тăвăл килсе кĕчĕ-ши пӳлĕме, тур çырлах, тытăнчĕç Иулитăна пĕр харăс ятлама:

— Ачуна выçăхтарса вĕлересшĕн-им эс?

— Ярăнтăн пулсан çунуна та туртма тивет.

— Мур илесшĕ! Арçын йăпатнине хирĕçлемен...

— Сава хыççăн пуртăпа касмаççĕ.

Хăлхи питĕрĕннĕ тейĕн, ни апла, ни капла сас памарĕ Иулита. Йытă вĕрет, çил вĕçтерет терĕ-ши? Вучахри кăвар çулăмлансан кĕтсех тăр: хуранти сĕт хăпарать, сиссе те юлаймастăн — тăкăнать. Хĕрарăмсенчен пĕри (чи паттăрри ĕнтĕ) тӳссе тăраймарĕ, тĕлкĕштерсе пычĕ те Иулитăна пилĕкĕнчен ярса тытрĕ, ăна кравать хĕррине лартасшăн пулчĕ. Лешĕ парăнмасть. Пуçланчĕ тĕркешӳ.

— Лар, йĕксĕк! Çитер ачуна! — хушать ирĕксĕрлекенни.

Иулита хайхи хĕрарăмăн хыпкăч пек аллинчен вĕçерĕнчĕ, ун çине тарăхса пăхрĕ, пысăк куçĕсенчен тăкăнакан хĕлхем тепле ĕнтсе хăртмарĕ ăна. Самант та иртмерĕ, ачапа ача тӳпелешнĕ хыççăн туслашнă чухнехи пек, Иулита сăн-пичĕ улшăнчĕ. Куçĕсем вăрман уçланкинчи çап-çутă тӳлек кӳлĕ майлах.

Ванихер инке хăйне аякĕнчен тĕртнĕнех туйрĕ. «Чимха, — терĕ вăл ăшĕнче, — çак куççене эпĕ питĕ çывăх курнă. Анчах хăçан тата ăçта? Унччен те пулмарĕ, куçĕ умне нумай çул хушши асран тухмасăр çӳренĕ пĕчĕк хĕр ача шуса тухрĕ. «Тем тесен те çавах ку» — шухăшларĕ Ванихер инке.

Ĕç-пуç ача-пăчана инфекци чирĕнчен сыватакан пульницара пулса иртнĕччĕ. Ванихер ун чух çав пульницара иккĕмĕш ачипе, ывăлĕпе, выртнăччĕ. Пĕр-ик кун иртсен пĕр хĕр ачана илсе пычĕç. Виççĕре е кăшт кĕçĕнрех-ши вăл? Паркаччĕ хăй. Çӳçне санитаркăн тăм аллисем «тирпейленĕ»: картлă-картлăаснă. Апла пулин те пăхса ытармалла марччĕ, куçĕсем чиперлететчĕç ăна. Пĕр тĕлĕнтермĕш пурччĕ ун. Палатăна кам та пулин (уйрăмах арçын тухтăр) кĕрсен хĕр ача хăранипе кăпăр-капăр кравать айне кĕрсе выртатчĕ. Каярахпа хыпар сарăлчĕ: хĕр ачин ашшĕ пачах çук-мĕн, амăшĕ — тĕрмере. Хĕр ачана Литя тесе чĕнетчĕç. Часах Литяна усрама илес текенсем те тупăнчĕç. Пĕр хĕрарăм (вăл пианистка имĕш) ăна арки çине лартса нумайччен калаçтарчĕ. Ванихер те çав хĕр ачана питĕ килĕштернĕччĕ, усрава илесшĕнччĕ, упăшкипе те калаçса татăлнăччĕ. Анчах ĕç тухмарĕ. Ăна тĕрмерен тухсан амăшĕ хăех илесшĕн-мĕн. Литяна каллех ача çуртне ăсатрĕç.

«Ҫирек-мӗн кала та, ку Иулита ҫав хӗр ачах. Ун чухне ӑна ачашласа Литя тесе чӗннӗ»,— шухӑшларӗ Ванихер. Вӑл тахҫанхи кунсене аса илсе ларнӑ чух палатӑри хӗрарӑмсем паҫӑрхи мыскараран камит курнӑн ахӑлтататчӗҫ. Иулитӑна ятлакансем те пурччӗ. Айӑпли вара пуҫне мӑнаҫлӑн каҫӑртса палатӑран тухса кайрӗ.

— Эх, тусӑмсем, ҫынна тиркеме ҫӑмӑл,— терӗ Ванихер ҫакна курсан.— Эпир ун ҫинчен нимӗн те пӗлместпӗр. Ҫам вӑл? Аҫта пурӑнать, ӗҫлет, мӗнле ҫемьере ӳснӗ? Пур-и ун упӑшки?

— Хӗрле ача тунӑ ахӑртнех,— терӗ няня.— Пӗчченех килчӗ. Таҫта кайма тухнӑ та патне ҫитнипе пирӗн патӑмӑрта ҫуратрӗ.

— Илтетӗр-и? Пурнӑҫӗ хуҫӑлнӑ ун. Ҫалап-иҫ ырӑранах мар тесе,— пуҫне сулкаларӗ Ванихер.— Тен, айванскер хӑйне улталанӑ каччине ҫапла тавӑрасшӑн.

— Тӗрӗссипе илсен, пурнӑҫ тени питӗ кӑткӑс,— килӗшрӗ паҫӑр Иулитӑна ярса тытнӑ хӗрарӑм.

Хӗрарӑмсем шӑпланчӗҫ. Няня пурин куҫӗнчен те тилмӗрнӗн пӑхса ҫаврӑнчӗ те алӑк патнелле васкарӗ.

— Тӑхта-ха, няня!— чарчӗ ӑна Ванихер инке.— Ҫӳр ачана, хам ҫитерем. Ман кӑкӑрта сӗт нумай. Ильяс (килтисем хушнипе вӑл ывӑлне ҫапла ят панӑ та) пур пӗрех тӗпӗпе сӑрхӑнтараймасть.

— Ытла ырӑ кӑмӑллӑ ҫын эсир,— тӳсеймерӗ мухтамасӑр няня. Вара вӑл Иулита ачине Ванихер инкене тыттарчӗ.

— Мӗн ятлӑ-ха эсӗ, чиперккем?— ыйтанҫи турӗ Ильяс амӑшӗ ачаран.

— Ячӗ ҫук-ха ку хӗр ачан,— тавӑрчӗ няня.

— Эх, телейсӗрскер, аннӳ пур ҫинчех тӑлӑх турат эсӗ,— пуплерӗ Ванихер инке ачана кӑкӑрӗ ҫумне хурса. Нихӑҫан пепке курманла (хӑй ывӑл-хӗртен пиллӗхлӗ, вуннӑмӗшне ҫуратнӑ-ха) шӑтарасла пӑхрӗ ӑна. Ун чӗрҫи ҫинче ҫиттипе пиеленӗ ытармалла мар таса, илемлӗ чечек. Пуҫне шурӑ калпак тӑхӑнтартнӑ, тӑпӑл-тӑпӑл сӑн-питлӗ вӑл. Уҫӑ куҫӗ — шӑп та шай аякри ҫутӑ ҫӑлтӑр. Чӑпӑрт тытнӑ тути хӗррисем, тин ҫеҫ ҫӑмартаран тухнӑ кайӑк чӗпписем евӗр, сап-сарӑ. Ҫаҫӑр сӑмси айккипе шурӑ шатрасем. Вӗсем йӗп вӗҫӗ майлах — шӗп-шӗвӗр. Ача чечекленет. Сӗт шатри теҫҫӗ кун пек чух амӑшӗсем.

Ванихер инке пыр ҫыххине салтса кӑкӑрне кӑларчӗ. Чӗчӗ пуҫне икӗ пӳрнипе хӗстерсе пӑчӑртарӗ. Ача техӗмлӗ сӗт шӑршине часах туйрӗ, ҫӑварне уҫса каркаларӗ.

— Ме, ме, ём, шăпчăкăм,— лăпкарĕ ачана хĕрарăм.— Тен, ӳссен ман кинĕм, Ильяс мăшăрĕ, пулăн.

Нăçтик-нăçтик ёмни илтĕнет. Пурăнма çуралать-çке этем.

— Маттур, пикем, маттур,— тӳлек сассипе ырлать ачана Ильяс амăшĕ.

Палатăри хĕрарăмсем йăпăштин кулса илчĕç.

— Ас ту, кин тума килĕшен тем? Улми йывăççинчен аякка ӳкмест теççĕ,— лĕкĕртетерех каларĕ Плаки текенни.

— Пĕкĕрен турта тăваймăн,— Плаки шухăшне вăйлатрĕ тепĕр хĕрарăмĕ.

— Йăнăшатăр, ырă акамçăмсем. Çил-тăвăл алхаснă самантра улми йывăççинчен аякка та ӳкет,— тавăрчĕ Ванихер.— Ырă ĕмĕте ĕненмелле. Шанчăклă çип сăнчăр тĕшне тăнă тенĕ ваттисем.

Сăмахĕнченех паллă, вăл, нумай ачаллăскер, пурнăçĕнче хурапа шурра сахалах курман пулас. Хĕрарăмсем тек ырăпа та, усалпа та çулăхмарĕç. Қашниех тин илсе килнĕ пепкипе айланма тытăнчĕ.

Ильяс амăшĕн чĕрçи çинчи пĕчĕкçĕ хăна ĕмрĕ-ĕмрĕ те чарăнчĕ.

— Тăрантăн та-и? Ха, ытла сăпă-çке эсĕ, хĕр пĕрчи темерĕн,— мăкăлтатать ачапа ăна сăйлаканни.— Путех янахху ывăнчĕ-тĕр. Қан эппин, тĕлĕр кăштах. Çывăрсан вăй кĕрĕ.

— Шав пуплетĕн ачапа, вăл ăнланать-им?— йĕкĕлтесерех ыйтрĕ юнашар кравать çинчи хĕрарăм.

— Унсăр мĕнле? Йăлтах ăнланать,— пат татса каларĕ Ванихер инке.— Қалаçма çеç çуралнă-çуралманах чĕлхи уçăлаймасть.

Ун куçĕ умне килĕнчи ывăл-хĕрĕ тухса тăчĕ. Қун умĕнхи хĕр пĕрчи чĕвĕлтетни хăлхара янăрать. Икĕ çулта çеç-ха хăй, пĕлмен сăмах çук ун. Юратнă кĕнекесенчи сăвă-юрăсене шыв пек юхтарать. Чăн-чăн артист. Қу çеç-и? Çепĕç сăмахсемпе амăшне йăпатма, ачашлама, хĕрхенме пĕлет: «Анне,— çупăрлать вăл амăшне, пăрчăкан пекскер,— ӳссен эпĕ сана çав тери лайăх пăхăп, тем те çитерĕп: çу хывнă пăтă, пĕремĕк, кăнахвет...»

Çуралсанах ашшĕ-амăшĕн, пиччĕш-аппăшĕн калаçăвне ăнланмасть пулсан виççе те çитеймен ача ăçтан çав тери юмахлатăр-ха, сăвă-халап калатăр-ха, пĕтĕм кил-йыша хăйĕн чĕвĕлти чĕлхипе савăнтартăр-ха? Қирек мĕн шухăшлаччăр та, çапах та амăшĕ ăшĕнче ача пысăк ăс-тăнпа тĕвĕленет. Тĕрĕсех ку, ĕненмелле ăна.

Чĕрçи çинчи çак пĕчĕк этемре хăйĕн йышлă ачи-пăчине пĕр харăс курнăн, Ванихер инке сăн-пичĕ шевле евĕр çуталса çиçрĕ, ытарайми ăшшăн пăхса, çурăмĕнчен лăпкаса çупăрларĕ пепкине. Ача хăйне ырă кăмăлпа юратнине туять çав. Вăл йăшăлтатса илчĕ. Тепĕртакран ĕçе тытăнчĕ. Анчах паçăрхи пек сăрпаланмасть, ытахальтен çеç ĕменçи тăвать. Хырăмĕ тулчĕ пулас, унсăрăн какăрмĕччĕ. Сĕт ав çăварĕнчен кăпăл тăкăнчĕ.

Пĕчĕк хĕре няня илсе кайрĕ. Унтан часах Ванихерĕн Ильясĕ çитрĕ.

— Йĕкĕтĕм, эсĕ ан кӳрен йăмăкна ĕмтернĕшĕн,— пупле-пупле чуп тăвать вăл ывăлне.— Сĕт сан валли те çитет. Ме, ĕм, ылтăнăм.

## 13

Иулита хăй пепкине аллине илмерĕ. Ачасене амăшĕсем патне йăтса пынă самантсенче вăл палатăран туха-туха каять. Ытти чух ялан кантăкран тулалла пăхса тăрать. Ача çуратмалли çуртăн картишĕ аслă, сад теме те юрать пулĕ ăна. Улмуççи чылай. Турачĕсем çинче пан улмисем курăнкалаççĕ. Қарта хĕррипе пилеш, çăка, тирек, палан ӳсеççĕ. Хурлăханпа хăмла çырли тĕмĕсем те пур. Çав йывăççене чунне асаплантаракан пин те пĕр ыйтăва татса пама тилмĕрнĕн Иулита унталла куç илмесĕр тĕмсĕлет.

Ванихер инке пĕр-ик хутчен те Иулитăпа калаçма пикенсе пăхрĕ, анчах та лешĕ çăвар уçмарĕ. Тепĕр тесен, кирлех-ши ун чунне калаçса ыраттарма? Çапах та лешĕ кирек те мĕн хăтлансан та Ванихер ун ачине пĕтĕм кăмăлтан ĕмтерет. Сĕчĕ ун такама тăрантарма та çитмелле. Сĕтпе пылак чей ĕçет, çавăншăнах-тăр кăкăрĕсем хĕр чĕччи пек кăпăрт хытаççĕ. Сĕчĕ тепĕр чух хăй тĕллĕнех юхать. Çав тери хăнăхса çитрĕ Ванихер инке мĕскĕн ачана. Хăй çуратнă пекех туйма тытăнчĕ. Енчен те Ильяса çитерме малтан илсе пырсан кашнинчех чĕри кăртлатсэ илет: «Амăшĕ йышăнмарĕ-ши?»

Тухтăр хăй патне чĕнтермен мар Иулитăна, ăнăçсăрскере. Мĕн калаçнă-ши? Темĕн, чунне уçса парайнă-ши? Ĕненме хĕн. Палатăри хĕрарăмсем ним те пĕлеймерĕç. Иулита каярахпа урăх пӳлĕме куçрĕ.

Пĕр ирхине палатăна кĕрсе няня çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ:

— Иулитăна ачисĕрех кăлараççĕ. Халĕ тумтир тăхăнать.

Хĕрарăмсем палатăн пысăк кантăкĕ патне кăпарр!

пухӑнчӗҫ. Тӗмсӗлсех пӑхаҫҫӗ крыльца еннелле. Алӑк уҫӑласса кӗтеҫҫӗ. Самаях вӑхӑт иртрӗ. Унччен те пулмарӗ, хайхи Плаки ятли хыпӑнса ӳкрӗ:

— Тухрӗ!

Хӗрарӑмсем, халиччен куҫ тӗлне пулман тискер кайӑка курма ӗмӗтленнӗ пек, чӳрече умне чыхӑнчӗҫ.

— Ав картлашкапа анать.

— Эх, путсӗрскер!— ятламасӑр чӑтаймарӗ пӗри, уйӑх пек ҫаврака питлӗ ҫамрӑк амӑшӗ.— Шеллемерӗ хӑйӗн ачине.

— Тимлӗрех пӑхӑр-ха, ачине ҫӗклемен-и?— терӗ ушкӑн хӗрарӑм хыҫӗнче тӑракан Ванихер инке.

— Алли пушах. Хул хушшине пӗчӗк сумкине ҫеҫ хӗстернӗ,— тӑхҫаларӗ малта тӑракансенчен пӗри.— Эх, тӑнсӑрскер.

— Ас тени ҫӗртен тупнӑ тӳме мар, ӑна пуҫ ҫумне ҫӗлесе лартаймӑн,— хушса хучӗ Плаки.

Хӑйне кантӑк витӗр темиҫе мӑшӑр куҫ пӑраланине сисмерӗ ахӑртнех крыльца пусми тӑрӑх анаканскер. Хӑва хулли евӗр ҫинҫешке хӑй. Ҫиййӗнче тӑссӗрленсе юлнӑ плащӗ те чӗр куҫҫи таран ҫеҫ. Илтмен-курманнисем ӑна ача амӑшӗ тесе калаяс та ҫук.

— Иулита-а!— кӑшкӑрчӗ вӑрӑм ҫӳҫне ӗнси хыҫне чӑмаккаласа майлаштарнӑ Ванихер инке.— Ачуна илсе кай! Эх, мӗншӗн ытла айван-ши эсӗ?

Ҫак сӑмахсем хӑваласа ҫитсе чиперех хӑлхине кӗчӗҫ, анчах Иулита илтмӗше хыврӗ. Вӑл, такам тытса чарасран хӑранӑн, васкасах малалла ыткӑнчӗ. Пӗр хутчен те пулин, иҫмасса, каялла ҫаврӑнса пӑхинччӗ. Хыҫа юлнӑ ҫуртра унӑн нумаях та пулмасть ҫуратнӑ хӗр ачи выртать. Амӑшӗ пӑрахса хӑварнӑшӑн, тӳттӳ ҫиес килнӗшӗн татӑлса йӗрет. Таврӑнсамччӗ, амӑшӗ!

Хӗвел ҫинипе шупкаланнӑ плащ тӑхӑннӑскере таврана сарӑлнӑ кӗрхи тӗтре хупӑрласа илчӗ, Иулита часах унпа хутӑшса пӗрпекленчӗ. Тек ӑна ҫав тӗтререн уйӑрса илме май килмерӗ. Вӑл куҫран пач ҫухалчӗ.

* * *

Ирхи апатлану пуҫланчӗ. Палатӑра нимле шӑв-шав та ҫук. Амӑшӗсем ытарайми хӑнисене чунтан кӗтеҫҫӗ. Няня йӑрккать кӑна. Қашнинех вӑл пиеленӗ чӗрӗ пукане тыттарать.

Ванихер инке Иулита хӗр ачипе Ильяса уйрӑмшарӑн мар, пӗр харӑс илсе килме хушнӑ.

— Тархасшăн,— тет няня.— Ҫилтĕмĕр.

Малтан хĕрне, унтан ывăлне ҫитерет Ванихер инке. Икĕ аллинче — икĕ ача. Нăҫлаттарса ывăннăскерсем ăшă кăкăр ҫумĕнче паппа тăваҫҫĕ. Ҫам астарать-ши вĕсене тĕлĕкĕнче? Вăййи ытла савăнăҫлă-ши? Пĕрин те теприн, пĕлĕт айĕнчен шуса тухнă хĕвел ҫути евĕр, тути йăлтăр та йăлтăр сарăлать.

Ачисене ăсатнă хыҫҫăн пысăк шухăш-ĕмĕтсене пула канăҫне ҫухатнă Ванихер инке путлĕн апатланаймасăрах тĕп врач патне васкарĕ.

— Иулита ачине хамах илсе каятăп ĕнтĕ. Ўсчĕр Ильяспа пĕрле,— пуплерĕ вăл тухтăрпа.— Чи малтан ман кăкăра ĕмрĕ-ҫке. Мĕнле пăрахса хăварам ăна?

— Ăнланатăп, хаклатăп сире. Иулита ачишĕн сирĕнтен лайăх амăш тупăнас ҫук. Анчах хăвăрăн та ачăрсем сак тулли тата... мăшăрăр килĕшĕ-и-ха?— иккĕленнине систерчĕ врач.

— Эсир ан пăшăрханăр, тухтăр. Вунă кашăк шăкăртатнă ҫĕрте вун пĕрĕмĕш илтĕнмест те. Упăшка пирки сакна калатăп: ку тарана ҫитсе вăл ман сăмахран тухман. Енчен те вăл урлă пынă пулсан вунă ача ҫурататтăм-и? Эпĕ ăна Иулита ачи пирки тахҫанах систертĕм. «Ҫирек мĕн ту, хăвăн пăхма тивет. Тепĕр тесен, эпĕ хирĕҫ мар»,— терĕ вăл. Сывлăш ҫавăрса илнĕ хыҫҫăн Ванихер инке ҫапла хушрĕ:— Йĕкĕреш ача ҫуратнă тесе хут туса парăр мана. Эпĕ ҫав ачасăр кунтан тухмастăпах. Юрататăп та, шеллетĕп те ăна.

Тухтăр килĕшрĕ. Анчах ача чул муклашки мар, кипкепе чĕркесе тухас та утас теме ҫук. Малтан саккун хушнине пурнăҫламалла. Ҫавăнпа та Ванихер инке упăшкине кĕтрĕ. Ача усрама илни ҫинчен хут тутарма ашшĕн ҫўреме тивет. Йăкăнуҫ — ырă кăмăллă ҫын, арăмĕ хушнине итлерĕ.

Ĕҫ-пуҫ тăрланиччен татах темиҫе кун иртрĕ. Ҫу нимех те мар, тĕллев пурнăҫлантăр кăна.

Ĕнтĕ пурте хатĕр. Ҫирлĕ хутсем алăра. Ачасен сывлăхĕ йĕркеллĕ. амăшĕ те чиперех. Эппин, киле каймалла. Савăнăҫлă Ванихер инке хăйсене илме килекенсене кĕтме тытăнчĕ.

## 14

Арҫик пахчинче ҫынсем кĕшĕлтетеҫҫĕ — хăмла татаҫҫĕ вĕсем. Ҫунта ытларах пенсие тухнă карчăк-кĕрчĕк тата ҫамрăк ачасем курăнкалаҫҫĕ.

Кил хуҫи пахчана тухмалли калинкке ҫывӑхӗнче ларать. Ун ҫумӗнче — виҫмелли тараса. Қамӑн михӗ тулнӑ, тархасшӑн, пытӑр та виҫтертӗр. Татнӑ хӑмла мӗн чухлӗ тайнине вӑл тетрадь ҫине ҫырса пырать.

Қаҫ пулас умӗн, ӗҫ пӑрахсан, кашнинех мӗн чухлӗ хӑмла татнине кура укҫа-тенкӗ шутласа парать. Ҫак меслетпе, укҫине ҫийӗнчех тӳленипе ӗнтӗ, илӗртет-мӗн ҫынсене Арҫик хӑй патне хӑмла татма. Унӑн ҫамрӑк арӑмӗ (ку ӗнтӗ виҫҫӗмӗш арӑм) Акаҫҫи хӑйне мӑнаҫлӑн тыткалать. Улпут майри тейӗн ӑна. Ҫынсене вӑр-вар ӗҫлеме хӗтӗртет вӑл. Ҫанталӑк йӗпене каясран пӑшӑрханать имӗш. Акаҫҫи вара упӑшкин пӗрремӗш арӑмӗн хӗрне, чирлӗ Маюка, питӗ кураймасть. «Эрех пӑкки юлашки!» — тет ӑна. Маюкӗ чӑнах та ҫынсемпе тан ӗҫлеймест, аран мӗшӗлтетет.

«Пӗтерчӗ мана Нинук, хӑй пурнӑҫне те сая ячӗ, эрехе пулах сарӑмсӑр вилсе ҫӗре кӗчӗ, — ятлать халӗ те пулин Арҫик малтанхи арӑмне. — Эрехпе кӗлерӗннӗскерӗн ачи те нишлӗ ҫуралчӗ». Ку тӗрӗсех: хӗрӗн, Маюкӑн, мӗн халичченех анри-сухри уҫӑлса ҫитеймест. Пӑхма хӑй хитре, амӑшне хывнӑ, сывлӑхӗ ҫук.

... Чипер хӗрччӗ Маюк амӑшӗ, Нинук. Таврара ун пекки сахалччӗ. Унӑн сӑн-питне илем кӳрессишӗн ҫут ҫанталӑк хӑйӗн ӑсталӑхне хӗрхенмен. Икӗ пит ҫӑмарти — икӗ анис улма. Куҫӗ — кӑн-кӑвак. Куҫ харшисем — чӗкеҫ ҫунаттисем. Ҫӳҫӗ йӗпкӗн хура. Пӗвӗ хӑва хулли пек яштака. Илемлӗх туйӑмне те тур панӑ. Унсӑрӑн хӑйне сӑн паракан куҫӗ тӗслех тутӑр ҫыхса ҫӳремӗччӗ.

Вӑйӑсенче Нинук юрӑ пуҫласан ялӑн тепӗр вӗҫне илтӗнсе тӑнӑ. Такмак-юрӑсемпе савӑнтарнӑ вӑл ҫынсене. Ватти-вӗтти таҫтан аякран уйӑрса илнӗ ун сассине. Хӑй вӑл фермӑра ӗҫленӗ: чӑх-чӗп пӑхнӑ.

Ял йӗкӗчӗсене Нинук шутсӑр килӗшнӗ. Анчах хӗр чун уҫҫилӗх никама та суйласа илмен.

Акӑ кӳршӗ каччи Арҫик ҫартан таврӑнать, хӗр шырать. Сасартӑк хӑйсен пускилӗнчех илемлӗ чечек ҫитӗннине курать. Қанӑҫне ҫухатнӑ вара салтак. Кунсем иртнӗ май каччӑ ҫул тупнӑ-тупнах хӗр чӗри патне. Нинукпа Арҫик юнашар тӑрса утнине курсан ҫынсем ытараймасӑр пӑхнӑ вӗсене. Пурте пӗрлешессе кӗтнӗ. Ара, каччи — маттур, хӗрӗ — сатур, иккӗшӗ — ҫӗр пӗр ҫеҫкеллӗ чечек ҫыххи. Унашкалли, пӗри теприне илем, чӗрӗлӗх кӳрсе тӑраканни, пурнӑҫра сайра тӗл пулать. Чӑнах та кӗтни харама каймарӗ, часах туй кӗрлерӗ.

Пурӑннӑ ҫамрӑк мӑшӑр тӗнчене илем кӳрсе. Вӗсен тусюлташӗ самант йышланчӗ. Ара, Арҫик шофер-ҫке. Ав-

ланичченех колхоз машинипе чупма тытăнчĕ. Шофер тени пурне те кирлĕ çын. Вăл кирек кам патĕнче те кĕрекере тăванран тăван. Ķама кирлĕ мар-тăр машина? Пĕрин вăрмантан вут-шанкă турттарса килмелле, теприн япала сутса укçа тумалла, пасара сысна çурисем илсе каймалла.

Пĕри те тепри йыхăрать хăнана Арçикпа арăмне. Туртăнса тăрсан çын кăмăлне хуçан. Ирĕксĕрех килĕшме тивет.

Акă Нинукпа Арçик иккĕшĕ Ķурье патне кайрĕç. Алăк уçса кĕнĕ-кĕмен кил хуçисем çамрăк мăшăра хапăлласа ытти хăнисем çумне, сĕтел хушшине, сĕтĕрчĕç. Апат-çимĕç сĕтел тулли, ури тепле хуçăлмасть. Чĕреспе — пыл сăри, юнашар — четвĕрт эрех.

Арçынсен — хăйсен, хĕрарăмсен — хăйсен сăмах-юмахĕ текелесе Ķурье — Арçик çумне, ун арăмĕ Укахье Нинук çумне кăштăрт кĕрсе ларчĕç. Çапла картларĕç кил хуçисем хăнасен çулне, вĕсем часах тухса тарасран шикленнĕ евĕр.

Сăй йĕркине Укахье пуçларĕ. Ури çине тăрса кашнин умĕнчи мăнтăр хырăмлă черккесене эрех тултарчĕ. Унтан сулахай аллипе пĕр черккине çĕклерĕ, сылтăммипе хăй çине урлă-пирлĕ хĕрес хуркаларĕ. Вара янклаттарчĕ эрехне пĕр сывламасăр.

— Пурин те ман пек тĕппи ĕçмелле,— терĕ вăл черкке тĕпне чуп туса.

Нинук аллинче те — эрех тултарнă черкке. Вăл ăнланса та çитерейместь-ха: те ĕçсен аван, те — ĕçмесен. Ним тума аптранă енне куçне унталла-кунталла вылятkаларĕ. Мĕн калĕ-ши упăшки? Вăл, суккăр пекех, арăмне курмасть те темелле, эрехне ĕçнĕ те вилкăпа какай турамне çаклатасшăн тăрмашать.

Укахье чăннипех тапăнчĕ Нинука, пĕр тăхтамасăр ĕçме хистет. Аптрарĕ çамрăк хĕрарăм. Тăп-тулли тултарнă черккене тути патне илсе пычĕ. Ķăшт сыпрĕ. Ай-уй, чĕлхе вĕçне сухăр вĕлтрен пек вĕтелерĕ. Мĕн-ма ĕçтереççĕ ку армути шĕвекне? Тӳсмелле мар йӳçĕ.

Нинук эрех черккине каялла пама пикенчĕ. Ăçта унта! Тытĕ-и? Ķладовщик арăмĕ ун йышши çын мар, темле пулсан та тĕппипех ĕçтермелле хăнана. Ĕçтĕр те черккине тӳрех ӳпĕнтертĕр. Ĕçкĕре Укахьен йăли çавнашкал.

Ӳкĕтлет хăнана кил хуçи арăмĕ. Ķӳрененçи те тăвать:

— И-и ара, эсир, чаплă çынсем, пирĕн йăваш эрехе ĕçĕр-и...

Тек тилмĕрсе-мĕн тăмарĕ Укахье, тытрĕ те ирĕксĕрлесех эрехе Нинук çăварĕнчен ячĕ. Лешĕ чыхăнса кайрĕ.

— Эх, турăçăм, ме-ха шăршла,— çăкăр татăкĕ тыттарчĕ Укахье хăнана,— тарăннăн сывласа ил. Çамрăк хĕрарăмшăн черкке эрех пĕр кашăк пыл çăтнă пек çеç. Ĕçер те çапла — ĕмĕр пĕрле пурăнар.

Нинук çăкăра чĕллипех ярса тытрĕ. Эрехĕ вара ăшчикре çĕлен евĕр йăшăлтатса, каскаласа та пĕçертсе çӳрерĕ. Вар-хырăм ыратма пуçласран Нинук шартах сикрĕ. Пăшăрханни кăлăхах пулчĕ. Тепĕртакран йăлтах лăпланчĕ ăш-чик. Пит çăмарти вара тытăнчĕ вут тĕртнĕ пек тĕлкĕшме.

Çамрăк хĕрарăм хĕремесленнине çынсем те асăрхарĕç, апла пулин те пĕри те шарламарĕ. Сывлăш çавăрса та илеймерĕ Нинук, ун умне хул хушшине четвĕрт кĕленчи хĕстернĕ Курье пырса тăчĕ. Вăл черккепе мар, стаканпа ĕçтерет-мĕн эрехне.

— Сире эпир кума тăвасшăн,— йăваш сасăпа каларĕ хайхискер,— çав ятпа шăнкăртин! ĕçсе пар-ха, чиперккем.

Хăна килĕшмерĕ ĕçме, стаканне тытса çеç пачĕ.

Кладовщик арăмĕ ытла чее çын çав. Вăл упăшки Нинука эрех сĕннине куç айĕн пăхса сăнаса тăнă-мĕн. Тулхăрса утса пычĕ хайхискер, ятлаçанçи тăвать мăшăрне:

— Ых! Эсĕ те çав! Кӳлепӳ çеç сан! Хĕрарăма та ĕçтерейместĕн те... Мĕн арçын темелле сана?!

Укахье аллинче те стакан. Анчах та ун стаканĕнче эрех мар, шыв. Паçăр вăл çынсем сисиччен тултарса лартнă.

— Тав сана, Нинук!— терĕ те ĕçрĕ. Вара пушă стаканне кăтартса çапла хушса хучĕ:— Ас ту, ман пек тĕппи ĕçен, унсăрăн сĕре кӳренетĕп.

«Эпĕ мĕнтен кая? Çав териех çемçеккей-и?»— шухăшларĕ те Нинук самант пушатрĕ стакана.

— Пултаран!— мухтарĕ ăна Курье.

— Çапла кирлĕ те!— хушса хучĕ Укахье.— Хăнара урă ларни килĕшмест. Çынпа çын пек пулмалла.

Нинукăн кăмăлĕ çĕкленчĕ. Çынсем мухтанине илтесшĕнех тепĕр стакан ĕçме те хатĕр вăл. Пурте юратаççĕ иккен ăна, ав епле пыра-пыра чуп тăваççĕ. Тĕк ларма тек мехел çитмест. Сиксе тăчĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Ташлас килет! Купăс калăр!

— Купăс çук.

— Кăмака питлĕхне çапас!— сĕнӳ пачĕ тахăшĕ.

Унччен те пулмарĕ, пĕри кăмака умĕнчен питлĕх йăтса тухрĕ те ăна ăскăçпа панлаттарма тытăнчĕ.

Нинукшăн купăс калани те, питлĕхе тӳнккени те пĕрех. Тиркешмерĕ. Тĕнчере мĕн пуррине манса кайсах саркаланчĕ, хуçкаланчĕ, тапăртатрĕ.

Ăш хыпсан ăна пыл сăри пачĕç. Эрех те тыттарчĕç. Пĕрне те тиркемерĕ.

Тĕпел кукринче икĕ карчăк юрра пуçăнчĕç. Арçикĕн хĕрсе кайнă арăмĕ ниçтан та юласшăн мар. Вăл акăшмакăш авкаланса, хăлаçланса пычĕ çав кинемейсем патне. Иккĕшне икĕ хул хушшине хĕстерчĕ вăйлăн кăна. Лешсен тепле мăйĕсем татăлмарĕç. Хăй ахăрать, сасси хăлхана йӳçĕтет.

— Ах, ытла хаваслă çынсем иккен эсир,— çурăмĕнчен çупăрлаççĕ Нинукпа Арçике кил хуçисем ăсатнă чух.— Ӳлĕм те килĕр сас парсанах.

Нинука та хăнара пит килĕшрĕ. Килне таврăнсан та вăрах лăпланаймарĕ вăл.

— Арçик, малашне кам пире ыррă сунĕ, пурин патне те ĕçке кайăпăр. Юрĕ-и?— кушак пек çуланать Нинук упăшки çумĕнче.

— Кайăпăр, кайăпăр. Çывăр,— арăмĕн еккипе кайма тăрăшать Арçик.

Хăнана чĕнекенсем татах тупăнчĕç. Хисепленипе мар, машина кирлипе. Типĕ кашăк çăвар çурать. Шоферпа арăмне çу сĕр те, пурте пулать.

Сапла пуçланчĕ Нинукăн хăнаран хăнана ярăнасси.

Пĕррехинче (хĕллеччĕ ун чух) Нинукпа Арçик кӳршĕ яла кайрĕç. Çĕр выртсах ĕçрĕç нихăçан эрех-сăра курманла. Иккĕмĕш кунне, кăнтăр умĕн, киле кайма тухрĕç хайхискерсем. Сул таран вар урлă выртать. Çырма тĕпнелле анма ансат. Тăвайккинчен хăпарасси чĕр тамăк иккен.

Нинукăн тăвайккинелле тапаçланнă май сасартăк вăйĕ пĕтсе килчĕ. Урисем лăштăрах пулчĕç. Хăй те сисмерĕ вăл, мăшăрĕн аллинчен вĕçерĕнсе сĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ.

— Тăр, киле каяр,— тилмĕрет ăна упăшки.— Юр çинче выртса шăнса пăсăлăн.

Питĕ тăрасчĕ, ярăнса утасчĕ, урисем итлемеççĕ, вĕсем чăн-чăн чӳпĕк. Тăрăшать самрăк арăм, тăвата уран упаленет, усси çук. Эрехпе пĕр тăван куçа курăнман усал эсрел, ураран çекĕлпе çаклатса туртнăн, каллех çырма тĕпнелле шутарса антарать. Иртен-сӳрен çак ӳсĕр хĕрарăм хăтланăвне курса пĕç çапса кулчĕ.

— Чĕн пиçиххипе ăшала, хăех сиксе тăрать!— сĕнӳ парать кĕрĕк тăхăннă сарлака сухаллă мучи.

— Ай, камит!

— Намăссăр! Хĕрарăм ятне çĕртсе выртать.

Нинукăн хăлхи илтет.

— Ютпа мар, хам упăшкапа пĕрле ĕçнĕ!— ӳлесе йĕрсе ярать мĕскĕн.

Çав кун Арçик арăмне çунашкапа туртса таврăнчĕ килне.

Ялта сăмах тухрĕ: «Нинук ĕçке ярăннă».

Ķачча кайнă хыççăн çул талăк çурăран ача çуралчĕ Нинукăн. Эрнерен вилчĕ çав пепке. Пăянамăшĕ çеç пĕлет ача мĕншĕн вилнине. Çав хаяр каç ача ятне хунă май вĕсен пӳрт-çурчĕ çĕнĕ хăта кӳртнĕ чухнехи пек кисренсе тăчĕ. Хăнисенчен ытла Нинук хăй ĕçрĕ, ташларĕ, юрларĕ. Юлашкинчен сӳлтен кайнă кин ураран ӳкрĕ.

Пӳрт пушанчĕ. Пĕр пĕчĕк этем çеç макăрать, ун ĕмес килет.

— Арçик, ачана илсе пар,— хушать Нинук упăшкине.— Хампа çывăртăр.

Чăнах та, вăл ачине амăшĕ çумне вырттарчĕ.

— Ах, кин, ачана тăрса ларса çитер те сăпкана хурăпăр.

Ķинĕ юрласа ячĕ: «Пĕчĕк ывăлăм Çтаппан пур. Усал карчăк асанне пур. Вăл ăна амăшĕнчен уйăрасшăн. Айяр-ра, ирĕк памастпăр!»

Ватти тек шарламарĕ, çамрăксене юрама хĕн.

Ирхине тăрсан Нинук кăшкăрса ячĕ:

— Ача сывламасть!

— Ах, кин, ачана кăкăрпа хупласа вĕлертĕн ĕнтĕ. Ķаларăм-çке...

— Эс мана, эсрел карчăкĕ, çын вĕлерекен вырăнне хурасшăн-и?— чышкине юнаса пычĕ карчăк умне Нинук.— Янă пул чĕлхӳне ирĕке, çавăнтах кăкăрунтан чышса сывлайми тăвăп!

Шăлне çыртрĕ кинеми. Ķинĕ чарăнаймасть, тарăхнă чунĕпе шав кăшкăрашать.

— Вилчĕ. Мĕн тăвăн?! Татах çуратăп!— тет вăл.

Çул талăк çурă иртрĕ. Тĕрĕсех, çуратрĕ Нинук — хĕр ача. Маюк ят хучĕç ăна. Анчах Нинук эрехрен хăпаймарĕ.

Упăшки ку ачана та çухатасран хăрарĕ. Çавăнпа та ас тусах тăчĕ пĕчĕкскере инкек-синкекрен.

Ӳсессе ӳсет хĕр ача. Сывлăхĕ савăнтараймасть. Ăс енчен те тайлăкрах. Тухтăрсем пулăшаймасçĕ. Ача амăшĕн хырăмĕнче аталаннă чухнех эрех наркăмăшĕпе аманнă имĕш.

Çулсем иртеççĕ. Нинук ĕçлейми пулчĕ. Çынпа шай утайман ӳсĕре кам ĕçре тыттăр? Ķăларса ячĕç.

Ĕнтĕ унчченхи пек вĕсене никам та хăнана чĕнмест. Апла пулин те Нинук эрех тупса ĕçет. Ĕçмесĕр тӳсеймест. Унăн ăшне çĕлен йăва çавăрнă. Çав хăямат пыр шăтăкне татти-сыпписĕр йĕплет, чикет, чĕпĕтет, хĕртет. Эрех ланкăртаттарсан кăна ăш хыппи иртет.

— Мĕншĕн ăс пăрахсах ĕçен-ха эсĕ, Нинук?— теççĕ кӳршĕ арăмĕсем.

Сăлтавне çийĕнчех тупать:

— Телейсĕр пулнăшăн, пĕртен-пĕр хĕрĕм чирлишĕн ĕçетĕп.

— Эрехе пулах упăшкусăр тăрса юлтăн,— шеллеççĕ ăна çынсем.— Ăçтан тупăн ун пек ăмăрт кайăка?

— Хама та йĕпхĕртрĕ эрех. Ķурăр акă, тек ĕçместĕп!— сăмах парать Нинук.— Арçик те ачана илсе таврăнĕ. Каллех савăнăçлă пурăнăпăр.

Пăхаççĕ те ун çине — тĕлĕнеççĕ. Хĕвел пек çиçсе тăракан илемĕ йăлтах сӳннĕ. Пичĕ-куçĕ тăртанса тăрать. Самки, тути хĕррисем пĕркеленнĕ. Хыткан, типсе хăрнă йывăçах. Вăтăр урлă çеç каçнă, карчăк сăнĕ çапнă. Высăллă-тутăллă пурăнать. Яшки те, çăкăрĕ те ун — эрех. Пӳрт ăш-чикки пушанса юлчĕ. Арчара пĕр çĕнĕ кĕпе те çук. Йăлтах, йăлтах эрех юхтарса кайрĕ. Халĕ эрехне те малтанхи пек ĕçеймест. Çапах та хистесе ыйтать ăшри çăткăн эсрелĕ, чунне тăпăлтарса кăларать, мăйĕнчен тутăхнă мăка кусарпа хăйрать.

— Чун тухман-ха. Майлаштармалла,— тет. Вара вăл пĕринче эрех юхтарма пикенет.

Çинçе çип пек явăнса юхать сăмакун. Стаканпа тултарса ĕçет ăна Нинук. Уraран ӳкиччен сыпать. Хуран айĕнче çунакан вут пуççи çавна çеç кĕтнĕ тейĕн, патлатса та ӳкет урайне. Ķил-çурчĕ самантрах кăмрăкланать. Аран çăлса хăвараççĕ ӳсĕрскере.

— Пуçна çиен-ха капла,— теççĕ Нинука çынсем.

— Халĕ ĕçме чăнласах пăрахатăп,— ĕнентерет Нинук. Йăви тĕппипех саланчĕ. Чăнах, ăçта кайса кĕрес унăн халь? Телее, ăна урам урлă пурăнакан чип-чипер çынсемех хăйсем патĕнче пурăнма ирĕк пачĕç.

Иртнине манса ĕçе кӳлĕнмелле те, хăй каларăшле, çĕнĕрен пурнăç кăшкарĕ çавăрмалла. Çамрăк вăл, вăй питти. Нумайăшĕ Нинука шанчĕ, ĕçе тухасса кĕтрĕ. Çук çав. Ăшне вырнаçнă усал хăямат хăйĕн хыпкăчинчен вĕçертмест. Хаяр чир те çынна çавнашкал пăраламасть-тĕр. Хăтăлма çуках-ши вара? Тек ĕçес марччĕ. Çав çеç. Типтĕр, хăртăр чун илли. Хăтăлтăн та вара.

Лешĕ, ăшри, эрехшĕн антăхаканскер, Нинука тилмĕрсе

анратать. Юлашки хут пыр шăтăкне йĕпеттересшĕн, Хирĕç тăма, шăл çыртса кĕрешме вăй-хал тупăнмасть, ирĕксĕрех килĕшмелле. Кĕлт çеç тутанас. Пĕр тумлам, чĕлхе вĕçне нӳрлетме. Пĕр тумлам! Çав çутă тумлам Нинукăн куçĕ умĕнче ярăнса çӳрет, илĕртет, кăчăк туртать. Акă хайхи тумлам та мар — черкке, стакан, четвĕрт кĕленчи. Сиксе тăчĕ Нинук. Килĕнче никам та çук, пурте ĕçре. Тытăнать тустарма. Эрех шырать. Пăлтăра кĕрет, тĕп сакайне анса хăпарать. Кĕлете тухать. Ав краççын савăчĕпе юнашар — кĕленче! Симĕссĕн, чакăррăн, кĕреннĕн курăнать. Нинук хыпăнса ӳкрĕ, алли чĕтрет. Йăпăр-япăр ярса тытать те пăккине уçать. Палкаса тухать шăршă.

— Денатурат! — тет вăл урмăшнă сасăпа. Ăна такам тытса илесрен шикленнĕн хыпаланса кĕленче анинченех ланкăрт-ланкăрт çăтать. Йăлтах ĕçсе ярать мĕн пур пеккине. Вара çав тери ырă ĕç тунăн савăнса тухать кĕлетрен. Самант та иртмест, вут хыпса илет ун ăшне. Çунать! Ним тума аптранă енне пӳрте чупса кĕрет. Урата урлă каçнă-каçман тĕшĕрĕлсе анать урайне. Чухлать, капла выртни аван мар. Кутник айне упаленсе кĕрет вăл. Тӳсмелле мар кăмăл пăтранать. Хăстарасшăн. Пыршăсем татăлса çăвартан тухаççĕ пек туйăнать. Сывлама тăвăр. Тутăрне салтасшăн, аллисем пымаççĕ. Мăйĕнчен тем пăвса илет, тăнĕ те çухалать...

Нинук пурнăçĕнчи юлашки самант ку. Пырне чарайман пирки пуçне çиет вăл. Сая каять унăн пурнăçĕ. Çĕр синче ним те юлмасть асăнмалăх. Хĕрне валли çеç усал ят хăварать.

Хĕрĕ. Маюк, амăшĕ сăнлах, чипер. Анчах каччăсем пăхмаççĕ чирлĕ пикене. Амăшĕ пек эрех ĕçме вĕренесрен те хăраççĕ пулас.

* * *

Арçикĕн çĕнĕ арăмĕ, Акаççи, кунĕн-сĕрĕн лăркать:

— Йĕпхĕртрĕ мана нишлĕ хĕр ачу. Тасат ăна килтен!

— Ăçта кайса ярас, сĕм вăрмана-и? — хирĕçлет упăшки.

— Качча пар! Мĕн, ватăлса йӳтессе кĕтетне?

— Чирлĕскерне кам илтĕр?

— Майне туп!

— Майне, майне... — йĕкĕлтет арăмне Арçик. — Туп-ха каччă. Ухмах çын çук халĕ тĕнчере.

— Эх, тăмана эсĕ, Арçик. Маюка качча илекене машина парнелетĕп темелле те...

Акаççи машинине хĕрхенет-ха. Машинăпа ларса çӳреме хăрать вăл, чапĕшĕн çунать, пӳрт умĕнче машинăларни уншăн çăкăртан та хаклăрах. Укçи-тенки вĕсен нумай, çĕннине туянĕç каярахпа.

Арçик арăмĕн сĕнĕвĕпе килĕшрĕ. Ял çине: «Ҫачча тухма Маюк валли чаплă тупра хатĕрлерĕм — машина парнелетĕп»,— тесе сăмах сарчĕ.

Вăлтана çăрттан лекессе кĕтме тытăнчĕç Акаççипе упăшки.

## 15

Пуринчен малтан Теви алкум алăкĕ çинче алса тулĕ пысăкăш авалхи çăра çакăнса тăнине курчĕ. Аçта тухса шунă-ши ку карчами? Йĕри-тавралла пăхса илчĕ вăл. Ҫуçĕ умне тап-таса кил карти тухса выртрĕ. Ниçта та пĕр çӳп-çап та çук. «Маттур хĕрарăм çак ман кукамi. Йĕркепе тирпейлĕх — ун тусĕ»,— мухтарĕ ăна Теви.

Пӳртне ура ярса пусаймасть ĕнтĕ: «хурçă йытă» кĕртмест.

— Хапхана питĕрменскер таçта аякка тухса кайман тăр,— хăй тĕллĕн мăкăртатрĕ вăл. Вара лупас хыçĕнчи пахча на тухрĕ.— Ҫуками, куками!— ачаш сасăпа чĕнчĕ Теви.— Аçта эсĕ?

— Ҫунта эпĕ, Тями. Мĕн, çухатрăн-им? Ан пăшăрхан, кил тĕтĕмĕ сӳнмен-ха.

Вилмен-ха, пурăнатăп тенине пĕлтерчĕ ĕнтĕ ку. Няппи карчăк тӳрленсе тăчĕ, пуçĕнчи шурă тутăрне юсарĕ, саппунне хăпартса кĕпине пилĕкĕ тĕлĕнчен кăрт-карт турткаларĕ. Вара кăларса пăрахнă кишĕрсене çулçинчен тытса йăран хушшинчен тухрĕ.

— Мĕнле çӳретĕн?— пырса ыталарĕ Теви кукамăшне питĕнчен чăп-чăп чуп туса.

— Эх, Тями, килтĕн-и? Ҫĕтеттĕм-ха, мăнукăм, кĕтеттĕм. Ҫалаçмалли мăй таран.— Вăл кĕрӳшĕ килсе укçа хăйпăтасшăн пулни çинчен пуплесшĕнччĕ.

— Ҫукамай, кĕтни сая каймарĕ сан. Эпĕ пуçĕпех килтĕм. Малашне пĕрле пурăнăпăр.

— Сăмаххуна тем тĕшмĕртсех çитеймерĕм-ха,— шала путнă куçне чарса мăнукĕ çине пăхрĕ карчăк.

— Патти хăваласа кăларса ячĕ,— терĕ Теви.— Уйрăлтăмăр.

— Ах тур!— хыпăнса ӳкрĕ Няппи.

— Мĕн, йышăнасшăн мар-и мана эсĕ, кукамай?

— Ĕçĕ йышăнмассинче-и вара? Кăшт мăрт-март пулнăшăнах янраса ан çӳре-ха тупата. Ял çинелле тухсан ячĕ каять, çил çине тухсан тĕсĕ каять теççĕ.

— Каять ĕнтĕ. Мĕн тăвас? Ал çĕкленĕ хыççăн пурнăç малалла шумĕ. Кукамай, кайса ил-ха ман япаласене.

— Тӳрех унашкал хăтланмăпăр,— мăнукĕн пăлханнă кăмăлне пусарма тăрăшрĕ Няппи.— Тен, ашшĕ-амăшĕпе калаçмалла-тăр, ывăлне ăс паччăр.

— Эх, кукамай, чухламастăн иккен: ара, хурăн хуппи хăй çумнелле пĕрĕнет-çке. Мĕншĕн вĕсем хăйсен ачине хирĕç кайччăр? Тата Патти итлес пур-и ватăсене? Амăшĕ тĕрмере ларса тухнă хыççăн мана хӳтĕлĕ-и?

— Вăл хăй айăплă-çке. Патшалăх выльăхне тивмелле марччĕ.

— Усал хунеме çăмарта сарринче те çӳпĕ тупнă тет. Эпĕ, ун кинĕ, ăна вăрăпа тыттартăм. Майланас çуках вăл çуртра ман пурнăç.

Няппи карчăк тахçанах ăнланнă хăйĕн йăнăшне: аслă шкула вĕренме ямарĕ, ирĕксĕр качча пачĕ вăл мăнукне. Çемье тени чăмăртанаймарĕ вĕсен. Ача та çуратаймарĕç. Ялан уйрăм пурăнаççĕ. Патти — хулара, Теви — ялта. Мăнукĕн ăнаççăр шăпи пирки хăйне вăрттăн айăплать карчăк. Паттипе Тевие çыхса тăракан çип, куçа курăнманскер, хăçан та пулин татăласса сиснĕ вăл. Çак хурлăх алăк уçса кĕрессе те кĕтнĕ. Çавăнпа та халĕ мăнукĕ каланине пĕрре те çĕнĕ хыпар-хăнар вырăнне хумарĕ. Апла пулин те тӳрех килĕшес килмерĕ Теви пĕлтернипе. Каялла упăшку патне кай тесе те хистемерĕ. Ялта уйрăлнисем пайтах. Вĕсенчен чылайăшĕ çĕнĕрен качча тухать, авланать.

— Тепĕр тесен, пуçна ан ус, Тями! Халиччен çынна култарман, ура çине пустарман. Тен, телейӳ — малта.— Няппи мăнукне, пĕчĕк чухнехи пек, аллинчен ярса тытрĕ те:— Атя пӳрте кĕрер, сĕтел хушшине ларса юмахлар,— тесе чĕнчĕ.

Чунĕ тĕпĕпех хускалчĕ пулас ун: чарăнайми калаçать. Мăнукĕпе хăйне те, Паттипе унăн ашшĕ-амăшне те питлемест вăл. Сăмах-юмахĕ пачах урăххи — малашнехи пурнăç çинчен.

— Ыран, ирхи кӳлĕм, сысна çури пек ӳснĕ хăяра пухар. Сарăхма тытăннă. Пысăк каткапах тăварлас. Хĕл каçа çатăртаттарар. Купăста пуçĕсем те чул пек хытă. Сивĕтсен симĕс çуначĕсене йӳçĕтсе чăмакка-чăмакка туса шăнтăпăр. Купăста яшки хĕлле анаканччĕ-ха.

— Уйрӑмах пӑрҫа ярса вӗри кӑмакара пыллантарсан,— сӑмах хушрӗ Теви.

— Аннӳ те ҫапла пӗҫернине ҫиме хапӑлччӗ...— Няппи карчӑк шухӑша кайрӗ. Вара мӑнукӗнчен ыйтрӗ:— Итлеха, Тями, мӗн кирлӗ сана, мӗн туянасшӑн эсӗ?

— Нимех те. Ман мӗн кирли пурте пур,— кукамӑш аллине чӑмӑртарӗ Теви.

— Пурте ҫук пулӗ-ха та. Хӗлле ҫийӗнтен кухвайккӑ каймасть хӑвӑн.

— Ферма чаплӑ тумпа йышӑнмасть, кукамай.

— Кӑҫал хӗлӗпех халӑха хулана театр курма автобуспа илсе ҫӳретпӗр тесе калать тет совхоз директорӗ. Театра кухвайккӑпа каяймӑн.

— Пальто тӑхӑнатӑп.

— Ҫухасӑрскерне-и?

— Тутӑр айӗнче тилӗ ҫухи мӗн тума кирлӗ?

— Ҫук, тек тӳсеймestӗп эсӗ лӑпӑс-лӑпӑс тум тӑхӑннине. Аҫупа аннӳ тек ятлаҫҫӗ-тӗр мана: «Хытать карчӑк. Пирӗн хӗр ачана пачах тумлантармасть»,— теҫҫӗ пулӗ. Кӑпӑшка ҫухаллӑ пальто туянӑпӑр, калпакӗ те тилӗ тирӗнчен пултӑр. Аннӳ пек, хула майрисем пек ҫӳре. Пукраввчен пушмак пӑру тата темиҫе сурӑх сутатӑп. Ӗмӗтленнине туянма укҫа-тенкӗ пухӑнать.

— Хам та самаях ӗҫлесе илетӗп. Пӑянам тӗрмерен таврӑниччен ҫурт лартас ӗмӗтӗм укҫана салаттармарӗ.

— Эпӗ туянса пани, Тями, аҫу-аннӳ парни.

Лӑпланма пӗлмен Няппи карчӑк пӳртӗнче те каллӗ-маллӗ кускаларӗ. Мӑнукне сӑйлама сӗтел ҫине чи тутлӑ апат-ҫимӗҫ лартрӗ.

Сӗтел хушшине ларсан тӳсеймерӗ ыйтмасӑр:

— Патти кӗрӗве мӗн ҫитмест? Ах, пӗлетӗн-и эсӗ, Теви, вӑл мана килсе тустарнине?

— Сана? Мӗн сӑлтавпа?

— Укҫа тӑпӑлтарасшӑн пулчӗ манран, машин туянмалӑх. Ҫурт-йӗрӗме пӗр патак юлмиччен суттарасшӑн. Явӑл! Хӑйӗн пӳрт пураласчӗ. Чухлӗччӗ вара. Упӑшкампа пӗрлешнӗ чух пирӗн ним те пулман. Пуҫларӑмӑр пурнӑҫа икӗ чикан тӗмеске ҫинче ларнӑ пек. Ай-ай, пӑсӑркки патӑм вара хӑйне. Пушӑ алӑпа тухса кайма тивнӗшӗн куҫран сӑсӑл вӗҫтерсе хӑварчӗ.

Ҫур ҫӗр ҫитиччченех калаҫрӗҫ вӗсем иккӗш.

Тепӗр кунне Теви фермӑран таврӑнса апатланнӑччӗ

кăна, Матиç вĕçтерсе çитрĕ. Ана Няппи карчăк уçса кĕртрĕ.

— Теви кунта-и?

— Кунта,— тутине пӳрнипе урлă тытрĕ ватти. Ку ĕнтĕ шăпрах калаçмаллине систерни пулчĕ.— Эх, ăшшă, пирĕн хуйхă. Хыпса çунатăп.

— Няппи тăхлачă, ытлашши ан кулян-ха,— лăплантарчĕ ăна Матиç.— Эпĕ тахçан пĕр кĕнеке вуланăччĕ. «Тĕнчере хуйхă-суйхăсăр çын çук. Ун пекки тупăнсан вăл этем те мар вара»,— тенĕччĕ унта. Акă мĕнле шутлаççĕ ăслă çынсем.

Тусĕ çатăлтатнине илтсе пăлтăртан Теви тухрĕ. Кукамăшĕ çавăнтах куçран çухалчĕ.

— Эсĕ, синьорита, кунта иккен!— кăшкăрса ячĕ Матиç савăннипе.— Сана шыраса, Теви, Шăкăрттансем патне кĕтĕм. Патти пĕчченех килĕнче. «Арăму кирлĕччĕ те мана»,— терĕм. «Ман арăм çук, уйăрса ятăм»,— тет. Ятласа хăвартăм ăна. Мĕнле тытамак тытнă Паттие?

— Вăл тĕрĕссине каланă сана, Матиç,— пуçне пĕкрĕ Теви. Пăлханнипе сылтăм ури пуçне урай хăми çийĕн выляткалама тытăнчĕ.

— Ан тĕлĕнтер-ха. Кай! Халиччен шăпăртах пурăнаттăрччĕ-çке.

— Вулкан тени вăл кĕтмен çĕртен сирпĕнсе тухать.

— Вут-çулăмне чарма та пĕлмелле. Эх, Теви, пĕрре ятлаçнипех кам икĕ еннелле тухса уттăр? Халех кай упăшку килне. Пĕлетĕн-и, тусăм,— йăл-йăл кулкаласа илчĕ Матиç,— хирĕçкеленĕ хыççăн мăшăрпа йăпанма мĕн тери ырă! Тин курнăçнă пек, çук, апла та мар-ха, пĕрремĕш чуп-чуп каçĕ пек, пĕр-пĕрне юратса тăранаймастăн. Тепĕр чух эпĕ Уçăппа юриех хирĕçкелесе илетĕп. Кайран, мирлешсен, ах, чăн-чăн — пыл! Пуçтарăн, хамах сана Патти патне кĕртсе хăварам. Уйрăлма кирлĕ мар. Патти хитре çын-çке.

— Эх, Матиç, ăвăс хитре-те, хуппи йӳçĕ.

— Эппин, хăвăр ирĕкĕр,— айăплăнカларĕ Матиç.— Килтĕм те тем ĕмĕр тăтăм.

— Тĕпелелле те иртсе лармарăн-çке.

— Каям-ха. Уçăп кĕтет пулĕ.

Теви хăнине ăсатма урама тухрĕ.

— Çанталăк часах йĕпене каять,— хаш сывласа ячĕ Матиç.

— Тӳпере пĕр катрам пĕлĕт те çук-çке, хĕвелĕ те ав епле тăрăшса хĕртет.

— Курмастăн-и, тиха епле выляты!

Теви ун-кун пăхкаларĕ те курах кайрĕ: тури касран пушă урапине хăлтăртаттарса лав анать. Туртари лаша çумĕнче улма чăпар тихи чупать. Вăл, чăнах та, кайри урисене вĕлт-вĕлт ывăткаласа ашкăнать.

— Сан кусна пĕрмай вылякан тихасем курăнаççĕ,— кулкаларĕ Теви, Матиçпе тавлашмарĕ. Ара, тус-тантăшĕ ваттисен сăмахне ĕненет.

— Эпĕ Йăкăнуç пичче патне кĕтĕм... Ванихер инкене илме каясси пирки калаçса татăлма,— тутине тутăр вĕçĕпе шăлкаласа илчĕ Матиç. Куçĕ чарăлчĕ, шăп та шай — алтăр. Пĕвне яш тытрĕ, кăкăрне каçăртрĕ. Пыр тĕпне тасатрĕ ӳсĕрем пек тукаласа. Эппин, вăл тĕлĕнтерсе каçăхтаракан хыпар пĕлтерме хатĕрленет. Теви унăн кашни хусканăвне тавçăрса илме хăнăхнă. Кĕтме тивмерĕ, пуçларĕ:— Эй, турă, мĕн пĕлтереп халь сана! Ас ту, йăванса ан кай тулькка.

— Тăрăшăп,— ăшшăн кулса ячĕ Теви.— Тытăн унама.

— Каларăм-çке сана Йăкăнуç пиччесем патĕнче пултăм тесе. Алăк урлă каçрăм хайхи, тур çырлах! Кама куратăп пулĕ тетĕн? Сĕтел хушшинче Лавруш лара парать. Сăмарта хăпартни çиет пули? Ах, ача! Патне ан пыр, хитреленсе кайнă хăй, шăп та шай — мункун çăмарти. Такам пăхса такам ăмсанмалла.

— Эпир Лаврушпа шоссе хĕрринчен яла пĕрле таврăнтăмăр.

— Эсĕ ăна кĕтсе илме тухнă-и?

— Ман ма кĕтсе илес-ха ăна? Кĕтмен çĕртен тĕл пултăмăр. Çавă çеç.

— Мĕн йӳтĕмпе кайнă эсĕ шоссе хĕррине?— куçне чеен выляткаласа илчĕ Матиç.

— Сăлтавсăрах. Ăш вăрканипе утрăм та утрăм. Хам та сисмен аслă çул çине пырса тухнине.

— Апла иккен,— текелерĕ Матиç сывăх юлташне ĕненсе пĕтереймен енне. Ситменнине, пуçĕнче самантрах арăшпирĕш шухăшсем амаланчĕç: «Лавруш чунтан савнă-çке Тевие. Тен, халь иккĕшĕ (Теви упăшкипе урлă-пирлĕ пулса пĕтнĕ хыççăн) малтанхи юрату пĕркенчĕкĕ айне тăма ĕмĕтленеççĕ. Теви никама та чăн шухăшне каласа парасшăн мар ĕнтĕ...

— Ванихер инке патне кайма совхоз икĕ машина парать. Камсене чĕнетпĕр?

Лавруш пирки пуçланă сăмахне Матиç тăнчах сӳнтерме шутламарĕ:

— Лавруша хăвармастпăрах, амăшĕ куç тулли ывăлне

курса хӗпӗртетӗр,— хушса хучӗ вӑл.— Тата вӗсен ҫывӑх ҫыннисене, тӑван-пӗтенне йыхӑрар.

— Юрӗ, кайса илӗпӗр Ванихер инкене,— терӗ шухӑшлӑн Теви.— Тепӗр кунне эпӗ Шупашкара ҫул тытатӑп.

— Ял хуҫалӑх институтне-и?

— Ҫавӑнта.

— Ӑмсанатӑп сана, Теви,— шухӑшлӑн каларӗ Матиҫ. Хура куҫӗсем тӗксӗмленчӗҫ ун.— Ӗнтӗ эсӗ часах вӗреннӗ ҫын — зоотехник пулӑн.

— Сана кам чарать вӗренме?

— Ман ҫемье пысӑк: упӑшка, ачасем... Вӗренме вӑхӑт тупаймӑп.

— Тупан. Шута ил: эсир — иккӗн, эп — пӗччен. Мана та вӗренме ҫӑмӑл пулмӗ. Хӑрах алӑпа тӗвӗ салтма та йывӑр теҫҫӗ,— ӳкӗтлет Теви тусне.

— Чӑнах, ма хӑратӑп-ха эпӗ? Ҫемьене пӑрахса хӑвармалла мар, килте, заочно, вӗренмелле. Наукӑна йӑлтах пӗрле кӑшлӑпӑр,— юлташӗпе килӗшрӗ Матиҫ.— Эпӗ те юлмастӑп санран.

Ыталаса илчӗҫ вӗсем пӗр-пӗрне.

## 16

Хӗвел тӳпенелле кармашать. Ҫӳлелле хӑпарнӑ май вӑл ача ҫуратмалли ҫурт палатисенче паппа тӑвакан пепкесен, вӗсен амӑшӗсен пичӗсене ҫупӑрласа ачашлать, тутлӑ ыйхӑран вӑратать.

Кӗтмелли пӳлӗме тухма чӗнсе хӑварчӗ няня Ванихер инкене. Паян ӑна ача ҫуратмалли ҫуртран кӑлараҫҫӗ. Йӑкӑнуҫ илме килессе пӗлсе савӑнӑҫлӑн утрӗ вӑл каланӑ ҫӗре. Тӗрӗсех, пӳлӗм алӑкне уҫсанах упӑшкине курчӗ. Тӗлӗннипе самантлӑха хытса тӑчӗ. Мӑшӑрӗ каччӑ чухнехинчен те хитререх. Ҫийӗнче ун ҫав тери капӑр тум. Пуҫӗнче шлепке. Шлепке ҫунатти айӗнчен хура куҫӗсем ҫиҫеҫҫӗ. Йӗпкӗн хура костюм тӑхӑннӑ, кӗпи шап-шурӑ. Галстук та ҫыхнӑ, чӑпаррине.

Ванихер ҫӑвар уҫаймарӗ-ха, унӑн куҫӗсем упӑшки тӑрӑх шурӗҫ. Курчӗ: уринче тӗкӗр пек йӑлтӑртатакан пушмак.

— Чӗлхӳ ҫӗтрӗ-и, Ванихер? Маннӑччӗ пулӗ-ха эпӗ еиле чипер пулнине. Тӗлӗн, тӗлӗн манӑн ҫамрӑклӑх таврӑннинчен,— тӳсеймерӗ мухтанмасӑр Йӑкӑнуҫ.

— Ытла ырӑ пулмалла та лайӑх тум тӑхӑннипех ҫамрӑклӑх таврӑнсан,— йӑл-йӑл кулкаларӗ Ванихер.— Анчах

ăнкараймастăп, ăçтан тупса тăхăннă эсĕ куна?— тĕлĕнчĕ вăл.

— Лăплан, хаклă арăмăм. Вăрламан ку тума. Çак йăлтах Лавруш ывăлăмăр парни,— терĕ Йăкăнуç икĕ аллине те кăкăрĕ çине хурса.

— Лавруш килнĕ-и?— хыпăнса ÿкрĕ Ванихер. Куçĕсем куç çульпе тулчĕç. Çавăнтах ĕсĕклеме тытăнчĕ.

— Ванихер, Ванихер, мĕн аташатăн эсĕ?.. Мĕншĕн çав териех пăлханмалла?— арăмне ыталаса çурăмĕнчен лăпкарĕ Йăкăнуç.— Вăл алкум вĕçĕнче эсĕ пĕчĕккисемпе тухасса кĕтсе тăрать. Туттă. Пуçтарăн. Акă сирĕн валли парнесем.— Йăкăнуç чăматан тыттарчĕ мăшăрне.

Ванихер инке тăхăнмалли пӳлĕме кĕрсен чăматанне уçрĕ. Икĕ çыхă унта. Салтрĕ. Пĕринче — ача кипкисем, утиял вырăнне — «конверт» текенни. Тепринче — хăй тăхăнмалли тумтир. Мĕн курни чунтан хурлантарчĕ ăна, çавăнтах мăн кăмăллантарчĕ те. Хăй çуратса ӳстернĕ ачин парни-çке... Вăл пульница халатне хывса тумланма тытăнчĕ. Малтан кашни япалине тыта-тыта пăхрĕ. Мĕн кăна çук-ши? Акă аялтан тăхăнмалли кĕпе. Шап-шурăскер, вĕçĕнче шит сарлакăш шăтăкла. Кофти те пур, сенкер тĕслĕ. Костюмĕ куçĕ пекех кăвак. Чăматан тĕпĕнче — тутăр, çинçе шурă çăм çиппинчен чĕнтĕрлесе çыхнă ăна çекĕлпе.

Тумланчĕ Ванихер инке. Вăрăм çӳçне хыçалалла тураса якатрĕ, çивĕтлерĕ, вара ĕнси хыçне çавăрса çыхса пуç йĕппиисемпе çирĕплетсе меллĕн майлаштарчĕ. Çӳçне çапла тирпейлесен хайхи шурă тутăрне пуçĕ çине уртрĕ. Вĕçĕсене хул пуççи урлă ячĕ. Стена çумĕнче тĕкĕр. Ун умне пырса тăчĕ Ванихер. Куç кĕскирен пăхакан хĕрарăм килĕшрĕ ăна, тӳсеймерĕ йăл-л кулмасăр. «Тем тесен те чаплă тум çынна хитрелететех»,— шухăшларĕ вăл.

Пепкисене пиеленĕ ĕнтĕ. Пĕри — тухтăр, тепри сестра аллинче. Ванихер инке вĕсемпе пĕрле коридор тăрăх утрĕ. Хыçĕнчен кунта ĕçлекенсем кĕшĕлтетсе пыраççĕ.

Крыльца вĕçĕнче амăшĕпе ачисене илме килнисем тăраççĕ: Ванихер инке мăшăрĕ Йăкăнуç, вĕсен аслă ывăлĕ Лавруш, Теви, ял Совет председателĕ Матиç, тăванĕсем, совхозри çĕвĕ мастерскойĕн пуслăхĕ Иван Иванович (Ванихер инке — пултаруллă çĕвĕç. Мĕн çамрăкранпах çав ĕçпе тăрмашать. Ялта кашни килтех вăл çĕленĕ ваткăллă утиялпа витĕнеççĕ. Кирек кам çийĕнче те ун алли ăсталанă тумтире куратăн).

Ача çуратмалли çуртăн пысăк алăкĕ уçăлчĕ. Чи малтан Ванихер инке, унтан пĕчĕккисене çĕкленĕ тухтăрсем курăнчĕç.

— Урра!— алă çупса ячĕç крыльца вĕçĕнче тăраканнисем.

Йăкăнуç нихăçан курманла арăмĕ çине куçне чăрлаттарса пăхать. «Қашни ача тумассерен çамрăкланать çак Ванихер,— шухăшлать вăл.— Шутсăр чипер-çке ман арăм! Қу чаплă тумпа кинори артисткăран та иртерет».

Акă ăна пепкисене тыттарчĕç.

— Ас ту, Йăкăнуç, ан ӳкерех вĕсене,— асăрхаттармасăр тӳсеймерĕ мăшăрне Ванихер.

— Ан пăшăрхан,— йăл-йăл кулкаларĕ Йăкăнуç.— Пĕрремĕш хут ача тытмастăп-иç.

— Çапах та... Анчах хальхинче иккĕ...

— Эх, каларăн та. Тепрехинче виçĕ ача тыттар, ним мар йăтăп.

— Юрĕ,— терĕ Ванихер. Ун пит-куçĕнче ăшă кулă палăрчĕ.— Халăх, илтрĕр-и? Упăшка çитессинче виçĕ ача çуратма хушать. Заказ йышăннă тесе шутлăр. Эпĕ плана ытлашшипех тултарма сăмах паратăп: виççĕ мар, пĕр харăс тăватă ача çуратăп. Турцире пĕр хĕрарăм ав улттă харăс çуратнă.

Арăмĕпе упăшкин путишле калаçăвĕ çынсене кĕр-кĕр култарса ячĕ.

— Юлташсем, атьăр васкар!— хушрĕ Матиç.— Çанталăк селĕм чух каяр. Чаш-чаш çумăра лексен пепкесене шăнтăпăр.

— Радиопа паян çумăр пуласси пирки шарламарĕç-çке,— сăмах хушрĕ Лавруш.— Ав епле хĕвел хĕртет!

— И-и ара, Илен кунĕ иртсен мĕн шанмалли пур. Қăнтăрлаччен — çулла, кăнтăрла иртсен — кĕркунне.

Ванихер инке алкум вĕçĕнче тăракан тухтăрпа, сестрасемпе, няньăсемпе алă тытсах сыв пуллашрĕ. Вĕсене Матис те ял Совет ячĕпе тав турĕ, ырлăх-сывлăх сунчĕ. Вăл хăйне чи кирлĕ çын пек тыткалать. Патне ан пыр — чăнчăн хуça. Ăнланмалла: вăл — чи явапли-çке. Унччен те пулмарĕ, ял Совет председателĕ сылтăм аллине тĕрлĕ тĕслĕ хăюсемпе те шарсемпе илемлетнĕ машинăсем еннелле тăсса кăчăк туртрĕ. Шоферсем ăнланчĕç ăна. Вĕсем хăйсен урхамахĕсене крыльца вĕçнерех кăлтăртаттарса пычĕç те чарчĕç.

— «Волга»— Ванихер инке çемйи валли. Тархасшăн,— сĕнчĕ Матиç машина алăкне уçма пикенсе. Вăйĕ çитмен енне шофера хушрĕ:— Ваня, уççам.

Машина алăкĕсем яри уçăлса кайрĕç.

Лавруш амăшне çавăтрĕ. Теви вара Йăкăнуç çумне пычĕ.

Амăшне машинăна кĕрсе ларма ывăлĕ пулăшрĕ. Йăкăнуç шоферпа юнашар вырнаçрĕ. Хисеплĕ вырăн. Унсăрăн мĕнле, ун аллинче икĕ ача.

Лаврушпа Теви, пĕр-пĕрне сăмах хушма хăяйманскерсем, ыйтуллăн ун-кун пăхкаларĕç. Юрать-ха çийĕнчех Матиç çăлчĕ, вăл васкатанçи пулчĕ:

— Эй, эсир, мсье, сеньорита, мĕн тĕлĕрсе тăратăр? Кунта сирĕн валли те вырăн пур.

— Ман, тен, теприн çине...— именсе пуçне чикрĕ Теви.

— Иккĕмĕш машина сансăрах лăк тулли,— çывăхра тăракан çынсем çинелле аллипе сĕлтсе илчĕ Матиç.

Теви тилмĕрттермерĕ.

Пурте вырнаçса ларсан машинăсем тапранчĕç. Аслă çул тăрăх юхрĕç вара тăван ялĕ еннелле. Çил ачисем машинăсем çумне çирĕплетнĕ кĕрен, симĕс, сарă, кăвак шарсемпе тытăнчĕç вылямa! Футбол мечĕкĕ вырăнне хураççĕ пулĕ-и, ывăтаççĕ унталла та кунталла. Шарсем машина кантăкĕсем е пĕр-пĕрин çумне çапăнса выляççĕ.

Çул çинче шлепкеллĕ çын хирĕç пулчĕ. Амсанса пăхса юлчĕ çак капăр машинăсене.

— Мĕнле кортеж пулчĕ ку?— тĕлĕнсе пуплерĕ вăл хăй тĕллĕн.— Туй теес, машина ăшĕнче венчет тумĕ тăхăннă çамрăксем курăнмарĕç...

Матиçрен ыйтнă пулсан тӳрех çапла ăнлантарнă пулĕччĕ: «Мсье, машинăри чи çамрăккисен туйĕ тепĕр çирĕм çул е чĕрĕк ĕмĕр иртсен кĕрлĕ. Вĕсем çутă тĕнчене килнĕ ятпа йĕркеленнĕ çемье уявĕ ку. Шутсăр чаплă праçник».

Сăрт тӳпи урлă каçсан лапамра, йывăçсем хушшинче, хĕç тимĕр витнĕ çурт тăррисем курăнчĕç. Машинăсен унта çитмелле. Часах укăлча хапхи уçăлĕ те, икĕ пепке пуçласа тăван ялне кĕрĕ. Урам урлă каçсан вĕсене хапăлласах ашшĕ-амăш килĕ йышăнĕ. Кунта, ашшĕ-амăшĕн ăшă йăвинче, пĕчĕкскерсем тĕпленсе аталанĕç, ăс-тăн пухса чăн-чăн çын пулса ӳсĕç.

Ял-йыш кĕтет Ванихер инкене. Хăшĕ-пĕрисем ял Совечĕ умне кĕпĕрленсе тăнă. Ача-пăча шавласа укăлча хапхи çинче ларать.

— Килеççĕ!— кăшкăрса ячĕ ачасенчен пĕри, витĕр куçли, умлă-хыçлă йăрлатакан икĕ машинăна чи малтан асăрханăскер.

Часах ыттисем те курчĕç.

— Урра!.. Килеççĕ!— çухăрашма тытăнчĕç хайхискерсем.

Карта çинчен çĕре йăпăр-япăр сике-сике анчĕç шăпăр-

лансем. Васкасах уй хапхине уçрĕç те çулăн икĕ айккипе салтаксем пек тăрса тухрĕç. Қашниех кăкăрне каçăртрĕ. Чылайăшĕн аллисенче — чечек çыххи...

Икĕ машина хапхаран кĕрсе Ванихер инкене аллинчи чечекĕсемпе саламлакан ачасем умĕн иртрĕ.

Тур çырлах! Мĕн пулчĕ? Юпалла тăп тăракан шăпăрлансем куç хупса иличчен вырăнтан вĕçерĕнчĕç те, такам пушăпа хăвалана пек, урам хушшипе йăрлатакан машинăсем хыççăн ĕрĕхсе чупрĕç.

Шоферĕсем вак халăха ăнланаççĕ пулас, машинăсене тĕрлеттерсе хăвалани сисĕнмест, ерипен кăна чуптараççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ лешсем вĕсенчен шит юлмарĕç.

Урам кĕтессине çитсен машинăсен çулĕсем йўпленчĕç. Малти сулахаялла пăрăнса тури каса каçрĕ. Ун Ванихерсен тĕлне çитмелле.

Хитре, стенисене эрешленĕ çуртсем ирте-ирте юлаççĕ. Йăлтах вĕсене юлашки çулсенче лартнă е çĕнетнĕ. Пурте тенĕпе пĕрех — кирпĕчрен. Ретри çуртсенчен пĕрин умĕнче йышлă ача-пăча тăрать. Шофер машинине шăп та шай çавăнта чарчĕ. Шоферсăр пуçне пурте машинăран тухрĕç.

Çемье — хаваслă тĕл пулу ытамĕнче. Пĕр Теви çеç хăйне ытлашши туйрĕ кунта. Вăл никам сисиччен шăвăнчĕ. Çитменнине ăна ял Советĕнче Матиç кĕтет. Унсăр пĕр-пĕччен мĕн тăвайтăр вăл? Чупрĕ вара тусĕ патне.

Йăкăнуç хăйĕн аллинчи пепкесенчен пĕрне аслă хĕр ачине тыттарчĕ. Унччен те пулмарĕ, кĕçĕннисем аппăшне сырăнчĕç. Вĕсем ун аллинчи ачана курасшăн.

— Қăтарт-ха, аппа!

— Ку хăшĕ. Ильяс-и?

— Синерпи мар-и?— Пăх-ха, вĕсем хĕр ача валли те ят тупнă иккен — Синерпи. Чĕвен тăраççĕ, утиялне сиресшĕн кармашаççĕ. Анчах аппăшĕ пепкене тĕкĕнме ирĕк памасть.

— Чимĕр-ха,— чарать вăл йăмăкĕсемпе шăллĕсене. Хăй чечек çинчи чечен лĕпĕше хăратасран шикленнĕн асăрханса сирет чĕнтĕрлĕ шурă кипке кĕтессине ача пичĕ çинчен.

Те хĕвел çути ўкнĕрен, те сулхăн сывлăш сĕртĕннĕрен пепке ыйхăллă куçĕсене уçма пикенчĕ, çăварне каркаларĕ, пуçне унталла-кунталла пăркаларĕ.

— Ай-уй, пичĕ мĕнле пĕчĕккĕ!— тĕлĕнчĕ пĕри.

— Қаснă-лартнă ман пукане!— терĕ тепри.

Ванихер инке шăп та шай кăлăк чăххи. Ачисене пĕрне, тепĕрне ыталать, чуп тăвать, хăй çумне пăчăртать. Мел тупса пурне те пĕр харăс хĕве хупĕччĕ.

— Атьăр кĕрер пÿрте,— йыхăрчĕ вăл кил-йышне. Паçăр аслăрах ачисем кипкери хĕр ачана Синерпи тесе чĕннине илтрĕ. Килĕшрĕ ăна ку ят. Çавăнпа та çапла каларĕ:— Синерпипе Ильяса хамăрпа паллаштарар.

Пÿрте кĕрсен амăшĕ пепкесене путмар çине вырттарма хушрĕ. Кипкисене хăй салтрĕ. Пĕчĕкскерсем çара пакка юлсан шариех йĕрсе ячĕç.

— Мĕн кăмăла каймарĕ тата? Ав сирĕн умăрта пиччĕрсемпе аппăрсем,— пуплет вĕсемпе амăшĕ.

— Анне, вĕсем пире тÿпелесшĕн няк? Пăх-ха, аллисене мĕнле чăмăртанă,— кăшт айккинерех сиксе тăчĕ чи кĕçĕнни.

— Вĕсем чăркăш этемсем мар,— терĕ амăшĕ. Унтан пепкесене йăпатма тытăнчĕ:— Сулхăн пек-и? Мĕнех,升ншăнах кÿренме юрамасть. Малашне сирĕн сиввине те, ăшшине те хăнăхма тивĕ.

Ванихер пепкесене типĕ кипкесемпе пиелерĕ. Каллех иккĕшне те юнашар вырттарчĕ. Ытти ачасем амăшĕ вĕсемпе еплерех айланнине ытарайми пăхса сăнаса тăчĕç.

— Халĕ ĕнтĕ паллашма вăхăт. Пĕр рете тăрса тухăр,— хушрĕ амăшĕ аслăрах ывăлĕсемпе хĕрĕсене.— Пепкемсем умне пĕрерĕн-пĕрерĕн утса пырăр та хăвăр ятăра калăр.

— Вĕсем мĕн чухлаччăр?— пуçне пепкесем еннелле сĕлтсе илчĕ сакăр çулхи ывăлĕ амăшĕн куçĕнчен шăтарасла пăхса.

— Ахалех иккĕленетĕн эсĕ, Мĕтри,— лăпкăн, ĕшенчĕклĕн пуплерĕ амăшĕ.— Вĕсен сассăрсене илтме хăлхисем пур, сире курма ав куçĕсене те уçнă.

Ĕненчĕç амăшĕн сăмахне. Вĕсем пĕрерĕн-пĕрерĕн пырса пепкесене хăйсен ячĕсене пĕлтерчĕç.

— Анне, анне, вĕсем çав тери пĕрешкел! Пĕр-пĕринчен уйрайăпăр-ши?— пăшăрханчĕ Кĕтерук. Хăй çавăнтах шăнкăрав сассипе чăнкăл-чăнкăл калаçрĕ.— Ай-уй, пĕри ав кулнă пек тăвать. Ахăртнех, вăл — Ильяс.

— Халь кулма иртерех-ха. Тутисене хускатса илекенни Ильяс мар, вăл — Синерпи,— аслă ачисене лăплантарчĕ Ванихер инке. Вăл часах пепкисене чĕчĕ ĕмĕртме тытăнчĕ.

Аслă хĕрĕ, Марине, ирех апат-çимĕç хатĕрленĕ-мĕн те, сĕтел çине пысăк кастрюльпе яшка пырса лартрĕ. Кастрюлĕ шап-шурах, таса. Газ плити çинче савăт-сапа нихăçан та хăрăмланмасть. Турилккисем те кашни валли уйрăм. Кашăксем те хурса тухрĕ Марине, çавра çăкăрне те чĕллĕн-чĕллĕн касрĕ. Вара кил-йыша апат çиме чĕнчĕ.

Лаврушпа ашшĕ çаплах алкум вĕçĕнче-ха. Вĕсем каçса

кайсах юмахлаççĕ. Ашшĕн ыйтса пĕлмелли, ывăлĕн каласа памалли нумай.

— Ашшĕ, ачасем, апата! —васкатрĕ Ванихер килйышне.

Апат хыççăн пурте ял Советне уява кайрĕç. Вĕсем кунта чи хаклă хăнасем. Хаваслă лару-тăрура йăла-йĕркене чысласа Ванихер инкен пепкисене ят хучĕç. Ывăлне — Ильяс, хĕр ачине — Синерпи.

Лавруш килĕнчех-ха. Вăл ялан лаша витине çӳрет. Ашшĕ унта конюх, ăна пулăшать. Миçе сӳсмен, йĕнерчĕк юсамарĕç-ши вĕсем пĕрле.

Ванихер инке аслă ывăлĕ килте каннăшăн çав тери савăнать. Хăй вара унпа юнашар ларса та юмахлаймарĕ темелле. Пĕр ирхине вăл ăна тытса чарчĕ те:

— Лавруш, армана çăм таптарма пыраймăн-ши? — терĕ. — Хама çĕклеме йывăртарах тетĕп-çке.

— Хаваспах, — килĕшрĕ ывăлĕ.

Çула тухрĕç вĕсем çăм миххисене çĕклесе. Малтан ункун пуплекелесе утрĕç. Амăшĕ шутсăрах ывăлĕн пурнăçĕ çинчен, унăн шухăш-кăмăлне пĕлесшĕн. Çар ĕçне пăрахсан Лавруш мĕншĕн киле таврăнманнине чухлать-ха вăл: юратнă хĕрĕ Теви урăх йĕкĕте качча тухни яла килме тытса чарнă ăна. Ку ыйтăва ывăлĕ халĕ хускатасшăн та мар. Теви упăшкинчен уйрăлни пирки пĕтĕм çын пуплет. Ялта ним те пытарма çук. Сăнран та туртăннă имĕш Теви. Кулянать, паллах. Çын сăмахĕ чӳк шӳрпи мар тесе ахаль каламан ваттисем. Лавруш уншăнах, Тевишĕнех, çавăрănса килмен-ши киле? Çакнашкал шухăш Ванихер пуçне пырса кĕчĕ те шарламасăр тӳсеймерĕ вара:

— Ывăлăм, эсĕ Тевипех сăмах пĕтересшĕн мар пулĕ те?

— Эх, аннем, иртнĕ çумăра юпах тихапа хăваласа çитеймĕн, — амăшне тавăрчĕ Лавруш.

— Çапах та эсĕ ăна шутсăр юратнă-çке-ха.

— Халь тин çын апатланнă сĕтел хушшине ларaймăп. Çунса кăмрăкланнă юрату кĕлĕ тахçанах çилпе вĕçсе саланнă. Тем чухлĕ тăрăшсан та чечеке ларaймĕ иртнĕ кăмăл-туйăм. Халь эпĕ урăххине саватăп.

— Чипер-и вăл? — ывăлĕ çине ăшă куçпа пăхрĕ амăшĕ.

— Йĕп куçĕнчи пурçăн пек, курса куç тăранми хĕр, — ассăн сывласа илчĕ Лавруш. — Мĕнле калас, ăш çунтармăшĕ, чун илли...

— Авланма мĕн чарса тăрать? Илсе кил ăна хамăр пата. Пӳрт-çурт ав епле ирĕк. Вырăн такама та çитет.

— Эх, аннем, пĕлен ĕнтĕ: пӳрмен ҫăкăр ҫăвартан тухса ӳкет теҫҫĕ. Пурнăҫ тĕкĕнсе ҫитрĕ ман.

— Анланмарăм,— ывăлĕ ҫине ыйтуллăн та пăшăрхануллăн пăхрĕ Ванихер.

— Авланнă эпĕ. Анчах арăм мана пăрахса кайрĕ. Вăрттăн, эпĕ килте ҫук самантра тухса шурĕ сукмакĕпе. Аҫта пурăннине пĕлместĕп. Шырасса шыратăп-ха.

— Ах ҫырлах! Ку япала пĕртте пил ҫине килмест манăнне, Лавруш. Эсĕ ăна ҫапкаламарăн пуль те?

— Ĕнен: нихăҫан та алă ҫĕклемен. Сăлтавне те пĕлмесĕрех юлтăм. Чĕмсĕртерехчĕ вăл темшĕн.

— Чĕмсĕр... Ку вăл пысăк кăлтăк мар. Қалаҫман — кулач, чĕнмен — чĕкеҫ пулнă теҫҫĕ халăхра.

— Хамăнах ăраскалăм ҫук-тăр.

— Ан кулян, ывăлăм. Тур амăш курки пире те ҫаврăнса ҫитĕ.

Лавруш тек ни апла, ни капла каласа асапланмарĕ, пуҫне чикрĕ те утрĕ шухăша путса.

Амăшĕ те ăслă. Вăл ывăлне текех минретмерĕ. Қирлĕ-кирлĕ мара лĕпĕртетсе пыни Лавруш чунне тимĕр сенĕкпе пăлхатнипе пĕрех. Халь кăна мар, ывăлĕ килтен мĕн тухса кайиччченех тапратмарĕ ҫак синкерлĕ сăмах-юмаха.

## 17

Хăвăрт утнипе ҫеҫ ҫырлахмарĕ Иулита, хушăран йăпăр-йăпăр та чупрĕ. Ĕнтĕ ача ҫуратмалли ҫурт паҫăрах хыҫа юлчĕ, ҫавăрăнса пăхсан та вăл тек курăнмасть. Ак тамаша! Урисем ҫĕре тымар янăн, тăп чарăнса тăчĕ Иулита. Унталла, кунталла пăхсан та урам вĕҫĕ курăнать. Қу хула мар ҫав, пĕчĕк район центрĕ кăна.

Сулахаялла та, сылтăмалла та тинкерет Иулита. Хăйĕн ăҫталла каймаллине пĕлеймест. Паллană вырăн мар-ҫке. Қĕтмен инкек ҫеҫ тытса чарчĕ ăна кунта.

Чылай хушă Иулита Хура тинĕс хĕрринче рехетленчĕ. Сочи паркĕнче, кипариссем хушшинче, уткаласа ҫӳренĕ самантра теплерен пуҫне шухăш пырса кĕчĕ: «Выртан чул айне шыв юхса кĕмест. Анне тăванĕсене шыраса тупас. Уй варринчи тунката пек пĕр-пĕччен ҫуралса ӳсменех-тĕр, аппăшĕ е йăмăкĕ ун пурах пуль? Пурăнкалăп пăртак хăшĕн патĕнче те пулин. Ҫуратсан ачана ăна парăп та хăварăп. Ĕҫĕ те пĕтет». Ҫав тĕллев Иулитăна юнашар район центрне (амăшĕ ҫуралнă ҫĕре) илсе ҫитерчĕ. Қашни урам тăрăх утса тухрĕ вăл. Иртен-ҫӳренсене чарса: «Гу-

зеевсем (амăшĕн тата хăйĕн хушамачĕ çапла) ăçтарах пурăннине чухлаймастăр-ши?»— тесе ыйтрĕ. Ķалăхах. Явапĕ пурин те пĕрешкел: «Пĕлместĕп. Илтмен».

Çеçен хирте çиле хăзаласа тытаймăн. Ирĕксĕрех каялла тапма тиврĕ.

Автобусра чиперех ларса пыратчĕ Иулита. Унччен те пулмарĕ, пилĕкĕ касса килчĕ унăн. Тӳсеймен енне, хырăмне тытса питĕ вирлĕ кăшкăрса ячĕ:

— Ай-ай!

— Тур çырлах! Çуратать!— хыпăнса ӳкрĕç автобусри çынсем.

— Шофер, больницăна часрах!—хушрĕç ăна.

Çăмăлланчĕ Иулита. Çăварлăхран та хăтăлчĕ вăл. Ирĕклĕ çын. Ăçта каймалла ĕнтĕ халь? Ăçта? Ни килĕçурчĕ, ни тăванĕ-пĕтенĕ çук. Якутие, хăй ĕçленĕ çĕвĕ мастерскойне, тем тусан та таврăнас çук. Омоллон мастер вырăнне юлнă хĕрарăм ытла та тискер. Хăйне çĕвĕçсем умĕнче намăслантарнине халĕ те манаймасть Иулита. Ķалăпăр, ниме уямасăр пырса кĕрес мастерскойне. Тур çырлах! Мĕн хăтланĕç-ши? Упăшки те, унта ĕçлекенсем те тытăнĕç тĕпчеме: «Ķала, ачу ăçта?» Çуратмалли çуртрах хăвартăм теес, ĕненмĕç. Ĕненсен те чун тымарне кăшласа татакансем тупăнаççĕ. Эх, Омоллон мастер лайăхчĕ. Пенсие тухрĕ.

Ķирлĕ пулсан киремет енне те çул тупăн теççĕ. Анчах та ĕмĕт картана хупăнать. Ура хураканни пур çав: кĕсье тĕпĕ яка. Ĕнчĕкре мĕн пурĕ те вăтăр тенкĕ те хĕрĕх пус çеç. Çулĕ вара ах аякра: ир-ирех тухсан та каçчен çитеес çук. Эппин, Шупашкарах каймалла пуль... Вăл — çуралнă тăван хула-çке. Ķилех, килех тесе пĕр çын та кăчăк туртмасть пулин те, «таркăнăн» халĕ Шупашкара каяс кăмăл туртăмĕ ӳсрĕ.

Иулита сасартăк çав тери сӳлтен кайнине туйрĕ. Çул варринех тĕшĕрĕлсе ӳкмелле-и? Чим-ха, пĕрисен хапхи айĕнче ав хыçлă сак. «Çурăма тĕкĕнтерес унта, эпĕ кăшт каннăшăн хуçисем ĕрлешмĕç». Пырса вырнаçрĕ вара хайхискер. Çан-çурăмна лăнчăлат çеç, эх! çав шухăшсем кĕтсех тăраççĕ ăна: сырăнчĕç те ав ана пыйти пек. Тӳрех амăшĕ явăнма тытăнчĕ. Тĕрĕссипе, амăшне вăл пачах та ас тумасть.

...Çапла, Шупашкарта çуралнă Иулита. Пурнăçĕ йĕркеллĕ шунă тăк халь ăна амăшĕ кĕтсе илĕччĕ. Амăшĕ ун çамрăк, хитре пулнă имĕш. Магазинта ĕçленĕ. Анчах алли кукăррипе нумайччен тытăнса тăрайман. Çапах та шульăксемпе çыхăннăскер хăйне ĕçрен кăларнăшăн ку-

лянса ӳкмен. Пасарсенче, автобуссенче вăл витĕр курма хăнăхнă, алли вăрăмланнă. Шапа шыва кăмăлланăн, алли ун çын кĕсйине хăнăхнă. Юрĕ, пĕрре, иккĕ ĕç ăнăçтăр. Анчах кашни кашăках аш турамĕ лекмест-çке. Çынна çаратнипе ĕмĕр пурăнаймăн. Кĕçех капкăна лекет хĕрарăм. Суд умне тăратса ăна юсанма яраççĕ.

Ача çуртне вырнаçтариччен Иулита сывлăхне ерекен чирсенчен сыватакан пульницăра тĕрĕслерĕç. Унта ăна хĕрхенсе те ачашласа медицина сестрисем Литя тесе чĕнме тытăнчĕç. Тупата, ытла юратмалла хитре хĕр ачаччĕ вăл. Мăнтăркка. Пит шăммисем мăкăр. Выляса кулнă самантсенче ун куçĕсенчен çутă сенкер пайăркасем пĕрхĕнеççĕ. Вĕçсе-чупса çӳренĕ чух унăн шупка çӳçĕ йĕтĕн çурăмĕ евĕр вĕл-вĕл вĕлкĕшет. Қаярахпа ун çӳçне тахăшĕн нĕрсĕр алли хачăпа лăп-лап касса картласа ячĕ. Ăна усрава илес текенсем те тупăнчĕç( сăмах май калас тăк, ача усрава илес текенсен те черет пур-мĕн). Çав шутрах Ванихер инке те. Вăл ун чух шăпах çав пульницара иккĕмĕш ачипе, Шупашкара хăнана килсен чирленĕскерпе, асапланса выртатчĕ. Темиçе çултан вĕсен сукмакĕсем хĕресленесси асра та пулман Ванихерĕн.

Анчах Иулитăна никама та усрава памарĕç. Амăшĕ решеткеллĕ чӳречеллĕ çуртран икĕ е виçĕ çултанах тухать терĕç. Çавăнпа та Литяна пульницăран ача çуртне ăсатрĕç.

Вылять-кулать унта Литя ытти ачасемпе пĕрле. Хуйхасуйха пĕлмест. Қантăк умĕнчи хурăн çеç тек тумне улăштарать: çуркунне вăл симĕс тутăр çыхать, кĕркунне — саррине, хĕле кĕреспе çулçисене тăкать те, унăн турачĕсем çаралса, хăмăрланса юлаççĕ. Вулли çеç нихăçан та шурă кĕпине çухатмасть, хĕвел çутинче çиçсе куçа илĕртет.

Пĕчĕк Литя (Иулита) хăйĕн малтанхи кĕске пурнăçне йăлтах манать, амăшне кĕтесси те асра çук. Қунта ун иккĕмĕш амăшĕ пур—Зоя Захаровна воспитательница. Хĕр ача ăна питĕ-питĕ юратать. Таврăнсан тăван амăшне те хăнăхĕ-ха. Вăл халь-халь килмелле. Анчах ача çуртне ырă мар хыпар çитет: «Иулита амăшĕ сарăмсăр вилсе çĕре кĕнĕ».

Қалинкке шашулкки чанк! чанклатрĕ. Çак сасă шухăшĕнчен уйăрчĕ Иулитăна. Қартишĕнчен урама вăрăм сухаллă папай тухрĕ. Иулита шикленнипе ури çине тăчĕ.

— Автовокзал ăçтарах сирĕн?— ыйтрĕ вăл хыпаланса.

Тĕплĕн ăнлантарчĕ старик ăна.

Иулита Шупашкара каяс ĕмĕтлĕ. Анчах вăйĕ çук пĕртте. Çул урлă каçмалла ун. Ах, çав машинăсем ытла

та йышлă-çке — кумаççĕ кăна ăса евĕр. Пĕр-пĕр шухă шоферĕ ним мар таптаса каясран е шырлана йăвантарса хăварасран шикленмелле. Инкек тени хăвăн кĕпӳнтен те çывăх. Шĕкĕр турра теççĕ кун пек чух: çул урлă каçса автовокзала чиперех çитрĕ вăл.

Автобусра ун выранĕ чӳрече патĕнче пулчĕ. Чылайччен кантăк витĕр пăхса пычĕ Иулита. Ыраш вырнă уйсенче унта та кунта çав тери пысăк улăм урисем курăнаççĕ. Вĕсем курпунĕсене мăкăртса çĕр çумне лӳпперрĕн тĕшĕрĕлнĕ. Қăçал ыраш шăтса ӳсмен пекех, улăм урисем тавра ем-ешĕл курăк тапса тухнă. Хиртен комбайнсем кайса пĕтмен-мĕн-ха, çур тырри выраççĕ пуль-и? Вăрман тăрăхĕсем ирте-ирте юлаççĕ. Вĕсем пĕрре те çуллахилле чакăррăн курăнмаççĕ, темле тĕксĕм симĕс тĕслĕ. Тарăн варсем хĕррипе кĕтӳсем çуреççĕ. Çулĕсем ял-ял витĕр тухаççĕ. Мĕнле çынсем пурăнаççĕ-ши лăс йăмрасем хушшинчи пӳртсенче? Иулита нихăçан та чăваш ялĕнче пулман. Ачаранах ун кун-çулĕ хулапа, йышлă-йышлă çемьепе çыхăннă.

Қуçĕсем ывăнчĕç Иулитăн. Тек ăна автобус тулашĕнчи тавралăх кăсăклантармарĕ. Вара вăл ларкăч хыçнелле таянчĕ. Усăнчĕç куç хупанкисем. Қаллех паçăрхи, хапха айĕнчи хыçлă сак çинче ларнă чухнехи, шухăш кĕввисем юхса кĕчĕç пуçне. Çĕнĕрен амаланать ача çуртĕнчи пурнăç.

Мăнтăркка Зоя Захаровна пичĕ шăп та лăп тулли уйăхчĕ. Чикĕсĕр юрататчĕ вăл Иулитăна. Хăй арки çинчен нихăçан та антарман темелле. Унпа вĕçĕ-хĕррисĕр вылятчĕ, кăтăкланă пек тĕккелетчĕ. Вара хăех каçса кайса ахăлтататчĕ. Қулнă чух Зоя Захаровна куçĕсем таçта пытанатчĕç, хирĕçле перĕннĕ икĕ пĕлĕт хушшине хĕсĕннĕ хĕвел майлахчĕ, куç çулĕпе йĕпеннĕ куç хăрпăкĕсем çеç çапçуттăн йăлтăртататчĕç.

— Мĕнле пулма пĕлнĕ эсĕ? Қам çуратнă сана? Тем тесен те хамах,— Иулитăна çине-çинех чуп тăватчĕ вăл.

Зоя Захаровнăн хăйĕн ачи çукчĕ. Иулита тăлăха юлсан ăна усрава илетĕп тесе те калаçатчĕ. Юратнине пула хĕр ачана пĕр ĕç те тутарман вăл. Вылянă хыççăн ытти ачасем теттисене вырăнĕсене майласа хуратчĕç. Пӳлĕмри чечексене те вĕсемех шăваратчĕç. Ӳсерехпе те ĕç тĕлне пĕлмен Иулита. Урамран пылчăкланса кĕнĕ пушмакне те хăй çуман, çывăрса тăрсан вырăнне те пуçтарман. Уншăн е ытти хĕр ачасем, е няньăсем, е уборщицăсем ĕçленĕ. Иулита — воспитательница хĕр ачи. Çак шухăшпа пурте çырлахнă. Тепĕр чух пӳлĕме витрепе шыв пырса лартсан,

Иулита урай ҫума тăлавар ярса тытсан ҫавăнтах уборщица чупса пыратчĕ. Зоя Захаровна кӳренесрен именсе вăл йăвашшăн асăрхаттаратчĕ:

— Ай тур-тур, Иулита! Мĕн хăтланан? Аллуна вараланиҫ? Вĕсем хăйсем сисмесĕрех ҫапла хĕр ача телейне пылчăклă атăпа таптанă. Майĕпенех лешĕ тӳр пилĕке тухать, ĕҫрен йĕрĕнме тытăнать.

Зоя Захаровна Иулитăна усрава илеймен: вăл хăй хĕр ача ҫуратса панă.

Ача ҫурчĕ хыҫҫăн Иулитăна ПТУна вĕренме вырнаҫтараҫҫĕ. Кунта та пурнăҫ — пыл та ҫу. Унăн ырлăхĕшĕн тĕрлĕ аппасемпе тетесем ăравасăр тăрăшнă. Ана тумлантарнă. Пальти те, кĕпи те — капăр: никам та хурлама хăяймĕ. Пулкаланă-ха тепĕр чух пушмак тĕпĕ хăпăнасси. Пур пĕрех кулянма тивмен: ҫийĕнчех ҫĕннине лартса панă. Хырăм выҫнине те нихăҫан туйман. Апачĕ те янтă, сĕтел хушшине вăхăтра пырса ларма ҫеҫ ан ӳркен. Вăл пурăнакан общежити пӳлĕмĕ — таса, ҫывăрмалли вырăнĕ — ҫемҫе. Простынĕ те, ҫытар пичĕ те юр пек шап-шурă. Кам тăрăшать уншăн ҫав териех? Ҫуса тăхăнтараҫҫĕ, пĕҫерсе ҫитереҫҫĕ. Иулита кун пирки нихăҫан та шухăшламан. ПТУра ҫĕвĕ ҫĕлеме вĕрентрĕҫ. Ҫук, тăрăшмарĕ Иулита ку ĕҫе вĕренесшĕн.

Унăн кунти пурнăҫĕ те ĕмĕре пымарĕ. Кунсем, ҫулсем умĕнчен пуйăс вакунĕсем пек вĕлтлетсе иртрĕҫ.

Вĕренсе тухнисене пысăк зала пухрĕҫ.

— Эсир хăвăр суйласа илнĕ аслă ҫул ҫине тухатăр. Ҫав ятпа хĕрӳллĕн саламлатăп! Ĕҫре ан ӳркенĕр, пултаруллă пулăр. Сывлăх, телей, ăнăҫу сунатăп...— пиллерĕ пулас рабочисене директор. Вăл вĕренекенĕсене юлашки хут ăс парас терĕ пуль, унăн сăмахĕ вăрăма тăсăлчĕ.

Иулита директор сăмахне хăлхине чикмерĕ, ҫумри хĕрпе, Светлана ятлăскерпе, тек пăшăлтатса ларчĕ.

— Эпĕ Якутие каятăп. Унта ман пичче ĕҫлет,— пĕлтерчĕ Света.— Ой, унта укҫа ҫапатăп та вара! Атя пĕрле.

— Мана «Рассвет» фабрикăна ĕҫлеме янă ҫав,— пуҫне мĕскĕннĕн чикрĕ Иулита.— Пăрахса кайнăшăн айăплĕҫ.

— Айван-ҫке эсĕ, Иулита. Ҫурҫĕре каякансене кам айăплатăр? Ҫĕрĕ нумай унта, ĕҫлеме ҫынни ҫитмест.

Светлана суймасть. Вăл, чăнах та, Якут ҫĕр-шывĕнче пурăнакан пиччĕшĕ патне кайма пуҫтарăнать. Лешĕ хăй чĕннĕ. Анчах Светлана пĕр-пĕччен аякри ҫула тухма шикленерех парать. Мĕн каласси пур, юлташпа хаваслăрах ĕнтĕ. Шанчăклă хĕр шыраса тăнран тухнăччĕ вăл. Халĕ сасартăк юнашар ларакан Иулитăна хăй енне ҫавăрма

пикенчĕ. Майсăр мухтать çурçĕр çанталăкне, калăн: хăй унта çуралса ӳснĕ. Иулита ĕненет. Шухăшĕпе вăл илемлĕ сăрт-тусем хушшинче, тайгара çӳрет, пичĕ йăл-йăл çутал-са илет, куçĕ — аякра-аякра, çывăхрине курмасть те, илт-мест те.

Пуху вĕçленнине сисмен те иккен, залра иккĕш çеç тăрса юлнă.

Вĕсем ахăлтатса кулса урама чупса тухрĕç. Сывлăш пыл пек тутлă. Тĕнчене çурхи хĕвел лăпкать.

— Ну, мĕнле, пыратăн-и?— хăйĕннех перет Светлана.

— Çул укçи хаклă пулĕ-ха... Ман кĕсье пушах,— хи-рĕçлет Иулита мĕскĕн сассипе.

— Йывăр-çке санпа калаçса татăлма,— çӳллĕ кĕлеллĕ пушмакĕпе асфальта шаклаттарса ун еннелле вăрт çав-рăнса тăрать Светлана.— Сут мĕн пур пек тупруна. Лере мĕн кирлине хăвăртах туянăн. Якути, ачамккă, çĕр-шывăн чи пуян кĕтесĕ.

Тепĕр кунне Светлана ир-ирех Иулита пурăнакан пӳ-лĕме пырса кĕчĕ.

— Пасара илсе каймаллисене çакăнта чикĕпĕр,— пĕл-терчĕ вăл пысăк сумкине урай варрине лартса.— Ăçта-ха сан пурнăç тăршшĕпе пухнă мулу?

Вăл тӳрех тумтир çакакан шкап алăкне уçрĕ.

— О-о! Вĕр çĕнĕ пальто! Куна сутнă укçапа Якутие мар, Кубăна та çитĕн,— йăрхахран вĕçертсе илет ăна Светлана.

Иулитăн чĕри тапма та чарăнчĕ тейĕн, ни вилĕ, ни чĕрĕ тăрать. Ара, унăн пĕртен-пĕр ырă тумĕ-çке ку вăл хĕр тăлăх пулнине шута илсе вĕренсе тухас умĕн ăна учи-лище дирекцийĕ парнеленĕччĕ. Мĕн тăвăн? Сутасах пу-лать. Панă сăмаха каялла илме аван мар. Ун тĕллĕн юл-таш тупăнчĕ тата. Пӳлĕмре тустарман вырăн хăвармарĕ. Пăшатан пек таçта та кĕрсе тухрĕ, унăн пур-çук япали-не хăйĕн тĕпсĕр сумкине персе чикрĕ.

Тĕлĕнтермĕш иккен пасар тени. Кушак тислĕкне ти-пĕтсе илсе тухсан та, тупата, ним уямасăр, черет тăрсах туянĕç...

— Чиперккеçĕм, вăрансамччĕ! Тĕлĕкре курнă каччун-тан хăпаймастăн-и-мĕн?— сасартăк ăшшăн кулнине илтрĕ Иулита. Такам ăна хуллен хул пуççинчен лăскать. Хĕр чăл-чал пăхкаларĕ. Ун çумĕнче автобус шоферĕ тăрать. Ларкăчсем пуш-пушах.

— Шупашкара çитрĕмĕр те-и?— ура çине тăчĕ Иулита пуçĕнчи иртнĕ кунсен алăкне хупса.

— Паçăрах. Сире кĕтсе илме килнĕ каччă шанчăкне çухатса каялла кайрĕ ав.

Иулита пĕр сăмах та чĕнмесĕр автобусран тухрĕ. Мĕн кĕтет-ши ĕнтĕ ăна ку хулара?

## 18

Шупашкар — пысăк хула. Вăрăм-вăрăм урамĕсене шутласа та кăлараймăн. Унта та кунта темиçе хутлă çуртсем пĕлĕтелле кармашса ларaççĕ. Миçе пин хваттер-ши?

Ăçта çĕр каçĕ Иулита? Кун пирки шухăшламарĕ вăл. Малаллах утрĕ. Аслă урама тухсан тăп чарăнса тăчĕ. Ун умĕнченех хĕрсен ушкăнĕ иртрĕ. Кашнин аллинче — чăматан. Хаваслăскерсем ахăлтатсах кулаççĕ. Иулита вĕсен хыçне ӳкрĕ. Питĕ ĕçлĕ, пысăк тĕллев тытнă этем пек, хĕрсенчен шит юлмасăр пычĕ. Урамран урама каçрĕç. Ай-уй, кусем Иулита вĕреннĕ ПТУ çуртне кĕрсе çухалчĕç-çке. Чăл-чал пăхкаларĕ Иулита. Вара вăл та унталла çул тытрĕ.

Чылайранпа тăван училищĕре пулман Иулита коридорти пĕлтерӳсене вулама тытăнчĕ.

— Чим, эсĕ Гузеева пулмарăн пуль те? — илтрĕ вăл сасартăк. Ялт! çаврăнса пăхрĕ Иулита. Ун патнелле училище директорĕ çывхарать-мĕн.

— Ҫанăва килтĕн-и?

— Çук, яланлăхах килтĕм.

— Ăçта чарăнтăн?

— Ниçта та, — пуçне чикрĕ Иулита.

Директор ăна хăйĕн ĕç пӳлĕмне илсе кĕчĕ. Чылайччен калаçрĕ унпа. Манман вăл Иулита тăлăх хĕр ача иккенне.

— Пирĕн общежитире пурăн халлĕхе, — хут татки çине темĕн çырса тыттарчĕ вăл. — Ку çырăва коменданта пар. Ҫайран куç курĕ. Тен, училищĕрех ĕç тупăпăр сан валли.

Шупашкара таврăннă ятпа Иулита Атăл хĕррине çитрĕ. Çыранти карлăк çине таянса чылайччен шыв юххине сăнарĕ. Пăрахутсем, кимĕсем унталла-кунталла ишнине курса шухăша кайса тăчĕ. Атăл çине каç сĕмĕ ансан тин общежитие таврăнчĕ. Хывăнса тӳрех вырăнĕ çине кĕрсе выртрĕ, анчах та ыйхи ывăçран тăкăннă пăрçа пек сапаланчĕ. Куçĕ умне каллех Света тухса тăчĕ.

Якут çĕр-шывне çитме укçа тăвас шутпа Иулита ун чух Света пулăшнипе пур-çук япалине сутрĕ. Пасар хыççăн вăл кивĕ кĕпе вĕççĕн тăрса юлчĕ. Чим, тата икĕ япала пурччĕ: чавсине саплаă çăм кофта тата тахçанах

юсаттарасшăн йăнкăртатакан пушмак. Çак тумпа кĕрсе ларчĕ вăл самолета.

Якутск хулине çитрĕç-ха. Анчах вĕсен чарăнас кĕтесĕ Зырянка поселокĕ пулчĕ, Колыма шывĕ хĕрринче ларасканскер.

Светланăн пиччĕшĕ — çемьеллĕ çын. Хăнасене тарават йышăнчĕ. Вĕсене вăрахчен ĕç хушмасăр пурăнчĕ. Тавралăха, çурçĕрти çут çанталăка хăнăхчăр терĕ пуль-и? Хăй шав сăнарĕ вăрттăн. Йынша мар-и ку Шупашкар хĕрĕсем? Çемçеккейсене çурçĕр тиркет. Йăмăкне кирек мĕнле пулсан та тӳскелĕ-ха пиччĕшĕ. Унăн тусне кам пулăшĕ? Кам ун хутне кĕрĕ? Вăл яланах вĕсен çуначĕ айĕнче пурăнас этем мар-çке.

— Иулита,— чĕнсе илчĕ ăна пĕринче Светлана пиччĕшĕ,— сана çĕвĕ мастерскойĕнче кĕтеççĕ.

— Мана?— шартах сикрĕ вăл. Аçтан хыпăнса ан ӳктĕр ĕнтĕ? Ара, ăна унта никам та палламасть-çке. Чĕтрекен сассипе ыйтрĕ:— Кам кĕтет, мĕн тума?

— Мĕнле мĕн тума? Эсĕ — çĕвĕç. Зырянка халăхĕ кĕпе-йĕм çĕлесе тăхăнтартасса кĕтет,— ăшшăн каларĕ Светлана пиччĕшĕ куçне хĕскелесе.— Сан валли общежитире те вырăн уйăрнă.

Иулита ӳлĕм те Светлана пиччĕшĕн çемйи хӳттинче ним шухăшсăр, хуйхă-суйхăсăр пурăнма хатĕрччĕ. Мĕн тăвăн? Кил хуçи хушать тĕк итлемеллех.

Мастерскойра заведующи — хĕрарăм. Вăл Иулитăна ăш пиллĕн йышăнчĕ, çĕвĕçсемпе паллаштарчĕ. Кунта ĕçлекенсем сахал теме çук. Пĕр ушкăнĕ пальто, кĕрĕк çĕлет, иккĕмĕшĕ — кĕпе-йĕм, виççĕмĕшĕ — атă-пушмак тата ытти те.

Заведующи Иулитăна кĕпе-йĕм çĕлекен çĕрте, пĕр ватăрах арçын патĕнче, чарса тăратрĕ. Путех, ку — асли. Пĕрре пăхсах паллă: çынни ку — якут. Ав куçĕсем курăнмаççĕ те. Пит шăммисем ту евĕр мăкăрăлнă та куçĕсене е тухса ӳкесрен, е вăйлă çил-тăвăл сиен тăвасран сыхлаççĕ.

— Омоллон,— чĕнчĕ ăна заведующи. «Омоллон»? Те ячĕ, те хушамачĕ ĕнтĕ ку? Иулита тавçăраймарĕ.— Сирĕн пата çĕнĕ çĕвĕç ертсе килтĕм. Паллашăр. Тӳрех калатăп: вăл çамрăк-ха, тин çеç вĕренсе тухнă. Пĕлменнисене кăтартăр, хăвăр та унран вĕренĕр. Килĕштерсе ĕçлессе шанатăп.

Лешĕ пуçне çеç сĕлтрĕ. Савăнать-и вăл е тарăхать-и? Çакна Иулита чухлаймарĕ.

Омоллон чĕмсĕр çын, чунĕ — ырă. Çĕнĕ çĕвĕçĕн ăсталăхне тĕрĕслемелле. Анчах ыйтса-тĕпчесе мар, тӳрех пур-

çăн кĕпе çĕлеттерсе те мар. Çĕвĕç мĕн тĕшне тăни пĕчĕк ĕçре те палăрать.

Машина умне лартрĕ хĕре. Сĕтел çине çĕлеме касса хатĕрленĕ çитсă хучĕ.

— Ку халат пулать. Кĕштекрен тытăн та арки вĕçне çити тӳп-тӳррĕн машинăпа кăрлаттарса тух,— хушрĕ Омоллон. Хăй вара çийĕнчех сĕтелĕ патне кайса мĕштĕртетме тытăнчĕ.

Иулита çĕвĕ машинин майне пĕлкелет-ха. Анчах кĕштекĕ ăçта? Çавăркаларĕ халат тенĕскере. Тупаймарĕ кĕштекне. Тем мурĕ-ха вăл? Вĕреннĕ чух кĕштек таврашне кăтартнине вуçех ас тумасть.

Омоллон çĕнĕ çĕвĕçе куç хӳрипе шав сăнать. Курать хĕр темĕн ăнкарсах кайманнине. Кăтартмалла эппин. Вăл пырать те ун патне халат анĕсене шайлаштарса кĕштек вĕçĕнче машина йĕппине чак! лартать.

Иулита тытăнчĕ урипе тапса машина урапине кăлтăртаттарма. Ним йывăрри те çук. Часах тухрĕ аркă вĕçне.

— Хатĕр!— пĕлтерчĕ Иулита. Савăннипе хăйĕн куçĕсем çутала-çутала илеççĕ.

Омоллон халата илчĕ те шарт сикнĕ пек пулчĕ: ара, çĕввин ним латти те çук, вăрман сукмакĕ евĕр кукăр-макăр: пĕр унталла, пĕр кунталла пăрăнать.

— Сӳтме тивет, хĕрĕм,— терĕ вăл,— кунашкал çĕвĕшĕн пире заказчик каçармасть. Асăрханса çипписене туртса кăлар. Ас ту, лезвипе материалне касса ан пăрах. Кайран васкамасăр, тирпейлĕн çĕлесе тух. Çĕвви тикĕс пултăр.— Ун сассинче хаярлăх сисĕнмерĕ. Мĕн усси ятланинче, хăртнинче? Хĕрхенме те, ачашлама та кирлĕ мар. Пиччĕшĕ, ашшĕ вырăнĕнче пулса сăмаха лăпкăн, ăшшăн каланине, ĕçе мĕнле тумаллине ыррăн кăтартнине ним те çитмест. Омоллонăн çамрăксене çĕвĕ çĕлеме вĕрентес мехлечĕ çавнашкал.

— Халех сӳтетĕп,— хыпăнса ӳкрĕ Иулита.

— Ан хыпалан. Васкав ĕç — икĕ хут ĕç теççĕ пирĕн якутсем.

— Тăрăшăп...

Ĕç кунĕ вĕçленсен Иулита общежитие кайрĕ. Сахал-и, нумай-и вăхăт иртрĕ, хырăмĕ шутсăр выçнине туйрĕ. Мĕн çимелле? Çула май магазина кĕрсе çăкăр туянасси асра та пулман хăйĕн, халь ăна ĕлĕкхи пек никам та пĕçерсе парас çук. Кравать çинче выртаканскер яшт siksе тăчĕ. Кухньăра ав хăйпе пĕрле пурăнакан хĕрсем тĕркĕшеççĕ. Макарон пĕçереççĕ. Теприн çатми çинче кăлпасси чашăлтатать.

Хĕрсем часах сĕтел тавра пуçтаранчĕç. Иулита куçне апат çинчен илмест ĕнтĕ. Выçă хырăм — яш каччă мар. Тӳсме хал çитереймерĕ вăл. Вилка илчĕ те кăшăрт кĕрсе ларчĕ хĕрсен хушшине. Ниме уямасăр тĕшĕрет. Хĕрсем пĕр-пĕрин çине чăр-чăр пăхса илчĕç, анчах ним те шарламарĕç.

Тепĕр кунне те Иулита хĕрсем чĕнессе кĕтмерĕ, ыттисем пĕçернĕ вир пăттине сăрпалантарчĕ кăна.

Кун хыççăн кун шăвать. Иулита хăнăхрĕ. Вăл никам чĕнессе кĕтмесĕр кухньăна кĕрет, кашăк илсе ыттисемпе пĕрле сĕтел хушшине ларать.

Хĕрсем тĕлĕнеççĕ. Вĕсемшĕн апачĕ шел мар-ха. Анчах мĕншĕн-ха вăл çав териех сĕмсĕркке?

— Итле-ха, çĕнни, мĕн-ма эс çиме ним те туянмастăн? — ыйтрĕ унран пĕринче хура куçлă хĕр.

— Çиме ман хамăн туянмалла-и вара? — шутсăр тĕлĕнчĕ Иулита.

Кухньărисем пурте ахăлтатса кулса ячĕç.

— Эсĕ таçта... улпут хĕрĕ мар-и?

— Çу-ук! Эпĕ никам хĕрĕ те мар, эпĕ... тăлăх, — айăплăн пуçне пĕкрĕ Иулита.

— Анланмалла! Эппин, эсĕ ача çуртĕнче пурăннă, вара ПТУра вĕреннĕ.

— Ай-уй, ăçтан пĕлен?

— Сăмахсăрах паллă: ямăттине хăнăхнă çын эсĕ. Халĕ, ачам, йăлтах хăвăн тумалла. Çăкăрне те, какайне те, кĕрпине те хăвăн туянмалла, хăвăн укçупа.

— Пăх-ха, вăл ку таранччен тĕпсакайĕнче пурăннă пекех хăтланать, — çиллессĕн тутине мăкăртрĕ хирĕç пăхса тăракан сарă çӳçлĕ хĕр.

— Туянни çеç сахал, хăвăн пĕçермелле, — хушса хучĕ хура куçли.

Те хăранипе, те тĕлĕннипе Иулита куçĕ çавра кӳлĕ евĕр кăн-кăвак курăнать.

— Ан кулян, кăмăлу пулсан пĕрле туянăпăр, пĕрле пĕçерĕпĕр, ушкăнпа апатланăпăр.

* * *

Колыма шывĕ хĕрринче çу ытла та кĕске. Шыва кĕрсе киленсе те ĕлкĕреймерĕç, сивĕтсе те пăрахрĕ. Çитменнине юр ӳкрĕ.

Тунти кун ир-ирех пычĕ Омоллон мастерскойне. Ĕçе тытăниччен пĕр кана кантăкран урамалла пăхса тăчĕ. Айтурах, хăш-пĕрисем кĕрĕк тăхăнса та янă. Вĕсем ăшша

пиçнĕ ахăр, аран йăраланаççĕ. Чим-ха, ку мĕн амакĕ? Пĕри ав пальто та, кĕрĕк те тăхăнман!.. Çийĕнче — чавсине сапланă кофта кăна. Мастерскоя кĕрет хайхискер. Шăннă ĕнтĕ. Ав епле чĕтрет, тути те кăвакарнă, çур тумлам юн юлман хăйĕн. Уринче кивĕ пушмак çеç, сăмси тĕлĕнче çăварне карнăскер.

— Ытла пиçĕ-çке эсĕ, хĕрĕм, хĕлле те çарамас çӳрен,— хĕрхенсе пăхрĕ ун çине Омоллон.

— Асăрхамарăр-и вара, пичче? Ман çире — çăм кофта,— тумтирне тирпейлесе унтан-кунтан турткаласа илчĕ Иулита.

— Кĕрĕк е пальто пур-и сан?— канăçсăрланчĕ мастер.

— Çу-ук,— ытахальтен сăмах вĕçертнĕ пек, хĕрĕн сăнпичĕ нимĕн чухлĕ те улшăнмарĕ. Вăл мĕскĕнленмест.

— Хĕлле пирĕн шутсăр сивĕ пулать, утмăл градуса та çитет. Кĕрĕк тавраш туян,— ӳкĕтлет аслăрах юлташĕ,— сывлăха упрамалла. Укçу пулма кирлĕ-ха сан, ĕçшĕн тин çеç тӳлерĕç.

Иулита çав кунах укçине ăссăрла салатнине пĕлесчĕ ун, хытах ятлĕччĕ.

...Шухăша кайнă Иулита çĕрелле тинкерсе утать. Сасартăк хăлхине такам мăкăртатни пырса кĕчĕ. Хĕр пуçне çĕклерĕ те хăйĕн умĕнче мучие курах кайрĕ. Аллинче вăл халиччен курман темĕнле чĕр чун.

— Ку сирĕн тынашка-и?— хыпаланса ыйтрĕ Иулита лешĕ чарăнмасăр иртсе каясран хăраса.

— Пăлан пăрушĕ,— мухтанарах каларĕ мучи хĕр ача умĕнче чарăнса тăнă май.

— Ай-уй, эпĕ пăлан таврашне нихăçан та курман.

— Парнелес-и?

— Ан шӳтлĕр-ха.

— Шӳтлеместĕп. Мăнукăма асăнса парнелетĕп сана. Ме,— кап! тыттарчĕ мучи пăлан пăрушне.

Иулита та парăмра юлмарĕ: мĕн пур пек укçине мучи кĕсйине чикрĕ. Ватти çакна сиссе те юлаймарĕ.

Ача чунĕ сӳнмен пикесем общежитире чылайччен вылярĕç çак чĕрĕ «теттепе». Тем те çитерчĕç ăна. Пăрушĕ ытла та илемлĕ-çке. Çурăмĕ чăпар, куçĕсем тĕттĕм чакăр, урисем çинçе, чĕрнисем (пушмаксем тейĕн) — хăмăр, çу сĕрнĕн йăлтăртатаççĕ. Анланулласкер, хĕрсен кăмăлне çавăрасшăнах пулĕ — тăррăс! тăррăс! сиккелет. Анчах нумайччен йăпанма тивмерĕ. Тахăшĕ систернĕ комендантa. Лешĕ вара пăлан пăрушне таçта илсе кайнă, никам та пĕлмест. Кулянса пурăнчĕç хĕрсем пĕр хушă. Юлашкинчен манчĕç.

Тӗнче ырӑ ҫынсӑр мар теҫҫӗ халӑхра. Омоллон фуфайка ҫӗлесе тӑхӑнтартрӗ Иулитӑна. Вӑлах килӗнчен тӗплетнӗ унты илсе килчӗ.

Хӗл Мучи шӑнтса пӑрлантараймарӗ Иулитӑна. Ӗҫе кайнӑ чух ӗнтӗркеме тытӑнсан аптекӑна тата ҫӑкӑр лавккине кӗрсе ӑшӑнатчӗ.

Общежитире пурӑнакан хӗрсемпе кинона та ҫӳрерӗ Иулита. Пӗррехинче сулахай енчи пукан ҫине унпа юнашар пӗр йӗкӗт ларчӗ. Сывлӑх сунчӗ те хӗртен ӑҫта ӗҫленине, мӗн ятлине ыйтса пӗлчӗ.

— Эпӗ — шофер, Лавруш ятлӑ,— терӗ хӑй.— Ҫолыма шывӗ хӗррине ҫӗр кӑмрӑкӗ турттаратӑп.— Сӑнӗ хӗвел пек ҫуталчӗ каччӑн.— Хам эп Чӑваш ҫӗр-шывӗнчен.

— Эпӗ те,— кӑнн пӑхрӗ Иулита.

Йӗкӗт тин паллашнӑ хӗрпе чӑвашла калаҫма пикенчӗ.

— Шупашкар хӗр ачи пулсан та чӑвашла пӗлместӗп ҫав,— именерех сӑмах хушрӗ Иулита.— Вырӑс эп.

Кино пуҫланчӗ. Халӗ ӗнтӗ пуплесе ҫынсене чӑрмантарма юрамасть. Ҫума-ҫумӑн ларакансем иккӗш те экран ҫине тинкерчӗҫ. Хӗр ҫапах та вӑрттӑн тенӗ пек темиҫе хутчен те ҫумӗнчи йӗкӗте куҫ хӳрипе пӑха-пӑха илчӗ. Кӗрнеклӗскер. Чуна килӗшмелли ҫын.

Кино хыҫҫӑн каччӑ Иулитӑна общежитие ҫитиех ӑсатрӗ. Ҫак самантран пуҫласа тытӑнчӗ юрату ҫӑмхаланма. Чӑваш каччи ҫӳрерӗ те ҫӳрерӗ ҫак вырӑс хӗрӗ патне.

Хӗл Мучи йӑвашланчӗ акӑ. Ҫынсене хӗрхенчӗ вӑл. Юр хӑй тӑрӑх утнине тӳсейми пулчӗ, ура паш! путать.

Ҫанмалли кунччӗ ун чух. Иккӗшӗ Ҫолыма ҫыранӗ хӗрринче тӑратчӗҫ.

— Ман ача ҫуралать пулас!— пат персе ячӗ Иулита.

Каччӑ хӑйне тип аҫа ҫапнӑнах туйрӗ. Тем каласшӑнччӗ, анчах чӗлхи ҫӑвар маччи ҫумне ҫат ҫыпҫӑнса ларчӗ.

— Ма ним те чӗнместӗн?

Иулита сасси йӗкӗте чун кӗртрӗ.

— Мӗншӗн ун пек шухӑшлатӑн?— иккӗленсе ыйтрӗ вӑл.

— Ара, ав хырӑм епле мӑкӑрӑлса тухрӗ.

Каччӑ Иулитӑна хӑй ҫумне ҫепӗҫҫӗн пӑчӑртарӗ. Хӗр пуҫне ун кӑкӑрӗ ҫумне чиксе пӑшӑлтатрӗ:

— Хӗрсем тахҫанах кулаҫҫӗ манран. Питӳ ҫине пилӗк пуслӑх пӑхӑр укҫасем ҫыпҫӑннӑ теҫҫӗ. Ҫие юлнӑ сан теҫҫӗ... Чӑнах, хушӑран хушӑ хытах тапкаласа илет.

— Ача пулсан питӗ лайӑх!— тата ытларах хӗпӗртерӗ каччӑ. Иртен-ҫӳренсене пӑхмасӑрах вӑл ӑна хыттӑн-хыттӑн чуп турӗ.— Ҫурат часрах. Эпир ӑна ырӑ кӑмӑллӑ, ачасене шутсӑр юратакан асламӑшне кайса кӑтартӑпӑр...

Хамăр туя ялта кĕрлеттерĕпĕр. Тухтăр патне ыранах кай.

Тепĕр темиçе кунтан Иулита упăшки патне пурăнма куçрĕ.

Чуп-чуп уйăхĕ иртрĕ сисĕнмесĕрех. Ачаш кунсен йăли çапла ĕнтĕ. Упăшки çĕкленӳллĕ кăмăлпа çӳрет. Унăн, ара, юратнă арăмĕ пур-çке. Иртнине, чунне кăшланă ыратусене, йăлтах пуçĕнчен кăларса ывăтрĕ.

Иулита халĕ чăнахах та улпут майрине тухрĕ. Вăл — çăтмахра. Урлă выртана тăрăх та çавăрса хумасть. Йăлтах упăшки тăвать. Ывăнма та пĕлмест тейĕн. Апат пĕçерет, кĕпе çăвать, урай шăлать.

Çапах та упăшки пуçĕнче ерипен пăшăрхантаракан шухăшсем явăнма тытăнчĕç. Ара, мăшăрĕ пĕрмаях вырăн çинче. Ку япала, пĕлсех тăр, ырăпа пĕтмест: юлхава ерсе кайĕ капла. Халех ăна килти ĕçе кӳлĕнтермелле. Анчах мĕнле майпа? Мăка кусарпа пӳрт пураймăн. Çавăнпа та вăл арăмне валли «çаврака» сăмахсем суйларĕ.

— Иулита,— чĕнчĕ вăл кравать çинче йăваланса выртакан арăмĕ çине ăшшăн пăхса,— вата хĕрарăмсем пире ырă канаш пачĕç.

— Мĕнле канаш?— сăн-питне йăлкăштарчĕ арăмĕ.

— Йывăр çын-хĕрарăмăн ытларах хускалмалла, чупмалла, хăлаçланмалла теççĕ.

— Ан култар-ха,— ихĕлтетрĕ Иулита.— Ку хĕрарăм ăсран тайăлнă тесе ухмахсен çуртне хупĕç мана.

— Чим, Иулита, итлесе пĕтер мана. Кулмалли ним те çук кунта. Эсĕ ĕçре кунĕпех ларан, килте те çаплах выртан. Ларса, выртса çеç тăракан хĕрарăма çуратма питĕ йывăр пулать теççĕ.

— Ĕненместĕп,— ассăн сывласа илчĕ Иулита,— айвансем шухăшласа кăларнă ăслай çеç вăл.

Ӳкĕте кĕмерĕ хĕрарăм. Витĕмлĕрех юрă кирлĕ. Çăраççи пăрмасăр уçăлмасть.

— Чĕкеçĕм, кала-ха, эсĕ мана юрататăн-и?

— Эпĕ сана юратнине сисместĕн-и вара?

— Хĕрхенетĕн-и?

— Паллах.

— Эппин, пулăш мана вутă татма. Пĕччен йывăр...

Иулита ним те чĕнмерĕ, ĕсĕклесех йĕме тытăнчĕ. Шалтах аптăрарĕ упăшки, арăмне ирĕксĕрех ачашлама тиврĕ. Тепĕр меслетпе те усă курма шутларĕ мăшăрĕ: апат пĕçерме пăрахрĕ. Анчах Иулитăн вучаха хуран тытса çакасси асра та çук. Иккĕшĕ те выçă хырăмпа выртрĕç çывăрма. Кайран та ĕç-пуç кив сукмакпах чупрĕ. Аптранă кăвакал кутăн чăмнă теççĕ.

— А-ах, ытла та юлхав эсӗ, ман арӑм,— ҫилленчӗ Лавруш.

Иулита хирӗҫлемерӗ. Сӑнӗ ҫеҫ тӗксӗмленчӗ ун, куҫне хурлӑхлӑн мӑчлаттарчӗ.

Йӗпе ҫине сапа тенешкел, мастерскойӗнче те — пӑтӑрмах. Омоллон мастер Хура тинӗс хӗррине канма тухса кайнӑ. Ҫуллахи илемпе рехетленесшӗн мар-и ара пурте. Ун вырӑнне шӑртлӑ хӗрарӑм юлчӗ. Вӑл ҫӗтӗлсе кӑна тӑрать. Иулитӑна та ҫунтарса илчӗ. Пурҫӑн кӗпене пӑснӑ имӗш. Ҫухине илемлӗ лартма пӗлмен. Ах, пӑсӑрлантарчӗ, чунӗ каниччен ятлаҫрӗ.

— Хамӑн ирӗк пулас тӑк пӗр кун тытмӑттӑм сана, тӑм ал-ураллӑскере, ӗҫрен паянах кӑларса ярӑттӑм,— сурчӑкне сирпӗте-сирпӗте кӑшкӑрашрӗ хӗрарӑм пуҫлӑх.

Ҫичӗ хурӑн касма ҫичӗ пуртӑ кирлӗ мар тенӗ ваттисем. Килӗнче те, ӗҫре те тиркеҫҫӗ. Тӳсеймерӗ Иулита хӑйне ҫын ҫапла ӑс панине. Ҫак сӑлтав ӑна килӗнчи пур-ҫук укҫи-тенкине кӗсйине чиктерчӗ те Зырянкӑпа сыв пуллаштарчӗ. Никам та пӗлсе юлмарӗ вӑл ӑҫта кайнине. Иулита Омоллон мастер патне Сочие ҫул тытрӗ.

## 19

Килне ҫӗркаҫ кӑна таврӑннӑ Патти алкум вӗҫне тухрӗ. Ыйхине сирме тесе пӗр хушӑ каркаланса илчӗ. Вара хыҫалти калинккене уҫса пахчана тухрӗ. Тин ҫеҫ ешерме пуҫланӑ улмуҫҫисем хушшинче амӑшӗ ӗҫлет. Хӑяр ӳстерме парник хатӗрлет.

— Анне,— чӗнчӗ ӑна Патти.

— Эсӗ ма пит ир тӑнӑ, ывӑлӑм?— пуҫне ҫӗклерӗ амӑшӗ.— Хырӑму выҫнӑ пулӗ-ха. Халех...

— Кӗр-ха часрах, санпа калаҫмалли пур ман,— васкатрӗ амӑшне Патти.

Ывӑлӗ ҫӑвӑнкаланӑ хушӑра амӑшӗ ҫӑмарта хӑпартни хатӗрлерӗ. Иккӗшӗ те апата ларсан Патти хӑйӗн чунне уҫса пачӗ.

— Тӗрӗс. Тахҫанах авланмалла. Пил паратӑп,— хӑпартланчӗ амӑшӗ.— Текех Теви куҫӗнчен пӑхас мар. Хӑйӗн тӳрӗ кӑмӑлӗпе мӑй таран тӑрантрӗ. Халиччен курман намӑса кӑтартрӗ.

— Ун пекех ан хӑрт-ха ӑна, айӑпу хӑвӑн та ҫук мар.

— Ан калаҫ кирлӗ мара. Ырӑ кин килти ҫӳппе ютта сӗтӗрмест,— ниепле те чарӑнаймасть Патти амӑшӗ.— Чим-ха, эсӗ ӑна, кӗрт йыттине, такамсемпе ерӗшнӗскерне, каялла илсе килесшӗн мар пулӗ те?

— Хăвах пĕлен: йытăран тилĕ тума çук. Эпĕ Арçик хĕрне качча илесшĕн.

— Чирлĕскере-и?

— Пулин. Унпа ярмăрккана каяс çук. Арçик хăйĕн пĕр-тен-пĕр хĕрĕпе пĕрле пысăк тупра парать — «Волга» машина. Во! Евчĕ туп пĕр тăхтамасăр.

— Чĕлпие хушăпăр эппин. Вăл, сĕмсĕрскер, вăтанма пĕлмест. Çатăлтаттăр,— ихĕлтетрĕ амăшĕ ывăлĕн çĕнĕ шухăшне тинех чĕри варрине хурса.

Килĕнче вĕсем иккĕшĕ çеç. Çемье пуçлăхĕ — эрех пички, çӳрет ял тăрăх пырне йĕпетесшĕн кастарса.

Сасартăк алăк уçăлчĕ.

— Ман килес,— пӳрте кăркка пек саркаланса кĕрсе тăчĕ мăнтăркка та лутака Чĕлпи.— Мĕнле сывлаççĕ, мĕнле чупаççĕ?

— Чиперех-ха. Иртсем тĕпелелле,— çемçен калаçма тăрăшать кил хуçи хĕрарăмĕ. Ана хулĕнчен çавăтса сĕтел хушшине лартрĕ.— Ах, ытла çылăхсăр çын-мĕн эс тупата. Ывăлпа иксĕмĕр сана тин çеç асăнаттăмăр. Чĕнме ятарласа çын ярасшăнччĕ. Шĕкĕр турра, ху çитрĕн.

— Ман чунĕ телетти пекех сисĕмлĕ те... Эсир кĕтнине туйрăм. Çавăнпа килес терĕм,— чапрас куçне пӳрт тăрăх шутарчĕ килнĕ хăна.

— «Телетти» мар, телепати теесшĕн пулĕ эсĕ,— юсарĕ Чĕлпи сăмахне Патти.

— Ия, картне лартсан юрать пире.

Килнĕ хăна умне Патти тулли четвĕрт кĕленчи илсе тухса лартрĕ.

— Ытла вашават çынсем эсир,— стакансем эрехпе тулнине кура чĕлхипе пыл юхтарма тытăнчĕ Чĕлпи.

— Пулас ĕçĕн ăнăçлăхĕшĕн ĕçĕпĕр,— стаканне çĕклерĕ Патти.— Эсĕ, Чĕлпи тăхлачă, пĕлен ĕнтĕ: арăма уйăртăм, ман тӳшек çĕнетмелле.

— Ия ара, тахçанах çапла кирлĕ,— терĕ Чĕлпи, Патти шухăшне самант ăнланнăскер. Сĕнессе-мĕн кĕтмерĕ, эрехне янклаттарчĕ.— Теви сирĕн кил-йыша йăнăшпа лекнĕ. Турă тăсса панă пуянлăха йышăнма пĕлмерĕ айванскер.

— Сăмахху — ылтăн,— хушса хучĕ Патти амăшĕ.— Çĕнĕрен авлантарап ывăлăма. Вăл урăх хĕр тупнă.

— Ия ара, ваттисем ахаль каламан ĕнтĕ: малтанхи арăм — мул усрама, кайранхи — чун усрама.

— Чĕлпи, эпир сана каллех евчĕ тăвасшăн. Чĕлхӳ-çăвару — евĕк сан, такама та çавăрма пултаран,— мухтать ăна Патти амăшĕ.— Ĕç тухсан сана эпир ахаль тумăпăр.

— Хĕрĕ кам-ха?— кăсăкланчĕ Чĕлпи.
— Арçик хăмлаçă хĕрĕ Маюк.
— Ара, вăл чир...— чыхăнанçи турĕ Чĕлпи чĕлхине çиййĕнчех тытса чарма ĕлкĕрсе.
— Ан имен, Чĕлпи тăхлач, хĕр чирлине пĕлетпĕр,— ун хутне кĕчĕ Патти,— Маюкăн тупри нумай. Хĕрĕпе пĕрле çăмăл машина та лекет. Во!
— Ия ара,— майлă шăлчĕ Чĕлпи.— Машинăллă хĕре качча илмесен çылăх. Арçик, уйрăмах арăмĕ, хĕрĕнчен хăтăласшăн хăмла пахчине те шеллесе тăмĕ.
— Ненай. Арçикĕн кутăнĕ пысăк,— пуçне сулкаларĕ амăшĕ.
— Кунта параппан çапса ларар мар,— хушса хучĕ Патти.— Пыл çумне çыпăçакан хурт-кăпшанкă нумай. Маюк мулне хапсăнакансем пырса тулĕç тата. Васкамалла!
Виççĕш те тепрер стакан ӳпĕнтерчĕç. Кун хыççăн Патти Чĕлпие икĕ кĕленче лартнă тарăн сумка тыттарчĕ. Лешĕ пĕр кĕленчине туртса кăларса пăхрĕ. Тути лĕпĕр сарăлчĕ.
— Қаçункkинех хунă-çке. Çуттин вăйĕ пысăк, такама та çавăрать.
Хушнă çĕре Чĕлпи часах тухса вĕçтерчĕ.
Çурхи тӳпене хăпарнă хĕвел шарлаттарса пăхать. Урам варринчи пылчăк самаях кушăхнă. Пӳртсем, хӳмесем çумĕпе хывнă сукмак та типнĕ. Қарта хушăкĕсенче симĕс курăк тапса тухнă. Акă Арçик çурчĕ. Қермен тейĕн ăна. Хапхи те шăп та шай чиркӳ алтарĕ.
Чĕлпи хапха шашулккине чăнкăртаттарчĕ. Сăнчăрпа кăкарнă йытти тытăнчĕ сиксе вĕрме.
— Қам унта?!
— Акаççи тăхлачă, эпĕ-ха ку — Чĕлпи. Уçса кĕрт-ха.
— Пирĕн хăмла пахчинче ĕçлесе укçа çапасшăн мар пулĕ те?
— Ĕç ухмаха юрататъ. Эпĕ халлĕхе ăсран тайăлман,— терĕ Чĕлпи.— Пӳрте кĕрер-ха, Акаççи тăхлач. Ăшă салам илсе килтĕм сирĕн пата. Арçик хăта килте-и?
— Вăл пахчара-ха. Хăмла аврисене шалча çумне çыхать.
Ку хыпар савăнтарчĕ евче. Малтан вăл Акаççипе калаçса татăласшăн. Вăл ама çури хĕрне Маюка çав тери кураймасть. Унран тасаласшăн пĕтĕм мулне пама хатĕр.
Пӳрте кĕрсен евчĕ сумкинчен пĕр кĕленчине кăларчĕ, теприне килĕнче упăшкипе ĕçмешкĕн упраса хăварасшăнха вăл. Çавăнпа та ăна кăтартмарĕ. Пĕрер черкке пушатсан тытăнчĕ сăмах çиппине хутăрма.

— Сирĕн хĕрĕре Маюка пĕри качча илесшĕн. Тӳрех калатăп, хĕрĕпе пĕрле ăна машина та кирлĕ.

— Кам вара каччи? Қала-ха хăвăртрах,— ниçта кайса кĕме пĕлмест Акаççи, упăшки хĕрĕнчен тахçанах хăтăлассăн çунаканскер.

— Питĕ илемлĕ, яштака каччă. Аслă-пуçлă çын.

— У териех хитри пăхĕ-ши пирĕн хĕре? Ну, кам?

— Шăкăрттан Патти.

— Эй ара, ун арăмĕ пур-иç!

— Эсĕ мĕн, Акаççи, тĕп сакайĕнче пурăнатăн-и? Патти — хусах. Теви вĕсем патĕнчен тасалнăранпа Қăкшăм çырминче пайтах шыв юхрĕ. Патти пек кĕрӳ тупаймастăр. Вăл — шофер. Хулара пурăнать. Сире вăл машинпа унталла-кунталла чуптарса çеç çӳрĕ.

— Авлансан Маюка хулана илсе кайĕ-ши?— кăсăклануать ама çури.— Анчах Арçик килĕшĕ-ши? Евче ан итле, вăл темле путсĕр çынна та ырлĕ темĕ-ши?

— Мĕнле хăятăр ман пирки çапла шухăшлама?! Халех каятăп та Паттие йăлт тăхçаласа паратăп, хĕрĕ чирлĕ, ашшĕ-амăшĕ путсĕр тейĕп. Атту халĕ вăл ним те чухламасть сирĕн пирки.— Чĕлпи ури çине сиксе тăчĕ, эрех кĕленчине сумкине чикрĕ, вара алăк патнелле таплаттаранçи турĕ. Ахаль çеç çапла хăратать (хăйĕн хакне ӳстерме). Вăл ухмах мар, çăварне хыпнă çăкăра сурса пăрахĕ-и? Тапса кăларса ывăтсан та вăл пуçне тепĕр хут пырса чикĕ.

— Э-эй, унашкалах эрленсе ан кай-ха эс,— Акаççи чупса пырса Чĕлпи хулĕнчен ярса тытрĕ, каялла сĕтел хушшине лартрĕ, шкапĕнчен эрех кăларчĕ, çав хушăра хăй шав пуплерĕ:— Ĕçне кăларăпăр. Арçик ман сăмахран тухмасть.

— Тем пекехчĕ... Патти вăл — ылтăн,— мухтама чарăнмасть евчĕ.— Унашкаллине кăнтăр кунĕнче çурта çутса шырасан та тупаймастăр.

Акаççи Чĕлпие пӳрте хăварса упăшки патне пахчана тухрĕ. Евчĕ килни, машина парнелесен Патти Маюка качча илме пулни çинчен йăлтах авăртса пачĕ.

— Урçа урапи утмăл тимĕрлĕ тенине илтмен-и вара эсĕ? Пĕртте хĕрхенместĕн-и Маюка?— тӳрех килĕшмерĕ упăшки.— Патти арăмне уйăрса янă вĕт-ха.

— Халиччен авланман çын такамах илтĕр сан чирлĕ хĕрне? Патти те ав машина парнелесен кăна илетĕп тет,— тутине тăсрĕ Акаççи.— Эй, сан хĕрӳпе эпĕ тек юнашар пурăнаймастăпах. Эппин уйăрлатпăр, çуртне-йĕрне çурмалла тăватпăр.

Тимĕр читлĕхе хупрĕ-хупрех Арçике арăмĕ. Ан пăхăн-

ха ăна, хаяр вăкăра, шĕвĕр мăйракипе сĕксе хăй айне тăвĕ. Утрĕ вара арăмĕ хыççăн Арçик ирĕксĕрех.

Пÿртре Чĕлпи пĕччёнех ларать. Вăл хĕрнĕ. Ăна никам та чăрмантарман ĕçме-çиме. Хуçисем кĕрсен тытăнчĕ палкама, сăмахне чăх сăхса çитереймĕ.

Акаççин пĕтĕм тĕллевĕ — хĕрне витересси. Çавăнпа та халĕ вăл ним те шеллемест: упăшкине мухтаса та йăпăлтатса шăварать хăватлă эрехпе.

Акă виççĕшĕ те ÿсĕрĕлсе çитрĕç. Чĕлпи урай варрине тухрĕ те тискер сассипе ахăрса ячĕ:

Юрри лайăх-и,
Ташши лайăх-и?

Акаççипе Арçик те хутшăнаççĕ:

Юрри лайăх-и,
Ташши лайăх-и?
Пирĕншĕн пулсан юрри лайăх,
Ташши тата лайăхрах.

— Эх! — кăшкăрса ячĕ Чĕлпи.— Ма ташлас мар. Ташлар!

Айккинчен айккинелле сулкаланса виççĕн тан пуçларĕç упалла лапăстатма.

Алăк анинче Маюк курăнчĕ. Тĕлĕнсе пăхрĕ вăл виçĕ камит тăпăртатнине.

— Акă вăл пирĕн кин пуласси! — хĕр патнелле туртăнчĕ Чĕлпи.

— Маюк, сана Шăкăрттан Паттине качча паратпăр,— хĕрĕ хăлхасăр пек кăшкăрчĕ Акаççи.— Лайăх упăшка тупрăмăр сан валли. Тав ту пире.

Маюк ни апла, ни капла сăмах хушмарĕ, вăл хирĕçлеме хăнăхман. Хĕр ÿсĕр карчăк элес-мелес хăлаçланса çывхарнине курсан шутсăр хăрарĕ, вăл каялла сирпĕнсе тухрĕ. Хыпарĕ вара ун чĕрине тимĕр кăшăлпа хĕссе лартрĕ. Кĕç-вĕç сиксе тухасла тăпăлт-тăпăлт тапакан чĕрине тытса чарас пек, кăкăрне сулахай аллипе йăпăрйăпăр ярса тытрĕ. Урисене аран-аран ылмаштарса утрĕ. Пахчана тухсассăн хăй лартнă хăмла хушшине шалтан шала кĕчĕ. Кунта ăна никам та тупаяс çук. Акă хĕр хăмла юпи çине таянчĕ. Пит çăмарти тăрăх куç çуль шапăртатать.

Маюк чунтан кураймасть Паттие.

— Арăмне уйăрнă çын ăçтан путлĕ пултăр? Каймастăпах ăна,— такам илтесрен хăранă пек пăшăлтатрĕ хĕр.

Чăнах та, чĕри хавшакрах ĕнтĕ Маюкăн. Мĕн тăван-ха?

Пӳрмен сывлăха турăран туртса илеймĕн. Апла пулин те вăл пиççе çитнĕ çырла пек хитре. Унăн та çамрăк чĕринче юрату валли чечен йăва пур. Вăрттăн усрать ăна, ырă ĕмĕт укисемпе куллен эрешлет. Ял йĕкĕтне, Ванюк тракториста, савать Маюк. Ăна курсан хăлат пек вĕçес, шăпчăк пек юрлас, вĕçĕмсĕр йăл-йăл кулас килет ун. Анчах хĕрĕн хĕвел пек çутă юратăвне Ванюк пачах сисмест.

Хӳтлĕхсĕр хĕр-çке Маюк. Паттие качча тухма килĕшет-и, çук-и, унран никам та ыйтмасть. Ама çури амăшĕ ăна кунĕн-çĕрĕн тем те пĕр каласа ятлать. Тăван ашшĕ тахçанах хĕрхенме, ун хутне кĕме пăрахнă. Вăл йăлтах арăмне паранна, унăн танатинчен хăтăлаймасть.

* * *

Маюка, йĕрекенскере, Патти пӳртрен илсе тухрĕ. Алкум вĕçĕнче Арçик хĕрĕпе кĕрӳшне парнеленĕ машина ларать. Çĕнĕ çынсем унта вырнаçрĕç. Патти руль умĕнче, юнашар — çамрăк арăмĕ. Пысăк хапхана уçрĕç. Машина картишĕнчен йăрлатса тухрĕ те урам тăрăх тĕрлеттерчĕ. Айккинчен айккинелле пăхать кĕрӳ. Хăйне ăмсанса юлакансене куçĕпе шырать. Аçта кайса çухалнă-ха вĕсем? Пысăккисем мар, пĕчĕк этемсем те чупмаççĕ кăсăкланса машина хыççăн.

Ялта хĕр илсе кĕрсен пӳрт тавра халăх пухăнаканччĕ. Анчах Паттин иккĕмĕш туйне курма никам та пымарĕ. Ку ăна тулаштарать. Мăшкăл-çке. Эппин, вĕсене çын хисеплемест. Тăхта-ха, акă пĕри кĕрет. Кам ку? Почтальон çеç иккен. Телеграмма илсе килнĕ вăл. Теви саламлатьмĕн. Патти урсах каять, телеграммине чăр-чар çурса пăрахать.

Почтальона Патти черкке тăсса парать, анчах лешĕ тытмасть. Вăл ĕçри çын имĕш. Ĕçме юрамасть тет.

Паянхи çак лару-тăру Паттие килĕшмест, килĕшмест çеç мар, шутсăр тарăхтарать. Вăл килне машинăллă арăм кĕртнĕ. Анчах ял-йыш кун пирки илтмен, курман пекех хăтланать. Çыннăн мухтанас килет ав. Вĕçкĕн чунĕ таçталла туртать.

— Атя, Маюк, катаччи чуптарам,— чĕнет арăмне Патти, хĕрĕнкĕскер.

Акă «Волга» урамран урама çитет, çилпе ăмăртса аслă çул çине тухать.

— Халĕ Шупашкара каятпăр,— тет Патти. Машинине ниме уямасăр хăвалама тытăнать. Маюк хăранипе siксе

чётрет. Чунё сиснех-мён мёскёнён инкеке. Ниссе те юлмарёç вёсем машини КамАЗпа пырса çапăннине.

Иртен-çÿрен машинăсем чарăнчĕç. Шоферсем самантрах чупса пычĕç авари пулнă çĕре.

— Иккĕш те вилнĕ-и? — ыйтрĕ шоферсенчен пĕри.

— Хĕрарăмĕ сывлать,— терĕ тахăшĕ.

Васкавлă пулăшу çитрĕ. Туй хыççăн ярăнма тухнă çĕнĕ çынпа упăшкине çĕмрĕк машина ăшĕнчен аран-аран туртса кăларчĕç.

— Ман вилес килмест. Чĕртĕр мана, тархасшăн,— йынăшрĕ Маюк хăйне наçилкка çине вырттарнă чух.

## 20

Вăхăт чăн-чăн спортсменах çав. Савăнăçлă та хурлăхлă çулталăк каллех чăрмавĕсем урлă сиксе каçрĕ. Татах чупать малалла, пурнан этеме çул хушса парать. Ах, ытла ĕçлĕ-çке! Пÿ янă яш-кĕрĕме хĕвелпе уйăх сăнĕсене парнелет. Ăшшĕ-амăшĕ шутне кĕнисенне çамки тирĕпе тути айккисене кăлт пĕрет. Хура çÿç пĕрчисене темле шĕвек сĕрсе шуратать. Асатте-асаннесене те хĕрхенмест: çурăмĕсене ыраттарса курпун кăларать, пит-куçĕсем çинче тарăн касăсем кастарса ватлăх сухи сухалать. Çуралакансем те, меserле яла каякансем те пулчĕç çул талăк хушшинче. Пурнăç йĕрки ку. Ăна нимпе те улăштараймăн. Вăл çыннине кура çавра çил пек çавăрттарать. Çав çавра çилте пĕрисем хăйсемшĕн кăна хĕвĕшсе пач çухалаççĕ, теприсем халăх ырлăхĕшĕн тĕркĕшеççĕ. Матиçпе Теви те çак йыша кĕреççĕ.

Акă хăйсем те сăмах çинех персе çитрĕç. Аллисенче чăматансем. Яла кĕреççĕ. Урама тухма тăкăрлăкпа утмалла. Кунта ешĕл курăк. Ешĕл курăкĕ кĕççеленсе выртать. Вырăнĕ шурлăхлăрах. Павăл мучи карти çумĕпе утаççĕ. Унччен те пулмарĕ, Матиç юлташне аллинчен тытса чарчĕ.

— Пăх-ха, Теви, Павăл мучи пахчинче кăшкар ути мĕнле ашкăрать! Кăçал йĕтĕн ăнса пулать.

— Ваттисем вĕрентнине пĕлетĕн те-ха, анчах йĕтĕн тенине ху куçупа курнă-и эсĕ? — йĕкĕлтÿллĕн пăхрĕ тусĕ çине хĕр.

— Хам акман та, ĕлĕк акнине асатте-асаннесем курнă,— тÿрре тухрĕ Матиç.

Капла каласан иккĕш те кулса ячĕç. Пĕр тапхăр чĕнмесĕр утрĕç. Вĕсен хыпаланмалла. Вун икĕ сехетре ту-

сёсем, Тимăпа Сусанна, çырăнма ял Советне пыраççĕ. Пĕри — моряк, тепри — фельдшерица.

Мăшăрлă пурнăç урапи ял Советĕнчен кăлтăртатма пуçлать. Çав урапан кустăрмисем, эх, пулсанччĕ ылтăнран! Вара нихăçан та кăшăлĕсене тутăх çимĕччĕ, шăлĕсем хавшаса тăпăрах саланмĕччĕç. Хăшĕ-пĕрисем çав ылтăн кустăрмаллă урапа çине ларма мел тупаççĕ. Ун пеккисен пурнăçĕ мĕн вĕçне çитиччен — пыл та çу. Ĕмĕр иртни сисĕнмерĕ теççĕ ун йышшисем.

— Матиç, сан шутупа мĕнле: моряка е Тимăна качча тухать Сусанна?— чеен куçне вылятса илчĕ Теви.

— Ăнланмарăм...

— Ара, Тима моряк-çке-ха. Вĕренсе тухсан лейтенант ятне илет тата... Сусанна ăна хăйне е тумтирне юратать-ши тетĕп-çке...

— Иккĕшне те юратать пуль ĕнтĕ.

Тевипе Матиç Тимăна хисеплеççĕ, шелleççĕ. Тăлăх ӳснĕ-çке-ха вăл. Юрать, ăслă пулчĕ. ПТУра вĕренчĕ. Салтака кайрĕ. Унтан тӳрех Тинĕс-çар флочĕн аслă шкулне вĕренме кĕчĕ.

Паян каçалапа клубра Тимăпа Сусанна туйне ирттермелле. Каччин ашшĕпе амăшĕ çук та, ку ĕçе Матиçпе Теви йĕркелесе пыраççĕ. Çав тĕллевпех вĕсем район центрне çитсе килчĕç. Парнесем, тĕрлĕ апат-çимĕç туянчĕç.

— Сусаннăна ял-йыш килĕштерет,— Тевин хĕр пирки капланнă иккĕленӳллĕ шухăшĕсене сирме васкарĕ Матиç.— Хăйĕн ĕçне пĕлет вăл. Куштанлăхĕ çук. Чирлисемпе ăшшăн калаçать, вĕсене сыватасшăн тăрăшать. Мĕнле чипер хăй! Чăн-чăн пике! Сап-сарă çӳçне, кăн-кăвак куçне, йăрăс пӳ-сине пăхса ытармалла мар. Виçине пĕлсе тумланать.

— Килĕшес. Сусанна лайăх кин пулать,— йăл-йăл кулчĕ Теви.— Ырă пурăнччăр.

Ял Советне çамрăксем пухăнма та ĕлкĕрнĕ. Венчет кĕпи тăхăннă Сусаннăпа Тима та кунта.

Акă уяв пуçланать. Ял Совет председателĕ ăшă сăмах каласа çамрăк мăшăрсене журнала алă пустарать. Сусаннăпа Тима пĕр-пĕрин пӳрнисене çĕрĕ тăхăнтараççĕ.

— Арлă-арăмлă мăшăр хушшине йĕп те хĕсĕнсе ан кĕтĕр,— çамрăксене ырă сунать председатель.

Сасартăк сĕтел çинчи телефон чăнкăртатать.

— Алло!— телефон кĕпçине ярса тытать Матиç.— Аçтан шăнкăравлаççĕ? Шупашкартан? Кам тетĕн? Лавруш? Салам, Лавруш! Трубкине урăххине паратăп: кунта халь мăшăрсене çырăнтаратпăр-ха.

Вăл трубкине тусне тыттарчĕ. Теви чĕри кăрт-кăрт тапма тытăнчĕ.

— Теви калаçать-ха санпа,— хăйĕн сассине хăй паллаймарĕ çамрăк хĕрарăм: ара, малтанхи савниййĕ калаçать-çке-ха.— Хăвна та сывлăх сунатăп, Лавруш. Яла килетĕн-и?.. Тата икĕ кунтан?— Теви пичĕ çине сасартăк сулхăн ўкрĕ.— Юрĕ, кайса калăпăр.

Теви телефон трубкине хучĕ.

— Мĕн тет Лавруш?— кăсăкланчĕ Матиç çамрăк мăшăрсем тепĕр пўлĕме тухсан.

— Виçмине арăмĕпе таврăнать. Амăшне пĕлтерме хушать.

Тевин тек кунта пĕр самант та тăрас килмест. Анчах ку уявран тухса кайма та юрамасть. Вăл депутат-çке-ха. Ав тепĕр мăшăра та çырăнтармалла тет. Мĕн тумалла? Унăн малтанхи савниййĕ Лавруш та авланать. Ах-ах-ах! Теви никама систермесĕр пўлĕмрен тухса каять. Куçĕнче куç çуль.

## 21

Ванихер инке ырă хыпаршăн чунтан савăнчĕ.

— Ман ывăл кин илсе килет,— пуплерĕ вăл хăй ĕçлекен çĕвĕ мастерскойĕнче те, урамра тĕл пулан çынсемпе те. Қанăçне пачах çухатрĕ: çĕр çывăрмасăр сăра турĕ, лавккара пулă туянчĕ, кукăль, пўремеч пĕçерчĕ.

Аслăрах ачисем пўртпе алкум урайĕсене çурĕç, картишне, пўрт умне хурăн шăпăрпа шăлса тасатрĕç. Пўлĕмри сывлăш халичченхи пек мар уçă. Чўрече янахĕ çинчи чечексем тата чĕрĕреххĕн чĕлтĕртетме тытăнчĕç: вĕсене шывпа пĕрĕхнĕ.

Хăнасем калана кунах çитеймерĕç. Пуринне те кăмăлне хуçрĕ ку.

Тепĕр кунне, ĕçрен таврăнсан, Ванихер инке çемйипе пĕрле апат çиме ларчĕ. Турилккесем çинче хура тул пăтти пăсланать. Қашăк тытнăччĕ кăна Ванихер, сасартăк алăк уçăлчĕ те, пўрте кăштăрт Лавруш кĕрсе тăчĕ. Ун хыçĕнче — майра.

Шăв-шав çĕкленчĕ. Пурте сĕтел хушшинчен кĕпĕрленсе тухрĕç. Ванихер ывăлне пырса ыталарĕ, чуп турĕ. Вара кинĕ еннелле çаврăнчĕ.

— Ай, турăçăм!— сасартăк кăшкăрса ячĕ вăл.— Лавруш, ывăлăм, ку сан арăму-и?

— Çапла. Ман арăм,— терĕ лешĕ хаваслăн.— Паллашăр...

— Ара, ку Иулита-иç! Ак тамаша!

Иулита та палласа илчĕ Ванихер инкене. Вара вăл, пуçĕнчен тукмакпа çапнăн, вăрт! çаврăнчĕ те вĕлт! çухалчĕ пӳртрен.

Ним те ăнланман Лавруш ыйтса-тĕпчесе тăмарĕ, тухса чупрĕ арăмĕ хыççăн. Укăлча хапхи леш енче аран-аран хуса çитрĕ. Питне аллипе хупласа йĕрекенскере ачашшăн ыталарĕ.

— Çитĕ, çитĕ хурланма,— йăпатрĕ ăна упăшки.— Мĕншĕн тухса тартăн-ха? Атя киле.

— Пымастăп!— хирĕçлерĕ Иулита.— Пылчăклă вĕренпе сĕтĕрсен те пымастăп. Эпĕ халех каялла Шупашкара каятăп.

— Мĕн калаçан кирлĕ мара? Эпĕ сана юрататăп. Ачамăра, тен, тупăпăр. Тухтăртан тепĕр хут йăлăнса ыйтăпăр та, калатех ĕнтĕ хĕрĕмĕре кама усрава панине.

— Аннӳ мĕн калĕ?

— Вăл пирĕн питĕ ырă кăмăллă çын. Ку тарана çитсе кушака та кӳрентермен. Мĕнле сăлтава пула хăраса ӳкрĕн вара унран? Çапса пăрахсан та ăнланмастăп.

— Ав кунталла чупать!— тăр-тăр чĕтреме тытăнчĕ арăмĕ.

Тĕрĕсех-мĕн, Ванихер инке тĕрлеттерсе килет. Ун хыçĕнче — ачи-пăчи. Чи кайра тин утма вĕренекен Ильяспа Синерпи йăраланаççĕ. Чăнах, пĕтĕм кил-йышĕ хăпса тухнă тейĕн. Ашшĕ кăна çук. Вăл ĕçре тем йӳтĕме пула тытăнса тăрать.

Иулита карт туртăнчĕ! Упăшкин алли вăйлă çав, вĕçерĕнеймерĕ.

— Яр мана!— хытăрах ĕсĕклеме тытăнчĕ вăл.

— Ан та хирĕçле! Шыраса хăшкăлнă хыççăн тупрăм пулать те, халĕ уйрăлăп-и?

* * *

... Лавруш салтакра çурçĕрте, тинĕс хĕрринче, пулчĕ. Теви качча кайнине вăл амăш çырăвне илсен пĕлчĕ. Кулянтарчĕ ку хыпар салтака. «Тăван яла таврăнмастăп»,— шут тытрĕ вăл. Чăнах та, хăй сăмахне тытрĕ. Служба вĕçленсен Колыма юхан шывĕ хĕрринче ларакан Зырянка поселокне пырса тухрĕ. Йĕри-тавра якутсем пурăнаççĕ. Поселокĕнче вара — тĕрлĕ халăх.

Шкулта илнĕ шофер прави кунта юрăхлă пулчĕ. Лавруш тӳрех машинăпа ĕçлеме пуçларĕ. Вĕсем карьертан Зырянкăна, Колыма хĕррине, çĕр кăмрăкĕ турттарчĕç.

Ҫинора вӑл пӗринче Иулитӑпа паллашрӗ. Чипер хӗр. Ӑшшӑн калаҫать. Чунтан юратрӗ ӑна каччӑ. Тевие аса илтерсе тӑраканни ун чунӗнчен тинех лӑштӑрт тухса ӳкрӗ. Мӗн тери ырӑ ҫумра юратнӑ арӑм пулсан! Ҫунсем пӗрин хыҫҫӑн тепри сиккипе ҫӗмӗрттерчӗҫ. Ӑҫта васкаҫҫӗ-ши аплах? Хуйхӑ-суйхӑ илсе килекенни хӑваламасть-ши вӗсене? Сисетех-мӗн чун. Акӑ кӗтмен инкек: арӑмӗ тухса тарать. Хурлӑх! Мӑшкӑл! Ҫуҫӑм ан куртӑр, хӑлхам ан илттӗр тенешкел, Лавруш ӗҫлеме Ҫолыма ГЭСне тунӑ ҫӗре куҫать. Анчах арӑмӗ унта та самантлӑха та ӑшран тухмасть. Иулитӑна курма ӗмӗтленнипе кашни хӗрарӑмах шӑтараслa пӑхрӗ. Ҫӑлӑхах, ниҫта та тӗл пулмарӗ ӑна. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе вӑл арӑмне сурсах ятларӗ, тепӗр чухне тӳсмелле мар хӗрхенчӗ те: ара, вӑл йывӑр ҫынччӗ-ҫке-ха. Лавруш уйрӑмах вырӑн ҫине выртсан асапланчӗ. Тепӗр чух ӑна хӑй ҫумӗнчех куратчӗ. Пӗринче Лавруш тӗлӗк курчӗ. «Ачуна ҫуратрӑм»,— терӗ ӑна Иулита. Ҫак сӑмаха илтсен куҫне шӑлкаласа вӑл тӳрех вырӑнӗ ҫинчен сиксе тӑчӗ, часрах пирус чӗртсе ячӗ. Шыраса тупмаллах ӑна. Анчах ӑҫтарах-ши вӑл? Тӑван ҫӗр-шыв ҫав тери аслӑ-ҫке. Ҫанӑҫсӑрланса ӗмӗтленсен кӗтни ҫитет иккен. Пӗррехинче Иулита пирки хыпар илтрӗ.

ГЭС тунӑ ҫӗрте ӗҫлекен ҫамрӑксем Ҫолыма хӗрринче каҫсерен вӑйӑ йӗркелетчӗҫ. Лавруш та ҫӳретчӗ ҫав вӑййа.

— Дамский вальс!— кӑшкӑрчӗ пӗри, культработник пулчӗ пулас.

Сасартӑк Лавруш умне пӗр хитре хӗр пырса тӑчӗ те ташша чӗнчӗ.

Паллашрӗҫ. Пике ячӗ — Света. Вӑл Шупашкар хӗрӗ, стройкӑра ӗҫлет.

— Эпӗ те Чӑвашран. Анчах Шупашкар хӗрӗсенчен хӑратӑп,— терӗ Лавруш Светӑпа ташласа ҫаврӑннӑ май.

— Мӗншӗн?— куларах ыйтрӗ хӗр.

— Мана Шупашкар хӗрӗ Зырянкӑра чике тӑршшӗ лартса хӑварчӗ.

— Мӗнле апла? Ҫаратрӗ-и?— тӗлӗнчӗ Света.

— Ҫапла, чуна ҫаратрӗ.

— Тӑхта, эпӗ хам та малтан Зырянкӑра пурӑннӑ. Тен, вӑл хӗре паллатӑп. Мӗн ятлӑ вӑл?

— Иулита.

— Хушамачӗ — Гузеева. Ҫапла-и?— хӑйпе ташлакан каччӑ куҫӗнчен тинкерсе пӑхрӗ Света.

— Тӗрӗс!— хытах каларӗ Лавруш. Унӑн сасси ташлакансене чӑр-чар пӑхтарчӗ.

— Иулита Гузеева халӗ Шупашкарта, хамӑр вӗренсе тухнӑ ПТУра мастер помощникӗнче ӗҫлет.

Музыка чарӑнчӗ. Лавруш хӗре тантӑшӗсем патне ӑсатрӗ. Тек ташлас кӑмӑлӗ пулмарӗ унӑн. Айккинелле пӑрӑнчӗ. Пӑртак тӑрсан ташӑран пачах пӑрахса кайрӗ.

Тавралӑх каҫ сӗмӗпе тӗттӗмленчӗ. Ҫолыма шывӗ те, Лавруш чунӗ пекех, лӑпкӑ мар, таҫтан кӑлтӑртаттарса килекен хумӗсемпе ҫырана пыра-пыра ҫапать. Лавруш ҫыран хӗрринчи чул катрамӗ ҫине пырса ларчӗ. Пуҫне чикрӗ, чӗр куҫҫийӗсене ыталарӗ. Хӑй ҫине шыв пӗрчисем сирпӗнеҫҫӗ. Ҫакна ним те туймасть вӑл, шухӑша путнӑскер. Ҫӗҫех ун ҫирӗп тӗллев ҫуралчӗ: «Пӗр тӑхтаса тӑмасӑр Шупашкара каяс. Ачам та чупакан пулчӗ-тӗр. Атте ӑҫта тесе ыйтать-тӗр. Ывӑл-ши, хӗр-ши? Ах, часрах пӗлесчӗ.

Тепӗр кунне кану илме тесе Лавруш ирех пуҫлӑхӗ патне кӗчӗ. Ҫу ӑшшинче тухӑҫлӑрах ӗҫлесе юлмалла. Ку вӑл— пуҫлӑхсен юрри. Тӗрӗсех ӗнтӗ — кунта, Ҫурҫӗрте, ҫапла кирлӗ те. Анчах кану ыйтса хут ҫырнӑ Лавруш юрри те шухӑшсӑрах мар: кая хӑварсан каю шӑтать. Ҫуралнӑ кӗтесне кайса килме ирӗк пачӗҫ ӑна.

Лавруш ак Шупашкарта. Халиччен кунта пулса курманччӗ-ха вӑл, пуҫласа утать ку хула урамӗ тӑрӑх. Темиҫе хутлӑ ҫуртсем те, ҫулӑн икӗ айккипе ӳсекен ешӗл йывӑҫсем те, паркри йӑрансенче ӳсекен илемлӗ чечексем те, ҫатма тӗпӗ евӗр яка ҫулпа каллӗ-маллӗ йӑрккакан автомашинӑсемпе троллейбуссем те илӗртмеҫҫӗ ӑна. Вӑхӑт мар халӗ вӗсемпе киленме. Вӑл шутсӑр васкать. Ҫак самантра пырса ҫитмесен ун арӑмне ҫӗр ҫӑтать тейӗн. Чунӗнче— пӑшӑрхану. Юрать-ха, ӑраскалӗ ун майлӑ темелле: хӗвелӗ те анӑҫалла сулӑннӑ, вырсарни кун тата. Ку вӑхӑтра ачаллӑ хӗрарӑм килтех пулма пултарать. Лавруш тӳрех ПТУ общежитине ҫул тытрӗ.

Акӑ чуна пӑлхантаракан пӳлӗм алӑкӗ. Шаккарӗ, анчах Лавруш шалтан сасӑ парасса кӗтмерӗ, ӑна тӗксе яри уҫса ячӗ.

— Иулита!— чӑматанне ҫӗре лартрӗ те ҫиҫӗмле ҫывхарчӗ сӗтел хушшинче ларакан арӑмӗ патне.— Эсех-и ку, пӑрчканӑм?

Иулита шартах сикрӗ. Ун умӗнче — упӑшки. «Таваршу сехечӗ ҫитрӗ пулас»,— мӗлтлетсе илчӗ ун пуҫӗнче шухӑш. Сывлӑх сунасшӑнччӗ, анчах сасси тухмарӗ.

— Лӑплан, лӑплан, ылтӑнӑм,— эпӗ сана ятлама килмен,— ӑшшӑн пӑхрӗ арӑмӗ ҫине Лавруш.— Илме килтӗм. Тек сирӗнсӗр пурӑнаймастӑп.

Лавруш арӑмне ыталаса чуп турӗ. Иулитӑн пӑлханнӑ

кăмăлĕ кăшт пусăрăнчĕ. Упăшки пыриччен пукан çине çип хутăрĕ тăхăнтарса ăна сӳтсе çăмхалаканскер ĕç хатĕрĕ-хĕтĕрне сĕтел çине илсе хучĕ.

— Лар,— ирĕкленнĕ вырăн еннелле пуçне сĕлтрĕ вăл.

— Пирĕн пĕчĕкки ăçта вара?— ун-кун пăхкаларĕ Лавруш.— Ывăл-и, хĕр-и пирĕн пепкемĕр? Çырса пĕлтермерĕн...

— Нимле пĕчĕкки те çук пирĕн,— тавăрчĕ Иулита.

— Вилчĕ-и?— хыпăнса ӳкрĕ Лавруш.

Арăмĕ чĕнмерĕ. Куçĕнчен куç çуль йăрлатса анчĕ.

— Мĕнле чирпе асапланчĕ? Эй, телейсĕрскер. Атя, пач тĕттĕмлениччен масар çине çитсе килер. Тăприне те пулин ыталаса йĕрем. Каçару ыйтам. Тумлан!

Йăшăлт та тумарĕ Иулита. Юлашкинчен упăшки хистенине тӳсеймен енне аран-аран сăмах вĕçертрĕ:

— Вилмен пирĕн хĕр ача...

— Ну, хăратрăн та. Апла юрать-и вара?— тутăр кăларса тарлă питне, шывланнă куçне шăлкаларĕ Лавруш.— Эппин, ăçта вăл? Кам патĕнче те пулин вылять-и? Чĕнсе кил часрах.

— Вилмен пирĕн хĕр ача, анчах... çук вăл!— кăшкăрсах каларĕ Иулита. Хăй çавăнтах тунката евĕр хытса ларчĕ. Куçĕ сĕтел çинчи çип çăмхине тĕллерĕ.

Çийĕнчех чухларĕ Лавруш: кунта пураннă тĕвĕ пур, хĕн ăна салтма. Тӳрккес хăтланни — усăсăр. Тĕввине майĕпен пушатса пыма тăрăшмалла. «Иулита хăй чунне уçса парасса кĕтес»,— тавçăрса илчĕ упăшки.

— Иулита, Атăл кăтарт-ха мана,— сасартăк сĕнчĕ Лавруш.

Арăмĕ кăн пăхрĕ ун çине. Шӳтлет терĕ пулас. Упăшкин сăнĕнче йĕкĕлтӳллĕ кулă палăрмарĕ. Эппин, чăнласах Атăл хĕррине кайма шут тытнă.

— Юрать,— килĕшрĕ Иулита.

Пуçтарăнса урама тухрĕç. Лавруш арăмне хулĕнчен çавăтрĕ. Хавасланрах калаçанçи пулчĕ. Анчах ачи пирки пĕлес шухăш ăшĕнче чăтмалла мар амаланчĕ. Апла пулин те тапратмарĕ çак ыйтăва, тӳсрĕ.

— Питĕ тунсăхласа çитрĕм сире курас килнипе,— арăмне хăй çумне пăчăртарĕ Лавруш.— Питĕ юрататăп эпĕ сана. Ӳлĕм пĕрле пурăнăпăр, нихăçан та пĕр-пĕринчен уйрăлас марччĕ.

Атăл хĕррине çитрĕç.

— Мĕнле сарлака иккен вăл!— тĕлĕнет Лавруш.

— ГЭС тунăранпа шыв çапла хăпарчĕ,— тинех сăмах хушрĕ Иулита.

Чылайччен тăчĕç вĕсем карлăк çумĕнче. Юлашкинчен кафене кĕчĕç.

— Виçмине яла кайăпăр ачамăра çавăтса,— сĕтел хушшине ларнă чух каласа хучĕ Лавруш.— Пирĕн ачана курсан анне савăнать ĕнтĕ!

— Мĕн çаплах авăран: ача та ача,— сасси çиллессĕн тухрĕ Иулитăн кофе куркине айккинелле тĕкнĕ май.— Урăх сан сăмах та çук-и?

— Ăнлан, Иулита, питĕ курас килет ачамăра.

— Мĕн, ман курас килмест тетĕн-и? Ķулянатăп, анчах чавса çывăх та — çыртма çук.

— Ķам чарать сана ăна курма?

— Итле, тĕрĕсне калам: эпĕ ăна ăçта çуратнă, çавăнтах пăрахса хăварнă.

— Мĕншĕн?

— Пĕлместĕп. Çупса яр мана, патак çитер.

Лаврушăн пырне темле чăмакка капланчĕ. Ни çăтайминне ăна, ни сурса пăрахаймасть. Иулита çине алă çĕклеме мар, ятламарĕ те.

— Ыран кайса килес эппин ун патне,— терĕ чылайччен кантăк витĕр Атăл çинелле пăхса ларнă хыççăн.

— Ăçта вăл — «ун патне»? — кăсăкланчĕ арăмĕ.

— Ача çуратмалли çурта.

— Пирĕн ачана ку таранччен унта усрамаççĕ ĕнтĕ. Ăна пĕр-пĕр ача çуртне ăсатнă.

— Эппин, ăна ăçти ача çуртне ăсатнине пĕлмелле пирĕн.

Лавруша тепĕр хыпар тĕлĕнтерчĕ: Иулита вĕсен районĕнчи пульницара çуратнă иккен ачине.

Икĕ кун иртрĕ Шупашкартан тухиччен: Иулитăна ĕçрен кăлармалла пулчĕ.

Район центрне пырса çитсенех вĕсем ача çуратмалли çурта кайрĕç. Тухтăрĕ çук иккен. Ăна пĕр кана кĕтме тиврĕ. Ķăнтăрла иртсен тин пычĕ вăл. Чăр-р пăхрĕ тухтăр мăшăрсем çине. Иулитăна паллаймарĕ пулас. Халь вăл юсаннă. Пит çăмартисем тулса çавракаланнă. Хĕр пекех чипер.

Лавруш хăйсем мĕн сăлтавпа çӳренине каласа ăнлантарчĕ.

— Пепкене ача çуртне мар, усрава патăмăр. Ас тăватăп: амăшĕ пулма килĕшнĕ хĕрарăм çав тери ырă кăмăллăччĕ.

— Тархасшăн, калăр-ха вăл хĕрарăм ăçта пурăннине,— тилмĕрчĕ Лавруш.— Ашшĕ-амăшĕ пур çинчех ачана тăлăххăн ӳстерес марччĕ.

— Малтан шухăшламалла пулнă кун пирки. Арăмăр

алă пусса пачĕ ача кирлĕ мар тесе,— ăнлантарчĕ тухтăр.

— Арăм чирлĕрех пулнă çав ун чухне, йăнăшнă. Хам кунтан аякраччĕ.

— Юлташсем, сире ачана усрава илнĕ хĕрарăм ятне те, вăл ăçта пурăннине те калаймастăп. Саккун хушмасть. Ача пурнăçĕпе вăйă вылямаççĕ,— тухтăр сĕтел сунтăхне шат! хупрĕ. Вăл кунпа ĕç пĕтнине пĕлтерчĕ ĕнтĕ.

Вĕсем тухтăр пӳлĕмĕнчен тухрĕç. Шанчăкĕ сӳнмерĕ пур пĕрех. Хăйсене пулăшакан çын тупăнассăнах туйăнать. Анчах кам? Тата мĕнле майпа пулăшĕ-ха вăл? Ку халлĕхе тĕтреллĕ-ха. Тен, ĕçрисем кирлĕ хут туса парĕç...

— Ан кулян, Иулита, ачана тупатпăрах. Хам ачашăн эпĕ вута-шыва кĕме те хатĕр. Çĕнтерӳ пирĕн енче пулĕ.

Иулита шăпăрт пырать Лавруш çумĕнче. Вăл чи кирлине тунă — ача çуратнă. Ытти ун ĕçĕ мар — упăшкин. Çак шухăш ăна ытлашши хыпса çунма памасть пулас. Халĕ вăл калама çук çирĕп хӳтлĕхре. Хӳтлĕхĕ — упăшки.

* * *

Ванихер инке пашкаса укăлча хапхи витĕр тухрĕ. Ун хыççăнах аслăрах ачисем те чупса çитрĕç. Аякрах та мар, çырма хĕрринчи йăмра айĕнче, Иулитăна ыталаса Лавруш тăрать.

Ытти ачисем умĕнче аслăрах ывăлне пăсăркки пама аван маррине амăшĕ ăнланчĕ. Вăл айккинелле пăрăнчĕ те Лавруша хăй патне чĕнчĕ.

— Иулита, пĕртте ан хăра. Эпĕ халех,— тесе арăмне чуп турĕ те Лавруш амăшĕ патне утса пычĕ.

— Пĕлетĕн-и эсĕ,— Иулита еннелле пуçне сĕлтсе илчĕ амăшĕ,— ку мĕнле кайăк иккенне? Саншăн тĕнчере хĕр пĕтнĕ-и çак йĕксĕксĕр пуçне? Ку инке арăмпа ан çыхлан, ывăлăм. Хăвна хĕрхен. Вăл ача çуратма та ĕлкĕрнĕ.

— Эсĕ ăçтан пĕлетĕн Иулитăна?— хăюллăн чăрлаттарса пăхрĕ Лавруш амăшĕн куçĕнчен.

— Эпир пульницăра унпа пĕр вăхăтра çуратрăмăр.

— Хăçан?

— Ильяса... Ильяспа Синерпие, йĕкĕрешсене, çуратнă чух ара. Çак Иулита текенскер ачине чĕчĕ те памарĕ. Хĕр ачине хам кăкăра ĕмĕртрĕм. Çитменнине, вăл хăй ачине пульницанах пăрахса хăварчĕ.

— Йăлтах пĕлетĕп,— çирĕплетрĕ Лавруш.— Эсĕ, анне, Иулита ачине кам илсе кайнине курман-и?

— Сан мĕн ĕç пур çын ачипе?

— Анне, вăл ман ача.

— Ан аташ-ха, вăл мĕнле сан ачу пултăр?

— Иулита — ман арăм... Иртнинче килсен каланăччĕ сана хам авланни çинчен. Вăл ман патăмран кайнă чух йывăр сыннччĕ.

— Ах, пуçăм çаврăнсах кайрĕ,— тăнлавне алă тупанĕпе ярса тытрĕ Ванихер.

— Эпир паян ача çуратмалли çуртра тухтăрпа калаçрăмăр,— ассăн сывларĕ Лавруш.— Анчах хĕрĕме кама панине каламарĕ.

— Тухтăрĕ пĕлет пуль-ха мĕн тумаллине... Тӳрех чĕлхе салтма юрамасть вĕсен.

— Чим-ха, пуçа çĕнĕ шухăш пырса кĕчĕ,— амăшĕн аллине йăпăр-япăр тытрĕ ывăлĕ: — Эсĕ пульницара Иулитăпа пĕр вăхăтра выртнă. Курнах-тăр пирĕн ачана кам илсе кайнине. Аса ил-ха, тархасшăн...

— Вăл çухалман,— ывăлне хĕрхеннипе Ванихерĕн куçĕ шывланчĕ.— Ав вăл — Синерпи, Ильяспа вылять.

— Чăнах-и?— хăй илтнине хăй ĕненмерĕ Лавруш.— Эпĕ ухмаха тухатăп пулас... Кала-ха тепĕр хут, аннеçĕм.

— Ав сирĕн хĕр ачăр Ильяс хыççăн чупать тетĕп. Иулита ачине питĕ хĕрхеннипе пульницаран хам илсе тухрăм.

— Тĕрĕсех-и ку, анне?— куç çульне тытса чараймарĕ ывăлĕ.

— Ма суятăп пуль? Çĕнни кунта çавă çеç: эппин, Синерпи ман хĕр мар, мăнукăм пулать. Мăнукĕсене асламăшĕсем хăйсен ачисенчен те ытларах юратаççĕ.

— Тавтапуç сана, анне. Эсĕ чăн-чăн çын! Эпĕ сана вилесле юрататăп. Эсĕ телей парнелерĕн пире.

Амăшĕн те пичĕ тăрăх куç çуль юхса анчĕ. Вăл мĕншĕн хурланать тата? Ывăлĕпе кинĕн тата мăнукĕн телейĕшĕн-ши?

Ванихерпе аслă ывăлĕ уйрăлаймасăр калаçаççĕ. Ыттисене кичем пусрĕ ав. Анчах пĕри те амăшĕ патне пыма хăяймасть. Йĕрки çапла: пысăккисене чăрмантарма юраманнине пĕлеççĕ.

— Аппа, эсĕ мĕншĕн пĕчченех тăран?— тĕпчет ачасенчен пĕри.

— Атя тытмалла вылятпăр,— сĕнӳ парать иккĕмĕшĕ.

— Тавтапуç. Ман выляс килмест,— тет Иулита.

Аслăраххи карта çумĕнче ӳсекен сарă чечеке татса Иулитăна парнелерĕ.

Чи пĕчĕккисем çакна асăрхарĕç. Вĕсен те çавнах тумалла, анчах чечек тĕлне сĕмленеймеççĕ. Курăк вăтăрчĕç.

Синерпи хаваслăн чупса пычĕ Иулита патне.

— М-ме!— пĕчĕк кăна ывăçне уçрĕ вăл. Лешĕн ирĕксĕрех ача аллинчи симĕс куракка илме тиврĕ.

— Иулита!— чĕнчĕ Лавруш çак вăхăтра.— Кил-ха пирĕн пата!

Шикленерех çывхарчĕ арăмĕ ун патне. Вара Лаврушпа амăшĕ пĕр-пĕрне пŭле-пŭлех унпа калаçма тытăнчĕç. Иулита сăн-пичĕ çуталса-çуталса пычĕ. Акă вăл йăлтăр кулса ячĕ.

Лавруш арăмне çавăтрĕ те, хĕрĕ патнелле утрĕç.

— Тăхтăр-ха,— чарчĕ вĕсене Ванихер.— Хĕр ачăра капла ĕмĕрлĕхех хăвăртан сивĕтме пултаратăр. Халлĕхе эсир уншăн ют çынсем. Майĕпен хăнăхтармалла ăна. Пĕри Синерпие çĕклесен теприн Ильяса йăтмалла.

## 22

Вăхăт тенин хăйĕн йĕрки. Унăн — пысăк вăй. Вăл çынсен кăмăлĕсене имлесе çывăхлатма та, кирлĕ пулсан вĕсен хушшине хура кушак кĕртсе яма та пултарать.

Ванихер инке кил-йышĕнче те вăхăт хăйĕн ĕçнех турĕ. Çĕнĕ çемье чăмăртанчĕ. Синерпи хăйĕн тăван ашшĕ-амăшне хăнăхрĕ, юратрĕ вĕсене.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Лавруша ĕçĕнче кĕтеççĕ ĕнтĕ. Васкатса темиçе телеграмма та килчĕ. Çула тухас самант çывхарать. Хатĕрленет çамрăк мăшăр. Çулĕ çывăх мар, Якут çĕр-шывне çитмелле.

— Ял Советне каяр паян,— чĕнчĕ Ванихер ывăлĕпе кинне. Унтан пŭртре кантра явса ларакан упăшки еннелле çаврăнчĕ:— Йăкăнуç, эсĕ те тумлан, санăн та пымалла.

Тăваттăн тухрĕç вĕсем килтен. Урамри курăк йĕп-йĕпе, калăн: çĕр каç çумăр çуса иртнĕ. Пушмак пуçĕсем çу сĕрнĕн часах тĕкĕр пек çуталчĕç. Ирхи хĕвел пайăркиŭкнĕрен çулçăсем çинчи сывлăм пĕрчисем, хунар çутнă тейĕн, йăлтăртатаççĕ кăна.

Ванихер шăкăл-шăкăл калаçса утать çемйипе. Умра пыракан пĕр хĕрарăма хăваласа çитрĕç.

— Эсĕ-çке ку, Татти, тŭрех паллаймарăмăр та,— сывлăх сунчĕ Ванихер ăна. Упăшкипе ывăлĕ, кинĕ те пуç тайса чыс турĕç.

— Сăвап пултăр хăвăра та,— саламларĕ вĕсене Татти.

— Мĕн çĕмĕрттерсе çŭрен ир-ирех?— терĕ хаваслă сассипе Ванихер.

— Пăру тени шухăрах-ха ман. Кĕтŭпе пĕрле кăштах утма тиврĕ уялла.

— Сывӑ пул эппин, Татти. Эпир васкатпӑр,— иртсе кайрӗҫ хуса ҫитнисем.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, таҫтан муртан Чӗлпи сиксе тухрӗ.

— Татти,— чӗнчӗ вӑл чапрас куҫне ҫиҫтерсе,— мӗн калаҫрӗ санпа Ванихер?

— Эпир мӗн ҫинчен калаҫни ма кирлӗ сана?

— «Ма», «ма»,— Таттие витлесе илчӗ Чӗлпи.— «Ма» тесе ватӑ сурӑх калать. Ял Советне пыма йыхӑрчӗ пулӗ-ха сана Ванихер. Ҫаятӑн-и?

— Ял Советне кӗме нимле йӳтӗм те ҫук ман.

— Курас килмест-и вара?

— Мӗн курмалла тет унта? Ҫамит кӑтартмаҫҫӗ ахӑр?

— Тӗттӗм хӗрарӑм эсӗ, Татти. Хыпар-хӑнарпа кӑсӑкланмастӑн,— тутине пӑркаласа илчӗ Чӗлпи.— Халӗ пӗтӗм ял Ванихер йӗкӗрешӗсене уйӑрни ҫинчен сӑмахлать. Эсӗ пур, «камит» текелен.

— Хӑйсен ачи-пӑчи. Уйӑрма та, пӗрлештерме те пултараҫҫӗ, никам та чараймӗ.

— Чарасси-мӗнӗ... Ия ара. Чее-ҫке Ванихер. Пулӑшу укҫи пама пӑрахрӗҫ пулӗ-ха.— Теме кура ахӑлтатса кулчӗ Чӗлпи.

— Тьфу!— сурчӗ Татти.— Эсӗ, хӑямат хӗрарӑмӗ, ҫынра ыррине курмастӑн! Пурне те ху пек тетӗн пулас.

Ял Советне ҫынсем самаях пухӑннӑ. Ӗҫпе-ши е Ванихер кил-йышӗн хыпарне пӗлме килнӗ? Чӗлпи малти ретри пукан ҫинех пырса ларчӗ. Ҫынсене чапрас куҫӗсемпе пӑра пек шӑтарать. Виталий Семенович зоотехник та кунтах. Ана мӗн кирлӗ тата?

Ял Совет председателӗ Матиҫ, Теви депутат шалти пӳлӗмре-ха.

Матиҫ чунӗ лӑпкӑ мар. Ара, халиччен курман, илтмен ҫӗнӗ ӗҫ туса ирттермелле-ҫке-ха. Ҫунашкал самантра пӗлме ҫук: такама хӗрхенмелле, такамшӑн хӗпӗртемелле. Савӑнӑҫпа куляну пурнӑҫра яланах юнашар пыраҫҫӗ ҫав.

Тевин хӑйӗн асапӗ. Хуйхӑрнипе пӗр хӗрелет, пӗр кӗл пек кӑвакарса каять. Ӑҫтан тӳсӗн? Ӑҫтан хӑвна лӑпкӑн тытӑн? Паян акӑ чӗри ҫумӗнчи малтанхи юратӑвне яланлӑхах сӳнтереҫҫӗ. Ара, Лавруш кукамӑш сӑмахӗнчен тухаймасӑр ҫухатнӑ малтанхи савнийӗ-ҫке-ха. Йӑнӑшса урӑх сукмакпа кайсан та малтанхи юрату хӗлхемӗ пур пӗрех сӳнмест. Вӑл тӑрсан-тӑрсан хӑйне аса илтерет те тытӑнать чуна ҫунтарма. Юхать вара вӗри куҫ ҫуль.

Ял Совет председателӗ Матиҫ тата Теви депутат шалти пӳлӗмрен зала тухрӗҫ.

Председатель Иулитăпа Лавруша мăшăрланни çинчен хут туса пачĕ. Вĕсем ĕнтĕ паянтан саккунпах упăшкипе арăмĕ пулса тăчĕç.

Ванихер инке «йĕкĕрешĕсене» уйăрттарчĕ. Ара, Ильяс— хăйĕн тăван ывăлĕ, Синерпи вара (Иулита хĕрĕ) хăйĕн мăнукĕ-çке-ха, ашшĕ — Лавруш. Çакăн çинчен ял Совечĕ çĕнĕрен ĕнентерӳ хучĕ çырчĕ.

— Сире хăнана чĕнетпĕр,— алă парса тухрĕ Ванихер инке ял Советĕнчен.— Пирĕн пысăк уяв: ывăлăма мăшăрлантартăм тата Синерпи мăнукăм тăван ашшĕпе амăшне тупрĕ.

— Тавтапуç, пыратпăр,— терĕ Матиç.

* * *

Ванихерсем хыççăн пурте саланчĕç. Чим, камсем тăраççĕ ял Совет çурчĕн крыльци вĕçĕнче? Уçăп ав. Вăл арăмне, Матиçе, илме килнĕ ахăр. Ун умĕнче Виталий Семенович зоотехник чарăнса тăчĕ. Ăшшăн йăл-йăл кулсах тем çинчен калаçаççĕ.

* * *

Ял Совечĕ пушанчĕ. Унта Матиçпе Теви çеç тăрса юлчĕç.

— Ах-ах-ах,— хашш сывласа илчĕ Матиç кирлĕ хутсене папка хушшине майласа хунă май.— Пĕр хĕр хăйĕн савнийĕ çартан таврăнаса кĕтсе илеймесĕр урăххине юратмасăрах качча тухрĕ те, çавна пула миçе çын пурнăçĕ кантăк пек ванчĕ, арпашăнчĕ.

— Таврăсчĕ иртнине,— кĕсйинчен сăмса тутри кăларса куçне шăлса илчĕ Теви.

Такамшăн та паллă-çке: пĕр кĕвĕлнĕ турăх сĕт пулаймĕ.

# ПИТРЕН ШЕРПЕТ ТИПИЧЧЕН

Питрен шерпет типминччĕ,
Пиртен вăйă иртминччĕ...
*Халăх юрринчен*

1

Питĕ кирлĕ çынна хуса çитес пек, пушмак кĕлисемпе тăкăртаттарса, вĕттĕн-вĕттĕн пусса картлашкасем тăрăх иккĕмĕш хутран чупса анать Оня. Ун хыçĕнче — Емил. Вĕсем çав тери хаваслă. Кулăш пӳлĕмĕнчи авăнчăк тĕкĕрсем çинче хăйсен мыскараллă кĕлеткисене курнăнах ахăлтатаççĕ.

Емил аранах хĕре хуса çитрĕ те ăна аллинчен кап! ярса тытрĕ.

— Манран тек нихçан та вĕçерĕнеймĕн,— терĕ вăл, хашкана ернĕскер.

— Хăвна çав териех паттăр вырăнне хуратăн-и?— кулма чарăнаймасть Оня.

Емил сасартăк малалла иртрĕ те Оня çулне пӳлчĕ. Хăй те сисмерĕ, шурă кĕпеллĕ хĕре, хĕм сапакан куçлă вутăш пексекерне, пĕвĕ çумне пăчăртарĕ те çиçĕмле хăвăртлăхпа чуп туса илчĕ.

— Мĕн эсĕ, Емил?! — тĕксе ячĕ ăна Оня.— Юлташсем курсан?!

Оньăна халиччен никам та чуп туманччĕ-ха. Ытти хĕр ачасем пекех, çав самант çитессе кĕтнехчĕ вăл. Малтанхи юрату ахахне кам парнелессе кăна пĕлместчĕ. Уйрăмах юлашки вĕренӳ çулĕнче Оня класри кашни арçын ачанах вăрттăн сăнатчĕ. Анчах чĕри пĕрне те йышăнмастчĕ. «Çук, çук, çав паттăр, мана юратма пултаракан йĕкĕт хамăр шкулта вĕренмест. Ăна халиччен тĕл пулманах эпĕ. Çӳрет-тĕр-ха вăл манран таçта аякра»,— тетчĕ вара. Акă халĕ ним кĕтмен çĕртен Емил юратăвăн черчен çеçкине хăр çил евĕр сĕртĕнчĕ — чуна илĕртекен ачаш сăмахсемсĕрех. Оня пĕр хăрарĕ, пĕр тарăхрĕ. Ăшĕнче ăнланмалла мар тăвăл çĕкленчĕ. Киносенче куркаланă-ха вăл: кун пек чух хĕр-упраç тени йĕкĕте çупкă çитерекенччĕ. Эппин, халĕ Емиле вирлĕн кăна питĕнчен çутăлтармалла-и? Ку ытла кулăшла пек туйăнчĕ. Çупкă туянакан каччă пачах урăх-

ла — çав тери сĕмсĕр çын пулмалла-çке. Емил çапласкерши вара? Çук! Çук! Ĕненес килмест... Чим-ха, тен?..

Вунă çул хушши пĕр класра вĕреннĕ вĕсем. Емил хăй евĕрлĕрех ачаччĕ. Ҫичемрех теме те юрать ăна. Нихçан та шапăлтатса, ахăрса çӳремен. Ҫам-ха унăн тусĕ? Ҫалама хĕн. Вăл никамах та хăй çывăхне яман. Хăш-пĕринпе пачах та калаçмастчĕ. Ялан тăçта васкатчĕ. Суйланă-ши Емил хăй валли хĕр? Темĕн, калама йывăр. Хĕр ачасене шӳт-юмах ярса та ни култарман, ни тарăхтарман вăл. Нихăшне те асăрхаман пек тыткалатчĕ хăйне. Вĕренессе вăтам вĕренетчĕ. Ĕç хушсан кутăнланса тăмастчĕ хăй. Эппин, ăна хурласа тăкма кирлех мар.

Паян акă уяв сĕтелĕ хушшинче Емил ăнсăртран пек Оньăпа юнашар ларчĕ. Сасартăк вăл çакăнта такам улăштарнăн пач урăхланса кайрĕ. Ҫăмăлĕ ун вĕçсе каймалла савăк. Ҫуçа курăнман çиппе çыхнă чĕлхи те салтăнчĕ авă. Пуплет, пуплет Оньăпа, шӳтлет, култарать. Таçтан вашаватлăхĕ те тупăнчĕ: юнашар лараканскере кăмăллăн сăйлама тытăнчĕ, Оня турилкки çине тĕрлĕ çимĕç иле-иле хучĕ.

— Çи, çи,— кулач чĕлли çине пулă вăлчипе услам çу сĕрсе хучĕ вăл.— Ас тивсе пăх: питĕ тутлă. Ну, килĕшет-и?

Оня пуçне çеç сĕлтет.

Сăнаса пăхакан çын Емил пирки, тупата, çапла каламалла: «Ҫу йĕкĕтшĕн тесен, юнашар ларакан хĕрсĕр пуçне тĕнчере урăх никам та çук».

Оня чунĕ ирĕлчĕ, кичемлĕхĕ те сирĕлчĕ — савăнăç ыталарĕ ăна. Телейлĕ туйрĕ вăл хăйне. Емил хăтланăвĕсенчен каçса кайсах кулчĕ.

— Ҫу киле тав тăвар та тухса шăвăнар мар-и?

— Чаплă сĕнӳ,— килĕшрĕ Оня.

Хăпăл-хапăл тăчĕç те никама ним каламасăр иккĕш те коридора тухрĕç. Чиперех чупса анатчĕç картлашка тăрăх. Чунĕ çĕкленнĕ Емил, малалла мĕн килсе тухасса чухлайманскер, хĕре чуп тума пикенчĕ. Эх, васкамалла марччĕ — вăл çакна çийĕнчех туйрĕ: Оня куçĕнче ялкăшса çунакан кăвайт самантрах сӳнчĕ. Унăн савăнăçне хĕр йышăнмарĕ. Çитменнине тата, тĕксех ячĕ йĕкĕте хăй çумĕнчен. Сивлерĕ эппин ăна Оня. Мĕн тăвăн, ирĕксĕр савтараймăн.

Емил карлăк çумĕнче кăштах пуçне пĕксе тăчĕ. Унччен те пулмарĕ, яшт тӳрленчĕ те аллине тăсса каçару ыйтрĕ:

— Тархасшăн, йывăра ан ил, Оня. Ҫӳр аллуна.

Мĕн усси пултăр юнтарнинчен? Уйрăлу каçне ма тĕксĕмлетес? Вăл ĕмĕрех çуталса, ялтăртатса тăтăр.

Ҫаҫарма та пĕлмеллех ҫав. Оня аллине пачĕ. Вĕсене каллех чиксĕр савăнăҫ хăй ҫунатти ҫине лартрĕ. Ҫавтăнчĕҫ те вирхĕнсе шкул алăкĕнчен тухрĕҫ.

Ҫак ҫамрăксене хирĕҫ хăйсен пĕрремĕш учительници килет.

— Римма Васильевна, эсир... мĕншĕн кая юлнă?.. Пурте сĕтел хушшинче, сире кĕтеҫҫĕ,— пĕрне-пĕри пӳлсех калаҫрĕҫ Оньăпа Емил.

— Ытлашши васкас мар, ĕлкĕрĕп,— лăпкăн кăна хушса хучĕ Римма Васильевна. Унтан вăл тăпах чарăнчĕ те:— Эсир ăҫта вĕҫтеретĕр тата?— тесе ыйтрĕ кăштах тĕлĕнсе.

— Уҫăлма тухрăмăр... Питĕ пăчă,— йăл-йăл кулкаларĕҫ ҫамрăксем.

Тек тытăнса тăмарĕҫ вĕсем. Вăхăта сая ярас килĕ-и йăваран вĕҫерĕннĕ кайăксен?

Римма Васильевна юратать, хисеплет, хаклать хăй вĕрентнĕ хĕре. Ҫуҫĕ умне унăн пĕчĕк чухнехи сăн-сăпачĕ тухса тăчĕ.

Шăп вунă ҫул каялла Римма Васильевна пуҫласа пĕрремĕш класа ачасене вĕрентме пычĕ. Ҫав куна нихăҫан та манас ҫук вăл. Ачисем те, пĕчĕкскерсем, пурте асран тухмаҫҫĕ.

Чи малтанхи кун ачисене шкула ашшĕ-амăшĕ ăсатать. Оня вара пĕчченех пынă: вăл, каҫăр сăмсаллăскер, ыттисенчен хăюллăрахчĕ. Ҫырă ҫӳҫне кĕске кастарнă та, хĕвелпе пиҫсе хăмăрланнă пичĕ вăр ҫаврака курăнатчĕ. Хăй татăклă, ăслă калаҫать. Паян кунчченех ун сăн-сăпачĕ те, ҫирĕп кăмăлĕ те улшăнмарĕ. Сăмси те ҫав-ҫавах каҫăр.

Тирпейлĕхне кура Оньăна пĕрремĕш класра санитаркăна суйланăччĕ те, тасалăха тĕрĕсленĕ чух хул пуҫҫи урлă хĕрлĕ хĕреслĕ шурă сумка ҫакса ҫӳретчĕ. Шкула вăрăм чĕрнепе, хура алăпа пыракана тем тусан та каҫармастчĕ: ҫиййĕнчех ҫутаратчĕ, чĕрнине хăй хачăпа касса яратчĕ.

Яланах тăрăшса вĕреннĕ, класс ĕҫне сатур хутшăннă Оньăна малтан октябреноксен звеньевойне, ҫулсем иртсен, пионера кĕрсен, отряд канашĕн председательне суйларĕҫ. Вуннăмĕш класа ҫитсен те вăл активистсен шутĕнчехчĕ-ха.

Емил имшерккерех ачаччĕ. Халĕ патне те ан пыр. Мĕнешкел кĕрнеклĕ вăл, сарă ҫӳҫне пуҫ тӳпинелле тураса якатнă. Илемлĕ каччă пулса тăнă.

— Ăҫта кайрĕҫ-ши ҫавтăнсах?— тĕшмĕртме тăрăшрĕ Римма Васильевна.— Ҫайччăрин. Халĕ ĕнтĕ вĕсене хăтă-

раймăн: çитĕннисен шутне кĕчĕç. Пĕр-пĕрне юратсан та тĕлĕнеймĕн. Анчахрах вĕсем пирки нимĕнле сас-хура та илтĕнместчĕ. Сисмесĕр юлтăм-ши? Хăçан ĕлкĕрнĕ туслашма? Тепĕр тесен, юрату тени хăватлă вулкан пекех сирпĕнсе тухать. Хăй çулĕ çинче ниме те уямасть — хыпса илет те çунтарать ялкăштарса.

Оньăпа Емил кĕтесрен пăраниччен иккĕшĕ те каялла çаврăнса пăхкаларĕç. Римма Васильевна тымар янăн çаплах тăрать-ха алкум вĕçĕнче. Курăнми пуличчен аллипе сулса хăварчĕç ăна: «Сывă пулăр. Пире эсир текех ан ятлăр!»— тенине пĕлтерчĕ ĕнтĕ ку.

Хĕрпе каччă стадион çумĕпе утрĕç. Шалта футбол вăййи пырать. Спортсменсем тапа-тапа мечĕк хăвалаççĕ. Вĕсем кăшкăрашни таçтан илтĕнсе тăрать. Карта хушăкĕнчен çумăр килессе пĕлтерекен чĕлтĕрти сарă чечексем курăнаççĕ. Тӳпере, чăнах та, кăвак пĕлĕтсем хупăрланаççĕ-мĕн.

Çумранах троллейбуссем ярăнса иртеççĕ. Унта ларса пыракансем кантăксенчен шурă кĕпеллĕ хĕрпе хура костюмлă йĕкĕт юнашар пынине чăрлаттарса пăхаççĕ. Çамрăксемшĕн вĕсем те хĕпĕртеççĕ тейĕн. Урăхларах шухăш пуçĕсене кĕмест-ши вĕсенне? Çук пуль: паян кунашкал мăшăрсене таçта та курма пулать, мĕншĕн тесен вуннăмĕш класс пĕтернисем паян пур çĕрте те ăсату каçĕ ирттереççĕ.

Утаççĕ хĕрпе каччă. Ăçта кайма тухнă капла? Тĕнче хĕррине-и?

— Кĕрсе тухар-и пирĕн пата?— ăшшăн чĕнчĕ Емил.— Ав пирĕн çурт.

— Ай, мĕн эсĕ? Аçупа аннӳ мĕн калĕç?

— Вĕсем шкулта-иç.

— Чăнах та-çке. Паян пурин ашшĕ-амăшĕ те шкулта.

* * *

Комсоргăн ĕçĕ нумай енлĕ. Çакă Оньăна хăйпе пĕрле вĕренекенсем патне кĕрсе тухма хистенĕ. Ун тата çын ăраскалне тишкерес йăла пур: çĕнĕ кĕнеке вуланă пек туйăнать ăна.

Класри тусĕсен килĕнчи пурнăçне курни çын чунне тарăнрах уçса парать. Оня шутланă тăрăх, хĕр ачасемпе арçын ачасем пачах урăхла çынсем. Вĕсен шухăш-ĕмĕчĕ, сăмах-юмахĕ, вуланă кĕнекесене ăнланни те урăхла. Сăмахран, иккĕмĕш ретри парта хушшинче ларакан Угипе

паллашар. Вăл класри хĕр ачасенчен чи çинçе пилĕкли. Кун пирки мухтанать те вăл. «Ман пилĕк — шăп хĕрĕх икĕ сантиметр»,— текелет вара. Пурнăçĕ ун сухан пек йӳçĕ: тӳпелешсе пуряннă хыççăн ашшĕ тухса кайнă. Амăшĕ, столовăй бухгалтерĕ, çĕнĕ упăшка кĕртнĕ. Анланма хĕн: те çав териех юратмасть амăшĕ хăй хĕрне, те лешĕ юри хăлăхсăрланса тарăхтарать — туслăх çук вĕсен хушшинче. Амăшĕн алли çӳлте, час-часах патаклать Угие. Ун пек чух шапăртаттарсах куç çуль юхтарать мĕскĕн хĕр.

— Ма çав териех хĕнет сана аннӳ?— ыйтрĕ пĕррехинче Оня.

— «Аçу хăраххи эсĕ, ăна пăхнă. Кураймастăп сана!» тет те аллине мĕн лекнĕ çавăнпа яра парать,— терĕ Уги.— Ăна пĕр сăмах та хирĕç чĕнме çук.

Патак çинĕ кунсенче Уги тути, ахаль те тачкаскер, хăпалансах тухать вара. Пичĕ-куçĕ те хĕп-хĕрлĕ. Учитель урок ыйтсан тăрать юпалла, сас памасăр. «Ларах» теççĕ вара вĕрентекенсем класс журналĕ çинелле ӳпĕнсе.

Кун иртсе те никампа сăмах хушмасть Уги çавнашкал самантсенче. Енчен кам та пулин хăй патне юмахлас шутпа çывхарсан ăна çивĕч чĕлхипе касать татать. Ирĕксĕрех пăрăнса каян. Журналта лартса панă начар паллăсене эрне хушшинчех юсать. Çавăнпа та вĕрентекенсем ăна питех ятламаççĕ те.

Пуринчен ытла Уги ӳкерчĕксем, кĕпе ĕлкисем тума юратать. Вĕсене класри пур хĕр ачана та парнелесе тухнă вăл.

Екки кайсан Уги калаçма та, кулкалама та юратать. Тантăшĕсене килне те илсе кĕрет. Сăмах-юмахĕ вара ытларах шукăльрех тăхăнасси пирки пырать. Шифоньерĕнче тумĕ çукрах хăйĕн. Тĕрлĕ сăрăпа сăрласа ӳкернĕ кĕпе ĕлкисем вара альбомĕ-альбомĕпе выртаççĕ. Куç харшисем Угин йĕпкĕн хура, чĕкеç çунаттисем евĕр авăнчăк. Кăн-кăвак куçĕсем — шалта, путарах кĕрсе ларнă. Пит шăммисем сарлака. Çамки çӳллĕ. Çут çанталăк-художник, ун сăнне-питне якатса эрешлеме ӳркеннĕн, пуртăпа лăш-лаш çеç каскаланă тейĕн. Хĕре пĕтĕм илем кӳрекенĕ те çӳçĕ çеç. Хӳхĕм çӳç парнеленĕ ăна çут çанталăк. Çуç пĕрчисем хĕлĕх пек пиçĕ. Тĕсĕ йĕпкĕн хура, çу сĕрнĕн йăлтăртатать. Çавăншăнах-тăр çӳç пайăркисем сулмаклăн усăнса хул пуççийĕсем çинче илĕртӳллĕн выртаççĕ.

Уги хăйĕн кĕписене хăех çĕлет.

— Эпĕ модельер пулатăп,— тет вăл. Мухтамалла ăна. Ытти хĕр ачасем ав хăйсен тĕллевне çаплах тупаймаççĕ.

Шăкăлтатать Уги хĕр тантăшĕпе. Вăрттăн шухăшĕсене

уҫса пама пачах вăтанмасть. Питĕ капăр тăхăнса ҫӳрессе шанать. Ун пек хĕрсене каччăсем юратаҫҫĕ. Ăна хăйне пĕри куҫ хывнă та-мĕн.

Ҫам-ши вăл? Тăххăрмĕш класра, вĕренӳ ҫулĕн пуҫламăшĕнче, Саша Рябчиков юратнă-ха ăна. Иккĕшне пĕрле каҫсерен урамра ҫӳренине те курнă. Анчах халĕ Саша тĕрмере-ҫке.

— Кĕрчемĕп-ха,— тет Уги.— Усал ят ҫыпăҫмĕ. Ҫачча тухатăпах.

Пулас упăшки ун, хăй каланă тăрăх, муллă пулмалла. «Хĕрарăм телейĕ — укҫа-тенкĕре»,— тет вăл. Те суять, те чăннипех калать, те сӳтĕлет, те шӳтлет — ҫапла калать те ҫийĕнчех ахăлтатса кулать.

Уги умĕнчи парта хушшинче йĕкĕрешсем, Неллипе Налина, ларaҫҫĕ. Оня темиҫе хут та вĕсем патĕнче пулнă. Хваттерне кĕретĕн те тӳрех уруна ăҫта ярса пусмалли ҫинчен шухăшлатăн. Пур ҫĕрте те: урайĕнче, шкапра, чӳрече янаххипе диван тата сĕтел-пукан ҫинче — кĕнеке, кĕнеке... Пуҫ ҫĕклемесĕр, пĕр ĕҫ тумасăр вулаҫҫĕ те вулаҫҫĕ йĕкĕрешсем. Ҫĕнекере мĕн ҫинчен ҫырнине ыйтсан-тусан Нелли те, Налина та ҫăвар уҫса путлĕн ăнлантараймаҫҫĕ.

Йĕкĕрешсен ашшĕпе амăшĕ — наука ĕҫченĕсем. Промышленность валли ҫĕнĕ автоматла станок ăсталас тĕлĕшпе пуҫ ватаҫҫĕ тет-и? Хĕрĕсем ҫапла кĕнекепе туслă пулнăшăн вĕсем питĕ савăнаҫҫĕ. Урлă выртана тăрăхла илсе хума та хистемеҫҫĕ. Хĕрĕсем вара алă тупанĕ хăпарса тухнине курман-ха халиччен. Ҫилти ĕҫсене тума ашшĕ-амăшĕ пĕр хĕрарăма тара тытнă. Вăл эрнере пĕрре вĕсен килне пырса урай ҫăвать, кĕпе-йĕм ухать, апат пĕҫерсе хăварать.

Неллипе Налина пăхса тăранмалла мар хитре хĕр ачасем. Йăрăс пӳллĕ. Ҫӳҫĕсем каснă-лартнă йĕтĕн сӳсĕ. Пысăк куҫĕсене вĕсенне шупка симĕс темелле-ши? Тĕрĕс сăмах тупма та аптрамалла.

Амăшĕ вĕсене шутсăр яка, пĕр пек тăхăнтарать. Пальто, кĕпе, кофта, юбка, пушмак, чăлха таврашсене йăлтах Мускавра туянать.

Йĕкĕрешсем вуннăмĕш класра чĕрнисене лак сĕрме, куҫ хăрпăкĕсене тушьпа хуратма тытăнчĕҫ. Иккĕшĕ ытла та пĕр сăнлă, анчах Неллин сылтăм пит ҫăмарти ҫинче, сăмса ҫунатти ҫывăхĕнче, ҫарăк вăрри пысăкăш тур палли пур. Ҫав пулмасан вĕсене пĕр-пĕринчен ниепле те уйăрас ҫук.

Вĕсем тавра йĕкĕтсем чечек ҫийĕн вĕҫекен пыл хурчĕсем пекех явăнаҫҫĕ. Пур пĕрех вĕсем чунĕсене ҫырлахтараканнисене тупаймарĕҫ-ха.

* * *

Чĕнмесĕр утрĕç пĕр кана Емилпе Оня.

Тăхăр хутлă çурт умĕнче Емил тăпах чарăнчĕ.

— Çитрĕмĕр,— терĕ вăл пуçне çӳлелле каçăртса. Унтан аллипе тĕллесе кăтартрĕ.— Куратăн-и, çав виçĕ чӳречелли, саккăрмĕш хутри, пирĕн. Эсĕ, Оня, татса каламарăн, хăпаратпăр-и пирĕн пата?

— Атя,— килĕшсе Емил аллинчен хăюллăнах тытрĕ Оня. Йĕкĕте вăл хăй килне чĕнет тейĕн.

Лифтпа самантрах хăпарчĕç.

Хваттере кĕрсен залран хăрлатни илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ — вĕсен умне пăру пысăкăш йытă тухса тăчĕ. Ҫăкăрне бинтпа çыхнă.

— Ай, пĕтрĕм,— çурма сасăпа çихĕрсе ячĕ Оня алăк çумне тĕршĕнсе.

— Пишнек! Лăплан! Ку хĕр ырă кăмăллă — пире кӳрентермĕ. Вăл Оня ятлă. Илтрĕн-и, О-ня!

— Йăлтах ăнланчĕ-и?— йĕплесе илчĕ Оня.

— Ахалех шăл йĕретĕн. Вăл ăслă, çын кăмăлне чухлакан йытă.— Емил тăвати ураллă тусне çурăмĕнчен лăпкарĕ.— Пишнек!.. Ҫайса вырт!.. Оня, ирт тĕпелелле,— чĕнчĕ унтан хĕре.

— Ман ура ыванчĕ. Çĕнĕ пушмак çав тери хĕсет. Хывам-и ăна?

— Тархасшăн. Урай таса.

Оня тĕпелелле чăлха вĕççĕнех иртрĕ. Пӳлĕмре питĕ хăтлă. Ҫĕтесре, хĕвел ытла хĕртмен çĕрте, аквариум. Шыв тултарнă пысăк кĕленче савăтра вĕтĕ пулăсем кĕшĕлтетеççĕ.

— Ай, мĕн чухлĕ вĕсем! Çав тери йышлă!— тĕлĕнет Оня.

— Чĕрĕллех çуралаççĕ те ишме пуçлаççĕ,— ăнлантарать Емил.— Чим-ха, ташлаттарам эпĕ вĕсене.

— Ай, музыка итлеççĕ-и вĕсем?

— Вĕсен музыки урăхла.

Емил йăл-йăл кулкаласа тимĕр банкăран пулă апачĕ чĕпĕте-чĕпĕте илчĕ те аквариумра ишсе çӳрекен шурă svункă варрине сапрĕ.

Чăнах та, пуçланчĕ вара Емил каланă вăйă. Ҫĕрперен те вĕтĕ çимĕçе хыпасшăн пулăсем пуçĕсене çав ункă ăшне чикеççĕ те вĕлт пăрăнаççĕ, вара хӳрисемпе вĕлтĕртеттерсе каялла тараççĕ, пĕр кана симĕс курăк хушшипе йăрлатса пыраççĕ, аквариум тĕпĕнчи чул катăкĕсен хушшине кĕре-

кӗре пытанаҫҫӗ. Қаток ҫинче ярӑнакан фигуристсемех тейӗн.

Нумайччен киленсе пӑхрӗ Оня.

Емил хӗре тепӗр пӳлӗме чӗнчӗ.

— Кунта эпӗ хуҫаланатӑп,— терӗ вӑл.

Шӑпах пӳлӗм варринче маччаран темскер тултарнӑ сӑран михӗ ҫакӑнса тӑрать. Ӑна Емил чышкипе тӗккелесе илчӗ.

— Эсӗ, Емил, боксер-и-мӗн?— ыйтрӗ Оня.

— Ҫук-ҫке. Кунта эпӗ мускулсене аталантаратӑп. Ҫирӗп аласенче вӑй выляса тӑтӑр. Вӑйлӑ ҫын — паттӑр ҫын. Ку кӗркунне ман салтак ячӗ тухмалла.

Мӗн пӗчӗкренпех Емил чикӗ хуралҫи пулма хатӗрленнӗ. Ҫавӑнпах йытӑ ӳстерчӗ вӑл. Халӗ темле ӗнтӗ, аманнӑскере те йышӑнӗҫ ҫара.

Пӳлӗме йытӑ кӗчӗ. Аран-аран пускаласа утать хӑй.

— Пишнек, выртасчӗ сан,— каллех ҫурӑмӗнчен шӑлса ачашларӗ йытта Емил.— Қайса кан терӗм-ҫке сана.

Хуҫи хушнине Пишнек хальхинче те итлерӗ. Пӳлӗмрен самантрах тухса кайрӗ.

— Чирленӗ-им вӑл?— ыйтрӗ Оня.

— Ҫук-ҫке.

— Мӗншӗн... бинтпа ҫыхнӑ?

— Ӑнсӑртран тирне чӗртернӗ. Сиплетӗп.

Ҫапла каларӗ те нар пекех хӗрелчӗ Емил. Мӗнле ан хӗрелтӗр ӗнтӗ, ара, вӑл куҫ кӗретӗнех суйрӗ-ҫке.

Чухласчӗ Оньӑн ҫӗр каҫ мӗн пулса иртнине. Ҫак йытӑ пулман пулсан Емил е йывӑр аманатчӗ, е вилӗм ҫапса ӳкеретчӗ ӑна. Вӑл икӗ преступник тытнӑ. Кун пирки милиционерсӑр пуҫне никам та пӗлмест.

Ҫӗр каҫ вӑл темиҫе кун вуланӑ роман вӗҫнелле ҫитсе пыратчӗ.

Йытти йӑслать те йӑслать, хӑйне тула илсе тухма чӗнет. Кӗнекине пӑрахсах пӳлӗмрен тухмалла пулчӗ. Урамра тӗттӗм.

Тӳпе уй-хирӗ тӑрӑх хура пӗлӗт карӑннӑ. Таврара шӑпах. Халӑх ҫӳреме пӑрахнӑ. Йытӑшӑн тесен пур пӗрех, чупса пултӑр унӑшӑн.

Юнашарти ҫурт ҫумӗпе иртрӗ Емил. Кӗтесрен пӑрӑнчӗ ҫеҫ, темле хӑрӑлтатса тухакан сасӑ илтӗнчӗ. Мӗн амакӗ ку? Тӑпах чарӑнчӗ. Унталла-кунталла кӑн-кан пӑхкаларӗ. Курах кайрӗ: аякрах та мар, пӗр йывӑҫ ҫумӗнче, такамсем тӗрмешеҫҫӗ. Ырӑ мара сиссе Емил тӳрех вӗсем патнелле ыткӑнчӗ. Айтурах, икӗ арҫын пӗр хӗрарӑма тапӑннӑ.

— Мӗн хӑтланатӑр эсир?— кӑшкӑрса ячӗ вӑл. Ҫак

вăхăтра хĕрарăм тĕшĕрĕлсе анчĕ. Арçынсем пăрахса тарма пикенчĕç.

— Стой!— пĕрне ярса тытма ĕлкĕрчĕ Емил.

— Ан çулăх, кăкан!— шăлне кăчăртаттарчĕ хайхискер.

— Мĕншĕн тиврĕр хĕрарăма?.. Атьăр милицие!

— Халех паратăп сана милици!

Сиссе те юлаймарĕ Емил — çак этем ăна хырăмĕнчен вирлĕн тапрĕ. Анчах Емил пăрăнса ĕлкĕрчĕ, вара уринчен мĕн пур вăйран тапрĕ путсĕре. Лешĕ палт! кайса ӳкрĕ. Вăл ури çине тăриччен тепĕр хурахĕ çитрĕ. Халĕ вĕсене пĕччен мĕнле çĕнтермелле? Пур пĕрех парăнма шутламасть Емил. Ак тытăçса та ӳкрĕç.

— Пишнек!— чĕнчĕ вăл тусне.

Йытă, унчченех ырă мара сиснĕскер, вирхĕнсе те çитрĕ. Тытăнчĕ вăл йĕксĕксене харлата-харлата тулама. Ниçта кайса кĕреймеççĕ сехĕрленсе ӳкнĕ путсĕрсем. Тĕшĕрĕлсе аннă хĕрарăм та çак вăхăтра тăна кĕчĕ. Вăл тӳрех хурах кăшкăрма тытăнчĕ. Часах вара çывăхри çуртсенчен арçынсем чупса тухрĕç. Тахăшĕ милицие те шăнкăравланă.

Хурахсенчен пĕри йытта кăкăрĕнчен çĕçĕпе чиксе амантнă-мĕн. Юрать-ха милици машинипе «Васкавлă пулăшу» хăвăрт çитрĕç. Преступниксен аллисене тăратмалли çеç юлчĕ.

Инкек тӳснĕ хĕрарăм тухтăр иккен. Қаçхи дежурство хыççăн вăл больницăран килне таврăнма тухнă. Çурт çумĕпе утса пыраканскере иккĕн тапăнаççĕ те ылтăн сехечĕпе çĕррине туртса илеççĕ. Хăлха çаккисене вара ӳчĕмĕнĕпех тăпăлтарса кăлараççĕ. Çитменнине, ăна лĕпкинчен хытă япалапа çапса анратнă.

— Маттур йĕкĕт эсĕ. Пурте сан пек хăюллă пулсан пĕр преступник та ирĕкре çӳремĕччĕ,— мухтанă Емиле милици çыннисем.

Йытă суранне эмел сĕрсе çыхаççĕ.

Хурахсене допрос тума тытăннă. Ак тамаша, пĕри палланăскерех-çке: Саша Рябчиков! Саккăрмĕш класа çитиччен унпа пĕрле вĕреннĕ. Эх, çын пулаймарĕ иккен. Профтехучилищĕне кĕрсен вăл путсĕр çамрăксемпе ермешнĕ: ăна, айвана, лавкка çаратас ĕçе явăçтарнă. Вара вăл колоние çакланнă. Эппин, Саша халĕ хулара пулмалла мар-çке. Епле лекнĕ-ха кунта?

Следователь тĕпченĕ хыççăн йăлтах паллă пулчĕ: Саша çак тискер ĕç пуличчен виç-тăватă сехет маларах çеç колониреп таврăннă-мĕн. Халь ăна каллех тĕрме кĕтет.

Иртсе кайнă пăтăрмах тепĕр хут Емил куçĕ умне тухса тăчĕ, анчах хăй Оньăна ним те шарламарĕ. Сивĕ шывпа

йĕпетнĕ тутăра сылтăм куçĕ айĕнче темĕн чухлĕ тытнă пулин те, кăвакарнă вырăн çав-çавах палăрать-ха. Хăна асăрхасран шав сыхланчĕ. Оньăн асра та çук Емил питнесăнне тĕсесе пăхасси. Вăл стена çинчи харшасенчи ӳкерчĕксене куçланă.

— Ай, мĕн чухлĕ картина! Мĕнешкел илем!

— Йăлтах хам муталанисем,— кăмăллăн йăл кулчĕ Емил.

— Чăнах-и?.. Ара, эсĕ чăн-чăн художник-çке.

— Ахальтен çӳремен ĕнтĕ художниксен шкулне.

Емил шкап сунтăхĕнчен сĕтел çине хăваран авнă савăтпа апельсин кăларса лартрĕ.

— Çи, Оня, çи.

Хĕр йăлишĕн пĕрне илчĕ. Ана роза чечекĕ евĕр курăнмалла касса чей чашки çине хучĕ.

Апельсин чĕллисене ĕмсе киленнĕ самантра Оня патне çăварне пушмак хыпнă йытă çывхарчĕ. Куçĕсем ăшă-ăшă хăйĕн. Хăнана çыртса çурмасть пулать ĕнтĕ.

— Ай, маттур-çке эсĕ,— йытта çурăмĕнчен ачашларĕ Оня.— Куратăн-и, Емил, вăл ман пушмака илсе килчĕ: часрах ăсататсшăн. Атя, каяр.

— Тĕрĕс мар ăнланатăн, Оня. Вăл сана юрасшăн, хăйне ырлаттарасшăн тăрăшать. Ӳлĕмрен те килтересшĕн. Ас ту, пирĕн çула ан ман, Пишнек шанчăкне тӳрре кăларма тăрăш.

## 2

Пурте куç умĕнче халĕ: вун пилĕк хĕр ача, вун тăвата арçын ача. Çирĕм тăххăрăшĕ те каçса кайсах ташлаççĕ: юлашки каç-çке шкулта. Ӳлĕмрен вĕсем кĕçĕрхи пек пĕрле пухăнаяс çук. Куна кĕтесри пукан çинче ларакан Римма Васильевна питĕ лайăх чухлать: вăл-çке вĕсене чи малтан саспалли кăтартса çырма, вулама вĕрентнĕ. Çак класс ачисене вăл темшĕн-çке уйрăмах çывăх туять. Туслăччĕ вĕсем пĕр-пĕринпе те, хăйсен малтанхи учительниципе те. Мĕн юлашки кунччченех çыхăну вĕренне сӳтĕлме паман. Ваттисем каларăшле, пурнăç пĕр евĕрлĕ килмест. Ырлăхĕпе пĕрле шырлăхĕ те çителĕклех. Инкек сиксе тухсан кампа калаçăн? Паллах, Римма Васильевнăпа. Вăл вăхăтра ăс пама пĕлет. Хăйсем те вĕренме тин пынă пĕчĕк этемсене шкул йĕркине хăнăхтарма пулăшаççĕ.

Ытараймасăр пăхать ташлакансем çине Римма Васильевна. Хăй çуратнă ывăл-хĕр пекех туйăнаççĕ вĕсем, класс

чечекĕсем Оня, Ларис, Кавик, Марек, Дора. Вĕренӳре те, ĕçре те — малтисемччĕ.

Пĕрремĕш класа вĕсем хĕрĕхĕн пынăччĕ. Çул иртнĕçемĕн вун пĕрĕшĕ саланса пĕтрĕç. Хăшĕсем урăх района вĕренме куçрĕç. Сакăр класс пĕтернĕ хыççăн вĕсен йышĕ уйрăмах пĕчĕкленсе юлчĕ. Техникумпа профтехучилищĕне вĕренме каякансем те тупăнчĕç. Пĕри вара, Саша Рябчиков ятли, асси пулса юлчĕ. Мăнтăрккарах чипер ачаччĕ хăй. Анчах та вĕренӳре юлхавĕ малта пыратчĕ. Тен, тăн тени те сахалтарах пулнă пуль. Амăшĕ ăна яка тăхăнтартнă, тутлă çитернĕ. Ашшĕ вара... Чечен чуна хăйпе пĕрле эрех ĕçтернĕ. Паллах, ку ырă патне илсе пыман: Саша колоние лекрĕ ав. Учительсем мĕнле кулянчĕç çаваншăн. Шкул çине мăшкăлтăк шывĕ тăкнипе пĕрех-çке ку.

Сашăн класра савнă хĕрĕ те пурччĕ. Угипе çӳреме тытăннăччĕ вăл, ăна ĕмĕр юратма сăмах панăччĕ. Сăмахĕ çилпе вĕçсе кайрĕ.

Малтанхи вăхăтра Уги çыру çыркаларĕ-ха ун патне. Ним те тăваймăн — пĕрремĕш юрату. Юрату тени — суккăр. Анчах та Сашăн туслăхĕ вăрахчен пыраймасть — кĕвĕçӳ хуплать ăна: ара, Уги вуннăмĕш класа çитнĕ-çке. Вĕреннĕ çын çăмăллăнах çĕнĕ савни тупĕ тесе хĕре сăлтавсăрах айăплама пикенет. Уги хыпса çунать. Хăй никампа та çӳременнине ĕнентерме тăрăшать — усси çук. Каччă лăпланмасть. Хĕр чунне кăшлакан çырусем пĕр вĕçĕмсĕр ярать.

Тӳсĕм тени те вĕçне тухать иккен. Уги, конькие хапăлскер, ярăнма пĕчченех çӳрерĕ. Пĕррехинче ăнсăртран хĕр яка пăр çине хытах ӳкет. Ăна пĕр çамрăк çын тăма пулăшать. Тытăнаççĕ вара пĕрле ярăнма. Килне те ăсатса ярать Угие.

Çакăн хыççăн хĕр Саша пирки урăхларах шухăшлама тытăнать: «Тивĕçлĕ-и-ха вăл ман юратăва?» Ĕçе татса пама лешĕн юлашки çырăвĕ пулăшнă. Вăл унта: «Сана ман атă кĕли чуп тăвасшăн»,— тесе сӳпĕлтетнĕ пулнă. Уги тӳрех шуйланса ӳкет:« Мĕне пĕлтерет ку? Чим, ара, вăл мана атă кĕлипе тапа-тапа хĕнесшĕн-и?.. Çук! Ĕç тухмĕ!» Таса хут илет те çиййĕнчех чăр-чар çырса хурать: «Саша, эпĕ чăн-чăн савни тупрăм — мăшăр тума тивĕçлине. Эсĕ çарта мар. Сана кĕтсе илменшĕн мана никам та ятламасть. Тек ан çыр».

Илемлĕн юхакан вальс кĕвви шăпланчĕ те, мăшăрăнмăшăрăн ташлакансем тăпах чарăнчĕç. Çиййĕнчех, пĕр харăс, темиçе лампа сӳнчĕ, зала чуна пусаракан тĕксĕм çапрĕ. Ку ĕнтĕ нумая тăсăлнă вăйă вĕçленнине пĕлтерет.

— Ачасем,— терĕ те дежурнăй учитель тăп чарăнса тăчĕ. Вăл хăнăхнă йăлипе чĕлхи вĕçне килнĕ сăмахне вĕçертме хăтланнă ахăр, анчах тек апла калама аванах маррине туйрĕ. Ик-виç сехет каялла вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат илнĕ хыççăн вĕсен ячĕ куç кĕретĕнех урăхланчĕ. Вара вăл пырне тем ларнăн ӳсĕренçи тукаларĕ те сăмахне çĕнĕрен пуçларĕ.— Çамрăк юлташсем, саланма вăхăт.

— Сывă пулăр, çамрăк туссем,— пĕрне, теприне пыра-пыра алă пачĕ Римма Васильевна.— Тăван шкулăра, пире ан манса кайăр.

3

Урама тухсан аттестатлă этемсем аптраса тăчĕç; ăçта каймалла халь? Киле саланмалла-и? Пурне те пĕрле тăлласа тăнă, куçа курăнман тимĕр кăшăл çак самантра пат татăлать. Апла тăк кашни халичччен ури ярса пусман сукмак çине тухмалла. Кам пĕлет çав сукмака? Тен, вăл ытла тумхахлă? Тен, ниçта та каймалла мар? Кĕлтери улăм пĕрчисем евĕр чăмăртанса, алла-аллăн тытăнса тăрас та... Анчах та кăкăрта чĕре пурри чарать: вăл хистет таçталла чупма, ăнланма çук пуласлăха ярса тытма.

— Туссем, атьăр Атăл хĕррине!

Кăна Ларис каларĕ. Ун сасси пĕкĕ çине çакнă йĕс шăнкăрав пекех янăраса кашнин кăкăрне уçă сывлăш евĕр варкăшса кĕчĕ, пуçĕсенчи йывăр шухăшĕсене сирчĕ. Ку сасса пурте пăхăнма хăнăхнă. Мĕншĕн тесен Ларис пĕрремĕш класран пуçласа вуннăмĕшне çитичченех вăйă-кулă пуçарса яраканĕ пулнă. Çавăнпа унăн ыранхишĕн пăшăрханса кулянасси çук — ăна артистка шăпи кĕтет. Унăн ĕмĕрĕ сцена çинче иртессе ĕненеççĕ ачасемпе учительсем. Мĕнех. Ырламалла çеç куншăн. Çыннăн кăмăлĕ теприншĕн яланах çунса тăтăр. Унтан пархатарли мĕн пултăр?

— Кайрăмăр!— татах чĕнчĕ Ларис аллине сулса. Çынсене сĕм вăрмантан çулсăр-мĕнсĕр ертсе тухакан паттăрла вăл малалла утрĕ.

Хĕрсемпе йĕкĕтсем шавлăн калаçса утаççĕ. Оньăпа Емил айккинерех пыраççĕ. Иккĕшĕ ушкăнран уйрăлсарах кайни ыттисемшĕн — çĕнĕ япала. Вĕсем кĕçĕр çеç çеçке çурнă роза пек. Тĕлĕнмелле: мĕншĕн вĕсем пĕр-пĕрне тин кăна тупнă? Унччен, мĕн, тĕлĕрсе пурăннă-им вĕсем? Телейлĕскерсене халĕ йышра ăмсанакансем те, кĕвĕçекенсем те тупăнчĕç. Оньăна чылай каччă куç хывнă. Анчах та

вёсене ун енне ура ярса пусма именни чăрмантарнă. Хěрě вăл урăхларах йышши-çке — активист. Ун патне суккăр пăван пек пырса çапăнаймăн. Çивěч чěлхеллěскер ним мар касса татě. Хăмăр куçěсем тата? Санра йěп шыранăн витěр пăхаççě. Емил ав Оня активист тесе шикленсе тăман. Пăх-ха, епле утать вăл: мăн кăмăллăн, чи паха япала тупнăн.

Ку хěрпе каччă туслашни хăшěсен чунне хăюлăх вěрсе кěртрě. «Мěн, эпě суккăр-чăлах-и?» Çапларах шухăшлакан йěкěтсем Неллипе Налина çумне йăпшăнма пуçларěç. Лешсем, ихěлтетме хавасскерсем, хăваламаççě, çав вăхăтрах ытлашши çывăха та ямаççě. Калăн, юрату юрри кěвěлеме пиçсе çитеймен-ха вěсем тесе.

Чи хыçалта пěчченех кăтра пуçлă Марек пырать. Çўллěскер вăл, хăмла кашти евěр яштака. Юлашки çул çапла пěве кайрě, çўлти тути хěрри те мăкланчě. Вăл та Оньăпа Емил еннелле куç хўрипе пăха-пăха илет. Унăн та чунěнче тем вăранчě: сасартăк тўсме çук кичемлěх пусрě ăна. Пěр-пěр хěрпе юмахласчě те... Пěрех хут кăмăл çěкленěччě. Хăшěн патне чěре туртăмě çуралě-ши? Хěр суйлас шутпа куçлăхне сăмси кăкнерех тěксе хăпартрě те юлташěсен ушкăнне тинкерчě. Таврана шурăмпуç çути çапнă та, йăлтах яр уççăн палăрать.

Куç ытамне тўрех Ларис лекрě. Катан пир кěпе тăхăннăскере сěт чěрессинчен тухнă тейěн. Ăна пианино умěнче кěвě çемми майăн ухăнса ларнине, пўрнисем клавишсем тăрăх йăпăртатса чупнине курни хăй мěне тăрать! Чăн-чăн вутăш! Музыки тата!.. Кунěн-çěрěн итлесен те тăранаймăн. Хěрě ытла та чипер çав. Анчах темěн чухлě хапсăнсан та... Марекшăн хěр чěринче уйрăм йăва çук. «Эпě юрататăп, вăл... çук. Эх, çав юрату тени хăш пěлěт çинчен татăлса анать-ши? Тата хăçан? Эх, пěлес пулсан...»

Ав пушмак кěлисемпе шак-шак! тутарса Неллипе Налина хыçěнче икě хěр асфальт çула виçет. Вěсенчен пěри— Уги, тепри — Дора.

Уги чěмсěр. Никампа та калаçмасть, унпа калаçас текенě те çукрах. Таçта, çул çинче, ермěшнě ют хěр тейěн ăна.

Дора вара халичченхи пек мар шавлă. Пěринпе, тепринпе сăмахпа перкелешет. Вěреннě чух вăл мăн кăмăллăрах тытатчě хăйне. Чапě пулнă çав ун. Ара, класран класа «пиллěксемпе» çеç куçатчě-çке. Вăтам шкула та ылтăн медальпе пěтерчě. Çитменнине тата, вăл сăвăсем хайлать. Класра унпа никам та танлашайман. Шел, юрату енěпе çеç унăн халлěхе телейě тупăнман-ха. «Эсě питě чипер.

Ман мĕскĕн чуна çунтаран. Эсĕ — ырă пирĕшти. Ирĕк парсам сана юратма...» — тесе тĕрленĕ хут татăкĕсене шкул каçĕсенче почтальон чылай хĕр ачана тыттарнă. Хĕр ачасене савăнтаракан çакнашкал çырусене Дора халиччен вуламан-ха. Çав териех япăх та илемсĕр-и Дора? Сăнне тиркемеллех мар. Çап-çаврака питлĕ. Ури вара... Çинçе патак! Пăхан куççене, тен, çак çитменлĕх айккинелле пăрать? Тĕрĕсне пĕлме хĕн. Тетте шăрçа çĕрте выртмасть тенешкел, хуçи тупăнмаллах пек. Ас-тăнĕпе пăхсан Дора — чи йăлтăркка хĕр. Апла тăк ун ятне çутă тĕнчен тахăш кĕтесĕнче пĕр-пĕр йĕкĕт çуралса ӳснĕ-тĕр... Тĕл пулĕç-ха вĕсем е институтра, е — ĕçре. Паллах, вĕренсе тухсан.

— Тухтăр!

Марека чĕнеççĕ. Никам та мар, хыçалалла çаврăнса тăнă Дора иккен!

Марек врач кил-йышĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕпе амăшĕ — тухтăрсем. Вĕсем ывăлне те хăйсен çулĕ çине тăратасшăн. Кунĕн-çĕрĕн унăн пуç мимине медицина сĕткенĕ тумлатнă. Тăрăшни харама кайман. Марек халь тухтăр пулма ĕмĕтленет. Çавна пулах урăх нимпе те кăсăкланмасть. Юлташĕсемпе те пĕр медицина пирки çеç сăмах ваклать.

— Тухтăр, эсĕ, мĕн, мăйна сулахаялла пăрса хунă та урăх никама та курасшăн мар, э-э?

Марек иккĕ-виççĕ ярса пуссах Дорăпа шайлашрĕ.

— Мĕн, — терĕ вăл мăкăртатсарах. — Атя, эпир те санпа айккинерех пăрăнар.

— Ха! Эсĕ, мĕн, çынсене култарса вĕлересшĕн-им? «Жирафпа surăх путекки епле килĕштернĕ!» — тесе ахăлтатĕç.

— Дора, эсĕ пыр ман пата сывалма. Ӳстерекен-самăртакан эмел парăп, — сăмахран юлмарĕ Марек.

— Мухтанан кăна пулĕ. Чи малтан хăвна лутралат. Санпа юнашар тăратсан темле çӳллĕ хĕр те пӳрнеске евĕр курăнĕ.

— Арçын çӳллĕ пулни килĕшӳллĕ. Ун пеккисене хĕрсем юратаççĕ.

— Вун çичче çитрĕмĕр. Ăçта сан савни?

— Чим-ха, Дора, — чарчĕ ăна юлташĕсенчен юларах пынă Влас Шиманский. — Марек, ман ыйтса пĕлмелли пур санран: мĕнле унта, çын чĕрине улăштарса лартасси пирки медицинăра улшăнусем çук-и?

Ыттисем те карах пуçтарăнчĕç. Пĕлеççĕ-çке: Влас йĕкĕлтеме ăста. Эппин, кĕтсех тăр — ахăрма тивет.

Марек ăша илмест Влас тăрăхланине. Вăл Кейптаун

хулинче пуранакан палла врач Бернардан çын чĕрине куçарса лартас тĕлĕшпе чапа тухнă юлашки ĕçĕсем, унăн пациенчĕсем операци хыççăн мĕн чухлĕ пурăнни, пирĕн тухтăрсем ку тĕлĕшпе мĕн шухăшлани çинчен лекци пуçлать. Чармасан ик сехет ним мар калаçать.

— Ку — кивелнĕ япала,— савăл çапать ун калаçăвне шăратса лартнă çурта пек пӳ-силлĕ Лена Шерефина.— Çынсен чунĕсене улăштарса лартасси пирки кала эс.

— Мĕн-мĕн?— хыпăнса ӳкет Марек.— Ăнланмастăп.

— Ара, çынри путсĕр чуна пăслантарса кăларса ывăтас, ун вырăнне ыррине вырнаçтарса лартасси пирки кала тетĕп-çке.

— Лена, эсĕ тем кирлĕ мара павран. Ун пирки тĕлĕкре илтнĕ-тĕр те чăн тесе ĕненнĕ.

— Эсĕ медицина тĕлĕшĕпе кая юлнă, философ,— йĕплесе илчĕ Влас Шиманский.

Пурте кулса ячĕç.

— Юрĕ. Халлĕхе Лена асăннă операци çутă кун курман тейĕпĕр,— чĕнмесĕр юлмарĕ Дора та.— Эсĕ, Марек, ху ту çавнашкал операцие, улăштар путсĕр чуна ыррипе. Вара пĕтĕм тĕнчери хаçат-журнал «Марк Остерев профессорăн тĕлĕнтермĕш эксперименчĕ» ятпа статьясем пичетлесе кăларĕç. Унсăрăн мĕнле-ха: кашни вĕреннĕ çыннăн этеме çĕнни, лайăххи парнелемелле.

— Акă, Марек, сана хамăр класс панă наказ. Тĕрĕс-и, атьсемĕр?— ыйтрĕ Лена.

— Тĕрĕс!— шавласа кайрĕç çамрăксем.

Қаллех шăпланчĕç.

— Мĕн эсир Марекăн операци сĕтелĕ çинчен тин аннă пек салху? Атьăр юрлар,— сĕнӳ пачĕ Влас.— Қавик! Тыт гитаруна!

Хăй çавăнтах салтаксен «Через две зимы» ятлă юррине юрлама тытăнчĕ. Гитара çаплах сас памасть.

— Ăçта вара Қавик?— персе ячĕ Ларис ăна ушкăнра куçĕпе шыраса.

— Вăл шкула юлчĕ,— терĕ тахăшĕ.

## 4

Қавик аллине гитара тытнă, урама тухсан каялла çаврăнса тăчĕ те хура куçĕсемпе тĕмсĕлсе пăхрĕ шкул çине. Пилĕк хутлă, пысăк чӳречесемлĕ, шурă стеналлă капмар çурт çĕрлехи тĕттĕмре, тӳнĕсре ишекен карап евĕр, асамлăн курăнать.

Хашлатса сывлать йĕкĕт. Ку вăл — сыв пуллашу каçĕ хыççăн Атăл хĕррине каякан юлташĕсенчен татăлса юлнă Қавик Изоркин. Хура пуставран çĕлетнĕ костюм айĕн шурă кĕпе тăхăннă, мăйне кăвак бантик çыхнă. Çырă кăпăшка çӳçне çамки çине тураса вырттарнă та, сăнĕ-пичĕ пушшех илемленнĕ. «Эх, — терĕ Қавик çак çуртра темскер, питĕ хакли, юлнине туйса. — Текех хул хушшине кĕнеке-тетрадь хĕстерсе алăка уçса кĕреймĕпĕр. Сывă пул, юратнă шкулăмăр!» Пичĕ тăрăх куççуль юхса анчĕ çамрăк çыннăн. Чунне тӳсме çук тăвăр, кичем.

Хăçанччен тăратчĕ-ши вăл çапла хурланса? Кĕçех Қавик хăйне чĕннине илтрĕ. Ав вăл, шур акăш, ăна чĕнекенни, вĕçтерсе килет. Қам-ши ку? Қам пултăр? Ларис, паллах. Çав пăшăрханать тусĕшĕн.

Лариспа Қавик пĕр-пĕрин патне туртăннине тăххăрмĕш классем вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче асăрхарĕç. Лешсем шав пĕрле çӳреме тăрăшаççĕ. Қавик урок хыççăн хĕре килне çити ăсатса ярать. Қинона та пĕрле çӳреççĕ. Вара Влас Шиманский вĕсем пирки упăшкипе арăмĕ теме тытăнчĕ. Лариспа Қавик хăйсенчен çапла кулнине темиçе уйăхран тин сисрĕç.

Пирвайхи тĕл пулăва Қавик паянччен чĕринче усрать.

Пĕчĕкчĕ-ха вĕсем ун чухне, çав çул пуçласа шкула пынăччĕ. Хура кĕркунне хăвăрт иртрĕ, часах хĕл ларчĕ. Çакăнпа пĕрле ачасен савăнăçĕ те çитрĕ: урисене коньки, йĕлтĕр сырчĕç.

Шкултан таврăнсан Қавик кашни кун çунашка туртса тăвайккине тухатчĕ. Пĕррехинче вăл çӳллĕ хӳме çумĕпе хывнă сукмак тăрăх çунашкапа ярăнатчĕ. Ăнсăртран курах кайрĕ: ун умĕнче хăйсен класĕнчи Ларис пыра парать. Хăй тĕршĕннĕ. Қавик хĕр ачана куç илмесĕр пăхать. Мĕн пулчĕ ăна? Хул хушшине хĕстернĕ папки тухрĕ ӳкрĕ. Пĕшкĕнчĕ, анчах илеймест. Шăп çак вăхăтра Қавик ярăнса çитрĕ ун патне. Вăл хĕр ача пит çăмарти тăрăх куççуль юхса аннине асăрхарĕ. «Манран, арçын ачаран, хăраса макăрмасть-ши?» — тесе шухăшларĕ те вăл хытă пăшăрханса:

— Эпĕ сана тивместĕп, — терĕ.

— Ман пӳрнесене тăм илчĕ, ним те туймаççĕ. Пианино темле калăп ĕнтĕ, — ĕсĕклет Ларис.

— Қӳр, ăшăтам, — Қавик çунашки çинчен вăшт сиксе тăчĕ. Хĕр ачан çӳхе перчеткеллĕ аллисене хăйĕн ывăçне хупрĕ те тытăнчĕ вĕре-вĕре сăтăрма. — Эх, эсĕ те çав!.. Хĕл сиввинче капăр перчеткепе çиçкеленме юрать-и вара? Ăшă алсиш тăхăнмалла халь.

Ларис сăмах та чĕнеймест. Шăнса кӳтнипе сиксе чĕтрет. Тутине те уçаймасть. Хăй кĕрен калпакпа. Çамки сарă çӳç пайăркисемпе витĕннĕ. Ун çине тӳперен эрешлĕ юр пĕрчисем ӳкнĕ. Вĕсем, хĕвел шевли ваннă тĕкĕр тĕпренчĕкĕсемпе вылянăн, куçа йăмăхтарса ялтăртатаççĕ. Çавăнпа та Ларис, пĕчĕк юр пике пек, илемлĕн курăнать.

— Ăçта каян эсĕ?— ыйтрĕ Қавик хĕр ачаран куçĕнчен шăтарасла пăхса.

— Музыка шкулне.

Қавик хĕр ача аллине чылайччен сăтăркаларĕ, ăна хăй сывлăшĕпе вĕрсе ăшăтрĕ.

— Мĕнле, пӳрнӳсем туяççĕ-и халь?

— Ах, эпĕ урока ĕлкĕрейместĕп,— хыпăнса ӳкрĕ Ларис.

— Эпĕ сана ăсататăп. Ме, тăхăн,— Қавик васкасах хăйĕн алсишне хывса пачĕ Лариса. Лешĕ хирĕçлемерĕ. Вара вăл юр çинче выртакан папкăна çунашки çине илсе хучĕ.

— Мĕн, ара, кунта сан?

— Нотăсем.

— Чупар,— хĕр ачана аллинчен ярса тытрĕ Қавик.

— Атя!

Туслăн чупакан пĕчĕк пикепе пĕчĕк йĕкĕте йăвашшăн пăхса иртеççĕ çитĕннисем. Теприсем вĕсене çул парса пăрăнса юлаççĕ.

— Эпĕ чăм шыва ӳкрĕм,— терĕ Ларис.

— Эппин, лăпкăн утар.

Ларис — калаçма хавас хĕр ача. Вăл кăнахвет хучĕ пухать иккен. Ĕнтĕ ун курупка туллиех илемлĕ хут.

— Пирĕн килте кушак та пур,— тĕлĕнтерес килчĕ Ларисăн хăйне ăсатакан ырă юлташне.— Патак тăссан ун урлă яшт! сиксе каçать. Чăн-чăн спортсмен. Тата шăши тесе мечĕк хыççăн чупать. Хăй чĕрĕ шăшие курсан сехĕрленнипе пĕкĕ пек авăнать. Ах, айван та-çке. Çав вăхăтрах ăслă та. Ат!

Икĕ тус музыка шкулĕ тĕлĕнче чарăнчĕç, Ларис ăшă алсишне хывса хуçине пачĕ те çунашка çинчи папкине илчĕ.

— Қавик, мана илме килĕн-и?

— Мĕнех!.. Қилĕп!

— Сана вара хамăр пата илсе кĕрĕп. Эпĕ пианино каланине итлĕн.

Ларисапа туслашнă хыççăн Қавик утса мар, çунатсăрах вĕçсе çӳреме тытăнчĕ. Ялан кулать вăл, хĕпĕртет. Пĕчĕк этемĕн те чунĕ пысăк. Юратсан вăл та савăнма пĕлет. Савăнăçа хăвăнта çеç пытарса усрама май çук. Вăл вĕ-

реме кĕрекен сĕт пек тăкăнасшăн хăпарать. Сăвăраканни кирлех. Ачашăн кам-ха унашкал çывăх çын? Паллах, амăшĕ.

Кавик çав кун амăшĕ таврăнасса тӳсейми кĕтрĕ, кантăк умĕнчен хăпмарĕ. Кaç пулттипе тин кĕтсе илчĕ ăна.

Апатланнă хыççăн диван çине канма тесе амăшĕ ывăлĕпе юнашар ларчĕ. Кавик, çак саманта кĕтнĕскер, шухăшне пĕлтерме васкарĕ:

— Анне, ман авланмалла мар-и? Хамăр класра вĕренекен пĕр хĕр ача питĕ килĕшет. Юрататăп ăна. Ларис ятлă вăл.

Кавик амăшĕ педагог мар, стройкăри маляр. Çапах вăл ывăлĕн айванлăхĕнчен кулмарĕ. Унпа çитĕннĕ çынпа калаçнă пекех калаçрĕ.

Çакна кура пĕчĕк Кавик хавхаланса татах хастарланчĕ:

— Эпĕ ăна, анне, яланах хӳтĕлетĕп,— куçне чăрлаттарчĕ ĕнентересшĕн,— çӳçĕнчен туртмастăп, ыттисене те чаратăп. Вăл... кăнахвет хучĕ пухать.

— Маттур,— ырларĕ амăшĕ ачине.

Амăшĕ хăтăрса пăрахманнипе çĕкленнĕ Кавик татах ыйтрĕ:

— Авланмалла-и? Мĕнле шутлатăн?

— Чим-ха,— амăшĕ питĕ кирлĕ сăмах суйланăн чăрăнса тăчĕ. Вара çапла каларĕ:— Пĕлетĕн-и, ывăлăм, юратăва... ыттисем курасран... питĕ тĕплĕн пытарса усрамалла.

— Ăçта?— пач ăнланмарĕ саккăра кайнă ача.

— Чунра, паллах, сунтăхра мар.

— Чунра?..

— Çапла. Эсĕ пĕчĕк-ха. Юрату вăл хăвпа пĕрле ӳстĕр. Ан васка, ывăлăм. Чипер ӳссен çав самант хăех çитет,— пит çăмартинчен чуп туса илчĕ ăна амăшĕ.

Пурнăç шав малалла шурĕ. Кантăк умĕнчи кăтра хурăн темиçе хут та тумне улăштарчĕ: кĕркуннесенче вăл çаралса юлать; хĕллесенче, шурă чечек çурнăн, юр пĕрчисемпе эрешленет; çуркуннесенче симĕс çулçă сарса капăрланать.

Кавик хуйхă-суйхăсăр ӳсрĕ, шкулта аван вĕренчĕ, юлташĕсем хисеплеççĕ ăна, амăшĕ те юратать. Авланас пирки пĕчĕк чухне амăшĕпе сӳтсе явни тахçанах пулнă ĕнтĕ. Вăл ăс пани — асра.

Пĕрле çӳресси Кавикпе Ларисăн çуллахи каникулта пуçланчĕ. Вун пиллĕкреччĕ вĕсем, саккăрмĕшне пĕтерсе тăххăрмĕшне куçнăччĕ.

Экзамен хыççăн шкул ачисен класра пĕр сăмах-юмах янăнчĕ: канас, канас... Ќиленче юлакан çукпа пĕрех. Çулйĕр кама ăçта илсе çитерĕ ĕнтĕ. Хăш-пĕрисем ашшĕ-амăшĕпе Хура тинĕс хĕррине вĕçтереççĕ.

— Атăл мĕнрен кая?— хурлама памасть тăван тавралăха юратаканни Хура тинĕсре шыва кĕме ĕмĕтленекенсене.— Улăштармастăп Атăла! Çыранĕнче — хăйăрлăх, вăрманлăх.

Теприсене турист пуйăсĕ кĕтет.

— Ќавик, эсĕ мĕншĕн чĕнместĕн?— ыйтать юлташĕнчен пĕри.

— Манăн анне чирлĕ. Ăна пăрахса ниçта та каймастăп. Тата пирĕн укçа-тенкĕрен те хĕсĕк: ĕçе вырнаçма тивет.

Тепĕр кунне урампа иртсе пынă чух Ќавике Ларис чарса тăратрĕ:

— Ĕç тупрăн-и?— ыйтрĕ вăл.

— Шыраман-ха.

— Ытла мĕшĕлти-çке эсĕ.

Ќавик куланçи турĕ.

— Атя улма-çырла совхозне,— чĕнчĕ Ларис.— Ĕçленĕшĕн укçа та тӳлеççĕ, çырлине тăраниччен çиме те чармаççĕ.

Шухăша кайса тăчĕ пĕр кана Ќавик. Çырла татасси пĕрре те арçын ача ĕçĕ пек туйăнмасть ăна. Ќăмăлтанах тимĕр кĕреçе тытса çĕр чавĕччĕ е вăрман каснă çĕрте мăн йывăççене тӳнтерĕччĕ. Анчах халĕ вăл Лариса хирĕçлеме те вăй çитереймест. Хĕр ачана хăй ĕмĕтленнĕ ĕçре йывăр килĕ. Мĕн тумалла?

Совхозра вĕсене хапăл тусах йышăнчĕç. Çитĕннĕ çын вырăнне хурса каларĕç:

— Çамрăк йыш питĕ кирлĕ пире. Çĕр çырли, мур илесшĕ, ани çинчех çĕресшĕн. Васкасах пуçтармасан шар курăн. Хула майрисем те ав варени пĕçересшĕн ăшталанаççĕ. Вĕсене çырла пар часрах.

Пахчи шутсăр пысăк иккен совхозăн. Лаптăкĕ-лаптăкĕпе хĕп-хĕрлĕ çырла ани. Çĕр çын пĕшкĕнсен те пуçтарса пĕтереймĕ ĕнтĕ.

Ќавикпе Лариса йăран умне тăратрĕç. Çырлине хума савăт-сапа пачĕç. Пуçăнчĕç вара вĕсем ĕçе ыттисемпе пĕрле. Савăт тулать те тулать çырлапа, ăна сарлака ещĕке пушатаççĕ. Ќун каçа миçе ещĕк тулмарĕ-ши! Пуç çĕклемесĕр ĕçленĕрен ку. Ќарăнса тăни килĕшĕ-и йышра?

Пĕр уйăх та виçĕ эрне ĕçлерĕç совхоз пахчинче Ларисна Ќавик. Ĕçĕ тĕлĕнмелле пархатарлă иккен. Вăл икĕ çамрăк чĕрене нихçан уйрăлми çывăхлатрĕ.

Çавăнтанпа ĕнтĕ вĕсем пĕр-пĕринсĕр ниçта та ура ярса пусмаççĕ. Қаланă-и-ха вĕсем пĕр-пĕрне «юрататăп» тесе? Қаланă, шăп вунă кун каялла.

Физикăпа экзамен тытнă кун кино курма кайрĕç. Вырăнĕсем чи кайри ретре. Кунта пĕр-пĕрне чунтан юратакан хĕрпе каччă çеç лараççĕ. Чуп туса илсен те никам асăрхас çук. Анчах Қавик çак тарана çитсе хĕр тутине тĕкĕнмен. Ку ӳлĕм пулмалли япала. Тен, çав самант... ак-ак çитĕ.

Экран çуталчĕ «С любовью»— вуларĕç фильм ятне.

Тыткăнларĕ фильмри çамрăксен пурнăçĕ. Қавикпе Ларис сăмах чĕнеймеççĕ. Иккĕш юнашар ларнине пĕр-пĕрин аллине чăмăртани çеç систерет.

— Эх, пулаççĕ-мĕн йĕкĕексем пурнăçра,— киноран тухсан фильмри ырă мар пĕр героя хак памасăр тӳсеймерĕ Ларис.— Хĕр ăна юратнă, шаннă, ĕненнĕ. Чирлесе ӳксен савниййĕ унран пач сивĕнет. Юрать-ха ун асапне ырă чунлă каччă курать... Чăн-чăн юратăва пысăк инкек çеç тĕрĕслет пуль çав.

— Тĕрĕс мар шухăшлан, Ларис,— терĕ унпа юнашар утакан Қавик.— Сан пурнăçунта инкек пулман, ан та пултăр — эпĕ сана пурпĕр чунтан юрататăп.

— Эпĕ те... юрататăп.

— Ларис, сансăр тĕнчере пурăнаймастăп.

— Эпĕ те.

— Юратăва ĕмĕр усрасси хамăртан килет. Пĕлетĕн-и, эпĕ... сана... пĕрремĕш класрах юратнă.

Қавик ача чухне амăшĕпе Ларис пирки калаçнине аса илчĕ те вăрттăн кулчĕ.

— Мĕншĕн кулан?— сисрĕ хĕр.

— Пĕчĕк чухнехи аса килчĕ.

Пусахласах ыйтнăран Лариса каласа памах тиврĕ. Вара иккĕшĕ те каçса кайсах ахăлтатрĕç.

Çак каç вĕсем малтанхи хут... чуп турĕç.

Халĕ Қавик тăрать ав шкултан уйăрăлаймасăр. Пĕчченех. Ыттисем сыв пуллашу каçĕ хыççăн Атăл хĕррине кайрĕç.

— Қавик!— ун патнех çитсе тăчĕ Ларис.

Хăлхана юратнă хĕр сасси пырса кĕрсен кăмăл çĕкленет. Гитара хĕлĕхне пӳрнисемпе перĕнтеркелесе Қавик кĕвĕ янăраттарчĕ.

— Эсĕ мĕншĕн çухалса юлтăн?— ыйтрĕ унран Ларис.

— Сана кĕтетĕп.

— Çаплах-ши?.. Тен, пĕр-пĕр хĕре?

— Сансăр пуçне урăххи кирлĕ мар.

— Эппин, кайрăмăр.

Ларисра Кавик тантăшĕсем хыççăн чупрĕç.

Уйрăлу каçĕнчен тухнă çамрăксем Атăл хĕррине çитнĕ çĕрелле пачах шăпланчĕç. Калаçмалли тек ним те юлман.

— Карталанса тăрар та юрлар, ташлар,— кăмăллăн кулкаласа сĕнӳ пачĕ Ларис тантăшĕсене.

Анчах лешсем карталанса юрлама та, ташлама та килĕшмерĕç. Йывăр ĕç туса ывăннă тейĕн. Куçĕсем те сĕлкĕш. Тен, балра ытлашши хуçкаланнипе шăм-шакĕсем йывăрланнă? Çук, тĕрĕс мар. Чунĕсене салху пуснин сăлтавĕ пачах урăххинче. Вĕсем вунă çул хушши пĕр сăпкара ярăннă. Халĕ акă çуначĕ сарăлнăскерсен таçта вĕçмелле.

## 5

Тепĕр темиçе кунтан тĕнче пысăкăш хум çĕкленсе килчĕ те... Çук, ку хум вăл тинĕс тăрăх урăм-сурăм ахăрса, карапсене хуçса-ватса путараканни мар. Ку вăл — пурнăç пуçламăшĕнчи хум.

Çак асамлă хума Кавик класĕнчи ачасем пурте пĕрле лекрĕç. Чӳхентерет хĕрхенмесĕр вĕсене хум. Пĕр çӳлелле ывăтать, пĕр аялалла çатлаттарса пăрахать, шалтан шала сĕтĕрет. Хĕвелĕ те капмар пĕлĕт хыçне пытаннă. Çак пăтăрмахра мĕнле ярса тытмалла-ха çăлăнăç ункинчен?

Асамлă хум кашнинех килĕсенчен хускатса тухрĕ. Хăш институтa е завода пуç таймалла вĕсен? Нумайăшĕ паян куна çитсе те чунĕ ăçталла туртнине сисмен.

Дорăшăн акă ывăç тупанĕ çинчи пек йăлт курăнать ӳлĕмхи: поэта тухма ĕмĕтленет. Сăвăсем çырать-çке чиперех. Вăтам шкула ылтăн медальпе пĕтернĕскершĕн кирек хăш института кĕме те çул уçă.

Амсанаççĕ Дорăна ачасен ашшĕ-амăшĕ. Ана пула ывăлĕ-хĕрĕсене тек ятлаççĕ: «Ун пек лайăх вĕренмеллеччĕ. Халĕ чавса çывăх та — çыртаймăн»,— теççĕ.

Тăвăллă хум хăй варне пĕтĕрсе чикеймест Дорăна. Хĕр ним иккĕленмесĕр-вĕтеленмесĕр тăван хулари педагогика институтне утрĕ. Филологи факультетне кĕме хут çырчĕ.

Ыттисем шав чупкалаççĕ.

Урам кĕтесĕнче, университет йыхравне çыпăçтарнă сарлака хăмасем умĕнче, тăваттăн тĕл пулчĕç: Кавик, Ларис, Емил, Уги.

— Ăçта вĕренме кĕмелле?

— Таçта. Аптрамалла.

— Хулара университет пур çинчен ютта каймалла-и?

— Атьăр машиностроительнăй факультета. Нумай енлĕ инженер пулăпăр,— терĕ Ларис.

Ҫавик унпа килĕшрĕ.

— Эпир энергетика факультетне кĕресшĕн,— терĕҫ Емилпе Уги.

Документсене парса хăварсан ҫурăмĕсем ҫинчен йывăр чул ӳкнĕ пекех туйăнчĕ вĕсене.

Ҫаҫхине ҫывăрма выртсан Уги ăшĕнче «арăслан» вăранчĕ. Вичкĕн чĕрнисемпе эх чăрмалать ун чунне. «Пиравăр ăстисен институтне каймалла сан»,— хĕтĕртет ҫав арăслан. Мĕн тăвăн? Хăвна ху хирĕҫ каяймăн. Тепĕр кунне Уги документсене университетран каялла илсе тухрĕ те Мускава ăсатрĕ.

Ларис шăпи те Угиннипе пĕрешкел. Ҫилĕнче ăна чăтма ҫук хытă ятларĕҫ.

— Эсĕ вунă ҫул хушши шкулта юрларăн, ташларăн. Тата музыка шкулне вĕренсе пĕтертĕн. Халь ҫавсем харама каййчăр-и? Санра артист чунĕ, ăнлан,— пăсăрлантарчĕ ашшĕ.

— Эй, айван, инженер пулса завод тусанне ҫăтса вилес тетне?— упăшки майлах ҫаптарать амăшĕ те.

— Никам та вилмест. Заводра пиншер ҫын ĕҫлет,— хирĕҫлет Ларис.

Анчах ун сăмахне йӳплемеҫҫĕ те.

— Ĕнисем шыв ĕҫнĕ чух пăрушĕсен пăр ҫуласан та юрать,— тесе ҫеҫ хучĕ амăшĕ.

Ашшĕ Мускава командировкăна каять. Вăл хĕрĕн документсене театр институтне кĕртсе пама шут тытрĕ.

Хавaспа ăсатрĕ ăна арăмĕ. Хĕрĕпе каччин савăнăҫне тăпăлтарса илнине пĕртте туймасть унăн чул пек хытнă чĕри. Ăна хĕр ачин пулас чапĕ пуҫне ҫавăрнă.

Ларис Мускава каять, Ҫавик — юлать. Ĕмĕрлĕхех уйрăлаҫҫĕ-и? Юрату пĕтет-и?

— Мана манан ĕнтĕ,— ӳпкелешет Ҫавик.

— Ни-хă-ҫан та!— ĕнентерет Ларис.

— Мускав каччи, артист тупăн. Манран мĕн пайти? Эпĕ рабочи кăна...

— Мĕншĕн «рабочи» кăна? Вĕренме кĕретĕн-иҫ.

— Паллă мар-ха. Патак — икĕ вĕҫлĕ,— кăшт шухăшласа тăрать те татах калать Ҫавик:— Юрĕ, вĕренĕп, инженер пулăп тейĕпĕр. Пурпĕр санпа танлашаймăп. Эсĕ — актриса, киносенче выльăн. Чапĕ мĕнешкел! Ун чух перĕнсе иртсен те паллаймăн мана.

— Пăрах-ха, тупата, кирлĕ мара пуплесе чуна асап-

лантарма,— тет хурлăхлă сасăпа Ларис.— Сансăр эпĕ минут та пурăнаймастăп.

Мускава каясси çамрăк чунсене пĕр-пĕринчен пистермерĕ. Йăлтах урăхла: куçа курман çилĕм çыпăçтарсах лартрĕ вĕсене. Çÿреççĕ пĕр-пĕринчен хăпаймасăр. Экзаменсене хатĕрленесси асра та çук.

— Қавик, эпĕ атте-аннене кÿрентермĕп: Мускава кайăп, анчах экзаментан «иккĕ» илсе тухăп. Таврăнăп та санпа пĕрле университета кĕрĕп.

— Темле çав...

Қавик хĕре ыталаса пăчăртать. Тутисем пĕрлешеççĕ. Пур-ши вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма пултаракан вăй?

## 6

Оня хăш института хут çырса парассине никам та илтмен. Вăл хăй те ку тарана çитсе ăçталла тапмаллине пĕлместчĕ-ха. Акă ун юрист пулас ĕмĕт çуралчĕ.

Вĕренме Хусан университетне каять. Ăçтан килсе çапăнчĕ ку шухăш ун пуçне? Çамрăк хĕр кăмăлне Çĕпĕрте адвокатра ĕçлекен куккăшĕ хăнана килсен манса хăварнă «Судебная медицина» тата «Судебная психиатрия» кĕнекесем çавăрчĕç. Тем тĕрлĕ пăтăрмах çинчен те çырса кăтартнă унта. Пĕтĕмпе чăн пулнисем. Çĕр çинче тĕрлĕ çын пурăнать. Қашни этемĕн хăйĕн шалти тĕнчи пур. Паллах, нумайăшĕ хăйсене йĕркеллĕ тытать. Çав хушăрах путсĕрсем те çук мар. Вĕсем усал ĕç тăваççĕ. Мĕншĕн?

Кĕнекере пĕр хĕр ача çинчен çырни шухăша ячĕ Оньăна, пăлхантарчĕ.

...Вун тăвата çула çитнĕ пулнă çав хĕр ача. Унта та кунта вут тĕртсе пушар кăларса çÿренĕ вăл. Шатăртатса çурт-йĕр çуннине, вăрăм чĕлхеллĕ хĕлхем ялтлатса тÿпенелле çĕкленнине, сехĕрленнĕ çынсем çухăрашнине курса тăрасси уншăн чăн-чăн уяв пулнă. Вăл савăннипе ахăлтатнă, хăлаçланса сиккеленĕ, кăшкăрашнă. Элес-мелесленсе кайнă куçĕсем симĕссĕн-кăваккăн ялкăшнă.

Пĕл ĕнтĕ çак усаллăхăн тупсăмне. Қуна юрист çеç пултарать.

Çынсене йĕркеллĕ пурăнма пулăшасси — питĕ кирлĕ те пахатарлă ĕç. Акă мĕнле шухăш Оньăна çула илсе тухать.

## 7

Йĕкĕреш хĕрсен килĕнче те — çемье пухăвĕ. Кун йĕркинче — пĕртен-пĕр, калама çук йывăр ыйту. Аçта вĕренме каймалла Неллипе Налинăн, кам пулмалла вĕсен пурнăçра? Çакна татса памалла.

— Тен, врач? Тухтăр халăхра хисеплĕ çын. Пурте ун куçĕнчен пăхаççĕ. Чирлисем сываласшăн, сыввисем чирлесшĕн мар. Хамăр та ватăлса пыратпăр, майĕпен йăшатпăр. Килте тухтăрсем пурри пăсмасть. Ку — ашшĕ сĕнĕвĕ.

— Тупрăн ăмсанмалли! Çын юхан-çăпанне тасатассинчен йĕрĕнчĕклĕрех ĕç тĕнчере урăх çук-тăр,— тутине пăркаласа хирĕçлет амăшĕ упăшкине.

— Эппин, химик пулччăр,— тет ашшĕ.— Пуласлăх хими аллинче.

— Электрик тăвасшăн мар-и тата ток çапса вĕлерме?

— Мĕнех?— килĕшмест мăшăрĕ арăмĕпе.— Электричествăсăр та тĕнче тытăнса тăраймĕ. Электрик — питĕ кирлĕ специальность. Хамăр Шупашкар ГЭСĕнче электрик-инженерсем нумай кирлĕ.

Пепкисене ăшă сăпкаран çемçе кавир çине антарса тăратма мел шыраççĕ ашшĕпе амăшĕ. Пĕлесчĕ мĕскĕнсен тепĕр уйăхран вĕсене мĕн кĕтнине? Хĕрĕсене килĕнчен шит хăптармĕччĕç, чăлана хупса çăрапа питĕрсе илĕччĕç е аллисенчен çавăтса çӳрĕччĕç. Анчах пуласлăх кантăкĕнчен тӳрех пăхаймăн.

Кил-йышăн ĕçрен таврăнсанах пуçланакан çак пухăвĕ çапла темиçе эрнене тăсăлчĕ: васкамалла — унсăрăн кая юлăн. Амăшĕ хĕр ачисене çăмăл ĕç тупса парасшăн.

— Хамăр мĕн тери асапланнă,— аса илет вăл. Вĕсен ачалăхĕ чăнах та ĕнтĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче иртнĕ.— Пирĕн ачасен канлĕрех пурăнмалла.

— Мĕнле майпа?— куçне чăрлаттарать мăшăрĕ.

— Санпа эпир укçа-тенкĕ сахал ĕçлесе илместпĕр. Ачапăчамăр та сак тулли мар. Шухăшласан, йĕкĕрешсем— иккĕшĕ те пĕр ача çеç. Пурăнччăр хамăр çумра.

— Пирĕн вилмелле. Çакна ан ман. Вĕсем вара, чӳлмекре ӳсекен чечексем, мĕнле пурăнĕç?

— Эсĕ асăннă медицина, хими, энергетика факультечĕсенче вĕренеймеççĕ вĕсем. Манмарăн пулĕ вĕсен шкул дневникне мĕнле паллăсем чăпарлатнине?

— «Виççĕсем» ытларахчĕ çав,— ятланăн калать упăшки.— Çаплах хĕрхентĕн вĕсене.

— Аплах ан хурла-ха. Ырри те пур: ас ту-ха, хамăрăн библиотекăра вуламан кĕнеке хăвармарĕç.

Акă çемье пуçлăхĕ ури çине сиксе тăчĕ.

— Тупрăм,— каллĕ-маллĕ утма тытăнчĕ вăл.

— Ăçта ярасшăн вĕренме?— кăсăкланать арăмĕ.

— Корреспондента.

— Мĕн, мĕн?

— Журналист пулĕç. Чаплă та таса ĕç! Тупата, ăмсанатăп эпĕ хамăн вĕлтĕрккесене. Материал шыраса таçта та çитĕç, такампа та курса калаçĕç. Пĕтĕм хыпар репортерсен аллинче. Илтетне, амăшĕ, пирĕн çинчен те çырса кăларĕç.

— Çурла тытса тыр выраcсиех мар — самай илĕртӳллĕ ĕç.

Ашшĕ пырса ачисене кăтăкланçи тукаларĕ. Лешсем ихĕреççĕ.

Хĕр ачасем çемье пухăвĕн калаçăвне пачах хутшăнмарĕç. Калăн, халап-юмах вĕсем пирки мар, пачах ыттисем çинчен пырать тесе. Чăнах, пуçа мĕншĕн пустуй ватмалла? Сӳтсе явăçин ара. Вĕсем çуратнă, вĕсем ӳстернĕ: ӳлĕм ăçталла пăрăнмаллине те хăйсемех татса паччăр. Çавăншăн атте-анне вĕсем.

Университета тăваттăшĕ те кайрĕç. Шыраса тупрĕç хăйсене кирлĕ пӳлĕме. Журналистсем хатĕрлекен пайăн йышăну комиссийĕнче документсене тĕрĕслесе илекенни пĕчченех ларать. Ку çын умĕнче амăшĕ хăйĕн хĕрĕсене питĕ ырларĕ, кĕнеке вулама юратнине пĕлтерчĕ, çавăнпа вĕсен тавра курăмĕ анлă имĕш. Çакă чи кирли журналистшăн. Çырмашкăн университет вĕрентме тивĕç.

Документ йышăнаканни кулкаласа çеç ларчĕ. Путех вăл яра куна ашшĕ-амăшĕн мыскарисене сахалах курмасть пулас.

Килне таврăнсан амăшĕ хăйсен пӳлĕмне кĕрекен йĕкĕрешсем çине нихçан курманла чăрлаттарса пăхрĕ. Çавăнтах ăшĕ вăркама тытăнчĕ. Хĕрĕсем темшĕн ытла шуранка курăнчĕç ăна. «Сывлăхĕсем хавшаман-ши?» Упăшкине кухньăна чĕнсе кĕртрĕ те:

— Итле-ха, ашшĕ, пирĕн пепкесем чирленĕ,— терĕ пăшăрханса.

Мăшăрĕн те сăн-сăпачĕ улшăнчĕ. Ара, хыпарĕ ырăскер мар. Шкулта миçе экзамен тытрĕç те! Çамрăк чĕрисем ăçтан тӳсчĕр? Хăнăхман-ха вĕсем йывăр çĕклем йăтма.

Çăварне уçма та ĕлкĕреймерĕ кил пуçлăхĕ, çав вăхăтра хваттерте хĕрĕсен чĕнкĕлти кулли сарăлчĕ. Ачисен хаваслă сасси ашшĕ чунне самантрах çĕклентерчĕ. Вара вăл арăмне ĕненмесĕртерех тавăрчĕ:

— Халсăрланнă хĕр-упраç çапла ахăлтатмĕ.

— Чирлесен те кулма пулать,— кăмăлсăрланчĕ арăмĕ.— Ыранах яла, анне патне, ăшă сĕт ĕçме кайччăр.

— Ман енчен чару çук. Ӳсекен çынна уçă сывлăш çăкăр пекех кирлĕ.

Кун хыççăн амăшĕ йĕкĕрешсем патне кĕчĕ.

— Пепкемсем, пуçтарăнăр. Ыран яла, кукаму патне, вĕçтеретĕр.

— Аюк,— çурăмĕпе çаврăнса ларчĕ Нелли.— Эпĕ Атăлта ишес тетĕп.

— Пирĕн класрисем йăлтах килĕсенче лараççĕ. Эсир таçта хăвалатăр пире,— чĕнмесĕр юлмарĕ Налина та.

Çапла тавлашнăшăн хĕрĕсене амăшĕ ятласа илчĕ:

— Хăвăра ырă тăвасшăн эпир.

Йĕкĕрешсем пĕр-пĕринпе пăшăлтатса илчĕç.

— Юрĕ,— килĕшрĕ вара Нелли.

Пĕри мĕнле, тепри те çав урапа çинче. Налина та тек кутăнлашмарĕ.

Ял пурнăçĕ вĕсене çырлахтарать. Ахальтен çеç амăшĕпе килĕшменçи тукаларĕç. Унта вĕсене никам та хĕсĕрлемест. «Экзамена хатĕрленĕр, вулăр»,— тесе хистемест. Тăраниччен çывăр, вăрмана хурăн çырли пуçтарма кай, кӳлĕре шыва кĕр...

Çĕрĕпе тăрмашрĕ амăшĕ. Икĕ чăматан япала тултарчĕ. Пĕринче — пĕр пек çĕлетнĕ хитре тум. Амăшĕ йĕкĕрешсене капăр çӳретесшĕн: ара, ют çĕре мар, хăй çуралса ӳснĕ ялне ярать-çке. Пурте ăна мухтаччăр, хĕрĕсене ăмсанччăр. Иккĕмĕш чăматана учебниксемпе хут-кăранташ чикрĕ.

— Усăсăр чупса çӳресе вăхăта сая ан ярăр. Мĕн вĕреннине йăлтах аса илĕр. Экзамента хăвăрах çăмăл пулĕ,— ăс парать амăшĕ.

— Ан пăшăрхан, анне,— тет Нелли.

— Урăх ĕç те çук пирĕн,— йăпăлтатать Налина амăшĕ çумĕнче кушак пек çуланса.— Ăшă сĕт лĕрккe те учебниксем вула.

Ашшĕпе амăшĕ автобуса кĕрсе хĕр ачисене вырнаçтарчĕç.

— Сывă пулăр!— терĕç йĕкĕрешсем кантăк витĕр пăхнăçем аллисене сулласа.

Автобус тапранса кайрĕ.

Неллипе Налина выртнĕсем автобус варринче. Кичемрен вĕсем кĕнеке кăларчĕç. Вулама кансĕр иккен. Автобус кисреннипе алăри кĕнеке сив чир тытнăн тăр-тăр чĕтрет. Йĕркесенчи сас паллисем сиксех ташлаççĕ. Хупма тиврĕ кĕнекене. Ирĕксĕрех иртсе юлан телефон юписене, ем-ешĕл йывăççене пăхма тиврĕ кантăк витĕр. Çынсем те çавах.

Чылайăшĕ хаклă япала тупасла автобус умĕнчи çула тинкерсе пырать.

Шăпахчĕ-ха, темшĕн сĕрлеме тытăнчĕç. Куçа курăнман алăсем пĕрин те теприн пуçĕсене пăра-пăра лартаççĕ хыçалалла. Никама та мар, Неллипе Налинăна пăралаççĕ куçĕсем. Хăйсене çапла тĕлленине хăнăхнă-ха вĕсем. Сăлтавĕ паллă: иккĕшĕ те каснă-лартнă пĕрешкел, çутă сăнлă. Вĕсен ытла та сайра тĕл пулакан куçсем — сарă тĕспе хутăшлă шупка симĕс куçĕсем. Çийĕнче те пĕрешкел çĕлетнĕ тум. Халĕ сулхăн пуласран пăшăрханнă амăшĕ вĕсене ăшă кофта тăхăнтарнă. Килĕнче чух хĕрсем сарă вăрăм çӳçне çурăм тăрăх ярса çӳрекенччĕ. Çула тухас умĕн чăрмантарасран сапаланчăк çӳçĕсене хăю ярсах çивĕте яврĕç.

Çакă ĕнтĕ куçĕсене чартарсах пăхтарать те кашнинех.

Çийĕнчех хĕр ачасем тепĕр тĕлĕнтермĕш асăрхарĕç: çынсем вĕсене тинкереççĕ-тинкереççĕ те, татах йĕкĕреш хĕрсем тупнăн, йăлтăр куçĕсене айккинелле шутараççĕ. Неллипе Налина та пуçĕсене ыттисем пăхнă еннелле пăрчĕç. Ак япала! Тепĕр енчи ретре, вĕсемпе тĕлме-тĕлех, икĕ салтак лара парать. Пуçĕсенче кокардăллă кăвак берет. Тĕкĕр çумĕнче тейĕн. Ытла та пĕрешкел сăнлă-çке.

— Ай, пирешкел йĕкĕрешсем! Кур-ха, Нелли,— хăлхинчен пăшăлтатрĕ Налина.

— Чухлатăп, вĕсем çартан таврăнаççĕ. Десантниксем,— тавăрчĕ Нелли салтаксем çине пăха-пăха илнĕ май каччăсен куçĕсемпе тĕл пуласран хытă асăрханса.— Патне ан пыр — чаплăскерсем!

— Мĕн каласси пур, иккĕшĕ те чипер, пăхса ытармалла мар,— хăй шухăшне пĕлтерме васкарĕ Налина та.

— Мана та килĕшеççĕ. Пирĕн класра çукчĕ кунашкаллисем. Тĕрĕс-и?

— Ия.

Енчен те класра çакнашкал маттур та хитре йĕкĕтсем пĕрле вĕреннĕ пулсан-и? Кĕтсех тăр, вĕсем тем тесен те савниленетчĕç. Çапларах килсе тухрĕç шухăшĕсем.

Пăшăлти кĕселĕ юрма хĕрсене пĕр хăрăлтирех сасă чарчĕ.

Малти ретре, алăк çумĕнчи ларкăч çинче вырăн тупнăскер, сиксе тăнă-мĕн те митингра сăмах тытнăн хăлаçланать кăна. Ӳсĕр, паллах.

— Юлташсем, кули савăнас мар?!— тет вăл.— Пирĕн умра икĕ мăшăр çамрăк кăвакарчăн. Ку вăл — ырă палăрăм. Пурнăç ăнни! Ваттисем çапла каланă: икĕ мăшăр йĕкĕреш (пĕри — яшсем, тепри — пикесем) пĕр тĕле килсе

тухсан халăх рехетлĕ, вăрçă-харçăсăр пурăнасса пĕлтерет тенĕ. Пирĕн автобусра шăпах ĕлĕк-авал каланă пек килсе тухрĕ, курăр ав: сылтăм ретре — йĕкĕреш хĕрсем, сулахайра — йĕкĕреш йĕкĕтсем. Саламлар вĕсене! Ур-ра!

Автобусри çынсем пурте алă çупса ячĕç.

— Салам!.. Телей сунатпăр!

Мучи кунпа канăçмарĕ-ха. Татах юмахларĕ, пакăлтатрĕ:

— Туй кĕрлеттермелле — акă мĕн!

Неллипе Налина пуçĕсене пĕкрĕç. Вăтаннипе çынсене куçран пăхаймаççĕ.

— Мучи, аплах йӳтетмĕшленни килĕшӳсĕр,— пӳлет пĕри мучие.— Çамрăксене имэнтерен.

— Çамрăксене?— куçне-пуçне чаркалать мучи.— Вĕсем — Джульеттăпа Ромео тантăшĕсем. Йĕкĕчĕсене те çитĕннĕ тесен юрать: салтакран таврăнаççĕ. Парашютпа сикнĕ! Çав паттăрсен хӳттипе пурăнатпăр та!

Хĕрнĕ старик шĕвĕр пӳрнипе çӳлелле тĕлле-тĕлле илчĕ те, ури шăп çурмаран хуçăлнăн, хăй вырăнне лăк ларчĕ. Куçне хупрĕ.

Ӳсĕртен кулма хушнă. Ахăлтатрĕç вара автобусрисем пĕр кана.

Лешĕ хăйĕннех перет:

— Маçак мучи нихăçан та усăсăр лĕпĕртетмест. Ман чун сисет: туй кĕрлемеллех.

«Чĕлхесене хăйрарăмăр, чунсене вылятрăмăр; çитет» тенешкел, автобус халăхĕ йĕкĕрешсене хăвăрт манчĕ. Кашниех хăйне май тем мĕшĕлтетет. Хăш-пĕрисем пуçĕсене пĕкрĕç, тĕлĕрчĕç. Автобусĕ сăпкари пек ярăнтарать те, ыйăха путмасăр ăçтан тӳсĕн?

Салтак йĕкĕтсем пачах урăхла. Вĕсем куçĕсене яриех уçрĕç те хăюлансах вырăн улăштарчĕç — тӳрех хĕрсем умне куçса ларчĕç.

— Сирĕнпе паллашма юрать-и-ке?

— Ирĕк паратăр-и-ке?— Аллисене тăсрĕç хайхискерсем.— Авиф.

— Акти,— хăйсен ячĕсене пĕлтерчĕç иккĕш те.

Хĕрсен те ирĕксĕрех аллисене парса хăйсене мĕнле чĕннине калама тиврĕ:

— Нелли.

— Налина.

— Алăсем хĕреслĕ пулчĕç!— Авиф тутине йĕрĕлче пек çавракалатрĕ те кăмăллăн кулса ячĕ.

— Мучи курнă пулсан тӳрех çапла калатчĕ: «Туршăн та, тĕрĕс: пĕри качча каятех е авланать».

— Мĕншĕн апла калĕччĕ?— кăсăкланчĕ Нелли.

— Халăхра çавăн пек халап-юмах çӳрет.

— Авиф, эпĕ авланатăп. Мĕн, эпĕ каччă-тĕрĕш мар-и-ке?— йăмăх хура куçĕсене ялтăртаттарчĕ Акти.

— Мĕншĕн пирĕн уйрăм авланмалла тет-ке? Эпĕ те авланатăп. Иксĕмĕр пĕрле çуралнă, иксĕмĕр пĕрле çара кайса килтĕмĕр. Авланасса та пĕрле авланар.

— Иккĕн пĕр харăс авланма сасартăк икĕ хĕр ăçтан тупăпăр-ке?

— Хамăр умрах-иç,— пуçне сĕлтсе илчĕ Авиф.

— Чим-ха, ан васка. Малтан тĕпчер,— тет Акти.— Хĕрсем, ăçта каятăр-ке эсир?

— Хăнана,— йăл-йăл кулкаларĕ Налина.

— Хăш яла-ке?

Нелли ял ятне асăнчĕ.

— Ара, вăл пирĕн ял-иç,— хăпартланчĕ Авиф.

— Пĕлме юрать-и, кам патне-ке?— ыйтрĕ çийĕнчех Акти.

— Кукамай патне. Ун ячĕ Анисия Кирилловна. Хушамачĕ — Пакасьева,— çаплах ăшшăн йăлкăшрĕ Налина.

— Шел, пирĕн урамра мар,— хуйхăрнăн тутине пăркалать Акти.

— Ан кулян,— çурăмĕнчен лăпкать ăна Авиф.— Пĕр ялсем — çав паха.

Актипе Авиф хаваслăн шӳтлесе култарма ăста. Неллипе Налина тутисем шăлĕсене пачах пытараймаççĕ. Йăл та йăл кулаççĕ.

Маттур каччăсем хирĕç пăхса ларни хĕрсен чĕрине савăнтарать, вăрăм çул та сисĕнмесĕр кĕскелет.

## 8

Римма Васильевна учительница сĕтел çинчи календарь листисене кун иртмессерен шав сулахай енне куçара-куçара пырать: çурла уйăхĕ вĕçленсе килет-çке. Ăçта-ши ун юратнă, чи малтан хăй вулама-çырма вĕрентнĕ, кăçал вăтам шкул пĕтернĕ çамрăкĕсем?

Хăш-пĕрисем хăйсен савăнăçĕ çинчен хыпарлама кĕрсе тухрĕç-ха ун патне. Вĕсем, паллах, телейлисем.

Пуринчен малтан Дора кĕрсе тухса кайрĕ.

— Саламлăр мана, Римма Васильевна! Эпĕ — педагогика институчĕн студентки,— терĕ вăл курнăçлансарах.

— Иккĕ çумне иккĕ хушсан, пуриншĕн те паллă — тăваттă пулать. Эсĕ аслă шкула кĕрессе эпĕ пĕлсех тăнă,— савăнчĕ вĕрентекен.

— Тавтапуç сире, Римма Васильевна, пирĕн пуçсене пĕлӳ никĕсне хывса хăварнăшăн.

— Çынна хĕпĕртеттерме пĕлетĕн эсĕ, Дора. Тăрăшса вĕрентĕн. Юлхав вара... чăмласа çăварне хыптарсан та çăтма пĕлмест.

Çав кунах Марека та саламлама тиврĕ учительницăн.

— Римма Васильевна, сахалтан та тепĕр пилĕк-ултă çул чирлеме тăхтăр,— хăйне нихçанхи пек мар хăюллă тыткаларĕ Марек. Çапла каласа вăл университета, медфака, кĕнине пĕлтерчĕ ĕнтĕ.

— Қайран?— ăшшăн кулать кил хуçи.

— Врача тухсан вара сирĕншĕн нимле чир-чĕр те хăрушă пулмĕ. Пĕтĕм пĕлĕве кӳлĕп, сире паха эмелпе сиплесе сыватăп.

— Марек, апла эпĕ нихçан та çут тĕнчерен уйрăлмăп.

— Çĕр çул урлă каçтаратăпах сире.

— Ай-уй, ытла нумай-çке. Аюк, ун чухлĕ пурăнма килĕшместĕп. Хам тус-тантăшсемсĕр кичемлĕх асаплантарĕ мана.

— Мĕн эсир, Римма Васильевна, кирлĕ маршăн пăшăрханатăр. Сирĕн тантăшăрсен ĕмĕрĕ пурин те çĕр хĕрĕх, çĕр аллă çула тăсăлма тивĕç. Қаярахпа çынсем ик çĕр çул та ним мар пурăнма тытăнĕç. Ат. Эсир пустуях хăраса ӳкрĕр.

— Апла пулсан татах хуть. Халăхпа-мирпе виç çĕре çитме те хирĕç мар.

Римма Васильевна сĕтел çине сăмавар пырса лартрĕ. Чей ĕçнĕ май юмахлама та кăмăллă.

Пĕрер чашăк ним шарламасăр ĕçрĕç. Иккĕмĕшне тултарнă самантра Римма Васильевна ытахальтен пек сăмах хушрĕ:

— Марек, ыттисем ăçта вĕренме кĕчĕç-ши? Илтмен-и?

— Игорь ав Горький хулине тухса кайрĕ — карап капитанне вĕренме. Сире вăл Атăл тăрăх е пĕр-пĕр тинĕсре ярăнтарса çӳрĕ акă.

— Тем пекехчĕ.

— Влас Шиманский хамăр хулари энерготехникума, Лена Шерефина çул-йĕр техникумне кĕнĕ. Қавик, Лена, Емил... мĕнле калас, университета кĕме балл çитереймен. Ларис та, Уги те Мускавран пушă алăпа таврăннă. Оньăн та Хусанпа сыв пуллашма тивнĕ.

— Çитет. Чарăнсам, тархасшăн, Марек.

— Эпĕ мĕн... Тĕрĕссине...

— Ах, хывăхĕ куçа тăрăнать.

Римма Васильевнăн чĕри анинчен тем яш чикрĕ. Вăл

кăкăрне икĕ аллипе ярса тытрĕ. Ырă мар хыпарсем унăн чунне сăнă пекех тăрăнаççĕ.

Питĕ ăнланать-ха вăл: пурнăç урапи пурин те пĕр йĕрпе ăнăçлăн чупмасть. Шырланка та кĕрсе ларма тивет, сулăнчăка та тухса ÿкĕн, сĕм вăрманти йăнăш çулпа та кĕрсе каян, авăра сикен. Уçăлман куçпа çырана хыпашлан... Çак пăтăрмахсенче чылай çамрăк çĕнтерÿпе пиçĕхет: пурнăçра хăй вырăнне тупать. Тепри вара питĕнчен шерпет типиччен, ĕмĕр тăршшĕпех, хăйне шырать.

— Римма Васильевна,— каллех чĕнмесĕр тÿсеймерĕ Марек.— Йĕкĕрешсем ялтан университета экзамен пама та килмен.

— Мĕншĕн?

— Вĕсем качча кайнă тет. Акă мĕншĕн!

— Пустуй япала. Ĕненместĕп,— терĕ учительница.

Марека ăсатсан Римма Васильевнăна пăшăрхануллă шухăшсем капкăн пек хĕстерсе лартрĕç.

«Курнăçмаллах вĕсемпе ман»,— кашни ачи сăнарне куçĕ умне ÿкерчĕ учительница.

Акă Неллипе Налина тухса тăчĕç. Вĕсен ашшĕ-амăшĕ ахаль çынсем мар — ученăйсем. Пысăк çынсем патне йăпăр-япăрах ура ярса пусма та кирлех мар пулĕ: хĕрĕсен пĕрремĕш учительницин канашĕшĕн хыпсах тăмĕç.

Оня — ăслă хĕр ача. Шухăш-кăмăл енчен те çирĕп, вăйлă. Хăй тĕллевне паян мар тăк, ыран пурнăçлатех. Уншăн пăшăрханни кăлăхах!

Қавик вара... Çурма тăлăх ача. Ытлашши йăваш. Амăшĕ пек, тупнă телейне ним мар теприне парать.

Ларис пирки мĕн тес? Тăлăх турат мар вăл. Ăна пĕтме памĕç. Уйрăмах унăн пĕрле пурăнакан кукамăшĕ вичкĕн. Çамрăк чух филармонире ĕçленĕ, спектакльсенче питĕ ăста ташланă тет-и вăл. Мăнукĕ ăна пăхнă имĕш. Чăнах та, юрлама-ташлама ăстаччĕ ĕнтĕ. Ыттисене те вăййа тăратма пултараканскерччĕ. Çавăнпа та кукамăшĕ Ларис валли артист çулне суйланă, хĕрĕпе кĕрÿшне те çак шухăша хăнăхтарнă.

Шкула пухусене кукамăш кăна çÿретчĕ. Ăс пама юратнă вăл. Қилтисене вара хăй аллине çавăрса тытнă. Ватă çынна, ĕмĕрĕнче хурапа шурра курса тÿснĕскере, ним хирĕçмесĕр пăхăнаççĕ. Лайăх-и ку? Хăçан мĕнле-тĕр: пĕр чух — аван, тепĕр чух — аплах та мар пулĕ. Хулă ытлашши авсан хуçăлать.

Юрать-ха Ларисăн чунĕнче «эпĕ хам» текен туйăм мăнаçлăхĕ пур. Вăл хăй çулĕнчен пăрăнакан йышшиех марччĕ-ха. Хĕр Қавикпе туслă. Қун пирки учительсем пурте

пӗлетчӗҫ. Тен, вӗсем хушшинче чӑн-чӑн ырӑ юрату хӗмленсе тӑрать? Ҫапла пултӑрахчӗ те. Пӗр-пӗрин аллинчен ҫирӗп ярса тытсан вӗсене вӑйлӑ ҫил аваймӗ.

Уги уйрӑмах хытӑ пӑшӑрхантарать. Ӑна турта хушшинчен кӑларма юрамасть. Ним те тӑваймӑн, ҫурмалла хуҫалнӑ ун пурнӑҫӗ: сулахай ури — ашшӗ патӗнче, сылтӑмми — амӑшӗ килӗнче. Ҫурма тӑлӑхскер пек, ывтӑнать те ывтӑнать ик этем хушшинче мечӗк евӗр, анчах ҫирӗп алла лекмест. Хӑшӗ айӑплӑ? Мӑшӑрсем хушшинче мӗнле хура кушак каҫнӑ? Ютсемшӗн ку — сӗм вӑрман. Ҫакӑ ҫеҫ паллӑ: пуринчен ытларах пулӑшу Угие кирлӗ...

Римма Васильевна ҫӑмӑл пальто тӑхӑнчӗ те хваттерӗнчен тухрӗ. Крыльца вӗҫӗнче сунчӑкне карнӑ май «Ман пата кил-ха!» тесе чӗнекен ҫывӑх сасса илтесшӗн тӑрӑшнӑ пек чарӑнса тӑчӗ. Тен, чӑнах та илтрӗ-и? Унсӑрӑн питӗ васкаса утса каймӗччӗ урам тӑрӑх.

Ҫумӑр лӳшкет кӑна. Кӳлленчӗксенче шыв куҫлана-куҫлана тӑрать. Ҫанталӑкӗ йӗпене куҫать-тӗр.

## 9

Оня Хусантан таврӑнчӗ. Ҫук, пуҫне нимӗн чухлӗ те усман вӑл.

— Мӗнле пурӑнаҫҫӗ? Утаҫҫӗ-и, чупаҫҫӗ-и?! — хаваслӑн чуп турӗ вӑл ашшӗпе амӑшне.

— Экзаменсене ӑнӑҫлӑ тытрӑн эппин? — хӗрӗн савӑнӑҫлӑ сӑн-питне курсан хӗпӗртерӗ ашшӗ.

— Ай, атте, «иккӗ» лартса пачӗҫ мана. Путлантӑм пуҫӗпех!

— Ним те ӑнланмастӑп, — ырӑ мара сиссе ашшӗ сӑнӗ самантрах улшӑнчӗ.

— Кӗ-рейме-рӗм, — ырӑ хыпар пӗлтернӗн сӑмахне татса каларӗ Оня. Вара, шутсӑр ывӑннӑн, диван ҫине лак! ларчӗ. — Ай-ай! Килте мӗнле канлӗ.

— Эпӗ кӗнӗ тесе... куҫусем тап-таса та... — кӑмӑлсӑррӑн мӑкӑртатрӗ амӑшӗ.

— Сан шутупа, анне, ман киле мерчен куҫпа таврӑнмаллаччӗ-и? Е Атӑла пуҫ хӗрлӗ чӑммаллаччӗ-и?

— Кай, кирлӗ мара ан сӳпӗлтет-ха, — аллине хӗрӗ еннелле сулчӗ амӑшӗ.

— Хӑв ӑссӑн ҫӳрерӗн ҫав. Ытла ирӗке ятӑмӑр сана, — ятлаҫкаларӗ ашшӗ. — Шкултан сана питӗ тӗрӗс характеристика панӑ: пулас физик-математик тенӗ, физмата каймa сӗннӗ.

— Мĕншĕн кăмăлсăрланатăр эсир? Килес çул — кĕретĕпех. Питĕ тăрăшса хатĕрленĕп.

— Ненай,— шав лăпланаймасть ашшĕ.

— Эсир манпа пурăнасшăн мар иккен. Апла тăк ыранах çурçĕре тухса вĕçтерĕп.

— Йывăрлăхран хăракансем тĕнче касса çӳреме ухата.

Амăшĕ макăрма тытăнчĕ. Ун шучĕпе, чи юлашкинчен çуралнă ачи — телейсĕр.

Оня тепĕр кунне Емил патне кĕрсе тухрĕ. Иккĕшĕн те пĕр хуйхă. Вăл та университета кĕме балл çитереймен.

— Мĕн тăвас тетĕн?

— Ĕçе кĕресшĕн. Анчах ман тепĕр уйăхранах ят тухать-çке.

Кăмăлĕ хуçăк, сăмах-юмах сыпăçмасть.

Оня урам тăрăх çӳренĕ чух пĕр çурт стени çумне «Халăх сучĕ» тесе çырса хунине вуларĕ. Хĕр кăсăкланма тытăнчĕ. Кĕрсе тухас, уншăн ăна ятламĕç.

Кĕчĕ. Коридорĕ вăрăм. Икĕ айккипе — алăксем. Хĕр кашнинех уçа-уçа пăхрĕ. Пӳлĕмсенче икшер çын ларать. Хайхискер малаллах утрĕ. Кукăртан пăрăнчĕ. Унта, коридор вĕçĕнче,— халăх. Мĕн тăваççĕ ку çынсем? Урам енчи пӳлĕмĕн пысăк алăкĕ уçă. Тӳрех ăнланчĕ Оня: ку этемсем суда килнĕ. Темле ĕç пăхса тухаççĕ пулас. Вăл халиччен ура ярса пусман суд таврашне. Çав тери кăсăкланнипе зала, чи хыçалти сак çине, кĕрсе ларчĕ.

Çынсем, театрти пек речĕпех пукан çине ларса тухнăскерсем, пурте малалла тĕмсĕлнĕ. Унта мĕн пурĕ те пĕр сĕтел, ун хыçĕнче — виçĕ пукан.

Суд пуçланман-ха.

Унччен те пулмарĕ, сасă илтĕнчĕ:

— Тăрăр! Суд килет!

Куна аллине хут-кăранташ тытнă хĕрарăм каларĕ. Вăл сĕтел умĕнче тăрать.

Халăх кĕпĕрленсе ура çине тăчĕ. Часах хыçалтан виççĕн тухрĕç: пĕри — арçын, иккĕшĕ — хĕрарăм. Арçынĕ — судья варринчи пукан çине ларчĕ, унăн икĕ енче — хĕрарăмсем, халăх заседателĕсем.

Судья мĕнле ĕç пăхса тухасси çинчен пĕлтерет. Упăшкипе арăмĕ уйрăлаççĕ-мĕн.

Свидетельсем те пур. Вĕсене тĕрĕссине çеç калатпăр тесе алă пустарса коридора кăларчĕç.

Мĕншĕн уйрăлаççĕ? Юратмасăр пĕрлешмеççĕ-çке?

Суд пырать. Оня каçса кайса итлет.

...Хĕрпе каччă заводри пĕр цехра ĕçленĕ. Каччи — Вася ятлă-мĕн, халĕ ăна судья Василий Иванович тесе чĕнет.

Чипер хĕр ячĕ — Натаси. Юратнă пĕр-пĕрне. «Авланас»,— тенĕ Ваççи. «Ķачча тухатăп сана, юрататăп»,— килĕшнĕ Натаси те. Пĕрлешнĕ, телейлĕ пурăннă. Тепĕр çултан вĕсен ывăл çуралнă. Унтан ытла мĕн кирлĕ? «Вĕренмелле!»— пырса çапать шухăш упăшки пуçне. Тархасшăн. Вася каçхи вăтам шкула çÿреме тытăнать. Натасин вĕренме вăхăчĕ çитмест. Ĕçĕ, ачи, килне-çуртне тирпейлесси — йăлт ун ĕнси çине тиенет.

Вася вĕренет, вĕренет. Ача кипки çăвас хуйхи çук. Апачĕ яланах хатĕр, ларса çи те тухса кай. Ансат пурнăçа хăнăхнă вăл. Вăтам пĕлÿ илсен аслă шкула вĕренме кĕрет хайхискер. Институчĕ ун тăван хулинчен аякра.

Натасие йывăр килет. Упăшки стипенди вĕççĕн çеç пурăнаймасть — килтен пулăшмалла. Арăмĕн халиччен илсе тăнă ĕç укçи хĕсĕкленсех пырать. Ирĕксĕрех тепĕр вырăна, сывлăхшăн сиенлĕ цеха, ĕçлеме куçать. Ķунта укçитенкине аван тÿлеççĕ вара. Çуррине упăшкине куçарса пама тытăнать, килĕнче тыткаламалăх та юлать.

Вĕренет Вася. Пуштă урлă уйăхсерен арăмĕн укçине илсе тăрать. Ытлăн-çитлĕн пурăннă чух пуçа шухă шухăшсем те кĕреççĕ пулĕ çав. Хĕрарăм чĕри, ах, чул мар çав — магнит. Юратнă çынни ăçталла сулăннине йăлтах туять.

Ķилне таврăнсан упăшки шурă куçĕсене ытларах кăтартакан пулать. «Тата икĕ çултан Вася инженера тухать. Мана, вĕренменскере, юратма пăрахрĕ. Мĕн тăвас? Пăхман хĕвеле ирĕксĕр пăхтараймăн. Сисетĕп, ачана пĕччен ÿстерме тивет». Хăй çапла шухăшлать Натаси, анчах ним те шарламасть. Йывăр пулин те вăл хăйĕн уйăхри ĕç укçин тăваттăмĕш пайне перекет кассине хурса пыма пуçлать: кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ. Тен, ачи, ашшĕ пекех, институтра вĕренĕ.

Акă ĕнтĕ упăшки вĕренсе тухать. Вăл — инженер. Анчах кил-йышĕ пурăнакан хулана таврăнмасть, пачах урăх çĕре каять ĕçлеме. Ана ывăлĕ те, арăмĕ те кирлĕ мар. Вĕсене хăй патне куçарассине асне те илмест.

— Çĕнĕ çĕрте пурăнма япаласем кирлĕ,— тет Василий Иванович. Тем çитмен пек, хăй шав хирĕçет, тулхăрать. Тытăнать хайхискер пÿрт ăш-чиккине тустарма.

Çавăн чух вăл арчара арăмĕн перекет кĕнекине курать. Сăлтавĕ тупăнать вара кутăнлашса харкашма. Ķĕнекине арăмне памасть, хăй кĕсйине персе чикет.

Вăл акă арăмĕнчен уйрăлма суда пынă.

— Шанчăксăр хĕрарăмпа тек пурăнаймастăп. Вăл манран вăрттăн перекет кассинче укçа тытать,— çат кăларса

çапать кĕнекине судьясен сĕтелĕ çине Натаси упăшки. Унтан хĕвĕнчен темле хут листи кăларать.

— Уйăрăр пире. Укçана çеç мар, тупрана та çурмалла тăвăр. Эпĕ вĕренме пуçăниччен ĕçлесе илнĕ укçапа туяннă ăна. Институтра та стипендисĕр вĕренмен.

— Эсир мĕн калатăр кун пирки?— ыйтать судья Натасирен.

Мĕнле майпа тата мĕншĕн укçа пухни çинчен вăл питĕ кĕскен пĕлтерчĕ. Урăххи пирки пĕр сăмах та вакламарĕ, пуçне усса çеç тăчĕ.

Эх, хĕрарăм чунĕ темерĕн çав. Халĕ те юратать вăл ĕлĕкхи Ваççана. Усал сăмах вĕçертсе сивĕтесшĕн мар ăна.

Кӳршĕ-аршăсене, пĕрле ĕçлекенсене суда кӳнтелене чĕнтернĕ. Вĕсене итлеме кăмăллă пулчĕ Оньăна. Вĕсем каланă тăрăх, Натаси тӳрĕ кăмăллă, ĕçчен хĕрарăм. Ывăлне йĕркеллĕ ӳстерет. Упăшки ав çĕнĕ арăм тупнă-мĕн.

«Халăх сучĕ мĕн йышăнĕ-ши?»— кăсăкланать Оня. Çавна илтмесĕр каймастех килне. Тата вăл хăйне судья куç хывнине асăрхарĕ. Мĕншĕн? Апла та капла шухăшлакаласа ларчĕ хĕр.

Кĕçех судья суд мĕн йышăннине вуласа пачĕ.

Натасин перекет кассине хурса пынă укçине те, килти япалисене те йăлтах çурмалла уйăрма йышăннă. Ывăлне? Ăна пайсăр хăварнă, пĕр пус та паман.

Оня судран тарăхса тухрĕ. Суд йăнăшнă пекех туйăнать. Натаси упăшки — ниме те тивĕçсĕр, путсĕр этем. Ăна çул тăршшĕпе ятласа пынă хыççăн Оньăн юриста тухас ĕмĕчĕ амаланма тытăнчĕ.

Судра итленĕ ĕç пирки Оня каçхине Емилпе сӳтсе яврĕ.

— Арăмĕн пĕлĕвĕ сахал. Вĕреннĕ çынна, паллах, унпа кичем. Мăшăр мар вĕсем,— тет Емил.— Хăвах шухăшла, Оня, халĕ наукăра, искусствăпа литературăра мĕн чухлĕ çĕнни. Малтан çумри çынпа калаçас-тавлашас килет-тĕр?

— Ай! Тĕрĕс мар пуплен, Емил,— лаплаттарса хучĕ Оня çиллессĕн.— Эпĕ йăлтах Натасипе ывăлĕ майлă. Укçине те, туприне те виçĕ пай тумаллаччĕ хуть. Упăшки ун — сысна! Акă кам. Малтан, пĕрлешнĕ чух, иккĕш те вĕренменскерсем пулнă. Ķайран мĕншĕн вăл арăмне те институт пĕтерттермен?

— Çакна пĕлетĕп тата эпĕ: чун ăса пăхăнасшăнах мар.

Оня та килĕшет кунпа.

«Аслисен ырри-усалли пире, çамрăксене, пурăнма вĕрентет. Курма, хаклама пĕлмелле пирĕн пурнăçа»,— шухăшларĕ хĕр.

— Оня, военкомат мана çар шкулне вĕренме ярать.

Ыранах тухса каймалла,— сăмаха урăх еннелле пăрчĕ каччă.

— Ай, мĕнле пит сасартăк?— Оня пĕр савăнчĕ, пĕр хурланчĕ.

Çур çĕрччен çÿрерĕç вĕсем урамран урама куçса. Крыльца умĕнче Емил Оньăна чуп турĕ.

— Çыру çырăн-и, Оня?— хытах пăчăртарĕ хĕре Емил.

— Хăв çырсан, паллах, парăмра юлмăп.

Юлашки тĕл пулу хыççăн кунсем сахал мар иртрĕç. Халĕ ĕнтĕ Емил хулара çук. Нумай та çÿремен унпа, çапах та тем çитмест пек Оньăна — чунĕнче пуш-пушă.

Оня татах суда кайрĕ. Ăна коридорта судья курчĕ те хăй патне чĕнсе кĕртрĕ.

— Мĕн туса çÿретĕр эсир кунта?— ыйтрĕ вăл.

— Эпĕ юрист пуласшăн, анчах института кĕреймерĕм, пĕр балл çитеймерĕ. Кунта мана, хам та пĕлместĕп, тем çавăтса кĕртрĕ.

— Хушаматăр мĕнле-ха сирĕн?

Оня хăйĕн хушаматне каларĕ.

Судья чылай калаçтарчĕ ăна. Килĕштерчĕ вăл хĕр ачана. Вара çапла каларĕ:

— Оня Соловьева, пире секретарь питĕ кирлĕ. Килĕшмĕр-и ĕçлеме? Института кăçалах заочнă кĕме май пур. Рекомендаци парăпăр.

— Ĕçĕ мĕнлескер-ши?

— Судра калаçакансен сăмахĕсене çырса пымалла.

Килĕшрĕ хĕр. Халĕ Оня — халăх сучĕн секретарĕ.

Килĕнче савăнăç. Емил çыру янă. Вăл Атăл тăрăхĕнчи пĕр пысăк хулара иккен. Танк училищинче вĕренет. Çыру вĕçĕнче «чуп тăватăп» тесе çырать. «Юрататăп» тени çук. Пĕрле çÿренĕ чух та каламарĕ çав сăмаха, çырăвĕнче çыринччĕ иçмасса. Хăй патне тус-тантăшĕ пырсан вăл ыйтмасăр тÿсеймерĕ:

— Каччă чуп тăвать тейĕпĕр. «Юрататăп» тесе каламасть. Мĕнле шутлан эсĕ, Ларис, вăл чăнах та юратмасть-ши?

— «Юрататăп» тесе калама савман çын та пултарать. Юратнине чунпа сисме хушаççĕ-çке.

— Çапах та, Ларис, ай, мĕнле илтес килет çав асамлă сăмаха! Сана Кавик «юрататăп» тесе калать-и?

— Минутсерен.

— Çу пек ирĕлетĕн пулĕ?

— Ирĕлмесĕр,— Ларис пит-куçĕ хĕвел шевли ÿкнĕн йăлтăртатрĕ.— Мансах кайнă. Неллипе Налина качча тухнă тет.

— Чӑнах-и? Ай, качча каймаллах ӳссе ҫитӗнтӗмӗр-ши вара, Ларис?— йӗрсе ячанни кӑна Оньӑн.— Ку эпир ватӑлма тытӑннине пӗлтерет-иҫ!

— Ярӑм ҫиппи пӗр татӑлсан, кӗтсех тӑр, пӗтӗм шӑрҫи юхса тухать.

## 10

Лапамрах вырӑнта ларакан йӑмраллӑ ял курӑнса кайрӗ кантӑкран.

— Ав кукамайсен ялӗ,— кӑлт тӗкрӗ Нелли Налинӑна.

— Ҫитрӗмӗр-и?

Машинине шофер пахчасем хыҫӗнче чарчӗ.

Налинӑпа Нелли автобусран тухрӗҫ те малалла ларса кайма пуханнӑ ҫынсем хушшипе иртрӗҫ. Техӗмлӗ сывлӑш кӑкӑра уҫса ячӗ.

Ял ҫулӗ ҫырма урлӑ выртать. Унӑн тӗпне анса хӑпарсан анат кас урамне илсе ҫитерекен сукмак сулахаялла пӑрӑнать. Вӑл сӗлӗ калчи хушшипе сарса хунӑ хура тӑла евӗр курӑнать. Ҫынсем ҫӗрне те, тыррине те уяман иккен. Таптанӑ уярта та, ҫумӑрта та. Йӗкӗреш хӗрсем ҫав утма ҫул ҫине тухрӗҫ.

— Асӑрхамарӑн-и, Нелли, леш салтаксем те пирӗн хыҫран анчӗҫ,— пӑшӑлтатрӗ Налина.— Вӗсем чӑнах та кукамайсен ялӗнче пурӑнаҫҫӗ пулас.

Салтаксем ҫул хӗрринче юсанкаласа тӑрса юлчӗҫ.

— Ох, ҫинҫе пилӗклӗскерсем, кам телейӗшӗн ӳсрӗрши?— хӗрсем хыҫҫӑн тӗмсӗлсе пӑхрӗ Акти.

— Пирӗн телейшӗн,— пат татса хучӗ Авиф.

— Эпӗ пӗтрӗм, тӑванӑм. Тарӑн кӳлле анса кайрӑм пуҫӗпех.

— Вӗсенчен пӗри туртса кӑларатех.

— Ох, юратса пӑрахрӑм,— хуллен кӑна ши! шӑхӑрчӗ Акти.

— Хӑшне-ке?— тӗпчет Авиф.

— Сылтӑм пит ҫӑмарти ҫине ҫарӑк вӑрри пек тур палли ҫыпӑҫтарнине. Ҫавна татса илсе хам ҫамка ҫинче ӳстерӗттӗм.

— Мана та питӗ килӗшрӗҫ вӗсем,— куҫне йӑлтӑртаттарчӗ Авиф.— Ытла та кӑмӑллӑскерсем.

— Эсӗ хӑшне юрататӑн-ке?— пӑшӑрханса ыйтрӗ Акти.

— Иккӗшӗ те вӗсем пирӗн пекех: пӗр сӑнлӑ, иккӗшӗ те чипер...

— Тӗрӗссине кала, Авиф!

— Ан тулаш. Эсӗ тур паллиллине юрататӑн пулсан ӑнах юрат. Тепри, Налина ятли, мана пултӑр.

Йӗкӗреш хӗрсене суйласа илнӗ хыҫҫӑн салтаксем вӗсем хыҫҫӑн вӗҫтерчӗҫ. Ҫарта утма-чупма хӑнӑхнӑскерсемшӗн ҫул вӑрӑмми ним те мар. Самантрах хуса ҫитрӗҫ хӗрсене, вӗсен чӑматанӗсене йӑпӑр-япӑр ярса тытрӗҫ.

— Аллӑрсем хӑпарса тухӗҫ,— текелерӗҫ хӑйсем.— Йывӑр япала ҫӗклесси — арҫын ӗҫӗ.

Хӗрсемшӗн кулса пултӑр: каччӑсен кашни сӑмахӗ хаваслантарать.

Хӗвел тӳпене хӑпарса ҫитрӗ: хӗртет, пӗҫертет, пит ҫӑмарти тӑрӑх тар юхтарать. Утма йывӑрланчӗ.

— Привал!— кӑшкӑрса ячӗ Акти пӗрисен пахчи патне ҫитсен.

— Есть привал!— терӗ Авиф ҫар йӗркине аса илсе.

Пурте тӑпах чарӑнчӗҫ.

Акти чӑматанӗсене ҫӗре лартса сасартӑк Неллие пилӗкӗнчен ярса тытрӗ те карта вӗрлӗкӗ ҫине ҫӗклесе лартрӗ. Авифӑн Налинӑпа пӑрӑнмалла ӗнтӗ. Вӑл хӗре картан тепӗр сыпӑкӗ патне ҫавӑтса пычӗ. Тӑванӗ пекех, ӑна та кашта ҫинче вырӑн тупса пачӗ.

Ҫанакан хӗрсем умӗнче йӗкӗчӗсем хӳхӗм ут евӗр тӑпӑртатса тӑраҫҫӗ. Пӗр мӑшӑрӗ мӗн калаҫни теприне пач илтӗнмест.

Актипе Нелли кӑмӑлӗсем иккӗшӗн те ҫӗкленӳллӗ. Ҫалӑн, вӗсем мамӑк пӗлӗт арки ҫине ларнӑ та тӳпе ҫеҫен хирӗ тӑрӑх ярӑнса ҫӳреҫҫӗ.

Ӑнсӑртран тупнӑ ӗнче ӳкерсе ҫухатасран хӑранӑн Акти хӗр ҫине куҫне мӑчлаттармасӑр пӑхать.

— Мӗншӗн ҫав териех пӑхан ман куҫран? Ҫӳлти ҫӑлтӑра курасшӑн-им?— кулса ярать хӗр.

— Ҫуртӑм ӗнтӗ. Питӗ-питӗ ҫӳлтеччӗ вӑл. Халӗ ак сикрӗм те ятӑм тытрӑм. Ӗнтӗ ӗмӗрне те вӗҫертессӗм ҫук.

— Ҫуррине мана парӑн-и?— шӳтлесе илет Нелли.

— Тархасшӑн,— хӗре ыталама кармашать Акти.

— Юрамасть,— чарать ӑна Нелли.

Хӑйсем иккӗш те каҫса кайсах ахӑлтатаҫҫӗ.

Авифпа Налина — ҫӗр ҫинче. Ҫалаҫӑвӗ те урӑхларах вӗсен.

— Сире ялта савнисем кӗтеҫҫӗ-тӗр-ха?— хӑйне ним чухлӗ те пӑшӑрхантарман пек ыйтрӗ Налина Авифран.— Эпир кунта чарӑнса тӑнӑшӑн кӳренеҫҫӗ акӑ.

— Ма ун пек шухӑшлан-ке? Хӑвӑр савнисем хулара юлнӑран-и?

— Эпир варли тупма ӗлкӗреймен-ха.

— Çара кайиччен эпир те сирĕн пек сарă вăрăм çивĕтлисене тупаймарăмăр,— Авиф хĕр çивĕтне аллипе якатса ачашласа илчĕ.— Пирĕн класри хĕр ачасем пурте, арçын траккасем евĕр, çӳçĕсене кастарса çӳретчĕç.

Пĕр кана иккĕшĕ те чĕнмерĕç.

«И-и-и! Ти-ти-ти!»— юрларĕ пĕр кайăк пуç тăрринче. Авиф çӳлелле пуçне каçăртрĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Салтак саламĕ сана, тăри тусăм!

— Эсĕ юмахçă пекех.

— Юмахçă мар та, çапах эпĕ, чиперккеçĕм, тăри чĕлхине лайăх пĕлетĕп. Унпа час-часах пуплетĕп.

Кайăк юррине тимлĕн итлекен Авиф сасартăк кулса ячĕ, вара каллех тăрипе юмахланçи турĕ:

— Чăнах-и-ке? Сана килĕшет-и-ке? Аван!

— Мĕн тет тăри?— каччă урапи çине ларма пикенчĕ Налина.

— Арăм ту çак хĕртен. Телейлĕ пулатăр тет.

— Тĕрĕсех-и?— йăл-йăл кулчĕ Налина.

— Тура пур,— Авиф кулкаласа мăн асаттесем пек юри хăй çине хĕрес хучĕ.— Качча тух мана чăнах, Налина.

— Юрĕ тейĕп те, вара мĕн курса тăрăн?

— Савăнăп!— ташша яра пачĕ салтак.— Эпĕ сана питĕ-питĕ юратса пăрахрăм. Атьăр тӳрех пирĕн пата. Аттеанне умне пырса тăрăпăр та пил ыйтăпăр.

— Эпĕ хирĕç мар. Анчах хăшĕ-ха ман упăшка? Арпаштарăп сана, сире тăванăрпа иксĕре пăтраштарса ярасран хăратăп-çке.

— Эпĕ — Авиф.

— Çамку çине çырман.

— Çырнă. Пăх акă!— Авиф пуçĕнчи беретне хыврĕ те аялалла туртса вырттарнă çӳç пайăркине сирчĕ. Налина ун çамки çинчи çĕвĕке курчĕ.— Пĕчĕк чух лаша çинчен ӳкнĕ эпĕ: чул катрамĕ çинех персе аннă. Юн юхрĕ. Тепле пуç купташки сыхланса юлчĕ. Унччен пире анне те уйăраймастчĕ. Ман ала тунине хăю е çип çыхатчĕ.

— Çак самантран пуçласа çӳçне вирелле тураса çӳре. Юрĕ-и?

— Юрĕ. Эппин, качча тухатăн мана?

— Эсĕ — манăн, эпĕ — санăн.

Авиф хĕре пилĕкĕнчен икĕ аллипе тытрĕ те тутинчен чăп! чуп туса илчĕ. Налина та парăмра юлмарĕ, пуçне берет тăхăннă хура куçлă салтака măйĕнчен ыталарĕ.

Каччă кĕсйинчен тура кăларчĕ те çӳçне вирелле тураса каллех берет тăхăнчĕ. Халĕ вăл, асамат кĕперĕ евĕр, темиçе тĕспе ялкăшать: кителĕ — симĕс, тельняшки — кăвак-

па шурă йăрăм-йăрăм, калпакĕ — сенкер. Ун çинчи эмблеми — ылтăн тĕслĕ.

Актипе Нелли часах çĕнĕ хыпар илтрĕç: Авифпа Налина мăшăрланаççĕ.

— Налина, эпĕ мĕнле вара? Мана хăраххăн хăваратăн-и?— хурлăхлăн пăхрĕ ун çине Нелли.

— Мĕншĕн хăраххăн? Эпĕ саншăн мăшăр мар-и-ке?— пушмак кĕлисене салтакла шаклаттарса хĕр патнелле аллине тăсрĕ Акти.

— Эсĕ... мĕн-и вара?— ним калама аптрарĕ Нелли.

— Юрататăп сана, тур паллиллĕ пикеçĕм! Авланатăп! Килĕшетĕн-и-ке мана качча тухма?

— Килĕшетĕп!

Авиф кĕвĕллĕн шăхăрма тытăнчĕ. Чăваш ялĕ хыçĕнче «Амур хумĕсем» чӳхенсе кайрĕç. Çав хумсемпе хавхаланса Налина та «ля-ля-ля» тесе юрласа ячĕ. Аллисем кайăк çуначĕ евĕр хускалса илчĕç. Акă каччă хĕре пилĕкĕнчен ярса илчĕ те вальс кĕвви майăн çавăрма тытăнчĕ. Вĕсем хыççăн Неллипе Акти те ташша тухрĕç. Пулмин ара кунта оркестр. Çумра юратни пур чух чунра пин хĕлĕх янăрать. Мĕн тери ырă! Юмах тĕнчине лекнĕн туять кашни.

Таса юратăва курса тăван тавралăх та савăнать. Унсăрăн хĕвелĕ ăшшăн лăпкамĕччĕ çамрăксене. Пусси-пуссипе тинĕс евĕр сарăлса выртакан тыр-пул тăрăх хаваслăн чупмĕччĕç çил ачисем. Сĕткенпе тулса çитнĕ йывăр пуçлă пучахсем те пуç таймĕччĕç ырă сунса. Чылай инçетри катасем, умри сад пахчинче ӳсекен панулмиллĕ улмуççисем кăкăрĕсене усăлтармĕччĕç вĕсенне.

Уй-хир-и? Манман вăл, çара кайиччен пусăсем тăрăх трактор çӳретнĕ, çĕре сухаласа чĕрĕлĕх панă çак икĕ йĕкĕте. Кĕтет колхозăн аслă хирĕ хăйĕн паттăрĕсене, вăтам шкултах тракториста тухнăскерсене.

Улăхĕ-çаранĕ астумасть-и-ха тата çак хĕрсене, Анисия Кирилловнăн пĕчĕк хăнисене? Унăн чĕвĕлти мăнукĕсем чечек пухса кăшăл çыхатчĕç те пуç тăррине лартатчĕç. Чупнă май чечек кăшăлĕ айĕн сапаланса тухнă вăрăм сарă çӳçĕсем вĕçкелесе çеç пыратчĕç. Унтанпа нумай та вăхăт иртмен пек туйăнать. Ӳссе çитĕнме те ĕлкĕрчĕç — хĕр шутне кĕчĕç ав.

Пахча хыçĕнчи çеремлĕхре вальс çаврăнакансем чăрăнман-мĕн-ха — акă хуçкаланса ташлама тытăнчĕç. Мĕнех, «шейк» ташă çапла хушать. Тăпăрт-тăпăрт тăпăртаттараççĕ урисемпе, çат-çат! çупса илеççĕ алă тупанĕсемпе. Юрать-ха карта хушăкĕнчен усал куççем пăраламаççĕ.

Ĕмĕр тăршшĕпех çакнашкал вальс кĕввипе çавра çил

манерлӗ тӗрлеттерсе ҫавrӑнӗччӗҫ е алли-урисене, ҫурта пек пӳ-сийӗсене «шейк» ташласа вылятӗччӗҫ... Уйрӑлас килмест нихӑшӗн те. Уйрӑлсан сасартӑк пӗр-пӗрне ҫухатӗҫ, кунтан хӑрушши мӗн пултӑр ҫак икӗ мӑшӑршӑн? Юрать ҫийӗнчех шанчӑк паракан ҫирӗп шухӑш ҫуралчӗ. Хайхискерсем ташлама чарӑнаҫҫӗ те чӑматанӗсем ҫине ларса заявлени ҫыраҫҫӗ. Ҫула май ӑна ял Советне кӗрсе парса хӑвараҫҫӗ.

— Шӑп тепӗр уйӑхран ҫырӑнтаратпӑр. Унччен кӑмӑлӑрсене тӗрӗслӗр.

— Пирӗн кӑмӑлсем — ӗмӗрлӗхе! — теҫҫӗ ҫамрӑксем.

Тавлашса ҫӗнтерейӗмӗн: саккун ҫапла хушать.

Акӑ вӗсем урампа утаҫҫӗ: ҫар тумне тахӑннӑ яшсемпе хур акӑш евӗр хитре икӗ хӗр. Пӑхса ытармалла мар, ытла килӗшӳллӗ. Ҫашни тӗл пулаканах сывлӑх сунаҫҫӗ хӑйсем. Ҫыннисем ҫавrӑнса тӑрсах ӑсатаҫҫӗ вӗсене. Пӳртрен асӑрхаканни кантӑкне уҫсах пӑхать. Илеме кирек кам та юрататъ ҫав.

— Ҫамсем пулчӗҫ ара? — ыйтать пӗри.

— Такамсем. Хальхи ҫамрӑксене паллайӑн-и?

Палласа илекенни те тупӑнчӗ.

— Актипе Авиф, Ҫӑвакал Мӗтри ывӑлӗсем, — терӗ вӑл хӑй пӗлнипе мухтанса. — Ҫартан майрасем илсе таврӑнаҫҫӗ-няк.

Йӗкӗтсем хӗрсене хӑйсенчен хӑпӑтмарӗҫ. Ҫалинккe уҫса тӑваттӑн кӗчӗҫ картишне. Тӳрех вӗсем алкум вӗҫӗнче ывӑҫпа тырӑ сапса тӑракан амӑшне курчӗҫ. Ун умӗнче чӑх-чӗп кӗшӗлтетет.

Шашулкка сассине илтсе амӑшӗ ялт! пӑрчӗ пуҫне хапха еннелле.

— Анне!

— Анне, эпир таврӑнтӑмӑр! — чӑматанӗсене хапхапа пӳртум хушшине сарнӑ хӑма ҫине лартрӗҫ те амӑшӗ патнелле ыткӑнчӗҫ Актипе Авиф.

— И-и-и ара!.. Ывӑлӑмсем-ҫке!.. — Чӗпсем валли тыр илсе тухнӑ пуракӗ хул айӗнчен шуса тухса шап турӗ ҫӗре. Амӑшӗ кӗҫех ывӑлӗсен ытамне кӗрсе ӳкрӗ. Ӑна иккӗшӗ икӗ пит ҫӑмартинчен чуп туса илчӗҫ. Вара каялла чакса хӗрсем ҫумне пырса тӑчӗҫ.

— Ашшӗ!.. Ӑҫта эсӗ?!.

— Ха, лутра кӑвакал. Мӗн кӑшкӑран?! — илтӗнчӗ ашшӗ сасси ҫенӗкре.

— Тух часрах, — чӗнет ӑна арӑмӗ. — Ҫур ав!

— Ха, лутра кӑвакал, ҫитрӗр пулать? — Вӑл васкамасӑр утса пырса ывӑлӗсене ыталарӗ те ҫурӑмӗсенчен лӑп-

ла́п тутарчĕ. Унтан пĕр утăм каялла чакрĕ çеç, юпа пек шак хытса тăчĕ, куçĕ чарăлса кайрĕ. Ытла тĕлĕнмеллеçке: ывăлĕсем пĕр сăнли çитмест, вĕсем çумĕнчи хĕрсене те пĕр-пĕринчен уйăрса илмелле мар.

— Мĕн мурĕ-ке, лутра кăвакал? Тур çырлах!.. Амăшĕ, эпĕ тĕлĕкре мар-и? Хам курнине хам ĕненместĕп. Ҫил-ха, чĕпĕт мана.

— И-и-и, ара, çывăрмастăн-ха. Ытлашши ан катăклан.

Амăш чĕри сисĕмлĕ çав. Хăй çуратса ӳстернĕ ачисене витĕр курать. Ывăлĕсем çак хĕрсене ахальтен çавăтса килменнине туйрĕ. Пикисем те йĕкĕрешсем иккенне ăнкарчĕ. Вăл пурне те самантлăха çыхса лартнă тĕвве салтса яма васкарĕ:

— И-и-и, ара, мĕнле чечексем тупнă эсир? Чăнах, пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла. Ах, пĕлесчĕ, хĕвел питтинче кам ячĕпе çеçке çурнă-ши?

Амăш сăмахĕ Авифа хавхалантарса ячĕ.

— Пирĕн ятпа,— хушса хучĕ вăл.

— Куçем пирĕн юратнă хĕрсем, пулас арăмсем. Ҫырăнма ял Советне хут кĕртсе хăвартăмăр... Йышăнăр-и, йышăнмăр-и? Юратăр-и, юратмăр-и — сирĕн ирĕкĕр,— тăванĕ пуçланă сăмаха вĕçлерĕ Акти.

— И-и-и, ара, мĕнле йышăнмастпăр пулĕ? Йышăнатпăр.

— Ха, лутра кăвакал!.. Эсир юрататăр пулсан пирĕн мĕншĕн юратас мар-ке? Атьăр пӳрте,— чĕнчĕ ашшĕ.

Хăрарах та вăтансарах тăнă Неллипе Налинăна аранах чун кĕчĕ. Васкамасăр хăпарчĕç крыльца пусми тăрăх. Чăматанĕсене алкумне лартса хăварчĕç.

Амăшĕ арчине хăпăл-хапăл уçса килте тĕртсе тунă кавир тĕркине кăларчĕ те урам енчи сак тăрăх кустарчĕ. Вара çав кавир сарнă сак çине лартрĕ чиперккесене. Унтан тытăнчĕ хайхискер пӳртре кумма: апат-çимĕç хатĕрлемелле.

Ашшĕ валли те ĕç тупăнчĕ: крыльца айккинче çакăнса тăракан кăмкана шыв тултарчĕ.

— Ха, лутра кăвакал, çăвăнăр, çул тусанне тасатăр,— тет вăл.

Куçĕсене хĕскелесе йăл-йăл кулкаласа илчĕç ывăлĕсем, çăвăнма пилĕк таран хывăннăскерсем. Вĕсене ашшĕн çынна кӳрентермен йăли, «лутра кăвакал» тесси, халĕ те манăçа тухманни хĕпĕртеттерет.

Амăшĕ ывăлĕсем çăвăнса тирпейленнĕ хушăра вăхăта усăсăр ирттермерĕ. Вăл систермелле мар пикесене вăлтрĕ те вăлтрĕ. Мĕн кирлине йăлтах пĕлчĕ. Хĕрсем — йĕкĕреш-

сем иккен, хӑйсен ялӗн мӑнукӗсемех. Кукамӑшӗ — ялти ятлӑ ҫын, ырӑ кӑмӑлласкер. Кукашшӗ, Хир Мӗтри, пӗлтӗр ҫӗре кӗчӗ. Пулас кинӗсем такам ачи-пӑчи марришӗн питӗ савӑнчӗ кил хуҫи хӗрарӑмӗ. Хӗрсен ашшӗпе амӑшӗ — вӗренӑйсем. Ытла пысӑк ҫын ачисем пулни чуна кӑшт шиклентерет-ха, паллах. Ҫавӑнтах пуҫне ырӑ шухӑш та лӑпкать: «И-и-и, ара, ман ӑмӑрт кайӑксене тиркеймӗҫ-ха. Ҫамрӑк. Вӗсен кунӗ малалла. Май килсен профессора та, академика та тухӗҫ».

Неллипе Налина хӑйсен каччисен амӑшӗ ӑшӑ кӑмӑллӑ ҫын пулнӑшӑн хӗпӗртерӗҫ.

— Ан вӑтанӑр, килти пек пулӑр. Сире кунта никам та кӳрентермест,— шав йӑпатать хӗрсене пулас хунямӑшӗ Рухиме. Унӑн ырӑ кӑмӑлӗ уҫӑлсах пырать. «Икӗ кин пӗрпӗрне кураймасӑр пурӑнаканччӗ. Ҫусем, йӗкӗрешсем, хирӗҫес ҫук пуль-ха»,— шухӑшлать вӑл. Пӑлтӑра ҫу илме тухсан упӑшкине кӑчӑк туртса илчӗ те каларӗ:

— Ашшӗ, пирӗн кин пулмалли хӗрсем урӑх никам та мар, шӑп та шай ҫаксем. Хир Мӗтри арӑмӗн мӑнукӗсем вӗсем. Епле чипер иккӗшӗ те. Ывӑлӑмӑрсене качча илсе парӑпӑр та пурӑнӑпӑр шӑкӑл-шӑкӑл.

— Ха, лутра кӑвакал, эпӗ — сан майлӑ: ҫулӗсем ҫитнӗ, авлантарӑпӑр ывӑлӑмӑрсене. Ӗҫӗ те пӗтнӗ. Тен, ялтах пурӑнӗҫ. Чӑнах, мӗншӗн килтен тухса каймалла тет-ке?

— Итле-ха, ашшӗ. Тен, кашни мӑшӑрне ҫурт лартса парӑпӑр?

— Апла та юрать, лутра кӑвакал.

— Мана кинсемпе ҫӑмӑлтарах пулӗ. Пире вӗсем мӑнуксем ҫуратса парӗҫ, хӑйсем пекех йӗкӗрешсем. Ҫӳрӗпӗр ял тӑрӑх ҫавӑтса.

Улттӑшӗ те сӗтел хушшине вырнаҫсан амӑшӗ ачи-пӑчине чарӑнмасӑр сӑйларӗ. Апат-ҫимӗҫӗ калама ҫук тутлӑ, сӑмах-юмахӗ вара тата тутлӑрах — пыл пек пылак. Сарӑ мӑйӑр килӗшӳллӗн шӗкӗлченет: шӳт, ҫутӑ кулӑ. Савӑнӑҫ ҫак кил-йыша хӑйӗн ылтӑн укаллӑ пурҫӑн пӗркенчӗкӗ айне пухнӑ тейӗн.

Неллипе Налина пӑшӑрханма тытӑнчӗҫ: вӗсен кукамӑшӗ патне ҫитмелле-ҫке. Каччисем хӗрӗсене килтен кӑларса ярасшӑн мар, пуҫӗпех хӑварасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ.

— Халӗ-и?.. Вара-и?.. Пирӗн пур пӗрех пӗр хӑма тӑрӑх утмалла-ке. Юлӑр ӗнтӗ,— Налинӑна тилмӗрет Авиф.

— Тӗрӗс,— ҫирӗплетет тӑванӗ шухӑшне Акти.— Нелли, Налина, ан та туртӑнӑр, кӑларса ямастпӑр.

— Чимӗр-ха, ачамсем,— тавлашӑва хутшӑнчӗ амӑшӗ.— Авалтан пыракан йӑла-йӗркене пӑсмӑпӑр.

— Ха, лутра кăвакал!.. Эпир ыранах Анисия Кирилловна тăхлачă патне хăтана кайăпăр,— тет ашшĕ.

— Апла тесен тăхтама юрать.

Неллипе Налина кукамăшĕ патне хăйсен каччисемпе кăштăртатса кĕрсе тăчĕç.

— Юратнă кукамай, салам! Сывлăху мĕнле?

— Ķусем — эпир, кукамай.

— Эпĕ сире кĕтни-и!.. Ķантăк витĕр пăха-пăха куç çути сÿнчĕ,— мăкăртатать кукамăшĕ саппун аркипе питне сăтăркаласа.

Çамрăксен кунта та сĕтел хушшине ларма тиврĕ. Ķалаçăвĕ те каччăсен килĕнчи пеккиех пулчĕ. Ķукамăшĕ Неллипе Налинăна ăнланать: вăл хурапа шурра курнă çын. Чечек çеçки çинчи капăр тумлă лĕпĕшсене тытса çунаттисене татĕ-и? Мăнукĕсем Ķăвакал Мĕтри кил-йышне лекнĕшĕн савăнмалла кăна. Унашкал йĕркеллĕ çынсем сайра.

Авифпа Акти çур çĕр умĕн тин тухса кайрĕç. Хĕрсем иккĕшех тăрса юлчĕç. Халь тем çинчен те пуплеме юрать. Чунĕ пăшăрханса ÿкнĕ Нелли çапла каларĕ:

— Эпир, Налина, университета экзамен тытма каймастпăр-и вара?

— Намăс курма-и? Пур пĕрех кĕрейместпĕр,— терĕ Налина.— Шкулта сочиненисене япăх çыраттăмăр-çке.

— Ķачча тухатпăрах-и?— пĕлесшĕн вăл тăванĕн шухăшне.

— Эпĕ Авифсăр пурăнаяс çук. Çав тери юрататăп ăна.

— Аттепе аннене те пĕлтерместпĕр-и?

— Систерсен пире паянах кантрапа çыхса хураççĕ те киле илсе каяççĕ.

— Апла тăк шарламăпăр,— çирĕппĕн сăмах хушрĕ Нелли.

## 11

Мускавран тухнă пуйăс шпал хыççăн шпал хăварса рельссем тăрăх ыткăнать. Вакунра ларса пыракан пĕр хĕр хуйхи-суйхине пĕлесчĕ ун. Пир-авăр институтне вĕренме кĕрейменскере кăра çиллĕллĕ амăшĕ килне те кĕртмĕ ĕнтĕ: «Харам пыр, санран хăтăлса пулĕ-и?!— тейĕ. Кулянаканскерĕн хăлхинче ятлаçнă сасă янăрать. Мĕн чухлĕ куççуль тăкмарĕ-ши Уги?! Пичĕ-куçĕ шыçса тухрĕ. Тарăн шăтăка сикме те хатĕр вăл. Темле йывăр пулсан та, çамрăк чунăн пурăнас килет.

Пуйӑс Шупашкара ирхине ҫитрӗ. Паллах, Угие кӗтсе илме никам та пыман.

Акӑ хваттер алӑкне уҫрӗ. Шӗкӗр турра, амӑшӗ киленче ҫук, ӗҫе кайнӑ пулас. Уги чӑматанне лартрӗ те урама тухса сирпӗнчӗ. Пӗчченех Атӑл леш енне каҫрӗ. Ҫурла уйӑхӗн юлашки кунӗсем пулсан та, ҫыранти хӑйӑр сивӗнмен-ха, шыв та лӗп — чӑпӑл тума та юрать. Хӗвелӗн тӗссӗрленсе пыракан шевли те ҫу каҫа вӑйсӑрланса ҫитеймен иккен-ха.

Пӗчченех рехетленчӗ хӑйӑр ҫинче Уги. Кӗтмен ҫӗртен ун патне пӗр арҫын пырса ларчӗ. Вӑл ҫу каҫипех ҫут ҫанталӑк ырлӑхӗпе киленни таҫтанах паллӑ — кӑкӑрӗ, пӗҫҫисем хуп-хура. Хырса тасатнӑ янахӗ — путӑклӑ, мӑйӑхне те хырнӑ. Сӑмсине, пит ҫӑмартисене унӑнне хура тут пусса илнӗ, ҫӳҫне йӗс шывӗпе сӑрланӑ тейӗн — сап-сарӑ. Ҫамки урлӑ ҫип ҫапнӑн — виҫӗ йӗр. Тути айккисенче — пӗрер хуҫӑк. Ку тем тесен те Уги тантӑшӗ мар, сахалтан та вун-вун ик ҫул аслӑрах унран. Апла пулин те кӗлетки спортсменсенни пек яштака. Паллашрӗҫ. Унӑн ячӗ — Кирьян. Вӑл пӗр пысӑк заводӑн хурал пуҫлӑхӗнче ӗҫлет имӗш.

Сӑмахран — сӑмах. Уги ҫакна пӗлчӗ: Кирьянӑн ӗҫ укҫи самаях пысӑк-мӗн. Ҫулӗ ҫитнӗ, авланма чипер хӗр шырать.

Ҫав сӑмахсем Уги чӗрине йӑшт сиктерчӗҫ. «Ӗмӗтӗмри упӑшка мар-ши ку?»— шухӑшларӗ вӑл.

Хӗрпе каччӑ юнашар чух йӑли ҫапла-тӑр — тута хупӑнмасть. Аван та ку: кулӑ тени хуйха-суйха сирет. Каччӑ ав туслашма, малашне тӑтӑшах тӗл пулма сӗнет. Уги хӑй еннелле тӑснӑ алла сирсе ярасшӑн мар. Пурнӑҫӗ ахаль те тикӗсех пымарӗ.

Уги пӗр хушӑ ашшӗ патӗнче ҫӗр выртқаларӗ. Чурӑс чӗреллӗ-ши ашшӗ — хӗрӗн шӑпипе пачах та кӑсӑкланмарӗ. Питӗ шел. Хӗрӗ те чунне уҫса памарӗ, капла ирӗклӗрех пек туйӑрӗ пуль.

Нумайччен пурӑнайӑн-и вара ют арӑмлӑ ашшӗ патӗнче? Уншӑнах килӗнче кашӑк-тирӗк шӑкӑртатма тытӑнчӗ. Ал сулчӗ те тухса утрӗ Уги амӑш килне. Унпа та пӗр чӗлхе тупаймарӗ...

Кӑмӑлӗ пӑсӑкран-ши — Кирьян хӗре ресторана чӗнчӗ.

— Ларӑпӑр сӗтел хушшинче стаканри пылак эрехе улӑм пӗрчи витӗр ӗмсе.

— Ан тӗлӗнтер-ха, улӑм пӗрчи витӗр эрех ӗҫме пулать-и вара?— ахӑлтатса кулса ячӗ Уги.

— Пулмасӑр. Ун пек ӗҫме тата лайӑхрах — шӑл йӗрсе илчӗ Кирьян.— Вӑхӑта савӑнӑҫлӑн ирттерӗпӗр ресторанта: музыка итлӗн, ташлӑн. Ну, мӗнле?

Угие ку шухăш килĕшрĕ.

— Пыратăп,— терĕ вăл.

Алăк уçсанах амăшĕ курăнчĕ.

— Ăçта çапкаланса çӳрен?— ыйтрĕ вăл.

«Çапкаланса çӳрен» тени хĕре тарăхтарчĕ. Çавăнпа та вăл çăвар уçмасăр шифоньертан хитре кĕпине илсе капăрланма тытăнчĕ.

Амăшĕ хĕрĕн чăматанне курсанах лешĕ института кĕреймесĕр таврăннине пĕлнĕччĕ-ха. Çав кунтанпах шăл хăйраса пурăнатчĕ. Анчах Уги ашшĕ патĕнче вырăн тупнă та паянччен те куç тĕлне лекеймерĕ.

— Ĕçе вырнаçрăн-и?— йĕкĕлтесерех ыйтрĕ унран амăшĕ.

— Ĕçе?— тĕлĕненçи пулчĕ Уги.— Шутламастăп та. Эпĕ пуринчен те пуянрах. Манăн икĕ атте, икĕ анне. Вун саккăра çитиччен мана вĕсем тăрантарĕç. Эпĕ ăçта каяссине питĕ пĕлессӳ килсен калам эппин: ресто-ра-на! Ăнлантăн-и?

— Мĕ-ĕн? Тур çырлах, хĕр пуçупа-и?— куçне-пуçне çиçтерсе илчĕ амăшĕ. Упăшкин диван çинче выртакан чĕн пиçиххине илчĕ те хĕрне çапма тăсса ячĕ.— Патак çименни нумай пулать-ха, тунсăхларăн-и?

— Чарăн!— пӳлчĕ ăна çĕнĕ упăшки. Вăл çуллă куçĕсемпе Уги çине йăл-л та йăл-л пăхса илчĕ. Вара çапла каларĕ:— Хальхи хĕрсем ресторана çӳреççĕ. Эсĕ, амăшĕ, пурнăçран кая юлнă иккен.

Анчах амăшĕ ăна итлемерĕ, хĕрĕ патнелле ыткăнчĕ, ун çийĕнчи капăр кĕпене çурса пăрахасшăн пулчĕ. Уги чăрсăр алăсене вăхăтра тытса чарма ĕлкĕрчĕ, вĕсене çиллессĕн сирсе ячĕ те килĕнчен тухса вăркăнчĕ.

## 12

Ларис театр институтĕнчен пусăрăнчăк кăмăлпа тухрĕ. Вĕренме кĕресшĕн питех çунманччĕ-ха вăл. Çапах та артистка пуласси те илĕртмен мар ăна. Кĕреймерĕ — илмерĕç. Çапла, илмерĕç. Ку вара чунне амантрĕ. Килтисемшĕн те пулчĕ мăкăртатмалăх. Мĕн тăвăн, тӳсĕмлĕн итлемех тиврĕ вĕсене. Кавик çеç вăл таврăннăшăн хĕпĕртерĕ.

— Ну, мĕнле?

— Атте пăлтăра хупса лартасшăн.

— Мĕншĕн?— тĕлĕнчĕ Кавик.

— Килес çул театр институтне кĕмешкĕн паянах хатĕрленме тытăнмалла тесе минретет,

Иккĕшĕ те кулса ячĕç.

— Вĕсем сана сцена çинчех курасшăн. Эсĕ вара, кӳтăнскер, инженер пулатăп тетĕн,— шӳтлет Қавик.

Виççĕшĕ те — ашшĕ, амăшĕ, кукамăшĕ — пĕр тĕлĕкпе йăпанаççĕ: Ларисăн никам та мар, артистка пулмалла. Ăна пĕтĕм çын кинора курса килентĕр теççĕ. Институтри йышăну комиссийĕ Ларис пултарулăхне тĕрĕс хакламан тесе тарăхаççĕ тата хăйсем, шалт тĕлĕнеççĕ.

Ларис экзаменсене лайăхах тытрĕ. Анчах артист ăсталăхне тĕрĕслекен комисси витĕр тухаймарĕ. Ăна пĕр сценка выляса кăтартма хушрĕç: пусăран икĕ витре шыв ăсса кĕвентепе йăтса кайнине сăнламалла. Кĕвенте таврашне хул пуççи çине хума мар, халиччен куçпа та курман Ларис. Самаях муталанса пĕтрĕ, анчах вăййи пулаймарĕ, экзамен тыттаракансем ăна пачах ăнланмарĕç...

— Çав çăмăл япалана та кирлĕ пек выляса парайман. Тăм писмен! Талантна кăтартма пĕлмен. Пире намăса яран!— сурчăкне сирпĕте-сирпĕте ятлать халĕ амăшĕ хĕрне чĕр хулăпа çунтарас патне çитсе. Хăй вăл, ялта ӳснĕскер, пахча çимĕç шăварма кĕвентепе пайтах шыв йăтнă кӳлĕрен. Çав саманта аса илсен халĕ те çурăмĕ сăрлатса илет. Астăвать-ха, шыв витрисем ытла та йывăрччĕ, тӳрĕ утма хал çитместчĕ, урисем тăнк-танк пусатчĕç.

Хăçанччен ятлатчĕ пулĕ амăшĕ, шĕкĕр турра, кукамăшĕ Ларис хутне кĕчĕ. Вăл мăнукне хула театрне вырнаçтарма сăмах пачĕ. «Қурăпăр-ха Ларис хăйĕн пултарулăхĕпе халăха тĕлĕнтернине»,— лăплантарчĕ килтисене.

— Сана та ятларĕ-и аннӳ?— ыйтрĕ Ларис Қавикрен.

— Пĕртте шарламарĕ.

Ку тĕрĕсех. Қавик амăшĕ хăй ачине йывăр сăмахсемпе перкелешсе кӳрентермерĕ. Вăл ывăлне хăйпе пĕрле стройкăна ĕçлеме чĕнчĕ. «Хура çăкăра тăварпа пуçса çисе пăх. Çынсем мĕнле ĕçленине кур, сăна. Қайран, ăс-тăн аталансан, вĕренме те кĕрĕн»,— терĕ вăл ывăлне.

— Атя каçхи университета,— амăш сăмахне аса илнĕ май сĕнчĕ Қавик хĕре.— Қăнтăрла ĕçлĕпĕр, каçхине вĕренĕпĕр.

— Мĕнех, тапаçланса пăхар,— килĕшрĕ Ларис.

Чăнах, тăрăшни сая каймарĕ. Экзаменсене чиперех тытрĕç.

Вĕренме пуçланă пĕрремĕш кунах ăçта ĕçлени çинчен справка илсе килме хушрĕç вĕсене.

Тепĕр кунне Ларисра Қавик завода кайрĕç. Қадрсен пайĕ вырнаçнă çуртăн коридорĕнче плакатсем çакнă. Вĕсем завода кирлĕ профессисемпе паллаштараççĕ.

Лариса электромонтажник ĕçĕ килĕшрĕ. Çак професси хальхи вăхăтра промышленноçра питĕ кирлĕскер-мĕн. Унăн уйрăм детальсенчен блоксем, пайсем, тĕрлĕрен приборсем пухмалла. Чертежсем вулама, электротехника пĕлмелле: пинцет, скальпель, отвертка, пĕчĕк мăлатук, лаптак вĕçлĕ хĕскĕч, электропаяльник — акă мĕнле хатĕрсемпе ĕçлет иккен электромонтажник.

— Кил-ха,— Кавике кăчăк туртрĕ Ларис.— Мана электромонтажник ĕçĕ аван пек туйăнать.

— Кĕр эппин. Шăпах хĕрарăм ĕçĕ вăл.

— Эсĕ ăçта кĕресшĕн?

— Эпĕ токарь пулатăп,— татса каларĕ Кавик. Вăл шкул мастерскойĕнче те яланах токарь станокĕпе тăрмашма юрататчĕ.

Кадрсен пайĕнче ĕçлекен хĕрарăм çамрăксемпе калаçрĕ, кашнин шухăшне ыйтса пĕлчĕ.

Заявленипе ытти документсем тăратсан Ларispa Кавике те ĕçе илчĕç, завода кĕрсе çӳремешкĕн яланхи пропуск пачĕç.

Кавике вĕренӳ участокне ăсатрĕç, токаре çур çул вĕренмелле. Лариса тӳрех завода илсе кайрĕç. Кунта юмахри пекех иккен. Тăсăк ещĕксенче симĕс курăк ешерет. Унтах роза, пальма йывăççисем илем кӳрсе лараççĕ. Стенасене мозаикăллă ӳкерчĕксемпе эрешленĕ.

Акă умра электромонтаж цехĕ. Сĕтелсем хушшинче хĕр ачасем кăна. Вĕсен çийĕнче шурă халат. Пурте шурă тутăрпа. Тасалăха пĕлтерет ĕнтĕ ку. Пĕр тусан пĕрчи те вĕçтерме юрамасть. Цехра çап-çутă. Маччи кантăкран иккен.

Лариса та шурă халат пачĕç, виçĕ кĕтеслĕ шурă тутăр çыхтарчĕç. Ăна цехăн пĕр кĕтессинче сĕтел хушшинче ĕçлесе ларакан çамрăк хĕрарăм патне ертсе пычĕç.

— Ку санăн наставнику — Анна Николаевна пулать,— паллаштарчĕç ăна.— Вăл сире ĕçлеме хăнăхтарĕ.

Хĕр çине пăхса ăшшăн кулса илчĕ Анна Николаевна. «Ăшă пиллĕ хĕрарăм пулас»,—шухăшларĕ Ларис ун пирки. Наставник ăна хăйпе юнашар лартрĕ.

— Эпĕ мĕн тунине тимлĕн сăнаса пыр. Кăна плат теççĕ,— çавăркаласа кăтартрĕ Анна Николаевна аллинчи пысăках мар тăватă кĕтеслĕ шуç листине. Унăн пĕр енне çип пек çинçе пралук авăнчăкĕсемпе пĕтĕрĕнчĕкĕсене çыпăçтара-çыпăçтара тухнă, тепĕр енче вара — питĕ хитре тĕрĕ эрешĕ! Майне пĕлсен пралукран тем те тума пулать иккен. Шел, Ларис пултараймасть-ха ку ĕçе. Хĕр хăй сиснесĕрех ассăн сывласа илчĕ.

— Ма кулянан? Вăхăт иртнĕçемĕн,ултă-çичĕ уйăхран, пурне те хăнăхса çитĕн,— йăпатрĕ ăна вĕрентекен.

— Темĕн çав,— шанмасăртарах каларĕ Ларис.

— Пирĕн ĕçре вăй мар, тăрăшулăх, япала майне тавçăрса илме пĕлни кирлĕ, тата ăна питĕ тирпейлĕ тумалла,— ăс пачĕ вĕрентекен.

— Анчах эпĕ, темле пулсан та, тăрăшатăп,— шантарчĕ хĕр.

— Вăт капла кăмăллă.

Хĕр ун çине кăмăллăн пăхса илчĕ. «Вăл тăрăшнине сая ярас марччĕ»,— шухăшларĕ хăй.

## 13

Акă вĕренӳ участокĕ. Цехри евĕрех кунта. Станоксем теречĕпех. Вĕсемпе ĕçлеме пикенекен çамрăксем те сахал мар. Ĕçе вĕрентекенни вара — ватă çын. Пичĕ кăтра кăмпа пекех пĕрĕнсе ларнă. Миçе йĕр-ши, хуçланчăк-ши — шутласа та кăлараймăн. Шеллемен иккен пурнăç ун питнекуçне. Çамки картлă-картлă. Янахĕ сухалсăр. Çӳçĕ вара шăрт пекех тăрать. Сăмси çинче ун яланах куçлăх. Çынсем хăйне Силантий Егорыч тесе чĕнеççĕ.

Егорыч хаяр çын пек туйăнчĕ Қавике. Акă вăл ăна пӳрнипе юнарĕ:

— Эсĕ, çамрăк çыннăм, станоксене ан тĕкĕн, инструментсене ан тыт. Халлĕхе ыттисем мĕнле ĕçленине сăна.

Старик сăмахĕ Қавик кăмăлне хуçрĕ. Кунĕпех алă усса мĕнле тăмалла-ха? Ухмаха тухăн. «Юрĕ, курса çӳрĕп»,— шухăшларĕ Қавик. Юнашарах ав токарь станокĕ. Пушах тăрать. Кун пек станок шкул мастерскойĕнче те пурччĕ. Пĕрре çеç ĕçлеттермен ăна каччă. Çӳлĕк çинче тĕрлĕрен инструментсем выртаççĕ. Пĕрне, штангенциркульне, Қавик пĕлет. Вăл унпа ĕçлемен мар. Ытти инструментсене чухлаймасть вара. Малашне çак хатĕрсем йăлтах Қавик аллинче пулĕç.

Малалла утать каччă. Вăл кашни станок умĕнчех чарăнать. Çамрăксем мĕнле ĕçленине тинкерет.

Силантий Егорыч та пĕр вырăнта тăмасть: рет хушшипе çӳресе пĕринпе, тепринпе калаçать, рабочисем тунă детальсене хăйĕн инструменчĕпе виçе-виçе пăхать.

Кукăрта виç-тăват станок ларать. Қавик пĕрре пăхсах ăнланчĕ: вĕсен хуçисем хăйсене ытла та ӳрĕк-сӳрĕк тыткалаççĕ. Час-часах пĕрле пухăнса тăраççĕ, аллисене сулкаласа тавлашаççĕ — тӳпелешсе кайманни кăна. Чĕлĕм

туртанҫи пулса таҫта тухса каяҫҫӗ те янкӑлтатса ҫӳреҫҫӗ, каялла час таврӑнмаҫҫӗ.

Егорыч ҫав ҫамрӑксене мӗншӗн асӑрхаттармасть-ха?

Чылайӑшӗ станокӗ патӗнчен пачах хӑпмасть. Пуҫ ҫӗклемесӗр тӗрмешет.

Пуринчен ытла Қавик пӗр хӗрлӗ ҫӳҫлӗ ҫамрӑка килӗштерсе пӑрахрӗ. Ытла ҫивӗчскер вӑл, ҫаврӑнӑҫуллӑ, аллисем вӑр-вар. Станокӗ те, хуҫине ӑнланнӑн, пӗр евӗр кӑр-кӑр кӑрлатать, чӑш-чӑш-ш туса илет. Ӑна хуҫи самантлӑха та пӑрахса хӑвармасть. Тата вӑл вӑхӑтне усӑсӑр сая ярса никампа та пакӑлтатмасть.

Қавик тӑрать ун хыҫӗнче хускалма хӑяймасӑр. Ҫак вашават ҫамрӑк ҫын хӑй пирки ирӗксӗрех ҫапла шухӑшлаттарать: умӗнче чертежсем мар, нотӑсем. Вӑл нота вуласа пианино калать. Пӳрнисем клавиш тӑрӑх чупнипе хӗлӗхсем вылянаҫҫӗ пулас та, ҫепӗҫ музыка кӗвӗленет. Музыка тени вӑл — асамлӑ япала. Ҫын чунне вӑй-хал вӗрсе кӗртет.

Хӗрлӗ ҫӳҫли Қавике асӑрхарӗ те йӑл кулса куҫне хӗссе илчӗ. Кӑшт вӑхӑт иртсен станокне чарчӗ. Пир-авӑр татӑкӗпе шӑлкаласа илнӗ хыҫҫӑн аллине тӑсса ҫапла каларӗ:

— Тус пулар. Мана Толик тесе чӗнеҫҫӗ.

Қавик, куна кӗтменскер, шутсӑр хӗпӗртерӗ. Вӑл та хӑй ятне пӗлтерчӗ.

— Ну, Қавик, савӑн манпа пӗрле: заказӗ хатӗр.

— Темӗн, ӑнлансах ҫитеймерӗм-ха,—терӗ Қавик.

— Ҫул ҫинче ӑнлантарӑп. Халь атя столовӑя.

Участокран иккӗшӗ пӗрле тухса кайрӗҫ.

— Мана завода питӗ кирлӗ деталь — втулка тума шанса пачӗҫ. Тӑрӑшрӑм — турӑм. Егорыч хӑй мухтарӗ.

— Эсӗ, Толик, кунта тахҫанах килнӗ-и?

— Пӗр уйӑх иртрӗ ӗнтӗ.

— Пӗр уйӑхрах чӑн-чӑн деталь ӑсталама вӗренсе ҫитме пулать-и вара?— тӗлӗнчӗ Қавик.

— Қакшӗ, тусӑм, йӑлтах хӑвӑнтан килет, тӑрӑшмалла ҫеҫ тата Егорыч вӗрентнине ӑша хывмалла.

— Сана, эппин, паян-ыран цеха куҫараҫҫӗ?— кӑсӑкланать Қавик.

— Тата пилӗк уйӑхран куҫараҫҫӗ,— тет Толик.— Ултӑ уйӑхра токарь ятне илсен мухтанма та юрать вара. Хӑшпӗрисем ав сакӑр-тӑхӑр уйӑх хӑшкӑлаҫҫӗ — усси ҫук. Ун йышшисем ҫӑхав ҫырса супаҫҫӗ вара.

— Ҫавӑн пеккисем те пур-и кунта?— тӗлӗнет Қавик.

— Сӑмах ҫинех ав пӗр янкӑлтийӗ килет.

Хирĕç килекен çамрăкăн шăши хӳри пек мăйăхĕ тӳрех куçа курăнчĕ. Хăй ытла сĕмсĕррĕн пăхать.

— Тихана ĕçе илентересшĕн-и? Ха-ха-ха! Курăпăр: вăл кам йышне хутшăнĕ! — Унтан вăл Қавикрен куç кĕретĕнех мăшкăллама тытăнчĕ, аллине тăсса, пӳрнисене вылятса ăна выльăха илĕртнĕн йыхăрчĕ:

— Пах-пах-пах!

Толик çаврăнса та пăхмарĕ ун еннелле. Қавикĕн вара, çынпа нихçан тӳпелешменскерен, чышкисем хăйсем тĕллĕнех чăмăртанчĕç.

— Қавик, сыхлан ун серепине лекесрен,— асăрхаттарчĕ Толя лешĕ иртсе кайсан.— Унпа çыхлансан пуçĕпех пĕтĕн.

Путсĕр çын иккен вăл, мăйăхне шăши хӳри евĕр ӳстернĕскер. Хушамачĕ — Пакшин, ячĕ — Лева. Сакăр уйăх вĕренет, çапах та тăна кĕмен. Тӳсме çук юлхав. Станок умĕнче вăрахчен тăма хал çитерейместь те тăтăшах коридора чĕлĕм туртма чупать. Унпа пĕрле вĕреннисем тахçанах цехра. Ĕç укçи те сахалах мар илеççĕ. Пакшинăн та ывăç тупанĕ кĕçĕтет, унăн та укçаллă пулас килет. Анчах ăна Силантий Егорыч цеха куçарма ирĕк памасть-ха: шанмасть вăл ĕçлеме пултарасса. Лешĕ, паллах, уншăн урмаллипех урать. Егорыча тем те пĕр каласа хăртать. Кунпа çеç çырлахмасть, вĕрентекен пирки çăхав çырать: «Ват супнă, хытах йӳтенĕ. Унăн çамрăксене вĕрентме пĕлĕвĕ те çитмест».

Пакшин хăех темиçе çыншăн алă пуснă.

Çăхавне вăл, шанманнипе, завод пуçлăхĕсене памасть, ăна республикăри хаçатсен редакцийĕсене ярать. Тĕрĕслеççĕ килсе. Анчах лешĕ йăлтах суйса пĕтернине палăртаççĕ.

Қам-ха вăл, чăннипе илсен, Силантий Егорыч! Вăл рабочи çемйинче çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕ çеç мар, аслашшĕ те ĕлĕк, революциччен, хуçа патĕнче фабрикăра ĕçленĕ.

Вăрçă пуçлансан Егорыч Харьковри заводпа пĕрле Шупашкара куçса килнĕ. Чаплă токаре фронта ямаççĕ, унашкал ăста специалист завода питĕ кирлĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех унтан тухмасăр тенĕ пек тăрмашать çын. Пенси çулĕнчен иртсен те пилĕк-ултă çул хушши станокĕнчен уйрăлаймасть вăл. Сывлăхĕ чакнипе çеç заводăн вĕренӳ центрне куçма килĕшет.

Қама парнелесшĕн-ха Егорыч ĕмĕрĕ тăршшĕпе пухнă ăсталăхăн вăрттăнлăхне, пуян опытне? Қама пултăр, йĕркене çирĕп пăхăнса, тăрăшса вĕренекен çамрăксене. Вĕ-

сене вăл чунне пама хатĕр. Наянсене хисеплемест вара, ун пеккисене çывăхне те ямасть. Егорыч çынна пĕрре пăхсах чухлать.

Чăнах та, майне-шывне пĕлсе çитериччен токарь ĕçĕ питĕ йывăр. Станок «кăмăлне» витĕр курма, вăл тĕрĕс ĕçленине сассинченех уйăрма пĕлмелле. Тата миçе тĕслĕ металл: хурçă, алюмини, пăхăр, латунь чунне ăнланмалла. Детальсене чертеж тăрăх хатĕрлеççĕ. Вĕсен конусне хăвăн шутласа кăларма тивет. Шкулта геометрие лайăх вĕреннĕ пулсан — аптрамастăн-ха. Хăй вăхăтĕнче урокра ӳрĕк-сӳрĕк ларнисемшĕн вара — чĕр тамăк. Анчах çын туман ĕç çук: тăрăшсан пурне те вĕренен. Тата тепĕр пысăк чăрмав тинкине илет çамрăксенне. Ĕç кунĕ вĕçленичченех станок умĕнче тăмалла. Кăшт ларса канма юрать-ха ĕнтĕ. Çапах та хытă ывăнтарать. Хăш-пĕрисем чăтайман пирки станока пăраха-пăраха хăвараççĕ. Кун йышши çамрăксене Егорыч юратмасть.

Силантий Егорыч пирки каласа пани Кавик чунне хытах хускатрĕ. «Эпĕ вăл ăнлантарнине пурне те асра тытса юлма тăрăшăп. Ăна нихçан та, нимпе те кӳрентермĕп»,— пуплерĕ хăйпе хăй. Толик пек маттур, хастар пулас ĕмĕт çуралчĕ ун. Вĕреннĕ чухнех завод валли чăн-чăн деталь ăсталама тăрăшрĕ.

Çак самантран пуçласа Кавик шит те хăпмарĕ çĕнĕ тусĕнчен. Толя ĕçленине пăхса тăрасси уншăн темрен те паха. Лешĕ ăна ĕç хушсан вăл вĕçме хатĕр.

Çĕнĕ ача ĕсчен çамрăкпа туслашни Егорыча та килĕшрĕ. «Ăнкаруллă пулас. Лайăх çын лайăххи çумнех çыпăçакан»,— шухăшларĕ вăл.

Ик-виç кун иртсен Кавике чĕнсе илчĕ хайхискер:

— Ну-с, ывăлăм, вĕренме тытăнар.

— Эпĕ хатĕр, Силантий Егорыч.

— Ку — токарь станокĕ,— ăнлантарма тытăнчĕ старик.— «Э-э, ку станока эпĕ тахçанах пĕлетĕп» тесе курнăçланмарĕ Кавик, тимлĕн итлеме тытăнчĕ.— Мĕншĕн ăна токарь станокĕ теççĕ-ха? Мĕншĕн тесен унпа...

## 14

Уги йăнăшрĕ. Улталанчĕ вăл, хĕрлĕхне çухатрĕ. Кирьян суйрĕ ăна, мăшкăлларĕ. Авланатăп тесе илĕртрĕ, халĕ тарса çӳрет. Ăна хваттерне чĕнме мар, пырсан та кĕртмест. Юрать-ха çакна амăшĕ пĕлмест. Ахалех çĕтĕлсе тăракан-скер хĕрне тем туса пĕтерĕ. Амăшĕнчен хăпасшăнах качча кайма шутланăччĕ те — ĕç тухмарĕ. Халĕ уншăн пурнăçĕ

сая кайнă пекех туйăнать. Хĕрлĕхне çапла çухатнă хыççăн ӳлĕмрен кам юратĕ ĕнтĕ ăна? Хăй те никам умĕнче те мăнаçланаймĕ: мĕншĕн тесен унăн хĕршĕн чи хакли çук. Мĕскĕне тăрса юлнăскерĕн ĕмĕрĕ тăршшĕпех çын сăмахĕ айĕнче пурăнма тивĕ. Мĕн тумалла-ши? Пуплесе ăшне пусармашкăн тус тупма ĕлкĕреймен-ха вăл. Хăйĕн малтанхи учительницине, Римма Васильевнăна, тĕпĕ-йĕрĕпех каласа парсан вăл ăнланĕччĕ-ха, ăс та парĕччĕ. Анчах намăса ăçта хурас? Вăтаннипе пичĕ хĕрелет Угин. Çитменнине, усал хыпар часах сарăлать. Паллакансем пĕç çапса ахăлтатĕç. Иртсе кайнă чух пӳрнепе тĕллĕç: «Ав пырать анрасухра, вăл текех хĕр мар»,— тейĕç. Çак сăлтава пулах вăл хăйпе пĕрле вĕреннĕ хĕр ачасенчен пăрăнма тытăнчĕ.

Ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр çӳрет Уги, хăйĕн хуйхисуйхипе асапланать. Юлашкинчен çак шухăш патне пырса тухрĕ: «Кирьяна сыхлас!.. Кунĕн-çĕрĕн сыхлас. Ăна урăх хĕрпе утма памастăп».

Завод умĕнчи карта çумне пырса таянчĕ Уги. Çакăнта курчĕ те ăна Римма Васильевна.

Миçе кун ĕнтĕ шырать ăна учительница. Тин çеç вăл Угисен хваттер алăк умĕнче пулчĕ. Тăваттăмĕш хута хăпарса çитнĕ-çитмен хыпаланса шăнкăрав кнопкине пусрĕ. Алăк уçăлчĕ те, куçĕ умне Уги амăшĕ тухрĕ тăчĕ.

— Сывлăх сунатăп!— саламларĕ ăна Римма Васильевна.— Сирĕн хĕрĕре курасшăнччĕ те.

— Мĕн çӳретĕр эсир çаплах пирĕн пата? Пушар хыççăн шыв кирлĕ маррине пĕлместĕр-и вара? Шкулта вĕреннĕ чух лайăххах пĕлӳ памаллаччĕ,— ĕрлет хĕрарăм хăйĕн айăпне пачах туймасăр.— Уги килте çук, ăçтине те калаймастăп. Пĕлессĕм те килмест.

— Мĕнле апла? Хĕрĕр шăпи нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармасть-и сире?

— Ӳснĕ ĕнтĕ. Хăш çулпа каяс тет, тархасшăн, чуптăр,— алăка шалт! хупрĕ вăл. Учительницăна кĕрсе ларма та чĕнмерĕ.

«Э-эх, чĕмере,— ятлаçса илчĕ Римма Васильевна ăшĕнче.— Тăван хĕрĕпе туслă пурăнма пĕлмест. Ыррине кĕтмелле-и кунашкал амăшĕнчен?»

Хăйĕн учительницине асăрхасан Уги пăлханса ӳкрĕ, ун куçĕ умне лекесрен шикленчĕ. Пытанас шутпа айккинелле ярса пусрĕ, анчах пăрăнма та ĕлкĕреймерĕ. Ирĕксĕрех хăйне пуринчен малтан вĕрентнĕ çынна сывлăх сунма васкарĕ:

— Здрасте, Римма Васильевна!

— Сывлăх сунатăп!— пырса тăчĕ учительница Уги

умне.— Мĕн туса тăран кунта? Завода ĕçлеме кĕресшĕн мар пулĕ те?

— Илмеççĕ,— пат татса хучĕ Уги. Хăйĕн вара ĕçе кĕрес шухăш асĕнче те çук-ха. Çапах та пĕр именмесĕр суйрĕ.— Ĕç шыраса нумай çĕре çитрĕм — кирек ăçта та, юри килĕшсе татăлнă тейĕн, пĕр сăмах: «Пире çын кирлĕ мар». Стройка таврашне вĕренпе сĕтĕрсен те каймастăп: кирпĕч йăтасси хĕр-упраç ĕçĕ мар.

— Ав мĕнле...— текелесе тăчĕ Римма Васильевна.

Ун-кун пуплекеленĕ хыççăн учительница лайăх ĕç пурри çинчен хыпарларĕ.

— Эсĕ, Уги, çĕвĕ машинине тыткаласа курнă çын. Ĕнер кăна çĕвĕ фабрикин директорĕпе калаçрăм. Сана килĕшекен ĕç пур вĕсен, кĕпе çĕлеме вĕренĕн. Кунтан лайăхрах ĕç шыраса та тупаймăн. Ĕнен, çынсене савăнтармалли ĕç. Атя, кайăпăр.

— Мĕнле майпа савăнтарăп-ха?— ăнланман пек пулчĕ Уги.

— Ятуллă кĕпе тăхăнакан хĕр савăнмĕ-и?

Угин ĕçе кĕрес ĕмĕт мар-ха. Пуçĕнче ун пачах урăх шухăш пăтранать. Вăл хăйне хăй те ăнланаймасть. Çапах та учительницăпа юнашар утрĕ, унран пăрăнса юлма хăяймарĕ.

Римма Васильевна фабрикăра хăй ертсе килнĕ хĕр ачана çине тăрсах хӳтĕлерĕ. Угин çĕвĕ çĕлес енĕпе чăннипех пултарулăхĕ пур, ку тĕлĕшпе ăна никам та тиркеймĕ терĕ. Учительница хĕр ачан килти лару-тăрăвĕ чаплах маррине те систерчĕ хуçасене.

Учительница ертсе килнĕ хĕр çĕвĕ ĕçне мĕн таран чухланине çавăнтах тĕрĕслерĕç.

— Аптрамасть,— терĕç ăна.— Малтанлăха наставница çумне çирĕплетĕпĕр.

Хĕре тумтир çĕлекен цеха вырнаçтарчĕç. Ăна вĕрентекенĕ — хăйĕн тантăшех иккен. Сакăр класс хыççăнах пынă пулас. Бригадирĕ вара самай çулланнă хĕрарăм. Зинаида Гурьевна тесе чĕнеççĕ ăна.

Кунта конвейер йĕркипе фуфайка çĕлеççĕ. Угие çанă çĕлеме вĕрентрĕç. Ĕçĕ йывăрах мар.

Ĕçлеме пуçланăранпа эрне иртрĕ. Хĕре тӳсмелле мар кичем кунта. Фуфайка çаннине çĕлеме мар, ăна çурса тăкма хатĕр. Пĕрре те çынсене хăйĕн ăшă кăмăлĕпе савăнтараймарĕ-ха.

Бригадир вăрттăн сăнать Угие. Килĕшмест вăл ăна. Хĕрĕн пичĕ-куçĕ хаярлăхпа туртăнса тăрать. Чунĕнче унăн çăпан ӳссе ларни паллă.

Пĕррехинче Зинаида Гурьевна йăваш сасăпа çапла каларĕ.

— Ытла чĕмсĕр хĕр-çке эсĕ.

— Эпĕ хĕр мар, упăшкаллă хĕрарăм,— терĕ ăна хирĕç Уги. Çавăнтах витĕр курса пĕлесле чăр! пăхрĕ бригадир куçĕнчен. Хăйне шелленине сисрĕ. Çиçĕмле хăвăртлăхпа пуçне чăрсăр шухăш пырса кĕчĕ: «Ĕçрен ямĕç-ши? Çирьяна кайса сыхласчĕ. Тен, вăл хĕр тупнă».

— Зинаида Гурьевна, ирĕк парсамăрччĕ мана, тархасшăн, киле кайма. Эпир çĕнĕ хваттере куçнă. Газ кĕртме пымалла та,— йăпăлчăк сасăпа калаçрĕ вăл.

— Хваттер кашни çул илмеççĕ. Çай ара.

Урама тухсан вăл куçне арçынсем еннелле ирĕке ячĕ: Çирьяна шырарĕ. Лешĕ ниçта та курăнмасть. Апла пулсан ĕçрех пуль-ха. Хăй те сисмерĕ, тем вăхăтра каллех Çирьян ĕçлекен завод çумĕнчи карлăк патне пырса тăчĕ.

Çаç пуличченех тăчĕ Уги — Çирьян курăнмарĕ. «Чирленĕ». Çак шухăш ăна савнийĕ пурăнакан çурт тĕлне илсе çитерчĕ. Акă виççĕмĕш хут. Çирьян хваттерĕн кантăкĕ çутах иккен. Эппин, килтех вăл.

Чупса хăпарчĕ Уги картлашка тăрăх. Шăнкăравларĕ— алăк уçăлмарĕ. «Лавккана кайнă-ши?» Уги урама тухса каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ. Тулта тĕттĕмленчĕ. Çаллех виççĕмĕш хута хăпарса Çирьян алăкне шаккарĕ. Уçăлмарĕ. Çартлашка карлăкĕ çумне таянса хĕр пĕр кана хускалмасăр тăчĕ. Иртен-çӳренсем анаççĕ, хăпараççĕ. Угие вĕсем хăйне тĕлĕнсе те йĕрĕнсе пăхнăнах туйăнать.

Чĕрĕ çын çĕрĕпе тăрайĕ-и кунта чул пек хытса? Ал сулчĕ те Уги пушмак кĕлипе тăкăртаттарса картлашка тăрăх аялалла анчĕ. Чарусăр шухăш ăна ресторана илсе кĕчĕ. Çунта музыка кĕрлет, ташлаканĕ чылаях. Хĕрсемпе каччăсем пĕр-пĕрин çумне çыпçăннă та юлхавлăн çаврăнкалаççĕ.

Уги пушă сĕтел шырарĕ. Тĕкĕрлĕ юпа çумĕнчи сĕтел хушшинче никам та çук. Сĕтел çинче апат-çимĕç туллиех. Ним вăтанмасăр пырса ларчĕ. Эрех-сăра кĕленчисем те пур.

Уги пĕр черккине йăпăр-япăр эрех тултарчĕ те янк! тутарчĕ. Хуçисем те аякках кайман иккен, кĕçех таврăнчĕç ак. Шăкăрах арçынсем. Угие хăйсен ушкăнне хапăллаcах йышăнчĕç.

— Э-э, пирĕн пата хăна килнĕ!

— Тепĕр пукан тупас!

Ĕçтерчĕç, çитерчĕç ăна. Уги самаях хĕрчĕ. Ларнăçемĕн чĕлхи салтăнчĕ: калаçать, шӳтлет, кулать.

Музыка çаплах йăслать. «Шейк» пуçланчĕ. Сĕтел хушшинчи арçынсенчен пĕри ташша тухма чĕнчĕ Угие. Эх, хуçкаланчĕ вара Уги. Аллисемпе хăлаçланчĕ, урисемпе тăпăртатрĕ, пуçне малалла, хыçалалла ухрĕ. Тур çырлах! Хăй çапла пултарнине пĕлнĕ-ши ку таранччен? Эрехпе музыка çынна упăтене те кăларать çав.

Сасартăк Уги ташлакан мăшăрсем хушшинче Кирьянпа пĕр хĕр ыталашса сĕнкĕлтетнине курах кайрĕ. Хĕрĕн сап-сарă çӳçĕ хум евĕр кăтра.

Уги шăлĕсем шатăр! шатăртатрĕç, чышкисем хăйсем тĕллĕнех чăмăртанчĕç. Унччен те пулмарĕ, кӳп! кӳплеттерчĕ Кирьян ытамĕнчи хĕре çурăмĕнчен.

— Парам сана çын упăшкипе ресторан тăрăх çӳреме! — кăшкăрса ячĕ вăл хайхискере çӳçĕнчен çулса тытса. Куç хупса иличчен ăна сирсе те ывăтрĕ. Çынсем хыпăнса ӳкрĕç: мĕн мурĕ? Пуç тирĕ сĕвĕнсе ӳкрĕ-и ун? Выртать ав çĕрте калпак пек. Тавçăрса илчĕç вара — парик-çке ку! Парикçĕр тăрса юлнă хĕрарăмăн тăрмакланнă çӳçĕ пăхмалăх та çук, çитменнине тата кăвакарнă.

Кирьян никам сисиччен тухса та вĕçрĕ. Ăçта кайса кĕчĕ вăл? Уги сиссе те юлаймарĕ.

Хĕрарăмсем шăри-шари! çухрашаççĕ. Арçынсемшĕн — кулăш.

Угие çийĕнчех ярса тытрĕç те кăларса ячĕç. Тем чухлĕ тăрăшсан та каялла алăк уçăлмарĕ уншăн.

Вăрахчен лăпланса пурăнаймарĕ вăл: эрне те иртмерĕ, унăн ăшĕ вăркама тытăнчĕ. Чĕринче çав Кирьянах. Вăл чăн-чăн шĕкĕ тейĕн. Кăшлать те кăшлать чунне пĕр хĕрхенӳсĕр. Каймаллах, тĕрĕслемеллех ăна. Анчах мĕнле йӳтĕм тупмалла-ха бригадир патне пыма?

— Зинаида Гурьевна, килĕр-ха, — кăчăк туртса чĕнчĕ ăна хĕр çынсем хĕвĕшмен çĕререх.

— Итлетĕп, — Уги патне пырса тăчĕ бригадир.

— Манăн тӳсмелле мар пысăк хуйхă.

— Ак тата!.. Мĕн пулчĕ! — пăшăрханса ӳкрĕ Зинаида Гурьевна.

Артист пултарулăхĕ пур иккен Угин. Сăн-сăпатне самантрах мĕскĕнлетрĕ.

— Çĕр каç упăшка ĕçленĕ çĕрте пултăм, — пуçларĕ вăл сăмахне. — Кĕтĕм, хайхискер, ун пӳлĕмне. Турăçăм! Мĕн куратăп?! Ман упăшка пĕр майрапа черкке шаккаса эрех ĕçсе лара парать, сĕтел çинче тин çеç çуралнă ача выртать.

— Кай, кирлĕ мара ан юптар-ха, — килĕшесшĕн пулмарĕ бригадир.

— Чăнах çапла!

— Ачи çара пакках-и вара?— сехĕрленсе ыйтрĕ Зинаида Гурьевна.

— Марльăпа чĕркенĕ. Пĕ-ĕчĕк хăй, шăши çури пек çеç.

— Ачи камăн?

— Ашшĕ тем тесен те — манăн упăшка.

— Хĕрарăмĕ кам?

— Қам пĕлет?.. Упăшкан еркĕнĕ-тĕр.

— Ачи ывăл-и, хĕр-и?

— Ун пеккине пăхăп-и? Тӳсме çук тулхăрса ӳкрĕм. Хĕрарăмне пăвса пăрахасшăнччĕ, упăшка аллăмсене ярса тытни пĕтерчĕ. Ара, пĕччен иккĕне çĕнтерĕп-и? Алăка шак! хупрăм та тухса вăркăнтăм. Упăшка ман хыççăн кăшкăрашса чупать, пур пĕрех хуса çитеймерĕ. Çиллĕме шăнăçтарайман енне çĕрĕпе урам тăрăх çӳрерĕм.

— Чаплах мар сан пурнăçу.

— Ия çав. Шăп çул хĕрринчи чечек пек. Е таптаса иртеççĕ, е татса илеççĕ.

— Мĕн тума шутлатăн?

— Халĕ упăшка патне кайса килесшĕн. Тĕпчесе пĕлесшĕн: мĕнле хĕрарăм вăл, ачин ашшĕ кам? Упăшкам айăплă мар пулсан каçару ыйтăп.

— Қайса кил эппин.

Тухса вĕçрĕ Уги, чике таран лартса хăварчĕ вăл бригадира. Лешĕ мĕн илтнине йăлтах ĕненчĕ.

Шел, Уги хăйĕн пурнăçĕнчи вырăнне ниепле те тупаймасть: унра артист таланчĕ пурри куç кĕретĕнех палăрать. Анчах суя урапи çинче ларса пынине пула хăй çавна асăрхамасть те.

Хăш-пĕр кунсенче Уги фабрикăна пачах пымарĕ. Унашкал çынсенчен пур çĕрте те хăтăлма тăрăшаççĕ, ун йышшисем пурнăçа каялла туртаççĕ, ĕçре такăнтараççĕ. Қăларчĕç ĕçрен ăнăççăр хĕре.

Қирьяна çавăраймарĕ Уги хăй енне. Вăл, чунсăр этем, чечекрен чечек çине вĕççе пылак сĕткен ĕмме хăнăхнă тĕкĕлтура пулчĕ иккен.

Пирĕн хĕршĕн пăтăрмахлă самантра хаçатра пĕлтерӳ пичетленчĕ: çамрăксене пулă промышленноçĕнче ĕçлеме чĕнеççĕ. Уги те вуларĕ çакна. Вара шут тытрĕ те тухса вĕçтерчĕ аякри-аякри Хĕвел тухăçне. Қайтăр! Тупмаллах унăн хăйĕн ăраскалне!

## 15

Неллине упăшки чăп! чуп турĕ.

— Эпĕ кайрăм, юратнă мăшăрăм. Ан тунсăхла,— арăмне тата тепĕр хут чуп туса илчĕ Акти.— Çĕр каç каласçнине ан ман.

— Ахă...— Нелли ыйхă тĕлĕшпе татах тем мăкăртаткаларĕ. Тул çутăлнăччĕ-ши? Куçне уçса пăхмарĕ вăл.

Авиф та арăмĕпе сыв пуллашрĕ. Унăн Налини те — ыйхă чăпти.

Актипе Авифа амăшĕ апатлантарать.

— Ачамсем, эсир какайне ытларах çиййĕр, унсăрăн тракторпа ĕçлеме вăй çитмĕ,— сăйлать вăл ывăлĕсене.

— Атте ăçта?— ыйтать Акти.

— Лаççинче илĕм-тилĕмпех тем шаккать.

Ывăлĕсем тухса кайрĕç. Кил хушшинче шăп. Амăшĕ сас-хура тăвасран сыхланса çӳрет. Акă вăл ĕне сурĕ. Ĕни нумай антарать халь. Вăрманта çӳренинчен пайти пур çав: сĕтеклĕ курăк ашкăрать унта. Тăраниччен çиет выльăх.

Амăшĕ сĕте ала витĕр ярса сĕрчĕ. Чĕреспе кăкшăм чăп тулли. Чĕресне нӳхрепе хăймалантарма антарса лартмалла. Кăкшăмри — çĕн çынсем валли.

Вăл тимĕр куркапа сĕт ячĕ те Налина çывăракан пăлтăра кĕчĕ.

— Кинĕм,— ачашшăн чĕнчĕ вăл.— Кинĕм, ме-ха, ăшă сĕт ĕç!

Налина куçне уçичченех аллипе хăй çумĕнче упăшкине тупасла хыпаларĕ.

— Ай-уй, Авиф ăçта вара, анне?

— Авифпа Акти паçăрах ĕçе кайрĕç.

— Ялта мĕнле ухмахла йăла ку. Тул çутăлнă-çутăлман тăраççĕ. Чăн-чăн айвансем. Ыйхă тутлине ăнланмаççĕ-и?

— И-и, ара, хĕрĕм, ир тăмасан çăкăр туса илейĕн-и?

Илтрĕ-ши, ăнланчĕ-ши кинĕ хунямăш сăмахĕсем мĕне пĕлтернине? Темĕн çав. Налина сĕт ĕçрĕ те кăнч хутланса ал тупанне пичĕ айне майласа хучĕ. Çавăнтах тытăнчĕ харлаттарма.

Хунямăшĕ сĕт тултарнă куркине йăтса тепĕр кинĕ патне утрĕ. Вăл кĕлет умĕнчи чаршав айĕнче çывăрать.

— Нелли кинĕм, вăран-ха, ăшă сĕт ĕç,— сĕнет вăл.

— Ан чăрман, анне. Кил, пĕрле çывăрар тул çуталиччен.

— Тух-ха чаршав айĕнчен. Кур, хĕвел тахçанах хăпарнă.

— Аюк, ыйхă килет.

— Эппин, сĕтне ĕç-ха, ăшăлла питĕ сиплĕ.

Нелли сĕте тĕппипех ĕçет. Тутине те шăлмасть, тӳп! кайса ӳкет те кăпăклă шурă мăйăхпах ыйха путать.

Урамра ĕне-сурăх макăрни илтĕнсе кайрĕ. Кĕтӳ хăвалама тытăнчĕç апла. Рухиме хапхине уçрĕ. Унăн выльăхĕчĕрлĕхĕ кил урлă пурăнакан Антун сурăхĕсемпе хутăшрĕ. Антун та эрне каялла кин кĕртрĕ. Ав çĕнĕ çын хушпу тăхăнса тухнă.

Хыçрах Ваçинка матки, Праски, сыснисене хӳтерсе пырать. Теме кура вăл куçне-пуçне урлă-пирлĕ вылятать. Чĕлхи тата ытла вичкĕн ун, халех мĕн те пулин тытăнать кастарма. Тĕрĕсех, нумай кĕттермерĕ. Рухимепе танлашрĕ те икĕ пĕççине шарт! çапрĕ.

— Аппай!— терĕ çиллес сасăпа.

— Мĕн пулчĕ?— ыйтрĕ йăвашшăн Рухиме.

— Ара, сана, апăршана, хĕрхенетĕп-çке!

— Мана? Мĕншĕн?— тĕлĕнчĕ хайхискер.

— Ара! Рухиме инке, кинӳсем ăнăçсăр пулчĕç-çке. Вĕсем курăс хуппи сĕтĕреççĕ, хунямăш пур — кускаласа çӳрет. Тепĕр тесен, çав кирлĕ сана. Кур-ха ав Антун кинне. Еплерех вăл — хушпупа. Кĕтӳ хăвалать, килĕнчи ытти пин те пĕр ĕçе тăвать. Хуняма карчăкĕ вырăн çинче рехетленет. Ахаль каламаççĕ çав: «Хамăр ялăн хĕрĕсем кунтăк пек, таçти хĕрсем така пек»,— тесе. Ия, ĕмĕр çапла тарăхăн. Хула майрисем вĕсем юлхав. Ĕмĕрне те хресчен ĕçне вĕренеймĕç. Тьфу! Хăвала та кăларса яр катемписене. Тӳссе ан пурăн. Ялтисене тупăпăр. Чиперлĕх вăл, Рухиме инке, пасара тухма çеç кирлĕ.

Ял хĕрарăмĕсем ăна хытах хăтăрчĕç:

— Эх, çак Праскине... Чĕлхӳне хура хурт çиесшĕ. Пурне те кăшлан, тыллан. Рухиме инкен кинĕсем çырла пек, ывăлĕсем — ăмăрт кайăк. Вĕсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе тĕлĕнтерĕç-ха ял-йыша.

Рухиме инке ним те шарламарĕ. Қалаçман кулач, чĕнмен чĕкеç пулнă тет. Ваттисен йăлине пăхăнса пурăнать вăл ĕмĕрĕпех. Неллипе Налина кинĕсене нихăçан та ятлас сук. Қашăк-тирĕке тем тусан та шăкăртаттармастех. Чыслă, йăваш, тирпейлĕ, вăрçăсăр киле куйкăрăш кайăк иленет пулать. Çав кайăк ырлăхпа тупра кӳрсе тăрать. Кил-йышра кӳтсе çӳресе пĕрре шурă куç кăтартса сиввĕн ӳпкелеш кăна — сывă пул, куйкăрăш кайăк. Писет вăл пачах. Тытăнать вара килте инкек-синкек алхасма.

Рухимене ашшĕ-амăшĕ мĕн пĕчĕкрен çавăн пек ырă шухăша ĕнентернĕ. Çавна асра тытса пурăнать вăл. Унăн

килне ку таранччен хуйхă-суйхă ура ярса пусман-ха. Пурнăçĕ ытлăн-çитлĕн пырать. Мăшăрĕ ăна пĕрре те ăстиçук тесе ятламан, ялан шăкăл-шăкăл. Ывăлĕсем ав чунтан юратнă арăмсем тупрĕç. Юрату пур çĕрте килĕшӳ аталанать вăл. Кинĕсем майĕпен ял пурнăçне хăнăхаççех, кун пирки ним чухлĕ те иккĕленмест Рухиме. Халĕ вĕсен чăпчăп уйăхĕ те иртмен. Килес çул ывăлĕсене кашнине пĕрер çурт лартса парĕç акă. Уйрăлса тухĕç. Ватă куйкăрăш та хăйĕн чĕпписене сăпайлă мăшăрсен çĕнĕ килĕсене илентерĕ. Вĕсен пурнăçĕ пыл та çу пулĕ. Йĕкĕрешсен амăшĕ хăйĕн çутă ĕмĕчĕ çитессе ĕненет.

Пĕррехинче Рухиме кĕтӳ хуса таврăннă çĕре унăн кинĕсем кăмканран шыв шапăртаттараççĕ кăна — çăвăнаççĕмĕн. Хунямăш чунтан савăнчĕ. Праски пустуях сăмах ваклать. Вĕсен ыйхин те вĕçĕ пурах.

— И-и, ара, мĕншĕн ир вăрантăр, пепкемсем?— йăлйăл кулкаларĕ хунямăшĕ.

Неллипе Налина упăшкисем иккĕш те — тракторист. Вĕсем уя хăçан тухса кайнине арăмĕсем сисмесĕрех юлаççĕ. Ĕçрен таврăнни вара тăваттăшĕшĕн те — уяв.

Картишне кĕрсен трактористсем ниçта та мар, алкум вĕçне ларассĕ. Арăмĕсем ачашланаççĕ вара кушак çури евĕр: мăйĕсенчен пырса уртăнаççĕ, ыталаççĕ, чуп тăваççĕ, хăлхаран тем пăшăлтатаççĕ.

Упăшкисен аттисене хывасси вĕсемшĕн чи ырă самант: пуçланать чăн-чăн вăйă-кулă.

Черчен алăсем сăран атă кĕлисенчен, сăмсисенчен ярса тытаççĕ те пĕççисене кăкласа кăларасла тăпăлтараççĕ кăна. Анчах аттисем хывăнмаççĕ, лешсем урисене юри хирĕнтернĕ.

— Эх, çемçеккейсем,— йĕкĕлтеççĕ упăшкисем,— атă хывмалăх та вăйăр çук сирĕн.

— Çарăкĕ питĕ пысăк ӳснĕ! Тухмасть!— ахăлтатать арăмĕсенчен пĕри.

— Аннене чĕнес!

Амăшĕ илтсех тăрать, сас парать:

— Час пыратăп!

Айкашсан-айкашсан малтан пĕр атти, унтан тепри хывăнать. Авраса çыхнă тăласем салтăнаççĕ. Ун чух сăмсана тар шăрши пырса кĕрет. Нӳрлĕ тăласене силле-силле кашта çине типĕтме çакаççĕ. Упăшкисен урисем хуп-хура. Калăн: çул тăрăх тусан тĕрлеттерсе çӳренĕ тесе. Тата вĕсем темшĕн кашни кун улшăннă сăн-питпе таврăнаççĕ: куçĕсем — шалта, тарăн лупашкара пек; куç харшисем,

кăмрăкпа сĕрнĕн — сарлака; куç хăрпăкĕсем те йывăррăн çĕкленеççĕ.

Шыв кўрсе киличчен арçынсем пирус тивертсе яраççĕ. Тĕтĕмĕ иккĕшĕн те сўс çурăмĕ евĕр тăсăлать.

Қăшт каннă — ывăнни иртнĕ. Çăвăнма та юрать. Авифпа Акти пилĕк таран хывăнаççĕ. Мăшăрĕсем шывне хĕрхенмеççĕ, чашлаттараççĕ кăна çурăмĕсем тăрăх. Çўçенме мар, ўт-пў киленет.

Тул çутăлать, çĕнĕ кун пуçланать. Қаллех каçчен уйрăлмалла мăшăрсен. Тўсме çук тунсăх пусать тăваттăшне те.

— Пирĕн упăшкасемпе пĕрле пулмалла,— тет пĕринче Налина.— Атя, тухар эпир те хире!

— Анне, эпир Актипе Авиф патне уя каятпăр,— пĕлтерчĕ Нелли.

— Айтурах, пĕр-пĕрне курмасăр тўсейместĕр-и? Э-эй, сире, тупата... Юрĕ. Çăмарта хăпартни çисе кайăр,— Рухиме васкасах тĕпел кукрине чăмать. Питлĕхне уçса вĕри кăмакаран сĕтпе çăмарта лăкаса лартнă тăм чашăка кăларать.

— Ах, тутлă,— тесе сăрпалансах çиеççĕ апата кинĕсем.

Уя тухсанах трактор кĕрлени илтĕнчĕ. Вăрманта мар кунта, аташмăн.

Неллипе Налина упăшкисен килĕнче туй хыççăн пурăнма тытăнчĕç. Туй тени вара питĕ чаплă иртрĕ. Ялта пĕр çын та юлмарĕ пулĕ çĕн çынсене курма пыманни. Неллипе Налина хăйсен туйĕнчен шалт тĕлĕнчĕç. Шăп та шай театрти пек туйăнчĕ вĕсене. Выляканĕсем те, кураканĕсем те туй халăхĕ пулса хутăшса кайрĕç. Юрларĕç вара! Ташларĕç! Урай хăми епле тўсрĕ-ши? Нихçан та манас çук çав саманта, ĕмĕрлĕхех асра юлĕ. Пĕрле вĕреннисенчен туя никам та килеймерĕ. Ун чухне института кĕрес, экзамен тытас шухăш пулнă çав.

Ашшĕпе амăшĕ хĕрĕсене качча кайнăшăн çав тери кўреннĕ. Туя пыма мар, халичченех кулянаççĕ. Мăнукĕсене упраманшăн вĕсем кукамăшне ятлаççĕ. Юратăва çип татнă пек татма юраманнине ăнланасшăн та мар. Телей курасси — юратура. Хăйсем ученăйсем пулин те, ялтан тухнине маннă иккен. Çын тени çĕр çинче хăй выраннне кирек ăçта та тупать...

Çĕнĕ çынсем çулпа васкаса утаççĕ. Тракторсем Лашман вăрманĕ çумĕнчи хир тăрăх йăраланаççĕ ав.

Вăрман хĕррипе пынă чух вĕсем çеремлĕхре хĕрлĕ-хĕрлĕ пăнчăсене асăрхарĕç.

Нелли пĕшкĕнсе ларчĕ те симĕс курăк çулçисене сиресире пăхрĕ.

— Хурӑн ҫырли! — кӑшкӑрса ячӗ хайхискер. — Ах, пыл пек пылак-ҫке.

Налина мӗн пурӗ те икӗ ҫырла ҫеҫ тутанчӗ. Вӑл вӗрене ҫулҫинчен варинкке турӗ те унта ҫырла пухма тытӑнчӗ. Вӗсен сухаласа пӑрахнӑ сарлака ана урлӑ каҫмалла. Налина пушмакне хыврӗ. Унтан тинӗс хумӗ евӗр выртакан касӑсем ҫине кӗчӗ.

— Ҫӗр мамӑк евӗр ҫемҫе!

— Чӑнах-и?

Йалт-ялт сикеҫҫӗ хайхискерсем касӑсем урлӑ. Упӑшкисем аякранах асӑрхаса тракторӗсене чарчӗҫ.

Чи малтан Налина ҫитрӗ.

— Авиф! — чӗнчӗ вӑл трактор пускӑчӗ ҫине хӑпарса. — Ме хурӑн ҫырли.

— Эс ма ют картана кӗрен-ке? — шӑл йӗрет тракторист.

Упӑшки пичӗ ҫинчи ҫӗвӗке курасшӑн чӑр-р! пӑхрӗ Налина, анчах лешӗн ҫамки ҫӳҫпе витӗннӗ. Мӑшӑрӗ мар, Акти пулчӗ иккен. Ҫамрӑк хӗрарӑм аллине сулчӗ те тепӗр трактор патне вӗҫтерчӗ. Инҫетренех кӑшкӑрчӗ:

— Авиф!

— Қил-кил, хӗвелӗм! Аташрӑн-и-ке?

Ҫитрӗ те тинкерсе куҫне хӗссе илчӗ Налина. Упӑшки хӑйӗнпе калаҫса татӑлнине манман. Унӑн ҫамки ҫара, ҫӳҫне хыҫалалла тураса беречӗ айне чикнӗ.

— Хӑпар, — аллине тӑсрӗ Авиф. Налина трактор кабинине кӗрсе ларчӗ те упӑшкине ҫырлапа сӑйларӗ.

Трактор хускалса кайсан Налина кӑшт малалла ӳпӗнчӗ. Тӗмсӗлсе пӑхать хайхискер. Тӗлӗнтермӗш! Қуҫӗ умӗнчех умри хир улшӑнса пырать. Акти тракторӗ туртса пыракан плугӑн вичкӗн тӗренӗсем ҫӗр питне каса-каса ҫавӑрса пӑрахаҫҫӗ. Ана хуралса, хӑлтӑланса юлать.

Шухӑша каять ҫӗн ҫын: кӑпӑшкалатнӑ тӑпра ыраштулӑ пӗрчисемшӗн ӑшӑ та ҫемҫе сӑпка пек туйӑнса каять ӑна. Этеме тав тунӑн, ун кӑмӑлне килсе, акнӑ тырӑ кӑшӑл-л шӑтса тухӗ, сӗрӗшсе ӳсме тытӑнӗ. Патшалӑх пӳлми тӳпеми тулса ларӗ, сӗтел ҫинче ӑшӑ ҫӑкӑр пӑсланма тытӑнӗ. Қама пула ку? Ытти ӗҫченсемпе пӗрле трактористсем те вӑй хунипе мар-и? Тӗрӗс.

Налинӑна ҫак шухӑш ҫӗклентерсе ячӗ.

— Авиф, трактор тытса пыма вӗрент мана, — ыталаса илчӗ вӑл упӑшкине.

— Ме кирлӗ-ке вӑл сана?

— Эпӗ те сан пекех тракторист пулатӑп.

— Пул ара. Сӑна эпӗ руль рычагне еплерех турта-

турта пынине, педальсем ҫине хӑҫан пуса-пуса илнине.

Тек Авиф ним те шарламарӗ: арӑмӗ чӑннипех тракторист пулма ӗмӗтленнине куҫне пӑхса ӑнланчӗ. Ав епле вӑл унӑн хусканӑвӗсене сӑнать.

Вӑхӑт сисӗнмесӗр шӑвать.

Акти тракторне чарчӗ те ҫӗр ҫине сиксе анчӗ.

— Авиф!— кӑшкӑрчӗ вӑл аллине сулса.— Чар-ха тракторна!

— Мӗн пулнӑ-ке?

— Табак туртар.

Арӑмӗсем шит те юлмаҫҫӗ упӑшкисенчен. Тӑваттӑшӗ те пӗр тӗле пухӑнса тӑчӗҫ.

— Эпӗ... пӗлетӗр-и кам?— ыйтрӗ Налина виҫҫӗш куҫӗсенчен те пӑхса.— Тавҫӑрӑр, кам эпӗ?

— Ҫам?.. Налина эсӗ!

— Эпӗ Налина ҫеҫ мар. Эпӗ — трактористка. Упӑшкам мана трактор ҫӳретме вӗрентет. Ыран курӑр акӑ, трактора хам тытса пырӑп.

— Ай-яй, Налина, ытла чее эс!.. Эпӗ вара мӗнле?— хӑйне пайсӑр хӑварнӑн кӑмӑлсӑрланчӗ Нелли.

— Ҫам чарать сана?.. Эсӗ те, Нелли, трактористка пул. Сана та вӗренттӗр мӑшӑру.

— Тӑванӑм! Тӗрӗс калать мар-и-ке Налина!— ӑна ҫурӑмӗнчен лӑп-лӑп лӑпкаса илчӗ Акти.— Тӑватсӑмӑр та тракторист пулатпӑр! Хамӑрах — пӗр бригада, Уткин трактористсен бригади. Мӗнле, чаплӑ янӑрать-и? Бригадирӗ — Налина Уткина.

Пурте алӑ ҫупса ячӗҫ.

— Акти, апла тӑк мана та паянах вӗрент руль тытма. Юрӗ-и?— тилмӗрет Нелли.

— Есть!— аллине ҫарти пек ҫӗклесе чыс тӑвать Акти.

— Бригада!.. Трактор ҫине!— команда парать Налина. Тӑваттӑшӗ те хӑйсен хурҫӑ учӗсем патнелле ыткӑнаҫҫӗ. Налина — бригадир. Вӑл чӑнласах йышӑнчӗ ҫак чаплӑ ята, ӑна тӳрре кӑларасшӑн чунне пама хатӗр.

Темиҫе кун иртрӗ. Вӗсем хӑйсем халичченхинчен ытларах сухаланине асӑрхарӗҫ.

— Эсир пулӑшнипе пирӗн ӗҫ ӑнса пырать,— Неллипе Налинӑна мухтать Акти.— Ҫапла эпир суха планне темиҫе хут ирттерсе тултарӑпӑр.

Арӑмӗсем упӑшкисене юрама пӗлнишӗн хавасланаҫҫӗ, татах та тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫилне хуралнӑ пит-куҫпа килсе кӗни вӗсене нимӗн чухлӗ те хурлантармасть.

Неллин пит ҫӑмарти ҫинчи ҫарӑк вӑрри пысӑкӑш тур палли кун каҫа пысӑклансах каять, ясмӑк пекех курӑнма

тытӑнать. Акти сӑнать-сӑнать те ӑна кулса ямасӑр тӳсеймест. Тусан пӗрчисем мӗншӗн-ха ытларах ҫав пӗчӗк пӑнчӑ тавра купаланаҫҫӗ? Акти арӑмне чуп туса илмесӗр тӳсеймест вара. Нӳрлӗ тутипе шӑп ҫав тур паллине тивертет те пӑшӑлтатса калать:

— Савнӑ мӑшӑрӑм, ӑҫтан тупӑнтӑн-ке эсӗ ман тӗле?

— Мантӑн-и вара шурӑ акӑша?— кулма тытӑнать Нелли.

— Мӗнле акӑш?— тӗлӗненҫи пулать Акти.

— Ара, акӑш хӑвӑн умна анса ларчӗ-иҫ. Уяр кунччӗ ун чух. Хӗвел шартарса пӑхнипе кусна та уҫаймастӑнччӗ. Ху куриччен эпӗ акӑш ҫуначӗ айӗнчен ялт сиксе тухрӑм та сана ыталарӑм.

Иккӗшӗ те каҫса кайсах ахӑлтатаҫҫӗ.

Налина упӑшкипе пӗрле трактор кабининче ларса пынӑ чух пачах калаҫмасть. Кун каҫа темиҫе хутчен те мӑшӑрӗ вырӑнне ларса трактора хӑй тӗллӗн тытса пырать, суха тӑвать.

Авиф усӑсӑр пакӑлтатса арӑмне чӑрмантарма именет. Унӑн чиперлӗхне, ҫыпӑҫуллӑ аллисене, сӑн-сӑпатне пӑхса тӑранаймасть.

— Налина, ывӑнмарӑн-и?— тесе ыйтсах тӑрать вара. Вӑл юратнӑ ҫыннине ҫухатасран хӑрамаллипех хӑрать.

Пӗррехинче Авифӑн сехрине хӑпартма тиврӗ. Ҫӗрле хӑй ҫумӗнче ҫывӑракан арӑмӗ ӑна кӑвар пек пӗҫертсе илчӗ.

— Мӗн амакӗ?— мӑкӑртатрӗ вӑл хӑй тӗллӗн. Лешӗ йынӑшнине илтрӗ те шартах сикрӗ.— Налина, тӑр-ха, эсӗ чирленӗ-им-ке?

— Ай, темле усал тӗлӗк куртӑм,— терӗ Налина.— Ман ӳт-пӗр, шыв ӗҫес килет.

— Санӑн — температура.

— Ах, ӑш ҫунать,— ахлаткаласа аран пуҫне ҫӗклерӗ Налина шӑм-шакӗ ҫав тери йывӑррине туйса.

— Налина, сана трактор кабининче ҫил вӗртерсе пынӑ пулас.

— Темӗн... Пӗлместӗп... Ах, пуҫ ҫурӑлать,— ҫунса тӑракан тутипе пӑшӑлтатрӗ Налина.

— Чим, сана халех сиплемелле.

Авиф вырӑн ҫинчен тӑрса пӳрте кӗчӗ. Тепӗр самантран вӑл температурӑна чакаракан эмелпе шыв илсе пычӗ. Ирӗксӗрлесех ӗҫтерчӗ ӑна. Вара выртрӗ те арӑмне ыталарӗ. Ыйӑхӗ самантрах таҫта вӗҫсе тарчӗ ун. Пуҫне пӑшӑрханулла шухӑшсем капланса килчӗҫ.

Тул ҫутӑлчӗ. Актипе Нелли вӑранчӗҫ ав. Ҫӑвӑнаҫҫӗ.

Пĕр-пĕрне сивĕ шывпа сирпĕтеççĕ пулас, ахаллĕн ых! текелесе ахăлтатмĕччĕç.

Авиф хускалса илчĕ.

— Налина,— чĕнет вăл арăмне ачашласа,— паян уя ан пыр. Эсĕ ываннă. Кан кăштах.

— Мĕн эс, Авиф?— тăрса ларчĕ Налина. Хăйĕн пуçĕ кĕрхи вăрман пек кашлать.— Эпĕ санран тем тусан та юлмастăп.

Хирĕçлеме те аптрать Авиф. Ăна киле хăварсан инкек килсе тухасран хăрать. Иккĕш те тăрса тумланчĕç.

Амăшĕ апат хатĕрлесе те хунă. Сĕтел çинче тем те пур: ăшаланă какай, çăмарта, кукăль, сĕт... Сăйлать кăна вăл ывăлĕсемпе кинĕсене.

— Анне, хăв мĕншĕн çиместĕн?— теççĕ ачисем.

— И-и-и, ара, эпĕ ĕлкĕрĕп-ха,— хур ами евĕр тăпăртатса тăрать вăл сĕтел умĕнче.

Тăваттăшĕ те килĕнчен пĕрле тухса кайрĕç.

Хирте упăшкипе юнашар ĕçленĕ май Налинăн чирĕ чăнах та таçта çухалчĕ. Шăм-шакĕ те çăмăлланчĕ, пуçĕ те ыратмасть. Арăмĕ хаваслăн калаçни, куçĕ каллех çăлтăрла ялкăшни Авифа аранах лăплантарчĕ.

— Пире хамăра уйрăм трактор кирлĕ,— упăшкине тĕлĕнтерсе персе ячĕ Налина.

— Трактористшăн руль тытма пĕлни çеç сахал,— пÿлчĕ ăна мăшăрĕ.— Хурçă ут ăш-чиккине витĕр курса тамалла. Тата ăна çÿретме права кирлĕ.

— Вĕрент.

— Çу шухăш тĕрĕс,— килĕшрĕ унпа Авиф.

Çак самантран пуçласа тăваттăшĕ те кĕнеке тытрĕç. Хиртен таврăнсан лампа çутипе темччен лараççĕ вĕренсе. Амăшĕ хĕрхенет кинĕсене.

— Ывăлăмсем, çитĕ ĕнтĕ хăвăра муритлеме,— тилмĕрет вăл.— Неллипе Налина ываннă пулĕ, канма ирĕк парăр!

— Ан пăшăрхан, анне!

— Пирĕн часрах тракторист пулас килет,— хăйсен çутă ĕмĕтне пĕлтереççĕ кинĕсем.

Пĕринче Актипе Авиф арăмĕсене мастерскойне ертсе кайрĕç. Сĕтел çине тĕрлĕ детальсем сапаласа хучĕç.

— Акă сирĕн валли трактор,— кулкаларĕ Акти.

— Ай-уй!— тĕлĕнчĕ Нелли.— Тракторăн çавăн чухлĕ деталь-и? Манран вĕренесси пулмасть пуль...

— Вĕренетпĕр,— хавхалантарчĕ ăна Налина.

Трактор — кăткăс машина. Пурне те ытла хăвăрт ăнкараймăн. Çапах хастар чунлисене парăнать вăл. Ун йышши-

сем ҫĕнтереҫҫех. Налинăпа Неллин, вăтам шкул пĕтернĕскерсен, пĕлĕвĕ ҫителĕклех. Ҫав пулăшать те вĕсене. Юлашкинчен, чăнах та, трактора витĕр пĕлекен пулчĕҫ. Упăшкисем панă ыйтусене пĕр-пĕринпе ăмăртмалла хуравларĕҫ.

Ҫакăн хыҫҫăн Налинăпа Нелли районти механизаци шкулне кайрĕҫ.

— Эпир тракторпа ĕҫлесшĕн, пире права кирлĕ,— терĕҫ вĕсем директора. Вара хăйсен пурнăҫĕпе шухăшĕмĕчĕ ҫинчен каласа пачĕҫ.

— Мĕнех,— килĕшрĕ директор.— Пире трактористсем ҫăкăр пекех кирлĕ.

Экстерн йĕркипе экзамен тытрĕҫ хайхискерсем. Экзаменаторсем питĕ лайăх хак пачĕҫ вĕсен пĕлĕвне. Телейлĕ йĕкĕрешсем удостоверенисем илсе килне питĕ хаваслăн таврăнчĕҫ.

Кĕрхи ҫĕртме тăвас вăхăт ҫитрĕ.

Пусă тăрăх тăвата трактор умлă-хыҫлă пынине пĕтĕм ял-йыш курса тăрать. Пĕтĕм ял халăхĕ Уткинсене мухтать.

— Акă сана, лутра кăвакал, хула хĕрĕсем!— савăнать Налинăпа Нелли хуняшшĕ.

— И-и-и, ара,— сăмах чĕнмесĕр юлмасть хунямăшĕ те,— мĕн каласси пур, пирĕн кинсем пек маттурри таврара сайра. Ывăлăмăрсем ĕҫчен арăмсем тупрĕҫ.

## 16

Юпа уйăхĕ. Кунсем ҫурхи шыв пек васкаҫҫĕ. Ун юххинче — шурă пăрахут. Ишет-ишет малалла. Унăн хуҫи — Оня. Савăнса кăна пырать. Ара, пурнăҫ калама ҫук кăсăк.

Пăрахут чаплă портра чарăнать. Кам хирĕҫ тухса кĕтсе илĕ-ши ăна? Акă ҫыран хĕррине пăхса ытармалла мар чипер принц тухса тăрать. Аллине тăсать вăл хĕр патнелле. «Хам кермене чĕнетĕп!»— тет. Турткалашса тăни вырăнсăр. Ĕмĕтленмен-и вара вăл ҫакнашкал йĕкĕт тупăнасса? Оня аллине парать те калать: «Санпа эпĕ, юратнă ҫыннăм, ĕмĕр пĕрле утма хатĕр».

Принц хĕре тӳрех хăйĕн керменне илсе каять. Ку Оньăн ирхи тĕлĕкĕ пулчĕ. Тĕрĕссипе пурнăҫра ҫапла пулса иртрĕ.

* * *

Оня пӳлĕмре пĕчченех ларатчĕ. Судьяпа ытти юристсем ĕҫпе тухса кайнă.

Сĕтел ҫине ӳпĕнсе Оня ĕнер судра ҫырнă протокола

тĕрĕслеме тытăнчĕ: йăнăшсем çук-и, шухăшĕсем ăнланмалла-и?

Хăй аллинчен ăсатиччен вăл протоколне ялан тепĕр хут тишкерет, унти кашни сăмах этем кун-çулĕпе çыхăннă-çке-ха.

Сасартăк пӳлĕмре такам сасси янăраса кайрĕ, хрусталь черккесене пĕр-пĕрин çумне тивертсе илнĕ пекех пулчĕ ку.

— Ыйтса пĕлме юратчĕ-ши?

Ялт! çĕклерĕ пуçне Оня. Сĕтел умĕнче кĕрнеклĕ çамрăк çын тăра парать. Сарлака çамкаллăскер хăй, чĕп-чĕрĕ куçлă, янаххи шĕвĕр. Çиййĕнче кăвак костюм. Кăпăшка сарă çӳçне чалăшшăн тураса айккинелле вырттарнă.

Хĕрпе каччă куçĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç. Оня чĕри тăлт-тăлт тапма тытăнчĕ. Ак тамаша! Мĕне пĕлтерет ку? Ана сасартăк вĕрилентерсе пăрахрĕ. Сисет: вăл хĕрелнĕçемĕн хĕрелет. Пуçĕнче самантрах илемлĕ шухăш çиçсе илчĕ: ку эпĕ тĕлĕкре курнă принц пулмарĕ пуль те? Хĕр хăй сисмесĕрех йăлтăр кулса илчĕ.

Çамрăк çын кăмăлĕнче те темĕн ирĕлчĕ. Куçĕсем хĕр çине ăшă хĕлхем сапрĕç. Вăл та хирĕç кулса ячĕ.

— Мĕн кирлĕччĕ?— аранах ыйтрĕ Оня сĕтел умĕнче тăракан йĕкĕтрен.

— Судья пур-ши? Унпа калаçмаллаччĕ те.

— Кăштах кĕтме тивет сирĕн. Ларăр.

Мĕн йӳтĕмпе çӳрет-ши ку каччă? Оня тĕпчемест. Унашкал йăла çук ун. Çынсем, паллах, ытахальтен халăх сучĕн алăкне уçса хупас çук — инкек çавăтса килет вĕсене.

Çепĕç чĕлхеллĕ-мĕн ку çамрăк çын: ларнăçем хăй чунне йăлтах уçса пачĕ.

Алмут Сараттин — çапла ун ячĕпе хушамачĕ. Çулĕпе çирĕм пĕррере иккен. Амăшне вун сакăр çул хушши курман тет: лешĕ хăйĕн тăван ывăлне виççĕ тултарнă-тултарманах пăрахса хăварнă. Упăшкасăрскер, телей шырама тесе Çĕпĕре тухса кайнă та сас-хура памасăр пурăнать. суту-илӳре ĕçлесе растрата тунăшăн юлашки тăхăр çулне вăл тĕрмере ларнă-мĕн.

Пĕчĕк Алмут уборщицăра ĕçлекен кукамăшĕпе ӳснĕ. Укçи-тенки нихçан та çитмен вĕсен. Апла пулин те ватă карчăк вутăлăх хатĕрленĕ икĕ метрлă çинçе вулăллă йывăçран мунча пек пĕчĕк кил-çурт çавăрать. Çавăнта мăнукĕпе пурăнса ĕмĕрне вĕçлет кукамăшĕ. Ун чухне Алмут саккăрмĕш класран тин çеç вĕренсе тухнă-ха. Ачана ырă чунлă çынсем пĕтме паман — профтехучилищĕне вырнаçтарнă. Вĕрентнисĕр пуçне кунта Алмута тантăшĕсемпе пĕрле çитереççĕ, тумлантараççĕ, общежитире усра-

ççĕ. Чиперех вĕренсе тухать. Ёнтĕ вăл — слесарь. Завода хапăлласах йышăнаççĕ ăна. Çур çул ĕçлесен çара каяс вăхăт çитет.

Икĕ çул хăвăрт иртет çарта. Ун хыççăн каллех завод кĕтсе илет салтака. Хваттер париччен кукамăшĕн пĕчĕк пӳртĕнче шараçланма тивет ирĕксĕрех.

Ĕçлет салатак, каçхи университета кĕме хатĕрленет. Сĕтелĕ çинче — кĕнеке, тетрадь.

Уяр çанталăкра аça çапнăн, ним кĕтмен çĕртен кукамăш пӳртне пĕр хĕрарăм кĕрсе тăрать. Қам ку? Палламасть вăл. Қукамăш сăнлă пулни çеç Алмут амăшĕ иккенне ĕнентерет. Чирлĕ иккен: сылтăм енне унăнне шалкăм çапнă. Алли лăнчăр-ланчăр. Тĕрмерен тухсан вăл пĕр хулари пульницăра выртнă-мĕн. Аллă урлă çеç каçнă инвалидăн пенси илмелле ёнтĕ, анчах унăн чи кирли — ĕçленĕ çулĕ — сахал. «Эпĕ сана çуратнă. Эсĕ пăхма тивĕç мана»,— тет вăл халь ывăлне. «Тĕрĕс. Çуратасса çуратнă-ха, анчах пăхса ӳстермен-çке»,— килĕшесшĕн мар ывăлĕ. Амăшĕ çав-çавах хирĕçлет: «Енчен те хăв ирĕкӳпе пулăшмасан сана вăйпах алимент тӳлеттерĕç». Алмут амăшне кукамăш пӳртĕнче пурăнма чармасть, хăй вара общежитие пурăнма куçать.

Оня ку пăтăрмах çинчен илтнĕ-ха. Темиçе кун каялла çав ыйтупа пĕр хĕрарăм килнĕччĕ кунта. Çак каччă амăшĕ пулчĕ-и вăл? Çине таса мар, кĕрен тĕслĕ çĕтĕк плащ тăханнăччĕ. Уйрăмах кĕсйи анисем тикĕтпе сĕрнĕн çуталса тăратчĕç. Сылтăм çаннине, унта хул çук пекех, кĕсйине чикнĕ. Сулахай аллинче — патак. Çĕтĕк чăлха тăханнă уринче — чалăш кĕлеллĕ кивĕ пушмак. Пичĕ-куçĕ хăйĕн типсех ларнă вара. Тути чалăшнă.

Хăй пурнăçĕ çинчен ним пытармасăр каласа панă хĕрарăма Оня пĕр йĕрĕнсе, пĕр хĕрхенсе пăхнăччĕ...

Судья килчĕ.

— Мĕн çĕнни пур?— ыйтрĕ вăл Оньăран.

— Нимех те... Сирĕн патăра килчĕ-ха кунта...— Алмут синелле пуçне сĕлтрĕ Оня.

— Тархасшăн,— чĕнчĕ судья Алмут Сараттина...

Алмут судья патĕнчен тухсан аякках кайман, урамра Оньăна кĕтсе тăнă. Ёмĕтĕнчи хĕр шăп çавăн пек туйăннă ăна.

Қун хыççăн вĕсем темиçе хутчен те тĕл пулчĕç. Мĕн çинчен калаçрĕç-ха вĕсем? Тем çинчен те. Қирек хăçан та вĕсен сăмахĕ килĕшсе пычĕ. Пĕррехинче хĕр Алмут амăшĕ пирки калаçу пуçарчĕ:

— Ху ĕçне суда ан çитер, Алмут.

— Хам ирӗкпех ма укҫа-тенкӗ тыттарас-ха ӑна? Вӑл мана ҫуратнӑ та йыт ҫури пек пӑрахса хӑварнӑ.

— Ҫапах та вӑл аннӳ-ҫке. Ҫитменнине, чирлӗ.

— Ҫапла та-ха,— текелет Алмут. Вӑл, паллах, сыв мар амӑшне хӗрхенет те.

Тепрехинче Оня сӗннипе Алмутпа иккӗш ӗҫ хыҫҫӑн кучченеҫ туянса амӑшӗ патне кайрӗҫ. Питӗ савӑнчӗ выртанпах выртакан хӗрарӑм. Оня вара каччи амӑшӗн кӗпи-йӗмне ҫурӗ, пӳртне-ҫуртне тирпейлерӗ.

— Алмут, ҫитес канмалли кун вут тиесе кил,— хушрӗ ӑна Оня.

— Юрӗ,— килӗшрӗ йӗкӗт. Хӑй куҫ илмесӗр сӑнать ӑна. «Мӗнле-ха вӑл ют хӗрарӑма нимӗн чухлӗ те тиркемест? Ҫӑвать, тасатать,— тӗлӗнет Алмут.— Оня хӑйпе пӗрле хӗвел илсе кӗчӗ, мунча пек пӗчӗк пӳрт ӑш-чикки ҫап-ҫутӑ ҫуталчӗ. Мӗн ку? Ҫакӑ мар-и юрату тени? Телейлӗ эпӗ ҫакнашкал хӗр тӗлне пулнӑшӑн».

Оня пӗр-пӗринчен ютшӑнса ҫитнӗ ывӑлӗпе амӑшне кӗске вӑхӑтрах ҫывӑхлатрӗ. Пурнӑҫ тӗллевӗ шӑп ҫакӑ икӗ ҫынна телей ӑшши парса тӑнинче пек туйӑнать ӑна.

— Юрататӑп сана, Алмут,— хӑюланчӗ пӗр каҫхине Оня.

— Эпӗ те,— пӗлтерчӗ йӗкӗт.— Пӗрлешер. Ӗмӗр пӗр-пӗрне савса пурӑнӑпӑр.

— Аннӳне пӑрахмастпӑр,— тет Оня.— Пӑхатпӑр ӑна.

— Шалкӑм ҫапни иртсе кайсан ӗҫлетӗп-ха,— ӗмӗтленет амӑшӗ.

«Тур пачӗ пуль мана ку лайӑх кине. Кун-ҫулӗ вӑрӑм пултӑр: ялан ырӑ курччӑр»,— ҫапла тав тӑвать вӑл Оньӑна хӗпӗртесе.

* * *

Оня хӑйӗн тантӑшӗпе — Лариспа курнӑҫрӗ.

— Качча тухатӑп. Ҫитес вырсарни кун пирӗн туй пулать. Чӗнме килтӗм. Кавике хӑвӑнтан ан хӑвар,— терӗ вӑл.

— Емил таврӑннӑ-им?— тӗлӗнчӗ лешӗ.

— Мӗншӗн Емил?.. Эпӗ хама чӑннипех юратакана тупрӑм.

— Кам вара вӑл, ҫав тери телейлӗскер?

— Алмут...— Оня ун ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпех каласа пачӗ.— Ӑна кӗҫех хваттер параҫҫӗ. Амӑшне хамӑрпа пӗрле илсе каятпӑр.

Туй умӗн Емил килчӗ, анчах вӑл кая юлчӗ ӗнтӗ. Ӑна Оня туйӗ пирки Кавик пӗлтернӗ иккен. Емил ҫарта лайӑх

салтак шутěнче. Çавăнпа хăйне отпуска яма ыйтсан командирсем хирěçлемерěç.

— Мěншěн мана кěтмерěн?— йěрсе ярасла ыйтрě Емил коридора чěнсе кăларнă Оньăран.

— Чухлаймастăп,— пуçне сулкаларě Оня.

— Çыру çырсах тăраттăмăр-çке. Сана юратнипе эпě ялан хавхаланса çÿреттěм.

— Эсě мана юратнă-и?— тěлěннипе куçěсене чарса пăрахрě Оня.

— Юратнă, паллах.

— Мěншěн маларах каламарăн?

— Вăтантăм.

— Халě кун пек калаçуран ним усси те çук. Луччă телей сун мана. Эсě те хăвна юрăхлă арăм тупăн-ха.

— Эпě нихçан та авланмастăп,— çар çыннилле ялт! çаврăнчě те чупсах тухса кайрě Емил.

— Сывă пул, Емил!— тесе юлчě Оня.

## 17

Кавик смена пуçланнăранпа виç çěр вуннăмěш деталь ăсталарě те станокне чарчě. Виçрě. Сарлакăшě те, вăрăмăшě те чертежра кăтартнă пекех тěрěс. Чунě хурланса килчě ун. Юлашки кун ěçлерě-çке вăл. Ăна çара илеççě— ыран тухса каймалла.

Цеха куçнăранпа икě уйăх та çитеймерě-ха. Килти пекех, хăвăрт хăнăхрě çěнě вырăна Кавик. Юлташěсем те ырăскерсем. Хăйне çирěплетсе панă станок та ыттисем хушшинче мăнаçлăн курăнса ларать. Цеха кěрсен вăл кăчăк туртнăнах туйăнатчě. Кавик хавас кăмăлпа ěçе пуçăнатчě. Туслă ěçлетчěç иккěшě. Станок ăна ăнланатчě, тупата. Мěн чухлě тата мěн йышши кăна деталь туса кăларман-тăр! Вăл, хуçине тěрěслес пек, сайра хутра чăхăмлакаласа та илетчě. Сасси урăхларах кăлтăртатма тытăнатчě. Мěншěнни паллă: шестернисем çу ыйтаççě. Çу сěретěн те — станок каллех хăй кěввине пуçлать. Çын алли пулăшнипе касать, якатать, пăралать...

Иртенпе ăсталанă детальсене Кавик кирлě çěре кайса пачě. Контролерсем лайăх хакпа йышăнчěç вěсене. Токарь каллех хăйěн ěç вырăнне таврăнчě. Станокне çěтěкпе шăлса тасатрě. Ун çине, инструменчěсем çине салхуллăн пăхрě. Речěпех выртаççě ав: резец, пăра, зенкер, метчик, штангенмаузер, микрометр... Вěсемсěр нимле деталь те ăсталама çук.

Хăйне ĕçе вĕрентнĕ Силантий Егорыч патне кĕчĕ Кавик. Савăнăçĕ сахал мар пулнă кунта. Анчах та йĕкĕте темшĕн ăнăçсăр самант аса килчĕ. Халĕ те пулин вутта пăрахнăн пĕçертсе илчĕ. Питĕнчен тепле юн пĕрхĕнмест.

...Цеха штифт ятлă деталь тума заказ панăччĕ. Çак ĕçе никама та мар, Кавике хушрĕç. Пĕрре пăхма детале ăсталама йывăрах та мар пек: чăн-чăн патак, икĕ вĕçĕ шĕвĕр. Çакă çеç. Пĕлесчĕ. Мĕнле хавхаланса ĕçлерĕ Кавик. Туса тултарчĕ вăл, тур çырлах! Кайран шар курчĕ. Деталĕсене йышăнмарĕç. «Брак. Чертежра кăтартса панă виçене ларайман»,— терĕç. Мĕнле кулянчĕ ун чух Кавик. Ăна ним хĕрхенмесĕр ятларĕç: пĕрре материал сая кайрĕ, тепре — вăхăт. Заводран тухса тарма та шут тытнăччĕ ун чух вăл. Юрать-ха Силантий Егорыч йăпатса калаçрĕ.

Егорыч станок умĕнче пĕр çамрăка тем ăнлантарать. Вăл Кавика асăрхарĕ те:

— Каятăн эппин?— терĕ чĕринчен тухакан сасăпа.

— Ахă. Сыв пуллашма кĕтĕм.

— Ну, чысна ан çухат. Заводра лайăх токарь пулнă пекех, çарта та йĕркеллĕ салтак пул.

— Тăрăшăп, Силантий Егорыч.

— Шанатăп.

Алă тытсах уйрăлчĕç ватăпа çамрăк.

Завод хапхи умĕнче Ларис кĕтсе тăрать ăна. Кавик тăван тавралăхпа сыв пуллашасшăн. Хĕре вăрмана чĕнет. Мотоцикл хатĕр: Кавик хăй ĕçлесе илнĕ укçипе туяннă ăна. Вĕçтерчĕç вара çĕмрен евĕр.

Йĕкĕтĕн чунĕнче лăпках мар. Ларис пирки пăшăрханать вăл: юратнă çынсăр çÿреме çитĕ-ши тÿсĕмĕ? Авланасшăнччĕ Кавик. Анчах Ларис качча тухма килĕшмерĕ. «Эпир арлă-арăмлă пулма ытла çамрăк-ха. Пирĕн ÿссе çитĕнмелле. Санăн çара кайса килмелле малтан. Эсĕ таврăнасса кĕтетĕп. Урăххи мана никам та кирлĕ мар»,— терĕ. Ăна, паллах, шанма пулать. Çапах та пыра темĕн капланса килчĕ.

Çÿрерĕç вĕсем пĕр кана йывăççем хушшипе. Хăйсем пĕлекен çĕмĕрт патне пырса тухрĕç. Кĕтнĕ тейĕн вăл: шапшурă тумпа капăрланнăскер, таврана тутлă шăршă сарать. Кавик икĕ пĕчĕк турат хуçса Лариса парнелерĕ.

— Тавтапуç. Çĕмĕрт ир чечеке ларнă кăçал,— терĕ хĕр.

— Пирĕн ятпа вăл,— ăна çепĕççĕн ыталарĕ каччă.

Кавиксен килне хăнасем пухăннă. Паян ăсату каçĕ. Амăшĕ пÿртре кускалать кăна. Шкулта пĕрле вĕреннисенчен Марек, Дора, Оньăпа упăшки, Влас Шиманский, Лена Шерефина килнĕ. Лена милици формипе. Вăл ГАИ уйрă-

мӗнче ӗҫлет, техникумра заочнӑ вӗренет. Ҫинҫе пилӗклӗ тӑпӑлкка хӗре тем тӑхӑнтартсан та килӗшет-тӗр. Нумаях пулмасть пӗр хаҫатра Ленӑна ҫак тумпа ҫапса кӑларнӑччӗ.

Заводран килнӗ ҫамрӑксем те темиҫен кунта. Вӗсем хушшинче Кавикӗн чи ҫывӑх тусӗ Толя та пур.

Цехран виҫ-тӑватӑ ҫамрӑк ҫара каять. Ҫав ятпа ятарласа пуху та ирттернӗччӗ. Пулас салтаксене ырӑ сунса ӑшӑ сӑмахсем каларӗҫ, парнесем пачӗҫ.

Сӗтел ҫине апат лартма Кавик амӑшне Дора пулӑшать.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, мотоцикл кӗрлени илтӗнчӗ. Темиҫен пӗр харӑс чӳрече патне ыткӑнчӗҫ.

— Вӗсем!

Хваттере кӗрсен Ларис вазӑна шыв ярса ҫӗмӗрт чечекне комод ҫине лартрӗ.

— Халӗ пурте сӗтел хушшине ларӑр,— чӗнет хӑнасене кил хуҫи хӗрарӑмӗ. Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫаҫҫӗ. Пурте хаваслӑ. Мӗншӗн мӗскӗнленмелле-ха? Ҫынна вӑрҫӑ хирне ӑсатмаҫҫӗ-ҫке. Каччӑ ҫар ретне тӑма юрӑхлӑ пулни уншӑн — пысӑк чыс.

Вырнаҫса ларчӗҫ пурте сӗтел хушшине. Черкке ҫӗкленӗччӗ ҫеҫ — шӑнкӑрав сасси илтӗнсе кайрӗ.

Пӳлӗме тӑваттӑн кӗрсе тӑчӗҫ. Малтан—Неллипе Налина.

— Кӗме юратчӗ-ши?— теҫҫӗ.

Марек, Влас, Кавик йӗкӗрешсене хупӑрласа илчӗҫ.

— Ас тӑвӑр, хуллентерех,— тет Нелли.— Хыҫалта упӑшкасем.

— Ҫав тери кӗвӗҫ вӗсем, сыхланӑр,— шӳтлет Налина та.

— Пирӗн хӗрсене ҫапла вӑрланӑшӑн выговор памаллаха вӗсене,— кулкалать Марек.

Хваттер ҫамрӑксен сассипе янраса тӑрать.

Йӗкӗрешсем хӑйсен упӑшкисемпе паллаштарчӗҫ.

Неллипе Налина — телейлӗ. Маттур темелле вӗсене. Ашшӗ-амӑшне ҫав тери савӑнтарчӗҫ. Пӗр уйӑх каярах хаҫатра очерк пичетленсе тухрӗ. Унта йӗкӗрешсен трактор звени епле ҫитӗнӳсем туни ҫинчен ӗненмелле ҫырса кӑтартнӑ.

Йӗкӗрешсем тӑваттӑшӗ те кӑҫал ял хуҫалӑх институтне заочно вӗренме кӗме хатӗрленеҫҫӗ.

Ӑсату каҫӗ тул ҫутӑличчен тӑсӑлчӗ. Юрласа, ташласа, ӑшшӑн калаҫса каҫ ӗнтрӗкӗ сирӗлни те сисӗнмерӗ. Ҫывӑрма выртмасӑрах Кавике ӑсатма тухрӗҫ.

Ҫуран утрӗҫ пурте.

Ларисла Кавик ҫавтӑнса чи хыҫалта пыраҫҫӗ.

— Анне патне час-часах кӗрсе тух,— тет каччӑ,

— Юрӗ,— сӑмах парать Ларис,

— Ан тунсăхла. Çыру кашни кун çыр.

— Сансăр пурăнаймастăп эп... Çыратăп.

Пулас салтаксене военкомата çитнĕ-çитмен машина çине лартма тытăнчĕç.

— Ҫавик, лайăх салтак пул!

— Салтак ятне çӳле çĕкле!— пил параççĕ ăна.

— Генерала çит! Десанта кай!— Ҫавике çурăмĕнчен лăпкарĕç Актипе Авиф.

Ларис пит çăмартийĕ тăрăх çутă тумламсем юхса анчĕç.

— Мĕн эсĕ, Ларис? Тархаслатăп, куççуль ан кăлар,— хĕре чуп турĕ Ҫавик.

Машина тапранчĕ. Туссем хыçа юлчĕç. Пулас салтаксене пил сăмахĕсем çеç хуса çитеççĕ:

— Тăван çĕр-шыва куç пек сыхлăр!

— Ырă-сывă çаврăнса çитмелле пултăр!

— Ҫ-а-в-и-и-к!.. Кĕтетĕп сана!..

# ЙĂНĂШСАН — ЁМĔРЛĔХЕ...

## 1. Ан юрат

Пуйăс тапранса каяс умĕн тĕпĕртетсе кĕчĕç вĕсем вакуна: икĕ хĕрпе пĕр йĕкĕт. Васканипе пит çăмартийĕсем хĕп-хĕрлĕ, тепле юн пĕрĕхсе тухмасть. Хаваслă хăйсем. Хура кĕрĕк тăхăннă хĕрĕ пирĕн купене кĕчĕ.

— Федот! Тунюк! Ман вырăн кунта!— пĕлтерчĕ вăл. Унтан васкасах ещĕке уçрĕ те Федот текенни унта чăматансене лартрĕ.

— Ай, ытла телейлĕ эсĕ. Вырăну аялта,— ăмсанчĕ Тунюк тантăшне. Хăй те аякках каймарĕ. Ун вырăнĕ — коридорта чӳрече умĕнчи тăрăхла сак. Йăнăçлах мар та ёнтĕ, мĕн тăвăн?

Федот вырăнĕ урăх купере пулнă иккен. Анчах пирĕн купере çӳлти хутра сак йышăннă çынна ӳкĕтлесе çийĕнчех вырăнне улăштарчĕ.

Тумтирĕсене хывса çакрĕç хайхискерсем. Пики ытла чиперскер. Сарă. Çӳçĕ вăрăм. Куçĕ кăн-кăвак. Пĕвĕ хăва хулли евĕр яштака та çинçе. Илемлĕ пӳрнисенче мерчен куçлă çĕрĕсем.

Федот та хитрескер. Çӳллĕ. Çыра çӳçне кĕскен кастарнă, умĕнчине вара çӳлелле тураса якатнă. Куçĕ шупка хăмăр. Пичĕ — шурă.

«Çамрăк мăшăрсем пулас»,— шухăшлатăп вĕсем çине пăхса.

Пире хирĕçле сак çине вырнаçрĕç çакскерсем. Чиперкки: «Федот, Федот!»— тесе çеç тăрать. Йăна ыталать, ачашлать. Ун çумне çыпăçать, Федочĕ вара тунката пекех ним йăшăлтатмасăр ларать. Хытă чĕреллĕ-ши е пачах юратмасть ăна?

Апатланма тытăнчĕç. Тем те пĕр кăларса хучĕç сĕтел çине. Эрехĕ те пур, вăлчи те...

— Федот, эрех ĕçиччен малтан чăх какайĕ çи. Федот, тен, пĕçернĕ çăмарта кирлĕ?

Лешĕ тавтапуç тесе те каламасть иçмасса. Пире те

апата чĕнеççĕ. Çăкăр-тăвартан аслă пулма хушман ваттисем.

Қалаçса кайрăмăр. Çакна пĕлтĕм: ку хĕре университет пĕтерне хыççăн тантăшĕпе, Тунюкпа пĕрле, Ельня хулине ĕçлеме янă-мĕн. Халĕ, уяв умĕн, килне курма таврăнаççĕ. Федочĕ пирки ним те шарламарĕ-ха. Эпир те ыйтса тĕпчемерĕмĕр.

Йĕкĕчĕ хăйне мăн кăмăллăн тытни ман чуна кăшт ыраттарать. Ана чĕпĕтес шутпа çапла патлаттарса хутăм:

— Хĕрĕм, сана упăшку юратмасть.

— Мĕншĕн апла шутлатăр?— тĕлĕнерех ыйтрĕ хĕр, кӳренессе кӳренмерĕ.

— Ара, эсĕ ăна Федот тесе пин хут чĕнтĕн. Вăл пĕртте сан ятна асăнмарĕ. Эппин, ху кала: мĕн ятлă эсĕ?

— Ануш,— йăл-йăл кулкаларĕ вăл.— Федот, илтрĕн-и кӳршĕ мĕн каланине?

Қу хутĕнче Федот хăй çумĕнче кушак евĕр ачашланакана çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ. Вара куперен тухрĕ. Ун хыççăн Ануш та тăчĕ.

Эпĕ хам юлташпа çеç юлтăм. Вакунри куçа курăнман алăсем пире айăксенчен тĕксе лăк-лак силлеççĕ. Рельссем яка мар пулас: пуйăс кустăрмисем шавлăн кăлтăртатаççĕ.

Пирĕн çума Тунюк пырса ларчĕ.

— Эсĕ мĕншĕн пĕччен е, тантăшу пек, каччă каймарăн-и-ха?— терĕм.

— Вĕсем те мăшăрланман. Ануш ку йĕкĕте ашшĕ-амăшне кăтартма илсе каять.

Қупене Анушпа Федот кĕчĕç. Çамрăксем пĕр кана «Огонек» журналти кроссворд тупсăмне шырареç.

— Ай, хырăм выçрĕ, апатланма вăхăт,— пăрахса кайрĕ Тунюк.

Пирĕн хĕр малтанхиллех Федот та Федот тет. Вăл пулас упăшкине çăтса яманни кăна. Қуçĕнчен чăрлаттарса пăхать, хулĕнчен çатăрласа тытать. Қĕтмен çĕртен Федот Ануша Лена тесе чĕнчĕ. Ман куç-пуç чарăлса кайрĕ. Ак япала, мĕне пĕлтерет ку? Ануша тытамак тытнăн чĕтретсе пăрахрĕ. Қуçĕсем хĕсĕнчĕç. Пичĕ пĕр шуралчĕ, пĕр хĕрелчĕ. Вара каччи çумĕнчен кăшт айккинерех сиксе ларчĕ.

Федот йăнăш сăмах тухнине сисрĕ пулас. Вăл сĕтел çинче выртакан пирус пачкине илчĕ те каллех коридора тухрĕ. Ануш ним те чĕнмест.

— Авланнăскер-и-мĕн сан каччу?— ыйтрăм унран.

— Çук-çке. Мĕншĕн апла шухăшлатăр?— тĕлĕннĕ пек пулчĕ Ануш.

— Ара, сана урăх ятпа чĕнчĕ те...

— Эпӗ илтмерӗм-ҫке,— тунать хӗр.
— Ан суй, пит лайӑх илтрӗн.
— Мӗн, Лена терӗ-и?
— Ҫапла, Лена тесе чӗнчӗ сана.
— Вӑл малтан Лена ятлӑ хӗрпе ҫӳренӗ те... Ман хамӑн та Канаш хулинче савни пур. Кӗтет-тӗр. Эпӗ ав каччӑ илсе килетӗп, атте-аннене кӑтартма.

Эпӗ ӑна ним каламах та пӗлеймерӗм-ха. Темшӗн ӑш вӑркама тытӑнчӗ. Ануш та лӑпкӑ мар — пӑшӑрхануллӑ. Акӑ вӑл каччи вакунран сиксе юласран хӑранӑн ун хыҫҫӑн вӑркӑнчӗ.

Ҫак пӑтӑрмаха курнӑскер, ниепле те лӑпланаймастӑп. Аптранӑ енне Тунюка чӗнсе илтӗм.

— Кала-ха, Федот арӑмлӑ-и-мӗн?— Ӑна мӗншӗн ҫак шухӑш патне пырса тухнин сӑлтавне ӑнлантарса патӑм.
— Арӑмӗ пур. Анчах Федот унран уйрӑласшӑн. Ануш питӗ юрататъ каччине.

Лешсем хӑйсен вырӑнне килсе ларчӗҫ.

Ман ӑшӑма вут хыпса илчӗ. Кӑшкӑрас килет: «Ануш, ан юрат ӑна! Ылханакан пур чухне телейлӗ пулаймастӑн. Хӑвӑн Канашри савнинех качча тух!» Хам паллан, хӑйсен айӑпне пула телейӗсене ҫухатнӑ виҫӗ ҫын (упӑшкипе арӑмӗ тата пӗчӗк хӗрӗ) ҫинчен каласа парасшӑн ӑшталанатӑп. Анчах май килмерӗ. Канаш станцине ҫитрӗмӗр те, вӗсем вакунран тухрӗҫ. Эпӗ чунӑма ыраттарса юлтӑм. Ах, Федота мар, Канашри савнинех качча тухасчӗ санӑн, Ануш.

## 2. Ануша калайманни

Эпир ларса пыракан пуйӑс Шупашкар еннелле пӑрӑнчӗ. Кустӑрмасем тӑкӑртатнӑ сасӑ чуна канӑҫ памасть. Виҫӗ ҫыннӑн (тен, виҫҫӗ ҫеҫ те мар, пиллӗк темелле пулӗ) ӑраскалӗ, Ануша каласа парайманскер, ман асӑма килчӗ. Хӑйсем те куҫ умне тухса тӑчӗҫ.

... Ҫапла, ҫуллаччӗ ун чух. Кантӑксем уҫӑччӗ. Чӳрече умӗнчи чечек йӑранӗсенчен пӳлӗме пыл шӑрши кӗретчӗ. Кӑнтӑрла иртсен эпӗ ӗҫлекен завод управленине пӗр йӗкӗтпе хӗр кӗрсе тӑчӗҫ. Чиперскерсем, иккӗшне те пӗр кашӑк шывпа ҫӑтса ямалла. Ах, ҫамрӑклӑх, мӗншӗн ҫав териех хитре-ши вӑл!

Хӗрӗ яштака. Пӗвӗ каснӑ-лартнӑ ҫурта. Йӗтӗн сӳсӗ тӗслӗ ҫӳҫӗ — ҫӑра. Хумлӑн-хумлӑн выртать. Ҫӳҫне вирелле туранӑран-ши — ҫамки ҫӳллӗ курӑнать. Сенкер куҫӗ

пысăк, вăл якатнă ахах чулĕ пек йăлтăртататъ. Çийĕнче шурă кофта, кăвак юбка. Уринче шурă пушмак.

Йĕкĕчĕ те патвар. Кĕрнеклĕ. Куç харшийĕсем тикĕтленĕ пек йăмăх хура. Те çавăнпа — пичĕ шап-шурă курăнать. Шĕвĕр янахне пĕчĕк кăна путăк икке пайлать, çавна пула пичĕ татах та илемлĕрех курăнать.

Институт пĕтернĕ хыççăн иккĕшне те пирĕн завода ĕçлеме янă. Инженер-технологсем вĕсем.

Хĕрĕн ячĕ — Зинаида, хушамачĕ — Калля. Кайран эпир ăна ячĕпе нихăçан та чĕнмен. Калля, Калля теттĕмĕр çеç. Хушаматне килĕштертĕмĕр пуль-и?

Данил Агафонов — çакăн пекчĕ йĕкĕтĕн ячĕпе хушамачĕ.

Цехра ĕçлеме тытăнчĕç маçтăрта. Малтанхи кунсенчен пуçласах хăйсен сатурлăхне кăтартнăран чунтан кăмăлларăмăр вĕсене.

Ик-виç уйăх иртрĕ. Калляпа Агафонов пĕрлешрĕç ак. Пĕр-пĕрне ачаранпах пĕлеççĕ иккен. Шкулта та, институтра та пĕр парта хушшинче ларнă. Ашшĕ-амăшĕ те кӳршĕллĕ. Ытла килĕшӳллĕ мăшăр. Пĕри теприншĕн çуралса ӳснĕ темелле. Туйне ресторанра ирттертĕмĕр. Ташларăмăр вара, миçе хутчен «йӳçĕ» тесе чуп тутармарăмăр-ши çĕнĕ çынсене!

Çамрăк специалистсене саккун хушнă йĕркепе икĕ пӳлĕмлĕ хваттер патăмăр. Пурăнччăр савăнса.

Эпир ырă сунни ахаль пулмарĕ теттĕмĕр вĕсем пирки сăмах-юмах тапратсан. Юратса, шăкăл-шăкăл калаçса пурăнаççĕ мăшăрсем. Акă Калля — йывăр çын. Ачине амăшĕ патĕнче çуратасшăн. «Ан кай»,— тесси асра та çук пирĕн. Ара, йывăр самантра çумĕнче амăшĕ ăшталанни, паллах, пур енчен те паха.

Малашне мĕн кĕтнине пĕлнĕ пулсан-и? Ямастăмăрччĕ. Анчах ӳлĕмхин чӳречи çук çав. Тĕкĕр витĕр пăхсан та курăймастăн ăна.

Станцире Данил арăмĕн куçĕнчен салхуллăн пăхать. Хурланать мар-и ара. Тухнă куççульне тутăрпа шăлнине хамăр та асăрхарăмăр. Вăл хускаласа кайнă пуйăспа пĕр кана юнашарах чупса пычĕ. Ăсатрăмăр çапла Зинăна амăшĕ патне.

Ĕçлетпĕр çапла. Кун иртет те, каç килет.

Пирĕн пата тин çеç институтран вĕренсе тухнă инженер-экономиста ярса пачĕç. Планпа экономика пайĕнче ĕçлеме пуçларĕ çĕнĕрен килни.

Пур енĕпе те вăтам хĕрччĕ вăл. Чипер те, ытла сăнсăр та теме çук ăна. Кӳпчем пичĕ çерçи çăмарти пек хура

тутлă. Лутрарах. Çынна куç айĕн пăхать. Нихçан та кулса кăтартмасть.

Анчах çак кăптăрмăш хĕр пире вилсе каймалла тĕлĕнтерчĕ. Вăл, кăлăк чăххи евĕр, Данил тавра кускалама тытăнчĕ. Ăçта Агафонов, унта — Ландышева (хушамачĕ çавăн пекчĕ хайхи хĕрĕн, ячĕ — Надежда). Заводран пĕрле тухса каяççĕ, пĕрле килеççĕ. Ку çеç-и? Вĕсене Атăл хĕрринче алла-аллăн тытăнса çӳренине те, кинора юнашар ыталанса ларнине те курнă. Столовăйĕнче пĕрле апатланаççĕ. Тен, ку хĕр Данилăн арăмĕ пуррине пĕлмест? Апла пулсан — систермелле. Пĕррехинче столовăйра вĕсен сĕтелĕ умне пырса тăтăмăр.

— Данил, арăму çăмăлланман-и-ха? — кăсăклантăмăр эпир.

— Ир-ха, — текелет ку нар пек хĕрелсе.

Ландышева пирĕн çине пăхмасть, сĕтел çинелле ӳпĕннĕ те яшка лĕрккет кăна.

Часах тата хăрушăраххине пĕлтĕмĕр. Данил ку хĕре килне те иле-иле каять иккен.

— Гаврилова, эсĕ хĕрарăмсен совечĕн председателĕ, — теççĕ мана юлташăмсем, — ларăва чĕнсе ятла-ха Ландышевăна. Хĕр пуçĕпе ан хăйтăр авланнă çынпа çӳреме.

Чĕнтĕм вара Надеждăна. Апла та капла сăмах ваклатăп. Тунать мур илесшĕ.

— Тек Калля упăшкипе ура ярса пуснă ан пул. Хăвнах япăх пулĕ, — хăрататăп ăна.

Капла каласан хĕрĕн куçĕ чарăлать каять.

— Сирĕн мĕн ĕç пур пирĕн хушша-хуппа кĕме! — кăшкăрса пăрахать хайхискер. — Тĕрĕссипе каласан, эпĕ Данилсăр пурăнаймастăп. Вăл та мана юратать.

— Ас ту, çын хуйхи тиеннĕ чухне телейлĕ пулаймăн.

— Ĕненместĕп. Кивелнĕ халап çеç ку, — парăнмасть хĕр.

Мĕн тăвăн? Данилпа та калаçма тиврĕ манăн.

— Гаврилова юлташ, мĕншĕн çын чунне пылчăклă пӳрнепе пăлхататăр? Тӳрех куратăп: эсир никама та чăннипе юратса курман, — ырă ĕçе хӳтĕленĕн каçăрălса тăчĕ этем. Эпĕ шутсăр тарăхрăм.

— Эсир çапла ашкăннине юрату теме çук. Эсир чечекрен чечек çине вĕçсе шерпет ĕмекен чăн-чăн сăпса. Санăн хăвăн ачуна пăхса ӳстермелле.

— Пĕлетĕп. Мораль ан вула, — тутине пăркалать Данил.

Кайран эпир ăна совета чĕнсе ятларăмăр. Анчах... Амăш сĕчĕпе ăс кĕмен çынна качака сĕчĕ пулăшаймĕ.

— Куç пăвнă ăна Ландышева.

— Вăл хĕр — тухатмăш,— пуплешрĕç пирĕн хĕрарăмсем.

Часах Ҫалля çăмăлланни çинчен телеграмма ячĕ. Ҫут тĕнчене пике парнеленĕ иккен. Ҫав ятпа эпир ăна ăшшăн саламларăмăр.

Шăп çак каç Данилпа Надежда хут-мĕн тутармасăр туй çĕмĕрттерни пирки хыпар çитерчĕç пирĕн пата. Эпир, пĕрле ĕçлекен хĕрарăмсем, тарăхнипе темле çурăлса каймарăмăр. Темиçе хĕрарăм пухăнтăмăр хайхи. Пирĕн хушăра тин çеç качча кайнисем те пур. Тĕрлеттерсе кайрăмăр Данил хваттерне. Тĕрĕсех, Надежда вырăн çинче выртать, Данил ĕçмелли-çимелли хатĕрлес тесе вĕтеленсе çеç çӳрет.

Эх, ярса илчĕç Надеждăна хĕрарăмсем! Мĕн каласа тăкмарĕç-ши? Акă ăна ирĕксĕр тумлантарчĕç те Данил хваттерĕнчен тапсах кăларса ячĕç. Лешĕ чĕтрене ерчĕ, тути те кăвакарчĕ.

Данил пире усал сăмахсем каласа намăслантарать. Вăл Надежда хыççăн тухса чупăсшăнччĕ, анчах ун çулне пӳлчĕç.

— Ҫалля киличчен ниçта та каймастăн! Ытлашши ассан пукан çумне çыхса лартатпăр,— чышкисемпех юнаççĕ Данила.

Шанма та çук, ытлашши тарăхтарса ярсан хĕрарăмсенчен тем те кĕтме пулать.

Надеждăна кунта текех кĕртмелле мар. Ҫапла калаçса татăлтăмăр. Хамăрпа пĕрле ĕçлекен, çак çуртрах пурăнакан виçĕ хĕрарăм çак ĕçе хăйсем çине илчĕç. Паллах, вĕсем Данил пурăнакан хваттер алăкне сăлăп ярса тăман. Лешсем каллех пĕрлешнĕ. Татах кайса тустартăмăр. Ара, часах Ҫалля ачипе килсе çитмелле-çке. Данилпа еркĕнĕ хваттерне пушатса хăварчĕç те уççине пире пачĕç.

Ҫалля самолетпа вĕçсе килчĕ. Аэродромран вĕсене таксипе илсе килтĕмĕр.

Хваттерĕ пушă, упăшки çук.

— Мĕн пулнă?— ыйтать вăл.

Эпир куçа тартатпăр. Анчах кун пек чухне нумайччен пытарса тăрайăн-и? Ҫаласа патăмăр хайхи пăтăрмах пирки.

— Эсĕ пĕртте ан кулян,— йăпататпăр Зинăна.

— Ҫакăнсах вилмĕп. Йăнăшнă эпĕ. Данил сăвăс кăна пулнă иккен. Вăхăтра тасалнă, çавă лайăх,— хăйне хăй йăпатрĕ Ҫалля.

Эпир аранах лăпкăн сывласа ятăмăр. Ăслă хĕрарăм, тупата.

Ҫалля тек ĕçе тухмарĕ. Хваттерне улăштарса пирĕн

хуларан урӑх ҫӗре куҫса кайрӗ вара. Тытса чарма хӑяймарӑмӑр. Айӑплӑ туйрӑмӑр хамӑра ун умӗнче.

Надежда ҫаплах пирӗн заводра ӗҫлет-ха. Урӑх ҫӗре куҫасшӑнччӗ, анчах тем чӑрмантарчӗ пулас ӑна. Кун чул пурӑнса та нихӑш хӗрарӑмран та ӑшӑ сӑмах илтсе кураймарӗ. Пӗри те тепри сӑмахпа чӗпӗткелесех илетчӗҫ ӑна.

Пӗрле ӗҫлекенсем хисеплеменни чунне шӗкӗ пек кӑшланӑ ӗнтӗ унӑнне. Данил арӑмӗ ачипе таврӑнсан та сехрине хӑпартман мар вӑл. Чӗри пайтах сикнӗ-ха ӗнтӗ. Пырса хӗнесрен тӑр-тӑр чӗтресе пурӑннӑ. Хӗнени ҫеҫ мӗн, Калля унӑнне куҫне чавса кӑларма пултарнӑ. Йывӑр шухӑшсем хытах ыраттарнӑ ӗнтӗ пуҫне. Нерви пӑсӑлать хайхискерӗн. Чире каять Надежда. Чирӗ питӗ хӑрушши, ирте пӗлменни — сахӑр диабечӗ. Ӗҫре ларнӑ ҫӗртех хӑйне хӑй укол тума тытӑнчӗ мӗскӗн.

Хӑвна ху укол тӑвасси ҫӑмӑл ӗҫ мар. Айккинчен пӑхсан чун ҫӳҫенет те — пур пӗрех никам та хӗрхенместчӗ ӑна.

— Ҫав кирлӗ сана!— тетчӗҫ.

— Калля ылханӗ ҫитрӗ. Ку ҫеҫ те мар, йывӑртараххи те пулӗ-ха малашне,— куҫранах ҫапла каласа хӑртатчӗҫ Ландышевӑна хӗрарӑмсем.

Ывӑл та ҫуратрӗ вӑл. Анчах чирлӗ хӗрарӑм ӑҫтан сывлӑхлӑ ача тӑвайтӑр? Ывӑлӗ кӑшт айвантараххи халех паллӑ ӗнтӗ.

Ытла та хавассӑр халь Надежда пурнӑҫӗ. Чирлӗ арӑмне упӑшки те юратмасть. Айккинелле чупкалать теҫҫӗ.

Темиҫе ҫул иртрӗ унтанпа. Надежда чирне ҫаплах ҫӗнтереймест-ха. Асапланать хӗлӗн-ҫӑвӗн. Нумай пулмасть пульницана вырттарнӑччӗ-ха. Тухайрӗ-ши? Шанчӑкӗ сахалтарах ҫав. Ҫапла, ҫын ылханӗ ҫӗре ӳкмест тесе халӑхра ахальтен каламаҫҫӗ пулӗ.

# КАЧЧĂПА ВЫЛЯСАН

### Икĕ йĕкĕтрен çуралнă ача

Хапха умĕнчи тирек çулçисене пачах шĕпĕлтеттермест. Сăлтавсăр мар-тăр. Ун айне малтанхи хут пĕчĕк çеç кӳмеллĕ урапа чарăннă. Унта — пепке. Атьăк ятлă вăл. Çакă çутă тĕнчере мĕн пурĕ те икĕ уйăха яхăн çеç пурăнать-ха. Куçне сайра хутра çеç уçкалать. Мĕн пур ĕçĕ те унăн халĕ — паппа тăвасси. Эреветлĕ-теветлĕ пичĕ çиййĕн йăл-йăл кулă вылять. Тĕлĕкĕнче кама курать-ши? Путех, амăшĕ вылять пепкепе ăна кăтăклакаласа, алла тытасшăн кăчăк туртса. Тархасшăн, хатĕр вăл, ав ун аллисем сывлăшра каркаланаççĕ.

Халлĕхе Атьăкăн паллаканни те амăшĕ çеç. Ăш пиллĕскер вăл. Çăвара ялан тутлине хыптарать. Ăн ӳркен кăна ĕмме. Юхать вара чи пылак тӳттӳ. Çăтать кăнаваскаса. Хăш чух Атьăк кӳренсе те йĕрет чĕчĕ час паманшăн. Çатăртатнă самантра «анне» тесе кăшкăрать. Қаланă пек, «анне» сăмах пысăккисен евĕр тухмасть пулин те, пур пĕрех ăнланаççĕ ăна.

«Атте» тесе чĕнмен-ха вăл пĕр хутчен те. Қам вăл? Ăçта? Ӳлĕм утьăкка сиктерĕ-и? Чухлаймасть-ха çавна. Амăшне вара шутсăр юратать. Çап-çамрăк ун амăшĕ. Çав тери чипер. Пĕвĕ-сийĕ — кăпăшка йăва. Кĕске çӳçĕ—йĕтĕн турашăлĕ. Куçĕ — ешĕл сенкер. Хăрпăкĕсене кăранташпа хуратать те, калăн: çамка айĕнче икĕ тарăн кӳлĕ. Пит çăмарти — хĕрлĕ питлĕ пончик. Атьăк амăшĕн ятне те пĕлет — Унтилет. Анчах ăна пурте Унти тесе чĕнеççĕ. Хăйне куричченех, ăшă йăвара, хырăмра, выртнă чухнех илтнĕ вăл ун ятне.

Чиперех ларатчĕ-ха амăшĕ, Унти, сак çинче ăна, пĕчĕк этеме, çыварттарасшăн шăппăн сăпка юрри ĕнĕрлесе. «Ачине, папине...» Турă çырлах, мĕн пулчĕ? Çăварне тăп хупрĕ. Акă сиксе тăчĕ. Қĕтмен çĕртен шухăш вĕçсе кĕнĕ мĕн пуçне: «Иртем акă Макçутсен умĕпе. Тен, вăл Атьăкăн ашшĕ? Куртăр, пăхтăр сăнаса пепкеме. Палласа ил-

мĕ-ши! Ах, мĕн тăвас-ха?! Тен, Атьăк ашшĕ Макçутсем патне хуларан хăнана килнĕ Леонид? Қаллех хăналанмасть-ши вăл кунта? Хуть вăл йышăнтăр ачана. Ара, ашшĕ пулмаллах-çке пĕчĕк çыннăн...»

Қун памаççĕ Унтие ашшĕпе амăшĕ. Тĕпчеççĕ, ятлаççĕ, ĕнсе кукли те çитерсе пăхаççĕ. Қам ачан ашшĕ? Туп та тĕллесе кăтарт. Макçутпа çылăха кĕтĕм тейĕ-и? Тытса качча парĕç ăна. Тен, ача ашшĕ вăл та мар. Атьăкăн вара ют çынпа ӳсмелле тет-и? Тем тусан та килĕшмĕ ун енне пӳрне тĕллеме. Леонидпа çыхăнсан ача тĕвĕленчĕ ахăр тесен — ăна ирĕксĕрех авлантарĕç. Алăк уçса пепке çĕклесе кĕрĕ вĕсем патне. Илĕртĕ, вăхăт иртнĕçем ачана калаçтарĕ. Юратĕ те. Тетте парнелĕ. Атьăк калĕ те хурĕ: «Аюк, вылямастăп эсĕ панă теттепе. Эсĕ ман атте мар». Вара аçа та çиçĕм кĕрлĕ. Ах, пурнăç хӳри ытла та пăрăнăç.

Йĕркесĕр хĕсĕрлекен ашшĕпе амăшне Унти çапла калассах çитет. «Атьăк — икĕ каччăран çуралнă ача».

Макçута е Леонида курас ĕмĕт Унтин кăмăлне пĕлĕте çити çĕклентерчĕ. Ача урапин кăлтăрмаçĕсем малалла хăвăрт-хăвăрт кăлтăртатрĕç. Пулас тĕл пулу хумхантарать ăна. Савăннипе кăкăртан чĕре тухса ан ӳктĕрех.

Аякках та каяйманччĕ Унти — тăп чарăнчĕ. Урам урлă пурăнакан тантăшĕ Прасуни килĕ умĕнче халăх хĕвĕшет. Тухьяллă хĕрсем курăнаççĕ. Хушпуллисем те пур. Йĕкĕчĕсем те йышлах вара.

— Мĕне пĕлтерет ку? — тĕлĕнсе пăхрĕ Унти.

Пӳрт умĕнчех тĕрлĕ тĕслĕ шарсемпе капăрлатнă çăмăл машинăсем тăраççĕ.

Юлашки вăхăтра Унти пачах тĕл пулса калаçман Прасунипе. Хырăм çĕклерĕ-çке-ха. Унччен те тачă çыхăну тытман. Қилтисем чаратчĕç ун патне кайма. Прасуни амăшĕ ӳсĕр арçынсемпе эрех ĕçсе, асса пурăнать имĕш. Унăн хĕрĕнчен, Прасунинчен ĕнтĕ, ыррине вĕренеймĕн. Апла пулин те пĕрле сӳренĕ вăхăтсем пулкаланă.

Қалинкке уçăлчĕ. Қаччăпа хĕр тухрĕç çавтăнса. Унти вĕсене çийĕнчех палласа илчĕ. Пики — Прасуни. Ун çийĕнче шап-шурă кĕпе. Пуç тăрне шурă чечеклĕ кăшăл лартнă. Çумĕнчи йĕкĕчĕ — Турикасри Исай. Шурă пĕсехе евĕр курăнать кăкăрĕ. Хура костюм тăхăннăран. Иккĕшне те пăхса ытармалла мар — хитре, пĕр кĕмĕл кашăк шывпа çăтса ярăн. Вĕсене урамри çынсем алă çупса, тем кăшкăрашса кĕтсе илчĕç.

Шăнкăрав сасси илтĕнчĕ. Тăкăрлăкран тăрантас кӳлнĕ тур лаша тухрĕ-мĕн. Пĕкки çумне шăнкăрав çакнă. Çил-

хине хăю-укапа илемлетнĕ. Халăх капланнă тĕлте чарăнчĕ лаши. Часах тăрантас çине Исай Прасуние çĕклесе лартрĕ, вара хăй те унпа юнашар вырнаçрĕ. Юрттарчĕ ут урам тăрăх малалла. Ун хыççăн çамрăксемпе тулнă çăмăл машинăсем йăрлаттарчĕç.

Йăлтах ăнланчĕ Унти. Туй тăваççĕ иккен кунта. Ай тамаша! Марфа ĕçкĕпе аташса, арçынсемпе асса вĕлтрен ăшĕнчен тупнă хĕрне, Прасуние, качча парать. Қама ăшшă?! Ялти чи хӳхĕм йĕкĕте! Қăмăлĕ шутсăр хуçăлчĕ Унтин. Тӳсеймен енне ӳлесе йĕрсе ячĕ. Мăшкăл! Ара, вăл хăйĕн хĕр тасалăхне тĕнчене пĕлтерекен шурă венчет кĕпи тăхăнса кураймасăрах, качча тухмасăрах ача çуратрĕ. Мĕншĕн капла пулса тухрĕ? Вăл кӳршĕ хĕрĕ Прасуни чухлĕ чипер мар-и? Ялти чи паттăр Исай мĕншĕн уйрăмах ăна юратнă?

— Эпĕ ялти ятлă çынсен хĕрĕ,— ĕсĕклет çаплах Унти.— Атте — ăста механик, анне — депутат. Ма мана никам та качча илмест-ши?

Тĕрĕсех. Унти ашшĕпе амăшĕ — сумлă çынсем. Паллах, вĕсем хĕрне телейлĕ пурнăç суннă. Вăтам шкултан тухсан аяккалла вĕренме яман, ĕçлеттересшĕн те хыпман. Пĕртенпĕр хĕр ачине асаплантарасшăн пулман, ăна усрама хăват çителĕклех. Рехетлентĕр ашшĕ-амăшĕн ăшă йăвинче.

— Қĕрчеме памастпăр,— пуплеççĕ вĕсем хĕр илемĕпе киленсе.— Принц килетех.

Сумсăр хĕрсемпе юлташланасран та упранă вĕсем хĕрне. Прасуни шăпах çавсен шутĕнче.

## Прасуни

Пĕр тĕлте лара-тăра пĕлмен чĕрĕ хĕр ачаччĕ Прасуни. Тантăшĕсене тиркесе хăй çумĕнчен никама тĕксе яман вăл. Арçын ачасемпе вылямা юраманнине, çавăншăн ăна ытти çынсем тиркеме пултарассине ăша та илмен.

Чи малтан хăй ячĕпе усал сăмах илтнĕ чух вăл улттăмĕш класра вĕренетчĕ. Çуллахи каникула ячĕç. Қилте самант та тăрас килмест. Урамра епле ырă. Хĕвел илĕртет, таçта йыхăрать. Çунат пур тейĕн, вĕçсе кайма хатĕр. Хăйсен пахчи çумĕнчи тăкăрлăкра, çерем çинче, арçын ачасем лапталла выляççĕ. Прасуни чăтаймарĕ, чупса пычĕ вĕсем патне. Никам та хӳтермерĕ ăна, ыттисемпе пĕрле çăмхине ывăтрĕ, сикрĕ, чупрĕ, ахăлтатса кулчĕ. Икĕ инке сывăхрах чарăнса тăнине çийĕнчех асăрхамарĕ те-ха вăл. Анчах вĕсен ирсĕр каларăвĕ хăлхана пырса кĕчĕ-кĕчех.

— Эй, çырлах! Пăх-ха Марфа хĕр ачине, халех арçын ачасемпе айкашать,— пӳрнипе тĕллерĕ инкесенчен пĕри Прасуни еннелле.

— Амăшĕ хăраххи ĕнтĕ,— юлташĕн сăмахне çирĕплетрĕ тепри.

— Ара, улми йывăçĕнчен аякка ӳкмест теççĕ.

— Марфа ман упăшкана та илĕртет. Ун патĕнчен киле ӳсĕр таврăнать те тӳпелешме тытăнать.

Прасуни пĕтĕмпех ăнланчĕ. Çак хĕрарăмсем ăна тата ун амăшне питлеççĕ. Выляма пăрахрĕ те хапха айĕнчи сак çине пырса ларчĕ кӳреннипе. Чăнах та, амăшĕ патне арçынсем пĕри те тепри пыра-пыра кĕреççĕ. Эрех те часчасах ĕçеççĕ. Халĕ те ларатчĕ-ха пĕр эсремечĕ. Тарăхнипе пĕтĕм юн вĕресе хăпарчĕ пĕчĕк çыннăн. Вăл туллашса пӳрте кĕчĕ. Тӳрех курчĕ сĕтел çинчи эрех кĕленчине. Çав ĕнтĕ — усал тăшман. Чупса пырса ярса тытрĕ те эрех кĕленчине вăркăнтарчĕ тулалла уçă чӳречерен. Пысăккисем çăварĕсене карса пăрахрĕç, чĕтреве ерчĕç тытамак тытнăн.

— Тухса кай!— Икĕ чышкине сулласа пырса тăчĕ хĕр ача ют çын умне. Кăкăрĕнчен тӳнклеттерчĕ пĕчĕк чышкисемпе.

Лешĕ шартах сикрĕ. Ача çилли самант урăлтарчĕ ăна, эрехрен те хăватлă-мĕн ун сасси. Тухса шăвăнчĕ этем ним шарламасăр.

Хĕр ачин кунашкал хăюлăхне курасси асĕнче те çук Марфан. Ĕмĕр тăршшĕпех пурнăç ирĕклĕ иртессе шаннă вăл.

— Эсĕ мĕн-ма хастарланан капла?— Тупа тимри авăрне ярса тытрĕ амăшĕ хĕрне çапасшăн. Анчах тивме хăяймарĕ.

— Тек арçынсене кĕртместĕп,— терĕ Прасуни.— Эсĕ, анне, эрех ĕçме чарăнан!

— Çăмарти чăххине вĕрентмест!— ĕрлешет амăшĕ.

— Сана пула çынсем манран кулаççĕ, амăшĕ хăраххи теççĕ.

Çак кун Прасуни хăйне çирĕп сăмах пачĕ: «Ĕмĕрне те эрех ĕçместĕп, арçын ачасен вăйăйине хутшăнмастăп». Амăшне те сыхлама тытăнчĕ. Ют арçынсене кĕртмест. Тем чул алăка шаккасан та. Анчах йытă çури мар, ăçтан сыхласа çитерĕн. Ара, ялан килте пулаймасть. Шкула вĕренме те çӳремелле, колхоза ĕçе те тухмалла. Хĕрĕ çук чухне аташнах амăшĕ. Уйрăмах амăшĕ мухмăрпа асапланнине тӳсме пултараймасть Прасуни. Ара, вĕклет, ни хăсаймасть. Ахлатать илемсĕр сасăпа такам çапса ватнăн. Ытла та йĕрĕнмелле ӳсĕр хĕрарăм çине пăхма.

— Мĕншĕн ĕçен çав пӳтсĕр шĕвеке? — тĕпчет амăшне Прасуни.

— Ӳссен хăвах чухлăн, — тет амăшĕ.

Прасуни амăшĕ, Марфа, ырă пуласлăха çухатнă. Çуллахи кунсем хăмла плантацийĕнче иртеççĕ. Хĕлле вара ĕç çукпа пĕрех. Ķичемлĕх пусать. Çемьере, хĕр ачисĕр пуçне, урăх никам та çук. Упăшки ун качча килнĕ çулах шыва путса вилнĕ. Çунса тухакан чунне эрехпе пусарма хăнăхрĕ вăл. Черкке шаккаса тав туса ĕçмелли сăлтавсем тупăннă ялан. Вĕсемпе пĕрлех — Марфана кăмăллакан арçынсем те. Çавсен арăмĕсем, паллах, шăл хăйранă, усал сăмах сарнă. Ахальтен каламан ĕнтĕ тăлăх арăм хапхине элек сăрлать тесе. Хĕрне те нимле шывпа çуса тасатма çук пылчăкпа вараласçĕ. Çав элек-телек сĕрĕмне сирсе хĕвел çутине тухиччен пайтах вăхăт иртет.

Хĕрхенмест мар Прасуни амăшне. Ура чух унтан лайăх çын тĕнчере те çук-и тен. Пур енĕпе те чăн-чăн амăшĕ. Вăл та хĕрĕн сăмахĕнчен тухмасть хăш-пĕр чух. Вăхăт иртнĕçемĕн вăтанас йăла таврăнчĕ. Халĕ тахçантанпах ĕнтĕ хĕрĕ умĕнче арçынсене илсе кĕмест.

Прасуни пур енĕпе те сăпайлă пулма тăрăшать. Арçын ачасене хăй çывăхне яма мар, вĕсемпе пачах калаçмасть. Хĕр-юлташ пур ун — урам урлă пурăнакан Унти.

Вут-çулăм чĕлхи пĕрре çеç мар Прасуние вĕтелерĕ.

Вуннăмĕш класра вĕреннĕ чух унран тантăшĕсем ихĕлтетсе кулнине тӳсрĕ.

...Шăнкăрав янăраман-ха. Ķласс кĕрлет. Хĕр-упраç тем пăшăлтатать. Прасуни хăйне тивекен нĕрсĕр сăмахсем илтрĕ:

— Авланнă çынпа çӳрет Прасуни. Ķинора пĕрле ларчĕç. Хам куртăм. Эй, çырлах! — тхик! кулчĕ хыпар пĕлтерекенни. Юнашар тăракансем пин ыйту вĕçтерчĕç.

— Авланни кам-ши вара?

— Силмен.

— Арăмĕ пырса тытмарĕ-и? Эпĕ унăн арăмне Любăна лайăх пĕлетĕп. Чиперскер, — терĕ Унти.

— Çӳçне-пуçне çăлатчĕ!

Ахăлтатрĕç пĕр кана.

— Эх, мĕскĕн, амăшĕ сукмакĕпех танкăлтатать.

Пуринчен ытла Прасуние тĕлĕнтерекенĕ Унти пулчĕ. Юлташ те вара ăна. Ялан пĕрле ларнă. Мĕн чухлĕ задача шутласа панă. Хӳтĕлес вырăнне хура кăмăлне, хаярлăхне кăтартрĕ. Çăварĕнчен шăршлă сăмахсем перĕне-перĕне тухрĕç.

— Ясарпа хутшăнсан хăвна та ясар ерĕ.

Çав тери тулхăрса кайрĕ Прасуни. Касса татмасăр тӳсеймерĕ:

— Унти, эсĕ çиле хирĕç суран. Ас ту, хăв сурчăкупа хăв ан варалан.

Кĕнекисене пухать Унти. Çăварне çаплах карать хăйне хӳтĕлесе:

— Эпĕ авланнă çынсемпе çӳрессĕм çук.

— Пурнăçра пите кĕççе çĕлеттерекен сăлтав нумай,— терĕ Прасуни.

Кайса ларчĕ Унти чӳрече çывăхĕнчи парта хушшине урăх хĕр ача çумне.

Пайланчĕ хĕр-упраç ушкăнĕ. Прасуни çывăхĕнче — пĕриккĕн. Вĕсем хӳтĕлекенсем мар, ытахальтен тăрса юлнăскерсем, çын ĕçне хутшăнни вăл ирсĕр япала тесе шутлакансем.

Прасуни ăнлантарса парасшăнччĕ.

— Силменпе...— пуçларĕ сăмахне. Анчах класа вĕрентекен пырса кĕчĕ те, урок пуçланчĕ.

Çĕр каç мĕн пулса иртни Прасуни пуçĕнче тепĕр хут хутăрланчĕ.

...Уроксем хыççăн киле кайма Прасунин клуб умĕн иртмелле. Пĕлтерӳ вуларĕ. «Джинджер и Фред» ятлă кино пулать. Икĕ сериллĕскер. Итали фильмĕ. Тахçанах курма ĕмĕтленнĕччĕ вăл çак кинокартинăна. Федерико Феллини ăста режиссер пирки нумай вуланă вăл. Джульетта Мазина тата Марчелло Мастроянни — пĕтĕм тĕнче пĕлекен чаплă артистсем. Вĕсем вылякан фильма мĕнле курмасăр юлăн?! Билет туянчĕ вара Прасуни. Кино курнă чухне юнашар Силмен ларатчĕ. Вăл авланнă çын тесе тăрса каймаллаччĕ-и? Асра та пулман. Ун арăмĕ Люба Прасунипе тахçантанпах туслă пурăнать. Люба та, Прасуни пекех, артистсемпе кăсăкланать. Иккĕшĕ те артист сăнлĕ открыткăсем пухаççĕ.

Элекçĕ курчĕ-тĕр кинора Прасунипе Силмен пăшăлтатнине. Силмен артистсен пĕр калаçăвне ăнланмасăр юлнă. Ыйтса пĕлчĕ. Çавă çеç. Кино пĕтсен юнашар утрĕç. Çул пĕр еннелле-çке. Силмен вĕсен çумĕнчи тăкăрлăкăн тепĕр вĕçĕнче пурăнать. Вăхăт нумая кайнă. Прасуни хĕпĕртерĕ те-ха çумра хӳтлĕх пурришĕн. Паллах, пуплесе пычĕç фильм пирки.

— Мĕнле, кино килĕшрĕ-и?— сăмах хушрĕ Силмен.

— Çав тери!— пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне Прасуни.— Марчелло Мастроянниппе Джульетта Мазина артистсем вылянине кашнинчех питĕ килĕштеретĕп. Шел, Люба кураймарĕ.

— Вăл кĕçĕр чирлисем патĕнче — дежурствăра.— Шухăша кайса пычĕ Силмен пĕр авăк. Вара артистсем пирки сăмах тапратрĕ:— Ватă хăйсем, çапах ташă конкурсне хутшăнчĕç. Ăçтан çĕнтерейччĕр? Арçынни сцена çинче ÿкрĕ ав.

— Чун нихăçан та ватăлмасть теççĕ-çке. Шаннă ĕнтĕ, ара, çамрăк чух вĕсем хăйсен ташшисемпе халăха тĕлĕнтернĕ...

Ял тăршшĕ темиçе çухрăм мар. Прасуни çитрĕ, килне кĕрсе юлчĕ. Силмен сыв пуллашса хăйсен еннелле утрĕ. Акă пĕтĕм ĕç-пуç. Мĕн япăххи пур ĕнтĕ кунта? Усал куçсем çĕр çурăлнине курнă пек чакакла чакăлтатма тытăннă. Тÿсмелле мар шăршлă çăварĕсенчен ухă йĕппisem кăларакăлара яраççĕ. Пĕр класри хĕрсем мĕнле ахăлтатса кулчĕç. Қаллех хăлхара тантăшĕсем мăшкăлласа йĕплени янăрарĕ: «Прасуни, эсĕ каччă тупнă тет-и?— пуçларĕ пĕри йĕкĕлтеме.— Шутсăр юрататăр-и пĕр-пĕрне? Силмен арăмĕнчен час уйрăлать-и вара?»

— Ых, путсĕрсем,— куççуль тухрĕ Прасунин.

Юрать-ха никам та асăрхамарĕ, йăпăрт шăлса илме ĕлкĕрчĕ тăварлă тумлама. Курнă пулсан «ах, йĕрет» тесе шутсăр савăннă пулĕччĕç вĕсем. Уроксем вĕçленнĕ тĕлелле Прасунин кăмăлĕ лăпланчĕ. Иртнине аса илсе алласа парас килмерĕ ун. Ăнланас пур-и хура ăшлăскерсем?

* * *

Çапла, хÿтĕсĕр ÿсет Прасуни. Қашниех хур тăвасшăн тăрăшать. Шăши те пулин хÿрипе çапса иртет теççĕ кун пек чух. Ашшĕ çук ун, пулман та. Вăтакасра пурăнакан Çтаппан Иванчă калать-ха курсан-тусан ăна «хĕрĕм» тесе. Мĕне пĕлтерет ку? Ăнланса пĕтер вĕсене. Амăшĕ пур, çумрах. Шавлă пурнăçне пула çын хисепĕнчен тухнă çав вăл. Хĕрне те пăсăк ят тивет. Юлашки вăхăтра чирле тăрать-ха. Шел. Путех ытлашши эрех кÿпни минтевленĕ. Чĕри хавшанă ун. Ĕçре те халăхран кайра пырать. Қамăн пулăшмалла ĕнтĕ ăна? Паллах, хĕр ачин. Унсăрăн юрамасть. Тăранмалла-çке. Тумланас та килет хĕр-упраçăн. Çу каçах ĕçлерĕ-ха вăл, анчах пур пĕрех ашшĕ-амăшĕ çумĕнче пурăнакан хĕрсем пек капăрланаймасть.

Хăмла плантацийĕнче ĕçлекен кашни çемьенех уйрăмшар лаптăк уйăрса пачĕç. Прасуни амăшĕн те темиçе касă.

Иртнĕ кунсенчи майлах, амăшĕпе хĕрĕ ирех çитрĕç хăмла патне. Ĕçе тытăниччен ĕнех вĕтĕ çумăр касă, пуса каччисем пек, тăпăртатса çуса иртрĕ. Юрать-ха çакăнпа çырлахрĕ, унсăрăн ĕçлеме чăрмантаратчĕ. Малтанах вĕсем

ӳкнӗ авӑрсене кантраран ҫаклатса ҫыхрӗҫ. Вӑхӑт самаях шурӗ. Амӑр ҫанталӑкра амӑшӗ хӑйне уйрӑмах япӑх туять. Ав тути кӑн-кӑвак, пӗр пӗрчӗ юн юлман пекех.

— Ҫайсам, анне,— хушрӗ ӑна Прасуни.— Йывӑрланса ҫитсен киле те ҫитеймӗн.

Пӗччен юлсан Прасуни кас хушшинчи ҫум курӑкӗсене татрӗ. Унтан йӗри-тавра ҫӗре кӑпкалатрӗ катмакпа. Ҫас енне сулӑнчӗ кун. Ӗҫӗн вӗҫӗ-хӗрри те курӑнмасть. Тислӗк те сармалла кашни авӑр тавра. Ҫӳлелле пӑхса илсен чунӗ савӑнать хӑйӗн. Авӑр шалча тавра явӑнса хӑпарнӑ. Шултра шӑрҫа пек хӑмла курланкисем ҫӳлтен аялалла ярапаланнӑ. Тухӑҫ лайӑх пуласси туйӑнать. Кӗркунне йӗркеллӗ татса пухсан патшалӑх аванах тӳлӗ-ха. Амӑшӗ укҫине хӗрхенмӗ, Прасуние ҫӗнӗ пальто та туянса парӗ.

Ҫу кунӗсем сисӗнмесӗр иртеҫҫӗ. Шкула каяс кун ҫывхарнӑҫем ҫывхарать. Ҫӑҫал Прасунин вун пӗрмӗш класа каймалла. Юлашки вӗренӳ ҫулӗ. Унччен ӗҫлемелле хӑмла пахчинче ир пуҫласа каҫчен.

Ытти чухнехи пекех, ҫав кун та хӗвел иртерех аннӑн туйӑнчӗ.

Акӑ юнашарсем киле кайма пуҫтарӑнчӗҫ.

— Прасуни, пирӗнтен ан юл,— систереҫҫӗ ӑна.

— Маттур хӗр. Ӳркенмест. Пуҫ ҫӗклемесӗр ӗҫлет,— мухтаҫҫӗ ӑна колхозниксем.

— Сире хуса ҫитетӗп,— терӗ хӗр.

Ҫапла каларӗ те-ха вӑл, анчах хӑмла касӗсенчен ниепле те хӑпаймасть. Халь, ҫынсем мухтанӑ хыҫҫӑн, ӗҫлес кӑмӑл татах хутшӑнчӗ.

Ҫывӑхра никам та юлман. Прасуни те пуҫтарӑнса тухрӗ кассем хушшинчен. Ун-кун пӑхкаларӗ. Ниҫта пӗр чун ҫук. Чупрӗ вӑрман евӗр кашласа ларакан хӑмла плантацийӗ ҫумӗпе. Чылай аякка кайрӗ ӗнтӗ. Ӑнсӑртран тенӗн, курах кайрӗ: ҫул хӗрринчи лутра юпа ҫумне пӗри таяннӑ та тӑрать табак туртса. Прасуни тӑруках ни хӑрама, ни савӑнма пӗлмерӗ-ха. Чӑрлаттарса пӑхсан палларӗ хайхи этеме. Вӑл колхоз шоферӗ — Ҫурак Иванӗ. Ялти чи хӳхӗм каччӑсенчен пӗри.

Курӑнми иртсен аванччӗ ӗнтӗ. Май ҫук. Ҫулӑн икӗ айккипе те хӑмла хӳми. Ырра мара сиснӗн чӗре йӑш чикрӗ.

— Шикленетӗп-и? Тупнӑ камран хӑрамалли.— Хӑйпе хӑй пуплерӗ Прасуни.— Тӑрин ара. Ҫама мӗн ӗҫ? Тытатӑп та иртетӗп хӑюллӑн.

Чӑнах та, утнӑ май пуҫне каҫӑртрӗ мӑнаҫлӑн.

— Эй, чиперкке! Ӑҫта чавтаран?— кӑшкӑрчӗ Ҫурак Иванӗ ҫӑварӗнчен пирусне кӑларса.

— Ҫиле,— терӗ Прасуни.

— Тӑхта!

— Васкатӑп. Хырӑм выҫнӑ.

— Ҫил кунта! Ман кӳшелте ҫӑкӑр, ҫӑмарта тата ҫутти пур. Савӑнсах сӑйлатӑп.

— Ху кӳп!— терӗ Прасуни путсӗрле каланӑ сӑмахсемшӗн тарӑхнипе. Вӑл уттине хӑвӑртлатрӗ.

— Ха! Тарасшӑн-и манран!— Ҫурак Иванӗ ҫавӑнтах ярса тытрӗ Прасуние аллинчен.— Ҫу таранччен пӗр хӗр те ман алӑран вӗҫерӗнеймен-ха,— унччен те пулмарӗ — тытӑнчӗ ӑна хӑмла ӑшнелле сӗтӗрме.

— Хура-ах!— кӑшкӑрчӗ Прасуни хӑранипе.

— Эпӗ сана саватӑп-ҫке. Мӗншӗн ӗрлешен? Ҫасӑсем хушшинче выляса илетпӗр те... Ҫайран чармастӑп, чуп килелле.

— Мӗнле намӑс мар сана тем те пӗр сӳпӗлтетме?— ҫапкалашрӗ Прасуни. Ҫак вӑхӑтра йӗкӗт аллинчен питӗ вӑйлӑ ҫыртрӗ вӑл.

— Ах, эсӗ йытӑлла-и? Мӗн турткалашан?— лӑштах пушатрӗ пӑчӑртанӑскере.— Халиччен арҫын курманла хӑтланан.

— Нихӑҫан та, нимле арҫын та тӗкӗнмен мана,— ятлаҫрӗ Прасуни.— Эсӗ чӑн-чӑн йӗксӗк!

— Ан суй! Аннӳ вӗрентнех ӗнтӗ сана хӑй мӗн пӗлнине. Парӑн!— тет. Хӑйӗн Прасуни ҫыртнӑ сылтӑм аллинчен юн юхать. Акӑ суранне чӗлхипе ҫулама пикенет. Хӑрах аллипе хӗре ҫирӗппӗнех тытаймасть. Прасуни вӗҫерӗнчӗ, анчах леш каллех ярса тытрӗ. Пуҫланчӗ кӗрешӳ. Хӗр темерӗн, таҫтан вӑйӗ тухрӗ, май килтерсе лач тапрӗ пӗтӗм вӑйран хӑямат этемне. Мӗскӗн, кайса ӳкрӗ месерле. Вӑл тӑриччен Прасуни тапса сикрӗ ун патӗнчен, ҫул ҫине тухрӗ пашкаса. Вара «тыт ман хӳрене» тенӗн вӗҫтерчӗ тӗк пек малалла — ял еннелле.

— Йӗке хӳре! Тепрехинче тараймастӑн!— ӗрлешсе юлчӗ Ҫурак Иванӗ.

— Эсӗ курак ҫеҫ мар — ҫӑхан! Акӑ кам эсӗ! Намӑссӑр!— чӗлхерен юлмарӗ Прасуни те.

Чунтан тарӑхтарчӗ хӗре ҫак пӑтӑрмах. Ӳлӗмрен мӗнле иртсе ҫӳремелле ӗнтӗ? Хӑмла пахчинче текех ҫынсенчен юлса ӗҫлемелле мар-мӗн. Аптрамалла чӑнах. Кулянса килтен тухмасӑр ларни — мӑшкӑл.

Тӗнчере ырӑ ҫынсем пур чух темле хӑрушла тамӑкран та ҫӑлӑнса тухма пулать. Силменпе арӑмӗ Люба вӗрентрӗҫ ҫавнашкал пӑтӑрмахран мӗнле ҫӑлӑнмаллине. Унччен те-ха Люба пулӑшрӗ Прасуние. Шкула кайса килчӗ вӑл. Ун

çинчен ят саракансемпе калаçма. Самаях вăтанма тиврĕ элекçĕ хĕрсен.

— Пăх-ха, Прасуни,— терĕ те Люба самантрах çĕклесе çапрĕ упăшкине çĕре.

Вара иккĕн тан кăтартрĕç тапăнакан пуçтаха хăш вăхăтра ăçтан чышмаллине, тапмаллине, ярса тытса пăчăртамаллине...

— Курак Иванне эсĕ шăпах кирлĕ тĕлтен тапнă,— кулкаласа илчĕ Силмен.

— Эпĕ пĕлсе мар, ăнсăртран,— кăшт мăнаçланса каларĕ Прасуни.

— Хĕр тени кирек хăçан та хăйне хӳтĕлеме пултармалла,— татах ярса тытрĕ Люба упăшкине. Ӳкермерĕ, ку хутĕнче шӳтлесе кăна.

Çак кунтанпа виççĕшĕ час-часах тренировка ирттерчĕç. Прасунин шиклĕх самаях сирĕлчĕ. Хăрамасăрах каçа юлса ĕçлет вăл хăмла пахчинче.

Кĕркунне çитрĕ. Прасунипе амăшне те тухăçлă хăмла ӳстерсе илнĕшĕн укçан преми пачĕç. Колхозра та, шкулта та ырăпа асăнма тытăнчĕç ăна.

## Унти

Туслăх çыхăнмарĕ кӳршĕ хĕрĕсен. Прасунин чăрмаласа хăварнă чунри çĕвĕке пула кăмăл тупăнмарĕ. Унти валли. Каланă пек, малтан та иккĕшĕн хушшинче чĕнтĕрлĕ кĕпер хывăнманччĕ. Сăлтавĕ килтисенчен, ашшĕ-амăшĕнчен, килнĕ-тĕр. Сывăх тус-тантăш çуккипе хĕвел те уншăн сӳрĕкленчĕ. Çавăншăнах, тен, Унти çуни лакăма сулăна-сулăна илчĕ, хăй те туха-туха ӳкрĕ.

Иртрĕ вĕренӳ çулĕ. Вăтам шкул пĕтерчĕç. Ыттисенни пекех, Унтин те аллинче малашнехи пурнăç çулне уçса пăракан хаклă хут — аттестат. Пĕрле вĕреннĕ çамрăксем саланчĕç сыххине çурлапа касса татнă кĕлтери улăм пĕрчи евĕр. Кам ăçталла: хăшĕсем тӳрех ĕçе кӳлĕнчĕç, теприсем малалла вĕренме ялтан тухса кайрĕç.

Унтин тӳрĕ çулне те, кукăр-макăр çулне те пач татрĕç, ют çынсем мар, ашшĕ-амăшĕ. Хĕрĕ фермăна ĕне сума каясшăнччĕ. Унта мар-тăк — урăх çĕре. Киле пырсах тилмĕрчĕ акă колхоз председателĕ:

— Сысна ферминче çынсем çитмеççĕ. Сирĕн хĕрĕре унта ĕçлеме чĕнесшĕн. Килĕшсемĕр.

— Сысна пăхма?— йĕрĕннĕн питне-куçне пĕрĕнтерсе илчĕ хĕр амăшĕ.— Вăтам шкул пĕтернĕ пикене сысна

пăхтарасшăн-и эсĕ? «А» саспалли палламаннисене пăхтар сыснусене. Тата вăл çамрăк-ха тӳрех йывăр та чыссăр ĕçре çăрăнма. Авма пĕлмен хулă хуçăлĕ. Тем курăпăр, те алли-урине сысна çыртса татас пур.

— Эпĕ астăвасса пирĕн фермăра унашкал инкек пулман,— тарăхрĕ председатель.— Сирĕн хĕрĕре шăпах ĕç касалăкĕ умне тăратма вăхăт. Ан манăр: яшка вутпа, этем ĕçпе пиçет.

— И-и, ара, хĕрĕм хам пек депутат та пулĕ-ха.

— Çапла ĕнтĕ, мĕн чăмлан, çав çăтăнать тенĕ ваттисем. Тухса кайрĕ председатель кӳренсе.

Унтин ашшĕпе амăшĕ чылайччен лăпланаймарĕç.

— Қала хăвăн шухăшна, ашшĕ?

— Вун пĕр çул вĕренсе ывăннă вăл. Қантăр ĕнтĕ кăштах.

— Туттă. Пĕртен-пĕр ачамăра ма çăрăнтармалла тет сысна тислĕкĕпе?! Пирĕн пурлăх çук-и? Ăна çеç мар, унăн ачи-пăчине те çитет. Қил-çуртăмăр — кантур, пĕтĕм яла илем кӳрет.

Унти ашшĕпе амăшне йăлтах ăнланчĕ. Чăнах та, ун вĕренес те, ĕçлес те килмест. Кĕрсе ӳкрĕ вăл çăтмаха. Рехетленет хĕр. Кăнтăрлаччен ыйха çапать, никам та чăрмантармасть. Ĕне сума, килти ĕç-пуçа тирпейлеме пĕр тăлăх инке çӳрет. Паллах, ăна тӳлеççĕ.

Амăшĕ Унтие лайăх тăхăнтартасшăн. Çитĕнет-çке хĕр. Ун çулĕсенелле вăл качча тухнă. Хĕрне качча илме шухăшлакансем янă евчĕсене йышăнма тивĕ акă часах. Çавăнпа та вăл депутат ĕçĕпе хулана кайсан хĕрĕ валли тем те пĕр туянса таврăнчĕ: кĕрен пурçăн кĕпе, арки — чечеклĕ; çӳллĕ кĕлеллĕ шурă туфли; мерчен куçлă çĕрĕпе алка; симĕс плащ — лешĕ, манник, текенни.

— Анне, кайса чĕнем-и Прасуние? Куртăр ман чаплă тумтирĕме,— уçма алăк хăлăпне ярса тытрĕ Унти. Çĕнĕрен тусланасшăн вăл кӳршĕ хĕрĕпе.

— Тупнă кама кăтартма,— чарчĕ амăшĕ хĕрне.— Сан акам пулмалли хĕр мар вăл.

Ларать килте Унти. Амăшĕ ниçта та кăлармасть ăна, инкекрен хăрать. Шикленме сăлтавĕ те пур: унта та кунта хĕрсене пăсни, вĕлерни çинчен усал хыпар çӳрет ялта.

Анчах урам тӳсмелле мар кăчăк туртать. Қаçсерен вăйăра тухнă çамрăксен юрри, купăс çемми майăн шартлаттарса алă çупса ташлани Унтие çывăрма памасть.

Пĕррехинче кĕтӳ ярсан ĕни таврăнмарĕ киле. Çак кун амăшĕ пуçĕ ыратнипе вырăн çинчен анаймарĕ.

— Унти, ĕнене шыраса тупма тивет сан,— амăшĕн

ирĕксĕрех хĕрне ĕç хушма тиврĕ.— Тем тесен те ĕне Кăшман çырми тăрăх янккать ĕнтĕ, тăранман хырăм.

— Юрĕ. Кайса хăваласа килĕп,— килĕшрĕ хĕрĕ хавассăн. Читлĕхрен вĕçтерсе кăларнă сарă кайăк евĕр хĕпĕртерĕ Унти.

— Эсĕ ытла тĕттĕмлениччен ан çӳре,— асăрхаттарчĕ ăна амăшĕ.

— Ĕнене тупсанах хăваласа таврăнатăп ĕнтĕ,— сăмах пачĕ хĕрĕ.

Унти картишĕнче хулă тупса хушнă çĕрелле васкарĕ. Иртен çынсемпе сăмах-мĕн чĕнмерĕ вăл.

Çитрĕ Унти Кăшман çырмине. Пăхрĕ кусне вылятса. Турă çырлах! Çут çанталăк хуçи тейĕн ăна. Никамран та хăраманла выртать мăнаçлăн сарăлса çырма. Çӳлти вăрмантанах çĕре икĕ еннелле сурса аннă. Тĕпĕнче шăнкăрти шыв чупать вак чулсем çийĕн сиксе. Ял çумĕнчи, хĕвел çути ӳкекен çыранĕ çеремлĕ, хирĕç енĕ хĕрлĕ тăпрапа витĕннĕ, путех шăнса кӳнтĕркесрен. Тĕлĕнмелле! Те çыннисем пахчисене çырма хĕрринелле тăснă, те çырми пахча картисем çумне сĕвĕннĕ!

Тахшин ĕнисем ешĕл куракă тĕреççĕ, Унтисен вĕсен хушшинче çук. Вара вăл пахча картисем çумĕпе ярлаттарчĕ. Чиперех пыратчĕ, сасартăк илтех кайрĕ хăйне чĕннине.

— Унти, ăçта йăпăртататан?

Ялт! пуçне пăрчĕ Унти сасă илтĕннĕ енне. Курчĕ: пахчари симĕс курăк çинче, карта çумĕнчи йăран пуçĕнче, лара парать йĕкĕт — Макçут.

— Кама кĕтен эсĕ кунта?— сăмах хушрĕ хĕр.

— Сана!— Тăчĕ те карта урлă сиксе каçрĕ Макçут.

— Ан лĕпĕртет!— ихĕлтетрĕ Унти.— Эпĕ сирĕн пахча хыçĕпе иртессине ăçтан пĕлтĕн?

— Ара, эпĕ — экстрасенс.

— Ай-уй, эсĕ тухатмăш-и?

— Йăнăшан. Экстрасенс вăл мĕн пулассине пĕлсе тăракан çын.

— Э-э-э, пĕлтĕм. Эсĕ — юмăç! Акă кам,— каллех ахăлтатса кулса ячĕ Унти.

— Юмăç мар,— хирĕçлерĕ Макçут.— Манра ытти çынсенче çук вăй, ăс-хакăл пур.

— Ас турăм: сан кăкăрна кашăк, тупа, кастрюль çыпçăнать. Тĕрĕс-и?

— Çапла. Ай-ай! Ман кăкăр çумне эсĕ те туртăнан, Унти!— Макçут алне сарса хĕр патне çывхарчĕ те ăна ыталаса пăчăртарĕ.

— Ӳр-ха аллуна, хӗссе лартрӑн, сывлӑш тухмасть,— тапӑлтатать Унти. Аран-аран ҫӑлӑнчӗ. Чупрӗ картасем ҫумӗпе малалла.

Макҫут тӑрса юлӗ-и? Самант ярса тытрӗ. Ҫӗрешме тытӑнчӗҫ. Ӳкрӗҫ ҫерем ҫине. Чуп турӗ, чуп турӗ хӗре.

Мӗн мурӗ? Сиссе те юлаймарӗ Унти. Тем ҫӗмӗрӗлчӗ, ыратрӗ. Ҫавӑнтах халиччен тутанман туйӑм ыталантарчӗ. Акӑ япала, пулса иртрӗ кӗтменни. Юрать-ха тӗттӗмленнӗ, ҫын курмарӗ. Пахи — ҫак-тӑр.

Хӗр тенин ӳпкелешсе йӗмеллеччӗ-тӗр, вӑл пур — чарӑнусӑр ихӗлтетрӗ. Эх, айван! Иртӗхнӗ «экстрасенса» татах, татах ирӗк пачӗ... Иҫмасса, Макҫут ҫапла тӗркешӳ пулса иртнӗ хыҫҫӑн килне те ӑсатмарӗ.

— ...Ҫынсем курсан тем шутлӗҫ,— тӳрре тухрӗ вӑл.— Тата мана анне ӗнепе кӗтет. Унти, ыран каҫ ҫакӑнтах тӗл пулӑпӑр. Юрӗ-и?

Ҫиле таврӑнчӗ Унти. Ӗнене ашшӗ тупса таврӑннӑ-мӗн, вӑлах сунӑ. Амӑшӗ, чирпе аптранӑскер, ятлаймарӗ ӑна киле час таврӑнайманшӑн. Ҫӗрсе выртрӗ Унти вырӑн ҫине. Ӑна пысӑк арчари мамӑк тӳшек асне килчӗ. Амӑшӗ ӑна пӗлтӗрех хатӗрленӗ хӗрне качча кайсан парнелеме.

— Мӗншӗн-ха Макҫут мана качча илес пирки ҫӑвар уҫмарӗ?— ыйтрӗ хӑйӗнчен хӑй.— Халех ун патне тӳшек ҫӗклесе каяттӑмӑр. Путех ыран илсе кӗрет мана хӑйсем патне. Сывӑ пулӑр, атте-анне, хӗрӗр качча тухать, туй тума хатӗрленӗр.

Вӑрман касса ывӑннӑн вӑл часах ыйха путрӗ. Вӑранасса кӑнтӑрла ҫитеспе тин вӑранчӗ.

— Ҫывӑрса тӑрантӑн-и? Ырӑ кур аҫу-аннӳ йӑвинче,— ачашлать ӑна амӑшӗ.— Ҫил ирхи апата.

Унти кӑп-кап хыпкаларӗ пылпа ҫу сӗрнӗ кулача, сыпкаларӗ хӑйма янӑ пылак чей. Ҫимӗҫ анасшӑн мар. Пуҫра кӗҫӗр каччӑпа курнӑҫас шухӑш явӑнать. Ҫунӗпе вара тӗкӗр умӗнчен хӑпма пӗлмерӗ, вунӑ кӗпе тӑхӑнса улӑштарчӗ. Тупрӗ мӗн тӑхӑнмаллине — шалпар хура юбка, ҫанӑсӑр симӗс кофта, урана — аял кӗлеллӗ туфли.

Халӗ ӗнтӗ килтен урама тухса каймашкӑн сӑлтав тупасси юлчӗ. Ҫумать алӑкӑн-тӗпелӗн. Амӑшӗ, кӗлет айӗнче пӑхса выртакан Ҫампур йытӑ евӗрех, хӗрне куҫран вӗҫертмест. Унти чееленме уйларӗ. Вӑл кравать ҫинче выртакан амӑшӗ патне пычӗ, ун ҫамки ҫине алӑ лаппи хурса тӗрӗсленҫи турӗ. Ҫамки лӗп ҫеҫ, анчах урӑхла каларӗ:

— Ай-уй, анне, сана каллех пӗҫертсе пӑрахнӑ иккен. Ҫукамайран курӑк кайса илес мар-и? Вӗретсе ӗҫсен тарлатаканччӗ тесе хӑв калаттӑн.

— Йăпăрт чупса кил эппин.

— Халех, пĕр ури кунта, тепри — унта,— хавассăн каларĕ Унти.

— Ниçта та чарăнса ан тăр. Тем курăн, хальхи çамрăксем ытла чарусăр теççĕ.

— Курсанах куян пек тарăп!

Унти паçăрах хатĕрленĕ юбкипе кофтине тăхăнчĕ те килтен тухса шурĕ. Çул — Кăшман çырминелле. Пахча картисем çумĕпе вăшлаттарчĕ. Çитрĕ ĕнерхи тĕле. Анчах кунта никам та çук, кĕтмест ăна Макçут. Анăçалла пăхрĕ. Хĕвелĕн çулăмлă çуначĕсем çеç курăнаççĕ. Килме ĕлкĕреймен ĕнтĕ. Хĕр-упраçа малтан çитни килĕшмест, апла хăвна ытла кĕçĕне хуни пулĕччĕ. Йăртлаттарчĕ малалла. Чупать те, утать те, пуçне тăтăшах каялла пăра-пăра пăхать. Çырма пуçĕнче — ката. Унтах çитрĕ Унти. Вăрăм тунасем çаплах сырăнаççĕ, юн сăхса юласшăн. Ката хĕрринче çап-çамрăк вĕрене ӳсет. Каллĕ-маллĕ чĕтренет çил вĕркĕшĕпе. Тен, вăл хăйне амантасран хăрать? «Тархасшăн, ан хуç мана. Ах, ӳсес килет-çке»,— тесе тилмĕрет-и тен. Анчах каччăпа тĕл пулу шыракан хĕр ăнланĕ-и çавна? Шатăрт хуçрĕ вăл чи сарлака çулçăллă туратне. Мунчара мар-ха, пур пĕрех çăтти-çатти çапать хăйĕн çара урине.

Каялла чупрĕ Унти ансăр сукмакпа. Курчĕ аякранах: ав ларать вăл карта вĕрлĕкĕ çинче. Кăмăлĕ çунатланчĕ. Вĕçет. Çывхарнă май чуна темле иккĕленӳ йăпшăнса кĕчĕ. Тинкерсе пăхрĕ куçне хĕссех. Турă çырлах, лараканĕ Макçут мар, вăл çаврака питлĕччĕ, уссиллĕччĕ. Кун вара пичĕ тап-таса. Çӳçĕ, чăнах, Макçутăнни пекех хура та шыв хумĕ евĕр кăтра. Палламан çын. Ăçта-ши Макçут?

— Ырă каç пултăр, чиперук!— саламларĕ хайхискер вĕрлĕк çинчен анса Унти çулне пӳлнĕ май.

— Сывлăх сунатăп хăвна та!— сăмах вĕçерĕнчĕ Унтин.

— Эсĕ — Унти! Çапла-и?

— Мĕншĕн апла шухăшлатăн?

— Макçут сăнна ӳкерсе пачĕ: кĕске сарă çӳç, пӳсийĕ — хăва хулли евĕр. Чăнах та, ман ума шăп çавнашкал вутăш килсе тăчĕ. Тĕрĕсех, пăхса ытармалла мар хитре пике. Сан пеккине хам ĕмĕрте те курман эпĕ.

Каччă халапĕ хĕр кăмăлне ирĕлтерсех пăрахрĕ. Каллех тытса чараймарĕ хăйне Унти, тытăнчĕ ихĕлтетме.

— Çул пар! Пăрăн-ха. Васкатăп,— терĕ вăл.

— Вăл кĕçĕр килмест.

— Кам?— пĕлменçи пулать. Хăй шав ихĕлтетет.

— Макçут, ара. Ăна ашшĕ хулана кăларса ячĕ трактор

пайёсем туянма. Кёҫёр мар, ыран та таврӑнаймасть. Тухса каяс умӗн ҫапла каларӗ: Унтие кичемленме ан пар терӗ. Вӑл хушнине пурнӑҫлама хатӗр эпӗ.

— Эсӗ кам вара? Ку таранччен ман куҫ умне лекменскер?

— Макҫут хӑни эпӗ. Аякран килтӗм. Ятӑм — Леонид. Паллашнӑ йӗркепе пар ална.

Унти алне тӑсрӗ. Лешӗ аллине ярса тытрӗ те карт туртрӗ ӑна хӑй ҫумне.

— Ытла вӑйлӑ-ҫке эсӗ! — ихӗлтетрӗ Унти.

— Куллу, куллу сан — йӗс шӑнкӑрав-ҫке. Эх, ума ҫакса ҫӳресчӗ!

Каччӑ мухтани Унтие ҫӗклентерет, пӗр вӗҫӗмсӗр ахӑлтаттарать.

Чее-ҫке каччи. Шыраса та тупрӗ хӗр тутине. Пӑру пулӗ вӑл? Епле ёмет!

— Туту сан пыл! Чӑн-чӑн пыл. — Вара хӗре ачана ҫӗкленӗ пек ҫӗклерӗ. Ҫӳрет каллӗ-маллӗ пылак сӑмахсем палкаса.

— Мӑкӑнь, чечекӗмҫӗм, ӑҫти пахчара кам ятне ӳснӗ-ши эсӗ? Юрататӑп сана! Авланатӑп! Сансӑр пурӑнаймастӑп! Качча тух мана! Халех! Паянах!

Ни апла, ни капла ҫӑварне уҫма хӑяймарӗ хӗр. Качча тухма хирӗҫ мар Унти, анчах ҫӗр каҫ кӑна ҫыхланнӑ-ҫке Макҫутпа. Вӑл та чипер, яштака, ялта ҫуралса ӳснӗ. Пӗрпӗрне аван пӗлеҫҫӗ, шкула та пӗр вӑхӑтра ҫӳренӗ, пӗр ҫул маларах ҫеҫ вӗренсе тухнӑ вӑл. Анчах Леонид евӗр юратма пӗлеймест, чухлаймасть. Ку вара йӑпӑлтатса чуна кӗрет.

Сар ҫура ишет Унти. Ӑна никам та нихӑҫан та ҫапла ачашламан. Тӳсеймерӗ, каччӑна мӑйӗнчен ыталарӗ, пуҫне ун хул пуҫҫи ҫине хучӗ.

Хӗре ҫӗклесе ҫӳресен-ҫӳресен Леонид ҫырма хӗрринче пӗччен сарӑлса ӳсекен йывӑҫ айӗнче чарӑнчӗ, ӑна аялти мӑнтӑр турачӗ ҫине лартрӗ, унтан иккӗшӗ те ҫӗре ларчӗҫ. Вӗҫӗ-хӗррисӗр ыталашу, чуп тӑвашу пулчӗ. Вара каччӑ хӗртен мӗн кирлине илчӗ.

Иртнӗ каҫхи пекех, киле пӗччен таврӑнчӗ Унти. Ӑсатмарӗ ӑна Леонид та.

— Ыран каҫхине те сана ҫакӑнтах кӗтетӗп, — терӗ вӑл юлашкинчен.

Тепӗр кунне те, ытти кунсенче те килтен тухма май килмерӗ Унтин. Апат-ҫимӗҫ хӗсӗнсе ҫитнӗ пирки юлашки вӑхӑтра вӑрӑсем ӗрчерӗҫ. Ҫӗрле картишне кӗрсе сурӑх-

сене пусса илсе каяççĕ. Çавна пула ашшĕ хапхана каç пулнă-пулманах питĕрме тытăнчĕ.

Май килтерсе Унти темиçе хутчен те Кăшман çырми тăрăх йăрлатрĕ, усси пулмарĕ. Хăни кайнă пулмалла. Макçут ăçта-ши? Никамран та ыйтса пĕлме çук. Вăтанни авă тĕтĕмпе тĕтĕрет куçа. Çывăх тус-тантăш çукки çурмаран касать. Вăхăт иртнĕçемĕн тĕлĕнтермĕш тупăнчĕ — хырăм ӳсет. Хурах!

Тăхăр уйăхран икĕ каччăран пĕр ача çуралчĕ...

Кӳршĕ хĕрĕ, шкулта пĕр парта хушшинче ларнă Прасуни, авă чаплă йĕкĕте качча тухать. Унти куççуль çăтса ача урапи умĕнче тăрать. Тĕнчене вырнаçман мăшкăл вĕтха ку! Хĕр тасалăхне пĕлтерекен шурă венчет кĕпи вăл нихăçан та тăхăнаймĕ.

— Мĕн йăнăштарчĕ-ши мана?— пăшăлтатать Унти такамран явап ыйтнăн. Чавса çывăх та — çыртаймăн. Хĕр чысне упракансем чăнах та телейлĕ авă. Ун пеккисене упăшкисем умĕнче мăнаçланни килĕшет.

## Прасуни

Качча каять Прасуни. Тĕрĕс, ялти чи чаплă йĕкĕте. Часах туй пуçланмалла.

Прасуни шкултан вĕренсе тухнă тĕлелле колхоз хăмла туса илмелли çĕр лаптăкне пĕчĕклетрĕ. Амăшĕ плантацисĕр тăрса юлчĕ. Мĕнле ĕç умне тăмалла ĕнтĕ Прасунин?

Çывăх юлташсем пурри — çур пурнăç. Çавсем пулăшрĕç. Силмен ăна ĕçлеме хăй патне илчĕ. Вăл фермер пулас ĕмĕтлĕ. Халлĕхе подряд шучĕпе йышлă ĕне пăхать.

— Ял хуçалăх институтне заочно вĕренме кĕр,— ăс пачĕç Прасуние Силменпе арăмĕ. Итлерĕ. Ӳркенмен çын пирки халăхра ырă сăмах çӳрет: ĕçчен çынна ĕç савать теççĕ. Тен, çакна Прасуни пирки те каланă. Çулталăка яхăн ĕçлесен ăна пăру парнелерĕç. Хĕпĕртет хĕр. Халиччен вĕсен картишне ĕне пусса йĕр йĕрлеменччĕ-ха. Халĕ ав му--у-ук! муклатать пулас ĕне. Савăнăç хуйхăсăр килмест теççĕ. Чирлерĕ пăру пĕррехинче. Мĕн ыратать-ши унăн? Выльăхăн чĕлхи çук. Ни ĕçмест, ни çимест. Выльăх тухтăрне чĕнме тиврĕ. Вăл хăйсен ял каччи Исай, тин çеç институт пĕтерсе килнĕскер.

Курчĕ те Исай тынашка хуçине — ун чĕлхи çухалчĕ. Хĕр чиперлĕхĕ тыткăна илчĕ ăна. Нихăçан та курман ку чиперука, ара, ялĕ пысăк, урамĕсем пĕр-пĕринчен аякра.

Тăрать пике пăру умĕнче. Хура куçĕ сĕлкĕш. Хуйхă пур-

çке, пулăшма тилмĕрет. Шеллет пĕчĕк чĕр чуна. Йĕпхĕн хура вăрăм çӳçĕ хĕрĕн сăн-сăпатне уйрăмах чиперлетсе тап-таса кăтартать. Пилĕкĕ çинçе, тупата, пĕр ывăça кĕрет. Хура юбки кĕске. Кофти, чечеклĕскер, вăрăм, юбкипе кăшт çеç шайлашаймасть. Ура хырăмĕсем — чăн-чăн черкке.

Исай тухтăр юратрĕ те пăрахрĕ Прасуние. Чăтрĕ, кăтартмарĕ хăй кăмалне. Эмеллерĕ те пăрăва, тухса кайрĕ.

Прасуни те чунне темле тумлам сăрхăнса кĕнине туйрĕ.

— Илемлĕскер. Путех спортсмен, шурă костюм тăхăннăран-ши пĕвĕ-сийĕ ытла хӳхĕм,— хăйпе хăй пуплерĕ хĕр.— Кăвак куçĕ темшĕн хăлхем сирпĕтрĕ. Пулин, тĕнчере сахал-и илĕртӳллĕ яшсем?

Урам вĕçне вăйĕа пухăнчĕç çамрăксем. Прасуни те юлмарĕ. Ак тамаша, Исай та унта. Ыйтса пĕлчĕ пăру пирки. Çавă çеç. Прасуни тантăшĕсемпе пĕрле юрларĕ, ташларĕ. Эрне те иртрĕ-тĕр. Сăнаççĕ çеç пĕр-пĕрне хайхискерсем. Тӳсеймерĕ Исай, вăйă пĕтсен Прасуние ăсатма кайрĕ. Ун-кун пирки калаçаççĕ, шӳтлеççĕ, кулаççĕ. Хапха умĕнчи хурăн айĕнче чарăнса тăчĕç. Исай чуп тăвас шухăшпа ыталама пикенчĕ хĕре. Прасуни тарăхрĕ йĕкĕте ытла сĕмсĕрленнĕшĕн. Вăл Любăпа упăшки вĕрентнĕ меслетпе усă курса Исая çĕклерĕ те çапрĕ çĕре.

— Ну-и паттăр!— ахăлтатса кулса ячĕ вăл.— Хĕр те вара сана!

— Хама мăшкăллама ирĕк памастăп,— мăнаçлăн пуçне каçăртрĕ Прасуни.

— Эпĕ мăшкăллама шухăшламан та. Чуп тăвасшăнччĕ кăна.

— Чееленесшĕн-и? Пулас упăшкана çеç чи малтан чуп тутаратăп.

— Эпĕ шăпах санăн пулас упăшку.

— Ун пирки шыв çине сенĕкпе çырнă.

— Эпĕ сана вилесле юратрăм. Ыранах евчĕ яратăп. Эсĕ юрататăн-и мана?

— Чăннине евче калăп.

Тек пуплесе-мĕн тăмарĕ хĕр, чупсах килне кĕрсе кайрĕ. Евчĕ мĕн илтни сăмахсăрах паллă...

Прасунипе Исай хура турă лаша кӳлнĕ тăрантас çине ларса хут уйăрттарма кайрĕç. Ним те калаймăн, лайăх мăшăр. Çĕнĕ çын нихăçан та упăшки ӳпкевне илтмĕ, вăл хĕр чысне-тивĕçне куç пек упраса качча тухать. Ырăпа çуралнă юрату ĕмĕре пырĕ.

*1992*

## ХЁР ÇУРАÇНИ

Ситăра-и? У-у, ăна пĕтĕм ял пики юратать. Уйрăмах хĕрсен амăшĕсем ытараймаççĕ çак хусаха. «Тупата, хам хĕре качча парасчĕ ăна, лайăх кĕрӳ пулмалли çын», шухăшлаççĕ вĕсем ăшĕнче. Чăнах, Ситăр ăмсанмалли йĕкĕт. Вăл чипер: çӳçĕ те, куçĕ те смала пек хуп-хура, сăнĕ-пичĕ нар пек хĕп-хĕрлĕ, пĕвĕ-сийĕ — юман кĕреш. Ĕçĕ те чаплă ун. Вăл — лесник. Тепĕр тĕслĕ каласан: вăл вăрман хуралçи, вăрман ĕрчетекен. Тĕрĕсех, никам хурлама пултарайман селĕм яш. Анчах вăл авланаймасть. Çакă унăн чи пысăк çитменлĕхĕ тесе шутлаççĕ пурте. Çук-çук, чиперккесене вăл сивлемест, вăйăсенче вĕсемпе вылять, хăшне-пĕрне киле те ăсатса ярать. Çакăнпа ĕçĕ пĕтет. Юрататăп тесе нихăшин умĕнче çăвар уçман, хăнана евчĕ те яман.

Хĕрсем ахлатаççĕ-ахлатаççĕ те алне сулса ылханаççĕ:

— Эй, мур çимен. Савнă арăмĕпе киленмесĕрех ватăлтăр.

— Пире тиркенĕшĕн тирĕк тĕпĕ лектĕр!

— Хĕрсем, Ситăрпа атьăр хамăр калаçма пăрахар, тарса çӳрер унран. Чĕри типсе лартăр.

Ял каччи пирки çапла сăмах татса йăнăшаççĕ иккен хĕрсем. Пĕлесчĕ вĕсен Ситăр мĕнлерех мăшкăл тӳснине. Ваттисем каларăшле: «Вĕри сĕтпе тути-çăварне пĕçертсен уйрана та вĕрсе сыпăн» тенешкел пулса тухрĕ ун пурнăçра. Вăл пĕр хĕре шутсăр юратрĕ. Шăпчăк чĕкеçрен иртте-рет терĕ пулас та, ял пикине мар, хула чиперккине хапсăнчĕ. Авланас шутпа хĕр çураçма та кайрĕ, анчах хитре çеçкен кунĕ кĕске тесе ахаль каламаççĕ çав.

Хула вутăшĕпе кану çуртĕнчи ташă каçĕнче паллашрĕ Ситăр.

— Яту сан хăв пекех илемлĕ — Ульпи,— куçне йăлкăштарчĕ вăл.— Эпĕ сана чунтан юратса пăрахрăм.

— Ĕненместĕп,— ихĕлтетрĕ Ульпи.— Эсир, каччăсем, ялан суятăр.

— Унашкал йӑла ҫук ман,— тупа турӗ Ситӑр.— Сансӑр текех ҫутӑ тӗнчере пурӑнаймастӑп. Атя мӑшӑрланар.

— Эпӗ те юрататӑп сана, Ситӑр. Пичче хирӗҫлемесен качча тухатӑп сана. Анне вилсен вӑл пӑхса ӳстернӗ мана. Ҫавӑнпа та ун ирӗкӗнчен тухаймастӑп.

Каччӑ Ульпие пиччӗшӗ патне хут ҫыртарчӗ. Вара Ситӑр юратнӑ хӗрӗн ҫырӑвӗпе Атӑл урлӑ Шупашкара каҫрӗ те кирлӗ урама, ҫурта, хваттере шыраса тупрӗ.

Акӑ умра хваттер алӑкӗ. «Хуҫисем мӗн тейӗҫ-ши?» Ыррине кӗтсе шӑнкӑравларӗ «пулас кӗрӳ».

— Кам унта?— илтӗнчӗ шалтан.

— Эпӗ-ха ку,— хӑюсӑррӑн сас пачӗ Ситӑр.

Алӑк уҫӑлсан курӑннӑ ҫынна сывлӑх сунчӗ.

— Мана Ульпи пиччӗшӗ, Иван Иванчӑ, кирлӗччӗ.

— Эпӗ вӑл,— паллаштарчӗ хӑйпе кил хуҫи.— Кӗрӗр. Мӗн ӗҫпеччӗ, итлетӗп.

— Халех пурте паллӑ пулӗ,— Ситӑр хваттер хуҫине савнӑ хӗрӗн ҫырӑвне тыттарчӗ.

Вуларӗ Иван Иванчӑ йӑмӑкӗн ҫырӑвне.

— Эсир, эппин, хӗр ҫураҫма килнӗ пулать.

— Ҫапла ӑнланмалла пуль,— текелерӗ Ситӑр.

Кил хуҫи хӑнана тӗпеле иртме сӗнчӗ, сӗтел хушшинех вырнаҫса ларма хушрӗ. Арӑмӗ иккӗмӗш сменӑра ӗҫлет те — ӗҫе тухса кайиччен ӑна сӗтел ҫине ӗҫмелли-ҫимелли лартма ыйтрӗ.

— Шел, кирлӗ калаҫӑва хутшӑнма пултараймастӑр,— кӑмӑлсӑрланчӗ Ситӑр.

— Аптрамасть. Хӗр парса илесси — арҫын ӗҫӗ,— касса татрӗ Иван Иванчӑ.— Ульпи йӑмӑкӑма хам пӑхса ӳстернӗ. Вӑл ман ирӗкрен тухмасть.

— Эпир пӗр-пӗрне юрататпӑр. Мӑшӑрланасшӑн,— васкаса пӗлтерчӗ Ситӑр.— Эсир пире пиллессе кӗтетпӗр.

Хӗр ыйтма килни сӗтел ҫине эрех кӗленчи кӑларса лартмарӗ. Сыпкалама юратакан Иван Иванча ку шутсӑр кӳрентерчӗ. «Мӗнле ӑнланмалла-ха куна,— шухӑшларӗ вӑл.— Кашни ҫуртӑн хӑйӗн маччи. Кирек мӗнле ӗҫӗн те хӑйӗн йӑли-йӗрки. Юрӗ, малтан хам тӗслӗх кӑтартам».

Ульпи пиччӗшӗ кил-йышран шкап ещӗкӗнче пытарса усракан эрехне туртса кӑларчӗ, икӗ стакан илчӗ, тултарчӗ.

— Тыт пӗр стаканне,— сӗнчӗ каччӑна Иван Иванчӑ.— Паллашнӑ ятпа ҫавӑрса хурар.

— Эпӗ эрех ӗҫместӗп,— тавӑрчӗ Ситӑр.

Пулас кӗрӳ ҫапла курнӑҫланни ҫав тери килӗшмерӗ кил хуҫине. Чунӗ тата та ытларах тулхӑрчӗ ун. Тарӑхнипе икӗ стаканне те хӑй янклаттарчӗ.

Сётел çине пирус пачки тухса выртрĕ.

— Мăкăрлантарăпăр-и?— хăна куçĕнчен пăхса илчĕ кил хуçи.

— Эпĕ тапак туртмастăп çав,— пуçне сулкаласа илчĕ лешĕ.

Аптранă кăвакал кутăн чăмнă теççĕ. Хĕр парса илес калаçу та пачах сÿнчĕ.

Иван Иванчă пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем арпашса кайрĕç. Килнĕ каччă килĕшмерĕ ăна. «Ульпи йăмăкăн мăшăрĕ пулмалли çын мар ку. Тен, вăл ултавçă? Тен, вăл вăрă?»

Ситăрăн та чĕри лăпкă мар. Ĕмĕчĕ пурнăçланас пирки иккĕленмест-ха вăл. Анчах ĕç çăмха пек кусса пыманнине сисет. Самантлăха çырлахма тивет. Ара, каçхи сăмах çине чăх сурать, ирхи ĕç малалла каять теççĕ. Йăмăкне качча пама килĕшни çинчен хуçа ыран ирпе пĕлтерессе шанать Ситăр. Вара пил илсе Ульпи патне, кану çуртне, вĕçтерĕ. Çак ырă шухăш ăна ĕшентерсе ыйăхлаттарчĕ.

— Пичче, выртар мар-и?— сăмах вĕçертрĕ Ситăр.

— Ыйăх минтер шырамасть,— терĕ Иван Иванчă шурă куçне çаваркаласа кăтартса.— Эпĕ кĕçĕр çывăрмастăп. Çĕрĕпе çапла ларатăп.

— Ак тата, мĕншĕн?— тĕлĕнчĕ Ситăр.

— Эпĕ çак шифоньере сыхлатăп,— ун алăкне чышкипе тÿн-тÿн! тÿнлеттерчĕ Ульпи пиччĕшĕ.— Унта, йăрхахра, ман çĕнĕ костюм çакăнса тăрать.

## ТУПМАЛЛИ


АМАНТНӐ ЧУН. Повесть . . . . . . . . 5
МАЛТАНХИ САВНИ. Повесть . . . . . . . 57
ПИТРЕН ШЕРПЕТ ТИПИЧЧЕН. Повесть . . . . 155
ЙӐНӐШСАН — ЁМЁРЛЁХЕ... Калав . . . . . 228
ҪАЧЧӐПА ВЫЛЯСАН. Калав . . . . . . . 235
ХЁР ҪУРАҪНИ. Калав . . . . . . . . . 252

**Валентина ЭЛЬБИ**
**(Валентина Андреевна АНДРЕЕВА)**

**ПЕРВАЯ ЛЮБОВЬ**

**МАЛТАНХИ САВНИ**

Повести
Рассказы

На чувашском языке

Редактор *А. П. Павлов*
Художник *Е. Г. Маринина*
Художественный редактор *Г. С. Самсонова*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *Н. П. Печникова*
ИБ 2693
Сдано в набор 13.05.93. Подписано к печати 04.11.93. Формат $84 \times 108^1/_{32}$. Бумага типографская. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 13,44. Усл. кр.-отт. 13,86. Учетно-изд. л. 14,65. Тираж 10000 экз. Заказ 1181. Изд. № 53. «С» 80.

Чувашское книжное издательство.
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской Республики по печати и информации.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

350 —к.

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ